**Никита ЛАРИОНОВ**

# ÇЫРУ МЕХЕЛӖ

*Повеçсем*

**Шупашкар**
**«Çӗнӗ Вăхăт»**
**2012**

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
Л-25

Л-25 **Ларионов Н.Л.**
**Çыру мехелĕ.** Повеçсем. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2012. – 336 с.

Пурнăçăн пĕр вырăнта кăмпăсланса тăнă тапхăрти ĕç-пулăмсене çырса кăтартнă. Тĕп вырăнта – этем сăнарĕ.

© Ларионов Н.Л., 2012

# ÇЫРУ МЕХЕЛĔ

– Кĕнекӳне кăлармалла пулман. Вулакан кăмăлне хуçни çеç...

– Чăнах, чуна ыраттарчĕ, кӳрентерчĕ мана та ку. Ак, эп çырни, вунă çул хушши хупланса выртать. Вун пилĕк хут машинкăпа çапнă эп ăна. Çав хушăрах, кур, епле пашалу сĕнеççĕ вулакана!

– Эпĕ те йывăра илтĕм. Çӳревçĕсене яланах сăрт-ту тăрăх сехечĕ-сехечĕпе çӳреме пултарнăшăн ăмсанаттăмăр, тĕлĕнеттĕмĕр вĕсен чăтăмлăхĕнчен. Курмастăп çакна повесть тенинче.

Çак калаçу, çавра сĕтел таврa шутĕнчискерех, Хура тинĕс хĕрринче çине витнĕ пляжра пырать. Çулла хĕртĕнме хатĕрленĕ тапчамсем çине ларнă пухăннисем. Йышĕ пысăках мар – çичĕ çын. Чӳк уйăхĕ пулин те çанталăкĕ ку тĕлте лайăх тăнăран кĕрхи тумпа кашни: çӳхе тăхăннă, çуллахилле тесен те юрать. Халь пĕрремĕш калани тинĕс енне çурăмпа ларнă. Шупка тĕслĕ шалпартарах спорт костюмĕпе вăл, курткăн хул хушши тăрăхĕ сенкер. Вăтам çулсенчи çын; тӳрипе илсен, пенсие тухайман-ха. Литераторсен çакăнта пухăннă семинарне ертсе пыраканĕ вăл. Хăй евитленĕ тăрăх, çамрăк чух Балтика тăрăхĕнчи республикăсенчен пĕринче хоккей тата футбол командисенче хапхана хӳтĕлекенни пулнă, çĕр-шывра мала тухас ăмăртусене хутшăннă. Халĕ тĕп хулари пĕр паллă кĕнеке кантурĕнче пысăк вырăнтах ĕçлет. Иртнĕ вунă-вун пилĕк çул хушшинче – çитмĕлмĕш-сакăр вуннăмĕш çулсен пуçламăшĕсенче – хăйĕнне темиçе хулăм кĕнеке çапса кăларнă.

Иккĕмĕш сăмах хушни, унпа çумăн пек аякпа лараканĕ, аллăран каçнă платна арçын, физкультура енĕпе аслă пĕлӳллĕскер, наука кандидачĕ; çĕр-шыври спорт журналĕн турти хушинче тĕпре те тăнă, ытти яваплă вырăнсенче те ĕçленĕ; нумай-нумай паллă спортсменсене çывăх пĕлекенскер халĕ ку хушăра статьясем çыркаласа кăна пурăнать пулас. Виççĕмĕшĕ – çӳллĕшне сикес енĕпе çамрăксем хушшинче çĕр-шыв командинех кĕнĕ ăста спортсмен, пĕлтĕр алла тытмалăх хулăм кĕнеке кăларнă автор. Тишкерӳре маларах çавсем калаçнă-ха, халь, ак, юлашкин-

чен семинара ертсе пыраканĕ шухăша пĕтĕмлетет, çавăнтах унпала килĕшсе лешсем пĕрер сăмах хушса хураççĕ – чăваш ачин иртнĕ çул вырăсла пичетленсе тухнă кĕнекине ĕнертенпе вăхăта çухатсаваскавлăн вулани кăмăла ыраттарнă çеç вĕсенне. Чунĕсене тăвăрлантарнă, савăнтарман. «Итлетĕп, сире эп ним вĕчĕленмесĕр итлетĕп», – терĕ-ха авторĕ мĕнмĕн чăтма çук начаррине палăртса асăннă чух. Чăнах та, вăл ним чĕнмесĕр, кăшт куларах та тĕлĕнерех тăнласа ларать.

– Кĕнекене кăларса кантур йăнăш тунă, – хăйĕн шухăшĕ ыттисеннипе пĕр килнине туйса тепре çирĕплетет вĕренĕвеканашлăва ертсе пыраканĕ – «метр» тесе чĕнкеленĕччĕ те ăна, шăпах çавăн пек ятпа палăртăпăр – Метр.

– Мускава таврăнсан хам аташăмран, Анатольчран (унпа пайтах пĕр сĕтел хушшинче ларнă), ыйтатăп: рецензире мĕн çырнă, мĕншĕн çул уçса панă кĕнекене?

– Эп вăл рецензие вуламан,– пĕлтерет авторĕ.

– Эс вулама пултарайман ăна. Вăл шалти рецензи. Таврăнсан ятарласа каятăп ку кĕнеке кантурĕн хуçи Анатольч патне. Рецензие туптарса вулаттарма ыйтатăп.

Итлекенĕсем шăппăн тăнласа лараççĕ. Метр пĕтерчĕ пуль калассине, вĕçлеймерĕ те-ши?

– Эсĕ хăв спорт президенчĕ çумĕнчи çынна куçпа курнă-и хальччен? – ыйтать вăл автортан.

Кавrăç Ваçукĕ сывлăш çавăрмалла кăштах шухăшласа ларать те тӳррĕнех пĕлтерет:

– Çук, курман.

– Апла пулсан ан çыр. Эпĕ Олимп вăййисене Хельсинкирен пуçласа, Лос-Анджелоса асăнмасăр, пĕрне те сиктермен çитмесĕр. Президентпа çапла çума-çум тăрса калаçнă, ларуканашлусенче сахал мар пĕрле пулнă. Мĕнлерех кăтартнă пулăттăн-ши эсĕ ăна курас пулсан? Сивлек сăнар туса хураттăн ĕнтĕ.

– Ийя, эпĕ те Олимп вăййисене йĕркеренех пресса ушкăнĕпе çитнĕ. Тренерĕсене, атлечĕсене çывăх пĕлетĕп. Ман кĕнеке, ав, вунă çул выртать кун çути курмасăр, вун пилĕк хут машинкăпа çапнăскер. Ак мĕнле япала пичетлесе кăлараççĕ çав хушăрах.

– Эсир çакна шута илĕр: вак наци литературинче эпир асăнакан темăпа çыракан пур. Ку факчĕ хăй ырă пĕлтерĕшлĕ,–

Каврăç Ваçукне хута кĕресшĕн пулчĕ çамрăк çын, Мускав ачи, пачах урăх кĕнекеçĕсен кантурĕнче ĕçлекенскер.

– Литература пĕр пĕтĕмлĕ пирĕн: совет литератури. Вăл пурнăçа çутатать, халăха каласа парать. Халăх валли. Ку вара, – çаплах-ха аллинчен ӳкереймен кĕнекене Метр авторĕ еннелле тăсса, ăна тавăрса парса ĕнтĕ, тенкел çине темле йĕрĕнчĕклĕн хучĕ, – Карçынккана пăрахмаллискер пулнă.

Çӳллĕшне сикекен леш спортсмен ĕнер çеç хăй кĕнекине ырăпа асăннă хыççăн: «Сире ал пусса парам-и?» – тенĕччĕ Метра. «Хăвăрăн ирĕк. Эпĕ авторĕсем парнеленĕ кĕнекесене пухса пыратăп», – тенĕччĕ ертӳçĕ сăмах май тенĕ пек çеç хуллен. Халь ак Каврăç Ваçукĕ хăй кĕнекине, çын ан куртăр теесле, çӳп шăтăкĕнчен пуçтарать.

– Хуплашкине, вараланасран, хутпа тултнă тата! Эпĕ те çапла хаклаттăм пулĕ ĕнтĕ кĕнекем тухас пулсан, – тет хăй романне вунă çул хушши кантуртан кантура йăтса çӳ рекенĕ. «Йăлтăр тĕспе тӳрех çын куçне ан тăрăнтăр тесе чĕркенĕ-ха эп ăна», – тесшĕн те Каврăç Ваçукĕ, ку сăмаха вăл çăвар уçса шарламасть. Унăн юлашкинчен каламалла. Ăна итлеме те йĕрĕнӳллĕн пăхса çеç хатĕрленчĕ Метр. Нумай вакламалла-и авторĕн? Вăхăчĕ те çук темелле: Каврăç Ваçукĕсĕр пуçне кунта малтан тепĕр юлташăн ал çырăвне пăхса тухрĕç, чăваш ачи те унта хĕрӳлленсе хутшăнчĕ, çамрăка, тин çырма тытăннăскерне, пулăшас тесе ырă тăвас шутпах каларĕ; вăрăма пычĕ сӳтсе явасси. Метр хăй сăмахне час вĕçлеме пĕлеймерĕ ун чух. «Пĕрле çумăн ларса çырма вĕрентме пултаратăп. Культура кирлĕ, культурăна аталантармалла, Феденька», – тесе тăсрĕ те тăсрĕ ертӳçĕ. Çапла икĕ автор япалисене тишкернипе вăхăт самаях тăсăлчĕ. Кăнтăр апатне те тапранмалла ав. Асăннă хăш-пĕр вырăнсемпе килĕшнипе килĕшменнине палăртрĕ çеç виç сăмахпа чăваш ачи. Тӳррипе илсен, калас пулсан, чуна уçас пулсан...

Ват ăшшиллĕ кĕрхи çанталăкра Хура тинĕс лăпках, штиль тăрать. Пĕчĕк хумсем кăна çыранпа шăпăл-шăпăл калаçаççĕ, якалса хытнă вак чула çыр хĕррипеле çăваççĕ; шакăл чул çийĕн унта-кунта пăт-пат çын утать; пĕр-иккĕн хывăннă, шыва кĕме хатĕрленеççĕ, ак шăмпăлтаттарса утса кĕчĕ тахăшĕ, выртрĕ те ишет – нумай хушăлăх мар, ячĕшĕн – Хура тинĕсре чăпăл пулнине астуса пурăнмалăх. Тинĕс

варринче, тинкеререх пăхсассăн куç тĕлне лекес инçĕшре, дельфин ушкăнĕ чăма-чăма пырать.

– Ав, ав, дельфин! Пĕрре, тепре, – кăтартать Метр. – Ун умĕн пулă йышĕ пырать, вĕсем хыççăн – дельфинсен пысăк мар ушкăнĕ, – палăртать вăлах, куна хăй çеç пĕлнĕ евĕр.

Тата леререхре, ав, пĕр мăшăр хура пысăк кайăк – гагара – ишет, вĕсем те чăмаççĕ, инçене кайса тухаççĕ; хырăмĕ сене тăрантараççĕ ĕнтĕ çапла; пулă тытаççĕ. Пушшех леререхре хура пăнчăсем – гагарăсен ушкăнĕ.

Хĕвел хĕртнĕ çĕрте, кĕр иртес май тӳпепе пĕр тĕслĕ шыв ӳте вĕтелемеллех сивĕ çинчех, чăваш ачин, Каврăç Ваçукĕн те ячĕшĕн те пулин чăпăл пулса тухмалла.

Калас пулсан, чуна уçас тесен, хайхи кĕнекен çулне-йĕрне тĕпĕ-йĕрĕпе куç умне килтерес тĕк... Çитнĕ-ши-ха тата вăл вулакан патне пĕтĕмĕшле? Хăçан чĕмленсе еплерех шăтса тухнă? Чечеке ларнă-и? Пиçнĕ-и? Çав тапхăрсене çиелтен асăнса тухсассăн та мĕн вăхăт итлемелĕх, çырсассăн мĕн хушă вуламалăх пулать-ши?

* * *

Ун чух, Раççейри пысăк ăмăрту вĕçленсен, хăй кĕтнĕ пек кăтарту пулман енне, Каврăç Ваçукĕн кăмăлĕ çĕкленӳллех марччĕ. Командăри ытти çăмăл атлетсем каçхи апат хыççăн, кам ăçта пĕлет, унта тенешкел, хулана саланчĕç, ыран киле тухса кайиччен хăйсем пулман вырăнсемпе паллашма тимлерĕç. Каврăç Ваçукĕ çын пырсах çӳремен кукăрта кресло çине канлĕхлĕн ларса (командăна пĕр институтăн общежитине вырнаçтарнă) блокнот тытрĕ те ăмăртура кăтартнă вăхăта паллă тунă хыççăн хăйĕн пичетленнĕ тата пичетленмен калавĕсен ячĕсене хут çине тĕрлесе тухрĕ. Тахçан вăл, вунăвун пилĕк çул каяллах, мĕн çырнисене пухса кĕнекен кăларма шутланăччĕ; машинкăпа çаптарсах тăратнăччĕ писательсен Союзне ал çырăвне. Ку вăхăтра палăрса тăракан ырă ятлă писатель, «Ятшыв» псевдонимах йышăннăскер (çывăх çыннисем хăйне чылай чух «Ят» тесе çеç чĕнеççĕ), самай анлă рецензи çырнăччĕ. Мухтаманччĕ, кĕнекелĕх материал çук тесех палăртнăччĕ. Вăхăчĕ те тивĕçмерĕ çанна тавăрса ĕçлеме Каврăç Ваçукĕн кун хыççăн: спортра тимлĕ пулчĕ вăл; тĕп ĕçрен пăрăнмасăр пысăк ăмăртусенех хатĕрленсе

пыма самаях вăй та, вăхăт та кирлĕ-çке. Ĕçĕ те пĕр вырăнта тĕпленсе лармалли марччĕ унăн, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ялсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳремеллискерччĕ. Çапла палăртатчĕç пĕрле вăй хураканĕсем те, арăмĕ те: «Ялсем тăрăх сĕтĕрĕснсе çӳремелли», – тетчĕç. Çӳлтен хушнине пурнăçа кĕрттерсе пыраканнисем эппин. Ак вара шкула куçсан, хваттерĕнчен ултçич çухрăма ир те, каç та утмалла килсе тухрĕ пулин те, спорт енĕпе ытларах тимлесси çеç мар, илемлĕ литература самаях вулама та, шухăша пĕтĕçтерсе хут çине çырса хума та май килкелерĕ. Хаçатран уйрăлман-ха Каврăç Ваçукь нихăçан та – ял-ял тăрăх çӳренĕ май материал тупăнсах тăнă, хаçатçăсем ыйтнă – çырса панă. Анчах ку вăл литература ĕçĕ мар-ха, ялкор активлăхĕ çеç. Çапла, шкулта çĕнĕрен ĕçлеме тытăннă çулхине вара хăй института кĕнĕ хыççăнах ăсталама шутласа хунă, вĕреннĕ чухне уйрăм сыпăкĕсене çыра-çыра та пăрахнă япалана – спортсмен çул-йĕрне палăртакан йĕркесене – тепре тытрĕ те тетрачĕ-тетрачĕпе тултара пуçларĕ. Йĕппине кăларса илнĕ вăрăм листан пĕр енне çырма хăнăхрĕ ак вăл; пушă самантсенче çырать те çырать, çырать те çырать каçсерен; виç çĕр страницăнах çитерчĕ. Унтан çавна малалла тăсасси пат татăлчĕ – халь, çийĕнчех, пурнăçлама май пур пысăках мар сюжет кĕрсе çапрĕ-çке пуçа. Шăпах ăмăрту вăхăтĕнче финиш хыççăн хăна çуртне канма каяс умĕн вирхĕнсе кĕнĕччĕ ăша шухăш – калас тени; калавĕ ăшра çавăрăнса хăвăрт пĕтĕмленнĕччĕ. Пĕр самантра, йăпăрт хушăра çуралчĕ вăл. Вăхăчĕ хĕллеччĕ. Каврăç Ваçукь сиктермесĕр çӳрерĕ республикăри ăмăртусене йĕлтĕрпе. Ручка тытса ларса хут хуратаймарĕ, пуçра мĕн пуррине çийĕнчех кăларса тăкмашкăн мехел килмерĕ нимле те, тулли кунтăк пек йăтса çӳрерĕ пĕтĕмлетнĕ шухăша. Кайран каннă самант килсе тухрĕ-и, çуллахи вăхăтра – кану чухне çав – ирхи апат çинĕ хыççăн вăя пухса ларчĕ те сĕтел хушшине, ăнтăхса каясла тешкел, пуçри шухăша сĕвĕрĕлсе кайиччен хут çине кăларса тăкас тĕллевпе тимле пуçларĕ: çырать те çырать, пуçа пĕр йăпăрт çĕклесе пăхма та ерçеймест, чернила пуçса илет те хут тăрăх чуптарать те чуптарать хурçă автана, шурă тĕс çине хура вăрлăх актарса.

Кăшт сывлăш çавăрса илес шутпа çĕкленчĕ, пуç кашлатьмĕн, ыванннă; сехет те хĕрĕх пилĕк минут хушши ларнă ик-

кен ним тапранмасăр. Сĕтел хушшинчен йăпăрт çеç хăпатăп тенĕскер кăштах уткаласа çӳрет, пахчана тухса çулçă сарса ихекен кишĕр-хăяра пăхкалать, улмуççи çинчи чăмăртансах çитнĕ улмасене тĕсет, чечек çурнă çарана куçлать – çутă çанталăкпа йăпанать. Çапла çур сехет хушши вăхăта ирттернĕ хыççăн, пулăçă вăлтине ярса хăварсах аяккалла пăрăнса çӳренĕ, хулккана туртсах анса кайнине асăрхаса, çыран хĕррине вăлта аврине ярса илме васканă евĕр, сĕтел хушшине хăвăрттăн кĕрсе ларчĕ те тепре каллех ăнтăлса-такăнса каясла тенешкел çырчĕ те çырчĕ. Вĕçне тухиччен ручкăна хумарĕ – тухрĕ-тухрех вĕçне. Пĕр купа хут – тетраде тăсăмлăн хăрах енне çеç çырнă листасем. Мĕн йĕрленнĕши унта? Мĕн ӳкерĕннĕ? Пĕлĕ-ха кайран, кайран тĕпчĕ. Ĕнсе çинчи темле йывăр çĕклем илĕннĕ, пуç кашлать – пуçа уçăлтармалла ирĕке тухса. Пăталанса ларнă иккĕмĕш саманчĕ сехет те аллă минут хушши пулнă иккен. Çак çулсенчи лайăх йĕлтĕрçĕ ăмăртура вăтăр çухрăма чупса тухнă хушă çеç. Тепĕр çур сехете яхăн уткаласа çӳренĕ хыççăн, кăнтăр апачĕ умĕн, мĕн çырнине пухрĕ те шкапа тĕркесе хучĕ. Кайран каç енне уçăлмашкăн ятарласа вăрмана тухса утрĕ вăл. Çапла аран-аран канса илчĕ.

Çулталăк иртнĕ тĕлелле пичетленсе тухрĕ калавĕ тăвата-пилĕк хутчен куçарса çырнă, машинкăпа çапнă хыççăн. Пичетлекен машинка туянчĕ çав тĕлелле Каврăç Ваçукь. Чăваш сасă паллийĕсене лартассишĕн хăшкăлчĕ тата, тинкех кăларчĕ чăрмавĕ, атте-анне чĕлхипе çапмалла май килтерчĕ-килтерчех.

Ăмăртăва пĕрле çӳрекен ачасем тата паллană студентсем мухтарĕç калава. Институтра пĕр вăхăталлах вĕреннĕ юлташ – Вĕршĕл ятлă поэт, прозаик – ĕçлетчĕ журналта, çавă пĕр-ик çĕрте çеç тĕкĕннĕччĕ автора – мĕнле пур çапла çапăннăччĕ.

Тепĕр çăва тухсан, каллех ахаль уткаласа çӳренĕ самантра, пуçра çĕнĕ калав çуралчĕ – халех лармалла та çырмалла, халех лармалла та хут çине тĕрлесе тăкмалла. Ĕçĕ-хĕлĕ ик-виç çул каяллах пулса иртнĕ-ха, анчах шухăш та, калав та çуралайман, пĕтĕмленеймен курни-илтнинчен – халь ак тусан айне пулнă тыр пĕрчине çумăр ислетсе шăтарса кăларнă евĕр, вăхăчĕ çитнипе, услови килнипе калав хаппи ума килсе

ӳкрĕ. Шăпах вырсарни кун, авăн уйăхĕнче, ытти ĕçрен ирĕклĕ чух вырнаçса ларчĕ Ваçук сĕтел хушшине ирхи апат хыççăн. Шăп малтанхи евĕрлех çырчĕ те çырчĕ вăл. Икĕ хутчен çуршар сехетлĕх хăпрĕ çеç сĕтел хушшинчен – урăхла каласан, виçĕ ăстрăм чĕриклеттерчĕ перона хут тăрăх. Вĕçне тухнă тĕле çавăнтах кай та ӳк – вăй çук. Спортсмен çавнашкал вăйхала туптать – палăртнă хушша виçсе илет те – ăнтăлать. Самай вăрăм хушша виçĕ хутчен чупса е спорт мелĕпе утса тухнипе танлаштарма пулать паянхи çырăва. Спортсменăн та пыр шăтăкĕ татăлса каясла хашкаса тар кăларнă хыççăн вăя кĕмелле канса çӳремелле – ак çыракан та мĕн çĕрлеччен уçăлса çӳрет вăрманта сывлăш çавăрмалла, пуçра вĕресе тăракан шухăша лăплантармашкăн.

Журналта редакцилеме тытăнчĕç калава тепĕр çулхине, каллех пилĕк хут куçарса çырнă, машинкăпа çапнă хыççăн. Ай, тӳрлетнĕ! Ай, «лайăхлатнă»! Каврăç палламан çын мар, институтра ун умĕн пĕр çул малтан вĕренсе тухнăскер питĕ тимленĕ «картине лартассишĕн». Шупашкара ăмăрту тĕллевĕпе пынăскер, хăна çуртĕнче вулать «тӳрлетнĕ, лайăхлатнă» ал çырăвне автор. Вулаймасть – тăрса утать, вĕчĕхет. Алла сулать те урама тухать, хула кумать. Палланă поэта, вăрçăра аманса пĕтнĕ пит-куçлă, чăваш шăпчăкĕ шутлă сăвăçа – курать Каврăç Ваçукĕ. Хăй хуйхине тăкса кăтартать ăна вăл. «Килĕш, – тет поэт, – пичетлеççĕ пулсан япалуна, килĕш. Вулакан çав тери ăслах мар». Юлашки пуплевне тĕрĕсех те каламарĕ-ха чăваш шăпчăкĕ, çапах самаях пичетленекен çын çăварĕнчен тухнă сăмах шухăшлаттарать. Кунран уйăрăлсанах ак тата институтра пĕр вăхăтрах вĕреннĕ юлташа, поэтессăна, тĕл пулчĕ Каврăç Ваçукь. Вăхăчĕ те пур иккен-ха хĕр тантăшăн, хăна çуртне кĕрсех калаçса ларчĕ çакскер. Туртма вĕреннĕ иккен, пируса пит меллĕн мăкăрлантарать институтра чухне сăпайлăран сăпайлă пике шутланнăскер. «Ха, япалуна самаях редакциленĕ-иç, пичетлес шутпах тытнă. Ан хирĕç, çапса кăларччăр», – ăс пачĕ ку та.

Тухрĕ ĕнтĕ калав çавнашкал, çын алли муталанă майĕпе. Пĕр саларах пурăнакан, çӳçĕ шурала пуçланă çыравçă тĕл пулсан: «Япалу темех мар, илемлĕ произведени шайне лараймасть»,– терĕ хучĕ автора. Ваçук тӳрре тухасшăн кам алли «мухтава кăларнине» асăнчĕ те, «çын ытлашши

тĕкĕнсен çапла пулать çав, – сăмахларĕ хайхи, кĕнеке-журнал кăларас çĕрте самай хушах ĕçленĕскер. – Ĕçтермерĕн-и-мĕн?» – «Шăварнă. Ăмăрту хыççăн спорт базинех пĕр кунлăх юлтăм та, улах вырăнта иккĕн-виççĕн самаях пакăлтатса ларнă. Хам сыпман. Икĕ кĕленче çуттине уçса патăм».

Япалу тухни аван тенине шута илчĕ ĕнтĕ Каврăç Ваçукь, чуна хытарса: «Пичетленĕшĕн тавтапуç», – тенĕ ĕнтĕ журналти ăстасене. Çапла сутатăн-çке чуна. Çын çырнине хуратса йĕрмелес йăла шăп эпир çуралнă тĕлелле (тен, çӳлти Турă тесе мухтанă çут хĕвелĕмĕр çул пуç хушнипех?) çирĕпленнĕ пуль те, хамăр «кĕрĕк арки йăваласа ларманнине» кăтартас шутпа тимлетпĕр пулĕ ĕнтĕ мĕнле пĕлнĕ çавăн пек. Кашни хăйне тивĕç сăн-сăпачĕ пуррипе мар, пурне те пĕр калăпа лартнипе этеме ĕренкĕре тытма пулĕ тени-ши ку?

Виççĕмĕш калав та тухрĕ журналта Каврăç Ваçукĕн. Куна вара тепри унта-кунта каскаласа, тĕп енчен те, çӳл енчен те тĕкĕнкелесе, ни начар, ни ырă тĕс килтермесĕр тенешкел кăларчĕ. Çавна пичетличчен малтан калав майлăн хайланă очерка путлантарчĕ журналти ку çынни, институтра Ваçук хыççăнхи курсра Вĕршĕлпе пĕр группăра вĕреннĕскер; очерк сюжечĕпе хăй хайлав эрешлесе кăларчĕ, кайран вара пичетлеме çĕннине ыйтсах илчĕ. Çапла виçĕ япала вулакан патне çитнĕ Каврăçăн. Кун çути курман тепĕр икĕ калав пур-ха ял ачийĕн халь çине çав калăпăшрисем, çав шайрисем. Вĕсенчен пĕри çеç тахçан пичетлеме сĕннĕ ушкăнран – ытти пĕтĕмпех çĕнни. Кĕнекелĕх пур-ши ĕнтĕ халь материал? Тепĕр япала, кусенчен кăшт пысăкраххи, сумлăраххи кирлĕччĕ; пĕр виçĕ калавпа танлашакан повесть пулсан пăсмастчĕ. Малтан çырма тытăннă, халь каллех варалăха хунă повеçне е романнех-и тĕкĕнмелле мар-ха – унччен çакнашкал пач урăххисем кĕнеке кĕрнекне килтеринччĕç.

Çапла шутласа, блокнот çине шăрçаланă калав ячĕсем çине пăхса ларать Ваçук. Мĕнле ят памалла-ши кусене ушкăнлас пулсан? Нихăш калав ячĕ те пĕр пĕтĕм шухăша палăртма тивĕçмест, тата кашниех темиçе сăмахран тăракансксерсем. Тепĕр япала кирлех – тупмаллах.

Çак вăхăтра пĕрле пурăнакан çăмăл атлетсем шавлăн кĕпĕрленсе кĕчĕç пӳлĕме. «Эс унта ларан иккен! Кил», – чĕнчĕç çаксем Ваçука. «Ак чĕрĕ пулă туянтăмăр – Атăл ку-

ченеçĕ! Тата çăлтăр çине çăлтăр тăрăллă кĕленче туртса кăлартăмăр вăлтапа – ал-ура хытса ларасран усса пырĕ», – шакăлтатрĕç хĕрсех.

– Каçхи апат çименччĕ-им эпир?

– Пултăр. Апат вăл ывăнни иртсе пынăçем анать.

Кăнтăрла шăрăхчĕ, самаях ĕнтетчĕ хĕвел. Халь сулхăн, чўречене уçнă та ирĕкри чĕрĕ варкăш пўлĕме вăркăнса кĕрет. Шăм-шака кантармашкăн питех аван. Атлетсем çўхе тăхăннă, хăшĕсем трусси вĕççĕн çеç. Старт умĕн лăпкă, тарăн шухăшлă вăл спортсмен, ăмăрту хыççăн вара мала тухни те, кая юлни те шавлă; курни-илтнине, хăй мĕн туйни-тўснине каласа парасшăн-çке этем юлташне, тусĕсене. Кунта халь кастрюль те тупăнчĕ, газ та чĕртнĕ – коридора пулă шўрпи шăрши сарăлчĕ.

– Лавр çулçи ятăр-и? Эй!

– Ак пăрăç тупса килтĕм.

– Тăварне хам пĕлсе силлетĕп. Сыпса пăхам. Килте ялан мана апат пĕçерттернĕ, аслисем ĕçе кайнă чух хушса хăваратчĕç.

– Суханне манăн шуратса турамалла ĕнтĕ – салтакра повар пулнă эп.

Тем калаçакан та, шавлакан та пур. Ăмăртура пыр шăтăкĕ татăлса каймалла сывлăш çăтса-кăларса утма, чупма çеç мар, мĕнле те пулин урăх енчен те ăста иккен спортсмен тени.

Кашăк-чашăк тупса, сĕтел тавра вырнаççан вара ун-кун шавланă майăнах чун-чĕрене вăратни те пулчĕ. Ку ăмăртăвĕнче шăпах мала тухать пуль тесе шутлани, анчах малта пулманни, чунĕ тăвăннă май хăйĕн пурнăçне аса илсе, спорта епле явăçни çинчен каласа пачĕ. Килĕштерет Каврăç Ваçукь атлетне, унпа юлташланнă, Шупашкара пырсан, тренировкăсене пĕрле çўренĕ. Пурнăçĕ çинчен ыйтман та, пĕлмен те. Ак кĕскен, пит кĕскен каласа пачĕ çавă хăйĕн çинчен халь. Кулянмалли ăмăртура мала тухманни çеç мар, ытти те пур иккен çыннин – ырă чунлă чăваш ачин. Çак самантра шăппăн тăнлакан Ваçук пуçне шухăш вирхĕнсе кĕчĕ.

– Повесть çыратăп сан çинчен! – терĕ вăл вара саспах. Мĕн каламалли тĕвĕленнĕ ĕнтĕ, тимлĕрех шухăшламалла та аталантармалла çеç пулăма. Машинкăпа çапнă ал çыру

шучĕллĕн пĕр çитмĕл пилĕк стараница чухлĕ повесть тухать. Курни-илтнийĕ, тӳсни-тертленни, вăй кăларни, ĕнсене сийлĕн-сийлĕн тар пустарни Каврăç Ваçукĕн хăйĕн те çителĕклех. Сулăмлă хайлав пулать! Леш калавĕсемпе пĕрле, ак, кĕнеке майлашăнать капла.

Пĕр япалашăн ӳкĕнчĕ Ваçук: сăмаха персе ямалла марччĕ; çыраканăн, ӳнерçĕн тĕшмĕшлĕхĕ пур тенине илтнĕ Каврăç: çынна пĕлтерсен япала пулмасть иккен – хăлхине кĕрсен шуйттан илсе каять. Такам сăмаххи мар, малтан палăртса хунине çынна систерсе хурсан пурнăçланайманни нумай килнĕ Ваçукăн хăйĕн те; ним шарламасăр хăв йăтса çӳресен лешĕ пурнăçланать. Мĕншĕн ку? Пурнăçлаймасан та хăвна ху ятламастăн, отчет тумастăн. Çавă. Тепре хăçан мехел çавăрăнса çитет – çавăн чух пурнăçлатăн. Васкатакан çук. Çынна евитлемен. Никам та аса илтермест. Выртать мĕн палăртни вăрлăхĕ шăтса тухмашкăн лару-тăру пуласса кĕтсе. Халĕ пĕрре çеç персе янине шуйттан илтеймерĕ пульха. Илтмерĕ пулсан аванччĕ. Хăлхине пырса ан кĕтĕрччĕ! Урăх шарламĕ никама та. Йăтса çӳрĕ шухăшласа, вăхăт çитсен алла ручка тытса ларĕ. Сюжечĕ пур. Ятне те палăртнă: «Сăрт-ту çинчи хĕр». Малтанласа пĕр темиçе кун хушшинчех çырса тăкма пултарĕ Ваçук ăна. Кайран лайăхлатасси, куçара-куçара çырасси – штангист пĕр тренировкăрах тонни-тоннипе тимĕр çĕклениех мар, спорт мелĕпе утаканĕ тăват çĕр метрлă çаврăма кашнинче минут çурă канса илӳçĕн çирĕм ултă- вăтăр хутчен мĕн вăй килнĕ таран çавăн пек хăвăрт ыткăнса тухниех мар. Çав мелпех пилĕкшер çухрăмлă хушша виçĕ-тăвата хут ыткăнни те мар. Каврăç Ваçукь ăмăрту умĕнхи хăнăхусенче пĕччен, хăй тĕллĕнех сахал-им тӳснĕ, малашне те тӳсĕ, çавнашкалах çырасипе те чăтĕ. Тренировка йĕрки евĕрлех, çырас меслечĕ те çук мар ĕнтĕ унăн.

Мехел çавăрăнса çитмест, вăхăт тивĕçмест. Ĕçе те утмалла, шкул ачисене хутла вĕрентмелле; урок хатĕрлемелле; ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене ирттермелле; шкулĕнче те – вĕçе-вĕç пуху, канашлу, лару. Парти членĕ май, пĕр пуххинчен те сиксе юлаймастăн; вырăнти комитет председательне суйланă – ку лава та туртмалла. Ачасене ăмăртусене хатĕрлемелле, унта ертсе каймалла... Тепри пулсан тахçанах алă сулмалла мĕн пурринчен чылайăш енне: лава çурри пушатса

хăвармалла. Каврăç Васукь текмеçленет-ха. Хăйне хăй мăнаç туять тата вăл ăна та, куна та ĕлкĕрме пултарнăран. Сĕтел хушшине çыхланса лараймарĕ çеç-ха повеçлĕх капланнă шухăша, сюжета хут çине кăларса тăкмашкăн. Спортне-и? Çул кайнăçемĕн вăл хăйех тарса пырать-ха, вĕçерĕнесшĕнех – тăруках хыça тăратса хăварас марччĕ ăна та. Тертленмелле, тӳсмелле. Çырма лариччен пуçра йĕркеленнĕ сюжет вăл аякри сĕм вăрман кăна-ха: прачакĕсем, сукмакĕсем паллă мар саншăн; патне çитсен, шала кĕрсен, уçланкисем те, кварталĕсем те майĕпен куç тĕлне тухаççĕ, çавăн пекех мĕн шутланинчен те повесть пулатех тесе шаннипе ун çинчен тепре çăвар уçса иларĕ Васук çын умĕнче. Хальхинче самай пысăк ăмăрту хыççăн ресторанта апат çинĕ чух пуçра мĕн пурри чĕлхе вĕçне килсе вĕçерĕнчĕ. Тĕрлĕ хулари çăмăл атлетсем пухăннăччĕ пĕр сĕтел хушшине.

– Эсĕ манран та аслă, çапах спорта пăрахман. Ывăннине епле ирттерсе яратăн? – ыйтрĕ Каврăç Васукь ятлă-шывлă спорт мастерĕнчен.

– Хими заводĕнче ĕçлетĕп эп. Ĕç йывăр. Шалу пĕчĕк мар. Спорт комитечĕ мана ăмăртусене чĕнет, уйăхшар хушă хатĕрлентерет. Уншăн заводра мĕн чухлĕ тӳленĕ, çавăн чухлĕ тӳлет, – пытармасть лешĕ, уйрăмах чăтăмлă пулма ыйтакан спорта – хăвăрт утассине парăннăскер.

– Эпĕ шкулта вĕрентетĕп, ăмăртусене те кăпăр-капăр кăларса ямаççĕ мана, аран-аран тухкаласа килетĕп, – чăнне каларĕ чăваш ачи хăйĕнне.

– Тек ăмăртма пăрахас тетĕн-им вара? Тепрер виç-тăват çул аванах çӳреме пултаратăн, – терĕ ăна Балтика тăрăхĕнчи республика командишĕн ăмăртаканскер.

– Повесть çыратăп, – хăйĕн тĕллевне пĕлтерме хăйрĕ Васук. – Сире те сăнарлăп унта.

– Çыр эппин. Тепĕр спорт шутне лектĕр саншăн вăл: терчĕпе пĕрлех савăнăçĕ вăрăнтăр. Çĕнтерӳсем ту, – хавхалантарчĕ ку юлташ, çулĕпе Васукран та аслăскер.

* * *

Мĕн шутласа хунине ахаль çеç çăвар уçса каламарĕха кунта Васук: темиçе сыпăк тăрлаттарса тăкнăччĕ ĕнтĕ вăл, çыру урхамахĕ сиктерсе каймалли çул çине тухнăччĕ

– çырмалла та çырмалла кăна. Ăмăртăвне хатĕрленме те пăрахманччĕ-ха – вырсарнисенче ятарласах самай пысăк калăпăшлă тренировкăсем ирттеркелерĕ вăл, ирхине сакăр сехетрен пуçласа кăнтăр иртни тăваттăччен çул инçĕшне виçрĕ те виçрĕ, пуçри шухăша ывăнни мăкатсах яриччен илемлĕ сăмах-сăнар сюжечĕпе унти ĕç-пуç çыхăнăвĕ пирки шухăшларĕ пынă май. Калав çырнă чухнехи меслетпе пĕр темиçе ăстрăмра çупса хума ĕмĕтленнĕççĕ вăл хайлав кӳлепине малтан, анчах çырнă май «йывăççин тураттисем» йышлансах-йышлансах пычĕç-çке – сарăлса анлăланса кайрĕ каласси. Пысăк инçĕше чупса тухмашкăн старт илнĕ спортсмен финиш йĕрне çӳл юпа пек катаранах курса-туйса тăнă евĕр, япалан вĕçне те курать-ха Ваçук, анчах инçе çул тăршшĕне тухма марафонецăн пайтах каймалла та каймалла тенешкел, çырмалла та çырмалла авторăн хайлав вĕçне çитерме. Çырăвăн çав вăрăм çулĕнче пулнăран та ĕнтĕ «повесть çыратăп» тесе çăвар уçрĕ спортсменсен йышĕнче – хальччен хăй пĕлнисем те, пĕлменнисем те, палланисем те, палламаннисем те хушшинче Ваçук. Пуçра çак çĕклем тăнăран та пуль, тренировка калăпăшĕ çителĕклехчĕ пулин те, темскер хăвăртлăха – спортри хĕрӳ туйăма – сĕвĕрĕлтерчĕ пулмалла кăштах унăнне: ăмăртăвĕ пит ăнăçлах килчĕ теме çук. Шутларĕ çав ĕнтĕ çын: çырасси çеç юлать, ыттинчен хăтăлмалла, хуллен-хуллен пушанмалла. Вăй-хал айхашăвĕнчен ватта сулăниччен хăпмарĕ-ха çав вăл, тем шыраса тупайман евĕр, тем илсе çитереймен пек туйрĕ хăйне. Тӳррипе асăнсан, вăл спорта малтанах çырас ĕмĕтпе, унти çынсемпе паллашас тĕллевпе явăçнăччĕ. Шырарĕ, шырарĕ – сунарçă пĕр яра куна, унтан тепĕр яра куна ним тупаймасăр сулланса çӳренĕ евĕр çӳрерĕ; ак пĕр ăмăрту хыççăн юлташ хăй çичен каласа пачĕ те, самантрах шухăш çуралчĕ, сюжет йĕрленчĕ – ку таранччен хăй мĕн чухлĕ тертленни, курни-илтни çав лава тиенет халь; сунарçă çӳресен-çӳресен кайăка тытрĕ те ĕнтĕ, халь тирне сӳмелле. Çавăн пек!

Çынна çăвар уçса каларĕ те-ха Ваçук хăйĕн аппаланăвĕ пирки – мĕн пулса тухнă-ши-ха унăн хайхи çыра-çыра пăрахнисенче? Тытса тишкерсе тухмалла мар-и ытла малаллах иртсе кайиччен: епле сăрхăнса-вăй илсе пырать сĕткен? Çĕр-шыври пысăк ăмăртуран киле таврăнсан, Ваçук кăшт сывлăш çавăр-

нă хыççăн, ывăннине ирттерсе янăçемĕн, мĕн çырнине тӳрлетме, куçарса çырма, машинкăпа çапма, хут хыççăн хут варалама, унтан ăна каллех тасатса тепре варалама тапратрĕ.

Кĕркунне. Çĕр улми пухса кĕртнĕ ĕнтĕ, ана-йăран йăлтах пушаннă. Ват ăшши тăрать: типтерлĕ, уяр. Çакăн пек чух уйхир урлă каçасси кăмăла килентерни çеç. Ăмăрту хыççăнхи ĕшенӳрен канса илӳçĕн, Васук яртлаттарса пырать çулпала хăй ĕçлекен шкула – килĕнчен улт-çич çухрăма. Çурма спорт тумĕ тăхăннă темелле ăна: урара кеда мар, ботинка, çапах хăвăрт утасси ĕнеркипех илтерет вĕлт те вĕлт. Кĕле çине тĕрĕнерех пуснă май ак чĕркуççи кукрашки суранланчĕ – ыратать самаях. Обществăн тепĕр ăмăртăвне чĕнеççĕ ăна татах – каяс килет кунăн, анчах ĕçрен ирĕк ыйтма каллех хăйĕн чупса çӳремелле-çке; хальхинче вĕткĕнес мар; хуçисем хăйсем тăрăшчăр, ăмăртăва кай тетĕр те директор, салтака командир хушнă пек, тухса вăшкăнĕ вара Васук кăнтăрта иртекен тепĕр ăмăртăва; унсăрăн... Кĕрешмешкĕн вăй çухалманнине туять-ха вăл, анчах çамрăк йыша хутла вĕрентнисĕр пуçне тепĕр ĕçе кӳлĕннĕ-çке халь çакскер: çырать!

– Ачасене садикран кайса илеймĕн-ши паян? Эпĕ иккĕмĕш сменăра пулатăп – ерçейместĕп, – тет арăмĕ ирпе, ку шкула тухса сирпĕнес умĕн.

– Асли парта хушшинче лармалăх ӳснĕ-çке. Çавăтса килеймĕ-ши?

– Ача пăхма та ачанах шанмалла сан. Йăвантарнă та пĕтĕм ĕçе ман çине... Урăх мĕнле хĕрарăм тӳссе пурăннă пулĕччĕ-ши санпа?

– Пуху паян пирĕн. Ăçтан хăпса килĕп? Тен, иртерех вĕçленсен ĕлкĕрĕп-ши?

– Ыйт эс. Çынсем ыйтаççĕ те каяççĕ, пĕр пухура та лармаççĕ – сăлтав çуккисем те сăлтав тупаççĕ.

– Эпĕ вырăнти комитет председателĕ-çке. Уроксем ирттерсе пĕтернĕ хыççăнах класс алăкне хупса пăрахса тараймастăп.

– Свети хăй продленнăй группăра. Унтан таврăнсан, ăна хăйне пăхмалла. Ача – ачах, тем те пулас пур.

– Хушса вĕрентсе хăвар.

Калаçăвĕ те ку Васук тумланнă, пушмак тăхăннă самантра çеç пулса иртет,ултă хваттерлĕ çуртра ыттисем тăрса

тухман та темелле – кунӑн ӗҫе васкамалла; ҫул ҫинче сехете яхӑн вӑхӑт иртет паянхилле ырӑ ҫанталӑкра.

Ҫак тапхӑртах малтан кӳршӗри пӗр шкул, унтан тепӗр шкул хӑйсем патне пырса кайма чӗнеҫҫӗ ӑна: спорт мастерӗ-пе тӗл пулу ирттересшӗн. Ҫамрӑк йыша мӗншӗн хавхалантармалла мар вара? Туртӑнччӑр вӗсем спорталла – кӑштах каласа пани хӑшӗн-пӗрин чунне витерӗ, вӑй-хал айхашӑвӗ енне ҫавӑрӗ.

Ак тепӗр кунхине ултӑ урок ирттернӗ хыҫҫӑн хӑйӗн киле каяс йӗрӗнчен пӑрӑнса, ҫырма-ҫатра та уй-хир урлӑ, пысӑк мар ял витӗр аякри вӑтам шкула ҫитет; ниҫта саланмасӑр кӗтсе тӑнӑ ӑна кунтисем спорт мастерӗпе курса калаҫасшӑн, мӗн юмахланине итлесшӗн. Чемпион лентине хӑйпе пӗрлех илсе тухнӑ-ха, унта медальсемпе жетонсене ҫакса тултарнӑ; хӑй спорта епле пынине, ӑмӑртусем, тренировкӑсем мӗнле хаваслӑх кӳнине ҫӑвар карса тӑнламалла каласа парать пысӑк пӳлӗме лӑк тулса ларнӑ ачасене кӳршӗ шкулти учитель. Хут тӗрки те трубка евӗр чӗркесе тытнӑ пулнӑ иккен вӑл аллине – эстафета патакки майлӑн – уй урлӑ каҫнӑ чух. Ҫавна халь тӳрлетет те ӑнланмалла пултӑр тесе уҫӑмлӑн вулать – хӑй повеҫӗнчи герой спорта епле пынине сӑнлакан сыпӑк ку, ҫав хушӑрах хӗрпе каччӑ пуҫласа паллашни ҫинчен асӑнни те. Мӗнле илтӗнет-ши вӑл, епле тӑнлаҫҫӗ авторне ларакансем – ҫавна та тӗрӗслет Каврӑҫ Ваҫукӗ. Аванах пек туйӑнать, ҫырни йӗркеллех темелле.

– Кайран вӗсем ӑмӑртусене пӗрле ҫӳреме тытӑнаҫҫӗ-и? – ыйтать ҫивӗч куҫлӑ пӗр хӗр ача геройпа героиня шӑпине пӗлесшӗн.

– Ҫӑмӑлах килмест-ха кашнин  пурнӑҫӗ, анчах ҫут маяк – тӗллев патне, ҫул йывӑр килсен те, шав малаллах талпӑнаҫҫӗ вӗсем. Телейӗ патне ҫитеҫҫех тесе шантармастӑп, ҫыннисене сӑнласа парасшӑн кунта эпӗ, – пытармасть автор. – Халь самай ҫырнӑ самант – хӗрӳ тапхӑр манӑн. Паян ӑмӑртура кӗрешмеллискерччӗ эпӗ; тен, унта, шутланӑ тӑрӑх, мала та тухнӑ пулӑттӑм-и? Каяймарӑм ав. Ҫула тапранса тухасшӑн тимлемерӗм – хуҫасене ярӑр тесе тархасласа ҫӳрес килмерӗ. Ачасене те вӗрентмелле. Вӗсене тӑтӑшах ӑҫтан ҫын аллине шанса хӑварӑн? Кайран хӑвӑнах экзамен тыттармалла пулать-ҫке.

Тепĕр ик кунран яла таврăнаспа, киле кĕрсе те тăмасăр, пач урăх еннелли шкула юрттарать Каврăç Ваçукĕ – унти ачасем кĕтеççĕ ăна. Тăваттăмĕш классем ятарласа чĕннĕ; вĕрентекенне пĕлет ку, хăй те спортсменка та, мĕншĕн кăмăлне килтерес мар унăнне?

Каллех спорт илĕртӳлĕхĕ çинчен каласа парать çамрăк ăрăва учитель, повеçĕн пач урăх сыпăкне вуласа кăтартать халь тата – тĕрĕслемелĕх: епле итлеççĕ ăна, кăсăклантарать-и?

– Хăш ялсем вăл? – пĕлесшĕн иккен герой çинчен.

– Асăнмарăм-и вара? Асăнтăм-çке, – тӳрех татса каламасть автор.

– Э-э, хăш района кĕрет?

– Ăна та палăртнă-ха. Анчах, ачасем, астăвăр: ку вăл илемлĕ произведени, çавăнпа адресне, очеркри пек, тĕптĕрĕс кăтартас темерĕм.

– Тепĕр ăмăртура çĕнтерет-и вăл?

– Çĕнтерет пуль тетĕп.

* * *

Кулянать Ваçук, ытлашши хытах мар та, çавах ӳкĕнет. Кăнтăрти кĕрешӳре Шупашкарти ун юлташĕ финиша çитмесĕр чарăннă, Союзла республикăсенчи ытти ачасен кăтартăвĕсем те пысăках мар. Çивĕчлĕхшĕн кăшт хатĕрленмеллеччĕ те – ăмăртăвне çитсе килмеллеччĕ ял ачин, тен, ют çĕр-шыва кайса вăй виçме те тивĕç илетчĕ. Çу каçа тар кăларнăччĕ-ха вăл, халь темшĕн тамалчĕ. Темшĕн мар-ха, тĕп ĕçсĕр пуçне тепĕр ĕçе – çырассине – тытăннăран.

* * *

Мĕн каламалла-ши-ха ача чух шкулта хăй вĕреннĕ самантсем пирки? Сăвăсене, тĕп шухăшĕ чуна ярса илнĕ-и, илмен-и, пăхмасăр калама ăнăçлă вĕреннĕ Ваçук, сăвă классипе «тăваттă» паллă ларттарни те уншăн çителĕксĕр пулнă, тĕпрен илсен, «пиллĕкшĕн» тăрăшнă. Сăвă таврашне никам хушмасăрах, кĕнекере пуррине çеç мар, числинниксем çинчен те – выльăх кĕтнĕ чух – кунне пĕрер вĕреннех вăл. Ытларах вырăс поэчĕсен сăввисене юратнă, чăвашсенне те, лирикăллисене, поэмипех вĕренме пултарнă Ваçук. Грамма-

тика урокĕсенче тишкерекен тĕслĕхсем чуна яра-яра илнĕ унăнне. Вырăс классикĕсен йĕркисем ăша кĕрсе юлнă. Епле хитре, туллин, сăнарлăн калама пултарни тĕлĕнтернĕ ача-на. Чăвашла пичетленсе тухнă кĕнеке-журнал алла лекнĕ пулсан, ăна самантра «хыпса çăтнă» – хăвăрт вуласа тух-нă; институт пĕтернĕ тĕле тăван литературăра ку вăхăтра мĕн пуррине куç хыçне хăварман, ăсталăха тишкерекен кри-тика статйисем те уншăн тĕш апат шутĕнчех пулнă. Чăваш чĕлхипе литература учителĕ пулма вĕренсе тухрĕ вăл. Ăс пачĕ ачасене хавхаланса, çунатланса, шкул алăкне учитель пулса уçсассăн. Анчах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна – тăван ял çывăхнелле – куçнă чух пĕр хушă (ултă çул!) парти райкомĕн инструкторĕнче вăй хучĕ – шăпах «çемçелӳ» тесе палăртнă çулсенче. Çĕр-шыва ертсе пыраканне, ун хыççăнах вырăнти пуçлăхсене те улăштарсан вара тепĕр çу вĕçĕнче ачасене хутла вĕрентессине каллех тĕпе килтерчĕ Кавăрç Ваçукь; кунта вара (самантлăха-и?) урăх предмета алла илме лекрĕ: вырăн тупăннă май сакăр çул вĕренмелли шкулта физкуль-тура тата вырăс чĕлхипе литератури сехечĕсене пачĕç ăна – тăваттăмĕшĕнчен пуçласа саккăрмĕш класс таранах.

Эй, тăван тĕнче! Мĕн тери илемлĕ иккен вырăс литера-тури! Самай хушă шкул программипе çыхăннă произведени-сене вуламанран-ши, Кавăрç Ваçукĕн чунне сапăр сунарçă чирлĕ мăнукне сыватассишĕн вăрманта кайăк тытма çӳрени çинчен калани, кайăкне тĕл пулсан шеллесе пеменни; те-принче ачасем çĕнĕ çул елкине тайгара ирттерме ĕмĕтленни те, виççĕмĕшĕнче йытă шурлăх тавра çын хыççăн çăкăр шăр-шине туйса йĕрлесе пынине сăнлани те, ытти хайлав-халап та чат асамлăн чуна ярса илет халь ачасене вĕрентнĕçемĕн учителе хăйне те. Чĕлхе урокĕнче тишкерес пуплевсене – ват çын хурсене вăрăм хулăпа хăваласа пасара сутма каять тени те; казах анлă уй, вăрман е шыв-шур урлă каçнă чух та канма шутламасть тени те тата ытти те, тата ытти те – хăй вĕреннĕ самантрах пуçа кĕрсе юлнă-мĕн те, пĕрре вуланипе аса илсе, çав тĕслĕхсене ним пăхмасăр тишкерет, ăнланта-рать Кавăрç Ваçукь урокра ачасене. Хăй тĕлĕнет, шута ка-ять: епле сăнарлăн, витĕмлĕн çырма пултарнă вырăс лите-ратурин классикĕсем! Çавсемпе танлашасчĕ; чăр, çывăхне пырасчĕ!

Ачасене вĕрентме хушнисенчен вырăс литератури чылай илемлĕрех, техĕмлĕрех-мĕн хамăр чăвашсенчен ку тапхăрта. Темисем пур-ха тăван халăх литературин учебникĕсенче, илемлĕх енчен вара пурте «сикрĕ тухрĕ çырмаран, пĕкке хуçрĕ çурмаран» е «тăрă шывăн ăшĕнче кăвак пĕлĕт явăнать» шайĕнче мар-çке-ха. Ыттисем, лайăх тенисемех, чун патне пымаççĕ, аса юлмаççĕ. Халь вырăс чĕлхипе литературине вăтам сыпăкри ачасене вĕрентсе, Каврăç Ваçукь хăй хавхаланать – тĕш апат çинĕн туйăнать ăна. Çавсем пек çырасчĕ; ăçта унта! – çывăхне пыраясчĕ.

Ĕç-хĕл мелĕ кашни çыннăн хăйне евĕр теççĕ. Каврăç Ваçукĕн еплерех-ха вăл? Ав çынни уроксем хыççăн уй урлă каçса киле тавраннă та арăмĕ пĕçернĕ апата ăшă кăмака чĕрçи çинчен илсе ума лартать; хĕр ачи шкултан тавраннă, сĕтел хушшинче киле панă ĕçе пурнăçласа тĕрмешет; ултă сехет çитнĕ тĕле икĕ ывăне садика кайса илмелле-ха. Е арăмĕ, е хĕр ачи çитсе илсе килет вĕсене; ашшĕ, уроксем ирттернĕ, унтан уй урлă каçса самай ĕшеннĕскер, вĕри апат хыççăн лĕмпĕрех çемçелсе каять те – диван çине кăшт тайăннă-и е тӳшек çинех тӳннĕ-и – мĕнле куç хупнă çапла ыйха чăмнă. Сехет çурăран, йывăрланнă шăм-шака вăраткаласа, вырăн çинчен тăрать вара. Виç ача, ашшĕне чăрмантармасăрах, урамран тĕпĕр-тĕпĕр кĕме пĕлчĕр çеç пӳрте. Чĕписен амăшĕ, медицина сестри, – ĕçре, дежурствăра.

Ыйхăран уçăлнă хыççăн пӳлĕмре е кил хушшинче уткаласа çӳресен, Каврăç Ваçукь сĕтел хушшине вырнаçать: ыранхи уроксене хатĕрлемелле. Шкулта тата килте пĕрер экземпляр ун кĕнекисем, пособисем. Уй урлă кĕсьене шăнăçмалли пĕчĕк тетрадьпе çеç каçать – утма çăмăл. Халь ав килте ыранхи расписани тăрăх кашни класшăн ал лаппи евĕр тетраде мĕн вĕрентес плана çырать, вулать, çырать, каллех тишкерет; изложени е диктант палăртас чух кăмăла каякан, темăна вĕреннĕ май вырăнлăрах текст шыраса ытларах та хăшкăлать. Пӳрт ача-пăчапа шăв-шавлă, ашшĕ çавна ним чул та туймасть – вăл урок хатĕрленет. Ачисем çывăрма пуçтарăнас умĕн ĕлкĕрет ыран мĕн вĕрентессине хатĕрлесе – ĕнтĕ ĕнсе çăмăлланнă пек, унта тем йывăр япала хунине, пусса тăраканнине илсе пенĕ пек халь. Чуна ирĕклĕ.

Ачасем ҫывӑраҫҫӗ. Ашшӗ, ав, тулта, тӳпенелле пӑхса, ҫӑлтӑрсене шутласа кӗчӗ те сӗтел хушшине тепре шӑнӑҫса ларчӗ. Ҫырать халь вӑл, повесть капине йӗрмелет. Ыткӑнса каясла, такам ятран чӗнсен те чӗннине туйми перона хут тӑрӑх юрттарать те юрттарать.

Ҫурҫӗр ҫитет тем. Юрӗ паяна. Ку касӑкӑн вӗҫне тухнӑ. Ыттине ыран, май килсен, мӗнле те пулин чӑрмав сиксе тухмасан, шкулта пуху тавраш̆ӗ те пулмасан, иртерех таврӑнса малалла сыпӑнтарӗ.

Пуҫ ҫурӑлса тухас пек-ҫке – тӳн те кай ҫавӑнтах. Тулта уткаласа ҫӳрет Ваҫук. Кӑштах та пулин уҫӑлать, пуҫа кантарса илме тӑрӑшать ҫапла. Ах, тӑнлав тӑпланмасть-ҫке, вӑл ҫав-ҫавах сӗрлет; тӗрлӗ туйӑм, тӗрлӗ шухӑш-пулӑм ҫуралать – ҫаплах шухӑшлать, пӗр вӗҫсӗр ҫаврӑнать хӗрсе кайнӑ пуҫ мими. Хӑҫан вӗреме чарӑнӗ вӑл? Фантази тӑвӑлӗ мӗншӗн лӑпланмасть? Каш-каш ҫил иртсессӗн те, ҫанталӑк майӗпен ҫеҫ тӳлекленет ҫав. Вырӑн ҫине кӗрсе выртсан та, шӑхӑшлама пӑрахмасть ӑс-пуҫ. Ҫавӑнпа ыратать вӑл, кашлать. Шухӑшпах, тӗлӗкпех ҫывӑрса каятӑн. Ӗҫе ҫитмелле те, ирхине вӑхӑтра вӑранатӑнах. Выртӗччӗ те ҫын йӑванкаласа тепрер сехет – май ҫук, ӗҫе тухса утмалла.

– Света, атя тӑр. Шӑллусене вӑрат. Садика ярса хӑвар хӑв шкула кайнӑ чух вӗсене эс, – ҫапла калаҫса илет ачисемпе ашшӗ апат ӑшӑтнӑ самантра, апат ҫинӗ хушӑра.

– Эсир тӑтӑр-и, ачасем? Ура ҫинче пулсан аван. Эп уттартӑм, ӗлкӗрмелле тата. Ҫанталӑк ҫумӑрлӑ ав. Эсир ытлашши пылчӑк ҫӑрса ан ҫӳрӗр, тирпейлӗрех пулӑр.

Пӗртен-пӗр ҫул ҫеҫ мар, ик-виҫ ҫӗртен пур Ваҫукӑн хӑй вӗрентес шкулне ҫич ҫухрӑма утмашкӑн. Варсем тӑрӑх тепӗр ик ял айккипе иртмелле кайсан, ҫулӗ вӑрӑмланать те-ха, пылчӑк ҫӑрмастӑн ҫапах – ҫерempe пыратӑн. Хӑть ӑҫти кукӑрпа ҫавӑрӑнсан та, пуҫра – ҫӗркаҫ ҫырнӑ хыҫҫӑнхи малалла тӗвӗленес, тӑсӑлас ӗҫ-пулӑмсем. Хатӗрех, хатӗрех пулса тӑрать ҫӗнӗ сыпӑк. Халь лармалла та ҫырмалла, халь лармалла та шурӑ хута хуратмалла тепӗр икӗ ӑстрӑм. Епле вирлӗ лару-тӑру, хӗрӳ хутшӑнусем киле-киле капланнӑ! Ҫут ҫанталӑкӗ те. Сӑрт-ту. Тӳпе-сопка. Ун ҫатми ҫинче хӗвел пайӑркине ташлаттаракан ҫут пӑр, нихҫан ирӗлмен шур юр. Ҫавӑнталла выртакан ансӑр каҫӑри ура айӗнче шакӑл чул. Хӗр. Каччӑ. Тӑвар

суланчинчен пăчăртанса тухнă евĕр кĕшĕл тар сарлака ĕнсе çинче. Аякри çут тӳпепе пĕр тĕслĕ вăл. Чим, «Тӳпе-сопка çинчи яш кĕрĕм» тесе хумалла мар-ши ятне? «Сăрт-ту çинчи хĕр упраç» тени те япăхах пек мар-ха. Тен, «Тӳпе каçăхать?» Вырăсла асăнас пулсан, «Вершины покоряются» теме пулать. Хут çине çыра-çыра тишкерсе пăхмалла куна.

Çын утать. Пуç шухăшпа, повеçĕн пулас сыпăкĕсемпе, унăн ятне-шывне те тивĕçлĕн шайлаштарассипе тулнă – этемми хăй, романтика çĕкленĕвĕпе çунатланнăскер, кунта чăваш çĕрĕнче нӳрлĕ курăк çийĕн çерempe çумăр айĕн талпăнать. Шкул патне çитерехпе, шăм-шак ырнипе ĕнтĕ, шухăшлав сĕвĕрĕле пуçлать ерипен.

– Сывлăх сунатпăр...

Ваçук шкула çитрĕ иккен. Ачасем. Вĕрентекенсем. Учительсен тăвăр пӳлĕмĕ. Класс. Класс журналĕ. Партăсем. Урок калама хатĕр ал тăратнă ачасем... Повесть темипе çыхăннă ĕç-пулăм палли те çук темеллех юлман пуçра. Ачасемпе калаçни, çынпа хутшăнни çавна пĕтĕмпех манăçтарса янă. Кунта халь – урăх пулăм, урăх шухăш, урăх ĕç.

– Мĕн ыйтни ăнланмалла-и? Хăшĕ хуравлас тет?

Тулта шăпăр-шăпăр çумăр çăвать, йывăç тураттисем тăрăх йăмран çĕре ӳкеймен тăсланкă çулçисем тăрăх пушшех шултра тумла пулса патлатать шыв пăрça, е йăр-йăр юхать вăл – çумăр; икĕ класс шăнăçнă çуртăн пусма картлашки умĕнчи хурăнăн шерепеллĕ тураттисен тенкĕ евĕр вĕтĕ çулçи тăрăх вара йăрлать, патлатать, шăпăр-шăпăр тăкăнать çумăр. Пӳлĕмĕн анăç енчи чӳречин куçĕ те нӳрелет, йăр-йăр çăвăнать. Çил пур-ши? Вашлатни илтĕнмест-ха, палли те çук. Çапах вĕтĕ çумăр тӳперен тӳп-тӳрĕ мар, анăç енчен кăшт чалăшраххăн ӳкет иккен. Вăрăма кайĕ-ши йĕпе-сапа, хăвăрт иртме пултарайĕ-ши? Тӳрех шăнтса лартмасан, ку çине нӳрĕ тăни, ăшă пулни хирте кĕрхи калчана ихме лайăх. Вăй илсе, паркаланса, тымарланса юлтăр вăл.

– Василь Васильч! Тухма юрать-и?

– Çырса пĕтертĕн-им?

– Кăшт çеç юлчĕ.

– Тухса кĕр эппин.

Йĕпере ача-пăча та лăпкăн ĕçлет – пӳртре, ăшă çĕрте, типĕ вырăнта вулас килет, çырас кăмăл çĕкленет, алă хăй-

ех ручка патне туртӑнать, куҫ вулама кӗнеке шырать. Ытти чухнехипе танлаштарсан тӑхтав вӑхӑтӗнче те ачасем ытлашши тӗпӗртетмеҫҫӗ, ҫав териех йӑлт-ялт мар халь. Хушнине тӗплӗнреххӗн те тӑваҫҫӗ. Ав вӗсем изложени пуҫ ҫӗкелемесӗр ҫыраҫҫӗ, ыттине пӗтӗмпех маннӑ. Учитель ретсем хушшипе хуллен утса тухать, ача мӗн йӗрленине куҫлать, йӑнӑш пулнине кӑтартать, предложени тытӑмӗ пирки тепре шухӑшласа пӑхма сӗнет: подлежащипе сказуемӑй килӗшнӗ-и? Ытти членсем хӑйсен вырӑнӗнчех-и? Пӗр сӑмахпах ҫине-ҫине усӑ курмастӑн-и? Кайран хӗрлӗ чернилпа тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн япӑх паллӑ ан пултӑр.

– Ытлашши ан васкӑр. Шӑнкӑравччен вӑхӑт нумаях юлман пулин те, ҫав тери ан хыпаланӑр – йӑнӑш яма пултаратӑр, – асӑрхатарать учитель ачасене.

Пат! пат! лекет ҫумӑр тумламӗ чӳрече куҫне. Пусма вӗҫӗнчи хурӑнӑн шерепеллӗ туратти урхамах ҫилхи евӗрлӗн усӑнсах аннӑ – кӗмӗл тенкӗ ҫакнӑ пек епле йывӑр пуль халь вӑл; авӑк турат епле чӑтать-ши?

Пӳртре ҫырма та, вулама та канлӗ. Мӗншӗн кӗркунне ручка патне алӑ ытларах туртӑнать-ши? Паллӑран паллӑ поэт шӑпах кӗр кунӗнче мӗн чухлӗ ҫырнӑ, темиҫе ӗмӗре пымалли йӗркесем шӑрҫаласа кӑларнӑ шӑпах ҫут ҫанталӑкӑн ҫак тапхӑрӗнче. Кавраҫ Ваҫукӗн те – пӗчӗк кӑна ҫыннӑн та – шӑп халь ыткӑнса каясла ҫырас килет; ачасем те тимлӗреххӗн вӗренеҫҫӗ ав. Вӗсен те хевти ку вӑхӑтра пысӑкрах.

– Кӗҫех шӑнкӑрав пулать. Ӗҫе вӗҫлерӗр-и? Тепре вуласа тухрӑр пулсан кӳрӗр тетрадьсене, – пӗлтерет учитель. – Пӗрерӗн мар, партӑран партӑна парса кунта ҫитерӗр.

– Ах, мӗн пулать-ши ман? Тӑрӑшсах ҫыртӑм терӗм-ха хама, – калаҫать, урок вӗҫленсен, чӗрӗ куҫлӑ арҫын ача.

– Мӗнле пулӗ ӗнтӗ – тӗрӗслесен курӑнӗ.

– Василь Васильч, – чӗнет тепри, – физкультура ӑҫта ирттеретпӗр паян? Коридарта-и?

Тӗп ҫуртӑн класс пӳлӗмӗсен умӗнчи хушӑ ик-виҫ йыша йӗркеленсе тӑмалӑх ҫеҫ – унта алӑпа хускалкаласа та кӗлеткене хуҫлатса гимнастика хӑнӑхӑвӗсем пурнӑҫлама е стройпа сылтӑма-сулахая ҫаврӑнкаламашкӑн вӗренме кӑна май килет.

– Пӑхӑпӑр-ха унта, – сӑмахлать учитель. – Малтан пӳртекӳнчех йӗркеленсе тӑрӑпӑр.

Вăшт-вашт иртеççĕ ачасем пĕр-пĕрин çумĕнчен класра – ытлашши йăлт-ялтлăх палăрмасть пулин те тăхтавра хĕвĕшӳ пурах; пĕри юлташне тем кăтартасшăн-ши, парасшăн-ши; тепĕр иккĕн калаçса тăраççĕ ав; итлекенĕ хирĕçлет пулас, юлташĕ ĕнентересшĕнех ăна. Мĕн çинчен сăмахлаççĕ-ши вĕсем – пĕлме çук. Пĕр çак çеç паллă: чунĕ пур вĕсен, чунлăскерсем; кашниннех хăйсен интересĕ, хăйсем пĕлес-тăвас тени. Учитель тетрадьсене чĕркесе, çумăр лекмелле мар хупласа, хул хушшине хĕстерсе, класран тухать, – тĕп çурта – учительски еннелле утать.

– Сывлăх сунатпăр, Василь Васильевич!

– Сывлăх сунатпăр!

Пĕр курнă ачасемех, урокра вĕрентнĕ шăпăрлансемех тепре хирĕç пулса çапла сăмах хушаççĕ учителе. Лешĕ йăл кулать те хăйсене саламлать.

Пысăк тăхтав вăхăтĕнче Василь Васильевич шкул картишĕнчен тухса çырмана анать: çерем мĕнле унта – пылчăкланса кайман-и? Футболла кунтах выляттарас пулсан резина мечĕке нимĕн те пулмĕ-ха та – ачасем хăйсем йĕпенсе пĕтĕç. Çырма тăрăх ял леш пуçне – витнĕ йĕтем айне çитме пулать. Резина мечĕк иккĕ илсен çитĕ – ушкăнланса выляма май килĕ. Резина атăпа хальхи ачасем – ĕлĕкхи чухнехилле çăпатапа мар; çире те плащ е куртка.

Мĕн палăртнине тӳрех шарламасть-ха учитель, хăй шухăшне пуçа килнĕ-килмен персе ямасть. Акă урока пуçтарăнма шăнкăрав янăрарĕ те, класс коридора ретленсе тăчĕ. Дежурнăй пурне те пĕр йĕрпе тӳрленме сĕнсе командăлать те учителе урока хатĕрри çинчен пĕлтерет. Хастаррăн сывлăх сунать класс вĕрентекене хирĕç. Çырма тăрăх витнĕ йĕтем айне каятпăр тесе пĕлтерсен вара кашнин пичĕ-куçĕ çуталса йăлкăшса илчĕ; çиелти тума тăхăнмашкăн пӳлĕме каялла кĕмешкĕн халех сирпĕнмелле пĕри, анчах апла юрамасть иккен – хушасса кĕтмелле. Тепĕр самантранах ачасем çырма тăрăх вĕçе-вĕç ыткăнаççĕ ав, хушшăн-хушшăн утаççĕ, хушшăн-хушшăн чупаççĕ. Çырма ялăн ик урамĕнчи килсен анкартийĕсем хыçал енчен тĕкĕннĕ тĕлпе пырать: пĕр енче пĕрисен анкартийĕ, тепĕр енче леш касрисен паçми. Çумăр çуса тăнăран çырмара шывĕ нумайланнă, лакăмсем сарăлнă, шарлаксенче ытти чухнехинчен вăйлăраххăн илтĕнет

халь юхăм сикки, хăш-пĕр çĕрте лакăртатать, шывĕ те лакăм тĕлĕнче кăпăкланать те шап-шурах, супăнь кăпăкĕ темеллех туйăнать, улăм пĕрчи витĕр тыт та вĕр – хăмпă хыççăн хăмпă вĕçĕ.

Ачасем ыткăнаççĕ. Малта Василь Васильчран юлмасăр виççĕн-тăватăн пыраççĕ, чылайăшĕ юлнă-ха, сывсăртарах-хисен хуллен утса тухсан та юрĕ. Çухрăм ытрарах чухлĕ ку хушă, çырма кукăр-макăрĕсемпе кăштах тăвалла хăпарса анаталла анмаллисем пуртан вăй-хал çителĕклех туптанать кунта – физкультура тăк физкультура урокĕ пултăр вăл, çамрăклах ӳтре-пĕвре юн çывăрса ан лартăр!

Витнĕ йĕтем, пĕр бригада капанне çапса тыррине-пуллине типĕтсе-сăвăрса илме хатĕрленĕскер, спорт залĕ мар пулин те тепĕр манеж евĕр пысăк. Анчах кунта, çӳлтен ӳкекен çумăр лекмест-ха та, çил кастарать – яланах çил унта – витнĕ йĕтем айĕнче. Куна пĕлмест мар-ха Василь Васильч, пайтах пулса курнă унашкал çĕрте, ĕçленĕ те. Анчах малтан пĕлнинех манатăн иккен, тата урока мĕнле те пулсан усăллăрах ирттермелле-çке, çавă хĕтĕртсе килчĕ ăна.

Чупса çитнĕ хыççăн тĕрлĕ хусканусем тумалла-ха малтан. Ача-пăча вăл, тилхепене пĕр лăнчă ярсан, çемçелсех каять – самай кирлĕ чухне те хăнăхтарусем тума пăрахать. Çич-сакăр минут хушши – тĕрлĕ хускану. «Мечĕкле выляма вăхăт юлмасть, пĕр чăрмавсăр лайăхрах пурнăçланă пултăр», – хăтăраççĕ ачасем пĕр-пĕрне.

Акă йĕркеленнĕ – ĕçне уçнă, хĕр ачасем те, арçын ачасем те икшер ушкăна уйрăлаççĕ; пĕрисен мечĕке алăпа персе хапхана кĕртмелле, теприсен – футболла.

Йĕтем çатма пек такăр, çил кашлаттарать пулин те, нимĕн те мар; ирĕкре çумăр çусах каймасть иккен, ку тĕлте çерем лаптăкĕ те пур ав – футболла ирĕкрех выляççĕ чылай хушă.

Василь Васильч футболист мар, йĕлтĕрçĕ, çăмăл атлет, хăвăрт утаканĕ; ачасем хирĕç тăраканран унран ăнăçлăрах та улталаса илсе каяççĕ çăмхана; учитель те çав-çавах ахаль пăхса тăмасть, пĕр командишĕн вылять. Самаях ăшша пиçнĕ вăл, тарланă. Ачасем мĕнле-ши? Вĕсен çӳçĕ-пуçĕ мунча кĕрсе тухнă чухнехи евĕр йĕпеннĕ ав. Чупаççĕ, мечĕке хăвалаççĕ, пĕр-пĕрне вăлтаççĕ, хапханалла талпăнаççĕ.

– Хĕр ачасем, мĕн эсĕр пĕр çĕре кĕпĕрленсе тăнă?

– Вылятпăр эпир, вылятпăр.

– Астăвăр, отметка чакармалла ан пултăр.

Татах вылямалла та, мĕн каçченех чупмалла та мечĕк хыççăн арçын ачасем – урок вĕçленет, тепĕр урока ĕлкĕрмелле...

Кăмăллăн, пулни-иртни пирки калаçкаласа таврăнать класс каллех çырма тăрăх, хальхинче шыв юххине хирĕçле. Лакăмра, йăмра айĕнчи хӳтĕре, шыв сикки кăпăкĕ самаях пухăннă, пĕр ачи, ав, ăна ывăçпа илсе ал тупанĕ çинчен вĕçертесшĕн – вĕрсессĕн ункăн-ункăн каймасть мур, сӳнет çеç.

Çумăр çумасть пек те, хуллен тумлатех иккен – типмест, ытларах йăлтăртатса пырать ав çири куртка.

– Василь Васильч, районта ку хушăра ăмăртусем пулмаççĕ-и?

– Хĕллене хатĕрленмелле. Халь чупни те йĕлтĕрпе çӳреме хатĕрленниех.

– Кубоксене сыхласа хăваратпăр пуль-ха кăçал та?

– Пĕтĕмпех хамăртан килет: тăрăшмалла, çывăрса выртмалла мар çеç.

* * *

Уроксем вĕçленнĕ. Пуху таврашĕ пулмасть пулин те вĕрентекенсем киле васкаман: хăшĕ тетрадь тĕрĕслат, хăшĕ ыран мĕн вĕрентессине палăртать – вулать, çырать. Василь Васильевич хăйĕн яланхи вырăнне – мăн сĕтелĕн пĕр кĕтессине вырнаçса ларать. Урока килте хатĕрленет-ха вăл, кунта çыру ĕçĕсене тĕрĕслемелле: уй урлă илсе каçмасть вăл çав çăка. Тăваттăмĕшĕсен ĕç тетрачĕсене ыран ылмаштармалла, малтан çавна пăхса тухас тет, кайран – паян çырнине.

Пӳлĕм шăп. Кашни çырать, вулать. Хăй тĕллĕн. Çапла шăппăнах çӳлĕк патне пырса кĕнеке уçса пăхать – пĕр-пĕр сăмаха словарьпе тĕрĕслет, аса илет. Василь Васильч та тăрса словарь тытмашкăн ӳркенмест. Кашни хăй ĕçне вĕçлесе пынă май пӳлĕм хуллен пушанать, класс ĕçĕпе юлни те ачасене салатнă хыççăн кĕрет те тек тăхтаса тăмасăр портфельне илсе уттарать. «Ыранхи уроксене килте хатĕрлетĕп – пуç кашласах тухать», – мăкăртатаь хăй.

Сисмен те, пӳлӗме Василь Васильч пӗчченех тӑнӑ юлнӑ, техничка та урай ҫуса каять ав; ура ҫӗклесе, аяккарах пӑрӑнса ларса ирттерет тасалӑха тытакана учитель.

Хӑйӑ ҫутнӑ. Никам чӑрмантарман вӑхӑтра тенешкел, тӗрӗслесе хакланӑ паллӑсене ҫийӗнчех журнала лартать те, тетрадь тӗркине яланхи тӗле, ҫӳлӗк ҫине хурса киле пуҫтарӑнать Василий Васильевич.

– Хветюк аппа, сӑмаварта шыв сивӗнмен-ши? – чӗнет вӑл техничкӑна.

– Директор пӳлӗмӗнче тин вӗретрӗм. Илсе килем-и?

Килтен чиксе кайнӑ апата – ҫӑкӑр-тӑвара – вӗри шывпа пылаклантарса сыпса ҫинӗ хыҫҫӑн тин тухса утать килелле уй урлӑ каҫас ҫын. Ҫумӑр чарӑнмасть иккен, вӑл ытларах та пӗрӗхет ав. Ҫеремлӗ варсем тӑрӑх тавраран тавран утать вӑл кил еннелле сӗм тӗттӗмлех тенешкел.

* * *

Хӗл пуҫламӑшӗ тӗрлӗрен килет – е хура кӗр пылчӑкпа-шӑнпа юрлӑ-юпӑнчӑклӑ ҫӳлтен ҫунипе вӑрах-вӑрах тӑсӑлать, ҫӗнӗ тапхӑра – шурӑ шупӑрлӑ-ҫи виттиллӗ, пӗркенчӗклӗ ҫулталӑкӑн черетлӗ вӑхӑтне аран-аран вӑй илтерет; е сасартӑк шӑнтса пӑрахарь те, шурӑ юр кӑпӑш ӳкет – хӗл ларчӗ те! Эсӗ ҫуна кӳлсе ҫуна ҫулӗ хыватӑн ав – хресчен пулсан, палах, лашапа лава ҫӳресе. «Его лошадка, снег почуяв, плетется рысью как-нибудь». Ача-пӑчашӑн вара, физкультура вӗрентекеншӗн те ҫавӑн пекех, хӗл ларни – хӑйне май пӗлтерӗшлӗ: йӗлтӗр сырмалла, шӑм-шак хусканӑвӗшӗн ҫӗнӗ тапхӑр пуҫламалла! Икӗ предмет – вырӑс чӗлхипе литературине тата физкультура вӗрентет-ҫке-ха Василий Васильевич; каҫсерен, тӗрлӗ пухусемпе педканашсем чӑрмантарман чух, ҫырать те ҫырать, ҫырать те ҫырать – повесть ӑсталать. Ҫулпа утнӑ май шухӑш вӗрет кӑна пуҫра, хайлавӑн вӗҫне те, вӑл епле хулӑмӑшлине те курать – ҫавна, пуҫра пуррине, ӳкермелле; васкавлӑн, ҫухалма пултарасран шикленнӗ евӗр хут ҫине куҫарма тимлет. Кун кӗнеки тавраш, ӑмӑрту-тренировка кӑтартӑвӗсене паллӑ тунисӗр пуҫне, мӗн-мӗн пулса иртнине, пурнӑҫланине ҫырса пыман Василь, ҫырас пулсан та пӗр-пӗр ҫын хӑҫан мӗнлерех ҫавӑрттарса каланине е еплерех пупленине этеммин кӑмӑл-туйӑмне уҫса памашкӑн ҫеҫ ҫырса хунӑ пулӗччӗ те

– ун валли те ал çитмест. Хăçан çав тери пушă вăхăт пулнăши Каврăç Ваçукĕн? Ав утать, чупать вăл, йĕлтĕрпе ярăнать – ĕç çук пуласан та, вăй-хал кăлармалли мĕнле те пулин аппалану тупатех. Килте вутти-шанкине те хатĕрлемелле, çуллахи вăхăтра анкартинче чакаланатăн. Арăмĕ: «Ача тавраш пур-и сан – пĕлместĕн вĕт», – тесе ӳпкелешет те-ха, çав-çавах ачипăчине те пач пăхмастех мар, вĕсемшĕн мĕн енчен те пулин тăрăшатех ашшĕ: авă йĕлтĕр илсе пачĕ, çунашка пур – ярăнччăр! Тăркăч-и? Çут пăр çине тухмалли те хатĕр – çиçкĕнччĕр, савăнччăр!

Шкулта физкультура учителĕсĕр пуçне урăх канăççăр çын çуках пуль: унăн ачасене ăмăртăва хатĕрлемелле – кая юласси аякра тăтăр, мала тухас килет! Василь Васильч командин мĕншĕн хӳрешкере çапкаланса çӳремелле? Виççĕмĕштăваттăмĕш вырăн – уншăн мар; пултăр малта, кубоксем пыччăр шкула, савăнччăр вĕренекенсем, хавхаланччăр.

Юр çителкĕклĕ ӳкмен пирки хĕллехи сезона районта нимле те вăхăтра уçаймарĕç, çĕнĕ çул умĕнхи вырсарни кун çеç вăй виçрĕç ял-ялĕнчен пухăннă йĕлтĕрçĕсем – тĕпрен илсен, шкул ачисем. Сала айккинчи çырма-çатраллă, тӳпемлĕ-тӳремлĕ уйра тумхах та пытанса çитеймен – йĕлтĕр тĕпĕ те, маçлăскер, хура тăпрана çыпăçтарать. «Вăрманта ирттерер мар-и çитес ăмăртăва? Хура вăрман тăвалă çухрăмра çеç вĕт-ха», – калаçать спорт комитечĕн пуçлăхĕпе Василь Васильевич. Районта спорта ертсе пыраканĕ çамрăкскер, тимлĕскер, колхозра комсомолец механизаторĕсен звенине ертсе пынăскер, Çамрăксен Союзĕн çĕр-шыври аслă пухăвĕнче пулнăскер, спорт лавне тинтерех кӳлĕнчĕ пулин те ăна хавхалансах илсе пырать.

– Атя, хăçан кайса килĕпĕр вăрманне? – килĕшрĕ вăл спорт мастерĕн сăмахĕпе.

– Çулне-йĕрне пĕлетĕп, Никодим. Йĕр хывмалла, – тет Василь Васильевич. – Çак эрне кун манăн юлашки ик урок çук. Тӳрех таврăнатăп та, пуçтарăнса каятпăр. Эс хатĕр пул вара эп çитнĕ çĕре.

Çырмашкăн кун сикет-ха кунпа хăшкăлнă май, хăй вĕрентекен ачасене те уроксем хыççăн секци шучĕпе ертсе тухаймасть çак кун учителĕ – кĕрешĕве хатĕрленесси хавшать, анчах районти ăмăртăва илемлĕ, кашни хутшăнакан-

шăн чуна илĕртӳллĕ йĕркелес килет-çке спорт мастерĕн; ятне тăвас тени çеç уншăн ют. Ăмăрту вырăнĕ те, йĕлтĕр йĕрĕ те, пĕтĕм лару-тăрăвĕ те килĕшӳллĕ пултăр. Никодим – итлекен ача, ăна пулăшас килет. Пулăшмалла! Çук, çынна усă туни мар пуль ку; тӳррипе илсен, хăйĕн чунне канăçлăх килтерет çакăнпа Василь Васильч – спорта анлăн сарса ярасшăн çунать ун чунĕ. Халăха спорт мĕнне каласа парас туйăмпа çĕкленнĕ вăл. Ăмăртăва хутшăнни, çавнашкалах ăна меллĕн йĕркелени – кăмăла килтерни шăпах. Начаррипе çыхланасшăн мар илемлĕх енелле туртăнакан чун-чĕре.

Василь Васильч уроксем ирттерсе уй урлă çичĕ çухрăм утса таврăннă тĕле кĕтсе тăрать ав Никодим – хатĕр вăл, апат та çинĕ. Василь Васильч та шкултах вăй тытмалăх шăл хушшине çăкăр-тăвар хурса тухнă, киле кĕрсе пĕр курка компот çеç ĕçет халь вăл; тек ним чухлĕ те тытăнса тăмасăр çăмăллăн тумланса, çав хушăрах сивĕ çиле те ямалла мар питĕ тум тăхăнса йĕлтĕр сырать. Иккĕн çынсем çӳренĕ сукмакпа, унтан уй урлă кĕрт çийĕн – Сархурăн вăрманне!

Юр тарăн, кштĕ-кĕштĕ, çемçе иккен тĕмсем тĕллипеле. Çуллах йĕлтĕрçĕ куçĕпе тĕсемен, ун çинчен шухăшласа пăхман пулсан йĕре темиçе кунта та хываймăн, пĕр çула тепринпе сыпăнтарма, таврараН çаврăнса илме пĕлеймĕн – шырамалла, тĕпчемелле. Юрать-ха, çулла кунта кăмпана та, ахаль уçăлмашкăн та сахал мар çӳренĕ те Каврăç Ваçукь халь çавна май вăрманти çулсемпе юра ашса пыма, иккĕн йĕр тума кăшт çăмăлрах. Анчах ансатах мар-ха, пилĕк çухрăмăн инçетри кукăрне çавракăшласа илмешкĕн кансĕр; эппин, çула кăшт улăштармалла, тӳрлетмелле.

Хĕвел именсе çĕрпе пĕлĕт хушшине хĕсĕннĕ, вăл чăмсах çухалас тĕле пилĕк тата виçĕ çухрăмлă йĕрсене пĕрер çеç тухма пултарчĕç иккĕн. Ыран якатмалла куна, пĕр-ик тĕлте кăшт улăштармалла.

– Эс ыран кил. Халь пĕлетĕн трасса епле выртмаллине, – вĕрентет Василь Васильч юлташне. – Эп шкултан час тухаймастăп. Ăмăртăвĕ ăнăçлах пултăрччĕ.

Самаях ĕшеннĕ Никодим. Çамрăк çын салана кĕмесĕрех тăван килнелле кĕрт çийĕн тӳртен таптарчĕ.

Çанталăкĕ çиллĕ пек-ха; çара уйра вăл вичкĕнех, вăрманта – хӳтĕ-хӳтĕ. Çил-тăман ахăрса тухмасан вырсарни

кунччен пĕр хывнă йĕр хупланмасть, шăнса ларать çеç, лайăхланать.

Тĕттĕмле ачисене садикран илсе килме ĕлкĕрет Василь Васильч; апат çитермелле халь, пăхмалла вĕсене. Арăмĕ килти арăш-пирĕшпе тĕрмешет.

Ыранхи уроксене хатĕрлемелле. Кĕнеке-тетрадь тытать Василь. Ывăннăскер, аран пурнăçлать ăна вăл. Повеçне малалла карлаттармалла та – ĕшеннĕ шăм-шакпа ал усăнать. Çав хушăрах, ак, выртсассăн, пуçа темле çĕнĕ сюжет майлăн вăрманти йĕр, ăна еплерех лайăхлатасси, хăш кукăрне кăларса пăрахса, çĕнĕрен хăш сăртне-тăвайккине кĕртесси киле-киле тăрать: тата лайăхрах çавракăш тума май пулать пек çав хушша, ачасене ăмăрттарас йĕре... Ирпе шкулалла утнă чухне те – пулас ăмăрту çулĕ-йĕрех шухăшра. Василь Васильч хăй çырас калав сюжечех мар-ши вăл? Çаплах пуль, ав епле пуçа çĕмĕрттерет хай трассăна меллĕ тăвас тени!

* * *

Шăмат кун пырса тепре çаврăнса тухайман Никодим. Ӳркеннĕ-ши ачи, ерçеймен-ши, ывăнни те иртеймен-ши хăйĕн? Василь Васильч, ирĕклĕрех пулнă пулсан, иккĕ те, ытларах та çавăрăнса тухатчех, каç шутласа хунă пекрех ылмаштаратчĕ, тикĕслетчĕ хай çавра çула. Ăмăрту кунхине ирпеле вашлаттарса кайса килме-и? Ун чух ним тума ĕлкĕрейместĕн – ку вăхăтра канăçсăрланасси ытлăн-çитлĕнех: черетлĕн тапранса тухма шăпа ярасси, çавна май ачасене кăкăр çине çыхма номер илсе парасси... тата, тата – йĕлтĕрсене кирлĕ пек маç сĕрсе памалла; ярăнса тĕрĕслесе пăхмалла ăна – хăшне сĕрсен епле шуçнине пĕлмелле; ачисене ăнлантармалла мĕнле пулмаллине, вĕрентмелле тăтăшах. Иртнĕ çул саккăрмĕшĕнче вĕреннисем, кăштах хăнăхнисем, халĕ шкултан тухса кайнă-çке, вĕсен вырăнне урăххисем, кĕçĕнрех классенчен хăпарнисем йышăннă. Пуçласа ăмăртăва илсе килнисене мĕн çинчен кăна каласа тăнлантармалла мар-ши? Çулра епле пымаллине те, умрине çитсен епле иртмеллине те; инвентаре те пăхмалла. Йĕлтĕрĕн унăн кăлтăкĕ-кĕсĕкĕ çине-çинех; ку енпе ача-пăча куçне уçтарасси – мăй таранах. Кая юлмалла мар вĕт-ха, курса çеç тăма е çынна çăвар карса пăхма туй-шилĕке килмен, ярмăрккăра мар...

Вăшталанать Василий Васильевич. Юрать-ха, ачи-пăчисем, кама каланисем, пурте пухăнчĕç, килте ĕç пур тесе пăрăнса юлман, пĕр-пĕр сăлтав тупса юлăнтарман. Пурин те ботинкăллă йĕлтĕрсем-ха, кашниййĕн аллинче инвентарь. Чылай командăсенче, ав, пĕр йĕлтĕрпе темиçен чупма лекет – хĕр ачасем кайса килнĕ хыççăн çеç арçын ачисен сырмалла... Василь Васильча та никам та хатĕрлесе паман шăп команда ăмăртмалăх йĕлтĕрпе ботинкине. Йĕлтĕрне почта урлă çырăнса илнĕ. Таллинра кăларнăскер ытла чаплăскрех мар та, районти ăмăртура вăй виçме юрать. Ботинкине, кунти магазина килнине сиссе, хут çине ячĕшĕн урăх япала – мат, лаша, качака, бруся – çыртарса туяннă. Сутуçисем пулăшасшăн тата йĕлтĕрçĕсене – каякан таваршăн банк укçа куçармасть-çке.

Ачасем йĕркеленсе тăнă, ĕç майне килтернĕ, старта тухма хатĕр. Чиперех.

– Çамрăксене ыр сунса пĕр виç сăмах кала-ха. Эсĕ спорт мастерĕ, хавхалантар, – теççĕ ăмăртăва йĕркелекенсем.

Кутăнлашмасть, именсе тăмасть, кăкăрне каçăртмасть Всилий Васильевич – çамрăксене ăмăрту пуçăннă ятпа саламлать вăл, ӳсĕмсем тума ăнăçу сунать. Дистанци епле выртнă пирки те унăнах ăнлантармалла, хăш ушкăн хыççăн камсем старта тухассине те Кавраçăнах пĕлтермелле. Ыттисем – Çамрăксен Союзĕнчен пĕр-ик çын, спорт комитечĕпе общество председателĕсем – çакăн чухлĕ çеç хуçисем. Кăларса яраканĕ те, вăхăтне çыраканĕ те – çав шутранах. Командăсене ертсе килнĕ физкультура учителĕсен – урăх хуйхă-суйхă: ачасене старта тăма пулăшмалла, ан улталаччăр, йăнăш ан туччăр – вăхăта тĕрĕс çырнине асăрхамалла. Вĕресе тăракан самант ку.

Василь Васильчăн йышĕ – хĕр ачисем те, ывăлĕсем те – хавшаках курăнмарĕç, кашниех хăйсен умĕнчен тапранса тухнă ик-виç спортсмена ирте-ирте килчĕç. Вăхăтне çырнă... Шутлама кайран шутлĕç. Халь колхоз çамрăкĕсен ушкăнĕпе хăйĕн те чупса тухас килет-ха спорт мастерĕн. Йĕлтĕрне, ачасем ăмăртнинех илес терĕ, хăйĕн тĕпĕ чĕркеленнĕ – кивелнĕ; çĕнни йăлтăрах, тикĕс. Тăршшĕ кĕскерех-ха, икĕ метр çеç. Юрĕ. Стартран тапранса тухсан пĕр çухрăм ытларахранах сисрĕ: кĕске йĕлтĕрпе пынă чух утăм та кĕскерех пулать

иккен, йĕр кăпшак пирки вĕтĕлтин те чупаймастăн, пĕчĕкрех япала ытларах путать те ав. Виççĕмĕш çухрăм тĕлнелле, хăй икĕ çамрăка иртрĕ пулин те, ăна хыçран вăйлăраххи хуса çитсе пăрăнма ыйтрĕ. Вăт сана! Вуннăмĕш класс ачи сăмса шăлса ярать. Пыр та калаç. Йĕр алтăкланнă, якатсах çитерейме, туя унки кăпăш юр ăшне пăшлатса кĕрет; маларах ярăнса тухнă ача-пăча туяна аяккарах тăрăнтарса пынă, Кавăрç йĕр çывăхнех лартать туйине, унта вара – юр кăпăш-кăпăшах. Ак хайхи ял ачинех ирттерсе ярать, аçа çапасшĕ. Хăнăхман кая юлма спорт мастерĕ. Кĕрешет вăл, тапăçать.

Вăхăчĕсене шутларĕç-ши малтан ăмăртисенне? Ав Сархурăн вăрманĕ çумĕнчи ял клубĕнче – бильярд сĕтелĕ йĕритаврах команда ертӳçисем кĕпĕрленнĕ: иккĕн шутлаççĕ, ыттисем пăхса тăраççĕ. Шутлĕç, каях юлман пуль-ха Василь Васильч ачисем. Кая юлни те тем мар, тепĕр тесен; выçса ан çитчĕр, киле çитмелĕх вăй кĕтĕр; эппин, апат çитермелле; тепĕр çухрăм майлă хушша – бригада столовăйне ертсе илсе каять ак комадине Василь Васильевич. Хăш-пĕр йыш килсе апатланма та ĕлкĕрнĕ иккен, хăшĕсем вĕсенчен те каярах юлнă.

Таврăннă тĕле мĕн такăлтатаççĕ унта? Курнила сасси. Иккĕмĕш ярăнпа çырлахма пултарайман çыннăн сасси.

– Сирĕн вун çиччĕмĕш номер миçемĕш хыççăн кайрĕ? – ыйтать вăл, Корнил Корнилович, Василь Васильча курсан тӳрех.

– Протоколта çырнă май тапранса тухнă.

– Вун улттăмĕш номер пулман. Вăл çавăн шучĕпе кайнă. Вăтăр çеккунт парнеленĕ сирĕн ачана.

– Пăхăпăр: ăçта протоколсем? Ак вăхăтне çырнă-çке. Тĕрĕсех.

– Вун улттăмĕш çын шутне тытса тăман,– çăлăнăç шырасa чăкăрташланать Корнил Корнилов. – Кала, Фишка, кайман ачан вăхăтне тытса тăнă-и эс?

– Астумастăп, – тет общество председателĕ, малтан фотограф пулнăскер, кĕркуннеренпе ялти спорт ĕçне-хĕлне ертсе пыма пуçăннăскер, хальччен физкультура мĕнне те пĕлменскер, йĕлтĕр çине ĕмĕрне тăрса та курманскер.

– Протокол çине вун улттăмĕш номер тĕлне тире лартнă, вун çиччĕмĕшĕнче – минут ытларах çырнă.

– Хăтланаççĕ! Ăмăрту йĕркеллĕ ирттерме вĕренсе çитеймеççĕ! – вăрçа-вăрçа чĕнми пулать Курнила, тепĕр сакăр çул вĕренмелли шкул учителĕ, физкультура институтĕнче куçăн мар мелпе пĕлӳ пухаканскер. Василь Васильчран самай çамрăк-ха вăл, йĕлтĕрпе çӳрекеленĕ, çапах республикăра пĕртен пĕрре, йĕпе çанталăк чухне, лешĕн салтакран илсе килнĕ маç пуррипе иртме пултарчĕ Каврăçран, урăх нимĕнле ăмăртусенче те, республикăра та, районта та спорт мастерĕ умĕнче пулайман. Командине мĕнле майпа та пулин мала кăларасшăнах иккен-ха халь вăл. Тăрăш çав. Анчах тĕрĕс кĕрешӳре мала тух. Паян ун ачисем Василь Васильч йышĕнчен пурĕ çирĕм тăхăр çеккунт кая юлаççĕ иккен пĕтĕм вăхăта пĕрле хушнă хыççăн. Вăтăр çеккунт хушса парсан Васильчăнне, кусем пĕр çеккунт мала тухса ларатчĕç.

Йăнăшманнине çирĕплетсе калаканĕ тупăнчĕ тепĕр учитель.

– Умринчен шăп минут кайран тапранса кайрĕ, – терĕ ку вун çиччĕмĕш номер пирки.

Вăт, çăвар карса тăнă çĕрте пайтасăр юлатăн. Асăрхани кирлех-мĕн. Тата... Никодим хирĕçĕве шалах кĕртсе ямарĕ.

Çапла, пĕрре чупса çӳресе, хăшкăлса вăя пĕтеретĕн ăмăрту чух, тепре тавлашса хăвна лăскатăн. Повесть патне хăçан ал пырĕ-ши Ваçукăн? Хăçан канса илсе тепре сĕтел хушшине лармалла унăн? Уроксене хатĕрленсе план çырнă хыççăн перона чун канăçлĕн таса хут çийĕн вăрлăх актарса хăш кун юрттармалла?

* * *

Хĕл – йĕлтĕрçĕсемшĕн ларма-тăма пĕлмен тапхăр. Çамрăксене ăмăртăва хатĕрлекеншĕн вăл ытларах та канăçсăртарах. Пит нумаях темелле мар та районта пухăнса тупăшмалли кунĕсем – ячĕшĕн çеç хутшăнас теменнине пула канлĕхе çухататăнах, çакă вара тăват-пилĕк ăмăрту пĕтĕм хĕл тăршшĕпех тăсăлнăн, пĕр канмалли кун та пушă килмен пек туйăнтарать. Çук çĕртенех туртса кăларнă пăтăрмахĕ вара кăмăла пушшех пăсать, сисĕм-туйăма канма мар, хĕтĕртсе çивĕчлентерсе ярать. Тавлашăвĕ каллех мĕнле те пулин мала тухас тенинче. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и, умра пулас килет иккен этемĕн, уйрăммăнах тĕрĕслĕхпе май килтерей-

меннин улталасси хăй çумĕнчех. Çакна чăтаймасть вара Кавраç Ваçукь. «Вăй пур – çĕнтер, хатĕрлен – хална пух», – ак унăн чун чĕнĕвĕ. Ах, теприн апла май килмесен?! Юрĕ, ăмăртăва хутшăнни те паха, уншăн хĕпĕрте, савăн. Çук çав, теприн йыш умĕнчех кăкăр тулли ылтăн-кĕмĕл тенкĕ çакса пырас килет-çке – тĕрĕслĕхпе-и, ултавпа илнĕ-и ăна – пĕлекен пулмĕ, пĕлсен те куçран каламĕ; хăв ĕнентерме пĕл çеç эсĕ. Хăвна хăв çĕнтерсех илтĕм тесе шан, куракансене те çавна çирĕплетсе калама пултар. Çакнашкал суеçсемпе кĕрешсе, çĕтĕлсе, ятлаçса халран каять пулĕ ĕнтĕ Ваçук. Вăл ачасене ытларах вăя туптаттарса кĕрешĕве илсе тухасшăн, çапла майпа çĕнтересшĕн, анчах сиссе ĕлкĕреймесен чип-чиперех яка пăр çине лартса хăваракан та тупăнать-çке юнашарах.

Вăхăта шелленине пула иртнĕ ăмăрту хыççăнтанпа спорт комитетне çитсе ун-кун çинчен калаçманччĕ-ха Ваçук. Курнила кусенчен çирĕм тăхăр çеккунт çеç юлнă; эппин, тимлемесен, вăй пухмасан тепрехинче иртме те пултарĕ çавскер тесе, уроксенче çеç мар, вĕренӳ хыççăн та ачасене йĕлтĕр çине тăрата-тăрата тухрĕ Каврăç. Ак çын сăмаххи хыççăн хăлхана кĕчĕ хыпар малтан, унтан райхаçатрах вуласа пĕлчĕ: спорт ĕçне хастар тытăннă ачана хăйсен ялĕнче колхоз председательне суйланă лартнă! Майне пĕлетчĕ, ăнланатчĕ, çын хыççăн та каймастчĕ – ĕçлеттерсе пĕтермерĕç. Ун пек пултарулли артеле ертсе пымашкăн та кирлĕ пулĕ çав. Вăйлă колхозри паллă председатель, пенсие кайнă май, хăй вырăнне Никодима сĕнет. Çамрăк механизаторсен звенине ăнăçлă ертсе пынăскерне, комсомолăн аслă пухăвĕнче те делегат пулнăскерне ял халăхĕ хапăлах хăйне ертсе пыма суйлать. Ну мĕн, Каврăç Ваçукĕн те юлташа саламласси çеç юлать. Çăкăр-тăвартан аслă пулаймастăн, хырăм тутă, çипуç питĕ чухне çеç вăй-хал кĕрешĕвĕ енне туртăнатăн. Ĕçле эппин, Никодим, ял хуçалăхĕнче пит кирлĕ вырăнта.

Спорт пуçлăхне кама тупса лартаççĕ-ши? Вăхăчĕпе тупăнĕ.

Ваçук çитсе кĕнĕ чух комитет пӳлĕмĕн алăкĕ питĕрĕнчĕк пулчĕ. Общество председателĕ Фишка та çук-ши? «Ăçта-ши леш ачи?» – хăйне хăй калаçса илчĕ уй урлă каçса çитнĕ çын. Тĕрлĕ ĕç пӳлĕмĕсем вырнаçнă çуртăн коридрĕпе кăштах утса кайрĕ те камран та пулин ыйтас-ши тесе чарăнса

тăчĕ вăл. Çак вăхăтра спорт комитечĕн алăкĕ уçăлчĕ (шалтан питĕрĕнсе ларнă иккен!), унтан тепĕр вырăнта ĕçлекен çын тухса хăй пӳлĕмне тăнкăлтатрĕ; Фишка алăка уçах тытса ялти учителе кĕмешкĕн кăчăк туртрĕ.

Пӳлĕмре пирус мăкăрлантарса тултарнă иçмасса, тĕтĕмсĕрĕм çеç мар, темĕнле йӳçенкĕ шăршă та сăмсана чаках кĕрет. Сĕтел çинче ытлашши япала çук – тасах. Фишкăсăр пуçне Курнила ларать. Иккĕшĕ те хĕп-хĕрлех.

– Роно кубокне çĕнсе илессипе ăмăртăва урăхларах ирттерес теççĕ кăçал, – сăмах пуçарчĕ Курнила. – Вăтам шкулсен, ача миçе çултине шута илсе, виçĕ ушкăн пултăр теççĕ; сакăр çул вĕренмелли шкулсем икĕ ушкăнпа тупăшчăр. Çапла калаççĕ пур учительсем те. Тĕрĕсех палăртаççĕ: хăш шкул епле ĕçленине уçăмлăн татса парать ку. Килĕшсе программа турăмăр.

Ваçук чĕнмест, вăл малтанхи ăмăрту йĕркине çĕнетсе, тӳрех хуратса çырнă хута вулать.

– Миçе çулхине кура ăмăрттармшкăн пионерсен хăйсен тĕллĕн ăмăрту пур-çке пирĕн, – лăпкăнах каларĕ Ваçук. – Пĕр çирĕпленнĕ йĕркене улăштарас марччĕ.

– Хыçрисем çинчен, пĕчĕккисем çинчен шухăшламалла. Халь пур çĕрте те – Шупашкарта та, Пĕтĕм Союзра та – çамрăксем хăйсен тантăшĕсемпе ушкăнланса ăмăртаççĕ. Акă тинтерех çитнĕ положение пăхар-ха: хăçан çуралнине кăтартмалла тенĕ унта. Икшер çул – пĕр ушкăн.

– Унта çамрăксемпе юниорсене чĕннĕ-ха. Саккăрмĕш класс ачи вĕсенчен те кĕçĕнрех.

– Спорт шкулĕсене пăхар. Кусем те çул шучĕпе ушкăнланса ăмăртаççĕ. Вăт, роно кубокне илес чух пиллĕкмĕшулттăмĕш классем пĕр ушкăн, çиччĕмĕш-саккăрмĕшсем тепĕр ушкăн пулччăр. Çавсен уйрăм кăтартăвĕсене шута илсе хăш шкул мала тухнине палăртатпăр.

– Ача миçе çултине çамка çине çырнă-им? Улттăмĕш класра лараканни те, тепри, саккăрмĕш класри пек курăнать; саккăрмĕшĕнчине те улттăмĕшĕнчи тесе ĕнентерме пулать.

– Справка пулмалла. Кашни ачан – директор алă тата пичет пусса панă, сăн ӳкерчĕк çыпăçтарнă справка.

– Курнă эп ун пек хутсене. Справка кăна мар, паспорт та суйса тăваççĕ.

Курнила хулленрех, ытлашши вĕчĕрхенмесĕртерех калать пулсан, Каврăç Ваçукĕн çилли капланса пырать; пĕлмест мар вăл унашкал ушкăнсем çинчен, самай ултамала, вăйпа мар, хут çырса, хутпа мала тухмалли мел вăл. Кĕпене шăнăçмала мар çилĕ килет Ваçукăн, анчах Курнила та хăйĕнчен çеç шутласа кăлармасть-çке ку кукăрчăк-макăрчăка – çӳлтен килет. Çĕр-шывĕпех хут çырасси, формализм хуçалана пуçларĕ спорт ĕçĕнче темле сисмен хушăрах çак тапхăрта. Шăллĕ вырăнне пиччĕшне, йăмăкĕ шутне аппăшне ăмăрттараççĕ пысăк ăмăртусенчех çак хăтланăша пула. Эс илсе кай улттăмĕш класс ачисене хăйсен тантăшĕсемпе тупăштаратăп тесе, – вĕсене хирĕç сухал шăтнисем, авлантарма, качча пама вăхăт çитнисем тухаççĕ – документ енчен вара тĕп-тĕрĕсех: ĕнентерекен хут пур – сăн ӳкерчĕк çыпăçтарнă, пичет пуснă! Çапăç унта суя тесе! Хăвах ухмаха тăрса юлăн! Яла та çитет иккен ку ĕренкĕ. Паçăр Курнила «теççĕ», «шутлаççĕ» сăмахсемпе пуплерĕ-ха, анчах нихăш учителе те уйрăммăн палăртмарĕ вăл, «çапла калаççĕ» тесе хăйĕнне калать çынни, хăй шутлать те йышпа килĕшнĕн кăтартать.

– Тĕрĕсмарлăх вăй илет капла. Сакăр çул вĕренмелли шкул командине темиçе ушкăна уйăрас мар, ГТО кĕрешĕвĕ чухне тупăшччăр ун пек. Халь роно кубокне илессипе пĕр ушкăнпах ăмăрттарар – хăть вунă çулхи, хăть вун виç çулхи пултăр командăра, – татăклăнах каларĕ Каврăç. – Çапла-и? – пăхрĕ вăл, пулăшу кĕтсе, Фишка еннелле. Спорт комитет председателĕ вырăнĕ пушăран общество пуçлăхĕн хутшăнмалла ĕнтĕ ку ĕçе. Ачи, пĕлмесен те пăрăнса юлмĕ-ха, анчах хăш хăма çинче, хăш чикĕре вăл?

– Сакăр çул вĕренмелли шкулсене ик ушкăнпа, вăтаммисене виç ушкăнпа ăмăрттаратпăр, – терĕ Фишка ним иккĕленмесĕрех. – Унашкал тĕрĕсрех пулать.

– Эппин, кайрăмăр çут ĕç пайне, положение çапах ун заведующийĕ алă пусса çирĕплетет, – сĕнчĕ Каврăç Ваçукĕ.

– Кайрăмăр.

Курнила сĕтел хушшинчен тухнă чух урипе лектерсе çĕре илсе лартнă сухан салачĕн кĕленчине ӳкерсе кустарса ячĕ; Фишка сунтăхран папка илнĕ чух пушă эрех кĕленчисене шакăртаттарса сас турĕ. Питĕрĕнсе ларса ĕçнĕ пулин те

чĕлхисем çыхланса çавăрăнайми пуличченех уяв тăвайманха çыннисем, харсăррăнах калаçаççĕ.

Çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ ялти шкула ĕçпе тухса кайнă-мĕн те таврăнма ĕлкĕреймен – ахалех çитсе çӳремелле пулчĕ ачасен. Юрĕ, ыран та кун пур – кая мар-ха.

Пĕр хĕрнĕ Ваçук киле çитсен апат çирĕ те сĕтел хушшине ларса ыранхи урока хатĕрленме тытăничченех ăмăрту йĕркине малтанласа унаса хума васкарĕ: пуçра шухăш вĕрет те вĕрет çеç унăн, çавна кăларса тăкмасăр, çырса хумасăр хуран айĕнчи хĕм çунма пăрахмĕ, шухăш тăвăлĕ лăпланмĕ. Ак çын чĕриклеттерет çеç перона, тăкăлтаттарать анчах ăна хут тăрăх. Малтанласа йĕрмелени ик листа ытлараха вырнаçрĕ; тӳрлетрĕ, юсарĕ ăна; унтан машинкăпа шакăлтаттарса тăкрĕ, вара тин кăшт лăпланчĕ, çапах ĕç вĕçленмен-ха – ку та черновик шутĕнче çеç; хĕрӳ самант кăшт сĕвĕрĕлсен тепре тытса тĕплĕн пăхĕ те мĕн ытлашшине катса, улăштармаллине улăштарса, çитменнине çитерсе, хура хут хурса виçĕ экземпляр çапĕ...

Тепĕр ик кунтан шкулта мăн тăхтав хыççăн учительсен пӳлĕмне кĕрсен, уроксем хыççăн виç сехет тĕлне парти райкомне иккĕмĕш секретарь пӳлĕмне çитмелле тесе пĕлтерчĕç Василь Васильча. Вăт, шухăшламалла-и кун пирки е çук? Мĕншĕн çав териех чĕнмелле пулнă? Идеологи тилхепине тытса пыраканĕпе калаçман мар-ха, темле майлă та сăмахланă – пит кирлине ыйтса пĕлесшĕн-ши халь, мĕн те пулин тума сĕнесшĕн-ши?

Уроксем хыççăн çиçтерсе çирĕ салана Каврăç, тӳрех Советсен çурчĕн çӳлти хутне улăхрĕ. Сăранпа сăрнă пӳлĕм алăкĕ умĕнче кĕтекенсен йышĕ самаях иккен – Курнила та кунта, Фишка та пур, физкультура учителĕсем тепĕр иккен. Ак тата! Хăна пур иккен: республикăри спорт комитечĕн инструкторĕ. Кур ĕнтĕ, кам сĕннипе калаçса пăхас тенĕ спорт активĕпе кунта! Районта комитет председателĕ çук пулин те çыннине тупайман самант тĕлĕнчех тишкерме ĕлкĕрнĕ пулать лару-тăрăва республикăран килни. Вăт, парти райкомĕн секретарĕ пӳлĕмĕнче – комсомол райкомĕн ĕçченĕсем, райĕçтăвкомăн культура тата çут ĕç пайĕсен пуçлăхĕсем, тăвата шкулти учитель пур çĕрте халь, çĕнĕ вунă çуллăхра – çирĕммĕш ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш çулĕсенче – физкуль-

турăпа спорт енĕпе еплерех вăй хурса ĕçлемелли çинчен ăнлантарать республикăран килнĕ хăна, хăй те çав кӳлĕме тинтерех тытăннă инструктор. Унччен Каврăç ăна республикăри ăмăртусене пĕр районтан ертсе килекен команда представителĕ пек пĕлетчĕ, халь çынни çӳлерех шая улăхнă иккен. Хĕрсе каймасăр, калассине нимĕн те манса хăварас мар тенĕн хут çине пăха-пăха илсе сăмахлать çакскер, тин кăна çĕр-шывăмăрăн тĕп хулинче ятарласа ирттернĕ курсра пулнăскр. «ГТО нормисене йышăнма график туса çапмалла. График пур-и кашни шкулта, коллективра? Документсем йĕркеллĕ-и? Çырса пымалла. Кам ГТО норми панине экрана çырса хумалла – схемăсем, таблицăсем пулччăр, – ăнлантарать вăл ăслăн курăнса. – Коллективсенчи ăмăрту положенийĕсене приказпа палăртмалла. Ĕç хăй еккипе ан кайтăр, ăна йĕркелесе пымалла. Мускавран килсе тĕрĕслес-тăвас пулсан, приказпа çирĕплетмен, вăйăн-шайăн япаласем пирки пит хĕретме ан лектĕр. Йĕрке пулмалла. Ку таранччен, иртнĕ вунă çуллăхра, уйрăммăнах утмăлмĕш çулсен çуррине çитиччен, тилхепене лĕнчĕ яни – самодеятельность, партизанщина – пулнă пирĕн, кам ответлине çырса хуни, ал пустарни пулман. Ăмăрту умĕн инструктаж памалла, кашнине ал пустармалла».

Итлесе ларнă май çамкана тар тапса тухрĕ Ваçукăн. Хăй мĕн-мĕн тунине çынна çыртарас пулсан та мĕн чухлĕ хут вараламалла халь унăн? Айтурах! Мĕн чухлĕ хут йĕркелемелле! Пĕтрĕмĕрех, ĕçне ан ту та – утне хут кĕшĕкле. Хутĕнчен писмаст-ха Ваçук, вăл повесть калăплать, урок планĕ çырать, шурă хута ытларах произведени хайласа кăларассишĕн хуратать; спорт тени вара ăна ачасене савăнтарма, вĕсен вăйхалне туптама, çамрăк чуна хавхалантарма, ырă кăмăллă ӳсме кирлĕ. Хальччен йĕркеллĕ калаçнă юлташăн сăмаххисен чăнлăхне тĕшмĕртсе пĕтерейместех ял çынни, анчах лешĕ хăйĕнчен шухăшласа мар, пысăк центрти курсран вĕренсе килнине хыпарлать-çке, коллективсенче мĕнле пулмаллине тăнлантарать. Çӳлтен хушнине аяла çитерекенне приводной ремень теççĕ, çавă ĕнтĕ çынни. Чим-ха, хамăр сисмен хушăрах тепĕр аяк çине çаврăнса ӳкместпĕр-и капла? Пĕр тĕрлĕ калăпăр та ĕçне тепĕр тĕрлĕ тăвăпăр-и? Формализм çине куçса кайăпăр-и? Спорт, физкультура, вĕресе тăракан чĕр

пурнăç, формализма чăтаймасть-ха. Апла тетĕн те айвана тăрса юлмăн-и хăв? Унта та майне-йĕрне улăштармаллисем тупăнĕç. Республика ăмăртăвĕсене анлă йышпа ирттерме пăрахрĕç ав, миçе çулхине кура уйрăм ушкăнсемпе пĕрер çын çеç чĕнеççĕ; çавна май чылай чух ăмăртăвне тухса кайма команда та пухăнмасть.

– Ак кунта, сирĕн районта роно кубокне çĕнсе илес енĕпе положени тунă чух пурнăçăн çĕнĕлĕхне ăнланайман – ача хăçан çуралнине палăртмасăр команда йĕркелесшĕн, – тĕслĕхпех çирĕплетет хăй шухăшне инструктор.

Курнила унпала маларах тĕл пулса калаçма ĕлкĕрнĕ иккен, ĕç пирки хăнана хăйне кирлĕ пек ăнлантарма пултарнă. Çул ертӳçи парти райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ тепĕр çур сехет майлă сăмах тăсса ку яхăнта мĕн-мĕн тумаллине асăнаасăна ăс панă хыççăн физкультура учителĕсем, çут ĕç пайĕн ертӳçипе пĕрлех тухса, положени пирки ĕçе паянах татмашкăн шкулсене ертсе пыраканĕн пӳлĕмне пычĕç. Çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ, Курнилапа хурăнташ тивет пулин те, тата республикăран килнин сăмахĕнче лешĕн шухăшне тĕрĕс тени палăрчĕ пулин те, пĕр енне те, тепĕр енне те тимлĕн итленĕ хыççăн Ваçук çырнă проекта йышăнса алă пусса пачĕ.

– Кăçал  кун пек пултăр, çитес çул пăхăпăр: пиллĕкмĕшулттăмĕш классене ушкăнласа ăмăрттармалла-и, çук-и? – терĕ вăл. – Халĕ чылай шкулсене районти ăмăртусене килмешкĕн ахаль те çăмăл мар: çул та çук, транспорт та тивĕçмест. Вунвун пĕр çулхи ачасене çӳреме пушшех кансĕр.

Шăлне çыртса, хĕремесленсе тухрĕ çут ĕç кантурĕнчен Курнила. Ваçук кăшт лăпланать-ха, çапах чунĕ канăçсах пĕтмест, ку мĕнрен килнине çынни хăй те тавçăраймасть.

Ăмăртăвĕнче... Ăмăртăвĕнче тавлашмалли пулчех. Василь Васильч хăй ачисене хавхалантарас тĕллевпе вăрăмрах сăрт тӳпинче, финишран инçех мар вырăнта, чупакана сăмах хушса, ăна камран та пулин кăшт юлни е иртни çинчен вăхăт та каласа, ытти шкулсенчи тепĕр виç-тăват ачапа пĕрле тăратчĕ. «Лере, чăнкă сăртра, çынсене тĕксе хăпартаççĕ унта», – хыпарласа хăварчĕ хăйсен вăйлă хĕр ачи учителе. Каврăç Ваçукь йĕлтĕрпе тапрĕ çеç унталла.

– Мĕнле намăс мар, мĕн хăтланатăр эсир?! – терĕ вăл хаяррăн харпăр хăй командинчи спортсменсене тĕксе пулăшма

ятарласа килсе тăнă ушкăна. Юрлă сăрта çуран каллĕ-маллĕ кумса, йĕр айккине кĕшĕклентерсех пăрахнă. Курнила ăмăртман ачисене юри килсе тăратнă кунта. Ку çеç-ши, тата темĕн кĕтме пулĕ унтан. Пулчĕ çав, пулчĕ. Хăйсен çывăхĕнчи ялтан, кӳршĕ районти шкула çӳрекенскерсене – пĕр арçын ачапа икĕ хĕр ачана – ăмăрттарчĕ вăл хăй командишĕн. Кашни çын мĕнле вырăн йышăннине кура очко шутламалла тунă та – шăп очко юлчĕç Курниласем Ваçуксенчен. Анчах уйрăммăн çĕнтерекенĕ арçын ачасем хушшинче те, хĕр ачасем хушшинче те – Курнила ертсе килнĕскерсем. Тавлашса, вĕçне çитерсе, çав ачасем ют шкултан пулнине тăрă шыв çине кăларассишĕн питех вăй хумарĕ Каврăç Ваçукь.

– Кубок пур пĕрех пирĕнте, столовăйне илсе кайса апат çитерем те, килелле тапранăр, – терĕ вăл ачасене. Лешсем çĕнтернĕшĕн çиçеççĕ, питне-куçне йăлкăштараççĕ. Анчах Ваçук хăйне айăплă туять: унăн иккĕмĕш вырăнсене йышăннă хĕр ачапа арçын ача пĕрремĕш шутланмаллискерсемччĕçке; малтисем, Курнила командишĕн чупнисем, – ют районтан... Мала тухсан та малта мар тени чĕрене ыраттарать. Ултава тăрă шыв çине кăларма тимлемен учитель хăйсен шкулĕн ачисем умĕнче хăçанччен айăплă туйса çӳрĕ-ши ĕнтĕ? Курнила-и? Вăл хĕпĕртĕ çеç, тата ытларах улталама майсем шырĕ. Фишка-и? Ку, хуçине ыр пулма хăнăхнă йытă пек, хăйне ĕçтерекене, пĕрле ĕçекене майлă пулма ăнтăлса каясла тăрăшĕ.

* * *

Çил-тăман хыççăн çанталăк пĕр кана лăпланнă чухнехилле, ăмăрту иртсе кайсассăн чун лăш пулать, кулянмалли тупăнни, ӳкĕнни майĕпен манăçать. Ваçук команди халĕ те, темле улталама хăтланчĕç пулин те, кубок çĕнсе илчех, çакă вара ыăннине пушшех хăвăрт иртерет. Темле сӳрĕкленмелле ырсан та вăй питти шăм-шака виç кунтан чĕрĕлĕх кĕрсе çитет. Вулать Ваçук, уроксене хатĕрлет, кĕнекере мĕн пуррине кăшт çеç çиелтен пăхнипех çырлахмасть, пĕр-пĕр калава е повеçе вĕрентме кĕскетсе панă пулсан кашнинех пĕтĕмĕшле вулать, ăнланма тăрăшать. Çĕнĕрен çĕнĕлле уçăлать вара ун умĕнче хăй ача чух вĕренни, кайран институтра тишкерни. Çамрăк чух ытларах япали çинчен калаçнă

çав (çапларах вĕрентнĕ-ши?), илемлĕхе чунпа туймалла аса хăварни сахалрах пулнă; тишкерме вĕрентнĕ ĕнтĕ, пĕлетĕн сӳтсе явма; усалпа ырра та уйăрма хăнăхнă, хурапа шурра тӳрех палăртатăн, халь вара ачасене вĕрентекен произведенин пахалăхне çĕнĕрен кăвак хуппи уçнă евĕр ума килтерет учитель. Чун-чĕре ăшшипе, ĕмĕт-туйăмпа, çĕкленӳ-хавхаланупа, пурнăç илемлĕхĕпе пуян иккен вун тăххăрмĕш ĕмĕрти вырăс литератури. Çавăнти пек çырасчĕ, кăштах та пулин патнерех çывхарасчĕ. Пĕр хул хушши кĕнеке хĕстерсе кĕрет класа учитель, вĕренекене авторăн хрестомати тулашĕнчи япалисемпе кĕскен те пулин паллаштарать, вулавула кăтартать. «Илемлĕхе туйăр, этеме хĕрхенĕр, ĕç çынни майлă пулăр, чăнлăха çӳле хурăр; таса чунлă пулнине нимĕн те çитмест», – тет вăл. Чылайăшĕ Ваçук асне ача чухнех юлнă-ха, манăçарах панă çеç, халь аса килет те таврăнать; теприсене манман та; анчах çĕнни, çĕнĕрен çĕнĕ тĕнче уçăлса пыни ытларах. Вĕрентет, вĕрентĕ май шухăшлать, хăйĕн повесть йĕрне те ăшра тăсать кирек хăш самантра та Ваçук; кайран, тĕрлĕ-тĕрлĕ ĕçсене пула, виçсе-тĕплесе çитерниех пуçран тухса ӳксен, мехел çитсен, килте кăшт канса илнĕ, унтан черетлĕ урока хатĕрленнĕ хыççăн сĕтел хушшине кĕрсе ларать те вĕр çĕнĕлле çыра пуçлать – сăмаххисем маларах шутласа хунинчен пачах урăх, шухăшĕ çеç таçтан амаланса, пĕр пытаннă хушăкран вăранса тухать; çĕнĕрен çĕнĕ сий çĕкленет çĕр касăмĕсерен; сăмаххисем таçтан килеççĕ – хăй тесен хăй тĕлĕнет Ваçук: йышлă вĕсем – шăнăçтарса çитер кăна, хут çине кăларса хумашкăн ĕлкĕр. Ку вăхăта, пуçламăшĕсĕр пуçне, каялла таврăнса вуламан-ха. Тен, япали пачах юрăхсăр та-и? Çырнă май пĕр чух ниме тăман япăх пек туйăнать, тепĕр чух канăçлантарать ырриех ешĕл калчаран ихнĕн туйăнтарса. Шав малалла каять-ха çынни, спортсмен хăнăхура тертленнĕн шалт ывăнса çитесле. Халран ӳкрĕн – паяна çитет, ыттине тепринче, малаллине кайран çапса хуçăн. Çапла пĕр пуçăннă тренировка эрни-уйăхĕпе, вĕçе-вĕç тăсăлнă евĕр, пĕр уйăх хыççăн тепĕр уйăхра тăсăлать Ваçук аппаланăвĕ – повесть унасси.

Санăн ăшра мĕн пуррине ют çын курмасть, урампа иртнĕ чух, ĕçе кайнă-килнĕ самантра, ав, Ваçук пырать, ăмăртăва хатĕрленетĕн-и, спорта пăрахман-и, команда хатĕрлетĕн-и

тейĕç ăна – урăххине пĕлмĕç. Чунне уçса пăхас пулсан, айтурах мĕнле тĕнче унăн унта – мĕн чухлĕ сăнар, мĕнле кăна лару-тăру, хирĕçӳ-тавлашу, çут çанталăк, илемлĕх, çатăр çунтармалли юрату, тăм илтермелли сивĕ курайманлăх. Халь чунра çеç-ха вăл – ăна никам уçса пăхаймĕ, пĕлеймĕ; çын чун-чĕри петле çапнă хăлăплă арча мар... Шур хут çине чернилпа йĕрленет кайран теприне пĕлтерме çав шухăштуйăм – начар ан пултăрччĕ, вулакана хăй çумне çыхса лартмалла тыткăна илтĕрччĕ.

Тăван литературăн хаçат-журналне активмесĕр хăварас мар: мĕн пичетленсе тухнă унта, мĕн çинчен çыраççĕ, калаçаççĕ; кĕнекесенче мĕнскер? Пур иккен, йĕркеллисем те курăнаççĕ, анчах ал сулмаллисем те пайтах: техĕмĕ çук калавсем, тĕшши тулман выçă пучах пеккисем... Мĕншĕн кун çути кăтартаççĕ-ши çав кĕретĕн начарринех? Ырă япала пулайман-ши? Вуламасăр сиктерсе хăварас мар тенĕ авторсем те пур-ха Ваçукăн. Пĕрре-иккĕ. Журналта ĕçлекен ăстаçă унăн калавне те редакцилесе çаптарса кăларнăччĕ, çырасса та çавскер (Вĕршĕл) этемĕн чуне-чĕрине классиксем майлăрах курса эрешлет; илĕртет, вулакана шухăшлаттарать. Анчах имшеркке вăй-халлă çынсем-ха ун геройĕсем, телейсĕрскерсене хĕрхентерет. Хĕрхенмелле те пуль ун пеккисене, мĕншĕн тесен çын-çке, пурте пурăнма çуралнă... Кавраç Ваçукь вара вăй-хал енчен тĕреклĕ çамрăксемпе туслăрах – вĕсемпе вăл ăмăртусенче пĕр йышра пулнă, çавсене сахал мар пĕлет. Спортсменсем кашни çирĕп вăй-халлă пулсан та, вĕсен ӳт-пӳ тĕреклĕхĕ, чун çирĕплĕхĕ çав-çавах пĕр шайра мар-çке. Ӳт-пӳ вăйĕпе чун кăмăлĕ пур чух та шайлашăнсах пĕтеймеççĕ; кашниех пьедесталăн чи çӳлти пусми çинче те мар, черечĕпе ылмашăнкаласа пыраççĕ-ха унта, анчах хăшĕсем темиçе те çĕкленеççĕ, теприсене пачах та вăрăнмась вăл чыс. Ултавĕ-суйи тата, ыррипе усалли... Пурнăçăн кулленхи ыткăнăвĕнче çавсем тытăçса ӳксе вăй виçнине асăрхамасăр тăма май çуках. Ырри майлă пуласчĕ, ăна мухтасчĕ, усалли енне, чылай чух темле астарсан та, çавăрăнса ӳкес марччĕ, çын тивĕçĕ ан çухалтăрччĕ. Тăван халăх, тĕпрен илсен çĕрпе-шывпа çыхăннă ял халăхĕ, таса чунлă пулнине нимĕн те çитмест тесе вĕрентсе пынă ăруран ăрăва улшăнса пыракан ывăлĕ-хĕрне.

Шкулта ĕçлекенĕн, уйрăммăнах физкультура вĕрентет пулсан, лăпкăлăх çухалать терĕмĕр-и? Тӳррипе илсен, çыннинчен килет пуль-ха вăл, тепри ытлашши чăрманмасть, мĕн те пулин тума хушсан та, ман ĕç мар тесе алă сулать çеç. Каврăç Ваçукĕн те чылайăшне илтмĕш пулмалла-ха та, чунĕ час çунатланса, вĕриленсе каять-çке унăн, тытать вара хăйне кирлĕ мар кӳлĕме те. «Пулăш-ха, общество ăмăртăвне йĕлтĕрпе мĕнле ирттерĕпĕр? – терĕ ăна Фишка. – Президиум пухăнса канашлар-и?»

– Пуçтар. Калаçăпăр.

Ку енĕпе хăйĕнчен пулăшу кĕтнине спорт мастерĕ епле ан тивĕçтертĕр-ха, вăл обществăн район канашĕн президиум членĕ те-çке. Положени хатĕрлесе ĕçне йĕркелессине те пĕтĕмпех хăй çине илме пултарать Ваçук: ăмăртăвĕнче колхоз командисем пулаççĕ, тулли мар вăтам шкул вĕренекенĕсем курăнмаççĕ те унта – эппин, хăй ертсе пымасть те, пĕтĕм вăя ăмăртăва кирлĕ пек ирттерессишĕн парĕ Каврăç. Ку хутĕнче хăш коллектив мала тухнине районта хальччен пулман мелпе пач урăхла палăртрĕ вăл – хĕрсен те, арçынсен те пĕрер дистанци: пилĕк тата вун пилĕк çухрăмсем çеç; командăшăн очко кӳмешкĕн малти вăтăр çын шутне кĕме тăрăшмалла: пĕрремĕш вырăна йышăнаканĕ вăтăр икĕ очко илтĕр, иккĕмĕшĕн вăтăр очко пултăр, виççĕмĕшĕн – çирĕм саккăр, тăваттăмĕшĕн – çирĕм çиччĕ... Вăтăрмĕшĕ шăп пĕр очко кӳрĕ, вăтăр пĕрремĕшпе унран каяраххисем – нимĕн те. Хăйсен кăмăлĕшĕн ярăнса тухни – тĕп парне вĕсене. Командăра хăть миçе çын пултăр – çавăн чухлĕ çеç пулмалла тесе чарса тăмалла мар.

Президиум членĕсемпе килĕшнĕ хыççăн ăмăрту йĕркине вырăнсене çитермшкĕн хăех машинкăпа çапса пачĕ Фишкăна Ваçук, çав вăтам шкул та пĕтермен, Курнилапа пĕрле ĕçекен, ун майлă тăракан ачана. Уншăн мар, ăмăртуçисене, колхоз çамрăкĕсене вăй тупăшĕвне йĕркелесе ирттерсе кăтартас, вĕсен кăмăлне тивĕçтерес тесе тепре вăшталанас терĕ Ваçук. Йĕлтĕр йĕрне те, шкултан çитнĕ хыççăн вăрмана тапса, хăйех хывать халь вăл; çул кăтартăвĕсене – хĕрлĕ флажоксене ачасене тутарнă та лартса тухать халь вăл. Фишка ĕмĕрне йĕлтĕр сырса та курман-ха. Çакăнти сала кĕрӳшĕ вăл, кăнтăр енчи хулара ӳснĕскер. Çынни хăш

халăхран пулнине тиркеместпĕр – ырă чунпа ĕçлетĕр çеç, анчах ачи спортри ултавçăсен ункинче-çке, тӳррипе илсен, Курнила аллинче. Ваçукшăн пулсан ку – çăва патне! Ăмăрту йĕркеллĕ пултăр уншăн.

Вырсарни кунĕнче пĕрре ăнлантарнă, пысăк ăмуртусенчи евĕрлех кăкăр çине çакмалли номерсене панă хыççăн спортсмена стартран тапрантарас, ăна финишра йышăнас ĕçе хăй хутшăнмарĕ, йыш килнĕçемĕн тӳрех кашнин кăтартăвне уйрăмшар карточка çине çырса шутламашкăн ларчĕ Каврăç. Пӳлĕмре пĕр ăстрăм çырать-шутлать те тепринне тухса илет, хăвăрт шутлать те çĕнĕрен тухса илет – ăмăртса пĕтнĕ çĕре мĕн пуррин вăхăчĕсене кăтартнă протокол хатĕр пулчĕ те...

Кĕрешĕвĕ икĕ инçĕшри ятсене миçемĕш вырăн йышăннине кура пĕтĕмпех куçарса çырма ĕлкĕрчĕ вăл: чи пĕрремĕшĕ – çĕнтеркенĕ – çӳлте, ун хыçĕнче – юла-юла пынисем...

– Ха, епле ал çитертĕн?! – мухтать ăна Никодим, колхоз командине ертсе килсе хăй те ăмăртнăскер.

– Саламлатăп сире: кубок эсир çĕнсе илетĕр.

– Йыш пур çав пирĕн. Миçен, ав, малтанхи вунă çын шутне кĕнĕ! – протокола вула пуçлать колхоз председателĕ, çамрăкскер.

Кунпа та вĕçленмерĕ-ха ĕçĕ – алăпа çырнă протокола – ăмăрту кăтартăвĕсене – кашни коллектива ярса памашкăн пĕр каç машинкăпа çапса ларчĕ Ваçук.

– Хĕнетĕн çав хăвна, канма пĕлмесĕр. Кам ыр сăмах калать-ши сана?! – те хĕрхенсе, те пăшăрханса ӳпкелет арăмĕ ăна. Пултăрах.

* * *

Учительсен ĕнси çине ачасене вĕрентнисĕр пуçне тата темĕн тепĕр купаласси хăш вăхăтранпа тухнă-ши вăл? Хăйĕн пĕлĕвне ӳстересех пымалла-ха унăн, çавăнпах-и, усси пур-и, çук-и, вырăнлă-и, вырăнлă мар-и – вăхăт-вăхăт пĕр-пĕр темăпа методикăлла доклад çырма, унтан ăна хăвăнпа пĕр предмета вĕрентекенсен ларăвĕнче е анлăрах канашлурах вуласа пама хушаççĕ. Ларать вара пĕр-пĕр журналтан камăн та пулин ăс-пулăмне çыра-çыра илсе, унтан ăна ыттисене вуласа парать. Хăтăлчĕ çапла вара парăмран, тинех ятран

ҫăлăнчĕ. Вĕренӳ ҫулĕ ыткăнуллă пынă хушăрах, кашни виҫ учительтен пĕрне пулĕ, «педагогика вулавĕ» валли темăсем валеҫсе панă. Каврăҫ Ваҫукĕ те пăрăнса юлаймарĕ ҫакăнтан – физкультура ачасене вăй-хал енчен ҫеҫ мар, ырă кăмăллă пулма та вĕрентсе ӳстерме пулăшни ҫинчен евитлеме ыйтрĕҫ спорт мастерĕнчен. Районти методика пӳлĕмĕн хуҫи куҫĕ тĕлне пулмалли ҫук – тӳрех аса илтерет: «Ну, хатĕр-и, ҫыртăн-и? Районта вуламалла пулать». Телефонпа та шăнкăравласа тăрать ҫавскер, шкул директорĕнчен те канашлăва каймассерен каласа ярать: «Педвулава хатĕрленмелле!» Хăлха йăмĕ. Каврăҫ Ваҫукĕн ăшне пĕр-пĕр ĕҫ тăвас шухăш вирхĕнсе кĕрсен вара вĕҫне ҫитермесĕр те лăпланмасть, пуҫа сырăннă шухăшран хăтăлаймасть; повеҫĕн черетлĕ сыпăкĕнчи ӳкерчĕксене те хирсе  кăларса, пуҫра тымар ярса ларчĕ вĕт, мур илесшĕ, педвулавра калас шухăш-пулăм; утать ҫын халь ҫавăн ҫинчен шухăшласа, тĕпчет. Мĕн чухлĕ ача-пăча вĕрентсе кăларнă та, спортсменсен йышĕнчен кайран ĕҫре самаях палăрма ĕлкĕрнисем, ырă кăмăллă пулса ӳснисем шăкăриех. Ҫавсене кашнине шута илсе ыттисемпе процент енчен танлаштарма май пур; хăшĕ ҫĕр-шыва ытларах усă парать: ҫирĕп вăй-халли-и, сусăрри-и? Шкулта чух спорта юратаканĕ-и е пурин ҫине те – вĕренӳ енне те, физкультурине те алă сулни-и? Ак карлаттарса ҫырать тупăннă пушă вăхăтĕнче физкультура учителĕ. Пĕр ручка тытсан шухăшсем татах амаланса, факчĕсем те тупăнсах пыраҫҫĕ унăн, хăйне хушнă ĕҫпе айланать Каврăҫ Ваҫукь.

Пĕр виҫĕ каҫ хаклă вăхăта шыва ячĕ ĕнтĕ вăл ҫакăнпа – малтанласа хура хутне кăна ҫыра-ҫыра; машинкăпа ҫапса, вĕҫне ҫитермен повеҫне кĕттерсе.

Ҫынна кăтартмалăх хатĕр пуличчен эрне ытлашшипех ҫухатĕ. Ку вăхăтра тăрать ҫав хуҫине кĕтсе вăрăм ҫилхеллĕ урхамахĕ – повеҫĕ. Шкулта паллаштарнă хыҫҫăн районта – педвулава пухăннă пысăк йыш умĕнче – явап тытмалла халь. Ҫырнă та – калать, вулать, ăнлантарать Василь Васильевич. Пит тимлĕн итлеҫҫĕ. Ыттисенне те ҫавăн майлах хăлхана чикнĕ-ха та, куна пушшех хăлхана тăратса тăнланăн туйăнать.

Тăхтав вăхăтĕнче темиҫе ҫын алă пырса пачĕ ăна: «Маттур, аван каларăн, шухăша фактсемпе ҫирĕплетсе ĕнентертĕн».

– Республикăна тăрататпăр ку ĕçе, парса хăвар çырнине, – куçран пăхса ыйтать районти методист.

– Тархасшăн. Машинкăпа çапнă эп ăна. Хама валли иккĕмĕш экземпляр юлать асăнмалăх.

Вăхăт кустăрми вăл пĕр-пĕр палăртнă чикке ума çитерсе тăрататех. Ак Каврăç Ваçукь çырнине те – машинкăпа çапнă вун пилĕк страница чухлĕскерне – вуласа тухакан тупăннă, рецензи яса параççĕ авторне. Çамрăксен Союзĕнче ĕçлекен, Ваçук паллакан, лешĕ те куна пĕлекен çынах унăн докладне, республикăри педвулава кĕртес пулсан, улăштарма хушать иккен: философилле пĕтĕмлетӳсене кăларса пăрахмалла, пĕр шкулăн ĕçне çеç мар, темиçе шкул опытне пĕтĕмлетмелле тет. Калатăр, кирлĕ пулсан, вăл хăй ăна! Мĕнех вара Ваçукшăн: районта евитлеме хушнă та – çавна тивĕçтернĕ вăл, ĕнсене пусса тăракан çĕклеме сирсе пăрахнă – çитет. Халь хăй ĕçĕпе лармалла, республикăри педвулава хутшăнасси Ваçука ним чул та кирлĕ мар, унта сăмах илнисен ĕçĕсене пухса уйрăм кĕнекен кăлармалла тăватпăр тени те пĕрчĕ чухлĕ илĕртместь ял çыннине. Ку япала повесть мар, шăпăрланĕ, ав, илемлĕ произведени çуратассипе аппаланать, ахаль те самай хушă докладшăн ылтăн вăхăта çухатрĕ, тек чĕптĕм те аяккалла сапалас марччĕ аран тупăнакан хаклă вăхăта. Э, татах аса илтереççĕ иккен: малтан ачи, пĕлнĕпаллана çын тесе-ши, хăй алăпа çырнине ярса панăччĕ, халь метод центрĕнчен çавнах машинкăпа  çапса çитереççĕ: рецензент кăтартăвĕсене шута илме ыйтатпăр тенĕ кусем. Кирлех Ваçука вăл! Çĕр тĕрлĕ çын – çĕр тĕрлĕ шухăш. Мĕншĕн вара çав рецензента, чиновник креслинче ларакана, турă кăтартăвĕ тесе йышăнмалла – мĕн калас тенине каларĕ пулĕ ĕнтĕ Ваçук, ыттине леш ачи хăй супĕлтеттĕр. Методикăлла кăларăмра статья çаптарас килет пулсан тăрăшса пăхтăр хăй, ахалех пукан çинче пустав çĕтсе лариччен кама та пулин ус тутăр. Учителĕн статья, трактат, тĕпчев хучĕ çырмасăрах ĕç мăй таран: тетрадь тĕрĕслемалле – пĕр купа хыççăн тепĕр купа; урок планĕ çырмалла – кашни кун; вĕрентмелле; ача пĕлменшĕн, тимлĕн итлеменшĕн вĕчĕрхенмелле. Савăнса кăна ăс парса пырасси ĕмĕтре кăна вăл вĕрентекеншĕн, тĕлĕкĕнче те ачасемпе ыр курсах пĕтмест вăл. «Тĕрĕслеврe класĕпе шыв сыпса ларчĕç, ним те пĕлмеççĕ – эс хыпкалан

çеç», – миçен каласа паман-ши тĕлĕкре çавăн евĕр лару-тăрăва лекни çинчен ĕçтешсенчен. Пĕрре ĕç татнă та манăçа хăварнă педвулава Ваçук. Кӳршĕри шкул директорĕ çеç кайран та астутарчĕ. «Сан докладна хамăр учительсен канашлăвĕнче асăнтăм, шухăша фактсемпе çирĕплетмелле тесе каларăм», – пĕлтерчĕ ку. Урăх сăмах-юмах пулмарĕ ун хыççăн – пуç усă. Повеçне çырать те çырать халь Ваçук каççерен аран-аран ал çитернĕ самантсенче.

* * *

Çулталăк çурă-и, иккĕ-и е ытларах-ши калас шухăш вĕçне тухассишĕн шав малалла ыткăнса çырнă хыçăн çитес тенĕ тĕле çитрĕ-çитрех çын: вирлĕн ывăтса янă сăнă авăк çул туса шĕвĕр вĕçĕпе çĕре тăраннă евĕр, чикке çитсе ӳкрĕ Каврăç Ваçукь – повесть вĕçне килтерчĕ; пӳрт пураланчĕ, çăматă йăваланса калăпа ларчĕ. Халь вуламалла, тикĕслемелле, якатмалла; хăшне-пĕрне хăйпăтса пăрахмалла, ытларах, тĕсе килтерес тенĕ чух, хушмалла. Скульптор та чул катрамĕ кӳлепене çапла якатса-хырса чĕрĕ сăн парать пуль çав. Тепре тытсан вулама май çукла хут тĕрленет, йĕрке çине çĕнĕ йĕрке хушăнать. Хăмпă евĕр аяккалла пушă вырăн шыраса пăрăнса кĕрсе кайса хуратса-тӳрлетсе тултарать автор – манăçаспа никам мар, хăй та вулаймĕ ăна; эппин, сыпăка чутланă-саваланă хыççăн машинкăпа çапса хурас, унтан çĕнĕрен вулăн, татах тикĕслĕн. Çапла пĕр ура пусси килтернĕ çулпа тепре утса тухнă хыççăн виççĕмĕш хут çаврăнас, çынна кăтартмалла тăвас тенĕ умĕн кăштах лăш пулас, канса илес терĕ Каврăç Ваçукь. Ручкăна хунă – вырттăр вăл, пуç шухăшран пушаннă, çывăрса тăраннă, чун юрласа ятăр, – ирĕклĕн сывласа илтĕр вăл та! Епле ирĕклĕ туятăн хăвна!

Ак шкулалла çăмăллăн утать Ваçук ирпе – епле ырă, пуç та усă. Епле канлĕхлĕ! Кай, пĕр ĕç – кунăн ачасене вĕрентмелле – çитет çынна; мĕнле ырă шăм-шака; ĕнсене ытлашши чул пуснине туймастăн та, тăнлав та хĕсĕнсе ыратмасть. Ытлашши ĕç туман, чăрсăрланса канлĕхсĕрлĕхе кӳлĕнмен çын телейлĕрех. Çынна вулаттарс тесе темскер çырма пикенекен тăр ухмахах: хăйне хĕрхенмест. Ха, епле канлĕ халь Каврăç Ваçукне. Анчах лăпкăлăх самант, тӳпе яр усă, хĕвеллĕ кун тăрать тенĕ пекех, эрне иртнĕ-и, спортри

хĕрӳ лару-тăрура йывăррăн лутăрканнă хыççăн канса илесле çăмăл хусканусем тăваççĕ, çавнашкалах Каврăç Ваçукь те урăх, пĕчĕкрех, хăй шухăшĕпе çăмăлрах çырăва тытăнас терĕ. Тӳррипе илсен, шкулта пулса иртнĕ пĕр ĕç илĕртрĕ ăна, шухăша ячĕ, пурнăçа урăхларах курчĕ; хăш-пĕр пĕлмен ыйтусем уншăн тĕттĕм чатăра кăвак хуппи ялтлаттарса çутатнă евĕр сирĕлчĕç. Ак вара канса илесле çырас терĕ çавăн çинчен. Чăнах та, шăм-шака çăмăлатмалла перона вылятрĕ вăл, сывлăша çăвар туллин çăтнă майăн ӳт-пĕве урăхла май хускатрĕ; пысăках марскер, пĕчĕк повесть, уйăх хушшинче карлаттарса хурăнчĕ.

Тикĕслеме хăшне тытас халь: малтанхине е кайранхине? Черете уяс, каска урлă сиксе ӳкиччен малтанхипех тепре лармалла, çавă-çке пĕтĕм шухăш-ĕмĕте лăскать: каласа çитернĕ-и е çитермен унта? Жуналта ĕçлекен, хăйпе пĕр тантăш çын (Вĕршĕл) ăна кун калавне пичетленĕ хыççăн сăмахланă хушăра хăй пирки япалана тăваттă куçарса çырсан çынна кăтартмалла тăватăп тенĕччĕ. Тăваттăмĕш хут куçарса çыриччен – виççĕмĕш хут машинкăпа çапиччен – япалана тепре тĕплĕн тишкерсе тухмалла. Эй, кашни пăхмассерен мĕне те пулин тĕкĕнетĕнех-çке, пĕр япаланах тепĕр май çавăрса пăхатăн аппăрша, çавна май чутламаллине те, саваламаллине те, çĕнĕ сăр тĕкмеллине те куратăн. Ку ĕç çапах та çăмăлрах – чи малтан калăпласа пăрахасси мар. Пуçласа тытăнтарасси вара – хулăм кĕрте ашса йĕлтĕрпе йĕр хывса тухнă евĕрлех. Кайран вăрманта çав йĕрпе мĕн чухлĕ нумай çаврăнатăн, çавăн чухлĕ çăмăлланса-çăмăлланса, якалса-якалса пырать çул-йĕр; хăй тĕллĕн вăрманта катаччи хăтласа çӳренĕ йĕлтĕрçĕ ăна пĕлме пултарĕ. Хулăммине – вăрăм çулне – такăрлатса пусăрăнтарса тухать те тепре, пач урăххине, пĕчĕкреххине, тытать ку тапхăрта Ваçук. Тĕлĕнмелле: хитререх пек, лайăхрах пек туйăнать халь çĕнĕрен тикĕслесе пынă чух çак япала авторне. Хăех çырать-и? Хăйĕн аллиех ӳкернĕ-и? Пĕчĕкреххине çине-çине тикĕслесе тухма май пур-çке – эппин, каска урлă сикнине ырламасан та, çавна якатса çитерес, çынна кăтартмалла тăвас. Тепĕр уйăх тĕлне алăпа çырнă хыççăн иккĕмĕш хут машинкăпа çапма ĕлкĕрчĕ авторĕ – çурхи каникул хыççăн тытăннăскер вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ тĕле çынна кăтартмашкăн та

пит пĕçермелле мар хатĕр пулчĕ те ав. Тĕкĕнмелли тупăнĕ-ха татах. Кама та пулсан вулаттарсассăн, вăл мĕн калĕ, çĕнĕрен мĕнлерех тĕс кĕртмелле япалана? Тăван яла кайсан шăллĕне парса хăварчĕ, кӳрше те кăтартнă лешĕ. Ак тепĕр ик кунтан сӳтсе яваççĕ çемьере. Ăçта мĕн-мĕн улăштармаллине тĕллеттерет Элекçи, Ваçук шăллĕ, истори учителĕ. Кӳршĕ, физкультура учителĕ, пĕр вăхăталлах ӳснĕскер, урăх шухăш парать. Ытларах мухтаççĕ ачасем, тăван ял çыннисем; пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштармаллине манмаççĕ нихăшĕ те. Сисет Ваçук: çырнă япала кусене чăнласах хумхантарнă, анчах вĕсен сĕнĕвĕ пĕр-пĕр писатель тишкерĕвĕ мар-çке, темскер çитмен пек кусен хакĕнче, темскере курса çитерейменнĕ пек тăванĕпе кӳрши. Пĕр-пĕр çыравçах юлташла кăтартмалла: машинкăпа çапнă сакăр вун тăвата страницăллă япалана вуласа тухма ытлашши йывăрах пулмĕ.

Май килчĕ темелле çавăн пек самант. Айваншăн кирек хăçан та çавăрăнса тухать çавнашкалли. Ялта пурăнакан Каврăç Ваçукĕн, спорт ăмăртăвĕсене çĕр-шыври нумай-нумай хуласене çитсе çӳренĕ пулин те, айванлăхĕ иртмен-ха. Ял çынни йышпа пурăнать вăл, сайра-сайраран хирĕçсе-тусан та, пĕр-пĕрне ĕçре-хĕлре те, инкек-синкекре те пулăшаççех; хуйха-суйха пĕрле пайлаççĕ касра-хутлăхра, пĕрин савăнăçĕшĕн йышпа хĕпĕртеççĕ. Пĕр çĕр çинче пурăнакан, тымарланакан, ӳсекен вăрманти йывăç пекех каррăн çĕкленеççĕ, алă парса та, хыçран тĕксе те пулин пĕр-пĕрне пулăшаççех. «Кил-йыш», «ял-йыш» сăмахсенче пĕр пĕтĕмлĕ тымар пур: «йыш»! Йышпала чăмăртанса тĕрекленет çырмаçатрапа вăрман е юхан шыв хĕррисемпе вырнаçнă ял-ялĕнчи – ушкăнсенчи-кассенчи çын. Йыш умĕнче кăптăла тухас марччĕ, йыш умĕнче намăсланас мар, пите кĕççе çĕлес мар – эппин, хăвăн та тӳрĕ чунлă пулмалла. Ыррине ял-йыш нихăçан та тĕксе ямасть. Çак туйăм çынни хăй сисмен хушăрах ӳте-пĕве, чуна-чĕрене сăрхăнса кĕрсе ларнă ĕнтĕ. Çынна шанасси, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасси юнра унăн.

Район хаçачĕн юбилейне ирттерме килнĕ писателе, хăйĕнчен пĕр карт аслăскерне, пырса тыттарчĕ ал çырăва Ваçук.

– Пăхса тухаймăр-ши? Тен, мĕн те пулин вĕрентсе калăр.

– Вăрлатăп ак, – кулса ячĕ çавăнтах хăна. Кăшт шухăшларĕ пулин те шикленсе ӳкмерĕ çамрăк автор – вăрăсене алăран ярса тытнине куркаланă ача чухнех вăл: хаçатсенче плагиата тăрă шыв çине кăларнине вулакаланă. Сăвă марха Каврăç Ваçукь çырни, тĕшшине илсен те сăрăхтарсах пĕтерĕ-ши? Шӳтлесшĕн ĕнтĕ этемми – шӳтлетĕр.

Ертсе пыракан пысăк вырăнта ĕçлекенскер ик уйăх, виç уйăх хушши нимĕн те чĕнмерĕ – юрать, тура шĕкĕр, мĕнле пулнă çапла почтăпа каялла тавăрса пачĕ. Пĕр сăмах та çук каласси, кăранташпа та ниçта пĕр пĕрчĕ паллă туман. Тавăрса пани аван, уншăн тавтапуç. Ку хушăра тата, çу кунĕнче, ним çырмасăр хут йĕрлес енчен канса пурăнчĕ Каврăç Ваçукь. Алă кĕçтени ӳснĕ май тепре тытрĕ хайлава, çĕнĕрен «кĕшĕкленĕ» хыççăн, виççĕмĕш хут «сăвăрĕ», леш пысăк ал çырăвне те каллех машинкăпа тăкăлтаттарса çапса хума мехел çитĕ.

* * *

– Кĕнекеçĕсене кайса пар-ха. Халь унта шăпах виçмине çул валли планлама ал çырусем йышăнаççĕ, – сĕнчĕ Каврăç Ваçукне журнал кантурне кĕрсессĕн унăн иккĕмĕш калавне редакцилесе (питĕ «юсаса») кăларнă юлташĕ. Хăй патĕнчен сĕвĕрес тесе, туя тыттарса кăларса яни пулать те-ха ĕнтĕ ку. Мĕн тăвăн, тухса утасах пулать: çын ятлаçмасăр лăпкăн калать иккен те, кунтах пичетлеме тăрăш-ха тесе йăлăнасим ĕнтĕ ялтан килнĕ çамрăк авторăн е ятлаçас-и, хирĕçес-и – май килмĕ ун пек. Çитсе кĕчĕ вара кĕнекеçĕсен пӳлĕмне Каврăç Ваçукь. «Пирĕн ĕçĕ ал çырăвĕсене йышăнасси», – текелесе амбар кĕнеки çине паллă тусах илсе юлчĕ çамрăк авторăн ал çырăвне, сакăр вун тăватă страницăллă повеçе кунта ĕçлекен сăвăç, Ваçук шăллĕпе тантăшскер.

Япалана алăран вĕçертсе хăтăлнă хыççăн пуль ĕнтĕ, кĕркунне, вĕренме те, ĕçлеме-çырма та вăй-хал вĕресе тăнă самантра, леш тĕп ал çырăвне, çыравçăсем калама юратнă ваттисен сăмахĕпе асăнсан, çанна тавăрса ларчĕ ял çынни, паллах, вăхăт тупкаласа кунсерен. Çапла чипер ĕçленĕ самантра юр ӳкеспе леш сăвăçран чуна çичĕ пĕлĕте çити çĕклентерсе ямалли хыпар килет: япалуна килĕштернĕ çын тупăннă иккен, ал çырăвĕнчен халь кĕнеке туса кăларма па-

лăртаççĕ. «Ку ыйтупа тĕплĕнрех Шехвиновпа калаçăр, ăна сырăнăр», – тенĕ. Асăннă çыннине Ваçук пĕлмест мар-ха, иртнĕ çулсенче пионерсен хаçатĕнче ĕçлетчĕ паллах мар сăвăç, унти редакцие кĕркелесен калаçкаланă. Унччен те тĕл пулнă ăна, çулпала Ваçукран ик çул аслă пулин те, института чылай каярах ура пуснăскере. Ялти учитель Шупашкарти литература кружокĕнче пуçласа курнăччĕ çакна. Çулĕпе самаях пирченнĕ Шехви Венкки (çапла псевдоним унăн) халь ача-пăчана кĕнекеллĕ тăвас ĕçе ертсе пырать иккен.

Конверта малтан, хаçат-журналтан килекен кирек мĕнле хута тытнă чухнехиллех (вĕсенче «салам» тесе пуçлаççĕ пулин те, салампах килмеççĕ ун пеккисем), хумханса уçрĕ автор. Ырă сăмахĕ вара пин хут саламран та ирттермелле чуна çĕклентерсе ячĕ.

Тепĕр ĕçĕпе пушшех пысăк ĕмĕтлĕн хавхаланса ларать халь пӳртре ача-пăча шавланă, арăмĕ шăкăлтатнă хушăрах, вĕсем çывăрма выртсан пĕчченех хăй çунтарса Каврăç Ваçукь.

Шкулта çамрăк ăрăва хутла вĕрентĕ май ерçеймен пирки хулине çитсе çӳреймерĕ, курмалли çынсене курса калаçаймарĕ-ха автор. Çĕнĕ çул умĕн çеç – ачасене хĕллехи каникула янă кун – пырса кĕчĕ вăл хай çурта. Кĕтессерен пĕрер сĕтел лартнă пӳлĕмре тăваттăн, пуçа чиксе, çил лекеймен вăрман кукри темелле тăплăхра, кашниех çырнă хута хăй тĕллĕн вулать, самантлăх кăн-н тинкерсе шăхăша каять те каллех вулать.

– Ак Хурамакпа калаçăр, ал çыру ун аллинче, – терĕ Каврăçа Шехвинов куна асăрхасассăн тӳрех хулăнрах сассипе, хура харшаллă пысăк куçлăхне тӳрлетнĕ май.

– Чӳрече енчи арçын, тĕксĕм сăнлă та çавра питлĕскер, вуланă çĕртен пуçне çĕклерĕ. Ваçука вăл хăйĕнчен виç-тăват çул аслăрах пек туйăнчĕ (кайран пĕлĕ-ха шăпах пĕр тантăш иккенне).

– Лар пукан çине, – çумри вырăна кăтартрĕ ку. – Вулатăп япалуна. Пилĕк-ултă страница кăна юлчĕ ав.

Сĕтел çинче, чăнах та, Ваçук ал çырăвĕ выртать. Уçнă страницинче пушă вырăна аякка кăранташпа çыра-çыра тултарнă. Куна курнă май тем ырăмарланса хĕрелсе те илчĕ-ха авторĕ.

– Мĕнпе вĕçленет-ха ку сан? – юлашки йĕркесенче мĕн пуррине пĕлесшĕн пулчĕ редактор. – Юрĕ, вĕçне тухнă тесех шутлăп. Ĕçлемелле пулать вара.

Ал çырăва Хурамак кĕнеке хупнă пек пĕрлештерчĕ те пĕрремĕш страницинчен тытăнса ăçта-ăçта мĕн паллă тунисене кăтартма пуçларĕ, ăнланмашкăн ыйтрĕ. Кăранташпа вĕттĕн, çав хушăрах уçăмлăн çырнине хăвăрт вулакаласа илсе, каллех сăнран улшăнкаларĕ Ваçук.

– Юрать, пăхса тухăп, – текелерĕ вăл хуллен.

Тепĕр икĕ редактор, çамрăк хĕрарăмсем, ăна тимлĕн сăнаççĕ, пуçласа тин кураканскерсем те, мĕнле çын тесе тинкереççĕ.

– Вăраха тăсса ан яр, çийĕнчех пурнăçлама тăрăш, – сĕнет Ваçука унăн редакторĕ Хурамак.

Эй, ĕçлет кун хыççăн килте автор, çур çĕр мар, тепрер сехечĕ те иртсе каять – малтан çырнинчен ытла хăшкăлать пуль халь вăл, анчах утăмĕ кĕске, ӳсĕмĕ сахал, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа ылмаштарасси – питĕ йывăрри; тĕл-тĕл пач çĕнĕрен çырать халь кĕнекеçĕ; çырать те машинкăпа çапать, унтан калллех тӳрлетет. Малтанласа уйăх хушшинче муталаса пăрахнăччĕ повеçе, халь ак унран та вăрăмрах вăхăт иртет. Ытлашши нумай хушă тытса усрама хушман-çке – ĕлкĕрмелле, апла пулсан, тимлемелле, ыйхă татмалла.

Пĕтĕмĕшпе çĕнĕрен çапса редактор умне çитерчĕ çапла ал çырăва иккĕмĕш хут Ваçук. «Эс çĕнĕрен çапнă иккен, эп кунта халь тĕкĕннисене тепре тĕплĕнрех пăхса тух-ха», – сĕнчĕ каллех Хурамак. Çын алли пырса улăштарнине хăшне-пĕрне çаплах хăварать, хăшне-пĕрне сĕм хыççăн сĕм çĕнĕлле май ылмаштарать Каврăç.

– Сан пек хăвăрт ăнланакан автора ку таранччен курман эп. Теприне темле каласан та пуçа илтерейместĕн. Эсĕ чăмласа памасăрах хăвăрт тавçăратăн – тĕлĕнсе каймалла, кирлĕ пек пач урăхла çавăрттарса хуратăн, – хакларĕ тепĕр тĕл пулăвĕнче редактор куна. – Малтан мĕн вăхăт çырнă эс ăна? Çулталăк е ытларах?

Пысăк япалапа тертленнĕ хыççăн канмалла уйăх хушинче унаса хутăм тесессĕн, Хурамак, тĕлĕнсе, пуçне пăркалать.

– Ак мĕн, – калать вăл хальхинче, – чĕлхе çунатлă санăн.

Ун пек чĕлхеллĕ писатель пирĕн литературăра сахал. Анчах санăн пуплевсенче хӳре çук. Хӳре те, çунат пекех, вĕçме пулăшмалла-çке-ха. Эс ăна тататăн.

Каврăç Ваçукь самантрах шухăша путать.

– Ку, эсир калани, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарасси мар, ăна тупма мана çăмăлах килмĕ, – терĕ вăл. – Тен, çавă пĕтĕм çырав ĕçĕнчи тертленĕвĕм пулĕ. Тавтапуç асăрхаса илсе евит тунăшăн.

– Ал çырăвна тытмастăм та пулĕ эп, анчах малтанхи страницăсенчех авторĕ таса чунлă пулни курăнчĕ, хăйшĕн мар, халăхшăн çырни палăрчĕ. Вулакансене кирлĕскер ку терĕм. Тепри ал сулнă кăна пулĕччĕ. Пирĕн йышра нумайăшĕ журналта мĕн çапăннине кăна хăйсен умне пыртарса хуртарма хăнăхнă. Ытларах тара тыттараççĕ.

Юлашки сăмахĕ ялта пурăнакан тĕп чăваша пачах та ăнланмалла мар. Çавна май сӳнтĕк куçпа тинкерет хăйпе калаçакан енне Ваçук.

Кайран ал çырăвне Хурамак почтăпа ярса пачĕ. Кульминацие якатса-якатса, якатсах ятăмăр пулмалла, çĕнĕрен пăхса тух-ха тенĕ вăл кĕске çырăвĕнче. Ку хутĕнче пач урăхла май çавăрттарса кăларчĕ вĕт асăннă сыпăка Ваçук, тĕпре тăракан ĕçе-пула пĕтĕмпех çĕнĕ сĕмсемпе сăнарларĕ. Каллех хăй те тĕлĕнет вăл, редактор та тĕлĕннĕ: япăх мар!

Ку япаларан пушаннă вăхăтра теприне машинкăпа çапса ларать халь ялти автор. Ик çĕр хĕрх сакăр страница пулчĕ вĕт малтан çырнă повесть! Алла тытса савăнмалăх чăн-чăн кĕнеке пысăкăш!

Спортсменсене вулаттарса пăхасчĕ. Вĕсем çинчен вĕтха пĕтĕм калани. Ăмăртусене пĕрле çӳренĕ туссем мĕн тейĕç? Е çыравçăсен йышне хак пама ярса парас-и, е журнала сĕнсе пăхас? Унта туя тыттарса кăларса çеç утараççĕ-ха, пĕр сăмсаланнăскер, кĕнекеçĕсем патнех çитерес-ха: умри тахăш-тахăш çулхисен планне хĕсĕнсе кĕрĕ тен. Малтанхи экземплярне хутпа хуплаштарса кĕнеке çурчĕн адресне çырчĕ ак, иккĕмĕшне – спорт ăмăртăвĕсене пĕрле çӳренĕ, халĕ çамрăк атлетсене вĕрентекен юлташ адресне.

Кантурти выртать пуль-ха, çухалмĕ, юлташа вулама сĕнни вара, ах, таçта çӳрет? Хăйне те кураймарĕ, калаçаймарĕ, юлашкинчен аран-аран каялла ярса пачĕç тус-

сем – черетленсе йышпалах вуланӑ-мӗн, вӑрӑм çыру çыра-çыра хунӑ, хӑйсемпе мӗн-мӗн пулса иртнисене аса илнӗ. Ӗç-пулӑм пирки сӳтсе яваççӗ иккен, пӗр-пӗрин шухӑшӗсене пӗлтереççӗ. Турӑçӑм, роман еннелле хӑвалаттараççӗ вӗт ку-сем ал çырӑва, ӑса-пуçа туллиленти çеç мар, нумай ыйтусе-не пӗрлештерсе ӑнлантарма сулӑм параççӗ.

Кӗнекеçӗсен çуртӗнчи мӗншӗн тусанланса выртать-ха çаплах?

– Çыравçӑсен пӗрлешӗвӗнче пӑхса тухтарӑпӑр эппин. Хут çырса парӑпӑр. Тӑрӑшса пӑх,– терӗ çу кунӗнче çитсе кӗнӗ Ваçука Шехви Венкки, ал çыру пирки аса илтерсен. Çынни ку халь ача-пӑча уйрӑмӗнчен илемлӗ литература пайне куçнӑ иккен, унта – аслӑраххи.

* * *

Çӗр чӑмӑрӗ хӑйӗн тӗнӗлӗ тавра, ку тапхӑрта йышӑн-нӑ вӑхӑт виçипе шутласан, яланах, кирек хӑш талӑкра та, çирӗм тӑватӑ сехетре пӗр çаврӑм тӑвать пулсан та, ӗç-хӗлпе тулса ларнӑ кунӗ кашнинчех пӗр килмест; çыннӑн çуралнӑ, çут тӗнчере куç уçнӑ, ӳснӗ, тӗрекленсе пынӑ саманчӗсем пур пекех, пӗр-пӗр япалан та пуçламӑшӗ, кайран унӑн ата-ланӑвӗ, чи хӗрсе е пиçсе çитнӗ тапхӑрӗ пурах; кашни япа-ла ӳсӗмӗшӗн те пурнӑç утӑмӗнчен хӑйне валли касса илнӗ сыпӑкӗ пур, кӗпçе пултӑр сыпӑклӑ, сӑмах пултӑр татӑклӑ тесе ахаль каламан. Каврӑç Ваçукӗн кӗнеки пирки чӗлхене кӑтӑклантартӑмӑр-и те кунта, сӑмаха пуçласа ямашкӑн та шӑп çак тӗлтен тытӑнмаллаччӗ пуль, малтанрах мӗн шарла-ни çыннипе паллаштарас тенӗ тӗллевпе кӑна пулчӗ ахӑр; ку çаплах юлӑр-и ӗнтӗ: кирек кампа та хамӑр пӗлекен пӗр-пӗр çын, хамӑра хумхантаракан пӗр-пӗр япала çинчен чӗлхене вылянтарса калаçма çӑмӑлрах. «Илтнӗ пуль-ха, паллатӑн вӗт-ха...» – теместпӗр-и çӗнӗ хыпар-хӑнар пӗлтерес, пулнӑ ӗç çинчен сӳтсе явас чухне? Эппин, ку таранччен сӑмах вы-лятни, тӗпрен илсен, çыннипе паллаштарас вырӑнне лектӗр. Унӑн умри çулӗ-йӗрӗ – савӑнасси-хӗпӗртесси, тарӑхасси-кӗ-решесси, шӑл çыртасси, юнасси, чӑн та, çакӑнтан пуçланать. Хура халӑхӑн пысӑк йышӗ çитсе çӳремен – çын çине тухман, калаçма юраман – тарӑнӑшах кӗрейӗпӗр-и-кӗреймӗр-и те мӗн пулса иртине сӑнаса пырар майӗпен.

Пуçламашĕ çăмăл килсен, вĕçĕ йывăр килет темеççĕ-и халăхра? Ир такăнни – каçчен темелле-и тата? Пурте пулĕ, никам валли те умри çул-йĕре малтанах çырса хуман. Каврăç Ваçукь хăй ал çырăвĕн шăпине телейлĕ тăвасшăн, амăшĕ те çуратнă ачине ыр пурнăç пиллесшĕн тăрăшнă пекех тăрăшса, пурнăçăн çав тĕлти çĕнĕрен çĕнĕ листине кунсерен уçса, çĕнĕрен çĕнĕ пулăмсене курса-вуласа пырĕ; теприншĕн тахçанах паллă вырăнсем уншăн тин кăна çут тĕнчене килнĕ çын куçне курăннă майлах курăнĕç.

Каврăç Ваçукь хулари çыравçăсен йышне сăнран-питрен паллать, пач пĕлменни çук; хайлавĕсене кĕнеке-журналсенче вуланă, кам мĕнлине тĕшмĕртейменни пулмĕ, пултарулăхĕпе хăшĕ еплерех шайри, хăшĕ мĕнлерех сасли уншăн паллă. Кĕнеке кăларакансен кантурĕнчен ал çырăва пăхса тухса хăвăр шухшăра калама ыйтатпăр тенĕ хутпала çыравçăсене пĕрлештерекен урама каять вĕт-ха вăл. Кирлĕ çурта – пӳлĕме тейĕпĕр – алăк уçса çитсе кĕчĕ вăл. Ăсталăха вĕрентекен консультант пичче, Ваçук ытлашши кăмăлласах вуламан, нумай хулăм кĕнекесен авторĕ, ватта сулăннăскер, сарă сăнлă та çемçе сасăллăскер, çамрăк çын мĕн çăмăлпа çӳренине пĕлчĕ те тарăн шухăша путрĕ, унтан хăйпе хăй, çав хушăрах килнĕ çынпа калаçнăн:

– Ятшыва парсан мĕнле-ши? – терĕ.

– Тахçан-тахçан ман ал çырусене – калавсен пуххине – вуланăччĕ вăл, тĕрĕс асăрхаттарнăччĕ. Тав сăмахĕ каланă эп ăна. Хăй çырнисене журналсенче вуламасăр сиктермен. Пĕлетĕп, – чунне уçса та хучĕ Ваçук.

Вĕрентӳçĕ каллех çамкине картлантарса шухăша путнă май телефон хăлăпне тытрĕ, кăлтăрмачне васкамасăр каллĕ-маллĕ çавăрчĕ. Кăштахран хирĕç сасă пулчĕ пулас.

– Эпĕ-ха ку, – пĕлтерчĕ такам та палласа илмелле çемçе сассипе литконсультант. – Ал çыру пур. Кĕнеке кантурĕнчен ыйтаççĕ пăхса тухма.

– «Камăн?» – терĕ пулмалла-ха лерен.

– Каврăç Ваçукĕн. Паллатăн-и ачине?

– «Пĕлетĕп, – калаçăва çыхрĕ лешĕ – Хулăм-и япали?»

– Ик çĕр хĕрĕх сакăр страница, – пĕлтерет явапллă çын, тĕркен юлашки страницине пăхса.

– «Вунă листа чухлĕ», – палăртрĕ пулас лерен.

– Ахаль тумастпăр, килĕшӳ хучĕ çыратпăр, – калаçрĕ çемçе сассипе литконсультант. Ку ĕнтĕ çыннине рецензи çырнăшăн ятарласа уйăрнă фондран тӳлетпĕр тени пулчĕ.

– Калаçса татăлтăмăр вара, – пĕтĕмлетрĕ телефонпа пынă калаçăва услам çу пек çемçе сасă, ырă кăмăллăн пуплекен литконсультант, çавра питлĕскер. Телефон трубкине хурсан вара вăл Каврăç Ваçукь еннелле тепре вашаватлăн тинкерчĕ те:

– Ятшыв вулать, рецензи çырать. Проза секцийĕнче тăракансене вулаттаратпăр, хам пăхса тухатăп, – терĕ. – Спортсменсенчен кама та пулсан хутшăнтарма май çукши? Хăв кама сĕнен?

– Вуланăччĕ-ха юлташсем. Халь вĕсене кураймастăп – хăшĕ ялта, хăшĕ пысăкрах ăмăртăва хатĕрленме ют хулана тухса кайнă. Тахçан таврăнаççĕ?

Ал çырăвĕ икĕ экземпляр кунта Ваçукăн, килте тепре пур, тен, ăна урăх палла тăрана вулаттарĕ-и?

Киле таврăнсан тăван яла юрттарчĕ Ваçук. Çуралнă килте шăллĕ пӳрт лартассишĕн тимлет, пурине тутарнă-ха, платниксем тытмалла, ялта ăстисем те çук, ятарласа çав ĕçпе çӳрекенсемпех – шабашниксем текеннисемпе – кĕрĕшмелле пуль. Кун пирки Элекçи пиччĕшĕн Ваçукăн та шухăшламалла, тимлемелле, велосипедпа, тен, пĕр-пĕр аякри яла çитсе килмелле. Çапла çӳренĕ самантрах ак хуларан пĕр-ик кунлăх амăшĕсем патне курма килнĕ спортсмен, аслă шкул преподавателĕ, куç тĕлне пулчĕ. Хăй хуйхине тăкрĕ Ваçук тӳрех: «Кĕрсе тух-ха, ал çыру парса яратăп. Спорт енчен чăнлăха тивĕçтернипе тивĕçтерменнине çыравçăсен ларăвĕнче калăн». Хаваспах килĕшрĕ ăмăртусене пĕрле çӳреленĕ ентеш, ал çыру мĕн иккенне те аван тавçăраканскер, ăслăлăх çынни.

Платниксем кĕрĕшсе ĕçе тытăнсан, вĕсене пĕренесем йăтса парса пулăшнă май, лешсем чикаркка чĕртнĕ хушăсенче, тĕрĕслес тĕллевпе, хăй çырнă пулăмсене кала-кала кăтартать Ваçук. Лешсем итлеççĕ, нимех те шарламаççĕ, çапах та ку е вăл мĕншĕн апла пулчĕ-ха, мĕншĕн урăхла тумарĕ тесе ыйтаççĕ. «Э-э, пăхмалла куна, сăлтавламалла, – шахвăртать Ваçук ăшра. – Манас марччĕ, вулакан ĕненмеллерех ӳкермелле».

Хулана çитсе килме те вăхăт çитерчĕ ял çынни, отпускрискер. Хайхи «урамра» – çыравçăсене пĕрлештернĕ кантур коридорĕнче – кусен ĕç планĕ те çакăнса тăрать иккен, унта çак уйăх вĕçĕнче Каврăç Ваçукĕн ал çырăвне пăхса тухмалла тесех палăртнă.

Çу кунĕнчи ӳте сĕртĕнекен лĕп çил пек çемçе саслă пичче ăна алă парса сывлăх суннă хыççăнах, хăй сĕтелĕн сунтăхне уçса, хулăм папка туртса кăларчĕ.

– Рецензи пур. Пĕр экземплярне парса яратăп хăвна. Ал çырăвупа ыттисене паллаштарăпăр. Хам вуларăм-ха эп, вуларăм, – терĕ çав тери мăн ĕçе палăртнăн. Унтан хайхи спортсмен адресне ыйтса пĕлчĕ, ăна та ларăва чĕнме пулчĕ.

Яла таврăниччченех, хулари скверта çын çӳресех кайман кĕтес тупса, хыçлă сак çинче вуласа тухрĕ рецензие автор. Хăйĕн ал çырăвĕсене çапла майпа хак панине куркаланă-ха ку таранччченех Ваçук. Вĕсем, тĕпрен илсен, пĕр евĕрлĕрех пулаççĕ, çапах та ик тĕрлĕ те теме пулать: пĕрисем произведенин тĕп шухăшне – калас тенине кураççĕ, теприсем ăна курмаççĕ те, ирĕксĕрех вара вуласа тухнă-ши ку вĕрентӳçĕ тесе иккĕленетĕн, анчах çаксене пĕр япала пĕрлештерет: ал çыру пулса çитмен, сăнарсем курăнмаççĕ, чĕлхе япăх – эппин, пичетлеме май çук тени.

Ятшывăн, ку тапхăрта тăван литературăра чăн-чăнласах ят-шыв илнĕ пиччен, рецензийĕ тытăмĕпех уйăрăлса тăрать пуль: самаях вăрăм çырнă вăл ăна, сăнарсене туллин тишкернĕ, тĕп шухăша витĕр курнă, лайăхлатмалли, лайăхлатмалли, лайăхлатмалли тĕлсене кăтартнă. Ытларах чĕлхене лайăхлатмалла тенĕ. Тĕрĕсех калать-ши? Вывочĕ – кĕнеке туса кăлармалла, халăха кирлĕ япала тени – чуна çĕклентерсе ярать.

* * *

Ах, çăмăл мар-çке, кĕске хушă çеç пулин те, çав лару кунне кĕтсе илмешкĕн. Юрать-ха, ĕçре, шăллĕ патĕнче пӳрт тунă çĕрте тĕрткелешсе йывăр шухăшран сĕвĕрĕлет, чуна пусса тăраканнинчен хăтăлса çăмăлланать Ваçук.

Кăнтăрла иртсен çитрĕ вăл шĕкĕр хулана. Çыравçăсене кулленхи самантра пĕлсе тăмалли хыпар хăми çинче ĕç планĕ çавăн пекех тăрать-ха; пӳлĕмĕсем речĕпех питĕрĕнчĕк,

пĕринче хĕрарăм секретарь пурри çеç ял вилсе пĕтменни çинчен калать.

– Ларăва малтан палăртнă пек виççĕре мар, тăваттăра пухăнас шутлăн калаçрĕç. Литконсультант шăнкăравларĕ-ха. Кĕт кăштах, – сĕнчĕ ку Каврăç Ваçукне.

Çу кунĕ вĕçнеллехи самантра е канаççĕ, е хăйсен çĕнĕ ĕçне тытăннă пуль ĕнтĕ сăмах ăстисем; вăхăт тупса килеççĕ пулсан, тем пекех. Коридорта каллĕ-маллĕ кумса çӳрес темерĕ Каврăç Ваçукь çав пĕр сехет ытларах чухлĕ хушăра, пушă пӳлĕм тупса та кĕрсе ларма шутламарĕ, юнашарти хăна çуртĕнче хваттер илнĕ хыççăн, чуна лăплантарас, вăй пухас тенĕ евĕр, ку çуртран инçех те мар, урам кукри тенешкел вырăнти скверта, хыçлă сак тупрĕ те унтах ыррăн, чуна ним пирки те пăлхатмасăр, вăрăм çула каймалли ăмăрту умĕн вăя перекетленĕ евĕр кануллăн ларчĕ – кăмăла лăпкă тытни те кирлĕ пулать ăмăрту çулĕ çинче, çавнашкалах хăвăн çинчен калаçнине итлес чухне те чуна хытах лăскатиччен канса илни кирлех.

– Эс кунта-и? Чухларăм çав: çакăн пек çĕре çитсе ларmалла эс. Кĕтеççĕ сана! Ачи ялтан килмен те пуль теççĕ, – курнă-курман хыпарларĕ-каларĕ ентеш спортсмен, ал çырăва вулама илнĕскер.

– Тăват сехете куçарнă терĕç те.

– Пухăннă. Пур. Кĕтеççĕ!

Коридртах ал парса илчĕ паллаnă çынсемпе Каврăç Ваçукь.

– Ха, спорт мастерĕ-çке хăй. Ачи курнăскерех, – калаçрĕ хисеплĕ çыравçă, халăхăн иртнĕ ĕмĕрĕнчи пурнăçĕ çинчен темиçе кĕнекеллĕ хулăм-хулăм роман кăларнăскер, Ваçукăн çӳхе пиншакĕ çинчи паллăна тинкерсе.

Уй-уй, мĕнле капла?! Пурте паллă çыравçăсем, проза секцийĕн членĕсем иккен кашниех, пĕри те вăхăт çук тесе сиксе юлман – мĕнле чыс çав териех Ваçука! Юратнă писатель Выл та кунтах.

Çыравçăсен йышĕн вырăнти председателĕ те хăй пӳлĕмнех кĕрсе ларса канашланма сĕнет, каясскер алăкне уçах хăварчĕ: калаçăр, сӳтсе явăр.

Кĕнеке кăларакан контур хуçи те, вĕсен ĕçе йĕркелесе пыракан секретарĕ те, Шехви Веннкки те вăрăм сĕтел хуш-

шине вырнаҫрӗҫ авӑ – пӗтӗм ятлӑ-шывлисем хушшинче ҫӳҫ вирелле тӑрӗ.

Председатель пуканӗ ҫине рецензие тӗпрен ҫыраканӗ, вӑтӑрмӗш ҫулсенчех хӑй ҫумне чаплӑ псевдоним ҫирӗппӗн ҫыпӑҫтарнӑ сӑвӑҫ, драмадург, прозаик – Ятшыв – вырнаҫрӗ.

– Нумай сӳпӗлтетсе кайиччен эпӗ рецензиех вулам, каласшине унта каланӑ, – тесе Кавръӑҫ Ваҫукь малтанах тӗплӗн паллашнӑ страницӑсене васкамасӑр уҫӑмлӑн вула пуҫларӗ вӑл, литконсультант кӗнекеҫӗсен хучӗпе паллаштарнӑ хыҫҫӑн ӑна сӑмах парсассӑн.

Ҫыравҫӑсен йышӗнче, кашнин ҫыру мелӗ хӑйне евӗр, уйрӑм сасӑ пур пекех, чӑн-чӑн, тӳрӗ пӗлтерӗшлӗн каласан та, чылайӑшӗ ыттисенчен тӳрех уйӑрса илмелле сасӑллӑ Ятшыв чӗнни хӑлхана кӗрес пулсан та, хӑйне куричченех кам иккенне уйӑрса илетӗн. Ун евӗр селӗп сасӑллӑ ҫыравҫӑсем (тӳр пӗлтерӗшпех каланине манар мар) ҫӗр-шывра – Мускавра – паллӑран паллӑ ӗҫченсем тепӗр ик литератор пур, ҫапах та вӗсене те пӑтраштарса ямастӑн, кашнин хӑйӗн мӗн енчен те пулин расналӑхӗ сисӗнетех. Вӑрҫа кайман-ха Тӑван ҫӗр-шыва вут-ҫулӑм хыпсан Ятшыв. Ӗмӗрӗпех литература хирӗнче вӑй хурать вӑл никамран та хур курмасӑр, ҫавӑнпа псевдонимӗ те хӑйне питех тивӗҫтерет.

Ҫырни ҫумне, вӗҫре: «Ятне лайӑх тупнӑ: «Тӳпе каҫӑхать» тенисӗр пуҫне, урӑх ним хушмасӑр ҫур сехетех каларӗ пуль ҫын. Вӑхӑта пӑхмарӗ пулин те, ҫавӑн чухлӗ иртнӗ пек туйӑнчӗ шкулта пайтах урок ирттерсе вӑхӑт еплерех шунине туйма хӑнӑхнӑ учитель. Унтан вара, никама сиктерсе хӑвармасӑр, мӗнле ларса тухнӑ ҫапла, йӗркипеле калаҫтарчӗҫ, ҫавна май пӗлӗш спортсмен иккӗмӗш ҫын сӑмах илчӗ.

Хайлав ал ҫырӑвне вӑл хӑй енчен пӑхса хакларӗ, аслӑ шкул преподавателӗ ахальтен ахаль спортсмен е вулакан марри те сисӗнчӗ. Кӗнеке кӑларакан кантур хуҫи, сӗтел ҫине хунӑ ал ҫырӑва уҫа-уҫа, ӑшра ун-кун вулать, ҫыру ӑсталӑхне хӑй куҫӗпе курса ӑнланма тӑрӑшать ӗнтӗ. Шехви Венкки кашнин ҫӑварӗнчен мӗн тухнине тимлӗн куҫласа тӑнлать. Нумай вакларӗҫ пухӑннисем, шухӑш пӗр евӗрлӗрех тесен те юрать: лайӑхлатмалла, лайӑхлатмалла ал ҫырӑва; эппин, авторӑн тав тӑвасси кӑна юлать кусене. Ваҫук ҫырать – блокнот ҫине кӗскен паллӑ туса пырать лешсен сӗнӗвӗсене. Чӗлхене пу-

клакрах теççĕ, ав, унăнне ăстаçсем. Чи çамрăкки, çулпала Ваçукран та кĕçĕнни, пединстутутри литкружокра шăллĕ шутланнăскер:

– Çынна тара тыттарса çыртаратпăр-им вара? Ак тин кăна кĕнеке саланчĕ – ик автор ячĕпе. Хăйсем пĕр-пĕрне пĕлмеççĕ, курман-калаçман – пĕрле кĕнеке çырнăн пулса тухать. Почтăпа ярса панă та лешĕ, çыравçи, кунта тепри тытса пичете хатĕрлет – икĕ автор ячĕпе çапса кăлараççĕ çапла. Ăçтала каятпăр литературăра? – терĕ.

– Ун пирки автор прави пур – саккунлă. Саккун иккĕшне те хӳтĕлет, – хирĕçлерĕ куна Шехви Венкки, хăй шăпах çав асăннă меслетпе соавтор шутне кĕнĕскер.

– Каврăç Ваçукь хăех тăваять, хăех вăй çитерет, – пĕтĕмлетрĕ кун ирки Ятшыв рецензент.

– Характерсене хăвăрт кăларать, анлă танлаштарусем тăвать, классиксенчен вĕренсе пыни куç кĕретех, – хаклать çавăнтах автора Выл.

Литконсультант пичче, услам çу пек çемçе сасăллăскер, Каврăç Ваçукь ĕçне çурт лартнипе танлаштарчĕ. «Анчах çурчĕ унтан чалăш-ха, ку енчен тикĕс мар – якатмалла, ĕçлемелле. Ӳркенмен ăста пулнă теççĕ. Тăрăш», – терĕ. Кĕнекене пичете сĕнеççĕ – тӳрлетнĕ, лайăхлатнă хыççăн, паллах.

– Ал çыру тӳрех набора пама хатĕр теместпĕр, анчах автор ăна шая çитерме пултарать, – тепĕр хут çирĕплетет рецензент.

Кăвак хуппи уçăлса килет пуль Ваçукăн? Хăй ку таранччен çырнине лăсканăшăн, ухă йĕппилле пыра-пыра тăрăннăшăн ытла ырах та мар шухăшланă çыравçăсем пирки Ваçук. Çыннисем, акă, – этемсемех, çамрăка пулăшакансемех, ырă чунлăскерсемех.

Пуç тайса тав тăвать вĕсене Ваçук. Йышра çулпала чи çамрăккине те тата хăюллăрах каламаллаччĕ, тиркешни те усăллă тесех палăртать автор.

Лару хыççăн, калаçса пĕтерсе пӳлĕмрен тухнă тĕле, тепĕр икĕ урăх писатель те курăнчĕ.

– Виç сехет лартăмăр вĕт пĕр тапранмасăр, виç сехет калаçтарчĕ автор пире, – тесе мухтать лешсем умĕнче консультант пичче Каврăç Ваçукне. Ял ачи еннелле кашниех тепре кăн-н тинкерет, пиншакĕ çинче значок курнипе: «Спорт

мастерӗ ҫав ачи. Пӗлетпӗр, тӳсӗмлӗ», – текелет. «Халь сӑмах ӑсти пулмалла ӗнтӗ, ҫырасса тахҫанах ҫырать вӑл, спорт тытса тӑнӑ курӑнать те-ха, кая юлман, тимлетӗр тепӗр енпе», – тесе хучӗ виҫҫӗмӗшӗ.

– Пулӑшас, ҫул парас терӗмӗр сана, – калаҫрӗ литконсултант пиччех. – Ак иртнӗ уйӑхра... Союз членӗннех пысӑк ал ҫырӑвне пӑхса тухрӑмӑр. Макӑрать вӗт ҫын. Куҫҫульпе йӗрет автор – йышӑнмарӗҫ. Сывлӑхӗ хӳхӗм мар ҫыннин, пурӑнасси те нумаях юлман пуль, романӑн иккӗмӗш кӗнекине ҫул хупса хучӗҫ. Сана, ав, хурласа тӑкмарӗҫ. Хӑв та эс тӗлӗнмелле лӑпкӑн лартӑн. Кунта пулать ай-ай, пӗри каланине тепри итлесе пӗтереймест, авторӗ темиҫе хутчен сикесике тӑрать. Ятлаҫсах та каяҫҫӗ, пӗр-пӗрне тем те пӗр каласа кӳрентереҫҫӗ.

Мӗн иккенне тӗшмӗртсе пӗтереймест-ха ял ҫынни, ӗҫехӗле спортри пек вӑй енчен виҫсе хаклама хӑнӑхнӑскер. Ун шучӗпе, япали мӗнле, ҫавна май сулӑмӗ пуль. Пӗрне килӗшӗ, теприне килӗшмӗ, пӗри пӗр тӗрлӗ курать, теприн – хӑйӗн виҫе, хӑйӗн хакӗ – ҫавӑ ҫеҫ уйрӑмлӑх. Ыттине ӑнкараймасть Ваҫук, туйне ермен – юррине пӗлмен тенешкел.

– Авторӗ тӳрӗ чунлӑ. Ҫавӑ курӑнчӗ, – калаҫрӗ Ятшыв коридорта. – Арӑму ӑҫта ӗҫлет? Ятлаҫмасть-и ҫырнӑшӑн?

– Сӑмах тӗкӗнкелет.

– Сан халь тӑрӑнса каясла ӗҫлеме лекет. Йӑванса кайсан арӑму укол туса ярать.

– Ӗҫ йӗрки кашни ҫыннӑн хӑйне евӗр, – хушша кӗчӗ Володя, ентеш спортсмен. – Каврӑҫ Ваҫукӗн те йӑлана килтерни пулӗ.

Спорт мастерӗ шарламасть, чухлать вӑл: хӗрӳ тренировкӑсене епле чӑтнӑ, ҫапла чӑтӗ, ӑмӑртусене хатӗрленес йӗрке епле тытӑмлӑ, ӗҫӗ майне кура ҫыру мехелне те ҫавнашкал май килтерсе пырӗ.

– Хӑв та пӗлместӗн-ха халь эс мӗнле пысӑк ӗҫ тунине, – сӑмахлать литконсультант.

– Сан халь редактор тытмалла, – терӗ пӗр сӗтел хушшинче апатланнӑ вӑхӑтра Ятшыв Каврӑҫ Ваҫукне.

Пуҫа илме пикенет, шухӑшлать – ӑнланса пӗтереймест ҫак сӑмахсен пӗлтерӗшне ҫамрӑк автор, тин кӑна сӑпкаран тухса ача урапи ҫине ларнӑ пекскер: редактора автор тытатьшим вара? Ӑна ӗҫлев кантурӗ палӑртать пуль?

Пĕчĕк ачах-ха çав эсĕ, пĕчĕк ача, кипке çинчен тин ирĕке тухнă пепкех – пурнăçа пĕлесси те, пĕлмесси те – пĕтĕмпех умра санăн. Халь пĕр шухăш çеç пуçа килтернĕ эс: ĕçлемелле, çанна тавăрса тертленмелле. Чĕлхене пуклак теççĕ. Хурамак та пуплевĕн хӳрине тататăн, хӳре çунат пекех вĕçме пулăшать тенĕччĕ. Леш кĕнеки, хăй умĕнчи каска урлă siксе каçни, пичет станукĕ тĕлне çитнĕ ĕнтĕ; халь кунпа лармалла, малтанхи опыт пулăшма кирлĕ. Тимлемелле, вăй хумалла.

* * *

Çу иртсе кайиччен çырав ĕçне тытас мар, пуçа кантарас, вăй пухас терĕ Каврăç Ваçукь; пĕр тытăнсан, тăхтама лексе, нумай хушăлăх кун сиктермелле ан пултăр уншăн, халĕ, ав, шăллĕне çурт лартнă çĕре кайса пулăшмаллах, чăрманмаллах.

Ак тамаша, платниксен кутăнне те курма тӳр килчĕ Элекçипе иккĕшне: аккăшĕ майлă мартарах калаçрĕ те, ăстаçăсем хирĕç пĕр-ик сăмах чĕннĕ хыççăн шăкăрт-шакăрт кутамккисене майларĕç, пурттисене чикрĕç те – сыв пул! – таплаттарчĕç анчах ялтан тухса. Кун пекки çинчен тăван литературăра кăшт каярахран Каврăç Ваçукĕпе пĕр тантăш çыравçă аван кăтартса парать. Эх, пур ĕçре те çавăн евĕр кутăнлашма май килсенччĕ! Сăмаха кăшт кăна хăвăнпа урăхларах илсен – пăрах та кай, юлăнтар, пуç çаптар! Мĕн ăмсанĕ çак платиксене кайран та Каврăç Ваçукь. Пысăк çынсем çав вĕсем – пуртă-сава ăстисем; кам тытнă, çавăн туса пĕтермелле çурта-йĕре. Ку вăл авалтан пыракан йăла, урăх çын вĕçлеме пымасть. Хăвах вара лешсене кайса тархаслатăн. Ах, пур ĕçре те çавнашкал пăхăнтарма май килсенччĕ! Çынна хисеплеме вĕрентĕттĕмĕр вара.

– Платниксем кайнă хушăра мăк çапса пĕтерĕпĕр, – чунне йăпатрĕ каска çинче чылайччен шухăша путса ним хускалми ларнă хыççăн Элекçи. – Унтан хĕç тимĕр виттерĕп. Алăкне-кантăкне кайран килсе касса-лартса туса парĕç.

Пĕрене хушшинчи мăка çапать Ваçук, юман йывăç калакпа мăка сӳс лăссипе пуçтарса илет те мăлатукпа шак! шаккать, типсе кайнине лейкăпа шыв пĕрĕхет. Ĕçĕ канлĕ, пукан çинче ларнипех ӳсĕнет, калака тĕкĕнтерет те – шак! мăлатукпа.

– Элекçи, «халь санăн редактор тытмалла» тенине мĕнле ăнланмалла-ши? – чĕнет Ваçук шăллĕне.

– Кĕнекеçĕсен йышĕнчен хăшне те пулин суйласа илме сĕнет пуль. Пĕлекенреххине тесшĕн ĕнтĕ.

– Унта тата çавсен кантурĕнчи ĕç юхăмне ертсе пыракан хĕрарăм «Йĕлтĕр йĕрĕ» повесть пур-ха терĕ ятлă писателĕнне. Япали лешĕн спорт çинчен те мар-çке. Диверсант парашютист çинчен. Пĕлмест-ши, пăтраштарать-ши?

– Чухлаймасть те пуль.

– Çавна та пĕлеймен çынсемех лараççĕ-ши кĕнеке кăларас çĕрте?

– Ун пекех шутламалла-ши? Пурте аслă пĕлӳ илнĕскерсем тетĕн-çке.

– Udинститутăн литература уйрăмне пĕтернĕскерсем ытларах. Ача чух шкулта урокра вĕрентекен хушнипе изложени–сочиненирен ытла нимĕн çырса курманскерсем, сăвă е калав май килтерес шутпа перо та тынманскерсем. Хулара пĕр-пĕр пысăкрах çынна качча тухнă та хĕрарăмĕсем, ăшă вырăна пырса лартнă вĕсене. Çырма е çырăва тĕрĕс хак пама вĕренеймен пулин те, мĕне те пулин ĕнкертнех ĕнтĕ, ыттисене кура мĕне те пулин тĕшмĕртме хăнăхнах.

– Арçыннисем пур тетĕн. Вĕсем еплерехскерсем тата?

– Пĕлсе çитерĕйместĕп. Хăшĕсем ача чух сăвă-такмак шухăшласа кăларассипе аппаланнă пулмалла. Теприсем хурăнташ-тăванĕсем урлă ĕç тупас тĕлĕшпе пырса лекнĕ ахăр. Вĕсем те мĕне те пулин хăнăхнах ĕнтĕ.

Нӳретнĕ мăка-сӳсе калакпа туртăнтарса хĕстерет те шак! тутарать мăлатукĕпе Ваçук. Масмак хĕрри сăрнă евĕр йăнк тӳрĕ тăсăлать сап-сарă пĕрене хушшинче сӳс пайăрăмĕ, илемлĕ курăнать куçа савăнтарса.

– Эсĕ пурне те итлесе ан пĕт. Хăйсем ăнланнă пек айваннăн сăмахланă, ав, хăшĕ-пĕри, – ăс парать пиччĕшне Элекçи.

– Ăнах чухлатăп. Выл каларĕ-ха, спорт енчен авторне шанмалла, хăй вăл спорт мастерĕ терĕ.

– Вăйлă кĕнеке тумалла ăна сан: çиçсе, çунса тăтăр. Ку таранччен пулманни палăртăр. Ыттисем ун çумĕнче именччĕр, ăмсанччăр.

Паллах, кашни çын япалана хăйне кура хаклать, хальччен хăй мĕн курни-илтнипе танлаштарса тĕшмĕртет. Цивилизаци

тени ялта мар-ха вăл, хулара, ытларах хутшăну-калаçу пур çĕрте, тĕрлĕ сийсем, ĕç вăйĕсем пухăннă çĕрте ураланать. Урапа-çуни камра пулнинчен килет аталану епле пырасси. Ял çынни вăл айванрах-ха, айванрах. Вăл ума тухса кураймасть. Ăна ирттерсе ямаççĕ хуларисем мала. Çавна пула катăк пулса юлатăн. Çакна хăвăрт ăнланса пуль-çке кĕнеке-журнал кантурĕсемпе çыравçăсен картишĕн пӳлĕмĕсене шăнăçа-шăнăçа тухнă алла хут-кăранташ тытнисем; пурте тенĕ пекех вĕсем ялта ӳснĕскерсем, Каврăç Ваçукь евĕрлех улăх-çарансенче çаран чупнă, алла çурла тытнă, кĕтӳ кĕтнĕскерсем; çунат варкăшмалăх сулăмлансанах хулана пĕр çитсе тăрăнсан каялла таврăнман тăван йăви еннелле; цивилизаци кăшăлĕнче пĕтĕрĕнме пуçланă. Мĕн тытса чарнăши Каврăçа институт пĕтереспе, диплом илес умĕн, хăйне çыравçăсен кантурне чĕнсех хут кĕшĕклемелли пӳлĕмсенчен пĕрне е тепĕрне юлма сĕнсен килĕшменшĕн? «Романтик эс», – касса хунăччĕ юлташĕ ăна кăмăлсăррăн ку ачи хула енне ал сулнăшăн, ялах туртăннăшăн. Тен, сăлтавĕ тарăнрах? Тен, хăй тĕллĕн кĕнеке-журнал самаях вуланипе чунне идеализаци нӳрĕкĕ тулса ларнă унăнне – çĕр-шывăмăра, тăван халăха ытларах усă памалла тени пăлт-пăлт тапса тăнăçке чун хавалĕнче, юнĕнче! Çавă аяккалла туртнă пуль ăна? (Апла пулсан, çав вăхăтри идеологи таптанчăкĕ ку çынни.) Тен, ирĕклĕхе, пăхăнманлăха хапăллакан вăрманти е хирти кайăк евĕр вăл? Тен, пачах урăххинче – чунĕпе çыравçă пулнинче; чăр, хăйне çыравçă пулмалла тесе картса хунинче? Тен, ку та мар? Юлмарĕ çав вăл çул пуçламăшĕнче хулана, кайран та килĕшмен пымашкăн. Тăмсай! Акă çавăнпах, цивилизацире хула яла ума яманнинче, Каврăçсем те урайĕнче упаленнинчен аяккараха сулăмлăн утăм тăваймаççĕ. Хастарланмашкăн алă çара пулниех чарать вĕсене. Анчах чи палăрăмли – çаксем мĕскĕнленсе чĕркуçленекенсем марри, çăкăр çимелĕх шалу ĕçлесе илекенскерсем пулни. Çут çанталăкра – уйра-хирте, вăрманта-катасенче – хăйсене ирĕклĕн тытни, çилпе, сивĕпе, çумăрпа кĕрешме вăй пуррине туйса тăни ытти лару-тăрура та чунне-чĕрине паттăрлантарать этемĕнне. Хула çыннин чул çуртсемпе машинăсем хушшине хĕсĕнсе укçа тăвас, унпа тутă пулнă хыççăн ăшра пытаннă сăлпăркка ĕмĕт çунатне сарас тĕллевпе минрешнĕ

чун-чĕрине пĕлсе çитейĕ-ши ялти уçă сывлăшпа сывлакан, суха пусçĕпе çурларан уйăрăлсах пĕтеймен çĕр çынни?

Шкулта вĕренӳ çулĕ тытăнсан кăштахран, пахчара çĕр улми кăларсан, ачасемпе пĕрле колхоза тымар çимĕç пуçтарса панă хыççăн пĕр кунхине самантрах темле алла ручка тытас килсе кайрĕ – ал тупанĕ кĕçтет те кĕçет Ваçукăн. Ак тытăнчĕ ĕçе ирĕклĕ çын. Ал çырăвăн малтанхи страницисене кăранташпа самаях тĕкĕнкеленĕ иккен Ятшыв. Сайра, пит сайра хăварать çын сăмаххисене автор, хăш-пĕр страницăра ун пекки пĕрре те юлмасть, анчах хăйĕн малтанхи вариантне те çапла халлĕн тăратса хăвармасть Каврăç, хăшне çăмăллăнах улăштарать пач урăх пулăмсемпе, сăмахсемпе, хăшне-пĕрне вара – малтан хăй ытларах ларса тĕс кĕртнисене пуль – ай-ай чун тухать пач тепĕр май улăштарма; çапах ют ал хускатнă майлă та, малтанхи манерлĕн те тĕс килтесе юлтармасть – чакалансан-чакалансан çĕнĕ сăмах тупăнатех – чăваш чĕлхин вун çичĕ кĕнекеллĕ словарĕ те ал айĕнчех те, мĕн чул тыта-тыта пăхмасть-ши çав томсене çамрăк автор; тĕрĕс çырмалли словарь те, вырăсла-чăвашла е чăвашла-вырăсла куçару кĕнеки те сĕтел çинчех. Тăван чĕлхе пуянни тĕлĕнтерсе ярать хушшăн-хушшăн Каврăç Ваçукне, хавхалантарать те ăна вăл, пусăрăнарах ĕçлеме хистет те.

Ирпе канса илеймен пуçпа тăнк-танк, тăнк-танк тенешкел утать шкула çын. Уй урлă каçнă çĕре пуç уçăлать, ачасемпе тĕркĕлтешсе ĕçлеме-вĕрентме тытăнсан вара ăсра малтан мĕн пурри пĕтĕмпех сĕвĕрĕлет, тепре хĕрӳн пилĕк авма вăй хушăнать. Шкултан пылчăк çăрса йывăррăн е шăннă панкра çийĕн çăмăлраххăн таврăнать çын уçă сывлăшра, хушшăн-хушшăн хаяр çилпе кĕрешсе. Апатланнă хыççăн ачисене пĕр-ик сăмах вĕрентсе калать-и, каламасть-и те уйрăм пӳлĕме – сивĕреххине – вырăн çине кĕрсе выртать; спортра çӳренĕ чухнехи йăлапа çире мĕн пуррине пĕтĕмпех хывса перет, çапла тин çуралнă чухнехи евĕр ӳт-тирпе таса вырăн ăшне чăмасть. Чăшăл-чăшăл, чăшăл-чăшăл тăвать ӳт сивĕпе кĕрешсе; тир айĕпе темле юхăм сăр-сăр, сăр-сăр чупнăн туйăнать. Сивĕ шыва кĕрсе тухсассăн çавнашкал вăл, ал шăллипе шăлăнса типĕннĕ хыççăн шăм-шак ăшăрхать, кĕпе-тум тăхăнсан вара канлĕхлĕн-ăшшăн туйăнса каять. Шăп çавăн

евĕрлех, çатта çара пакартан сивĕ тӳшек çине кĕрсе выртсассăн та, ӳт-пӳ чăшăлтатни ерипен çеç иртет; ăшăннă май, утса килсе ĕшеннĕскер, канлĕхлĕн, ним туйми çывăрса каятăн эсĕ.

Сехет çурăран мар пулсан, ик сехетрен вăраннăха ĕнтĕ çын, кăшт йăшаланкаласа илет те хăй умĕнче ĕç лавĕ-лавĕпе купаланса тăнине туйнипе ура çине тăрать; хăвăрт тумланать, кил-çуртра кăшт-кашт ăна-кăна пурнăçланă хыççăн урок тума ларать, ачи-пăчи мĕн те пулин ыйтать пулсан кĕскен ăнлантарать, вĕсем те шавласа кĕрленĕ хыççăн лăпланнă тĕле повесть ал çырăвне тытать.

Ларать вăл пĕтĕмпе манса, сăмаха тĕрлĕ-тĕрлĕ шухăшласа, улăштарса тĕпленет пукан çинче, сĕтел хушшинче кăштах пуçа пĕксе, алла ручка тытса, ăна хунă самантсенче словарь уçкаласа, унта сăмах шыраса, пĕлтерĕшне тĕплĕнрех ăнланма тăрăшса. Ай! пилĕке темскер, такам сивĕ алăпа хыпашлать тем, самаях сӳлеттерет, страница е абзац вĕçне тухасшăн е сăмах пĕлтерĕшне тĕпчесе пуплевне вĕçличчен чăтас-ха тесе пăталанса ларнă пукан çинчен хăпаймасть çыруçă, унтан вара хăйне хăй вăйпа хистесе тенĕ евĕр йалт сиксе тăрать те кăмака çумне çурăмне-пилĕкне пырса тĕкет – ăшăнма тăрăшать. Пуç та ырнă иккен – хĕсет, кашлать. Тепĕр кăштах, тепĕртаках ĕçлемелле, унтан паяна çитĕ тесен те юрать. «Сила воли» текенни спортран вăраннă-ха Каврăç Ваçукне – ак кăштахранах вăл, çурăм лăм ăшăнсанах – сĕтел хушшинче; халь ĕнтĕ – ним чарăнмасăр пыракан тепĕр касăк ăнтăлу. Спортсмен çапла интерваллă (хушăллă) тренировка тенине ирттерет, калăпăр, пĕр е икĕ километра пит хыттăн чупса кайса килет те сывлăш çавăрмалăх тăхтать, унтан – тепре, çапла темиçе хутчен вирхĕнет. Тăхтав хушшинче вара, ай, пăхас килмест çав çул енне, ай, хăратать те вăл сана; ай, чун туртмасть ун еннелле, мĕншĕн тесен асап, асап кăна кӳрет вăл сана; ай, чун шикленет çав асапа чăтассинчен, çапах та ырнă пулсан та, вăя пухса, тепре ăнтăлатăн, палăртнă хушша тухиччен лăпланмастăн. Каврăç Ваçукь те халь çĕнĕрен пуçне чикрĕ пулсан кирлĕ вăхăчĕсĕр сĕтел хушшинчен тухмасть, ку хушăра ĕнтĕ пилĕк-çурăм самаях шăнса кайма ĕлкĕрет, пуç та мăйран чул çакнă тенешкел йывăрланнă. Вăхăчĕ те çур çĕр иртсе кайнă ав. Ирпе шкула тухса утмалла-ха çыннин, уй урлă каçмалла.

Вырсарни кун ҫыру сӗтелӗ хушшинче мар ял ҫынни. Канать-ши пит? Канать сана! Станцирен машинӑпа тиесе килнӗ вутта, ҫумӑр чашлаттарса ҫуса тӑнине пула, урамах, мӑн ҫул хӗррине пушатма лекрӗ. Ак халь ӑна кил хушшине – аллӑ-утмӑл утӑм хушша йӑтмалла; пылчӑк ҫинче темӗнччен вырттараймӑн: ҫул ҫи ку, вӗҫӗмсӗр машина куҫать, пылчӑк сирпӗннипе вутту-шанку юшкӑн ӑшне путнӑ евӗрлӗн ҫӗрпе хупланса ларӗ. Метр тӑршшӗскерсем-ха сыпписем. Ҫичӗ кубометр. Пит мӑнттаййисене варринчен ҫурса хӑтланчӗ, анчах, тӗпрен илсен, ҫаплипех йӑтрӗ ӑвӑс е хурӑн каскасене Ваҫук. Юлашкинчен хӑрах хул пуҫҫи тайӑннипе чалӑшса лутралансах ларчӗ мар-и ҫын? Темшӗн-ҫке йывӑр япалана кӗлеткен сулахай енне хурас килмест, апла ҫӗклеймессӗн туйӑнать, ӳкет те ав чӑнласах. Сылтӑм алӑ япалана сылтӑм хул пуҫҫи ҫине хурать-ҫке.

Мунчара ҫапӑнмалла та халь – салара юсав тесе хупрӗҫ те уйрӑм ҫыннинчен кӑшт ҫеҫ пысӑкрах мунчана, ӗҫе ярайморӗҫ уйӑхӗпех. Тепӗр эрнинче ҫӑвӑнмалла пулать-ши? Ҫӗнӗ ҫул тӗлнелле хутма кирлех-ха.

Ҫӗр шӑнса хытрӗ, хӗл ларчӗ ӗнтӗ. Лӑпкӑ ҫанталӑкра тикӗс ҫулпа утма ырӑ. Ачасене йӗлтӗрпе ертсе ҫӳрет халь физкультура урокӗнче учитель. Ял айккинче ҫырми-ҫатри илӗртӳллӗ, унта ыткӑнтарса илсе каять вӗтӗ халӑха, вӗсемпе пӗрле хӑй те ярӑнса киленет вӗрентсе ӑнлантарнӑ хыҫҫӑн спорт мастерӗ. Эрне ҫине эрне сисмен хушӑра пит хӑвӑрт ылмашӑнать, черетлӗ шӑмат кун ҫитрӗ авӑ. Ирпе килтен тухсан кӑштахранах пӑрлӑ вырӑнта ура ярт! шурӗ те, ӳкесрен тытӑнса тӑнӑ хушӑра пилӗк темле чак! ыратса кайрӗ. Ӳт туртӑнчӗ-ши? Шкулта йӗлтӗрпе ертсе тухать ачасене уялла учитель. Виҫ урок физкультура паян унӑн. Ак вӑрӑм сӑрта хӑпарас чух пилӗк хытах ырата пуҫларӗ. Ярӑнса ҫӳренӗ май иртсе каять-ха, ҫемҫелет, уроксем хушшинчи тӑхтавра вара учительскинче журнал ҫырмашкӑн кӑшт ларатӑн та тӑраймастӑн та иккен сӗтел хушшинчен, алпа тыткаласа аран ҫӗкленетӗн.

Ытлашши пӑшӑрханса ӳкмесӗрех утса ҫитрӗ-ха Ваҫук киле. Ирпе пачах хытса ларнӑ иккен пилӗк. Тунти кун ӗҫе кайма та май ҫук: ҫын вырӑн ҫинчен тӑраймасть. Халӑх хушшинчи пек каласан, радикулит пырса ҫакланчӗ ӑна. «Спорт

мастерĕ, мĕн пулчĕ?» «Спорт ăсти утайми пулнă!» – тесе шăл йĕреççĕ ак паллакансем. Çăва патне-ха сăмаххи – вырăн çинчен тăраймасть çынни! Туя çине уртăнкаласа урам урлă çурта – больницăна – аран çитсе килкелет этемми; килте сĕтел хушшинче лараймасть – вырăн çинчех. Ăс-тăн ĕçлет-ха, пуç йăнк тăрах. Хĕр ачи, ав, библиотекăран мĕнле хулăм кĕнеке илсе килнĕ çав, э? Аслă çыравçин эпопейи-и? Кӳр-ха, парта хушшинче ларнă вăхăтранпа урăх тытманскерне тепре вуласа тухтăр çын. Эрне иртеспе тăвата кирпĕче шăп кăна вуласа пĕтерет вăл. Тепĕр эрне те вырмалла пек те: бюллетене тăсаççĕ, анчах шкулта чĕрĕк вĕçленет-çке, çĕнĕ çул çитет, ачасене çур çулшăн пĕлӳ паллисем лартса памалла. Укол тутарнин, электрофореза çӳренин усси пулчĕ самай, çын утма пултарать, – эппин, тек выртас мар, шкула каяс.

Çул çинче çӳресех, ĕçе çитсе килнипех йăмрĕ ерипен чир тени. Анчах айван ан пул, тăванăм: радикулит вăл, пĕр çыпăçрĕ пулсан, уйрăлмасть санран, ăна, ай-ай, ачашласа пурăнăн-ха мĕн ĕмĕр тăршшĕпех; пач утайми пулса тепрер эрне каллех вырăнпах выртăн-ха; çав хушăра больницăра хальччен пĕлмен врачсене-сестрасене палласа çитĕн; укола та, электромассажа та хушшăн-хушшăн çӳрекелĕн. Тек ĕнтĕ эс сив вырăн çине çири пĕтĕм кĕпе-тума хывса пăрахса кĕрсе выртмăн; çыру сĕтелне те кăмака çывăхнерехе туртăн, анчах йывăр йăтассичнчен пăрăнаймăн, вут хутса пурăнмаллискер, вутта кайсан тиеме лекетех, вăрманне касма та тивĕ; пахчара çĕр улми кăларса тĕп сакайне йăтнă чух та йывăр миххе çурăм çине хума лекĕ – шăнмасан нимĕн те мар – чăтатăн!

Ваçук тин студент чухне хулари кану паркне раман пырса хунăччĕ. «Кам вырăнтан хускатать çакна?» – тесе çамрăксене айхаштаратчĕ пĕр çын, вăрçăран хăрах урасăр пулса килнĕскер, чунне уçăлтарас-йăпатас шутпа ĕнтĕ. Ваçук иккĕ пычĕ çав сăвай çапмалли тимĕр каска патне, кашнинчех, хăлăпĕнчен тытса пĕр ал лаппи чухлĕ çĕклерĕ; юлашки хутĕ нче вара пилĕк нăк! турĕ. Тен, çавăн чухне чи малтан аманса юлнă Ваçук шăм-шакĕ? Кайран спортра туртăшнă-ха ĕнтĕ. Ах, мĕн чухлĕ тиев купаланса пырать-ши этем ĕнси çине?! Асăрханманни, пĕлменни ытларах хуçать. Чире пулах чылай хушă ал пыраймарĕ халь çыру патне. «Кайса ӳксен арăму укол туса ура çине тăрататьֹ», – тенĕччĕ Ятшыв. Пуç ывăн-

нипе тăрăнса анмарĕ-ха ку автор, ĕçре пулни, утни, çӳрени уçăлтарса пычĕ ăна, анчах тепринчен, сивĕ хыпашланинчен, пилĕке сиенлетессинчен хăтăлаймарĕ – çапла кашни çыннăн хăйĕн опычĕ пуçтарăнать. Тепринче пач урăхла авĕ кунçул кустăрми.

* * *

Çуралсанах хĕвел çутипе тулнă ырă куна курса пурнăçа пĕчĕккĕн пĕлме пуçлать те этем ӳснĕçем ытларах та ытларах тавçăрма тытăнать, вĕренет; хутла пĕлни çĕнĕрен çĕнĕ тĕнчене уçтарать; ватăларах пынă чух та пурнăça тишкерес çул çӳрев лăпланмасть-ха: мĕне те пулсан пуçласа асăрханипе шалт тĕлĕнетĕн. Çыракан çын этем кун-çулне тĕпчет теççĕ. Ку тĕрĕсех-ха, тата вăл пит тимлĕн тишкерсе пырать калаçăва, çырăва – чĕлхене. Тепĕр чух пĕр-пĕр сăмах пĕлтерĕшне е пулăма хăйне евĕр ăнланмалла калама пултарнине туйнипе ик алăпа пĕççе шарт! çапмалла тĕлĕнсе кайĕ. «Диалог хыççăн «тет» сăмах çеç пурри йĕрĕнтерет, çавăнпа синоним шыраса халтан каяттăм», – тенĕччĕ институтра вĕреннĕ чухне çамрăк çыравçăсен кружокĕнче паллă прозаик. Астуса юлнă-ха ăна Ваçук, манмасть. Ак вырăссен тепĕр классикĕн кĕнекине вуланă чух пĕр çĕрте тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ вăл: страницăра «тет-калать» ăнлава çичĕ тĕрлĕ сăмахпа палăртнă. Ахаль вулакан ăна туймĕ те, хăй те çырать пулсан çав çын куна тӳрех витĕр курса урăхла хаклать. Тӳррипе илсен, пĕтĕм вулакана тивĕçтерме çырать-ха писателĕ, лешĕ ăна, кĕнекене тытаканĕ, чухламасть çеç, ун чĕри патне шухăш пырать. Пуян сăмахсемпе нимĕн йĕрĕнтермесĕр çепĕççĕн, сисĕнчĕксĕр килет ăнлав – ак мĕн тыткăнлать те ĕнтĕ вулакана; кĕнеки вара ĕмĕрсем иртсен те кивелмест.

Тĕпре – шухăш. Сăмах çав шухăша уçса пама кирлĕ пулса тăрать çеç; мĕн чухлĕ пуянрах сăмах енчĕкĕ, çавăн чухлĕ ăнăçлăрах уçăлать калас тени. Каврăç Ваçукь хăй çырмасть тĕк, çакна такам пуçран шаккаса вĕрентес пулсан та, ăша хываймĕ, хăй тĕллĕн пушшех тĕнчене уçнă пек кураймĕ.

Калав, проза текеннине, çыратăн та çав жанра витĕртерех туятăн иккен. Ак халăхпа тĕл пулмашкăн концерта хатĕрленет учительсен йышĕ шкулта. Пит çăмăлах та мар-

ха ку аппалану, йăкăр-якăрах, кал-кал пымасть вăл. Пухура хăвах «концерт хатĕрлес» тесе алă çĕкленĕ-ха, апла пулин те уроксем хыççăн юлса пуçтарăнма пĕрне вăхăт тивĕçмест, е теприн йышран пăрăнмашкăн сăлтав килсе тухнă, Кавăç Васукь тесессĕн, унăн хăйĕн ĕçĕ мăй таран: ал çыру кĕтет, темле чун савни евĕр çупăрлать вăл ăна хăй çумне, уроксем тата ăмăртусем ирттернĕ хыççăн хăвăртрах чупса килме ыйтать хăй патне. Юрĕ, ячĕшĕн кăшт тытăнса тăрĕ эппин, йышпа пĕрле пĕр виçĕ юрра вĕренĕ, ытти... – çитĕ. Э, пăрăнтарса хăвараççĕ сана, кĕтсех тăр, хора хутшăннипех çырлахтараççĕ-и?! «Сас çук, пĕччен юрлаймастăп тетĕн пулсан сăвă вĕрен. Сăвă каласа паран: эсĕ – литератор». Вăт, çапла: пĕр номерпе тепĕр номер хушшинче залри халăха тытма сăвă е юптару кирлĕ. Вĕренес пулать. Кавăç Васукь çамрăк чухне пăхмасăр сăвă калама нумай вĕреннĕ. Пĕрре клуб сцени çинче чăваш поэчĕн поэмине пĕтĕмĕшле тенĕ пек шăрантарса панăччĕ пăхмасăр. Тĕлĕнтерес тенĕ-ши? Пулма та пултарать. Ак халь вăл паянхи концерта тивĕçлĕ сăвă шырать. Тупрĕ лайăххскернех, вĕрен те сулмаклăн ярăнтар çеç халăха шапăл-шапăл алă çуптармалла. Анчах пăхмасăр калама хăнăхаймасть вĕт, ăша кĕмест, чĕлхе çумне çыпăçмасть, пĕр йĕрке хыççăн тепри астăвăнаймасть. Йывăр вĕренме. Ютшăннă иккен, пуç мими хытнă ку тĕлĕшпе, ăна тепре çĕмĕрме çăмăл мар. Тен, проза сыпăкне каласа памалла мар-ши? Чим-ха, паллă писателĕн, Вылăн, повеçĕнчи сыпăка артист радиопа каланăччĕ. Шкапран кĕнеке илчĕ те хайхи тĕле тупса вулах пуçларĕ Васук, шухăш тытăмĕ çеç мар, пуплеве хут çине мĕнле çырни те тӳрех куç умне килет унăнне; вĕренме çăмăл та иккен. Тен, япали çавнашкал шăл çемми пуль? Кĕтсех тăр! Çынни, Кавăç Васукĕ, хăй çыра-çыра ларнипе проза текстне витĕр курма хăнăхнă; пĕр ĕç хыççăн тепри аталанса пыни, хăш сăмах хăшĕнпе килĕшсе тăни, пĕтĕм шухăш, сăмахсен çыхăнăвĕ, вĕсем типтерлĕн черетленни хăй çырнă евĕр ăша вăрăнать. Артист радиопа кĕске сыпăка вуланăччĕ. Кавăç Васукь, ав, икĕ тулли страница чухлĕ вĕренчĕ. Тĕрĕслесе пăхмашкăн литература урокĕ умĕн класра ачасене каласа пачĕ, физкультура урокĕнче те строй умĕнче пĕр-иккĕ хăйне тĕрĕслерĕ. Каласлăха çирĕплетрĕ çапла вăл. Чи йывăрри сăмаха сиктерни е ман-

са кайни мар-ха – сăнара витĕр курнипе герой шăпи майăн ăна хĕрхеннипе куçа куççуль тулни, пыра тем пӳлсе лартни. Ачасем умĕнче çăмăллăн иртсе каять-ха çав йывăр тĕлтен, чуна хурлантарнă çĕртен. Сцена çинчен халăха калса панă чух мĕнле-ши, чăтайĕ-ши куççуль кăлармасăр? Маларах хурланса илмелле пуль, чун пĕр уçăлсан кайран çăмăлрах.

Çапла, пилĕк-ултă куплетлă сăвă мар, ик страница чухлĕ проза текстне пăхмасăр калама вĕренмешкĕн çăмăлрах пулчĕ, этсемри. Хăй те пайтах ларать çав çынни çыру мехелĕпе. Ĕлĕкрех пĕр тĕрлĕ ăнланса пынă пуль вуланă кĕнекене; шкулта е каярах институтра вĕреннĕ çулсенче кĕнекене пĕтĕмĕшле те, сăнарсене кашнине уйрăммăн та, çавăнтах автор чĕлхине те тишкерме пултарнă Каврăç Ваçукь, халь ак хăй нумай-нумай çырнă май пичетленсе пыракан повесть-калавсене пач урăхла хаклать: хăшĕн, ятлă-шывлисеннех, пуплевĕ ытла кăнттам, теприсем ăнлавшăн пĕртте кирлĕ марринех каласа каяççĕ, çавăнтах кĕскен хыпарлассине ваклантарса ярса тем тăршшĕ тăсса сăмах купалакан та пур. Журналсенче хальхаççăн пичетленсе тухакан япаласенчен ытларахăшĕ тивĕçтерми пулчĕ Ваçука.

Хăй мĕнле çырать-ши? «Хӳрене тататăн, хӳре çунат пекех вĕçме пулăшать», – тенĕччĕ ăна Хурамак. Халь алă тĕкĕннĕ текстра – пĕтĕм ал çырăвĕнче – хӳресĕр кайăк евĕр пулмарĕç-ши ун пуплевĕсем? Чĕлхе пуклак терĕç тата малтанхи варианта пăхса тухнă чух ятлă-шывлă çыравçăсемех. Халь мĕнлерех улшăнчĕ-ши?

Вăхăт тупкаласа хуллен-хуллен ларать-ха çыру сĕтелĕ хушшинче чунне çунат хушнă автор.

* * *

Ăçтан тухать-ши вăл этемĕн вăй-халĕ: пĕр хĕрсе кайсан тăрăнса анасса пĕлмесĕр ĕçлет; тепĕр чух хавхалануйпа пĕрлех тарăхса кӳлешни те хал парса тăрать пуль çынна; мал ĕмĕчĕ – çитес çĕре çитесех тени – çул çӳревçĕне кирек мĕнле çанталăкра та умалла туртнă пекех, пĕр тытăннă ĕçре канлĕхе пĕлтермест; хăш вăхăтра канать-ши, мĕн самантра лăш пулма ĕлкĕрет-ши? Çав туйăмпах ĕнтĕ ял-ялĕнче çурт хыççăн çурт çĕкленет; кивви вырăнне çĕнни тĕпленет çеç мар, пысăкланать, капăрланать, пурăнма меллĕрех пулать;

хули те сарăлать-ха, хитреленет, анчах хула çынни урăхларах пуль, унта укçа та укçа кастарать, пĕр пус памасăр ним ахальтен никам тапранмасть вырăнтан. Хресчен те çавах-ха та, анчах унăн ирĕклĕхĕ пысăкрах, тата кӳршĕпе килĕшӳллĕн, пĕр-пĕрне пулăшса пурăнмалла та, алă тем патне те çитет: вĕçĕмсĕр пилĕк авать вăл – камран-ши пус ыйтса тăмалла? Хăй пурăнать вăл, йыш-тĕрĕшпеле çавнашкал тĕртĕшкелесе ураланать; ăна е куна йӳнеçтересси вĕçе-вĕç килет унăн; вилсессĕн те виç кунлăх ĕç юлать теççĕ-çке чăвашсем хăйсем пирки. Ытти халăхăн та çавăн пекех пульха ку. Хресчен çĕрне-кунне пĕлмесĕр тертленнĕ евĕрлех, çыру каçалăкĕ умне тăраканĕ те канлĕхе çухатать. Шкулта ачасене тимлĕн вĕрентнĕ, учительсемпе пĕрле халăх хушшинче тем тĕрлĕ ĕçсене туса пынă, вырсарни кунсенче ачасене районти ăмăртусене ермештернĕ хушăрах, тата хăш-пĕр чух çын мăшкăлĕ пулас мар тенипе Курнила йышшисемпе харкашса та илнĕ майăн кăмăлĕ самаях пăсăлкаларĕ пулин те, эрнерен эрне ирĕклĕн сывлăш сывласа илме те вăхăт тивĕçмен çинчех, ак кур, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пырса тĕкĕннипех, килти хуçа çĕнĕ çурт çĕклесе лартма пултарнă пек, хайхи повеçе тепре перопа тĕкĕнсе кăмăл-туйăм витĕр кăларчĕ Каврăç Ваçукь. Ку вăрăм хушăра тĕп чăвашла паха калаçакан, чĕлхе пуянлăхĕ тĕлĕшĕнчен такам ăмсанмалла, кăмăлĕпе пурниншĕн сапăр амăшне те пытарма лекрĕ Каврăçсен – вăрçă инкекне пула пайтах нуша курнăскерĕн, тăвата ачана пĕччен ура çине тăратнăскерĕн, ытла вăрăмах пулмарĕ çут тĕнчийĕ хĕрарăмăн. Çак тапхăртах хăйĕн пысăк мар повеçĕн корректурине те вуларĕ ялти автор. Кулленхи пурнăçра лару-тăру та ыйту хыççăн ыйту кăларса тăратнă майăн ун шевлине те хут çине килтерме пикеннипе ал çыру калăпăшĕ те ӳсрĕ; листа шучĕ çеç мар, шухăшĕ самай анлăланчĕ, виçĕ сюжет юнашаррăн выляна-выляна пычĕ; хаппи, ак, роман шайне килсе ларчĕ. Машинкăпа çапсассăн тепре пăхса тухнă хыççăн ал çырăва авторĕ, салтак каяс çынсене малтан пĕр çĕре пухнă пекех, кĕнекеçĕсен кантурне çитерчĕ.

Темле лăш пулнине туять алă, ĕнсе çăмăлланать, йывăр çĕклемрен вĕçерĕннĕ хыççăн хăвна ирĕклĕн туйма пуçлатăн. Мĕн тери ырă, канлĕ иккен ним туман чухне, тӳррипе илсен, Каврăç Ваçукь хăй хырăмне тата çемйине тăрантарассишĕн,

пурӑнассишӗн тертленнисем пуҫне урӑх ӗҫе кӳлӗнмесессӗн! Анчах ҫук-ха, ҫул вӗҫне ҫитмен, кулянма пуҫлатӑн хӑв ачу – ал ҫыру – шӑпишӗн; кӑларса янӑ та килтен, кайса пӑрахнӑ та темиҫе хутлӑ кирпӗч ҫурта – темле унта: те тусан хупласа хунӑ-ха, те такамсем йытӑ туланӑ пек хамлатса кӑптӑла кӑларнӑ? Кӑпӑр-капӑрах ҫитсе килеймест хулине ял ҫынни, ҫавна май амӑшӗ салтакри ывӑлӗ ҫинчен шухӑшланӑ евӗр, хӑй ал ҫырӑвӗ пирки те шав канӑҫсӑрланать автор; шкула ҫитмешкӗн уй урлӑ каҫнӑ чух та, таврӑнаспа та пуҫри шухӑш ҫавӑн ҫинчех. Ку вара ӗҫ тытса пурнӑҫланинчен йывӑртарах та пуль. Ӗҫ вӑл, май килсе пынӑ чух, ҫынна хавхалантарать, ҫавна май чуна уҫать, йывӑр кӑмӑла ҫӑмӑллатать. «Пурӑнать пуль-ха, пӗлтерӗҫ-ха», – шанчӑкне ҫухатмасть автор. Ҫырупа хыпар-хӑнар пулмарӗ. Ҫуллахи вӑхӑтра ҫитсе кӗчӗ хай ҫурта ял ҫынни.

Самай суха ӗҫӗ шутӗнчи тӗп пӳлӗмре тӑвата сӗтелрен пӗри ҫеҫ пушӑ, анчах унта та уҫса хунӑ ал ҫыру выртать; ыттисенче пӗрер ҫын шӑппӑн тӑнлавӗсене хӗсеҫҫӗ. Пӗр-пӗр хуҫалӑхра председателӗ-бригадирӗсем пуҫне звено пуҫлӑхӗ те пур пекех, ҫак йышра та чи аслисем пуҫне пӗчӗкрех портфеллисем те пур, ак Шехвинов – Шехви Ванкки, – хӑйсен сӑмаххипе каласан, тепӗр пусӑм ӳснӗ: ик пӳлӗмри йышӑн пуҫлӑхӗ шутланать. Чӳрече енчи сӗтел хушшинче вӑл. Ӑна хирӗҫле – унран кӗҫӗнрех портфелли, Серте Севечӗ тенӗскер. Ваҫук пурне те сывлӑх суннӑ хыҫҫӑн шӑп ҫакӑ, пушӑ вӑхӑчӗсенче вырӑсларан чӑвашла куҫарас енпе хастарланнӑскер, сӑмах хушрӗ.

– Пирӗн редактор паллашрӗ ал ҫырӑвупа. Кӗҫ кӗрет те пуль-ха вӑл. Шеф хӑй патне чӗнчӗ-ха ӑна, – текелесе хӑй умӗнчи сӗтел сунтӑхӗнчен, юман тумбочкӑран, папкӑпа ҫыхнӑ ал ҫыру туртса кӑларчӗ – Кавраҫ Ваҫукӗнех-мӗн.

– Кӑтартусем панӑ кунта, – калаҫрӗ Серте Севечӗ. – Пур страницӑсене те вуласа тухман пуль-ха вӑл, ҫавах паллӑ. Чӗлхене пӗлет вӑл пирӗн редактор. Мӗн каланине, сӗннине шута ил.

Ҫепӗҫҫӗн, вырнаҫуллӑн, вӗриленмесӗр сӑмаха шутарса пуплеме пӗлет ку хӗрарӑм, Ваҫукран ик ҫул аслӑскер, пединститута та маларах пӗтернӗскер. Ал ҫырӑвне мӗн-мӗн паллӑ тунисене тӳрех ҫакӑнта ларса тишкермӗ-ха автор, ун пеккине вӑл тӗплӗн, васкамасӑр шухӑшласа тӑвӗ.

– Çырнă-ха кунта ак,– тесе вăрăм мар çырăва та тыттарать автора Серте Севечĕ. Машинкăпа çаптарнăскерне куça пĕрре ывăтнипех вуласа илме ĕлкĕрчĕ Каврăç Ваçукĕ. «Чĕлхене пĕлсех кайманни сисĕнет авторăн, литобработка тутармалла пек туйăнать», – тенĕ унта ал çыру пирки. Мĕншĕн «пек», мĕншĕн «туйăнать» çеç эппин тата? Мĕншĕн вылянчăклă, шап татса каламан? Чăваш чĕлхипе литератури уйрăмне пĕтернĕскерне, ан тив, ку вăхăтра шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет пулин те, эс чăвашла пĕлместĕн тениех вĕт-ха ку? Сивĕ шыв ячĕç пулин те пуç тăрăх, шăм-шак ăшăрхать иккен, пит тĕлкĕшнине сисет ав Каврăç Ваçукь. Ялтан мĕнле çитни е ытти, яланхи, ун-кун пирки çăмăллăн калаçнăскер, шыв сыпрĕ халь вăл. Пĕр сăмах та тавăрса каламарĕ, ăнланăп-ха, ăнланма тăрăшăп текелесе шутласа, шăлне çыртрĕ, ал çырăвне алла илнĕ май Серте Севетне итлекелесе: «Юрĕ», – тесе çеç çăвар уçрĕ.

Малтанхи икĕ страницăна тата кайрантарахри – çĕрмĕш, ик çĕрмĕш, виç çĕрмĕшне, унтан чи юлашкине вуланă иккен те шĕп-шĕвĕр шĕвĕртнĕ хытă кăранташпа паллă тукаласа пынă-мĕн редактор. Машинкăпа çапнă хыççăн асăрхайман икĕ йăнăш лекнĕ çавсенче, тепĕр виç сăмах – орфографин ку тапхăрти тавлашуллă ыйтăвĕсенчен (пĕрисем çаплах-ха хăйсем майлă çыраççĕ, теприсем – тепĕр майлă); Каврăç Ваçукь кăшт маларахри евĕр çырнă; чарăну палли – хӳреллĕ пăнчă – лартасси те çавнашкалах. Çирĕпленсе, хытса çитеймен-ха çав çыру йĕрки пирĕн чăвашсен ку тапхăрта – çитмĕлмĕш çулсенче. Юрĕ, редактора майлă пулма тăрăшĕ автор.

Пăлханнине ирттеркелесе, сивĕннĕ хыççăн ăшăнса, ăшăрханă хыçăн сивĕнсе тепре тертленсе ларĕ.

Ку пӳлĕмрен тухсан юнашаррине, чи малтан иленнине, пычĕ Ваçук. Тăваттăшĕ те пур кунта. Темле ăшшăн сăмах хушрĕç вĕсем.

– Пукан ил, ак лар, – сĕнчĕ Хурамак ăна. Унтан сунтăхĕнчен Ваçукăн пулас кĕнекин корректурине – иккĕмĕш хут вуланă хыççăнхи листасене кăларчĕ.

– Çĕнĕрен хушас темерĕç. Калăпа кĕмен пирки пĕр страница чухлĕ кĕтĕртрĕм. Пăхкала-ха, – сĕнчĕ вăл хăй авторне. – Ак çак вырăнтан пуçласа йĕрке хыçăн йĕрке кăларкаларăм.

Пуçра урăх шухăш тулса ларнипе, темле тимлĕ пулма тăрăшрĕ пулин те, пит витĕрех курса вулайрĕ теейменĕр автора.

– Юрать, пырĕ тата,– килĕшрĕ вăл.

– Тĕп шухăшне хăварма тăрăшрăм, – калаçрĕ Хурамак. – Хăшĕсем ытларах юлнă шая пир тăрăхĕ евĕр шăлт касса пăрахаççĕ çеç. Эп ун пек тăвас темерĕм. Мĕн пулса пĕтрĕ ĕнтĕ ку халь пирĕн? Лешĕн пирки мĕнле ĕçӳ?

– Тин тухрăм-ха юнашар пӳлĕмрен, – ал çырăвне кăтартать автор.

Хурамк çеç мар, юнашар сĕтел хушшинчи сапăр хĕрарăм та, тепри, харсăр сăвăç Чĕкеççи те тытса пăхаççĕ хай япалана.

– Çинçен шĕвĕртнĕ хытă кăранташпа вĕттĕн çырма юрать, – пахалать поэтесса леш çĕнĕ редактора.

Кĕскен каланине вуланă май Хурамак пуçне пăркалать.

– Хăтланаççĕ ĕнтĕ кусем, – тет вăл.

Ваçук нимĕн те ăнланаймасть-ха.

– Ĕçле, ан парăн, опыт пур халь сан, – ăс парать вăлах.

Леш редакторĕ произведенири тĕп геройăн хушаматне спортсмнсем хушшинчи паллă ят тенĕ тата. Хăй пĕлекен çын çав ятлă-ши? Авторĕшĕн пулсан, шухăшласа кăларнăскерех. Кирлĕ тĕк, шыраса пăхĕ урăхла ят!

Ах, хушамат тупма та çăмăл мар-çке. Утать, çӳрет çын; унта çитнĕ, кунта; машинăпа ларса пырать-и, апат хушшинче-и – пуçра шав шырав. Блокнота çыра-çыра хурать. Мĕн чухлĕ ят пухăнчĕ-ши унта – пĕри те чуна килĕшмест; малтанхине те хăварас килмест хăйĕнех халь унăн – кăмăла тивĕçтермест. Пач урăхла янăраса каймаллискер пултăр вăл, пĕрре хирĕçлесе сĕртĕнчĕ пулсан. Хушамат тупмасăр кулăш ăстин хайлавĕнчи персонаж евĕр, ручка тытса лараймасть хальхинче автор, мĕншĕн тесен тикĕслесе çитернĕ тапхăрта тикĕсленсе çитнĕ пултăр тĕп сăнарăн ячĕ-шывĕ те. Çу иртсе кайиччен, хура çĕр шур шăналăкпа витĕниччен тупса палăртсан аванччĕ ăна.

Хавхалану та пулать-çке, этсемри, этем пурнăçĕнче! Пĕр чипер кун кĕнеке магазине кĕчĕ те Ваçук çӳлĕк çинче хăйĕн кĕнекине курах кайрĕ: пысăкрах япалана малтанласа вĕçленĕ хыççăн канмалла самантра çырса пăрахнă повесть

кӗнеке пулса саланма ӗлкӗрнӗ ав! Çын-мӗн пулас мар тăк, çак самантра Кавтăç Ваçукь, ачалăхра çуркунне çерем çине каптăрмаклă, пылчăк сырăннипе йывăрланса кайнă çăпатине салтса пăрахса çарран чупса тухнă чухнехилле, савăннипе кăлтăрмач пулса кукăлчăклă-макăлчăклă выртса йăванӗччӗ. Çын пурри тытса чарчӗ ăна. Çума чикнӗ пур пек укçине тӳлесе, хăй кӗнекине пӗр хул хушши хӗстерсе вăшкăртрӗ магазинтан автор.

Тăван яла каяс умӗн çитсе çаврăнас тенӗ-ха вăл лавккисене. Шăллӗ çӗнӗ çурта кӗнӗренпе кӗреке çаврăрманччӗ, халь ятне тăвасшăн та, унта çитмелле. Ак вӗр çӗнӗ кӗнеке – çӗнӗ çурт кӗрекинче. Шел, амăшӗ пурăнса çитерейменӗ, ăна савăнăç кӳрейменӗ Ваçук. Тус-тăванӗсене кӗнеке тыттарать халь вăл. Чап-ши, сум-ши? Мӗн темелле этемӗн çавăн пек кăмăлне? Ах, леш хайлавăн тӗп геройăн хушаматне чуна тивӗçтермелле хăçан тупмалла-ши? Ăна тупсан вара тепре ура явса ларасси юлать – тепӗр хӗл, тепӗр çу.

* * *

Утма çул... Мӗн чухлӗ туйăм çуратать çак сăмах ял çыннин чунӗнче! Кам тăван касран хире-улăха тухман-ши, çырма-çатра урлă каçман-ши, вăрмана çитсе кӗмен-ши çинçен авкаланса выртакан сукмакпа?! Ăшă çу кунӗнче, утă çинче, ӗç çинче е кӗркунне ытла та илӗртӳллӗ-çке вăл. Эс каятăн таçта – хăвăн тӗллевӳпе, йышпа мар, пӗччен (иккӗн юнашар пымашкăн çул хӗсӗк), çавăнпа сукмак ӗнтӗ вăл, çинçен кăна тăсăлакан, çырма-çатрана анса хăпаракан, пӗр вырăнтан тепӗр вырăна илсе çитерекен каçă. Тырă пуссинчи ăрша юххи сан кăмăлна тыткăнлать, чунра çепӗç кӗвӗ çураттарать; пите тулли пучах сӗртӗнни, çӳл хăмăлӗ хул пуççине тӗкӗнкелесе илни савăк кăмăл çӗклет; хăвпа хăв калаçас, кулас, ахăлтатас килет; кӗрхи кунсенче ват ăшши кумăннă чух шурă çип кантра уруна тăллани чуна каллех çич пӗлӗте çитерет; тăрлинк-тăрлинк тăрна сассипе кӗр ăсанни те чунра тепӗр юрă çураттарать.

Уй урлă утать ӗçе Кавтăç Ваçукь. Пысăк çул айккипе яланах тип-тикӗс сукмак тăсăлать – ура çăмăллăн илӗнсе пусăнать унта. Ялпа ял хушшинчи пӗр вартан тепӗр вар урлă, пысăках мар вӗтлӗх витӗр мăн çулпа юнашар пекех тепӗр

çинçе каçă тăсăлать – çав утма çул та сала ачине хăй ĕçлес вырăна илсе çитерет. Мĕн чухлĕ илемлĕх! Янкăр кунĕ çеç мар, пылчăкĕ те, çумăрĕ те илемлех-çке, тепĕр тесен. Çав ĕлккенлĕхе туйса утать ирлĕ-каçлă Каврăç Ваçукь. Пуçри шухăш вара никам сăмах хушса чăрмантарманран таçта та çитет, темĕн те шырать. Тупрĕ-тупрех ак вăл хăй çырнă япалан тĕп геройĕн ятне те – çынна мар, хăйне çĕклентерсе ярать, вăй парса тăрать çав çĕнĕ ят халь ăна. Ĕнтĕ малалла – çырасси, тӳрлетесси, хут кĕшĕклесси; сехет çурă – ик сехет, виç сехетлĕх саманта сĕтел хушшине сăнчăрланса ларасси... Уйăх, çур çул, ытларах касă – пĕр тытăннă трассăна тепре тухасси.

Якатнине хальхинче çынна çаптарас тара тытса, укçа парса: хăй çапни ытлашши тикĕсех мар ав. Ялан çав ĕçпе – кĕвĕ инструментне пӳрнепе пусса сас кăларнă пек – шăкăлтаттарса лараканĕсем те «ют кĕвĕ» (йăнăш) яраççĕ-ха та, вĕсен тирпейлĕрех; тата хăвна та çăмăлрах: тепре тинкерсе via вуласси çеç юлать санăн.

Ак каллех тĕркемлесе çĕнĕрен илсе çитерчĕ автор ал çырăвне чул çурта. Малтанхи пулăмĕсене унтан-кунтан тĕкĕннĕ çеç мар çав, самаях çĕнетнĕ, пурнăç утăмне кура, автор хăй курни-илтнине хут çине кăлара-кăлара пынине пула ал çыру самаях ӳснĕ, страница шучĕпе çеç мар, шухăш сулăмне пăхсан та, роман ĕнтĕ халь вăл.

– Союзра консультанта рецензи çыртарнăччĕ-и-ха эс? – пĕлменнинех ыйтать-ши Серте Севечĕ ал çырăва хулăм журнал çине паллă туса йышăннă чух? Каврăç Ваçукь хăй япалине проза секцин ларăвĕнче пăхса тухнине, протоколне маларах кунта панине ăнлантарать. «Ларура Шехвинов та пулнăччĕ», – тет.

– Тупатпăр пуль-ха... пулсан, – тет шăл витĕр Серте Севечĕ, хура ĕç «лашийĕсенчен» кăшт аслăраххи. – Мĕн калĕçха. Тен, плана кĕртĕпĕр те-и?

Нимĕнле ĕç те çийĕнчех пулмасть, кĕнеке кăларакансен те ал çырăвĕсене пăхса тухасси ЭВМпа пулса пымĕ. Черет çитĕ-ха, Каврăç Ваçукь япалине те уçкаласа пăхĕç темиçемĕш хут. Хăй вăл килте ахаль лартăр-им, уй урлă. хир урлă кирек мĕнле çанталăкра та пĕр шухăшсăр уттăр-и? Ачасене вĕрентес çĕрте ыттине пĕтĕмпех манса çамрăк йыша

çутта кăларассишĕн çеç кĕрешет пулин те, учительсемпе лару-канашлусенче, ахаль хутшăнусенче шкул ĕçĕ пирки кăна пулин те сăмах-юмахĕ, тата спорт ăмăртăвĕсенче Курнилапа каллех тытăçса илкелет пулин те, ачасене малта пулччăр тесе тимлет пулин те, уй урлă каçнă чух литература çинчех ани-йăранĕ Каврăç Ваçукĕн. Ак ун умне, такам ылтăн чăмăркки килсе пăрахнă евĕр, малтанхинчен пушаннă, унтан кăштах каннă тĕлелле урăх ĕç-пулăм пырса çапрĕ пуçа: ку чухнехи шкул пурнăçне кăтартмалли сюжет. Çырмалла! Тепĕр повесть тытса унăн вĕçне тухассишĕн хăвалать халь çын. Стартран тапранса тухнă спортсмен финиш йĕрне, вăл ăçтине куçпа е чунпа курсах тăнă евĕр, çĕнĕ повеçĕнроманĕн вĕçне те курать-ха çыравçи – шухăшĕ – чупса тухас çул инçĕшĕ, техĕмĕ – çавăнта. Анчах унта çитме пайтах ыткăнмалла-ха, ыткăнмалла, каламаллине нумай каламалла, пĕр-пĕр халсăр марафонец çулăн пĕр пайне кӳмере ларса пынă, финиш умĕн çеç сиксе тухса ăнтăлнă пек хăтланмĕ Каврăç Ваçукь; мĕн тертленмеллине, йывăрлăхне çул çинче тӳсĕ – туллин çырĕ çырассине, тĕплĕн калĕ калассине, унсăрăн ĕнентереймĕ вулакана. Ку хайлава та кама та пулин кăтартмалла туса çитересчĕ, кам та пулин чăрманса чăкăрташланни усса килет, епле вăйлатса пычĕ лешсене те кашнинчех автор.

Атăлçи хулине кирек епле йӳтĕмпе çитсен те кĕнеке кăларакан çурта кĕмесĕр ирттермест Ваçук. Улшăну пулнă унта: тĕпре туртаканни, самай мăн портфелли, урăх çĕре куçнă, ун вырăнне халь шăпах Каврăç ал çырăвне шĕвĕр кăранташпа вулаканĕ йышăннă. «Пăхăпăр-ха ĕçне, пăхăпăр, заявка çырнă пулсан, – терĕ ял çыннине çаксекер. – Хулара пунăç хаклăрах. Укçа нумай кирлĕ», – каларĕ малалла Ваçука ăнланмалла мар.

– Пирĕн ĕçе тĕрĕслесе ертсе пыраканнипе кĕрсе калаçха эс, халь те сиктерсе ан хăварччăр япалуна, – ăс пачĕ Ваçука Хурамак.

Мĕн, çынпа пач сăмах хушса илме пĕлмен мăçтăрккиехим ял учителĕ; ура ярса пусрĕ вăл унта – комитет текеннине. Ку хуçи хăй писатель те, çав çырнине ним сиктермесĕр тенĕ пек вуланă та, пĕлнĕ-курнă çын шутĕнче сăмах хушрĕ ăна, хăйпе пĕр çулхи çынна Каврăç.

– А-а, спорт мастерě! Пěлетěп сана, пěлетěп. Журналта калавна асăрханăччě. Çавах пулě ěнтě ку терěм.

– Ал çыру, роман, выртать-ха. Малтан тыткаларěç те, халь хускалман.

Пÿлěм хуçи тек сăмах шарламасăр (ал çырăввăн пěтěм содержанине каласа пама хатěрччě Ваçук) кнопкăна пусса тÿрех калаçмалли аппаратпа хайхи пысăкрах портфеллипе – «шěвěр кăранташпа» калаçса та илчě.

– Кěртетпěр ěнтě плана, вулаттаратпăр, – шантарчě лешě.

Тепрехинче Серте Севечě те, Шехви Венкки те ял ачине:

– Плана кěртрěмěр, кěнекÿне тытса куратăн, – терěç.

Хирěç чěнмест пулин те, Каврăç Ваçукь шалт тěлěнет: мěншěн «тытса куратăн», «вулакансем патне çитеретпěр» мар? Хăй ăссěн çÿрекен ăсчах сěмленмест те кěнекеçě-сен çăварěнчен тухакан сăмаха. Шантарни аван-ха, анчах çаплах пулса пěтě-ши? Ěненет ял ачи. Хăй вăл, ав, тепěр ал çыру писательсен консультантне кăтартмалăх хатěрлесе хучě черетлě тапхăрта.

– Леш романě тухман-ха ман. Ăна пулса çитнě тесех шут-латăп. Кун пирки вара иккěленетěп, çавăнпа мěн каламалли-не тÿртен калăр, – терě Ваçук пенсие кайнă çемçе сасăллă çын вырăнěнчи çěнě консультанта, хăйěн тантăшне.

– Ак хушас паллă лартса пытăм хама мěн килěшнисен тěлне. Кăларас паллăсем – килěшменни. Тÿррипе каласан, итле: куна нимле редактор та тытса пичетлемест санăнне – хальччен каламаннине калатăн, пурнăçри хальхи çитменлěх-сене тÿррěн кăтартатăн,– тунмарě ку уйăх иртнě хыççăн тěл пулсассăн. – Мěн сěнес-ши сана? Вуласа пăх-ха ку чухнехи паллăрах писательсене: тен, çемçетмеллерех мел тупăн, шу-хăшна урăхла çавăрăн. Ăнланатăп сана эп, чунпа çыратăн, ан-чах пурин çинчен те тěрěсне калама хушмаççě-çке пире.

Урăх сăмах кирлě мар Ваçукшăн, тата темиçе-темиçе хут тытса, юсаса-улăштарса темиçе хутчен рецензи те çыртарě-ха ку япали пирки пуç тайма пěлмен çын – спорт мастерě.

* * *

– Кěнекÿне вуларăм! – сывлăх суннă хыççăн аякранах сăмах сыпрě урамра тěл пулсан Никодим леш саланма ěлкěрнě пысăк мар повесть пирки.

– Ăна хамăр район хаçатĕнче тустарать кăна-çке вырăнти критик.

– Сур вăл калани енне. Хăйĕн алли витĕр тухасса кĕтĕ пулас вырăнти хаçатçă. Эс ăна кăтартман та. Ак халь – чышкă-муклашкă сана.

– Унашкал шутлама пулать-им?

– Çынни тахçан кĕнеке кăларнă çĕрте ĕçленĕ тет-и кунта чакса киличчен. Вĕреннĕ пуль унта, çӳллĕрех çĕрте чух, çамрăксене ăс кĕртме.

Каврăç Ваçукĕ хаçатра тухнă пысăках мар критикăна ăша хытах илменччĕ-ха, ун енне алă та сулнă темелле: пичетленсе тухнă – халь пĕрне килĕшĕ, тепĕрне килĕшмĕ; кашнин хăйĕн виçи терĕ çеç вăл.

– Хавхаланса вуласа тухрăм, – мухтать хайлава районти спорт юхăмĕнче туслашнă юлташ. – Çамрăксене патăм, вĕсем алăран алла çӳретеççĕ. Киленеççĕ кĕнекӳпе.

– Тавтапуç çу сĕрнĕшĕн. Анчах, ав, теприне, маларах çырма пуçăннине, кăларасшăн мар-ха манăнне. Шăкăр-шăкăрах ура хуракансем.

– Пурнăç – кĕрешӳ, Василий Васильч. Кĕрешес пулать. Ак эпĕ те райĕçтăвкомран тухрăм та банка каятăп. Хамăрăн укçанах çурт-йĕр тунă çĕре яма та памаççĕ. Çӳретĕп лумпа хирмелли çĕрте лумпа хирсе ав, – хăй хуйхине хыпарлать колхоза ертсе пыракан çамрăк.

– Хăвна ăнăçу сунатăп эппин. Ан парăн, – Никодима хавхалантарать Василь Васильч. – Спортсмен чунлĕ пул.

Спортсмен чунĕ тени те кашнин хăйне евĕрлĕ çав: ак Курнилапа каллех тытăçса илме лекрĕ Василь Васильчăн. Шкул ачисен çуллахи ăмăртăвĕнче утмăл метра чуптарса ăмăрттарнă чухне хăйĕннисене юри кунăн спортсменĕсемпе юнашар тăратмарĕ, ытти ушкăна çыртарчĕ. Финишра вара хăй секундомерĕпе виçрĕ. «Тĕрĕс мар шутлатăр! Ак циферблата пăхăр: иккĕ вуннăмĕш пай чухлĕ хăвăртрах тухрĕ малти ача», – тесе ĕнентерчĕ Фишкăпа ыттисене хăйĕннисем пирки. Чылай чух çеккунт чухлĕ лайăхлаттарать. Кĕске дистанцире çав пĕчĕк уйрăмлăх та пит пысăк пулса тăрать-çке: ача пилĕк-ултă вырăн чухлĕ е мала, е кая куçса ларма пултарать. Вĕчĕрхенмесĕр чăтаймасть çакăн пек чухне Василь Васильч, хăй те вара калама, ăнлантарма тытăнать, çапла май

чăн тавлашу пуçланса каять. Районти спорт хуçисем – Фишка йышшисем – ĕçе тĕрĕс йĕркелемеççĕ, вĕрентсе кăтартсан та майне килтереймеççĕ, çитменни çине тата Фишкăпа Курнила час-часах пĕрле çыхланса çӳреççĕ, эрех кĕленчи пушатаççĕ; ĕç сĕтелĕн тумбочкине пырса пăхсам пĕрре – снаряд гильзисем евĕр шаршанланать унта пуш кĕленче.

Курниларан хăтăлатăп пуль тенĕччĕ Василь Васильч, хăйне район центрĕнчи вăтам шкула куçма сĕнсессĕн. Хăпса пĕтеймерĕ вĕт: лешĕ ĕçлекен шкула та сакăр çул вĕренмеллинчен вăтам пĕлӳ параканни туса хучĕç, çапла майпа каллех пĕр ушкăнра кĕрешмелле пулса тухрĕ кусен.

Çулла кăшт хушă çав ачапа тытăçса илмесĕр канма пулать чăнласах: лешĕ куçăн мар мелпе вĕренет те экзамен тытма сессие каять. «Физкультура енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ çын пĕрремĕш пулатăп», – текелет вăл тахçанах. Капаяс шухăшĕ куç кĕретех çакăн. Малашне районти ытти физкультура учителĕсене ним вырăнне те хумĕ-ши вара? «Ĕçӳпе кăтарт эс, ху вăйлине тĕрĕс кĕрешӳре ĕнентер», – тейĕпĕр-и ăна? Ĕçĕ пачах çук мар-ха та, районти ăмăртусенче тĕп вырăна ултава хурать çынни. Тĕлĕнет Ваçук: ултавпа мала тухни çыннăн чунне савăнтарма пултарать-ши вара? Хăшĕн вăй-халĕ еплине пăхатăн-çке, улталани-суйнине мар. Суеçĕсем суеçĕ семпе тупăшчăр – кам кама, хăшĕ хăшне чике тăршшĕ лартать? Ай, этемлĕхре çавăн пекки те вăй илсен?

Кил çывăхне куççан, хăйĕн çырас ăшталанăвĕ ăнăçлăрах та каяссăн туйăнчĕ Ваçука: ĕçе çитме-килме утса ытлашши вăхăт çухатас çук. Тӳррипе илсен, пач урăхла çавăрăнса пыра пуçларĕ йăла-йĕрке ав. Пĕтĕмпех çул çинче шухăшласа кăларатчĕ вĕт хут çине мĕн ӳкермеллине çын малтан, кайран пӳртре ручка тытса йĕрлетчĕ çеç, халь ак çавăн евĕр шухăшлас, çырас мел улшăнчĕ – уй урлă каçмасть этемми, килтен тухсан кăштахранах шкула çитет; унта тĕпĕртетӳ – хĕрӳ ĕç – пуçланать. Уроксем хыççăн та тӳрех киле тухса утаймастăн: ачасене секцие явăçтармалла, ăмăртма тĕплĕнрех хатĕрленмелле, унсăрăн Курнилапа сăмахлама та май килмĕ. Районта çеç мар, республикăра та палăрмалла-ха хăй ачисемпе халь вăтам шкул учителĕн.

Ырри – инçе çула кайса килме çăмăлраххи. Малтан хуларан ирпе таврăнсан, ялти шкула урока ĕлкĕрме май çукчĕ,

халĕ апла та май пур. Тăтăш тенĕ пек çитсе çӳреме пуçларĕ ĕнтĕ хăйĕн ал çырăвĕ выртакан çурта Каврăç. Кунта вăл Хурамакпа курса калаçать, ăна райхаçатра çапăнса тухнă рецензие парать, лешĕ çийĕнчех хăвăрт вуласа тухать те: «Юрать, кун пек хакланă, аван, ним çук япалах темен», – тесе хурать. Чĕкеçси ыррăн сăмах хушать: «Хурамак епле паха кĕнеке кăларса пачĕ сана!» – тет. «Хам та туятăп», – хуравлать Ваçук. Лешĕ повеçĕн малтанхи пуплевне калать, корректура вуланă иккен те астуса юлнă.

Юнашар пӳлĕмре – çыннин çĕнетнĕ ал çырăвĕ. Вĕршĕле тыттарнă хальхинче ăна. Ачи Хурамакпа, Каврăçпа пĕр тантăшах. Аван калав çыра-çыра кăларать хăй. Ваçукăн журналта тухнă пĕрремĕш калавне те шăп çавă редакциленĕччĕ. Ку самантра кĕнеке кăларас çĕре кусна вăл. Пĕр-пĕрне хитре пĕлеççĕ вĕсем.

– Кăштах тĕкĕнкелетĕп-ха япалуна, – терĕ Вĕршĕл Каврăçа сăмах хушсанах.

Автор пуçламăш страницăсене тыта-тыта пăхать. Пĕрик тĕлте пуплев хушкаласа сăнара туллилетнĕ-мĕн, теприне кăшт улăштарнă, хăйсен патĕнчи евĕрлĕрех калама тăрăшнă. Çĕмĕрмен! Аван пулса пырать. Кăшт-кашат унтан-кунтан сĕртĕнкелени мĕн тĕкĕнни вăл?! Саламласа хул пуççирен тĕртсе илни айăкран чышни мар-çке, çурăмран каçăхса каймалла çапни мар! Вуласа тухнă романа Вĕршĕл пĕтĕмĕшле, килĕшнĕ ăна вăл. Халь, ав, юлташпа юлташ тĕл пулнă чухнехилле, тĕрткелет çеç. Тӳррипе илсен, çаплах хăварас пулсан та, тĕссĕр мар.

Юнашарти сĕтел хушшинче Серте Севечĕ ларать.

– Кĕнекӳне тытса куран. Кăларас терĕмĕр,– сăмах хушать вăл пит ыр çын пек палăрса. Çапла калаçнă май хĕрарăм тăрать те, графинтан стакана шыв ярса, чӳрече янахĕ çинчи вазăри чечеке шăварать. Шупка çӳхе кĕпе те сенкер кофта ун çийĕнче. Çӳçне çӳлелле пуçтарнă. Çавра сăн-питлĕ. Сарăрахскер.

– Кĕнекеллĕ пулатăн, – тет вăл каллех, пысăк пĕлтерĕше палăртнă евĕр.

Ун сĕтелне хирĕç Шехви Венкки – кусенчен портфелĕпе асли – хăй ĕçĕпе минрет – корректура-и, ал çырăвĕ-и вулать. «Чĕлхе ăслăлăхĕн профессорĕ çырнине ак мĕн чухлĕ тĕр

тӗрлесе пӗтертӗм», – тет кăштахран мухтаннăн, уйрăм листасене тӗркемлесе. Унтан Каврăç енне тинкererех пăхать те:

– Мӗн хушă çырса лартăн, мӗн чухлӗ хут пӗтертӗн ку япалушăн? – тесе ыйтать.

– Пӗр çур литр кӗленче чернил, – пач урăхла ăнлантарса хурать Васук. – Порошокран туса лартрăм та çавна перопа пуçа-пуçа илсе типӗтрӗм.

– Пӗчӗк пачкăпа сутатчӗç. Çавăн пеккинчен турăн-и?

– Хамăр лавккана кăларнăччӗ те таçта вырнăскерне, ик пачка туянса хутăм. Халь сутмаççӗ ун пеккине. Тепӗр хулăм кӗнеке çырмалăх пур-ха кăвак чернилах.

– Татах тем çыратăн пуль ӗнтӗ?

– Пӗр тытăннăскер чарăнаяс çук.

Çапла кăмллăн калаçкаласа пӳлӗмрен хăпать Васук.

Çăва тухатпăр. Ӗçре, вӗренӳре, йӗлтӗр ăмăртăвӗсенче хӗл ирттерсе яратпăр та – çăва тухатпăр. Ак çуллахи спорт сезонӗ пуçланать. Физкультура учителӗшӗн ку та пысăк пӗлтерӗшлӗ, пӗр евӗр ӗçрен тепӗр евӗрлине куçатăн. Кӗрешӳ... тытăçу... Каврăç Васукь халь тăван чӗлхепе литературине вӗрентет тата; чăвашла изложени, сочинени, диктант çыртармалла, грамматика правилисене ăша хывмалла. Пăртак ютшăннă пек те пулнă иккен темиçе çул хушши вырăс чӗлхипе литератури вӗрентнӗскер тăван çимӗçрен. Халь çавна май çӗнӗрен курса пырать чылай пулăмсене, вырăслипе танлаштарать: хăшӗ еплерех? Ах, тăван литература кӗлетӗнче – ачасене вӗрентмелли хрестоматисенче – «Нарспипе» Çеçпӗл Мишши сăввисем, Хумма Çеменӗ пе хăш-пӗр авторсен калавӗсемсӗр пуçне кайттăрах-çке пурлăхӗ вырăссенпе танлаштарсан. Пысăк халăхăн чӗлхе тӗлӗшӗнчен, илем енчен илӗртӳллӗрех. Тăван чӗлхепе литератури учебникӗсенче пур кирлӗ тема та вырăн йышăнать, анчах вӗсенчен ача-пăчана çатăрласа тытса илекенни сахалрах. Хальхи тапхăрне пула çӳлтен хушнипе килет-ши ку? «Тема» тетпӗр те пулчӗ-пулмарӗ япаланах хрестоматие чикетпӗр мар-и? Кулленех вуласа пынă-ха тăван культура тӗслӗхӗсене Васук, чӗлхепе стиль аталанса пынине те тимлӗн сăнанă, анчах ху вӗренте пуçласан, урăхларах курса хаклатăн-çке ăна – санăн виçӳ урăх. Тем тесен те, журналсенче çапăнса тухакан хăш-пӗр ниме тăман япала пек

çырас марччĕ Ваçукăн; чĕлхе – тăван анненех пултăр, чунĕ тăван халăхăнах пултăр; илемлĕхĕпе чăвашсен хăш-пĕр мерченĕсене ал патăр, вырăс классикĕсене çывăх тăтăр. Ăçта вăрттăнлăхĕ классиксен? Чĕлхене витĕр пĕлнинче-и? Çапла тейĕпĕр. Анчах вăл çеç те мар. Халăх чунне курма пĕлнипе пуль? Ку çеç те мар. Тĕпрен илсен, халăх пурнăçĕ пе унăн шăпи пирки шухăшлани. Сăмах вăл ăшра каламалли пуррипе çуралнă; эппин, каласах тетĕн пулсан, эсĕ те сăмахна тупăн, паллах, ун енчĕкне куллен тултарса, кирлĕ майлăн якатса, хурçăлатса-туптаса пыратăн пулсан. Этем шăпине тĕпе хумалла. Çынна курса, ăна сăнамалла. Çынни, ав, тĕрли те тĕл пулать. Пĕрисем таса чунлă, тар кăларса ĕçлесе пурнăç тăвасшăн; теприсене ят-сум илĕртет, ăна тар кăлармасăрах, ултавлă майпа илме май килнине чухлаççĕ; ят-шывĕ вара хăй пурнăç тума пулăшать, çапла май çын ыр курать. Таса чун-чĕреллĕ мар çын пурнăçа сăнас, теприне вĕрентес тĕллевпе перо тытса ларса, вăй-хала кăларса çыру ĕçне пикенме пултарать-ши? Чи малтан ал çырăва пăхса тухакансенчен консультант пичче те, Ятшыв писатель рецензент та Каврăç Ваçукĕпе уйрăммăн калаçнă чух: «Таса чунлă çын кăна повесть çырма пултарать», – терĕç. Тĕрĕсех-ши? Ун пирки те пуçне ватать, пурнăçа тĕпчесе пырать Ваçук.

* * *

Пахчара, йăран чавса, кишĕр, кăшман, хăяр вăрри пăрахнă, сухан чикнĕ, купăста, помидор калчи лартнă; кусем хыççăн çĕр улми анине те шуратнă ĕнтĕ – ир-каç е канмалли кунсенче яра кунах кĕреçе тытса пилĕк авнă. Шăм-шака самаях суртарнă хыççăн халь пĕр хушă ал-ура лăштах пулчĕ темелле; хăярпа помидора çеç пĕверен шыв йăтса шăваратăн каçсерен; сивĕтнĕ, тăм ӳкнĕ тĕлсенче ăна мĕнпе те пулин хуплатăн, витетĕн. Уйра кĕр калчи тăри пытанмалăх ихрĕ, çуртри те пăрчкан йăпăртаса кайни курăнас çукла сип-симĕс чашкăрса тухрĕ; ешĕл çерем ирсерен, хăлха çакки курăкĕ кăпăш çурăлнипе, сап-саррăн курăнать – хитре кавир сарса хунă тейĕн. Шкулта – вĕренӳ çулĕ вĕçленес тапхăр, экзамен умĕнхи лару-тăру. Сывлама та вăхăт  çук пек-ха та кун пек чух, çапах пахчари хĕрӳ ĕçрен алла пушатнă хыççăн, хулçурăм ĕшенчĕкĕ иртсе пынă май, каç кӳлĕм пĕр самант та

пулин хут тытса ларасчĕ; халь пĕр хушă килте, урока хатĕрленисĕр пуçне, сĕтел хушшине вырманçманскер, тепре пукан çумне çыхăнас; шкулта педканашлу е апла-капла пуху таврашĕ пулмасан (çу уйăхĕнче ун пекки çине-çинех), перона çивĕчлетме тытăнмалла пуль: чи-чи малтан – институтра чухнех – çырма палăртнине, кăшт-кашт тĕрле-тĕрле хунине малалла тăсмалла – пуçра шухăш каплана пуçланă ĕнтĕ. Пĕлĕте çил хӳтерсе килмелле те – çумăр чашлаттармалла çеç; шăп çакнашкал ыткăнтарса çырмалла çĕнĕ япалана. Ĕнер лараймарĕ – паян лармаллах. Ак Каврăç Ваçукь шкултан шăпах вăхăтра çитрĕ; эппин, ĕç ăнмалла – пĕр-ик сехет пек ерçӳллĕ самант çеç кирлĕ ăна пĕр касăк шухăша шурă хут çине тăрлаттарса тăкмашкăн. Çав хушăра вăл ăмăртура е хаяр тренировкăра тертленнĕ чухнехилле ывăнĕ; кайран, хăяр-помидор шăварса, пӳрт умĕнчи пĕверен шыв йăтса, çынсемпе калаçса уçăлĕ; пуç йывăрланнине ирттерĕ.

Почта килнĕ, çыру та пур иккен. Вĕршĕлтен. Ăш кăрах турĕ: мĕн каласшăн-ши редактор? Пĕр-пĕр сыпăка (ай, хăшнеши?!) хытах тĕкĕнесшĕн-ши? Апата лариччен, çи-пуçа улăштарса тăхăниччен çăтăр-çатăр уçрĕ конверта Ваçук. Нумай мар, кĕскен çеç палăртнă Вĕршĕл. Иккен, планра ун япали ал çырăвĕ калăпăшĕнчен çурри чухлĕ çеç тăрать. Редактора малтан кун пирки шарламан та пулнă-мĕн. «Палăртнинчен ытлашши пĕр йĕрке те хуштармаççĕ, ку енпе пит çирĕп. Мĕн тумалла? Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнчи хĕрӳ тапхăр пулин те, килсе кайма тăрăш. Ку ыйтăва татса памаллах», – тенĕ Вĕршĕл. Выçă хырăм та тăранса ларчĕ Ваçукăн. Мĕншĕн апат çийиччен уçрĕ-ши çырăва – чăтма çăмăлрах пулатчĕ пуль. Халь ав самантрах мĕн чухлĕ шухăш пуçра çиçĕмле выляна-выляна иртет: мĕн тумалла, ал çырăвне каялла илмелле-и? Ун вырăнне асăннă калăпăш чухлĕ калавсен пуххи сĕнмелле мар-ши? Журналта кун çути курнă виçĕ калав пур-ха, тепĕр çавăн чухлĕ иккĕ журналсен сунтăхĕсенче тусанпа хупланса выртать – асăннă виçе шайĕпе чип-чипер калав кĕнекиех пулать. Çук, юрамасть кун пек: плана хушамата çеç лартман, калавсен пуххи темен пуль ха; вак япаласем пурăнĕç вĕсем – ку романа кун çути партармалла. Варринчен çурса ик кĕнекен кăларсан мĕнле-ши? Килĕшĕç-ши? Май пур пек-ха.

Пӳртре мар, пахчара ĕнтĕ – сап-сарă çурăлнă хăлха çакки курăкĕ пуснă çерем хĕррипе – каллĕ-майлĕ утать Кав-

răç Ваçукь. Пуç такам чулпа кӳплеттерсе çапнă чухнехилле ыратать; ик алла тăнлава тытса çерем айккинче ларать çын пĕр хушă ним те шухăшлас мар-ха тесе. Анчах ăçта ĕнтĕ, ăçта унта канлĕх – пĕтĕрĕнет, çавăрăнать çеç шухăш пуçра. Мĕншĕн плана миçе листа кĕртине каламан вара авторне? Тен, малтан хăй ыйтнă чухлех кĕртнĕ пуль те, халь Шехви Венкки хăйĕнне кăларма е çывăх юлташне ыр тума касса илмен-ши? Çавăнтах район библиотекине вăшкăртса каять Ваçук. Çыннисем палланăскерсемех кунта. «Кĕнекеçĕсен тематика планĕ пур-и сирĕн кунта?» Пур иккен. Тупса пачĕç. Тĕп-тĕрĕсех: хушамата, ята çырнă Каврăç Ваçукăнне, повесть ятне палăртнă; калăпăшĕ сакăр листа чухлĕ; çитес çул виççĕмĕш кварталта тухмалла тенĕ. Аннотаци – кĕске содержани те – пур. Кĕнекен çапса кăларнă çак плана Мускаврах. Тĕнче пĕлсен те, автора япали мĕн хулăмăш пулмаллине систермен; лешсен ĕç пӳлĕмне кĕрсен ун пирки пĕри те çăвар уçман: Серте Севечĕ те, Шехви Венкки те!

Уялла тухса утать Ваçук, мăн пĕве хĕррине çитсе çавăрăнать, сăртра çутă шыв çинелле пăхса ларать, пуçне ик чĕркуççи çине те хурать хушăран хушă, çапах шухăш арпашăнма пăрахмасть, пĕр тăруках пысăк произведени çырса хунă чухнехилле ыратать тăнлав. Хăçан каймалла, мĕн вăхăтра çитмелле хулине? Педканаш пулнă чухне уроксем хыççăн шкултан хăпаймастăн; пуххинче те пулмалла – çинеçине черетленеççĕ ун пеккисем çу уйăхĕнче шкулта. Çапах та май тупмалла. Хăш кун? Çав кун. Тепĕр ирпе таврăнса пĕрремĕш урока çитме пулать. Енчен ĕлкĕреймесен? Кампа та пулсан урок улăштармалла-и? Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче ун пек хуçаланас марччĕ расписанипе. Хăш кун ирхи урок çук, хăш кун юлашки урок пушă-ха Каврăç Ваçукĕн? Ах, ун пеккине тупма та çăмăл мар этсемрине – автобуспа ларса тĕп хулана çитме, ĕç тума, кайран хăна çуртĕнче вырăн тархасласа илсе çĕр каçма, ирпе каялла килме. Кун пирки те тĕрлĕ майлă шутласа, тĕрлĕ тĕслĕ виçсе пăхса пуçа çĕмĕрет ял çынни, çамрăк автор, учитель, спорт мастерĕ – Каврăç Ваçукь.

* * *

Кăнтăр иртни тăватă сехетпе çитсе кĕчĕ хайхи çурта автор. Пĕр хутран тепĕр хута улăхмалли пусма картлашки

çинчех тĕл пулчĕ Вĕршле Каврăç: Хурамакпа пĕрле пирус туртса тăрать.

– Хăвăрт çитрĕн. Эп сана ку эрнинче килеймĕн те тенĕччĕ, – сăмахларĕ редактор. – Атя, кĕрсе калаçăпăр эппин.

Пӳлĕмре Серте Севечĕ те, Шехви Венкки те – аслă тата ертсе пыракан редакторсем – хăйсен вырăнĕсенчех. Сăмах май каласан, пирус туртмаççĕ вĕсем, эрех те сыпмаççĕ: ăшпа чирлĕ теççĕ. Ку хăямата-ха! Спорт мастерĕ Каврăç Ваçукĕ те пирус алла тытман, пуçа минретекен шĕвеке те хапăл мар вăл, анчах леш асăннисемпе хурăнташлă тееймĕн – лешсен ăш чирлет, Ваçук – ăмăртусене кĕрлеттерсе çӳрет, хĕлле халĕ те йĕлтĕр пăрахмасть, çулла чупать, утать, çав хушăрах ачасене вĕрентнĕçемĕнех повесть-роман çавăрттарать. Сывлăх енчен илсе пăхсан та, Серте Севечĕсемпе Шехви Венккисемпе пĕр сак çинче пулас çын мар Ваçук. Хальхинче куç айĕпе пăхса сиввĕн кĕтсе илчĕç кусем ял çыннине.

– Пăхăпăр-ха эппин. Ак план, – текелесе сунтăхĕнчен хулăм та тăсланка хуплашкаллă кĕнеке туртса кăларчĕ Серте Севечĕ. – Пăхар-ха, – текелерĕ машинкăпа çапнă, пĕрлештерсе çĕленĕ листасене уçнă май. – Каврăç Ваçукь... «Тӳпе каçăхать»... – вулать аслă редактор. – Повесть. Сакăр листа. Вăт, çакăн пек палăртнă. Курăр.

Мĕн курмалли ĕнĕ унта?! Вăхăтра каламалла пулнă.

– Автор килĕшет-и? – хуллен сăмах хушрĕ Вĕршĕл.

– Ку вăл пĕр пĕтĕмĕшле япалан çурри кăна та.

– Редакторпа кĕскететĕр, – татса хурать Серте Севечĕ.

– Çук, – хирĕçлет Ваçук.

Шехви Венкки, хăй умĕнчи хут çинелле пуçа пĕкнĕскер, куç айĕн пăха-пăха илет.

– Ăнах кĕскетме пулĕ-ха, – терĕ хайхи. – Ак эпир кунта поэтессăпа, – Ваçукпа институтра пĕр курсра вĕреннĕ хĕрарăма асăнать вăл, – тин кăна сăввисене шĕкĕлчесе лартăмăр. Мĕн чухлĕ йĕрке кăлара-кăлара пăрахрăмăр!

– Куна, – Каврăç Ваçукь повеçне асăнчĕ Вĕршĕл, – кĕскетме мар, хушма пулать.

– Ку редактор сăмахĕ мар вара, – пӳлчĕ ăна Шехви.

– Сакăр листа хăварас пулсан, пач çĕнĕрен çырас пулать куна. Ним хăвармасăр улăштармалла та çĕнĕ япала тумалла, – автора хӳтĕлет Вĕршĕл, ал çырăвне вуласа тухнă, ăна килĕштернĕскер.

– Планпа çапла кĕртнĕ: сакăр листа. Эпир хушаймастпăр. Хăть мĕн тăвăр, – шăл витĕр пуплет халь Севет. – Директорпа кайса калаçăр эппин.

Тĕп хуçи çĕнĕрен лартнăскер кунта. Ыр çын перчетке улăштарнă пекех ылмашăнаççĕ-ха вĕсем çакăнта. Пĕр район хаçатĕнче ĕçленĕскерне илсе килнĕ хальхинче. Çыннине курнă, паллать Ваçук. Пĕр-ик калавне, сăввисене вуланă унăнне; мухтамаллинех, чаплă темеллинех асăрхаман. Хăйне пысăка хурать пулас-ха çав-çавах çынни. Шăпах çавăн йышшисем хăмпăланса час çĕкленсе каякан.

– Итлетĕп, – тесе типпĕн те хĕрхӳн сăмах хушрĕ хай хуçа.

Те чĕлхи çавнашкал унăн – пĕлме çук, тепри ыр чунлăскерех никрес пек туйăнать. Ку та пытарăнчăк кăмăллăскер-ши?

Каврăç Ваçукь хăй мĕн çăмăлпа кĕнине пĕлтерчĕ.

– Ал çырăва хатĕрех тенĕччĕ-им эсĕ? – сивĕ саспа чăр-р! тинкерчĕ автор çинелле кĕнеке кантурĕн пуçлăхĕ.

– Пач тĕкĕнмелли çуках мар пуль, – Вĕршĕл хушкаланисене тӳрре кăларасшăн пулса «хатĕр» тесех шарламарĕ Ваçук.

– Тăтă.

Телефон кĕпçине тытрĕ те хуçа редакторсен пӳлĕмне шăнкăравласа Вĕршĕле килме хушрĕ. Лешĕ, часах кĕрсе, Ваçукпа юнашар ларчĕ.

– Ал çыру мĕнле шайра? – ыйтать директор.

– Тĕкĕнкелесе тухмаллисем кăштах пур. Анчах калăпăшăн çуррине çеç плана кĕртнĕ.

– Автор килĕшмест-им?

– Икке çурса, ик кĕнекен кăларма сĕнесшĕн эпĕ, – пĕлтерчĕ Ваçук хăйĕн шухăшне.

– Икĕ пая уйăрма май пур, – çирĕплетрĕ Вĕршĕл те.

– Ун пек тумастпăр.

– Эппин, тепĕр çула куçарас. Хатĕрлесе çитерес те ал çырăвне, – çырнă япалана пăрахăçласшăн мар Вĕршĕл.

– Хатĕрлĕр апла тепĕр çула, – юлашки сăмахне каларĕ хуçа.

План. Мĕн тĕллевпе тăваççĕ-ши ăна? Социализм плансăр аталанма пултараймасть тесе вĕрентеççĕ. Çавна институтра ăша хывса экзамен панă, ĕçлеме тытăнсан та – вĕçĕмсĕр план

çыратăн, йĕрлетĕн, улăштаратăн; пурнăçланине пурнăçлатăн ăна. Пурнăçламаннине?.. Библиотекăсемпе кĕнеке магазинĕсене çитнĕ вĕт-ха Серте Севечĕсен планĕ, вырăнтан заказсем йышăннă. Каврăç Ваçукь хайлавне те ярса ан парăрах темен пуль нихăш те. Халь, ав, пурте илтмелле пĕлтерсен те, çырса хуни ниме те тăмасть – ăна пуçлăх алли хăйех, пĕр йĕркине, хуратрĕ те. Тепĕр çĕрте хушса çырчĕ пуль ĕнтĕ. Тен, хăй кĕнекине, калавсен пуххине, хулăмлатрĕ? Пĕлме çук. Çакă çеç паллă: социализм плансăр аталанаймасть, планне вара темле майлă муталама та пулать; пуçлăх кăмăлĕн ирĕкĕпе хăш-пĕр вырăнсене кăларса пăрахасси нимĕн те мар.

Тепĕр çула, тӳррипе илсен, икĕ çула (умĕнхине çирĕплетсе хунă) куçаратпăр терĕç-ха Каврăç Ваçукь повеçне, сăнар туллине пăхсан, тĕрĕссипе ĕнтĕ, романне. Пĕтерсех хурас марччĕ çеç.

– Пирĕн кунта темле те хăтланаççĕ. Сана, ял çыннине, хальччен  курман-илтменскерне, ăнланса илме йывăр паллах, – терĕ Хурамак Кавăрçа, ачи кусен пӳлĕмне кĕрсе хуйха-суйха пайланă чух.

– Писательсен пăтти ăшĕнче çăрăлатпăр çав. Ялта канлĕн пурăннăшăн ăмсанмалла та сана, – хăй кăмăлне евитлет Чĕкеççи. – Эпир кунта пăтранатпăр. Лайăххрах произведенисем çырассишĕн тимлесчĕ, – тарăхать çулпала самай çамрăк поэтесса.

Каврăç Ваçукь ăнкарса илесшĕн тĕлĕнсе пăхать.

– Кĕрешетпĕр, кĕрешме йывăрланса çитрĕ, – тет Хурамак.

– Ак çыр çавăн çинчен пĕр-пĕр роман.

– Кама кирлĕ вăл? Çӳп шăтăкне пăрахма-им?

Ваçук пулсан, япалан пĕтĕм ăш-чиккине пĕлсессĕн, ниçта пичетленес çуккине пĕле тăркачах çырмалла, мĕншĕн тесен ку та вăл пурнăç-çке-ха, литература тишкермелли уйхирте тепĕр ана.

* * *

«Эс çыратăн, эп чарăнса лартăм-ха», – ӳкĕнерех каланăччĕ Вĕршĕл пĕр калаçура Каврăçа. Тепрехинче каллех уйрăм чух: «Эп те çыратăп, палăртса хунисем пур», – тенĕччĕ

çĕкленӳллĕн. Ваçук тĕлĕнет: «Мĕншĕн-ха çак ăста писатель, самаях кĕнеке кăларнăскер, вулакансем килĕштерекенскер, çавнашкал сăмахлать? Ваçукăн мĕн çырни пекки те, пĕр пысăках мар повеçĕпе виçĕ калавне шутламасан, вулакан патне çитеймен-çке – мĕн ăмсанмалли пур ăна? Кĕвĕçес тесен, сăлтавĕ кăлăхах. Çапах та ку вăл Вĕршĕлĕн хура кĕвĕçӳ, чыссăр ăмсану мар – туслă спортсменсен йышĕнчи пек: эсĕ çавăн чухлĕ тренировка ирттертĕн-и, эпĕ, эппин, санран ик хут нумайрах тертленем; санăн ун пек кăтарту пулчĕ-и, эпĕ ăна лайăхлатам тенешкел, туслăн, ĕçе-хĕле аталантарса пырас тĕллевлĕн малалла туртăнни. Ваçукшăн пулсассăн вара Вĕршĕле ăмсанасси тем чухлех: кăлар-ха ун евĕр кĕнеке, уçса кăтарт-ха çыннăн чунне çавăн пек ăстан. Вĕршĕл, тантăшскер, аслă шкула Ваçукран пĕр çул каярах пĕтерчĕ пулин те, спорт чĕлхипе каласан, мĕн чухлĕ ӳсĕм турĕ! Епле кăтартусем!

Тата тăтăшах вăл, Вĕршĕл, Çĕмĕрткассине çитсе курман-и халь çине, пирĕн килĕн унта пӳрт тăрринче автан ларать тетчĕ. Ачалăхĕн пĕр тапхăрĕ çавăнта иртнĕ пулин те, час-часах çитсе çӳрейместчĕ унта вăл хăй, тăван ашшĕ кун амăшне пăрахса тепĕр çемье çавăрсан, ун патĕнче те – чăваш çĕрĕн тепĕр хутлăхĕнче – пурăннăскер. Çарран чупса çӳренĕ çуралнă ялне вара тăтăш аса илет. Каврăçсенчен ытла инçех те мар кӳршĕ районта унăн çав тăван ялĕ. Çыракан çын ăс-тăнĕнче пурнăçа пуçласа курса пынă вырăн яланах нумай шухăш çуратать, туйăма вăйлатать – калем тытсан, чи ăнăçлă йĕркесем шăранса тухаççĕ чун тĕпĕнчен тăван ял ытамĕнче чух. Çавна май Вĕршĕл каллех Каврăçа ялта пурăннăшăн ăмсанать. Мĕн ăмсанмалли ĕнтĕ: çырма çыратăн та – пичетлейместĕн. Вĕршĕл, ав, малтан журналта вăй хунă, халь кĕнеке кăларнă çĕрте ĕçлекенскер, ал витĕр мĕн тухнине тусанпа хуплантарса вырттармасть – ăмсанас тесен, Ваçукăн ăмсанмалла ăна, Вĕршĕлĕн мар.

Тăван ялнеллех туртăннă çав вăл хушшăн-хушшăн, унта тепĕр тема, çĕнĕ повесть çураласси те, шăранса тухасси те кĕтнĕ ăна. Çавна туйнă ĕнтĕ вăл, хăйне канма ярсанах тăван ялне васканă ку хутĕнче. Ун çинчен халь çĕнĕ повеçĕ, якатсах та, тикĕслесех те çитерейменскер, хăйсĕр пичетленсе тухсан тавçăрать Ваçук леш мĕншĕн ун пекех сăмахланине.

Çу вăтинче пурăннă Çĕмĕрткассинче пĕр хушă Вĕршĕл. Аса илнĕ ачалăхне вăл, сăнарсем çуралнă унăн, курса çӳренĕ май; ларса çырнă.

Тухса килнĕ чух çуран утать çын асфальт çул çине çитиччен вун пилĕк-вун çичĕ çухрăма кăнтăрлахи вĕри шăрăхра. Ăш хыптарать, тута хĕрри çунса хупăланать. Автомашинăсем çӳрекен шоссе çине аранах тухать вăл. Кунта килен-каянсем, çул çӳрекенсем валли уçнă столовăйра ăш хыпнине ирттерме йӳçĕхсе кайнă сăра илсе ĕçет; вар-хырăма темле касса каять ватăлнă кăрчама евĕр кăмпăслăскер. Автобуспа ларса килне çитсен çĕрле аптраса ӳкет çын.

– Васкавлă пулăшу чĕнер мар-и? – хыпкаланать арăмĕ.

– Иртсе каять пуль-ха.

Çын кун-çулĕ кашнин хăйне пайăрлă. Савăнмалли те, хурланмалли те тупăнать. Каврăç Ваçукь, ав, физкультурниксен уявĕнче – хулари мăн стадионра – ветерансен колоннинче пырать. Нумайăшĕн пекех унăн хул пуççийĕ урлă та жетонсемпе медальсем çакса тултарнă капăр хăю. Чемпионсем, спорта парăннисем хисепре паян кунта: маршпа утаççĕ вĕсем. Каврăç Ваçукь çав йышра пыракан олимпиецсем çинчен – пысăкрах ăстасем çинчен тепĕр повесть шăрçалама ĕмĕтленет. Анчах ку тĕле мĕн ăсталанине те пичетлесе кăларман-ха, халĕ, ав, плана кĕртнĕ çинчех тепĕр ик çула сиктерсе хăварнă.

Уяв вĕçĕнче гимнастсемпе акробатсен пултарулăхне курнă, футболистсен матчне пăхнă хыççăн хăна çуртне пырса вырнаçрĕ Каврăç Ваçукь. Çакăнта тин алла республика хаçачĕн паянхи номерĕ лекет. Унăн чи хыçалти колонкинче, ак, хура рамкăра – Вĕршĕл.

Шел. Хăçан пытарнă? Паян. Каврăç Ваçукь стадионра маршпа утрĕ, çав вăхăтра ун юратнă писательне, ун кĕнекине редакцилеме тытăннăскерне, юлашки çула ăсатнă. Тăпру çăмăл пултăр, Вĕршĕл. Кĕнекӳсем пурăнĕç. Каламалли татах пурччĕ-ха сан. Мĕн тăвăн ĕнтĕ халь тин. Асра усрăпăр ятна.

* * *

Ал çырăвĕ путланмĕ-ши тесе пĕлесшĕн тепре те çитрĕ хулана Ваçук.

– Редакторĕ хамах пулатăп-и-ха, тен, хăвăр хирĕç мар пулсан, – тесе пăхрĕ Серте Севечĕ Каврăç Ваçукĕ еннелле темле ырă тăвас пĕлтерĕшлĕн ку хутĕнче.

– Сирĕн кăмăлăр. Тархасшăн, – терĕ автор: ара, редактор суйласа тăрас ирĕкĕ ăçта-ха унăн?

– Вуласа пăхатăп-ха. Хамах тытатăп, – калаçрĕ аслăрах редактор.

Уйăх майлă вăхăт иртнĕ хыççăн телефонпа шăнкăравларĕ Ваçук кĕнекеçĕсен çуртне: мĕнле-ши, ал çыру урлăлла килсе ларман-и – пĕлес килет-çке.

– Чĕлхе пуклак, – пулчĕ Серте Севечĕн сăмахĕ, ал çырăвне тытса пăхнипе плана кĕртме шутлани çинчен хыпарланă хушăрах.

Ку хака илтсен, хăйне такам хăлхана янраттармалла хыттăн туртса çапнăн туйрĕ Каврăç, чĕлхи çĕтрĕ унăн, сăмах çыхланчĕ. Мĕнле капла? Урлă-пирлĕ иртет пуçра шухăш. Тахçан-тахçанах-ха, вун пилĕк-вун çичĕ çул каялла, кулăш журналне сĕннĕ калавĕ пирки пĕр редактор ун патне янă ответĕнче: «Итле-ха, шăллăм. Санăн пиçсе çитнĕ чăн-чăн писатель чĕлхи-çке. Вăл чĕлхепе эсĕ, сюжет пирки нумай шухăшласан, хитре япала ăсталаса кăларма пултаратăн», – тенĕччĕ. Хурамак та, кĕнеке редакцилесе кăларнăскер, чĕлхе пирки çапса хуçмаллах шарламанччĕ; Вĕршĕл те унашкал хак паман. Е кӳрентерес терĕ-ши Серте Каврăça? «Ал çырăва, вырăссем каларăш, вăрăм туна сăмсипе пырса тĕкĕнмелле мар якатмалла», – тенĕччĕ пĕррехинче Вĕршĕл. Ку вăл пуплев, сăмах хут çине мĕнле пырса ӳкнине тимлĕн курмалла, ĕçлемелле тенипе пĕр-ха. Ак халь ал çырăва малтан ларура пăхса тухнă чух хăшĕсем юрланă юррах юрлать Серте Севечĕ: чĕлхе пуклак! Юрĕ, çĕнĕрен – темиçемĕш-темиçемĕш хут – тимлĕн лармалла пулать-и-ха?

Тепрехинче Атăлçи хулине кайсан, Серте Севечĕ калаçасшăнах та пулмарĕ Каврăçпа, ĕç вăхăчĕ иртес тĕлĕччĕ те, сăмах хушма ĕлкĕриччен тухса шăвăнчĕ кантуртан: килĕнче урлă выртан тăрăха çавăрмалли пурах-ха ĕнтĕ хĕрарăмăн. Шехви Венкки те, киле алхапăлах тухса кайнăскер, урамра çула урлах:

– Серте Севечĕпе калаç эс! Калаç! – терĕ ку илтмелле кăшкăрсах.

Мĕнле калаçмала? Мĕн кирлĕ? Чухлаймасть Ваçук.

Çамрăк туристсен хăна çуртĕнче хĕрарăм администратор ялти учителе телефон номерĕсен кĕнекине тупса пачĕ те кирлĕ номерĕ ĕçлемен енне:

– Хваттерне кай, килне кайса калаç, – тесе асăнчĕ кун хуйхи-суйхине пĕлсен. – Пуçлăхсем вĕсем киле пырса юмахланине килĕштереççĕ хăшĕсем. Пĕр чĕлхе тупма çăмăлрах пулĕ.

Адресне пĕлмест вĕт-ха Каврăç, телефон номерне çеç паллăртнă справочникра.

– Почтăран ыйтса пĕл, – сĕнчĕ администратор. Лешсемකаларĕç чăнласах.

Урамĕ ку енче пулнăран часах çитсе тупрĕ Ваçук çуртне те, хваттерне те Сертесенне. Тăваттăмĕш хутра-мĕн. Икĕ пӳлĕмлĕ. Урайне, кĕнĕ çĕртех, симĕс палас сарнă; залра – сарлака кавир, хăмăртарах хĕрлĕ тĕслĕскер. Пӳлĕмĕн леш вĕçĕнче, пĕчĕк сĕтел пеккинче – тĕслĕ-тĕслĕ кăтартакан телевизор. Пĕр стена çумĕнче сервант, тепринче – диван. Кĕтмен çĕртен çитсе кĕнĕрен тӳрех тĕлĕнчĕ хĕрарăм, хапăлах та пулмарĕ темелле чĕнмен хăнана, çапах, чăваш йăлине пула, алăк патĕнчен тĕпелелле иртме сĕнчĕ. Килнĕ çыннăн калаçмала та, калаçас тет ку, анчах сăмах çыхăнмарĕ.

– Чĕлхе пуклак, – малтанхи юрă кĕввинех шăрантарса кăларчĕ Севет ал çырăвĕ пирки çăвар уçнă-уçманах.

Шăм-шак, патакпа шăмăран лектернĕ пек, тăр-тăр чĕтренсе илчĕ Ваçукăн.

– Ку енĕпе пулăшакансем пур, – çемме ĕнерет малалла Севет. Камсем иккенне те асăнать: пĕр паллă писатель тата Выл, Ятшыв.

Ваçукăн чĕлхи çыхланчĕ, вăл халь çăвар уçса сăмах та калаймасть. Серте ăнлантармах пикенет.

– Плана кĕртме хам пулăшрăм, – тет. – Кĕнекеçĕсен кантурĕ хăйне уйăрса панă хутран утмăл процентне классиксене тӳрех оргиналпа, чăвашла куçармасăр кăларать. Ытти хĕрĕх процентне хамăр çыравçăсем таткаласа илеççĕ. Сан пирки классик-им ку, пĕччен мĕн чухлĕ çиет тесе йăсларĕç редсоветра. Хам хута кĕтĕм.

Ял çынни хăй çырнине ыттисен хайлавĕсенчен вăйлăрах та тесе шутласа ларать-ха: мĕн унта, журналта, пичетленеççĕ,

кайран кĕнекен тухаççĕ – питех нумай-им кăмăла каяканни? Çавна туйнă май мăнаçлăнах пăхать çынна хирĕç Каврăç, çапах тавлашу пуçланса каясран асăрханнипе шарламасть – кунта вăл хирĕçес тĕллевпе килмен вĕт-ха. Анчах, тӳррипе илсен, ăна питрен çутăлтараççĕ, çурăмĕнчен кӳпкеççĕ, шăмă-ранах каçăхтарса ямалла лектереççĕ. Ун пек чухне хирĕç йăл кулса пăхмалла-и? Чĕркуçленмелле-и? Çав териех халсăр-им вара Каврăç Ваçукь? Çăкăрсăр ларать-им? Ĕçлет вăл – шалу илет уйăхсерен; пуйма шутламан, çемьене тăрантарма çитет. Ялта пурăннăран спорт ăмăртăвĕсене хăй тĕллĕн хатĕрленсе пайта пухма мар, тăкак тӳссе çӳренĕ те халь пĕкĕрĕлмелле-им çын умĕнче мĕскĕнленсе? Ăмăртусенче ăсталăха пула, хатĕрленнинине, тертленнинине кура е çĕнтернĕ хавшакраххи-не, е тепринчен, вăйлинчен, юлнă. Тайма пуçа хĕç витмен тенине шута хуман, чĕркуçленмен. Пушăпа çапнипе, юн сирпĕнтерсе асаплантарсан та, çын урине чуп тумĕ Каврăç Ваçукь, ялта çеç пурăнакан çын, тӳррипе илсен, цивилиза-цие ăнланса пĕтеймен айван.

Серте Севечĕ «пулăшма хатĕр» çынсен ячĕсене тепре асăнать – çамрăк авторсене ура çине тăратаççĕ имĕш вĕсем.

– Чĕлхене хам пĕлетĕп, – тет вара майĕпен. – Хурамак пĕлмест вăл.

Каврăç Ваçукĕн пĕрремĕш редакторне пырса тĕкĕнет-ха тата! Калаçу пулмарĕ. Кун пек танмарлăхра çăвар уçаймасть «куç уçăлса çитеймен» çын. Тухса утрĕ вара вăл нимсĕрех çитсе кĕнĕ çуртран. Хăть çур хакне кăна тӳлеччĕр асапланса çырса ларнă шутне Ваçука, анчах ун чĕлхине ан тĕкĕнччĕр, ан çавăрттарччăр тепĕр май.

* * *

Кĕрĕк тăхăннă, ун çухавине тăратнă çын грави сарса тин-терех тунă мăн çул çинче ăш хыппине ирттермелле таçта ыт-кăнса каясла пырать; саларан пĕр-ик çухрăм чухлĕ пăраннă хыççăн çухрăм юпи тĕлне çитсен каялла таврăнать, тепре кунталла вашкăртса килет. Çук, яланхилле тренировкăра мар хутлать виçсе илнĕ хушша çĕр варринче, хĕл сиввинче Каврăç Ваçукь – чунне лăплантарасшăн вăл, ал-урана кăш-тах ĕшентерсен, килте çывăрма выртсассăн ыйха путма май килтĕр. Çук пуль çав – нерва хĕлĕхĕсем, пуçра тĕрлĕ ĕç-пу-

лăм вĕçе-вĕçе иртнипе карăнсах пыраççĕ, çемçелсе лăпланмаççĕ...

Пухуран тухса кайрĕ вăл тин кăна, уроксем хыççăн пуçланнă, темĕнччен тăсăлнă калаçура тавлашăва чăтса çитерейместĕр пăрахрĕ те тухса утрĕ вăл; килне кĕмерĕ, раштавăн часах каç пулнă, сĕм çĕрле темелли вăхăтĕнче уйра каллĕ-майлĕ кумать халь çавра çиллĕн. Пуçламăшĕ йĕркеллех пычĕ-ха коммунистсен уçă пухăвĕ: пур чухнехиллех малтан президиум суйларĕç, кун йĕркине çирĕплетрĕç, хатĕр доклада итлерĕç; ялан хуралта тăнă евĕр меллĕн пĕриккĕн сăмах тытаканпа килĕшӳллĕн тухса калаçрĕç, лайăххине те кăтартрĕç, çитменлĕхсене те палăртрĕç темелле ĕçрехĕлре – кирек хăçанхи шыв юххиллех. Юлашкинчен, тухса калаçас текенсем пĕтнĕ хыççăн, малашне мĕн тумаллине – яланхиллех çырса хатĕрленĕ постановление – йышăнас чух, шăппăн çеç ал çĕклесе, унтан вăраххăн кăна тăрса, вырăнтанах калаçа пуçларĕ хĕрарăм коммунист коллектива тутăх çапма тытăнни çинчен йĕркипе. Ах, хăй сисмесĕрех Каврăç Ваçукь суранне тăвар сапрĕ-çке вăл, çакă лăпкă учительница; хуллен калать пулин те, Василь Васильчăн чунне тăвăл килтерсе пăтратса ярать. Пуххине юлмалла та марччĕ хăть куна пĕлес пур тĕп шкулта иккĕмĕш çул ĕçлекен физкультура тата чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен учителĕн. Пуххине юлман пулсан, вăл яланхилле сехет-сехет çурăлăх вăхăт тивĕçтеретчĕ тытнă тепĕр романне çырмашкăн, сюжет сĕмĕпе кăштах та пулин малалла каймашкăн. Халь ĕнтĕ ыран валли те канса илес çук, мĕншĕн тесен çур çĕрпе выртсан та çывăраймĕ çынни.

Сакăр çул вĕренмелли  шкулта физкультура урокĕсем пĕтĕмпе хăй аллинчеччĕ те, канлĕччĕ Ваçука: ĕçле те ĕçле çеç, хăв кăна яваплă мĕн тăвас тенипе, çавăнпа Курниласенчен, лешсем темле улталама хăтлансан та, пысăк мăшкăлах курса пĕтмен, районти ăмăртусенче кубок тенине вĕçертсе яман. Кунта вара, вăтам шкулта, классем нумай пирки физкультурăна виççĕн вĕрентеççĕ. Физкультура уйрăм класспӳлĕмре ытти пĕр-пĕр предметпа урок ирттерни мар вăл, хăв класна кăна курмастăн, ачи те хăйсен картинче çеç мар, теприсене лешсен учителĕ мĕн тутарнипе тутарманнине те пĕтĕмпех курать. «Мĕншĕн эпир çеç хăнăхтарусем

пурнăçлатпăр? Мĕншĕн пирĕн çеç йĕлтĕрпе кайса килмелле? Леш класс арçын ачисем мечĕк çеç тапаççĕ, хĕр ачисем тăраççĕ çеç пăхса», – кăмăлсăрланаççĕ Василь Васильчăн вĕренекенĕсем. Ача-пăча вăл сахалрах ĕçлесшĕн, хушнине итлесшĕнех мар, канлĕх кӳмен учителе юратмасть – хĕлле те, кĕркуне-çуркунне те арçын ачасене мечĕк çеç ывăтса паракан, хĕр ачисене пăхса тăрсан та ним шарламан учителе лайăх тет вара. Шăпах çапла лару-тăру район центрĕн тĕп шкулĕнче ку тапхăрта. Каламан мар Каврăç Ваçукь пĕрле ĕçлекенĕсене, юлташла та сăмах хускатнă, пухусенче те ун пирки çăвар уçмасăр ларман, класс руководителĕсем те, хăйсен вĕренекенĕсен пуласлăхĕ çинчен ытларах шутлакансем, ларусенче пĕрре çеç мар асăрхатарчĕç кун çинчен. Çавна пулах ĕнтĕ физкультура вĕрентнĕ пĕр учительне, хăйĕн тепĕр, тĕп, предметне кăна хăварса пачĕç çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче, ун вырăнне – вакансие – тин институт пĕтернĕ специалист çитрĕ. Ку вара, физкультура енпе аслă пĕлӳ илнĕскер, пуринчен ирттерчĕ. Малтанах шкулăн тĕп хуçипе – вĕрентĕве ертсе пыраканĕпе калаçса, хăйĕн урокĕсене шăмат куна кĕрттермерĕ: ачин килте, Шупашкарта, «Волга» автомашинăна юсаса ĕçе ямалла-мĕн, çавна май пушă вăхăт кирлĕ. Унтан, нумайăшĕ çăвар карса ăмсанмалли «çил çунатне» чуптарма тытăнсан, лăнках кайрĕ çын: ирпе хуларан ярăнса килет те урок вăхăтĕнчех çав «тăпăртатса тăран тур лашине» «хырчăклать», «çилхине тура-тура тасатать», «таканне шакка-шакка» аппаланать; ачасене мечĕк панă – хуть те мĕн туччăр вĕсем; шалу тытса юлмаççĕ уншăн, тӳлеççĕ çыннине. Ах, çăмăл машина! Мĕншĕн пит ăмсанмалла-ши вăл, уйрăммăнах хăшĕн-пĕриншĕн! Вĕрентĕве ертсе пыраканĕ, Алçăвань тейĕпĕр ăна, шăпах çав ачапа – унăн «çил çуначĕпе» усă курать. Алçăвань вăл районти йышăн професси Союзĕн лидерĕ-çке, вунă çул ытла тĕрлĕ путевка, Союз укçи-тенки тытăнса тăрать ун аллинче. Çав хушăра хулара ирттрекен семинарсенче вĕреннех пуль, вĕрентрĕçех-тĕр ăна пурнăçа мĕнле майлаштарса пымаллине. Унсăрăн ăçтан-ха чипер çынах, вăрçă хыççăнхи тапхăрта салтакра ултă çул пулнăскер, института салтак службинчен хыççăн курăмлăнах вĕренсе тухнăскер, çавăн пек хăй çеç пурăнма, сăмаххипе халăхшăн тăрăшнине кăтартма, хитре пуплевсемпе витĕнсе хăй ыр курассине тĕпе хума пултартăр

тӳрех? Ыттисен интересне чавсапа сирсе хӑварса, юптарса иртсе, ыр курас тени пит илӗртӳллӗ пулса тӑчӗ уншӑн, Алçӑваньшӗн. Çын кӑмӑлӗ, совесть, чӑнлӑх хакра марши? Кам йӳнетсе ячӗ ӑна? Ăçта, хӑçан çӗрме пуçларӗ вӑл? Тахçантанпах-ши, авалах-ши?

Алçӑванӗн професси çуртне кирлӗ хут çитермелле – «çил çунат» пурӑçлать; хӑйӗн хулана каймалла-и – лешӗ лартса каять. Çӑкӑр-тӑвар хире-хирӗç: расписани пит меллӗн туса парать вӗрентӳ ертӳçи ку ачине, сехет шучӗпе хур кӳмест; учительсем ӳпкелешсе калаçнӑ хыççӑн лешӗн урокне тӗрӗсленçи пулать те, директор приказ кӑларать. Директорӗ унӑн аллинче çав, пичеври ӑна вӗрентет, мӗншӗн тесен тӗп хуçа вунӑ çул хушшинче виççӗ улшӑннӑ пулсан, ку – хӑй вырӑнӗнчех, еплерех пулмаллине çӗннине вӗрентсе-кӑтартса пырать. Хуларисемех ӑс параççӗ пуль хӑйне; палах, Ваçук шучӗпе, çавсенченех тӗслӗх илет Алçӑвань. Асӑннӑ приказра вара яланхи шыв юххиллех çитменлӗхне те кӑтартнӑ, ырри те пур... Вырӑссен сӑмаххиех: кушаки итлет те – çиетех. Учительсем хӑть мӗн калаччӑр унта!

Ак Курнила вӗрентекен çӗрте вӑтам шкул пулчӗ те, кун сӗнӗвӗпе Фишка йӗлтӗрпе чупса роно кубокне илес чух вӑтам шкул командине тӑватӑ ушкӑнпа ӑмӑрттармалла йӗрке çитерчӗ. Вуннӑмӗш класс ачисем Курнилан Кавраçӗнчен куç курми темелле юлчӗç пулсан та темӗн мар: тӑххӑрмӗшсен шутне вуннӑмӗшсенех ӑмӑрттарнӑ леш, тӑххӑрмӗшӗсене – саккӑрмӗшсемшӗн... Ун пек чух аслӑраххине çӗнтерме ачан ик хут вӑйлӑрах пулмалла хӑй тантӑшӗсенчен. Каврӑç Ваçукӗн пӗрле ӗçлекен тепӗр ик учителӗ пӗр тан вӑйлӑн та хатӗрлемерӗç ачасене – ак ума тухса кайрӗ Курнила. Кур, епле каçӑрӑлса çӳрет халь, епле тӗп тӑвать Каврӑç Ваçукне лешӗ: виççӗн ун чухлӗ ӗçлеймен, кубок ӑна тыттарса янӑ!

Ним те мар, чыс тени канлӗх памасть спорт мастерне; ӑна вӑл сутмасть те, хӑй те камран та пулин пустуйшӑн йышӑнмасть, нимпе те ылмаштармасть. Çын пурте пӗр мар çав, Курнилапа Фишка çеç-и, шкулта вӗрентӳ ӗçне йӗркелекенӗ Алçӑвань те учителсен умӗнче хӑть мӗн каласан та хӑйӗннех тӑвать; вырӑна лартаймастӑн та ӑна, лартсан та, каллех çав «çулçӑнах» кӑларать, мӗншӗн тесен тымарри çирӗп: пӗр ушкӑн хурӑнташ ӗçлеççӗ вӗсем юнашаррӑн, тата унӑн власть пур:

йĕркелӳçĕ, районти професси Союзĕн лидерĕ. Улăштарма-и? Халăх алă çĕклет çеç вăл ячĕшĕн; суйлама çӳлтисем, лăпкă пӳлĕме иккĕн-виççĕн пухăнса, суйлаççĕ малтанах.

Халь учительница сăмаххи хыççăн чăтаймарĕ Кавăç Ваçукь, трибуна умне тухса çатăртаттарса тăкрĕ шкулти лару-тăру пирки.

– Эс ăçта пулнă? Эс, коммунист, мĕншĕн пулăшмарăн çамрăк специалиста? – хуплать ун çăваре Алçăвань.

– Пĕрле ĕçлекен юлташсемсĕр пуçне коллектива ертсе пыма лартнă çынсем пур тата. Асăрхаттарман-и класс руководителĕсем, учительсем?

– Эс админситрацие мĕнле пулăшрăн çитменлĕхе пĕтерме?

– Хам ĕçрен пăрăнман эп.

– Мĕншĕн команда йĕркелеме пулăшмарăн çамрăка? «Подставка» тенине çынсем тăваççĕ пулсан, мĕншĕн пирĕн пăрăнмалла унран, енчен тĕнче çавăн пек пулсан?

– Маншăн ют вăл. Автомобилĕпе ларса çӳресшĕн, ывăлна та вырсарни кун киле килсен института леçтерессишĕн пуçран шăлатăр çынна. Халь вăл лăнках кайса ӳкрĕ, мĕншĕн тесен ĕçне кура мар, усă курма май пуррипе хаклатăр çынна.

– Хăв та унпа ларса килнĕ хуларан пĕр кунхине.

– Пулнă пĕрре, урăх пулмасть ун пекки.

Çапла хăр-хар тавлашăва кĕнĕ хыççăн Алçăвань çеç мар, ун тăванĕ те, арăмĕ те куна хирĕçле сăмах хушсан, Кавăç Ваçукь пăрахрĕ те тухса кайрĕ пухуран. Ак уйра мăн çула тикĕслесе çӳрет халь вăл сĕм çĕрле.

Института епле кĕнĕ-ха «çил çунат» хуçи? Çын хăех мухтанса çăвар уçать вăл, хăйех пĕлтерет. Вратарь пулнă иккен шкулта чухне ачи. Футбол командин хапхине сыхлаканниех кирлĕ теейĕмĕпĕр институтне, анчах амăшĕ вут-шанкă кантурĕн хуçи иккен; çĕр кăмрăкĕ те, торф брикечĕ те – пĕтĕмпех ун аллинче! Кама айăкран тĕктĕр ку япала? Кашниннех тăванĕхурăнташĕ пур-çке... Тиесе каять кирлĕ çын черет тăмасăрах, хут çыртарассишĕн унта-кунта çитсе асапланмасăрах, таварĕ пурри пирки вăхăтра сиссе. Алçăваньсем те шакăл кăна йăлтăр курăнакан торф брикечĕ тиесе килчĕç пĕр автомашина. Тонна çурă тенĕ хучĕ пур – тонна çурă çеç-ши? Ун пек пулсассăн та, кăпăр-капăр туянса килейместĕн-ха ăна. Алла ал

çăвать... Мĕншĕнех пит кирлĕ шкулти ĕç Алçăванĕшĕн, енчен пурăнма пĕлмесессĕн? Мĕн тума кирлĕ тата кубок тени Алçăванне çеç мар, леш ачине те?

Каврăç Ваçукь айван вăл, çавăнпа чыслăхшăн кĕрешет. Курнила тата? Фишка пĕчĕк Алçăвань пултăр-ха. Курнила? Ăна чыс, улталаса, вăрласа эппин, илнĕ чыс кирлĕ.

* * *

Ку хĕл раштав уйăхĕн вĕçĕнче шăмма-шакка хутлантарса лартмалла сивĕ шатăртаттарчĕ, çавна май ачасене чĕрĕк вĕçĕнчи куна вĕрентмерĕç, çĕнĕ çул елкине те пухмарĕç: пӳртрен тухмасăр ларнине нимĕн те çитмест – инкек ан пултăр. Виç çăвăр чăхпа пĕр автан хĕл каçма юлнă Ваçуксен. Вĕсене хăма сарай алăкне уçса апат парать те каллех хупса хурать хуçи: сивĕ ан лектĕр! Пӳрт умĕнчи пĕчĕк картара улмуççи çинче сырăш хатĕрленĕ те вăл – çавăнта пăралук çине сысна сали тирсе хурать: кăсăясем выçса пушшех ан хавшаччăр, çерçисем те çăкăр тĕпренчĕкĕ хыпĕç – вĕсем те чун, сивĕре выçăпа патлатса ан ӳкчĕр.

Сĕтел хушшинче ларать пушă самантсенче Ваçук – пӳртрех хулăм тумтирпе, тĕпне хунă çăматăпа: кăмака иккĕ хутсан та, урай сивех-ха çав. Ларсан-ларсан, минресе çитсен, кĕрĕк тăхăнса, çĕлĕк хăлхине те янах айĕн çыхса урама тухать – квартал тавра утса çаврăнать. Сивви хыпасласшăн-хыпасласшăнах, сывлама йывăр, кăкăр пӳлĕнет, çапах «парăнмастăп-ха ку сивĕрен» текелесе, ятарласа пĕр виç çухрăм чухлĕ хушă утать çын, çапла май пуç ыратнине ирттерет, алла-урана хускатать; пӳрте кĕрсе выртсан тӳрех ыйха путмалла пултăр – тăнлав уçăлтăр, вăрансан, каллех вулас-çырас килсе кайтăр.

Шел, улмуççисене тĕпрен касса кайрĕ ĕнтĕ сивви, юман хуйăрне-хуппине хăйпăтса пăрахрĕ паллах.

Çырмасенче йăсăрланакан-йăваланакан сивĕ сывлăш пуххи кăшт йăшрĕ, витĕр курăнакан пулчĕ, çуртсем çывăхĕнче çемĕçтерчĕ – халăх ирĕклĕреххĕн, йăлт-ялтраххăн утма тытăнчĕ; сарайсенчен, çурт таврашĕсенчен çерçи, кăсăя тухкаласа вĕçме пуçларĕ, выльăх-чĕрлĕх çăмăлраххăн сывласа ячĕ; сайраран сайра килекен çатăр сивĕ аяккалла майĕпен шăвăнчĕ.

Ачасен каникулĕ вăхăтĕнче тăван халăхăн тĕп хулине персе çитрĕ Васçук – чикки ĕнтĕ унăн кĕнеке кăларакан çурт. Библиотекăсене саланакан плана тишкернĕ тăрăх вăл пĕлет ĕнтĕ халь: унăн кĕнекине çак çулăн пĕрремĕш кварталĕнчех кăларма палăртнă, хăй ыйтнă чухлех мар пулин те, мĕнле те пулин хĕскелесе шăнăçтарма май килтермелле калăпăшлă. Юрĕ ĕнтĕ, ун чухлĕпе вулакансене мĕн пуррине каласа кăтартма май килĕ. Ак çитсе кĕчĕ халь çын çав çурта – тӳрех Шехви Венкки, Серте Севечĕ ларакан пӳлĕм алăкне уçрĕ. Çыпăçуллăн калаçаççĕ кунти çынсем, ялти пурнăç çинчен ыйтса пĕлеççĕ: «Сивĕ миçе градуса çитрĕ сирĕн патра? Хĕрĕх улттах-и? Кунта хĕрĕх тăваттă пулнă терĕç». Сăмах майĕн черечĕпе тенешкел Серте Севечĕ ĕç çинчен хăех сăмах пуçарать.

– Ал çырăву планра, – тет вăл. Мĕн хулăнăш кăларма палăртнине шарламасть-ха, анчах, ялти библиотекăра хăех пĕлнĕскер, Васçук та ун пирки шăл шурри кăтартмасть.

– Рецензипе паллаш. Рецензи çыртартăмăр, – папкăран скрепкăпа хĕстернĕ, машинкăпа çаптарнă темиçе листа хут тыттарать вăл автора.

Мĕн çырнине автор хăвăрт вуласа тухрĕ, хăйне хăй туйрĕ: пичĕ ăшăрхарĕ унăн.

– Ак хам çырни. Темех калайман пуль эп, – тыттарать тепĕр ик листа редактор.

Кунпа та хăвăрт паллашрĕ автор.

Малтанхине ятлă писатель çырать, унăн кĕнекисене пĕтĕмпе тенĕ пекех вуланă Васçук. Кăшт йывăртарах тесе палăртнăччĕ çакăн калав чĕлхине вăл, ват çынла майĕпен пырать лешĕн сăмахĕ. Çынни спортран пач аякрискер. Ку тарам-ха та, Каврăçăн тепĕр ал çырăвне, каллех пысăк повеçе, писательсен Союзне пырса панăскерне, иртнĕ кĕркунне рецензиленĕччĕ ал çырăвне çавскер. Юрĕ, лешĕ вырттăр-ха. Кун пирки мĕн каланă? Тустарнă анчах. Чĕлхене пĕлмест иккен Каврăç Васçукь. Чăваш чĕлхине шкулта ачасене вĕрентекен учитель, писатель ятнех илеймен пулин те, ун хирĕнче çирĕм çул ытла тăрмашакан автор тăван çырăва тĕшмĕртеймест имĕш! Вырăсла шухăшласа чăвашла çырнă тет. Спорт терминĕсем вырăс чĕлхине те ютран кĕнĕ пулсан, «спорт», «финиш» сăмахсене тĕп чăвашла мĕнле

калаттарасшăн-ши? Итлер-ха хăйне: «Герой хăй маршрутне чупса тухать», – тет сăнара хак панă май. Мĕнле «маршрута?». Дистанцие чупса тухать вăл, дистанцие!

«Автор литература чĕлхине пĕлмест, ăна пулăшма пĕр-пĕр писательпе çыхăнтармалла. Чĕлхене пĕлекен писателе парсан, кĕнеке туса кăларма пулать», – тенĕ. Тĕп сăнар эрех енне туртăннине пĕтĕмпех сивлесе тăкăть тата, унпа автор çав хура шĕвеке хирĕç кĕрешнине пач асăнмасть. Юрĕ ĕнтĕ, ку писателĕ хăй ĕçме юратаканскер те эрехе хирĕç кĕрешнине килĕштермест пулинех. Ытти каланисем те автор пĕр чĕптĕм йышăнмаллискерсем, кăшт та пулин шухăшлаттармаллискерсем мар. Ал çырăвне вулани сисĕнет пулин те, пач урăх япала çинчен сăмахлать темелле çынни. Ăна малашне, чăн хушамачĕпе литературăри псевдонимне улăштарса, кунта хăйне пайăрăн «Циклоп» тейĕпĕр.

Редактор çырни, унăннипе танлаштарсан çемçерех. Анчах ку та «чĕлхене лайăхлатма пĕр-пĕр писателе пама сĕнмелле» тенĕ. Хăйĕн, çак кĕнекеçĕн, чĕлхи мĕнле-ши-ха? Малтанхи пилĕк йĕркерен тăракан абзацра «сăнар» сăмах çичĕ хут тĕл пулать вăл çырнинче! Хутсăр предложени шучĕ чухлĕ çеç мар, ытларах та. Пилĕк йĕркере – пĕр сăмах çиччĕ!

– Ал çырăвĕ ăçта? – ыйтрĕ автор хăй япалине хакланисене вуласассăн.

– Унрах-ха вăл. Сана пулăшасшăн вăл.

– Килĕнче-и? Адресĕ епле?

Шехви Венкки вăрăм блокнотне туртса кăларать те, унта шыраса тупса, телефон номерне каласа çыртарать. Каврăç çавăнтах кирлĕ хисеппеле телефон шăлтăрмине çавăрать.

– Пулăшас текен çын тупăнни лайăх-ха вăл, – чĕвĕлтетсе илет ку хушăра Серте Севечĕ.

– Пичче, – тесе чĕнчĕ хайхи писательпе çыхăнсан Каврăç Ваçукь,– эсир манăн икĕ повесть ал çырăвне тишкертĕр. Эпĕ уншăн тав тăватăп сире. Ку ал çырăвне хам алла илесчĕ.

Лешĕ хăйсен çурте-хватерне мĕнле шыраса тупмаллине калать. «Кĕтетĕп эппин», – тет вăрах саспа.

– Çамрăксене пулăшасшăн çав вăл, – сăмахне çуллантарать каллех Серте Севечĕ Циклоп пирки. «Хăвăнтан пулмасть санран», – сивĕ куçпа пăхса путлантармалла тинкерет Каврăç енне Шехви Венкки.

Кусемпе тек сăмах та калаçса тăмасăр вăшт-вашт тухса кайрĕ Каврăç Ваçукь пӳлĕмрен.

Тупрĕ палăртнă çурта, Циклоп пурăнакан хваттере. Алăка хăйех уçрĕ хуçи. Аллине хăлаç тăршшĕ хăма сыппи тытнă хăй, унпа сăлăп хунăн, алăка тĕревленĕ пулнă-мĕн. «Ӳсĕрсем çĕмĕрсе кĕрсе чăрмантаркаларĕç те... – сăмахлать çын, йăшт пӳллĕскер. – Ха, курнă çынах-çке эс», – текелет. Юнашарах арăмĕ тăрать, ку хăйĕнчен тайăнрах, чăвашах. Малтанхи мăшăрĕ çивĕччĕ, писательсен пуххисенче те куркаланăччĕ студент чух, çынпа калаçма хапăлскерччĕ, çамрăках марскер Ваçуксемпе пĕр вăхăтрах институтра вĕренчĕ. Вĕсем уйрăлнине илтнĕччĕ-ха Ваçук. Ку, çĕнĕ арăмĕ, чылай кĕçĕнрех-мĕн-ха, калаçассипе лешĕнчен те ирттерекенскер пуль; пĕр столовăйĕнче кашăк-тирĕк çăвать пулас, паян канать иккен. Шкула кайма çул çитмен ывăл ача пур пӳртре.

– Ал çырăва хам алла илес тетĕп, – терĕ Ваçук Циклопа сывлăх сунса алă панă хыççăнах.

– Кӳрентĕн пуль-ха рецензи вуланă хыççăн. Хам шухăша тӳррĕн çыратăп эпĕ. Пулăшман мар авторсене. Нумай çынна писателе кăларнă, – вăраххăн калаçать Циклоп пӳлĕмелле иртнĕ май. Аллине хăй вĕче тĕлне тытнă. – Уйăх ытла хушă больницăра выртрăм, – текелет. – Ак, ал çыру сĕтел çинчехха кунта, – кăтартать вăл. – Эпĕ кантуртисенчен алă пусса илнĕччĕ ăна.

– Хут çырса хăваратăп, – терĕ çеç кĕскен Ваçук. Унтан ал çыру тĕрĕс-тĕкелне пăхрĕ те, пукан çине ларса, Циклоп панă листа çине япалине хăй аллине илни çинчен йĕрмелерĕ, ăна хуçана тыттарнă хыççăн хулăм папкăна сумкăна майлаштарса чикрĕ, çавăнтах çула май туяннă эрех кĕленчи кăларса лартрĕ сĕтел çине.

– Тав туса хăварам, – терĕ.

Пӳртри хĕрарăм çăкăр турилкки лартрĕ, унта та пулин хытса кайнă пĕр-ик чĕл çеç; касăк сыр тупăнчĕ, пĕчĕк мандарин виç штук. Каçартăр вулакан, мĕскĕнлентерес килмест писателе. Пĕр сăмахпа каласан, чухăн пурăнаççĕ ку килте, çакă вăл пӳрт ăш-чиккипе кантăк таврашне пăхсан та тӳрех курăнать.

– Юрĕ, парăма кĕрем эппин сана, – тесе черккене тытрĕ Циклоп. Анчах ĕçнĕ-ĕçменех чыхăнса кайрĕ.

– Мĕн пулчĕ ара? – асăрхасах тăрать арăмĕ.

– Тем йӳҫ шыв килчĕ ҫăвара. Больницăра выртса тухрăмҫке нумай пулмасть. Малтанхи ик эрне йывăр пулчĕ. Кайран ĕҫлерĕм те. Асăрхарăн пуль-ха, журналта кун ҫути курчĕ, – пĕр писателĕн ятне асăнать Циклоп. – Эп туса патăм.

– Эп ҫырнине йышăнмаҫҫĕ-ха, – терĕ Ваҫук.

– Манăнне тӳрех йышăнаҫҫĕ. Журналта та, кĕнеке кăларнă ҫĕрте те. Тен, ĕҫлĕпĕр пĕрле?

– Автор ăҫта кайса кĕрет вара?

– Автор юлать вăл.

– Пирĕн иксĕмĕрĕн стиль те пĕр мар.

– Стиль те юлать. Хаклах ыйтмастăп. Рекомендаци паратăп Союза кĕме – тӳрех члена илеҫҫĕ. Чару пулмасть. Ман ҫынсемех унта. Хăйсене эп ҫын тунă вĕсене.

Ваҫук чĕнмест, хакне те тĕпчемест – кирлĕ мар ăна ун пек япала; ҫынна тара тытса кĕнеке кăларасси – уншăн ют.

– Мĕншĕн гонор пысăк сан? – пăхать Циклоп.

– Мĕскĕн ҫын эп. Ялтан, – тет ҫеҫ Ваҫук, анчах хăй мĕскĕнленмест-ха, чĕркуҫленмест.

Циклоп арăмĕ пӳртри ачине хăтăрать.

– Наследник ман. Малтанхинчен ача пулмарĕ. Халь тăсатăп ăрăва, – мухтанса илет ашшĕ ывăлĕпе. Унтан арăмне: – Кăтарт-ха эс хăнана хăш-пĕр парнесене, – тесе сĕнет.

Циклоп Пĕтĕм Союзри пĕр ведомствăн лауреачĕ, уншăн ăна асăнмалăх парне те панă иккен. Ҫавна кăтартать халь арăмĕ.

– Обкомăн пĕрремĕш секретарĕ хăй шăнкăравласа саламларĕ, – хыпарлать ҫамрăк автора писатель. – Малтан ăна пĕлтернĕ пулнă. Ку хваттере те мана вăлах пачĕ. Вăл хута кĕчĕ.

Хăйне пысăк ҫынсем чыс тунине асăнса, ятне-шывне ӳстерес тет-ши Циклоп. Ун пек тăрăшма кирлĕ мар: Ваҫук хăех пĕлет ҫынни епле шайри писательне, вуланă вăл унăн мĕн пичетленнĕ пеккине. Начар автор мар, хăйне уйрăм стиллĕскер, анчах Кавăрăҫ Ваҫукь каҫса кайса вулакан писатель йышĕнчиех мар-ха.

– Ҫирĕм ултă кĕнеке кăлартăм, – сăмахлать кил хуҫи малалла. – Мускавра та пĕрре мар тухрĕҫ. Унта та укҫине нумаях тыттармаҫҫĕ.

Мĕн тĕллевпе калать çакна Циклоп, Каврăç Васукь кăмăлне çавăратăп тет-ши? Анчах ку авторĕ çур пусăм та ун еннелле тумасть. Мĕншĕн? Ялтан тухайманскер цивилизацие хăнăхманран-ши? Тен, ялта пурăнниех – çут çанталăкпа кĕрешни, пурнăçа хăй çĕнтерме хăнăхни пуçа пĕктермест? Спортра çӳрени те çав туйăма вăйлатнă пуль – парăнасси аякра тăтăр унран! Тĕрĕссĕн кĕрешсе çĕнтер, ахаллĕн аяла пулмасть! Ӑмăрту çулне – дистанцие – «маршрут» сăмахпа пăтраштараканпа килĕшмелле-им вара Васукăн, ку çынни чухăн пурăннăран ăна пулăшас шутпа?!

– Хăв мĕншĕн ĕçместĕн эс? – пăхать хăна çине Циклоп тĕлĕнсе. Тутаннисĕр пуçне урăх тĕкĕнмен çав хăй илсе кĕнĕ эрехе Васук. Кил хуçи уçăлса, вăй илсе кăна пырать ĕçнĕçем.

– Малтанхи страницăсене вулама йывăр пулчĕ. Йĕрке хушши хупланмалла туртса-чĕрсе пĕтернĕ, – текелет ал çырăвĕ пирки çавăнтах.

Каврăç хăлхи патне пымасть те вăл калани, тавçăрать çеç: Серте Севечĕ хăйĕн ăсталăхне кăтартнă ĕнтĕ.

– Тавтапуç куншăн, сан умра эп парăмра, – тесе юлчĕ Циклоп Каврăç Васукĕ пуçтарăнса тухса кайнă чух эрех пирки.

Ирпе, хăна çуртĕнче çĕр каçнă хыççăн, кĕнекеçĕсене кĕрсе евитлерĕ Васук: «Ал çырăвне илтĕм».

– Ĕçле эппин. Вăрăма ан яр, – терĕ Серте Севечĕ. – Тĕп редакторпа калаçса тух-ха тата. Пирĕн çĕнĕ халь вăл.

«Шĕвĕр кăранташа» урăх вырăна сиктернĕ иккен. Ун вырăнне йышăннипе тĕл пулма сĕнеççĕ пулсан, кĕрсе калаçĕ тата Васук, пĕр килнĕскер. Лешĕ малтан журнал пуçлăхĕнче ĕçлетчĕ. Каврăç калавне, Вĕршĕл редакциленине, килĕштерсех пичетленĕччĕ тахçан вăл. Темле кăлтăкпа (кăмăл-сипет енчен терĕç) вырăнтан кăларнă хыççăн пĕр хушă çырав ĕçĕпе çеç пурăнчĕ те, кур акă, кĕнекеçĕсен тĕп редакторĕ пулса тăчĕ хайхи. Якуне ятлă сăвăç вăл. Ĕçе-хĕле ертсе пыма пĕлет пуль. Вĕршĕл калани те аса килет-ха Васука. «Манне пĕр калав пăсса тăкрĕ. Вулакансем умĕнче намăс курмастăп терĕм те ал çырăва илтĕм, – пĕлтернĕччĕ тантăш Якуне пирки. – Унтан тин вара малтан мĕнле пулнă, çавăн евĕр тӳрлетсе, машинисткăна хăй укçипе тепĕр хут çаптарчĕ».

Çакăн пек «çирĕп» редакторпа, Якунепе, кĕрсе сăмахларĕ халь Васук.

– Юрĕ-ха эппин, кама тутаран, хăвăн ирĕк, – терĕ Каврăçпа калаçнă май çав сăвăç.

Кун хыççăн ытти пӳлĕмсене те ура пусрĕ Ваçук.

– Ах, сана, кипке çине тин çуралса тухса выртнă пекскерне, çĕнĕ çынна, ăнланса пĕтме те çăмăл мар пуль çав, – терĕ Хурамак ял ачи хăйĕн çул çӳревĕ çинчен хыпарласассăн. – Кунта тем те хăтланаççĕ вĕт пирĕн. Литературăра пиратсем йышланчĕç. Çыру ярса илме çук – çын çырăвне уçса вулаççĕ. Çавсен ушкăнĕнчисем сĕмсĕрленсе çитрĕç.

– Циклоп мĕн хак ыйтать-ха вара? – кăсăкланать Чĕкеççи.

– Çăвар уçман эп ун пирки. Хам япалана çын аллине пама шутламан. Курак хăй чĕппине хура пулсан та хамăнах тет, çавнашкалах эп çырни те манăнах пултăр. Гонорар илессишĕн тертленсе ларман эп. Пирĕн учитель пур, пĕрлех физкультура вĕрентетпĕр. Истори тĕп предмет хăйĕн. Çавă кашни çу ялти маттурсемпе ушкăнланса çурт-йĕр тума кĕрĕшсе çӳрет, пĕр хулăм кĕнеке гонорарĕ чухлĕ укçа ӳкерет ик уйăх ытларах хушăра. Эп тăкса пĕтеретĕп çăва тухсан ик уйăх шалăвне, вăл хăй çĕнĕ çурт-кермен çавăрмалăх тепĕр çавăн чухлĕ пурлăх тăвать. Эпĕ унран юлнă пулăттăм-и пуртă тытнă пулсан? Вăй çитместчĕ-и? Алă çыпçăнмастчĕ-и? Халăх валли çырнă – çынна мăшкăллаттарса кăлармастăп.

– Куна Серте Севетне каласа пар-ха эс, – уçă кăмăлĕпе пăхать Чĕкеççи.

– Калама черет çитĕ-ха.

– Ăмсанатăп сана, – тет çавăнтах çамрăк сăвăç, кĕнекеçĕ. – Парăнмастăн. Ан парăн.

* * *

Шкулта пушă пӳлĕмре – йĕлтĕрсене те упракан, физкультура урокне пуçтарăнса тухас умĕн çири тума та ылмаштарса тăхăнма уйăрнă пысăк мар хӳшĕре – никам çук тĕл килнĕ самантра саспа вулать, кала-кала пăхать Каврăç Ваçукь хăй мĕн çырнине ал çыру тăрăх. Тĕпрен илсен, малтанхи страницăсем – такам та, иккĕн-виççĕн те пуль – тĕкĕннĕ, улăштарнă, пăснă вырăнсене çĕнетсе май килтерме йывăр пулчĕ автора. Ун чухнехи пек хăварас та килмест, лешсенне – Серте Севечĕсенне, Циклопсенне тата тахăшĕнне – йышăнма та май çук: пач урăхла çавăрттарнă, чĕлхе юххи те – стилĕ – ав-

торăн хăвăртлăхĕ мар, шухăшлавĕ те урăхла. Килтех, сĕтел хушшинче пăталанса ларса, хирĕне-хирĕне тухрĕ ку вырăнсем тĕлĕнчен Ваçук, халь ак никам тĕкĕнмен уçă вырăнсенче – хăй чĕлхи, хăй сăмахĕ, шухăшĕ, пулăмĕ уçăлса тăнă çĕрте – ăçта мĕнле тумхах пур, мĕн куçа курăнмаймасть – çавна пĕлесшĕн, мĕн хушмаллине хушма, ытларах катма – планпа палăртнă калăпăша хĕстерсе лартма – тăрăшать Ваçук. Унталла ик утăм, кунталла ик утăм çеç пулакан çара вырăнта – урока тухма хатĕрленмелли пӳлĕмре – каллĕ-маллĕ уткаласа вулать, кăранташпа паллă тăвать автор; ручкăпа кайран килте, сĕтел хушшине тепре тĕпленсе ларсан тӳрлетĕ, çырĕ, улăштарĕ вăл.

Ытлашши васкас мар-ха. Куккăшĕсем çук кĕнеке çулĕ çинче унăн, чуна уçса ирĕклĕн калаçни вырăнсăр; спорт ăмăртăвĕсенче те кашни спортсменăн хăйĕн тактики пур, стратегипе пĕрлех çывăх тĕллевне пурнăçа кĕртмелли мелĕ пур; старт умĕн ăна тӳрех уçса каламастăн. Халь кантурпа автор хушшинче килĕшĕве алла тыттарман пулин те, иккĕмĕш хут плана кĕнĕ факчĕ пур: вĕсем ку кĕнеке тухас вăхăтне пĕрремĕш квартала палăртнă: тӳррипе ак çав вăхăчĕ хыçра – ал çырăвне пичете паман: тăсаççĕ, хăйсем тăсаççĕ. Апла пулсан, автортан ыйтса пăхчăр-ха хăйсем, ал çырăвне çитерсе памалла тесе. Ыйтчăр, анчах вĕçтерсе те ярас марччĕ алла кĕрес кайăка.

Э, калаймарăмăр. Хуларан киле таврăнсан эрнеренех Каврăç Циклопран çыру илчĕ: пĕрле ĕçлĕпĕр тет ыр çын. Çук! Ваçук, хĕрсе кайсах мар пулин те, татăклăн хуравларĕ ăна: журналта пичетленсе тухнă хăйĕн япалинчен хăшне тĕкĕнмен (Вĕршĕл редакцилени!), çавă вулакан умĕнче намăс курмалла мар чипер япала пулса тухнă; хăшĕшĕн ют çын алли пит тăрăшнă, пит юсанă, «туса панă» эппин (хăйсен сăмахĕ), çавă авторне те, вулакана та ăнланмалла мар япала, пыртан анман тип пашалу çеç пулса тăнă. Ун пекки аякран тартăр Ваçукран.

Акă ĕнтĕ шкулта – урок çук пушă самантсенче – саспа вуласа «пуклак чĕлхине» шĕвĕртет, якатать Каврăç: вăрăм туна та сăмсипе пырса тĕкĕнме ан хăйтăр! Ах, айван-çке Ваçук, чăн-чăн пĕчĕк ачах: сăмса пырса чикес текенни вăл таçта та пырса чикĕ, енчен ăна ирĕк панă пулсассăн. Авто-

рӑн вара ку ҫине пӗртен-пӗр ирӗк ҫеҫ: ал ҫырӑва сӗнесси тата ӑна каялла илесси. Юлашки правипе туллин усӑ курма пӗлсен те юрӗ КАврӑҫ Ваҫукне. Ҫав ирӗклӗхе – ал ҫырӑвне каялла илессине – никам та хуплаймасть-ха ку ҫине!

Ҫырать, тӳрлетет, хӗсет, пӗрет Ваҫук. Хӑш-пӗр диалогсене тӳрӗ пуплев майлӑ абзац ӑшне вырнаҫтарать, пулчӗпулмарӗ ҫӗнӗ йӗркерен ҫырмашкӑн пикенмест – капла мелпе те листа шучӗ чакать, калас тени сыхланса юлать; ҫав тери кирлех мар вырӑнсене тӳрех хӗрес хурать. Саспа вула-вула е пит тарӑн шухӑша путса «шӗвӗртет» «пуклак» чӗлхине Ваҫук; словарьсене тыта-тыта пӑхать, синонимсене суйласуйла илет.

Тухрӗ ҫапла автор ал ҫыру витӗр тепре (миҫемӗш хут ӗнтӗ?), умран пуҫласа вӗҫне ҫити тилмӗрсе ҫитрӗ, кравате кура уруна тӑс тенешкел, хӑйне панӑ калӑпӑш шутне вырнаҫтармалӑх кӗскетрӗ, виҫине ҫитерчӗ. Васкамасть-ха хулана леҫмешкӗн хальхинче автор, кӑшт тӑхтас тет ку хутӗнче: пӗрре аса илтерччӗр-ха хӑйсем! Аса илтерчӗҫ те: «Ал ҫыру тӑратас вӑхӑт иртсе кайрӗ, хальтерех килсе памасан, планран кӑларатпӑр», – тенӗ унта, кантур штабне лартнӑ, ҫавра пичет пуснӑ хут ҫинче. Тӗп хуҫи халь тата пач урӑх ҫын иккен: хӗрарӑм. Малтанхи «перчетке» тахӑшӗн аллине юрамарӗ-шим? Куна, вӗр ҫӗнннине, пӗр района парти комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ пулса ертсе пынӑскерне, пенсие ӑсатиччен ҫакӑнти ҫемҫе пукан ҫинче ӑшӑнса лар тенӗ пуль ӗнтӗ. Кӗнеке кӑларассине вӑл тӑвать-им? Ӗҫе май килтерсе пыраканӗсем Шехвиновсем, Серте Севечӗ сем, Якунесем кунта. Тӗп хуҫа хатӗр хут ҫине алӑ пусать ҫеҫ вӑл. Кавӑҫ Ваҫукне юнаса асӑрхаттарнӑ сӑмасем те Серте Севечӗнех. Пултӑрин, хӑратаҫҫӗ  пулин те, шарт сиксе ӳкмест-ха ял ҫынни. Почтӑна пырса телефонпа шӑнкӑравласа калаҫрӗ вӑл кантурӑн машинисткисемпе. «Ҫапса паратпӑр ара», – килӗшрӗҫ кусем. Виҫҫӗн уйӑрса илсе пӗр харӑс тытӑнма пулчӗҫ. Вӗҫлесен, ҫийӗнчех хыпарлатпӑр терӗҫ. Турра шӗкӗр, кусем тӗксе ямаҫҫӗ ӑна – те укҫине тӳрех тӳленӗрен, те ыр кӑмӑлпа пулӑшас тесех, ҫаксем нихҫан та ҫурӑмпа ҫавӑрӑнса тӑмаҫҫӗ. Япалана вӗсене кӗртсе пама Ваҫук хальхинче хулара вӗренекен хӗр ачинчен тыттарса ячӗ. (Хӗр ачи кӗҫӗн класра вӗреннӗ чухне ҫырнӑччӗ малтан-

ласа повеçе автор, халь ав ун тĕпренчĕкĕ аслă шкулта ăс пухать, кĕнеке çаплах тухман-ха.)

* * *

Хăна çурчĕн пĕр вырăнлă пӳлĕмĕнче, никам та чăрман-тарман çĕрте, сĕтел хушшинче ларать Васук. Хăй тавра – краватьпе пукансем çинче – тĕркен-тĕркен ал çыру купаласа хунă вăл: кĕç-вĕç çурăлса каясла йӳçекен сăра пичкине кă-шăлланă евĕр тулли тăвата папка пурĕ; машинкăпа çаптарнă хыççăн вулать халь ал çырăвне авторĕ. Тĕнчере хăть пĕртен пĕрре пур-ши машинкăпа ним кăлтăксăр çапакан çын? Ăста хĕрарăмсен алли те, ав, кирлĕ сас палли вăрăнне теприне пырса тĕкĕннĕ – йăнăш çапăннă; е ылмаштарни, е сиктерсе хăварни тĕл пулать. Инструментпа кĕвĕ калакан хăй алли ют пускăча тĕкĕннине çийĕнчех туять, çавна май ăста вăйăçă, темле çĕнĕ кĕвве те нотăпа вуланăçем суйса янраттармасть. Çавнашкал пуласчĕ те, çук çав, ал çырăвне пăхса машин-кăпа çапаканĕ кĕвĕ калакан евĕр мар – йăнăш тăвать-тăва-тех. Вĕсене çав хушăрах ытлас та килет: хăш сăмах хыççăн хăшĕ черетленнине епле куçласа ĕлкĕреççĕ-ши тата, тепĕр тесен, тӳрлете-тӳрлете хушнă çĕрте?! Уççине тупма та ансат мар хăш-пĕр пуплевсенче чĕре-чĕре çырнă пирки. Ак халь пичет сас палийĕпе çапса тĕс килтернĕ хыççăн вуласа ла-рать авторĕ пит тимлĕн: йăнăша асăрхамасăр сиктерсе хă-варас марччĕ! Юрать-ха, хĕрĕсем, пайла-пайла илсе, кĕске вăхăтра ĕлкĕртсе пачĕç. «Тумлантаратăн ĕнтĕ çавсене», – тесе юлнăччĕ арăмĕ. Васук шӳтлеме сăмах тупать: «Хăв çапнă пулсан, хăвна тӳлеттĕм – кашни страницăшăн вăтăр пус». Ыррине, çурхи каникул тĕлĕ килчĕ, хĕлле вырсарни кунсенче ачасемпе спорт ăмăртăвĕсенче ирттерни шутне халь канма пултаратăн тесе ирĕк пачĕç ăна кăштах шкул-тан пăрăнмашкăн. Хăна çуртĕнче уйрăм пӳлĕмшĕн тӳлесе, апатланма ресторана çӳресе такама «тумлантарать» ĕнтĕ тата кунта Васук – хăй ирĕкĕпе килнĕ командировкăна никам та саплаштармасть çав, арăмĕ алли витĕрех тухать ĕçлесе илнĕ укçи. Ку хушă пурăнĕ-ха килте вут хуткаласа ачисен амăшĕ, арçынни килтен туха-туха кайнине хăнăхнă вăл – хă-нăхман мар: сахал-и спорт ăмăртăвĕсене ăсатнă! Васукшăн та çемйинчен кун пек уйăрăлни çĕнĕ мар: спортăн хĕрӳ тап-

хăрĕсенче эрне е ик эрне чухлĕ хушă килтен пĕрре çеç мар аякра пулнă. Вулать халь çакскер, йăнăшсене тӳрлетет, хура хут хуртарса виç экземпляр çаптарнă та, пĕр йăнăша виç листара юсать, хăш-пĕр çĕрте пач ăнланаймасть те малтанхи – тĕрĕлесе пĕтернĕ – ал çырăвне уçса шыраса тупать çав сăмахне: мĕне пăтраштарнă?

Серте Севечĕпе мĕн калаçни çинчен никама шарламасăр ăшра тытса усрама йывăртан пуль, ал çырăвне чи малтан хакланă рецензент патне çыру та янăччĕ-ха маларах вăл. Çын аллине пама хистеççĕ, Циклоп, Выл, Ятшыв хушамачĕсем пулчĕç тесе хыпарларĕ вăл ăна, Ятшыва. Хăй сывлăхĕ пирки радикулит авни çинчен те пытарса тăмарĕ. Сас пачĕ Ятшыв: ал çыру çинчен тапратнă сăмах пирки шарламасть, радикулитран асăрхан, кукăртсан, кукăртсах лартать вăл тенĕ çеç ĕçлеме сывлăх суннă майăн. Халĕ хăна çуртĕнчен ун патне шăнкăравлас шутлă-ха Кавrăç, телефон сĕтел çинчех ларать, кĕпçене тытмалла та номер пухмалла çеç. Юрĕха, васкамĕ чăрмантарма, вуламалла-ха унăн урăх нимĕнле шухăша путмасăр халĕ.

Иккĕмĕш кунне каçалапа шăнкăравларĕ вăл Ятшыв патне. Çийĕнчех унăн селĕпрех сассине илтрĕ ку. Каврăç Ваçукь йĕркипех пĕлтерчĕ ĕнтĕ хăй ăçта тата мĕн туса ларнине. Произведенин хреснашшĕ вырăннех шутлать Ваçук ăна. Камах-ха урăх евитлес унăн ĕç епле пынă пирки? Куккăшпиччĕш çук-çке ку тĕлĕшпе çыннин.

– Юрать, ыран тăххăрпа тĕл пулăпăр кĕнеке кантурĕ умĕнче. Якуне патне пĕрле кĕрĕпĕр, – тесе сĕнчĕ ку. Çакăнтан ырри мĕн пултăр ĕнтĕ авторшăн?! Ятшыв чăнчăн хрснашшех çав çуралас кĕнекешĕн. Çын çуралсан та ят хунă чух хăйĕн ашшĕпе амăшĕсĕр пуçне хреснашшĕпе хĕреснамăшне тупаççĕ – ахальтен мар пуль, кирлĕрен-тĕр.

Вăхăтне пăхса, аякри хăна çуртĕнчен, автобус-троллейбуса лармасăр, юр кайнă хыççăнхи таса урампа хуллен утать Ваçук. Ятшывпа шăп хирĕç пулчĕç вĕсем палăртнă вырăнта. Катаранах пĕр-пĕрне асăрхаса саламларĕç.

– Атя, кĕрĕпĕр, – терĕ сумлă писатель  куна. Çыннин кăмăлĕ сивĕ марри сăмах хушсанах сисĕнчĕ те, Ваçук пит çĕкленӳллĕ халь: прозаиксен секцийĕнче Каврăç майлă пулнă çын кирлĕ чухне тепре те ал парать ав. Ал çырăвĕн хӳтлĕхех çав ĕнтĕ.

Ирхи кӳлĕмре хăй пӳлĕмĕнче пĕчченех ларать тĕп редактор. «Кĕрĕр», – терĕ кусем алăк уçса ирĕк ыйтсанах Якуне.

Пукан илсе çывăхарах вырнаçсан, Ятшыв Каврăç Ваçукĕн произведенийĕн содержанине каламах тытăнчĕ.

– Пĕтĕмпех пĕлетĕн-çке эс? – тĕлĕнет Якуне кунран.

– Рецензие, хам çырнине, вуларăм. Тухас умĕн, – тет Ятшыв. Унтан романри пĕр эпизод пирки тĕплĕнрех калама пуçларĕ те, Якуне хăй, тепĕр писатель пурнăçĕнчи мыскарана аса илсе, аяккалла пăрăнса кĕрсе кайрĕ. Ятшыв та ăна май калаçрĕ – сăмаха çыхрĕ эппин. Каврăç Ваçукь çеç шăппăн итлесе ларать. Ялта пурăнакан тепĕр поэтăн поэминчи кулăшларах сăнара та аса илчĕç лешсем. Япалисем Каврăçшăн ют мар, вуланă.

– Планра пур, кăларатпăр, – терĕ Якуне юлашкинчен Каврăç повеçĕ пирки. – Ал çырăва аслă редактора парса хăвар, – сĕнчĕ автора вăл.

Ал çырăвне – икĕ хулăм папкăна, йӳçекен сăри тапса кăларасан кăшăлланă пичке пекскерсене, тытса тепре амбар кĕнеки çине çырса йышăннă чух Серте Севечĕ сăнран-питрен кăшт çиçерех те, кăшт темскер кăмăлсăртараххăн та:

– Ятшывăн пурнăçра хăйĕн айăпĕ пулнă-ха та, çамрăксене пулăшать вăл, – тесе хучĕ.

Çыннăн тахçанхи пулнă е пулман айăпне шыраса тăмасть Ваçук – унăн япалине хӳтĕлет Ятшыв. Каланăччĕ-ха пĕри ун пирки вăрçа каяссинчен пĕлĕш урлă бронь илсе çăлăнса юлнă тесе. Мĕн, кирлех пуль Ваçука çак хыпар? Тарса çӳремест вĕт, пурин куçĕ умĕнчех Ятшыв. Вăтăрмĕш çулсенче таса писательсене чухса сутнă тенĕччĕ тепри çурма сасăпа. Каврăç Ваçукь, ял çынни, куна тĕпчекен те мар. Вăл çамрăксен спортри пурнăçĕ çинчен кĕнеке çырать – унăн çавна пичетлесе кăлармалла. Çул парасшăн маррисем йышлах-ха çав. Ятшыв вара çырнă, анчах кун çути курман Ваçук кĕнекин хреснашшĕ. Мĕншĕн усал шутламалла тет ун пирки çав авторăн?

* * *

Малтан васкатрĕç, унтан каллех тăсса ячĕç. Ак чун çĕкленĕвлĕ çу ăшшинче Ваçук Атăл леш енчи кану çуртĕнче вăй пухать. Курмалли çынсемпе курса калаçас, ялта ниçта

тухмасăр пурăннипе ĕçе-хĕле ăнтарасси чарăнса тăрать тесе шутларĕ вăл. Ку кану çуртĕнче писательсен хăйсен уйрăм кермен пур, çавăнта вĕсен пысăк йышĕ е çырать, е вăхăта çеç ирттерет – тепĕр роман е повесть ăсталама тытăниччен вăя кĕрет. Ытларах хăйсен ал çырăвĕсемпе тертленеççĕ, тикĕслесе çитереççĕ, пĕр-пĕрне вуласа кăтартаççĕ. Çу уйăхĕнче çамрăк авторсемпе кунта семинар та ирттернĕ, вĕрентнĕ, ăс панă вĕсене аслисем. Хăйсем хыççăнхи хунава тĕреклĕрех пултăр, паркарах ӳсчĕр тесе кăпкалатнă, ытлашши çатракине иртме пулăшнă; шăварнă та, енчен лешсем урăххипе кусене «шăварма» шутламарĕç пулсан – çыракан йышра (ăçта кайса кĕрĕн ĕнтĕ чăнлăхран?) ун пекки те пулкалать. Ваçука та каллех, иккĕмĕш çул ĕнтĕ, чĕнчĕç çав семинара, анчах ку хутĕнче те ялти учитель ăна хăй умĕнчен аллипе сирчĕ: чăваш чĕлхисĕр пуçне физкультура та вĕрентекенскер, ытти икĕ учителĕ çине шанса хăвараймĕ çак тапхăрти хĕрӳ ĕçе: мĕн чухлĕ спорт ăмăртăвĕсем ирттермелле! Çăмăл атлетикăн пур енĕпе те – тĕрлĕ инçĕше чупасси, тăршшĕне е çӳллĕшне сикесси, пересси-ывăтасси тĕлĕшпе – шкул чемпионатне ирттерет вăл кунсерен уроксем хыççăн; классенче ГТО нормисене пурнăçласа пынă май документсене йĕркелесе çитерет; значокĕсене, ĕнентерӳ хучĕсене (приказ çырнă хыççăн) е юлашки шăнкăравра, е саккăрмĕш, вуннăмĕш класрисене вĕренсе тухнă чухне парать. Ĕç мăй таран чухне ăçта унта семинарсенче хĕртĕнсе çӳреме вăхăт?! Çав канашлăва килмен шутне пултăр текелесе путевкăпа вун пилĕк кунлăха персе çитрĕ кунта халь Ваçук. Çанталăкĕ малтанхи виç-тăватă кун хушши çăва тухнă пек мар çумăрлă та сивĕ тăркаларĕ те юлашкинчен ăшăтса ячĕ. Хисеплĕ писательсемех канчĕç ку тĕлте. «Кĕнекӳ планра пур, наборлама тытăнчĕç те пуль? – тесе калаçрĕç кунпала. Тепри тата, ал çырăвне чи малтан пăхса тухнă чух пулни, Ваçукран тăватă çул кĕçĕнни: «Салам, классик!» – тесе ал тытрĕ. Шӳтлеме те пултарать çак йыш – чĕлхе ăстисем сăмахшăн кивçене каймаççĕ. Ура хурса такăнтарасси е пĕр-пĕр тĕттĕм кĕтесре хуптĕрлесе кӳпкеме хатĕрленни те сисĕнмест вĕсен. Кашни хăй ĕçне тăвать, çав хушăрах пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçаççĕ. Çапах та кусем шӳтлекелеççĕ, сăмахпа ыр пулаççĕ пулин те, кĕнеке кантурĕпех ĕç татмалла-ха Ваçукăн.

Атăл урлă хула енне каçса пычĕ пĕлнĕ çурта вăл. Кунта пӳлĕмсене юсама тынăннă-мĕн, çавна май пĕр-иккĕн çеç дежурнăй шутĕнче ĕçлет, ыттисене е канма янă, е тăвас ĕçе килĕнче пурнăçлама хушнă, Серте Севечĕ те килĕнче. Шехвинов телефонпа çыхăнтарчĕ Ваçука унпала. Тĕплĕн, ларсах вулать-мĕн кунăн ал çырăвне лешĕ. «Çитес эрне варри тĕлне пĕтĕмĕшле вуласа тухатăп, ун чух кантурта тĕл пулса калаçăпăр», – тет. Каврăç Ваçукĕ-и? Хаваспах килĕшет вăл ку сĕнӳпе. Умри çав тăват-пилĕк куна кĕтсе илме те çăмăлах мар иккен авторне. Юрать-ха, кану çуртĕнчи пурнăçĕ кичемех мар: хĕвел çинче хĕртĕнетĕн, шыва кĕретĕн, çынпа калаçатăн; спорт ветеранĕ тата сехет çурăран кая мар хушă кунти хăйăрлă çулсемпе, çӳллĕ хыр хушшисемпе чупать, унтан тĕрлĕ хăнăхусем тăвать – активлă кану тени çителĕклех çакăн, çавăнпа кичемленме вăхăт çук унăн, пӳлĕме кĕрсе выртсассăн пăшт анчах ыйха путать.

Акă палăртнă вăхăтра çитрĕ тепре хисеплĕ çурта Каврăç Ваçукĕ, ун хыççăнах «Тур амăшĕ» те – Серте Севечĕ – ĕлкĕрчĕ. Автор кану çуртĕнчен çăмăллăн çеç каçнă пулсан, кĕнекеçĕн хул хушшинче – хулăм ал çыру; вуласа тухнă иккен Каврăç çырнине.

– Калаçăпăр!!! – кĕретех мăн саспа палăртрĕ Шехви Венкки кантур коридорĕнче, темле туй умĕнхилле вăшталаннă май. – Хăш пӳлĕм ирĕклĕ? Ăçта кĕрсе ларăпăр?

Юсав ĕçĕ пырать çав кунта. Çуртăн аяларахри тепĕр хутĕнче художниксем вырнаçнă пӳлĕм ирĕклĕрех иккен – юсавĕ иртсе кайнă вĕсем патĕнчен, пĕртен-пĕр çамрăк ӳкерекенçĕ çеç кунта халь.

Пуш сĕтел таврa пукан илсе ларса тухрĕç виççĕн. Çавра сĕтел темелле-ши кун пеккине?

– Прологĕ кирлĕ мар ку. Кăларса пăрахмалла ăна, – сăмах хушрĕ ĕç пуçарса Серте Севечĕ ал çыру хуплаштарнă папкăна салтсан.

– Юлтăр. Кирлĕ вăл, – лăпкăнах тавăрать Ваçук.

Серте Севечĕ тепĕр ик-виç страница уçать.

– Ку вырăнĕ мĕн тума кирлĕ? Улăштармалла.

– Хăй вырăнĕнчех вăл. Унсăрăн вулакана тытса илеймест, шухăш тĕвĕленмест, характер палли килмест.

– Ку мĕнле сăмах?

Йăнăш çапăннă иккен, пĕр сас палли куçа курăнмасăр, тӳрленмесĕр сиксе юлнă.

– Çавна юсассишĕн манăн лармалла-и? – çӳле илет ĕнтĕ халь Серте Севечĕ. Шехви Венкки пĕр сăмах чĕнмесĕр, Ваçука хыпса çăтса ярасла, мăн куçлăхĕпе сăнран тинкерет. Севет ал çырăвне малалла уçать.

– Сыпăксене ят памалла, – тет вăл хальхинче.

– Сыпăк шутне асăнни çитет, – лăпкăнах калать Ваçук. Тепĕр тĕп романĕнче кашни сыпăкне ят парса пырать-ха вăл, çырнă чух темле шалти туйăмпа пулса пырать произведени тытăмĕ: е ят паратăн, е шута çеç кăтартнă пайсем аталантараççĕ сюжета, е виç çăлтăр лартса çеç пыратăн – çакăн пек хăйне евĕр çуралса, çирĕпленсе чăмăртанать произведени. Кавrăç Ваçукь – автор – унтан, пĕр кӳлепене килтерничен чакмĕ.

– Ал çыру вунă листа чухлĕ çеç сан кунта. Вун виççĕ мар, – çирĕппĕн каласа хучĕ Шехви Венкки, çамрăк автора хыпса çăтса ярас пек пăхса лараканскер.

Виç листине хăй çырнине пичетлессишĕн касса хăварасшăн-ши ку, е виç листа тени çав хака кусене тӳлемеллине систерчĕ-ши? Шехви хăй сăвви-калавĕсене кăларасшăн пуль – шухăша килнĕ юлашки версие сирсе ярас.

– Вун виçĕ листи те тăвăр мана,– терĕ автор, темиçе хутчен ларса мĕн çырнине самаях хĕснĕскер.

– Çынсен ал çырăвĕсем вуншар çул выртаççĕ – кĕнеке пулса курайманççĕ. Резерв мĕн чул! – сăмаха тăсать Серте Севечĕ.

Иккĕн тапăннă ялти автора, пĕр пĕчĕк кĕнеке хыççăн иккĕмĕшне – самаях хулăм роман (повесть тенĕ) кăларакан-скерне. Аякри сĕтел хушшинче ку кантурта тин çеç ĕçлеме пуçăннă художница шăна вĕçни илтĕнмелле хускалмасăр ларать; Ваçук пăлханмасть, вĕчĕрхенсе ӳкмест.

– Эпир калатпăр – эс килĕшместĕн, эсĕ калани пире çырлахтармасть, – çăра куç харши айĕн хаяр вут тăкса тинкерет Кавrăça Шехвинов.

Авторĕ, тӳрех хурав памасăр, çӳлтен аялалла пăхнă евĕр сăнарĕ кусене: хăй мар, çаксем мĕскĕнĕн туйăнаççĕ халь уншăн.

– Мĕн сĕнесшĕн вара? – çăвар уçрĕ вăл.

– Литобработка тутарттаратпăр, – пуплеве хыттăн палăртрĕ те темле кĕретех хăрушла тинкерчĕ хальхинче Шехви.

– Тархасшăн, – терĕ çĕкленӳллĕн, парăнас мар шухăшлăн Каврăç Ваçукь. – Ятшыва паратăп. Урăх никама та мар.

– Юрать. Шăнкăравла! – хушрĕ Шехви Венкки.

Ваçук йăшт тăчĕ те телефон патне пычĕ. Шехви лешĕн телефон номерне аса илтерет, ку хăй те пĕлет ăна. Çийĕнчех сас илтĕнчĕ лерен. Каврăç ăна, ал çырун хреснашшĕне, ĕç-пуç çинчен ăнлантарать, литобработка тутаратпăр тенине асăнать. Хула айккинчи пахчине кайма пуçтараннă иккен çынни, анчах килме пулчĕ, мĕн вăхăтра çитессине те хăех палăртрĕ.

– Эпĕ Якунене тупам, – тесе хăпăл-хапăл вăшкăртрĕ пӳлĕмрен кун хыççăн Шехви Венкки.

– Икĕ хут вуласа тухрăмччĕ, – кăмăлсăррăн тутине тăсрĕ Севет. Анчах вырăнтан тапранмарĕ-ха, ал çырăвне поля çине кăранташпа паллă тăва-тăва çырнисене хуратах пуçларĕ, страница хыççăн страница уçать те – хăй вараланине ним уямасăр ластикпа сăтăрать. Темле шелленĕн, хĕрхеннĕн тинкерет ăна халь лăпкă çеç ларакан Ваçук. Кунта паллă тунисем тĕрĕсех пулсан, мĕншĕн хуратмалла-ши тата? Ятшывран ырă мар тет-шим? Ял çыннинчен, Каврăç Ваçукĕнчен, именесси те аякра тăтăр-ши ĕнтĕ – ят-шывсенчен те пулин именсем!

Вĕçнелли страницăсене тасатса ĕлкĕреймерĕ – Шехви Венкки алăка уçрĕ.

– Ятшыв килчĕ, Якуне пур, кайрăмăр, – терĕ вăл туй ретне килтерекенле вичкĕнĕн.

Çуртăн тепĕр хутне улăхрĕç каллех. Асăннă çынсем коридортах ав. Плановиксен пӳлĕмĕ ирĕклĕ тесе унта кĕчĕç халь пиллĕкĕн.

Ятшыв пĕрремĕш сĕтел хушшине пукан илсе вырнаçрĕ. Ыттисем пурте ура çинчех.

– Автор литобработка тутарма килĕшет, – пĕлтерчĕ Шехви Венкки ĕç-хĕл епле пыни çинчен. – Соглашени çыратпăр.

Серте Севечĕ спецредактор тытмалли килĕшӳ бланкне хатĕрленĕ май:

– Хаклашнă чух вăтанни кайран хур пулнă, малтан калаçса татăлмалла, – терĕ.

– Хӑйсем мӗнле килӗшеҫҫӗ? – пӑхать Ятшывпа Кавръ̆ç енне Якуне.

– Журналсенче ятарласа ҫӳлтен янӑ инструкци пур. Аллӑ процент таран тӳлеҫҫӗ вӗсем литобработчика, – тет пит ӗҫлӗ сӑнлӑ Ятшыв халь, уяв чухнехиллех таса тумланса килнӗскер.

– Пирӗн ун пек кӑтарту ҫук, – пӗлтерет Якуне.

– Мӗн чухлӗ паран? – пӑхать автор енне Шехви Венкки.

Кавръ̆ç хӑйне хӗненине, ҫаратнине пӗртте туймасть, укҫашӑн ҫырман вӗт-ха романне вӑл. Халӑха вулама пултӑр тенӗ. Кусем «перчетке пӑрахнӑ» хыҫҫӑн спортсмен туйӑмӗ те вӑй илчӗ паллах унӑн: хӑшӗ – хӑшне эппин. Хакӗ пирки тавҫӑрса пӗтмест халӗ те вӑл, ҫавӑнпа кусем – Сертесем – хӑйсем тӑпӑлтарса илме ӗмӗтленнине хӑйсен умӗнчех теприне мӑнаҫлӑн кӑларса панӑ туйӑмпа, анчах пасарта япала хаклашнӑ чух пӗр енӗ ӳстерсе, тепӗр енӗ катса пынине астуса:

– Ҫирӗм пилӗк процент, – терӗ.

Нихӑшӗ те чӗнмеҫҫӗ. Ятшыв та шухӑша путнӑ.

– Килӗшетӗр-и? – тинкерчӗ кун еннелле халь Серте Севечӗ.

– Килӗшетӗп, – татӑклӑн каларӗ Ятшыв, алла лекнӗ партаса ҫирӗппӗн тытам тенӗ евӗрлӗн. – Ставки мӗн чухлӗ?

Пӗлекен ҫук иккен. Шехви Венкки план ӗҫне туса пыракан хӗрарӑма шырама тухса кайрӗ. Ҫитсе кӗчӗҫ кӑштахран иккӗшӗ.

– Хытса тӑрас пулмасть – кӗнекӳ тахҫанах тухса каймалла! – Ваҫук илтмелле хӑйне хӑй калаҫрӗ хайхи плановик хӗрарӑм малалла иртнӗ май. – Утӑ купи ҫинчи анчӑк пулнинчен мӗн усси?

Сунтӑхран тӑрхала пысӑк кӗнеке туртса кӑларчӗ яштак та капӑр хӗрарӑм. Ӑна уҫса Кавръ̆ç Ваҫукь тӗлне тупрӗ те:

– Ак вун виҫ листа, ставки ҫӗр ҫитмӗл пиллӗк тенӗ, – терӗ.

– Мӗншӗн ик ҫӗр мар? – хаклашать халь авторшӑн та Ятшыв.

– Ик ҫӗр тенкӗ писательсен Союзӗнче тӑракансене паратпӑр, – ӑнлантарать Якуне, Ятшывсӑр пуҫне ыттисем пекех ура ҫинче тӑраканскер, лутрарах пӳллӗ ҫын.

– Ик ҫӗр ҫирӗм пиллӗк – Союз членӗсене, – хирӗҫлесшӗн лешӗ.

– Халь çавăн пек ставка сĕнеççĕ çӳлтен, – тет Якуне.

Каврăç Ваçукĕшĕн пулсан, чĕнмесен те, кусен калаçăвĕ ним ăнланманни мар: литераторсен хаçачĕнче вуланă хыççăн халăх судйи патне кайсах, нормативлă документсем пичетленекен журналта ку чухнехи çĕнĕ ставкăпа паллашнă вăл – унта ик çĕр çирĕм пилĕк тенкĕ чухлĕ шай çук. Киввинче пулнă, халь хуратнă ăна. Чи пĕчĕкки – çĕр çитмĕл пиллĕк; виççĕмĕш шкала – ик çĕр хыççăн тӳрех ик çĕр аллă пулать. Кун пирки Ятшыв пĕлмест те иккен. Ваçук та пĕлнине кăтартасшăн сăмах чĕнмест. Автор прави çинчен калакан кĕнеке (кивви тейĕпĕр) иккĕ тан пур унăн, ăна темиçе хутчен те тишкернĕ Серте Севечĕсемпе вăрçнă май, анчах шарламан, шарламасть те-ха.

– Çĕр çитмĕл пиллĕкпе пĕр çирĕплетнĕ ĕнтĕ, – тет Якуне. – Фондран иртейместпĕр.

Ятшыв, хутпа ручка илсе, çирĕм пилĕк процентпа килĕшсен, хăйне мĕн чухлĕ лекессине çырса шутлать. Ку хушăра леш плановик хĕрарăм та шут шăрçине шаклаттарса хака кăларчĕ.

– Уйăх хушши вăхăт паратпăр сана. Уйăх хушшинче çавăн чухлĕ ĕçлесе илетĕн, – тесе мухтать Ятшыва Якуне.

– Çырăпăр-и вара? – кусем çине пăхать Серте Севечĕ тепĕр сĕтел хушшине вырнаçнă май.

– Çырăпăр, – килĕшет Ятшыв.

Почеркĕ уçăмлă, тикĕс Серте Севечĕн. Кантурпа спецредактор килĕшĕвĕн бланкĕ çине паянхи ĕçе палăртса йĕрлет хĕрарăм (спецредактор тытасси илемлĕ литературăшăн маррине пĕлет-ха Ваçук, шарламасть çеç) виçĕ экземпляр: авторне, литобработчикне, кантура валли. Кашнинех виççĕн алă пусаççĕ: кантуртан Якуне, литобработчик Ятшыв, автор Каврăç Ваçукĕ.

Пӳлĕмрен тухнă чух Шехви Венкки Ваçука:

– Çĕр вăтăр пĕр тенкĕ сана хăвна. Листашăн, – тесе пăхрĕ темле пысăк тупăш илетĕн теесле. – Çынсем вăтăр процент параççĕ, – хушса хучĕ çавăнтах.

Ваçук, мĕн, укçашăн çырнă-им? Тертленнĕ, тăкакне тӳснĕ шутне саплаштарсан та çитĕ ăна хăйне.

Ятшывпа пĕрлех тухрĕ çуртран Каврăç. Серте Севечĕ те тытăнса тăмарĕ.

– Иккӗ вуланӑччӗ хам, – тесе уттарчӗ ку, алӑри тупӑшӗ тарнине туйнӑн.

– Кӑшт паллӑ тӑвӑпӑр-и вара? – сӗнчӗ Ятшыва Ваҫук.

– Унсӑрӑн ҫылӑх пулӗ, – хирӗҫ чӗнчӗ ача чӑпӑл кӗртес чух хреснашшӗ тесе палӑртни. – Ресторан хупӑ-ха халь. Буфетне кил хушши енчен кӗрӗпӗр.

Ваҫук ӗҫмест, хӑй валли яртарнине те юлташне парӗ. Кӑмӑлӗ лайӑх унӑн, хӗп-хӗпӗрчӗк халь вӑл: кӗнеке тухать; чи малтан тӗрӗс хак панӑ ҫын аллинче ун ӗҫӗ; пӑсса пӗтермӗ, мӗнле пулнӑ ҫаплах хӑварӗ.

* * *

Мӗн-ши вӑл ҫырнӑ произведени авторшӑн? Ҫуратнӑ ачипе танлаштараҫҫӗ ӑна. Ятшыв та, ак, тату вӑхӑтӗнче, тӗп ҫуртран тухаспа, «корретурине вулатӑп, ҫуратакан ача-ҫке» текелерӗ. Мӗнле амӑшӗ-ха вӑл хӑй юн парса, чун кӗртсе кун ҫути пилленӗ ачишӗн кулянмӗ? Ҫыракан та хӑй япали шӑпишӗн шухӑшлатех, ыйхӑ вӗҫтеретех. Анчах пурте пӗр пек мар пуль. Теприншӗн ачи-пӑчи те ашшӗ-амӑшне пӑхма та вӗсен чури пулма ҫеҫ кирлӗ – кун пеккине те этемлӗх пӗлмест мар. Тахҫан-тахҫан, таҫти-таҫти ҫӗр-шывра чун патӗнчи ачине татӑк ҫӑкӑршӑн сутса яни ҫинчен калакан халап та ҫӳрет-ҫке. Ыратман-ши ашшӗ-амӑшӗн чӗри ҫавӑн чух? Ал сулнӑ кӑна пулсан, мӗнле хакламалла ӑна, амӑшне, ашшӗне? Ӑҫта кайса чикмелле вара пуриншӗн те хӗвеллӗ кун ҫителӗклӗ текен тӗнчене? Унӑн вара, тӗнчен, тӳсмеллеим пурне те?

Литература та ҫырав ӗҫне пуҫӑннӑ ҫыншӑн татӑк ҫӑкӑр тупмалли промысла ҫеҫ мар пуль, тепӗр тесен. Ытларах хӑйне шырать пуль хайлавра канлӗхе ҫухатаканӗ, хӑйне тӗпчет пуль вӑл вӗҫе-вӗҫ тӑсӑлакан сӑпкара – асамлӑ тӗнчере. Ҫав капӑр тӗнчене хут ҫине тӗрӗлесе, хӑйӗн пӗлӗш-хурӑнташне, хӑйпе пӗр чӗлхепе калаҫакан, пӗр майлӑрах шухӑшлакан ҫынсене, хаклӑ хӑнана ик алла ҫӑкӑр-тӑвар тытса, ӑна тӗрӗллӗ ал шӑли ҫине хурса кӗтсе илнӗ пек, вулакана хӑйне кӗтсе илсе парать пуль кӗнеке ҫыракан. Мӗнле-ха вара хаклӑ хӑнана – вулакана йӗркеллӗ пӗҫермен ҫӑкӑр тыттарӑн? Икӗ питлӗ кӑлармалла-и ӑна кӑмакаран, тӗпне тачка тумалла-и, питне ҫунтарса ямалла-и? Чустине унанӑ чухне аланӑ ҫӑнӑх вы-

рăнне хывăх кĕшĕл пырса тăкрĕ пулсан тепри? Хăвăн аллу ун пек хăтланмĕ. Ют çын алли вăл – ют çын аллиех. Енчен эсĕ унăн тĕсĕшĕн, пахалăхĕшĕн тăрăшатăн пулсан, килес хăнана – вулакана – чипер пĕçернĕ «çăкăр» парас тетĕн пулсан, хăв çук чухне мĕн пулса иртет-ха, мĕн хăтланаççĕ кунта хамсăр тесе пырса пăхатăнах, енчен саншăн вăл ик айкки те тăвайкки мар пулсассăн. Тен, чустине меллĕн унаман япалах пырса сĕнекенсем пур çав йышра, çыракансем хушшинче – ун пеккисемшĕн пулсан, çын алли тĕкĕнни лайăхрах та мар-и? Ун евĕрлисене тата хапăлласах йышăнмĕç-ши кĕнеке кăларакансем? Этем ахаль ĕçлемест – тӳлемелле, хакне саплаштармалла вĕт-ха. Енчен чипер япалана çав шăпана кăтартас пулсан вара?.. Лайăхран лайăх тума пулать-и? Усаллинчен ырра килтерме пулĕ-и? Ним марринчен ĕренкеллĕ япала унама пулĕ-и?

Тем тесен те, Каврăç Ваçукĕшĕн литература татăк çăкăр шырамалли промысла мар. Эппин, ан çыр, тепри çиес çăкăра ан тыт! Ах-çке, вăл хăйне çавăнта курнă – чун-чĕрийĕ вĕçсе çӳрет унăн литература тĕнчинче, вулакан чĕрçи çине пырса ӳкесшĕнех вăл, хул пуççийĕ çине ларасшăн – савăнтарасшăн эппин. Анчах илемлĕ литературин çăтă тытнă карти пур-çке – писательсен профессиллĕ Союзĕ теççĕ ăна, çырас ĕçпе çеç тăранса пурăнакансен саккунпа хытарнă ани-йăранне. Эс ăçта хĕсĕнесшĕн вара, ялти учитель? Сана патшалăх урăх ĕç панă-çке, эсĕ ачасене вĕрентетĕн те – сана çав тăрантарать, тумлантарать. Халь ăçта сĕкĕнесшĕн вара – чăвашла çыратăн та чăваш халăх чун-чĕрине витерес терĕн-им? Мĕн эсĕ, чиркӳ çынни-им теприн чун-чĕри патне пымашкăн?

Тытăнннă çав, халь ĕнтĕ каялла чакаймăн – спорт интересĕ те пысăк санăн, Ваçук, спорт мастерĕн. Çын алли ун япалине тем те туни Каврăçшăн – ик айкки те тăвайкки мар. Укçашăн тапаçланнă пулсан, мул чĕлхипе çеç калаçнă пулĕччĕ малтанах; терменшĕн асапланман çав. Мур пĕлет, тепĕр тесен, темшĕн çырнă? Калать-ха та вăл, анчах хăй те чухласа пĕтереймест мĕншĕн хут вараланине, ыйхă çухатнине, канăçлăха маннине. Хĕре юратса пăрахнă каччăран, качча савса пăрахнă хĕртен: «Мĕншĕн юрататăн?» – тесе ыйтсан, калĕ-ха вăл, анчах тĕрсех пулĕ-и ун хуравĕ? Тĕптĕрĕс пĕлет-шим вăл хăй мĕншĕн савнине? Пĕлмест те пуль.

Çавăн пекех çырав ĕçне чунтан-вартан парăнса тытăннă çын та хăй мĕншĕн шурă хута йĕрмеленине хирĕçлеме çукла татса калаймĕ. Тупăш мар, хур кăна кӳрет пулсан та, пăрахаймасть вăл çырмашкăн.

Япалуна вулакансем патне çитерес тесессĕн, санăн леш «картанах» – писательсен Союзне – шаккаса кĕрес пулатьха: çавсем хăйсен аллине çавăрса илнĕ-çке пĕтĕм çырас ĕç-пулăма. Хăть ку тĕрĕслĕхе ăнлансам, ялтан тухайман, куçна уçайман этем!

Атăл леш енчи хăтлăхра каннă хыççăн киле килсессĕн иккĕмĕш куннех персе çитрĕ Каврăç Ваçукĕ капăр хулана – мĕн хăтланаççĕ-ши ун япалипе çавăнта?

Серте Севечĕ юсав хыççăнхи пӳлĕмре автора кантур пичет пуснă, хуçи алă пуснă договора кăтартать – халь кунăн алă пусмалла. Вĕçне Серте Севечĕ: «Автор литобработчика çирĕм пилĕк процент пама пулать», – тесе çырса хурать. «Юрать-и?» – тинкерет Каврăç енне. Юрать ĕнтĕ.

– Шăнкăравла Ятшыв патне, – сĕнет вăл. – Ĕçе пуçăнтăр.

Лешĕн сасси темле мăраммăн илтĕнет:

– Никĕс çук.

Иртнинче килĕшӳ туни кантурпа автор хушшинчи договорах мар-мĕн, шанчăк сахал – кĕнеке тухмасан та пултарать, çавăнпа «ват çерçи» ĕçе тытăнман. Вуланă пуль-ха, курнах ĕнтĕ ал çыру чи малтан пулнă чухнехилле маррине – тӳрлетмелли те çук унта, анчах «аш турамне», самаях пысăк таткăка, вĕçертес те килмест паллах: параççĕ пулсан – илмелле. Пĕрисем пусăхларĕç те – куна тыттараççĕ ав. Е ку хăй, «пулă» ăçтала ишсе пырассине пĕлсе, «сĕрекине» малтанах лартса хучĕ мар-и?

– Договор пурри çинчен кала, – сĕнет Серте Севечĕ. Каврăç Ваçукĕ ак кунта, сĕтел çинче, кантур килĕшĕвĕ выртни пирки асăнать.

– Кайса кил эс ун патне килне, кăтарт куна, – сĕнет каллех Серте Севечĕ.

Юнашарти хăна çуртне вырнаçсанах уттарчĕ Ваçук, тупрĕ хваттере. Паллашрĕ Ятшыв договорпа. Арăмĕ юхтарса пĕçернĕ ăш икерчĕпе хăналать кĕнĕ çынна. Ятшыв хăйĕн Мускавра тухнă кĕнекине, унти тĕл пулусенче ӳкернĕ сăн ӳкерчĕксене кăтартать. Журнал редакторĕн арăмĕпе хăйĕн

мăшăрĕ пĕрле тин кăна çĕр-шывăн тĕп хулине çул çӳремелле кайса килни çинчен асăнать. Ара, пĕр ушкăнри çынсемех пуль çав, пĕр-пĕринпе тăтăш хутшăнаççĕ-тĕр. Алла ал çăвать теççĕ те, унсăрах мар пуль. Хăй пысăкрах вырăнта ларнă чух нумай çыравçа хисеплĕ ятсем памалла тунине асăнать Ятшыв. Арăмĕ вара ăна хăвăншăн тăрăшмарăн, орденсăр пуçне нимĕнле ят та çук тесе ӳпкелет: халăх писателĕ те мар, тава тивĕçлĕ ĕçчен ячĕ те тивĕçмен эппин, лауреат та мар. Хăй çыншăн тăрăшнă иккен – нумайăшне сума кăларнă, ку çыравçишĕн кайран тимлекенсем тупăнманмĕн. Пулĕ çав, пулĕ. Анчах мĕншĕн-ха ят-шыв тени кирлех вара этеме. Кĕнекисене вулаççĕ-çке хай писателĕнне, пичетленеймесĕр тăни пулман унăн – ку тĕлĕшпе хăйсем хуçа! Çитмет-им вара çакă та? Чухласа пĕтер ку йыша! Каврăç Ваçукь вĕçне-хĕрне тупаймĕ. Ăна кирлех те мар вăл пĕтĕмпех тăрă шыври пек курасси: унăн хăй çырнине вулакана парнелемелле. Анчах мĕнле калас-ха ан çĕмĕр тесе? Ку вăл: «Эс – вăрă-хурах», – тенипе пĕрех мар-и? Йĕркеллĕ çын пулсан, ал çыру епле шайрине курĕ-ха хăех. Шанать Ятшыва Ваçук, мĕншĕн тесен леш çырнисене йĕркипех вуланă, вĕсенчен вĕренсе ӳснĕ темелле. Çынни пирки ыррăн шутланине мĕншĕн тĕксĕмлентермелле халь вара?

Ирсерен, илĕм-тилĕмле тăрса ĕçлеме хăнăхнă иккен Ятшыв. Ыран шуçăмлах тытать ак вăл Ваçук япалине литобработкăлама. Хăна çуртне вун пĕр сехет тĕлне пыма пулчĕ авторĕ патне çак.

Хаçат вуларĕ те тепĕр журнала тишкерчĕ Каврăç кун хыççăнхи пушă вăхăтра. Килте пулнă пулсан çыратчĕ, хуçалăхра пĕр-пĕр усăллă ĕç тăватчĕ. Кунта халь ак хăй япалине пĕтерсех ан тăкчăр тесе хуралта ларать.

Шăп палăртнă вăхăтра çитсе ĕлкĕрчĕ Ятшыв. Вун икĕ страница тăрмаланă иккен те çавна илсе килчĕ. Юрĕ, ытлашши çăмĕрсех пĕтермен-ха. Пĕр сăмаха вăйпах вырăнта хăварттарчĕ автор, Ятшыв хăй аллипе, темле çилленсе, тепĕр хут çырса хурать ăна, хуратнине. Юлашки страницăсене тĕкĕнмен те темелле, «çеç» вырăнне «кăна» тунă, пĕр тĕлти сăмаха тепĕр вырăнтипе ылмаштарнă.

Юрать, кун пек пулсан произведени пĕтмест, лайăхланма нимĕн чухлĕ те лайăхланмасть те – ытлашши начарлансах

та каймасть. Юлашки страници çине автор: «Ыттисем çакăн пек пулмалла», – тесе çырчĕ. Çĕмĕрмелле мар эппин. Анчах тӳрех: «Вăрă-хурахланмалла мар», –тесе ăçтан калăн?

Буфет уçнă. Коньяк пур унта. Пӳлĕмех ĕçмелли-çимелли йăтса килет Васук.

– Пĕр япала çитмест сан – ак çакă! – ярса панă йăнкăр стакана кăтартать Ятшыв Каврăçа. – Ĕçме вĕренмен.

Васук ал çыру «хреснашшĕ» енне ытлашши тĕлĕнмесĕрех пăхать.

– Союза кĕме рекомендаци паратăп, – сăмаха шутарать Ятшыв.

Ах, Союз туса хунă-çке çав, çыракансене кăшăлласа тăракан карта! Унта кĕмесĕр сана писатель тесе шутламаççĕ. Хакĕ пысăк пулас çавăнта ура ярса пусмашкăн; вырăсла каласан, «входной билечĕ» – рекомендаци – литобработка тутарнипе танлашать-мĕн. Виççĕ танах кирлĕ иккен-ха тата хунтă хучĕ. Ыттисем мĕн хак илĕç-ши? Пĕр çынна «кĕсье тавăрса» кăтарнипе çитет-ши? Туйне каймасăр туй ĕренкине пĕлеймĕн. Кашкăр ушкăнĕнче пулас тесен, кашкăрла ӳлемелле теççĕ тата халăхра. Пур ушкăнра та хăйсен вăйă йĕрки пур: килĕшрĕн çав йĕркепе – кĕретĕн, килĕшмерĕн – кĕместĕн – йышăнмаççĕ сана!

Пăснă-çĕмĕрнĕ, турткаланă-хĕресленĕ хыççăн машинисткăна Васук тепĕр хут хăй çаптарать – çав «хĕрсене тумлантарасшăн» тимлетех ку. Таса япалана тепре хăй вулать. Ятшыв ăна:

– Литобработка тунă экземплярĕ манра пулмалла, – тет.

Васук машинистка çапнă хыççăнхине çеç Серте Северне пырса парать – лешĕ редакцилесе пырать. «Черновика» юлнине вара Ятшыв хăй аллине çавăрса илет.

– Кайран, кĕнекӳ тухсан, паратпăр, – тет вăл темле măшкăлланăн.

– Вĕренсе пыма кирлĕччĕ. Вĕренме.

– Кайран, кĕнекӳ тухсан илен, – хуравлать Ятшыв.

Пулманнине пултарнă пулсан, çитменине çитернĕ пулсан, мĕншĕн-ха «май килтереймен» авторне памалла мар хуратнă ал çырăва? Вăрă-хурахăн унăн хăйĕн саккунĕ çав – ура йĕрĕ хăварасшăн мар вăл, тытăнасшăн мар. Пĕр машинкăпа çапнă йĕркесене тепре чернилпа тĕкĕнни тӳрех куçа

курăнать-çке-ха, ăслă-пуçлă çын мĕн ыррипе ырă маррине, лайăхланнипе япăхланнине асăрхатех; эппин, мĕншĕн ăна, хай черновика, вăрă-хурахсен алăран вĕçертмелле?!

– Писательсен Союзĕн председателĕпе калаçрăм сан пирки. Сюжет туйăмĕ пур авторăн терĕм, – ыр пулать Ваçук умĕнче Ятшыв тепрехинче. – Япалана секцире пăхса тухнă хыççăн ултă çул тытса усранă вĕт-ха терĕм Якунене.

Ус тăвать иккен-ха, хакне кăларать асав шăллăскер.

* * *

Çу вăхăтне хăна çуртĕнче пурăнса ирттереймĕн. Килте хăмла çырли те пиçсе çитрĕ пуль, чие те хĕрелчĕ ĕнтĕ – арăма компот пĕçернĕ çĕрте те пулин пулăшмалла, хăяр та татса тăварламлла, пухсах тăмалла-ха ăна – шуралса кайĕ; шăвармалла çав хушăрах; помидор та пиçес пекех юлнăччĕ. Ку хушăра ялти арçын учительсенчен пĕрисем çурт-йĕр тунă çĕре çӳрерĕç ĕнтĕ, хăйсен «вучахне» хăтлăлантарма укçатенкĕ çапрĕç паллах, аякри колхозсенче ут çипе ĕç çи вăхăчĕ сенче кĕрĕшсе ĕлесе хăйсен картишĕнче ĕне выльăх усрама утă-улăмпа тырă-пулă хатĕрлерĕç. Каврăç Ваçукĕ хăй çырнине çут тĕнчене кăларассишĕн тăккаланса çӳрет кăна-ха. Тепĕр хĕрарăм пулсан, пурăнмастех-ха унпала, юрать, чăтать ун мăшăрĕ. «Сан ятупа палăк лартатăп», – тесе шӳтлекелет тата Ваçук лешĕ ӳпкелешнĕ чух.

Килте виç-тăват кун пурăнсанах почтăна кайса шăнкăравларĕ Ятшыв патне Каврăç: ара, амăшĕ ачине ним шухăшсăрах нумай хушăлăх пăрахса хăварĕ-и, мĕнле чун чăттăр унăн кулянмасăр? Пĕлес килет-çке: епле пурăнать? Автор та хăй кĕнеки шăпишĕн çавăн пек канăçсăрланатех терĕмĕр.

Ĕçлет иккен-ха Ятшыв, кунсерен çич-сакăр страница ĕлкĕртсе Каврăç тара тытнă машинисткăна кая-кая панă. Кăшт-кашт тĕкĕнкеленипех ирттерсен мĕн тери аван пулмалла та! Кунне утмăлшар страница тăватăп малашне тенĕччĕ те, апла мар иккен. Хакне илнĕ шутне тарне кăларас тет пуль – начарлансан та ĕçлени курăнтăр!

– Хăв мĕнле пурăнан? – кăсăкланать Ятшыв.

– Аванах. Ĕнер кăмпана кайса килтĕм.

– Мĕн кăмпи тухнă?

– Кăрăç пур, юман кăрăçĕ. Сарри.

Тепĕр ик кунран чăтаймарĕ – йăрккарĕ хулана Ваçук. Кантурта машинистка патне кĕчĕ чи малтан. Виç кун каялла улт страница килсе панă-мĕн те унтанпа курăнман-ха литобработчик кунта.

– Шăнкăравла, – сĕнет Каврăçа Серте Севечĕ.

Трубкăна час мар, вăрахран тытрĕ Ятшыв.

– Чирлерĕм. Вăрмана кайса килнĕренпе, – хуравлать ку вырăн çинчен тин тăнă пек саспа.

– Эп вăшт-вашт анчах кайса килетĕп ăна, кăмпана, – тет Ваçук.

– Çырмара сив шыв ĕçрĕм, çав юрамарĕ пулас, – ăнлантарать хула çынни.

– Кунта аякка, çĕр выртмалла çитмелле-çке кăмпа татмашкăн, – сăмах хушать пӳлĕмре Шехви Венкки.

Ваçук трубкăна хурсан ял ачине:

– Аванс илчĕ-ха вăл, – тет Серте Севечĕ Ятшыв пирки. – Мухмăр пуснă ăна.

Гонорар илсен, янкăр тăрă çанталăка ăмăрлантарасси, шăм-шака çĕмĕресси, пĕр хушă ĕçе-хĕле манасси йăла-йĕркене кĕнĕ-ха çав ĕмĕр тăршшĕпе литература хирĕнче ĕçлекенсен, ят-шыврлисен.

– Эс килне кай, – сĕнет Серте Севечĕ. – Пĕччен ан кĕр тата.

Ăнах чухлĕ-ха Ваçук та: кĕсьере тулли кĕленче – «иккĕн» текенни – пулсан савăнать писатель таврашĕ вăл.

Вăй илнĕ, чиперех калаçакан пулнă Каврăç çитнĕ тĕле Ятшыв, йĕркеллĕ тумланнă. Миçемĕш страница таран йĕрмеленине кăратрать автора иккĕшĕ сĕтел хушшине ларсан.

– Ак ку отход, – кăтартать пачах пăрса хăварнă страницăсене.

Тухатех пуль çав «отхочĕ» те тимлесе ĕçлесен; тăлăпран кĕрĕк кăларма çăмăлрах, аçамран та сăхман тума пулать, енчен чипер тумах май килтерейсен. Материала касса пăсма та пулать-ха ăна. Тăхăр çанă çĕленĕ çĕвĕç çинчен ахальтен мар юмах кăларман пуль чăваш халăхĕ.

Хăй куллен çырса пыракан тертаде уçса вулать Ятшыв – «кун кĕнеки» тет ăна вăл. Ĕлĕкренпех пĕр кун сиктермесĕр çырса пырать имĕш.

Ак ку кунхине вун икĕ страница тунă. Тепринче – çиччĕ. Унтан тăваттă çеç. Отход кăларнă пулас ун чухне.

– Авторĕ кăмпара çӳрет, – вуласа парать юлашкичен пĕркун телефонпа калаçнă хыççăн паллă тунине.

Ха, литобработчик хĕрсе кайса ĕçлет-мĕн, çав хушăра авторĕ кăмпара ыр курса çӳрет! Хăй чăнласах тар кăларнине ĕнентермелли мелсем хатĕрлесе пырать иккен этемми. Мĕн калăн ĕнтĕ – аллине çын кĕсйине чикнĕскер пит асăрханулла иккен; тава кĕрес-тăвас пулсан, хăй мĕн çырса пынине кăтартĕ – тӳрре тухĕ. Каврăç Ваçукь куна сисет-ха, анчах ун пек «ĕнентерӳлĕх» ăна ним тума та кирлĕ мар: унăн кĕнеки сыхланса юлтăрччĕ çеç!

Учителĕн вăрăм отпускĕ те тухса кайрĕ, Ятшыв пĕр уйăхра мар, икĕ уйăхра та вĕçлеймерĕ тăрмаласа тухассине. Шкулта вĕренӳ çулĕ пуçланман пулин те, пĕр кун сиктермесĕр ĕçе çӳремелле. Тин лартакан интернат çуртне хута яма палăртнă та, учительсем унта тăрмашаççĕ – ир пуçласа каçчен. Интернатĕнче икĕ класс вĕренмелле тумалла: иккĕмĕш смена ан пултăр ачасемшĕн. Ак халь тăватшарăн выртса тăмалли пӳлĕмсене – штукатурăланă, шуратнă, сăрланăскерсене – стена çĕмĕрсе аслăлатаççĕ. Каврăç Ваçукĕпе ытти арçын учительсем – унта; хĕрарăмсем кантăка хытса ларнă раствортан тасатаççĕ, çăваççĕ. Хĕрӳ ĕç пырать.

Вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн аран тепре кайса килме пултарчĕ Ваçук хулана. Ĕçе вĕçлесе пĕтернĕ иккен Ятшыв. Юлашки страницăсен иккĕмĕш экземплярне автора парать.

– Вуласа тух, – сĕнет ăна вăл.

Киле çитсен ирсерен ĕçе кайиччен темиçешер страница вуласа пырать Ваçук. Айтурах, айтурах! Варри тĕлĕнче сюжет авăнса ларнăччĕ, «мачча кашти» татăлсах каять капла тесе уншăн чуна хытах ыраттарнăччĕ авторĕ. Серте Севечĕ хăй кăранташпа çырнисене хуратса ĕлкĕрейменччĕ – çав вырăнсем ĕнтĕ; ĕненсе, редактор юри тапăнас тесе паллă тунисене чăн-чăнласа шута хурса аркатса пĕтернĕ литобработчик. Вăхăт виçи те çухалнă: герой халь çирĕм виççĕре мар, хĕрĕхре пулса тухмалла. Анчах çынни çамрăках-çке! Çул мала кайни улăштармасть-им ăна? Мĕн тăвăн ĕнтĕ – вăрă-хурахăн алли, асав шăллă литобработчик алли! Эсĕ ăна ачан хреснашшĕ

тесе шутларăн. Кăлăхах пулчĕ иккен. Юрĕ, картне лартмашкăн темиçе йĕркене улăштарсан май килĕ. Халĕ договор пур – хăрамалла мар: унта шурă хут çине хурапа автор корректура вăхăтĕнче çирĕм процент чухлĕ улшăну кĕртме пултарать тесе çырнă. Кунта, пĕтĕм кĕнекипе виçсен, кăштах картинче тытса хăвармашкăн самай нумай виçĕ-тăватă процент чухлĕ улăштарĕ Каврăç Ваçукь; ыттине çырлахĕ ĕнтĕ мĕн пуррипе.

Вуласа тухрăм тесе çыру та ячĕ автор Ятшыв патне, анчах хăй шухăшне палăртмарĕ: мĕншĕн кӳрентерес тата ăна? Автор тӳрлетме пултараймасть-им корректура вуланă чухне?! Пурĕ те виç-тăватă процент чухлĕ çеç улăштарĕ вулакансем умĕнче кĕретех намăс курас марришĕн. Договорта, ав, çирĕм процент таранах тĕкĕнме ирĕк пур тенĕ.

* * *

«Ни ача-пăча çук сан, ни çемье çук, спорт пур та кĕнеке, е хут тытса ларатăн тепре», – çапла тĕрĕсех хăтăрать арăмĕ Ваçука. Чи асли – хĕр ача – университетăн иккĕмĕш курсне çитрĕ: курса юлнă-и ăна вăл епле ӳснине? Ывăлĕ, асли, халь вуннăмĕшĕнче вĕренет. Ăна асăрханă-и тата? Ăмăртусене хутшăнтарнă – хăй салана куçсан çиччĕмĕш класс ачине тӳрех шкул командишĕн ăмăрттарнă. Кун ывăлĕ тăваттăмĕш вырăн йышăннă чух Курнила командинчи тăххăрмĕш класс ачи çиччĕмĕшĕсемпе старта тухнă – тĕрĕслĕхе çиеле кăларса, ывăлне грамота партарайман ашшĕ, командăна ертсе пыраканĕ. Тепĕр çулне кун ывăлĕ иккĕмĕш вырăн йышăннă чух Курнила командинче вуннăмĕш класс ачи ăмăртнă саккăрмĕшсемпе пĕрле; чăнлăха палăртса, ывлăне чемпион ятне те партарайман ашшĕ – физкультура учителĕ; чĕрине ыраттарнă та команда ӳсĕмĕпе çырлахнă. Халь ак ывăлĕ – вуннăмĕшĕнче; çамрăксем хăйсен йышĕнче асли пулма суйланă ăна.

Хулара республика хаçачĕ парнине илессишĕн пулакан эстафета ăмăртăвне хăй вăтам шкулта ĕçлеме тытăннăранпах ертсе каять ачасене Каврăç Ваçукь. Чи пĕрремĕш хутĕнче пиллĕкмĕш вырăна тухаççĕ утмăл ытла команда хушшинче. Финиша Курнила ачипе пĕрле вирхĕннĕ юлашки тапхăрти ача, лешĕн командинчи, учителĕ вĕрентине пула-ши, ирттермесĕр çула пӳлерех пынă – ӳкет Ваçук командинчи çамрăк. Ун чухнех

– тӳрех – виççĕмĕш пулма пултарнă. Тепĕр çулне виççĕмĕш вырăн йышăнаççĕ, анчах пĕрремĕшне тухма та май килнĕ – патака панă çĕрте тĕркĕшнине пула кусен чупас çулĕ вăрăмланчĕ – чĕп сăмси чухлĕ юлчĕç çаксем.

– Кăçал мала тухмалла, атте, – тет ывăлĕ ашшĕне. – Ачасем пит ĕмĕтленеççĕ.

Иртнĕ çул вуннăран улттăшĕ тăххăрмĕшпе саккăрмĕш класс ачисем ăмăртрĕç те, халь çавсем пурте аслăрах классенче. Ваçукăн ывăлĕ те кăпăр-капăр хăратмалли çерçи мар, самаях опыт пухнă ĕнтĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçланиччченех, августра, хатĕрленме тытăнчĕç кăçал. Сала ачисене каççерен стадиона пухаканни – учителĕн ывăлĕ. Футболла та выляççĕ, ятарласа чупмашкăн та хăнăхаççĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçлансан, çирĕп план турĕ ăмăртăва хатĕрленме Василь Васильч. Хăш кун мĕн ĕçлемеллине – мĕнле инçĕше епле майлăн чупса хăнăхмаллине коридорах курăнмалла пысăккăн çырса çапрĕ. Ак суйласа илмешкĕн ик-виç команда чухлĕ йыш кунсерен уроксем хыççăн стадиона тухать. Вырĕнĕ чаплах мар-ха, çапах тăват çĕр метр çавракăшлă чупмалли çул пур, курăклă пулин те, тикĕсленĕ ăна, тасатнă – вирхĕн кăна. Тепĕр икĕ учителĕшĕн пулсан... Виççĕн вĕрентеççĕ физкультурăна шкулĕнче. Василь Васильчăн тăван чĕлхесĕр пуçне вун икĕ сехет ачасен вăй-халне тĕреклетмелли урок, историкăн ку – вун тăваттă, хула ачин – çирĕм тăваттă. Апла пулин те, тĕпре çавăн пулмалла çинчех, хайскер урок пĕтнĕ-пĕтмен «Атăл» машини çине ларать те вĕçтерет хăй çулĕпе – ăна ним тума та кирлĕ мар спорт, вăл укçа çапать, çитет ăна унпа. Физкультура вĕрентекен историкĕ... У-у, куна спорт кирлĕ вара, яш чух хăй те ăмăртусене хутшăннă та, малти вырăн çав тери илĕртет ăна, анчах вăй хумасть, хатĕрлемест ачасене; уроксенче мечĕк ывăтса парать те – ĕçĕ те пĕтнĕ. Ăмăртура мала тухсан хайхи савăнать, «ман ача, манăн» тет хăй вĕрентекен класĕнчи пулсассăн. Анчах мĕн чухлех тимленĕ-ши? Халь каллех пĕччен хатĕрлет командăна Василь Васильч.

Ăмăрту кунне сентябрь вĕçне куçарнă май, шкул ку тапхăрта çĕр улми, кăшман уйĕсенче вăй хучĕ пулин те, уйăх хушшинче вăя туптама май пулчех. Темиçе хутчен тĕрĕслесе

пăхнă ĕнтĕ – командăна кĕрес ачасем пурте пĕр евĕр, тан; пĕрремĕш номерĕ (чи вăйли) çеç кăшт ирте парать.

– Манăн Женя, манăн Женя, – тет кун пирки хай иккĕмĕш учитель, класĕ унăн аллинче пулнăран. Анчах мечĕк панисĕр пуçне мĕн вĕрентет-ши-ха?

Ачине улттăмĕш класс таран ялти шкулта малтан шăпах Василь Васильч хăнăхтарнă-ха ăмăртмашкăн. Каврăç тĕп шкула куçсан, лешĕн физкультурăна килĕштересси сивĕнмен ĕнтĕ, халĕ тăххăрмĕш-вуннăмĕшĕсенче салара вĕренет те уроксем хыççăн Василь Васильч ушкăнне юлать. Учитель ывăлĕнчен кăшт иртет вăл. Тата тепре те пур-ха кусенчен юлсах кайманни, учитель ывăлĕн тантăшĕ, унпа пĕр парта хушшинчех лараканни.

Ах, спорт-çке вăл. Мĕншĕн ӳкĕнмелли ытлăн-çитлĕнеххши унта? Районти ăмăртура Курнила командине çывăха ямарĕ çак асăннă йыш. Лешĕ кĕçĕн ушкăнпа, каллех аслисене лартса, илме хăтланчĕ – ку хутĕнче капла та май килмерĕ.

– Шкулта миçе ача вĕреннине кура команда йĕркелеттермелле! Пирĕн шкултинчен виçĕ хут нумайрах ача вĕренет тĕп шкулта. Çавна шута илмелле, шайлаштармалла, – сурчăк сирпĕтсе йăсларĕ Корнил Корнилович. Ăна итлекенех пулмарĕ. Василь Васильчшăн манăçа тухрĕ те вăл. Ах, кăшт тем пулсан, ăнăçмасан вара... Ӳкĕнмелли, кулянасси...

Хăй малтан вĕрентнĕ шкултанах кунта тăххăрмĕшне килнĕ пĕр хĕр ачана тухтăр заявка çине алă пусса паман: чĕре картинче шав пур, тĕплĕн тĕрĕслеме лекет тенĕ. Хулари сквер тавра – тăват çĕр вăтăр виçĕ метра – пĕрре чупса çаврăннăшăнах кайса ӳксе вилместчĕ пуль-ха та вăл... Курнила пулсан илсе килетчех ăна. Ваçук апла мар çав – врач хушнинчен иртмест.

Курнили кусене çакăнта хыçа хăваратăп тесе хĕртĕнетха. Каврăç Ваçукь ун çинчен шутламасть те – пысăкраххи илĕртет ăна. Ывăлĕ те ав команда кăçал вăйлă тесе çирĕплетет, ачасем те хавхаланаççĕ. Врач «симĕс çутă» кăтартман çивĕч хĕр ача вырăнне теприне, тăват çĕр метра лешĕнчен тăвата-пилĕк çеккунт начартарах чупса тухаканнине илме лекет. Ыттисем кашниех пĕр пек шайра.

Тата май пулнă, урăхла та май килнĕ çĕнтерме! Енчен леш иккĕмĕш учителĕ: «Манăн Женя, манăн Женя», – тесе

мухтанман, шухăша пăтратман пулсан... Леш виççĕмĕш учителĕ – тĕпри – хушша кĕмен – ку та лайăх: чăрмантармасть.

Хулара хăна çуртĕнче Курнилапа пĕр пӳлĕмех вырнаçрĕ хай иккĕмĕш вĕрентекен. Пĕри теприне чике тăршшĕ лартсассăн та, ĕçме юратакансем час ыталашаççĕ – самай сыпнă Курнилапа çавсем.

– Юлашки тапхăрта ман Женя каять. Юлашки тапхăрта ман Женя пулать! – хăпартланать Василь Васильчăн çум çакки.

Вĕçĕнче вăйлин кĕрешмелле ĕнтĕ, самай хисеплине тăратаççĕ унта. Анчах çĕнтерӳ патне пымашкăн вара... Кунта – хăшне хăш этапа шанас тенĕ чух – пĕтĕмпе виçсе пăхмалла тренерăн. Мĕншĕн шăпах «перелом» тумалли вырăна тăратмалла мар пĕрремĕш номере? Улттăмĕш тапхăрта «перелом» тумалла! Женьăна шăп çав вырăна тăратсан? Леш тепĕр тĕреклĕ ачине вĕçне хăварсан? Енчен юлашки тапхăрне Василь Васильч хăй ывăлне шанса парсан? Комсомол организаци секретарĕ-çке вăл – тивĕçе ăнланĕ, вăйĕ те çук мар-ха хăйĕн. Тен, кун пек ăмăртура Женьăран та иртĕ, ашшĕне хывать пулсан? Ăмăрту мĕн чухлĕ ответлăрах, пысăкрах, ашшĕ çавăн чухлĕ лайăхрах тĕслĕх кăтартнă ялан. Тепĕр учителĕ «манăн Женя» тесе капайман пулсан, вăл кунта ларса та килмен пулсан, Василь Васильч улттăмĕш тапхăрта ăна кăларатчĕ – çĕнтерӳ патне çул хывма, тарасана хăйсен енне вирлĕн тайăнтарма. Анчах хирĕçес темерĕ пĕрле ĕçлекенпе, урлă иличчен килĕшӳ пулни лайăхрах тесе шутларĕ Василь Васильч.

Çивĕч хĕр ача, стартран хыт тапранса каяканни, килте çĕр улми кăларнă çĕртен лартса тухнăскер, хăть пер-кас – малтан кайма килĕшмерĕ. Чи начаррине – хай врач кĕртменнин вырăнне илсе килнине тăратма лекрĕ кунта. Тăваттăмĕш çитрĕ вăл. Нумай юлман, çапах та малта мар. Киле хăварни пĕрремĕшĕпе тан е маларах та çитетчĕ. Виççĕмĕш тапхăрта иккĕмĕш позицие куçрĕç Василь Васильч ачисем. Улттăмĕшĕнче кĕлеткерен кĕретех тĕреклĕ, сулмаклă утăмлă яш чи ума тухрĕ çеç мар, хыçрине çителкĕлĕ чухлех пăрахса хăварчĕ. Ĕнтĕ черетре тăракансем – ыттисем – кăшкăрса хавхалантараççĕ халь пушшех пĕр-пĕрне, чĕтремех ернĕ темелле пит пăлханнипе, хумханнипе. Кусен команди

– лидер! Иккĕмĕш пыраканнинчен тарса-тарсах каяççĕ çаксем. Каврăç Васук ывăлĕ хушша татах ÿстерет, хĕрсем те çирĕп. Юлашки тапхăр. Женя! Çĕнтерÿ, кубок алăра тесе шутла: кусен юлашки ачи, Женя, патака илсе ăнтăлнă чухне тин институт кукринчен тухатчĕ хыçра пыраканĕ. Вĕсем Çĕнĕ хулари спорт шкулĕнчен, темиçе шкултан пуçтарнăскерсем. Ăçтан пĕлсе çитĕн кунта пурне те?

Женя... Пур çын психологийĕ те пĕр пек мар иккен, тепри йывăрлăхра хăйне чăтăмлăрах та тытать; иккĕмĕш кирек хăçан та пĕр пекех палăрать. Женя... Хăй малта пынине туйса, юлташĕсем пит хыттăн кăшкăрнине пула, ун çинче пĕтĕм шанăç иккенне пĕлнипе... мĕнле каламалла, тĕшĕрĕлсе анать. Ураран ура иртми пулать унăн хăранипе, яваплăха туйнипе; сисет хăйех – ура çыхланнă. Хыçра – вăйлă ача, РСФСРти шкул ачисем хушшинче тăват çĕр метртра çĕнтернĕскер. Финиш умĕн «хыпса çăтать» Василь Васильч командине çав! Эх! Мĕн чухлĕ «эх», мĕн чухлĕ «ах»!

– Алă памастăп. Юлашки тапхăра мĕншĕн леш улттăмĕш кайнине тăратмарăн? – тет иртнĕ çул çĕнтернĕ команда ертÿçи Василь Васильча халь. – Кăçал эп илейместĕм. Çитес çул пулать манăн. Халь сан илмеллеччĕ.

Кÿршĕ районти учитель ял команди майлах. Анчах мĕн тăвăн ĕнтĕ.

– Мĕншĕн эс юлашки этапра леш план пек ыткăнаканнине ăмăрттармарăн? – ÿпкелет каллех тепри, Каврăç Васукне ыр сунаканĕ.

Виçĕ кăлтăкран пĕрне тикĕсленĕ пулсан та май килетчĕ, кубок алла лекетчĕ. Киле юлнă хĕр ачана илсе килмеллеччех – ÿксе вилместчĕ, тăват-пилĕк çеккунт чухлĕ ума тухатчех тÿрех; Женьăна саккăрмĕш, хăй ывăлне вуннăмĕш янă пулсан та – урăхла пулатчĕ. Саккăрмĕш этапĕнче Женя ăнăçлăрах тухатчĕ, юлашкинче чухнехилле ури тăлланмастчĕ.

Çапла-çке вăл: çын кăмăлне кура хăв кăмăлсăр юлатăн. Çум çакки чăрмантарчĕ Васука. Хăçанччен ÿкĕнсе пурăнĕши кун пирки Василь Васильевич?

Курнила команди – саккăрмĕшĕнче. Ку та ăмсанмалли вырăн-ха, анчах чăн-чăн лидешăн мар.

Хăй çырнă кĕнекине çĕмĕрттерчĕ Васук – ним те тăваймарĕ; аркаттарчĕ; çын аллинчи турат çинчи пан улми мар-

çке, авса илсе татаймăн. Корректура вуланă чухне те пулин юсама пулĕ-ха ăна кăштах. Ăмăртура пулса иртнине вара... Вăл нимле тӳрлетме май çукла çырăнса юлать. Телейĕ кунта – турат çинчи кайăк.

* * *

– Сан ывăл, çиччĕмĕш класри, пăркаланса çеç ларчĕ урокра, – янраттарчĕ учительскинче географи учителĕ, Василь Васильч еннелле тинкерсе.

Аслисем шкулта пуррипе çуккине, чăнах та, сисмен ашшĕ: те чĕрех, те вĕренеççĕ? «Тăваттă» паллă та сайра илнĕ те лешсем, никам та кил пуçне ывăл-хĕр пуррине аса илтермен. Кĕçĕнни ӳсет иккен Каврăç Ваçукĕн ав: урокра ларма пĕлмен имĕш çавă; ашшĕ шкулта та, ячĕ тӳрех лекет. Çапах, тӳррипе илсен, те пур ачисем унăн хăйĕн. Уроксем тунă-и, туман-и – килте тĕрĕслемен нихçан. Аслисен вĕренӳн тĕп палли «пиллĕк» пулнă та, çавăнпа кăсăкланман-ши? Кĕçĕннин ав «виççĕсем» те курăнкалаççĕ. Ваçук хăй вĕреннĕ чух шкулта вăрт-вартрах та пулнă-и тен, çапах та учительсене «ларма пĕлместĕн» тесе калаттарман. Астумасть ун пеккине.

– Пуçтарăн тренировкăна, – чи малтан кĕçĕн ывăлне чĕнет халь килте ашшĕ.

Каçхине чăваш чĕлхипе вĕрентмелли урока тĕплĕн хатĕрленнĕ хыççăн çыру сĕтелĕ – литература лаççи – уçăлать Ваçукăн; кĕçĕн ывăлĕ кĕçех хăнăхтару çырнине пырса тĕрĕслеттерет. Чухлать пек-ха ачи. Каврăç кунта куçнă чух тăваттăмĕшĕнчеччĕ кĕçĕн ывăл, темшĕн физкультура та пулин вĕрентме йышăнмарĕ çав класа Василь Васильч, тепĕр учительне урăх класс памаллаччĕ те çав класа илмеллеччĕ хăйĕн. Ăмăртусене ертсе çӳрекелерĕ-ха та, ютшăнчĕç çапах физкультурăран лешсем класĕпех, теприн аллинче пулнăскерсем. Эх çав...

Хĕр ачи, ывăлĕсен аппăшĕ, вырсарни кунсенче килкелесе кайкалать: зачет пани çинчен сăмахлать ку. Хулари ăмăртăва курма пынăскер, шăллĕсем мала тухайманшăн самай ӳкĕннĕччĕ вăл та, анчах халь иртсе кайнă пулас пăшăрханни – асăнмасть ун çинчен. Кĕнеке кăларса савăнтарĕ-ши тепре ашшĕ çаксене?

* * *

Ыррине ĕмĕтленет этем. Ăна картмаççĕ, куçăнах мăшкăллаççĕ, хытах кӳрентереççĕ пулин те, вăл хăйне çын вырăннех шутласшăн-ха. Тăшманпа тăшман пул, туспа тус пул тенĕ ĕлĕкренех; чун-чĕрине çавă та кĕрсе ларнă унăнне; эппин, хăйне ура хураканран аякран пăрăнса иртме тăрăшĕ; чеепе чеех пулмалла, ăслă çынпа ăслăн калаçни лайăх. Одиссея епле улталаса çăлăнса тухнă-ха Циклоп шăтăкĕнчен? Çавăн пекех кирек камăн та ултавçăран хур курмасăр иртмешкĕн тĕшмĕртмелле. Тинĕс çул çӳревçисем тĕл пулнă Циклоп евĕр пĕр куçлă мар-ха çав Каврăç Ваçукĕн тăшманĕсем, ик куçлах, ыр ятлăскерсемех, чĕлхепе чип-чипер сăмахлакансемех. Пĕр ӳкерчĕклĕ герб çапнă паспорт пур пурин те, вĕренессе те çав гербла шкулта пĕр тапхăрта вĕреннĕ; тата хĕрлĕ хуплашкаллă кĕнеке – коммунист пулнине ĕнентерекеннине – чиксе çӳреççĕ кăкăр умĕнче. Политика енчен пĕр йышрах тăраççĕ эппин, анчах чун-чĕрисем пĕр полюсрах-ши Ваçукпала циклопсен, ят-шывлисен? Лешсен власть пысăк, Ваçукăн ку тĕлĕшпе, кĕнеке кăларас çĕрте, нимĕнле витĕм те çук-ха çав, çап-çара уйри çын евĕрлех вăл. Юрать-ха, договор турĕç, çав хута шанать çын. Аслатиллĕ çумăр айне уй варринче лексен, шăнса пăсăласран сунчăкпа картланнă евĕр хӳтĕленме пултарĕ ĕнтĕ Ваçук унпала. Аванс шутне укçа ярса панă ав – арăмĕ мăкăртатнине канăçтармалăх пултăр. Усал шут тытмасть-ха ял учителĕ, анчах пĕлсех тăрать: кĕнекене наборланă хыççăн тӳрлетмеллех, унсăрăн картне лармасть япали. Çырнине кура, договор çирĕм процент чухлĕ улшăну тума ирĕк парать пулсан автора, Ваçук висçтăват процент чухлĕ тӳрлеттернипе те çырлахĕ. Чăннине палăртас пулсан, кĕнекене унăн тепре çĕнĕрен кăлармалла – хăй çырнă пек; хăçан та пулин.

Çитрĕ çав вăхăт – корректура вуласси. Автор чунне ку самант епле çĕклентерсе янине кĕнеке кăларса курман çын пĕлеймĕ. Ача амăшĕ çăмăлланас вăхăт çывхарнине кĕретĕн туйнă самантпа танлаштарма пулать-ши ăна? Кăштах е самаях хумханатăн, хĕпĕртетĕн чунтан: сан япалу çут тĕнчене килет-çке! Мĕнле пулĕ-ши унăн ĕмĕрĕ? Епле кĕтсе илĕç ăна пĕлĕш-хурăнташĕсем, çывăх çыннисем, ял-йыш? Ачана мĕн тейĕç? Амăшне? Кĕнеке авторĕ шăп çавăн шутĕнче.

Пӗрремӗш çуратас чух амăшӗ ытларах пăлханать, каярахрисен вăхăтӗнче кăшт лăпкăрах пулать. Çав-çавах кăмăлӗ унăн кашнинчех, чипер пурăннă чухнехипе танлаштарсан, пач урăхла. Ача кӗтет вăл. Произведени авторӗ те çавнашкалах кӗнеке кӗтет. Пӗрремӗш мар-ха, иккӗмӗш пулать ку Каврăç Васукӗн. Малтанхипе кăмăллă вăл. Кунпала вара, иккӗмӗшӗпе?

Телефонпа шăнкăравласа пӗлтерчӗç ăна хулана корректура вулама пымалла тесе. Пӳлӗмре хăй пулман-ха, учительсем каларӗç. Хура кӗрти кӗске кунра уроксем пӗтнӗ-пӗтмен автобуспа тухса вăшкăртрӗ Васук. Серте Севечӗ те, Шехви Венкки те пулмарӗç кӗнӗ çуртра, тепӗр юлташ сӗтелӗ çине хăварнă кусем авторне памалли оттисксене. У-у, самаях хулăм иккен. Малтанлăха уйрăмшар страницăсене пӗр енне çеç çапнă-ха та, çавах кӗрнеклӗ кӗнекех пулассăн туйăнать.

– Тӗплӗн вулама тăрăш, йăнăшсем кайнă-и, кайман-и – асăрха, – калать пӳлӗмри юлташ автора.

– Вулатăп ӗнтӗ. Тӳрлетмеллисем те пур-ха унта, – чунӗнче мӗн пуррине пытармасть Васук.

Хăна çуртӗнчех малтанхи вун тăватă страницăна вичкӗн куçпа тинкерсе тухрӗ Васук. Ку касăкра хăйӗнчен пӗр сăмах çеç улăштарчӗ – кирлӗ! Вулакана тыткăнласа илтерме çав пӗр сăмах епле пулни те нумай пӗлтерӗшлӗ.

Ирпе ирех автобуса ларчӗ те киле çул тытрӗ çын.

Физкультура урокӗ умӗн тăхтав вăхăтӗнче ачасене кăтартмасăр чăтаймасть Василий Васильевич хай пӗр тӗрке хута – пулас кӗнекен листисене. Килте пурте çывăрса кайиччен ларать сӗтел хушшинче, анчах чыхăнса каясла васкавлăн вуламасть-ха: йăнăш наборлани асăрханмасăр ан юлтăр!

Вӗçнелле вара... У-у, вӗçнелле... Ал çыру тăрăх пулсан, хăвăртрах та тӳрлетӗччӗ авторӗ, унта «вӗрен тăршшӗне» виçсе тăрас çук. Кунта вара, пӗр йӗркене тӳрлетсен, тепри ан хускалтăр тесе, калăпăшне кура шăп та шай виçеллӗ сăмах, çав йӗркене шăнăçакан пуплевсем тупма тăрăшать те – ай-ай тертленсе, сăмах шыраса ларать çын. Поэт ритмрифмăпа минрешсе кун чухлӗ вăхăт çухатмасть пуль.

Пӗр абзаца тӗкӗнсен, теприне çӗмӗрмелле мар тăвать автор – наборлани тем чухлех сая ан кайтăр. Малтан хут

çине çырать те, якатса шайлаштарсан, оттиск çине машинкăпа çапать. Эрне çывхарать халь çапла тертленнĕ май хулана кайса килнĕренпе. Чăтаймасăр шăнкăравланă лерен. Икĕ йĕркене, шăнăçтарса çитерейменнине, автобуспа пынă чух, кантура çитерхпе, шухăшласа тупать автор.

Çуртра пӳлĕме кĕчĕ те Серте Севечĕпе Шехви Венккине сывлăх суннă хыççăн тӳрех, çири пальтова хывмасăрах, Шехви: «Сана хуплу пек хулăм кĕнеке кăларса патăмăр, писателе тухрăн», – тенине хăлха çуммипе ирттерсех пушă сĕтел хушшине вырнаçрĕ вăл, оттисксене кăларса, хай тӳрлетĕве çыра пуçларĕ.

– Эс унашкал улăштарассипе вăхăта тăсрăн-им вара? – куçне чармаклать Серте Севечĕ, пӳлĕм варринче тăраканскер, нăк пӳллĕскер, ухват уралласкер.

– Виçеллĕ сăмах тупайманччĕ ик тĕлте. Халь тупса çитертĕм, – тет Ваçук çырнă май лăпкăнах.

Серте Севечĕ тĕркерен малтанхи листине тытса пăхать.

– Эс подвох тăвасшăн-и?! – çухăрса ячĕ вăл такам тытса хĕненĕ чухнехилле. – Подвох! Подвох!

Çырнă çав унта, пĕрремĕш листи çине, автор алă пусас умĕн. Машинкăпах çапнă: автор ирĕкне пăхмасăр тивĕççĕр пăсса пĕтернĕ вырăнсене тӳрлетнĕ хыççăн кĕнекене кăларма килĕшетĕп тенĕ. Серте Севечĕ сив чир тытнă чухнехилле кăшкăрать:

– Подвох тăвасшăн! Подвох!

– Литобработка тутарнăшăн çапла хăтлантăн-и?! – сиксе ӳкет Каврăç Ваçукь çине Шехви Венкки те. – Укçа сахал патăмăр-и сана?

– Эп укçашăн çырман! – тарăхса кайрĕ ĕнтĕ Ваçук та. Унăн сасси те халь самай янăравлă.

– Тата мĕншĕн çыртăн?! Мĕншĕн темиçе çул çӳрерĕн кунта? – янрашать Серте Севечĕ.

– Эп ăна халăх валли çырнă. Пите хĕретмелле ан пултăр тетĕп хам япалашăн.

– Кама кирлĕ эс капăрлатни?! Кам ăнланать питех?! Вулакана Турă тесе ан шутла – мĕнле калан, çавна ĕненет вăл! – Серте Севечех урса кайрĕ çакăнта.

– Ачи лайăхскер, литобработка тутаратпăр терĕмĕр санне. Çавăнпа плана кĕртрĕмĕр. Унсăрăн пăрса хăвараттăмăр

çеç. Ав, шкап туллиех унта! – Шехви Венкки тăн кĕртет, кур, Каврăç Ваçукне.

Итлемелле санăн, ял çыннин, итлемелле.

– Авторсем пирĕн пата чĕркуçленсе кĕреççĕ, пуç çапаççĕ. Çапах та пур чух та кĕнеке кăлараймаççĕ. Ав çӳлĕк авăнса ларнă ал çырăвĕсемпе, – тĕллесех кăтартать Шехви.

– Пăхсах тăрать пуль эс мĕнле çырнине вулакан? Ăна кăшт-кашт содержани пулсан та пырать, – лăпланмасть Серте Севечĕ. Вĕче сарăлнă нăк хĕрарăм хут тĕркемне уçа-уçа пăхать. Вĕçнелли вырăнта страници-страниципе – наборланинчен пĕрер-икшер абзац – улшăнусем тунине курать те пĕççине шарт çапать.

– Мĕн тумалла капла?!

Хирĕçри пӳлĕмрен-и, ватă хĕрарăм – корректор-ши е калăп виçине шутлаканни – çитрĕ.

– Тепре верстка тума лекет ку тĕлсене, – палăртрĕ çакă, тӳрлетӳсене курнă май.

– Якуне ыран ирпе пулать. Унпа калаçмалла. Автор шучĕпе тӳрлетме ыйтатăп тесе хут çырса памалла, – ăса кĕртет Серте Ваçука.

Тавлашнă самантра Шехви Венкки Ятшыв патне шăнкăравларĕ иккен.

– Литобработчик килет. Кĕт, – тет Серте Ваçука, ку тухса кайма та шутламан çинчех.

– Килет ĕнтĕ вăл – пăсрĕ те япалана.

– Каламаллаччĕ санăн ăна ан пăс тесе малтанах!

– Хăй суккăр-им вăл?

– Характерна кунччетех кăтартмаллаччĕ сан пире. Ал çырăвна, ав, çӳп шăтăкне переттĕмĕр.

Ятшыв çитрĕ. Сăнĕ-пуçĕ улшăнса кайнă кунăн та. Кĕрхи-çурхи пальтоне тӳмелемен, шарфне йӳле янă.

– Арăм калать: ачи лайăхскер ку теттĕнччĕ-çке эс тет. Пăшăрханса юлчĕ эп пуçтарăнса тухнă чух.

– Тӳрлетмеллисем пур, – ним тавлашмасăрах каларĕ автор.

Ĕç вăхăчĕ иртсе кайнă май Серте Севечĕпе Шехвинов тытăнса тăрас темерĕç, Ятшыв та нимех çăвар уçмасть. Серте Севечĕ ăна автор вуланă оттисксене пачĕ ĕнтĕ: «Пăхса тухăр».

Пӳлӗмре нихӑшӗ те тытӑнса тӑмарӗҫ. Урамра, ҫурт умӗнче, Ятшыв хул хушшине хӗстернӗ хут тӗркине пӗрре авторне тавӑрса парать: «Хуть те мӗн ту», тепре каялла илет: пӑхса тухмалла – мӗнпе килӗшмест автор? Япала парса илсе вылянӑ евӗр тӑраҫҫӗ иккӗн кӗрхи сивлек ҫанталӑкра каҫпалан. Юрать, хулинче электроҫутӑ пур.

– Ресторана апата кӗрӗпӗр, – сӗнет Ваҫук. Ятшыв ал сулать. Виҫҫӗмӗш хут чӗнсен чӑтаймасть, юнашар утать.

Ҫири хулӑм тума хывса малалла иртсен, иккӗшне ларма шӑпах кукӑрта пушӑ сӗтел тупӑнчӗ.

– Килӗшмест ӗнтӗ ку терӗм малтанах, – аран сывлӑш ҫавӑрса тенӗ пек сӑмах хушать Ятшыв. – Ҫырӑвна илтӗм. Мӗн улӑштармаллине пӗлтермеллеччӗ.

– Ал ҫырӑва набора панӑччӗ-ҫке. Производство пайне леҫнӗччӗ.

– Хам ҫитсе ҫӳресе улӑштарттараттӑм.

– Нумай мар ҫӗнетмелли унта: виҫ-тӑват процент чухлӗ ҫеҫ. Договор ҫирӗм процент таран улшӑну кӗртме ирӗк парать автора.

– Халь ӑна пӑхмаҫҫӗ, улӑштармаҫҫӗ пӗр наборласан, – лӑпланса ҫитнӗ май ӑнлантарать Ятшыв. – Ачи эс начар шухӑш тытман пулас-ха.

– Ялти мӗскӗн ӗнтӗ.

– Малалла кӗнекӳсем ҫӑмӑллӑн каяҫҫӗ, – йӑпӑлтатать те иккен Ятшыв килӗштересшӗн.

* * *

Ҫакӑн хыҫҫӑнах, хура кӗр кунӗ иртсе пынӑ майӑн, Октябрь революцийӗн кунӗ ҫитнӗ тӗле шкулта вӗренӳ ҫулӗн пӗрремӗш чӗрӗкӗ вӗҫленчӗ те, ачасене кӗске хушӑлӑх каникула ячӗҫ. Канас чух ҫамрӑк спортсменсен йышне чупассипе вӑй виҫтерсе пӑхмашкӑн хулана ертсе кайрӗ спорт мастерӗ. Ачасене хӑна ҫуртне вырнаҫтарса йӗрке тусан, кӗнеке кантурне ҫитсе кӗчӗ вӑл. Ӗҫ вӑхӑчӗ иртсе пырать ҫав – кирлӗ ҫынсене тупаймарӗ.

– Якунепе калаҫмала пуль сан. Килне шӑнкӑравлӑн-ши? – терӗ Хурамак ӑна, ку хӑйӗн хуйхине хыпарланӑ хыҫҫӑн. – Ах, пӗлесчӗ сан: пиратсем вӗт кунта хуҫаланаҫҫӗ пирӗн. Эп паян ав... хӑть вырӑнпа вырт. Киле ҫитиччен тӗшӗрӗлсе анӑп тесе тытӑнарах тӑтӑм.

Каврăç Ваçукь чăн-чăнах çын тĕсĕ çукла хавшанă юлташне кулянма епле сăлтав пулнине ăнланасшăн тинкерет.

– Ушкăн канашлăвĕнче пăхса тухрĕç ман пулас кĕнекене набор хыççăн. Пĕр калава – чи пысăккине – шăпах икĕ листа чухлине касса пăрахрĕç.

– Мĕн сăлтавпа апла териех?

– «Национализм» тенине чакаланса туртса кăларчĕç.

– Кӳр-ха япалуна, вулам.

Пӳлĕмре урăх никам та çук май Ваçук лăпкăнах сĕтел хушшине ларчĕ, Хурамак пирус илсе коридора тухрĕ. Учитель ун хайлавне тĕплĕн ăнланма тăрăшса вулать.

– Кунта национализм тени ним чул та çук. Ытах, пĕр абзаца, пĕр-ик çĕрте пĕрер йĕрке кăларса пăрахмалла çеç, – тет вăл лешĕ лăпланса кĕрсен.

– Çапла та... Пур кунта – лараççĕ канашлура.

– Камсем вара?

– Илемлĕ литература мĕнне пач чухлайманнисем, асамлă сăмах тĕнчинчен пач аякра тăракансем пур унта. Пĕрин, аслин, çăварĕнчен мĕн тухать, çавна юрлаççĕ ыттисем. Вĕсемшĕн пулсан, литература çăва патне кайса тăрсан та ним те мар. Хăйсен çемçе пуканне сыхласа хăварса пултăр... Якунепе калаçни те усă парĕ-ши сана?

Хуйхи Ваçукăн çеç мар иккен, кĕрешӳ тени кашни утăмрах.

Якуне патне килне шăнкăравламарĕ Ваçук, Ятшыва та чăрмантармарĕ. Пĕр чĕлхе мĕнле туптăр ĕнтĕ вăл, ял çынни, хальччен кунашкал ултав-суяпа çыхланманскер мул çывăхĕнче тăракан хуçасемпе?

Ăмăртусем хыççăн кая юлса, çĕрле таврăнчĕ Ваçук килне. Пӳрте кĕрсенех, хывăничченех, сĕтел çинче çĕнĕ почта – хăй ячĕпе хулăм çыру выртнине курчĕ вăл. Кĕнеке кантурĕнчен. Ятшыв çырăвĕ. Виçĕ страница чухлĕ машинкăпа çапнă хăйне хӳтĕлесе. Автора «литература чĕлхипе çырма пулăшса ыр тунине» палăртса сăмах купалать çавскер.

Хывăнман Ваçук, çитнĕренпе ăша хĕлхем те яман, сĕтел хушшине хутпа ручка тытса ларать ак вăл тӳрех. Ăçтан тухать–ши çакăнта сăмахĕ?! Кӳтнĕ çав, тулса çитнĕ. Тăкăнать халь мĕн каласси, йĕрленет вăл хут çине. Епле йĕркесене улăштарнине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пырать. Тӳррипе ил-

сен, литобработчик хур чӗппинчен чăх чӗппи тунă, кикак хуркайăка чӗвӗлти ҫерҫи шайне ҫитернӗ... Машинкăпа ҫапрӗ те хăй мӗн ҫырнине пуштă ещӗкне кайса ячӗ Каврăҫ. Каланă унта: тӳрлетмеҫҫӗ пулсан, ан та тухтăр кӗнеке!

* * *

Хӗл. Ҫӗнӗ ҫул ҫывхарать. Райцентрта почта уйрăмӗнчи лапам енчен урам варрипеле йăлт-йăлт чупса пырать Каврăҫ Ваҫукӗ. Алăра унăн пысăк ҫыхă – бандероль. Пӗлет унта мӗн пуррине, пӗлет, ҫавăнпа хăвăртрах уҫса вуламаваскать киле. Пӗр савăнать те вăл, пăшăрханать те. Савăнать – кӗнеки тухнишӗн, пăшăрханать – ҫыннăн чапрас алли вăл ҫырнине муталанишӗн. Ҫапах та хăй япали те, хăвăртрах ҫитсе вуласшăн. Ҫынни кăшт чупнипех йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ: ара, чирлӗ вăл. Ӳт температури самай пысăк. Килте вырăн ҫинчен тăрса тухрӗ посылка хутне илсенех; кӗрӗкпе хăй, ăшă тăхăннă. Ҫил-тăманлă шартлама сивӗре, раштав уйăхӗнче грипп эпидемийӗ килсе лекрӗ ку тăрăха. Каврăҫ Ваҫукь уран ӳкмест-ха кăпăр-капăрах, чăтать вăл, сунас ернине е шăмшак йывăрланнине ура ҫинчех ирттерет, анчах ку хутӗнче усал сывлăш ҫак тăрăхран иртсе каяс чух пит вирлӗн ҫитсе ҫапрӗ хӳрипе Ваҫука; виҫ кун пуҫ ҫурăлса каясла ыратрӗ, халь эмел ӗҫкеленӗ хыҫҫăн кăшт самайланчӗ пек-ха ҫын. Физкультура урокӗ ирттернӗ чух ачасене йӗлтӗрпе ертсе ҫӳренӗ хыҫҫăн тепӗр класа кӗтнӗ самантра тарланăскере сивӗ лекни те пулчӗ-тӗр ҫав, йăмса ҫухалас чир ҫулса илчӗ.

– Салам, Василь Васильч! Анваска, тăхта кăштах, – урам тăваткалӗнче чарать ăна Никодим. – Кил, алă пусса пар.

Унăн кӗнеки иккен.

– Ăҫтан тупрăн? – тӗлӗнет авторӗ. – Ман хамăн, ак, ҫыхăра – уҫман та, курман та.

– Магазина паян кăларчӗҫ. Хамăр библиотекăрсене калам: вулакансен конференцине ирттерӗр тесе. Пыратăн пуль, чӗнсен?

– Хăв епле пурăнан эс, Никодим?

– Ҫӗмӗрттеркелетпӗр. Паян коммунистсен райкомӗн пленумӗ пулчӗ ав. Хушаҫҫӗ, хӗсеҫҫӗ пире. Чăпăрккапа юнаҫҫӗ ытларах сӗт-ҫу, аш-какай парăр тесе.

– Хытах лектерчӗҫ-и колхозăра?

– Сивви те, ăшши те вăрăнать ку тапхăрта. Çулталăк планне, çӳлтен мĕн хушнине, сурăх çăмĕ касассипе çеç кăшт тултараймарăмăр.

– Сирĕн хуçалăх аптрамасть-ха вырьăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе.

– Пилĕк аватпăр ĕнтĕ. Çĕнĕ клуб лартассишĕн тимлетпĕр ку çине. Эс шăнса ан тăр эппин, сыв мар пулсан. Вĕрĕлĕн тата.

Килте аялти кĕпине типпипе улăштарнă хыççăн каллех вырăн çине утиялпа пĕркенсе кĕрсе выртрĕ Каврăç Ваçукь. Аллинче унăн – кĕнеке, хăйĕн кĕнеки. Тăхăр штук ярса панă ăна, договорпа палăртнă чухнехинчен пĕрне литобработчика тыттарнă ĕнтĕ. Кăштахранах вырăн çинчен тăрса кăранташ илчĕ, унпала паллă тăва-тăва вулать автор. Тӳрлетмен. Корректурăра улăштарма ыйтнине пĕр çĕр те те, пĕр сăмаха та шута хуман. Ых! Çилĕ тулать Ваçукăн. Мĕн чухлĕ картне ларман вырăн – ĕçпе ĕç çыхăнманни! Литобработчик пĕрер абзац е страниципех «отхода» янине пула çав тĕлсенчи – умĕнхи е хыççăнхи ĕç-пулăмсем – сывлăшра çакăнса кăна тăраççĕ халь; ним тума та кирлĕ мар мĕн калани те: иллюстраци вырăнне кăна тăрса юлнă чылай сыпăксем. Кĕнекен вуланă чух ку витĕрех курăнать ав. Авторăн пĕр йĕрки те ыт ахальтен асăнни марччĕ, пĕр ĕç тепринпе таччăн çыхăнса тăратчĕ, шухăш малтан пуçăнни çинче никĕсленсе, аталанса, çирĕпленсе пыратчĕ – халĕ шăнăрĕ чылай çĕрте татăлнă.

Вĕçĕнче-и? Вĕçĕнче – литобработчик хăйĕнчен хушса çырнисем чипер апат çинĕ чух пыра хылчăк ларнă евĕр çăвара тăрăнаççĕ – тарăхмалли, çурăлса каймалли нумай кунта.

Тӳсмелле иккен авторăн, тӳсмелле, темле мăшкăла та чăтмалла мухтав çине мухтав юррине юрлакан çак çитмĕлмĕш çулсенчи пурнăçра. Çитес çул Мускавра пухăнмалли Олимп вăййисем тĕлне илсе çитереççĕ литобработчикпа редактор кĕнекери ĕçсене – Вăййи-кĕрлевĕ пулман-ха. Ав, ун умĕн еплерех пуçланчĕ кĕрешӳ тĕнчере! Чылайăшĕ пирĕн çĕр-шыва (ним сăлтавсăрах-шим?) хăйсен атлечĕсене ярасшăн мар. Бойкот!! Олимп юхăмĕнче – хирĕç тăру! Хăшĕ тĕрĕс, хăшне хурласа, хăшне ырламалла хамăра сенкер куçлăх тăхăнтартнă чухне? Шухăшласа пăхмалла кун çинчен. Е пирĕншĕн вун çиччĕмĕш çулхи октябрьтех шухăшласа-ка-

ласа хунă-и? Ĕçне хак пама тытăнсан та ытти наци Олимп комитечĕсем хирĕç тăнине курмăш пулмалла-и? Çурăмпа çавăрăнса тăтăр-и писатель? Е куç пур çинчех курмĕ-и вăл? Çапла, суккăр пулса тухать, мĕншĕн тесен вунă-вун пилĕк çул маларахри ĕçсене тӳррĕмĕн тытса лартса ума куçарнă, ĕçĕ-хĕлĕ çитичченех çав тĕле çитерсе лартнă. Малашлăха курчĕ пулать хут варалакан? Тĕнчере чан сасси, ав, пĕр евĕрлĕ мар. Мĕн ĕç пурччĕ пирĕн тепĕр ирĕклĕ çĕр-шыва – Афганистана – ура пырса пусмашкăн?! Мĕншĕн пĕр чĕптĕм те пулин асăнмарăн куна, литобработчик? Пĕлмен çав. Турă пулаймарăн. Оракул шутĕнче те мар. Çапла-и? Анчах эсĕр хăвăр картăрта – мăн Турă, циклопсем, пиратсем; ыттине çул памастăр пĕр ярса илнĕ те çав вырăна. Чи çӳлтисем, Кремль çăлтăрĕ вырăнне ларнисем, ют çĕр-шыва хĕç-пăшалпа «йĕрке тума» кĕрсе каяççĕ. Сирĕн хунтăлăх çавсенчен килет пуль çав.

Çĕнĕ çула тăван ялне килнĕскер, хулана кайиччен, автобус çине ларас умĕн кӳршĕ ял ачи Володя кĕчĕ юлташĕ патне. Вырăн çинчен аран вăй илтерсе тăрать чирлĕ Васçук.

– Ак кĕнеке. Тухрĕ. Сана – пĕр экземплярĕ. Ал пусса, çырса паратăп, – тав тăвать вăл ал çырăвне чи малтан, ултă çул çурă каялла писательсем пăхса тухнă чух сăмах каланă спортсмена, университет преподавательне. Лешĕ кĕнекене ăмсануллăн çавăркаласа пăхать. Каврăç Васçукь хăйĕн ыратакан чуннех уçать:

– Укçине илччĕр хăть, анчах ма пăсас? Каламаллаччĕ – хушса параттăм, анчах ан пăсчăр. Вăрă-хурахсем ĕнтĕ, вĕсен хăйсен саккунĕ: йĕре пĕтересшĕн – ĕçлемесĕр илменçке; ĕçленĕ, тăрмаланă; эппин, тивĕçлĕн ал тăснă!

Савăннипе пĕрлех тарăхни авторăн. Чăтатчĕ-ха вăл, чăтса ирттеретчĕ пуль çилĕ килнине. СССР тĕп хулинче – Мускавра – Олимп вăййисене ирттерс мар тени шăп çак тапхăрта вăйланса кайрĕ, ун пирки спорт хаçачĕ ним пытармасăрах хыпарлать ав. Тĕнчери спорт юхăмĕ çинчен те калакан авторăн намсăсланмалла пулса тухать халь хăй япали çине пăхсан, пурнăçри ку чухнехи лару-тăрăва пĕлнĕ хыççăн. Кама евитлемелле? Кампа калаçмалла? Васçук коммунистсен партийĕн членĕ-çке, ун кĕнекине çапнă леш çынсем те çав пысăк йышра – хăйсене чи çылăхсăр кăмăл-си-

петлĕ тесе палăртакан ушкăнра тăраççĕ. Ертсе пыраканĕ сем пур вĕсене. Чиркӳри таса атте шутĕнчисем. Хăть мораль тĕлĕшĕнчен хӳтĕлеччĕр автора. Çирĕм виçĕ страница чухлĕ машинкăпа çапса, мĕн пăснă, мĕн тĕрĕс мар пичетленине кăтартса, республикăмăра ертсе пыракансем – чи таса аттесем – патне çырать автор. Кĕнекине те хурать унта, страницисене тĕл-тĕл хура пастăпах паллă туса. Вĕршĕл çырăвне те, Ятшывăн юлашкинчен ăнлантарма пикеннĕ «псаломне» те хăвармасть – ăсатать пĕтĕмпех обкома. Эрнеренех хут татки килчĕ: тĕрĕслеме кĕнекеçĕсен управленине ярса панă кусем! Вăхăчĕпе ответне те илчĕ ак автор: управлени председателĕ отпускра пулнă-ши, ун вырăнне заместителĕ – кĕнеке кантурĕн директорĕ ал пуснă шăпах. Хăех çырнă-и ăна? Кĕтсех тăр пуçлăх хăй çырасса! Серте Севечĕ сăмаххисене тӳрех уйăрса илчĕ Каврăç Ваçукĕ. Кам çинчен çырнă – çавсем пичет пусса официаллă хурав пачĕç ăна! Чыхлан! Вăт сана!

Пурнăç аталансах пырать. Çĕр-шывра пысăк органа депутатсем суйлас тапхăр çывхарать; кандидатсем тăратаççĕ, суйлавçăсемпе тĕл пулаççĕ – политикăлла пысăк кампани чăнласах. Ăна вĕрсе хăпартса янă. Кашни кун хаçат ун çинчен çырать, радио çавăн çинчен калать, телекуравпа çавнах кăтартаççĕ. Ку вăл çулсеренех çапла-ха. Халь вара пушшех мăн уяв шăв-шавĕ. Чи хисепли, чи пĕрремĕш кандидат, хаклăран та хаклă çын – çĕр-шыв пуçлăхĕ – епле тĕрĕс сăмахсем калать пуринче те суйлавçăсемпе тĕл пулнă чух – халăх ыйтăвĕсемпе çырăвĕсене тимлĕн пăхмалла тет. Ваçук ыйтăвне ав кĕнеке кантурĕнче хăйсен парти организацийĕн пухăвĕнче те пулин пăхса тухман-çке, хăть мораль тĕлĕшĕнчен хӳтĕлемен автора, фактсене пăснăшăн никама та ятламан. Çĕр-шыври Мăн турă, ав, ĕç çынни ыйтăвĕсене пур енлĕн тивĕçтересси çинчен халаплать.

Вырăсла çырать халь Ваçук кĕнекере чăтма çукла пăсса пĕтернĕ вырăнсене кăтартса. Цитатăсене те хăй тĕллĕн куçарать – обкома янинчен çурри чухлĕ кĕскетсе, чи кирлине палăртса партин Тĕп Комитетне ярать. Çын-çке вăл, автор, гражданин, Коммунистсен партийĕн членĕ. Ку партие вара халăх ăсĕ, халăх чысĕ, халăх совеçĕ тетпĕр ирлĕн-каçлăн радиопа та телекуравпа, хаçатсемпе журналсенче çырат-

пăр, çуртсем çине таçтан курăнмалла кармаклатпăр çав сăмахсене. Эппин, мĕншĕн ăна кукка вырăнне шутласа евитлемелле мар Ваçукăн? Акă кăштахранах Раççейри кĕнеке управленийĕнчен автора виç сăмахпа хуравларĕç: «Атăлçи кĕнеке кантурĕнчен пире пĕлтернĕ тăрăх автор правине пăсни пулман!»

Ĕнен! Пĕл пурнăç мĕнле аталанса пынине. Ĕнен эс, хут вуласа ӳснĕ, çамрăк ăрăва парта хушшинче вĕрентсе çăкăр татăкĕ тупакан, коммунистсен идеологине чунпа-чĕрепе йышăнса çӳле хуракан этем!

Каврăç Ваçукь аллинче – автор прависене ăнлантаракан икĕ хулăм кĕнеке. Миçе хутчен вуламан-ши унта мĕн кирлине тупса, мĕн тĕрлĕ виçсе пăхмарĕ-ши кашни пулăма?! Канаш ыйтмашкăн хальхинче халăх судйи патне каять автор.

– Чим, тăхта, – терĕ ку Ваçук кăтартнă, литобработчик тытнă соглашени хутне, хуçлатнă вырăна алăпа тикĕслесе, ĕç сĕтелĕ çине хунă-хуманах. – Санăн ку. Сан майлă. Эс выляса илетĕн. Саккуна хирĕçлет кун пек килĕшӳ туни: кантур мĕншĕн хушша кĕнĕ енчен иккĕн татăлаççĕ пулсан? Мĕншĕн ăна, килĕшĕве, спецредактор тытмалли бланк çине çырнă?

– Эпĕ алă пуснă-çке.

– Пултăр. Пустарчĕç тетĕн судра. Куна хăв çырман-и?

– Серте Севечĕн алли. Манăн почерк ун пек мар.

– Калатăн мĕнле пулнине. Суд сан майлă туса парать. Саккуна пăсни куç кĕрет кунта. Эп сана ак мĕн сĕнетĕп: кай хулана, адвокатсемпе калаç. Статьясемпе паллаштараççĕ сана вĕсем. Саккунсене тĕплĕнрех ăнлантараççĕ. Анчах малтан кĕнеке кантурне кĕрсе евитле. Тен, хăйсем тӳрлетме килĕшĕç.

Хальхинче ялти шкул ачисен çурхи каникулĕ вăхăтĕнче çитрĕ тăван халăхăмăрăн тĕп хулине Ваçук. Ку таранччен пĕлмен-илтмен çурта ытлашши нумай вăхăт çухатмасăрах шырса тупрĕ вăл. Граждансене правасем тĕлĕшпе йышăнаканни çак кун хĕрарăм иккен. Каврăç Ваçукь ăна хăйĕн хуйхипе паллаштарать, кодекс статйисене асăнать.

– Эс хăв пĕтĕмпех пĕлетĕн-иç. Хăш статья мĕн каланине шыраса тупнă, – тет хура сăн-питлĕ хӳхĕм хĕрарăм ыр кăмăлпах. – Сана консультаци кирлĕ мар.

– Тĕплĕнрех виçсе пăхасшăн-ха эп.

– Кĕнеке кăларассипе çыхăннă ĕç пирĕн практикăра сайра тĕл пулакан япала, – калаçать адвокат уççăнах. – Эп хам пĕр ĕç пăхса тухрăм ун пеккине, суд председателĕ пулса. Выляса илчĕ автор.

Çыннин ятне те асăнать хĕрарăм юрист. Ун çинчен илтнĕччĕ-ха пĕр виç çул каялла Каврăç. Икĕ хут гонорар илчĕ тетчĕç: пĕрре кĕнеки тухиччен (пăрахăçланăшăн), тепре пичетленсессĕн (малтанхин палăртнă вăхăчĕ иртнĕ май).

– Ак мĕн сĕнетĕп эп сана, – ăс парать хĕрарăм малалла. – Автор прависене тĕпчесе статьясем çыракан судья пур пирĕн. Кай çавăн патне. Вăт, вăл тĕплĕнрех ăнлантарма пултарать. Анчах эс ан шарла ун патне кам çул кăтартса янине.

Адрес пулсан шыракан çын тупать хулари кантура. Çурчĕ тĕлĕнчен пĕрре мар иртсе çӳренĕ-мĕн. Кунти судья, вăтам çулсенчи яштак пӳллĕ сарă сăн-питлĕ арçын, соглашени хутне каллех ялти пĕлĕш евĕрлех тĕплĕн тишкерсе пăхрĕ те:

– Санăн ку. Суд сан майлă туса парать. Литобработчика тӳленĕ шута автора тӳлемелле туса парать, – терĕ.

– Якунерен шырамалла-и? Вăл алă пуснă-çке кунта.

– Кантур ячĕпех çырмалла. Кантур хăй кайран тĕп редактор пирки ĕç пуçарма пултарать.

– Договорта хушса çырнă-çке тата, автор литобработчика тӳлеме килĕшет тесе.

– Ăнлантаратăн судра, çырчĕç, ал пустарчĕç тетĕн.

– Ку укçа-тенкĕ пирки-ха. Кĕнекери йăнăшсене тӳрлетесси енпе мĕнле?

– Ăнлантарса çыратăн. Суд çав ырăнсене тӳрлеттерсе çĕнĕрен ирĕксĕрлесе пичетлеттремешкĕн йышăнать. Вырăсла çыр. Çӳле, Мускав таранах çитет вăл.

Кунтан тухсан, хула урамĕ тăрăх автобуспа ярăнчĕ те Ваçук кĕнеке кантурне ура пусрĕ. Тĕп редактор пӳлĕмĕн алăкне кăшт уçсанах:

– Кĕр, кĕр, – терĕ Якуне ăна.

– Пурăнатăп, – сăмах хушрĕ Каврăç сывлăх суннă хыççăнах.

– Никам та вилме сунмасть-ха сана.

– Япалана пăсрăр, ак мĕн. Килĕшместĕп унпа.

– Сана пулăшрĕç, кĕнеке кăларса пачĕç. Эс Мускава çити çыратăн, – çилленсе кайрĕ Якуне. – Ятшыв хăй кулянать.

– Йăнăш вĕт-ха, йăнăш.

– Такам пăхать, такам ятарласа тĕпчет кĕнекӳне, енчен эпир йĕркелемесессĕн?

– Эпĕ гражданла майпа татса пама ыйтатăп апла пулсан. Соглашени саккуна хирĕçлет.

– Хăть мĕн ту – санăн ирĕк, – сасса лăплантарчĕ Якуне. – Анчах, юлташла каласан, ун пек хăтланма сĕнместĕп.

– Директор пур-и?

– Пур. Кĕрсе тух.

Малтанхи тĕп хуçа пенсие ăсаннă та, ун вырăнне урăххи, каллех ертсе пыракансен хисепĕнче тăраканскер, номенклатурщик, килсе ларнă ăш пукан çине.

– Эп судьясемпе калаçрăм, автора пăснине тӳрлеттерме ĕç пуçарасшăн, – терĕ Васук хăйпе паллаштарнă хыççăнах.

– Судпа хăратса ан çӳре пире! – пӳлчĕ ку тӳрех çиллессĕн.

– Эп хăратас тĕллевпе шарламастăп. Йăнăш туса тултарнă – çавна тӳрлетесшĕн.

– Çынсем член Союза пулса тăраççĕ кĕнеке тухсан. Тав тăваççĕ çул уçса панăшăн, – шатăртаттарать анчах хуçа кĕнĕ çынна урăх итлеме те сунăм илмесĕр. – Мускавра канашлура пултăмăр. Судпа аппаланакансемпе ан çыхланăр, вĕсене пичетлеменшĕн литература аталанăвĕ чарăнса лармасть терĕç. Ал çыру йышлă. Пичетленесшĕннисен черечĕн вĕçĕ çук.

Юрĕ, нумай тавлашса тăмĕ кунта Каврăç, евитленĕ вĕсене ĕç пуçарасси çинчен малтанласа. Кайран суда тăратнă хут копине кĕртсе парĕ.

Серте Севечĕпе Шехвиновсен пӳлĕмне кĕмесĕр чăтаймарĕ коридорпа иртнĕ чух Васук.

– Ал памастăп, – терĕ Шехви Венкки кĕнĕ çын арçынсемпе ал тытнă вăхăтра.

– Виçĕ юристпа уйрăммăн калаçрăм – автор правине пăснине тӳррĕмĕн палăртаççĕ. Ĕçе гражданла майпа таса партаратăп, – терĕ кунта Каврăç.

– Эс халь суд тăрăх çӳре пуçларăн-и?! Сана ыр тăвас терĕмĕр. Ав, миçе шкаф ал çырăвĕсемпе тулнă! Сана, куна пĕлнĕ пулсан, çывăха ямастăмăр, – янраса кайрĕ Серте Севечĕ.

– Эсир килĕшместĕр – урăхла май çук.

– Соавтор мĕн калать-ха?

– Ăçта соавтор? Ун пирки уголовнăй кодексăн çĕр хĕрĕх пĕрремĕш статйи пур. Эсир РСФСР гражданла кодексĕн тăват çĕр сакăр вуннăмĕш, пиллĕк çĕр вуннăмĕш статйисене хирĕçленĕ. Типовăй договорăн тăххăрмĕш пунктне пăснă, çирĕм иккĕмĕш пункчĕпе автора усă курма май паман. Хушса çырни саккуна хирĕçлет.

– Эпир статьясене пĕлместпĕр, – терĕ Шехви Венкки мăн кăмăллăн.

– Соглашение саккуна пăхăнмасăр çырнă.

– Ха, сурчăк сирпĕтет! Ухмахсен çуртне ăсатмалла сана. Ăс-хакăлтан тайăлнă эс. Милиципе çавăтса каймалла сана унта, – телефон кĕпçине тытма хăтланать Серте Севечĕ.

– Юрать, хăратса пăхăр: халь модăра вăл – кăшт хирĕçлерех калакана психиатрически больницăна хурасси.

– Хулиган! Спортсменсем спорта пăрахнă хыççăн ашкăнса çӳреççĕ теççĕ. Тĕрĕсех иккен! Ак акт çыратпăр, урăлтаркăча ăсататпăр! – телефон кăлтăрмачне çавăрать Серте.

– Юрать, суд залĕнче калаçăпăр. Кунта нумай йĕрĕнтерсе тăмастăп эпĕ – евит турăм çеç.

– Ун пек хăтланма сĕнместĕп, юлташла калатăп, – тет Шехви Венкки.

Пăлханмасăр, ытти пӳлĕмсене те кĕрсе тухрĕ Ваçук. Хурамакпа Чĕкеççи ăна, тĕлĕне-тĕлĕне пуçа пăркаласа: «Тытăннă ĕçе вĕçне çитер», – теççĕ. Ыттисем кашниех: «Ан хăтлан, ан хирĕç», – теççĕ. «Кĕнекӳ тухнă вĕт, пичетленсен те саланиччен çĕçĕ айне хураççĕ хăшĕсенне», – ăс парать ырă сунаканах. «Эп тек пичетленменшĕн тĕнче революцийĕ путланмасть», – перет те хăйĕнне Ваçук, ку таранччен пач хушша кĕменни: «Тĕнче революцине пырса тĕкĕнесшĕн-ха эппин», – тесе кулать.

Шухăшне улăштарасшăн мар-ха Ваçук.

Каçхине вăл учительсен пĕлĕвне ӳстерекен института курса килнĕ шăллĕ патне общежие кайрĕ.

– Вăхăт пулнă чух пьесăпа ларатăп тесе хавхаланнăччĕ. Анчах такам та пыра-пыра чăрмантарать, тытса пăхать, мĕн çыран теççĕ, – ӳкĕнсе калаçать Элекçи хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки.

– Çырнă япалуна кун çути парасшăн чупса çӳреме тытăнман-ха эс, ун чухне куратăн. Çын калани вăл ăшах вă-

ăнмасть, хăв уру çине ĕне пуссан вара аванах туйăнтарать. Ак эп паян темиçе çĕрте пултăм.

– Суд çинчи ĕç такана çинчи шыв теççĕ, – шута кайрĕ Элекçи пиччĕшĕ ăна пĕтĕмпех хыпарласассăн. – Обкомран шăнкăравламĕç-и нарсуда? Вĕсем патне çырнă вĕт-ха эс чи малтан, ун хыççăн çӳлех те пĕлтернĕ. Хăйсен питне хĕретессине туймĕç-и вĕсем? Тен, çавсем пурте пĕр ушкăн?

– Тытăнсан РСФСР аслă судне çитетĕп.

– Тек кĕнекӳне пач кăлармастпăр теççĕ тетĕн вĕт-ха.

– Тĕрĕсех ку. Суд йышăнни çĕр-шыври пур кĕнеке кантурĕсенче паллă пулать. Мускаврисем те пĕлеççĕ. Енчен унта хам кĕнеке кăларас тесен?

– Çĕретпĕр çав. Общество çĕрет пирĕн ку тапхăрта. Тымартанах йăшать, – калаçать Элекçи, истори учителĕ.

– Пуçран кĕсенленсе-пӳреленсе юхма пуçăнтăмăр ĕнтĕ, – килĕшет Ваçук унпа.

– Пĕччен кĕрешме лекет сан власть пур çынсемпе.

– Саккун ман майлă вĕт-ха.

– Çуна туртине ăçтала çавăран, çавăнталла тухать теççĕ вырăссем. Саккун та çавах. Чăвашсем вара, асăнтăм ĕнтĕ, суд çинчи ĕç такана çинчи шыв теççĕ: ăçталла тайăнтаратăн, çавăнталла тăкăнать.

– Ăна ĕлĕкхи суд çинчен каланă.

– Халĕ вĕр çĕнĕ пурнăçра пурте йĕркеллĕ-им? Çын чунĕ тап-таса-им? Çын тăвать-çке пĕтĕмпех.

– Хам çукка юлам – ыттисемшĕн çул уçăлтăр.

– Халь çыракан кĕнекӳсем?

– Вăхăт çухалать ĕнтĕ, çавă шел. Самаях хала пĕтерме лекет çӳренипе. Вĕçнелле çывхартнă çĕнĕ роман та çырăнмасăр чарăнса ларать.

– Пĕтĕмпех тӳрлетсе çитерĕн-и тата кĕнекӳне?

– Пурнăç тараси те ик вĕçлĕ пулмалла та, пирĕн вăл пĕр вĕçлĕ çеç. Шайлаштарма хирĕçле вăй çук.

– Писменĕн пĕр вĕçĕ – йăпăш, тепĕр вĕçĕ – чукмар. Çапах та вăл виçе саккунне хисеплет. Пирĕн хирĕç тăрăвăн виçевĕ ăçта?

– Вĕрентнĕ те пире – пурнăçа ăнланмах вĕрентес мар тенĕ пуль. Çапах çыратпăр халăх чунне туйнăн шутласа.

– Пултарулăха халăх хаклать тетпĕр-иç.

– Вулаканӗ патне автор çырни епле çитнӗ? Ал çырӑвӗ пирки татӑклӑ сӑмах – пӗртен-пӗр рецензент. Редакторпа тата хӑйпе пӗр ушкӑнрисемпе килӗшӳллӗн вӑл калани тӗпленсе çирӗпленсе юлать. Чӑнлӑх шыраса прокурор патне каяймастӑн кунта.

– Профессионализм тени кирек епле ӗçре те кирлех-ха.

– Тен, шӑпах çавӑн пек сунӑм пурри чарать те литература аталанӑвӗнче? Хальхи рецензентсем вырнаçнӑ-çке-ха ателйине. Атӑ-пушмакне сентре çине кӑларсан, илсе тӑхӑнса пӑхсан, çӳресен, ӑстийӗ, урӑхла каласан, япалийӗ еплине, чӑн та, халӑх хаклать-ха. Анчах вӑл кайранхи тапхӑр çеç. Малтан хуçисем хӑйсем тӗлӗшшӗн суртласа, штампласа сентре çине кӑлараççӗ. Çуккине, санӑн килӳнте выртнине никам та курмасть, пӗлмест те.

– Çавӑнпа та кӗретлӗхрен хӑраççӗ те кӗнеке муталакансем.

– Вӗсем çеç-ши? Тӗрӗслӗхшӗн чупӑн, çӳрӗн – ухмахах тӑрса юлӑн.

Апла та капла калаçса сӳтсе явнӑ хыççӑн Каврӑçсем – пиччӗшӗпе шӑллӗ – ӗçе шала ямасӑр вӗçлес терӗç. Йӑвашланчӗç. Чӑваш çав, йӑваш вӑл.

Ирпе Якуне патне кӗчӗ Каврӑç Ваçукь.

– Ытти калавсен пуххипе пӗрле тӳрлетсе кӑларӑпӑр романна. Хатӗрле, – терӗ ку автора итлесен.

* * *

Ик алла пӗр ӗç теççӗ, ухмаха – пӗр туя. Ӗçлет Каврӑç Ваçукь самант-самант сехет çурӑ-ик сехет чухлӗ вӑхӑт вӑрӑнтарса ал çырӑвне татах та татах лайӑхлатассишӗн. Судпа ирӗксӗрлетнӗ пулсан, корректура вуланӑ чухнехи тӳрлетӳпе çеç кӑларатчӗç тепӗр заводне, малтанхи тиражӗ пӗчӗк май пӗр тулли тиража çитермелӗх. Анчах авнӑ-хуçни виçӗтӑватӑ процент чухлӗ кӑна мар-çке унта – çирӗм пилӗк-вӑтӑр процента капашать, çавӑн чухлӗ тӳленӗ те литобработчика, çавӑн чухлӗ тӑрмаланӑ вӑл: терменне ахаль илмен! Ылтӑнран хура металл тусассӑн та ӗçшӗн саплас пулать, çыншӑн çын алли хура металран ылтӑн тӑваймасть. Вӑрӑ-хурах ун пек тӗллев тытмасть те, унӑн хӑйӗн пӗр шут: аларан яртарса илтерес марччӗ, таса юласчӗ. Ӗçе епле хак парасси – хӑйсен

вĕсен; япăх япаланах çаксем лайăх тесен, вĕсемех – тĕрĕс; лайăххине япăх терĕç пулсан, урăхла мĕнле ĕнентерĕн? Суд умĕнче те тӳрре тухаймăн. Ăна пĕтĕм вулакансенчен ыйтмалла, анчах хăшĕ икĕ вариантне те (авторăнне тата литобработчик тунă хыççăнхине) вуланă? Ун пек çула власть пуррисем тӳрех картласа хураççĕ. Халăх тата ăна-кăна пĕтĕмпех пĕлесшĕн çунать-им? Халь пурнăçĕ çавнашкал теççĕ пĕтĕм йăх-яхсемпе килĕшме сĕннĕнех.

Акă ĕнтĕ ухмаха пĕр туя тыттарнă пек танккать хăй çулĕпе Каврăç Ваçукь. Спортсмен-çке вăл, парăнасшăн марри пысăк унăн, ăмăртура команда ӳсĕмĕшĕн çуннă евĕрлех канлĕхе çухатнă вăл. Кĕрешĕве курма пыракан та хăш командăна çĕнтерттересшĕн, кам майлă, трибуна çинче çавăн енче ларать. Каврăç Ваçукь çич ютшăн мар, хăй ачишĕн – хăй çырнин шăпишĕн тăрăшать-ха. Ларать ав шапарса, татах якатать ал çырăва. Ку таранччен журналсенче пичетленнĕ калавĕсене кĕртесшĕн кĕнекене, вĕсене те тӳррĕмĕнех илмест – лайăхлатать, тӳрлетет. Хăй. Хăйне килĕшӳллĕн тăвать; эпппин, вулакана та чун патне пымалла. Шел, Вĕршĕл çук. Çавă редакцилесе кăларнă калава та пĕр-ик çĕрте тĕкĕнсе татах илемлетрĕ, ăна Вĕршĕле кăтартас килет. Анчах унпа тек калаçаймăн, вăл тек таврăнас çукла кайнă ĕнтĕ. Çавăн алли витĕр тухнă пулсан, Каврăç Ваçукь кĕнеки те хур пулмастчĕ. Хурамака та тыттармарĕç вĕт унăн ал çырăвне – хăйсен серепине ярса илчĕç те Сертесем тупăшне пайламасăр вĕçертмерĕç. Пиратсем.

Якуне ытти калавсемпе пĕрле тӳрлетсе кăларатпăр терĕ романа. Пурнăçлĕ-и? Вăл сăмах паман пулсан та лармаллаха, ĕçлемелле Ваçук – хăй япалине виçене килтермеллех, ун пек мăшкăлпа хăварма пултараймĕ.

Ĕçе судпа татнă пулсан, Ваçук хĕрӳлĕхĕ кăшт сӳрĕкленĕччĕ те-и? Пĕлет хăйне, риснĕ: çынна хĕрхенет вăл, лешсене те хĕрхенĕ. Халь ак кĕнеке тӳрленсе тухиччен çилле сирмест – çĕр çул, çĕр аллă çул иртсессĕн те! Ку вăл тата хаярланса ĕçлеме вăй парать. Ал çыру çунса каймасть теççĕ, апла пулсан йĕркелемелле ăна çĕр-çĕр аллă çултан та шăтса тухмалла чĕмĕллĕн.

Калаçса уçăлма, шухăшне аталантарма хушшăн-хушшăн шăллĕпе халаплать Ваçук.

– Пăхатăн та, писательсем хăйсене пит мăнна хураççĕ пек туйăнать мана, – тет Элекçи.

– Ку çаплах та пуль. Писательсем влаçа кирлĕ пулнă. Власть çĕкленĕ вĕсене. Пĕр социализмра кăна писатель чăннипех тивĕçлĕ шайра, халăх шухăшне палăртаканĕ пулма пултарать тенĕ хаклăран та хаклă çул пуç. Вăлах писателе этем чунĕн инженерĕ тенĕ.

– Ак вара пуç пулса тăракансем пĕрисене, чăн-чăн талантлисенех, халăх чунне палăртнă пулсан та, таптанă, теприсене, çунат çуккисене çунат лартса парса, урăхла каласан, талант çуккисенех, влаçа майлă çаптарнăшăн çыра-çыра парса çĕкленĕ. Ремесленниксем ĕнтĕ, паллах, тапса тухаççĕ кун пек чух.

– Писательсен Союзне йĕркелеççĕ.

– Ăна большевиксен калăпĕпех тунă: унта кĕрес текенне пăхмалла-ха. Сана кам эсĕ теççĕ, сулăнксене çапăнаканни мар-и? Хăвна пĕлекен виçĕ çынран шантару хучĕ тăрат. Секци сĕнни пултăр. Вара кандидат пусми картлашки çинче кĕллесе тăр пĕр хушă.

– Кандидат институчĕ çук халь.

– Юрать-ха, ку енчен пĕчĕк утăм тунă Союзĕ, анчах малтанхи калăпа улăштарман.

– Секци тени тăваттăмĕш рекомендаци шутланать.

– Ку вара бюрократизмăн тепĕр пусăмĕ, чăнласах. Унта ăсталăха пăхаççĕ пуль тетĕн-и? Йышпала килĕшрĕç пулать-и? «Хамăрăннипе» «юттине» суртлани, мафи хăй шăлне кăтартни – ак мĕн вăл.

– Хунтă хучĕ ик-виç çынран йĕркеллĕреххисенченех тупма пулĕ-ха. Кунта пуç çап вара пĕтĕм ушкăна, çыхланса ларнă мафие. Ура ярса пустармаççĕ вĕсем сана, спортсмен чунлĕ пулсан, пĕкĕрĕлместĕн пулсан хăйсен çурчĕ çывăхне.

– Тĕлĕнмелле илемлĕ сăмах пур: «тăхтас». Çапла çырса хураççĕ те сана пĕлтереççĕ: «Тăхтас терĕç». «Терĕçĕ» кунта аноним вăл, пĕри теприн хӳттине пытанни. «Тăхтасĕ» каллех икĕ питленни, килĕштермен çынна сăпайлă сăмахпа тĕксе пăрса хăварни.

– Рекомендаципе илес йĕркене хирĕç калаçакансем пулĕç-ха, анчах уншăн çирĕп тăракансем чакма пултараймĕç: чакас  пулсан, ку вăл бюрократ пуканĕ шуçлакланнине те,

çĕрĕшнине те пĕлтернĕ пулĕччĕ. Шантару хучĕ пысăк япала: эп сана ус тăватăп, эс мана уншăн ырра ырăпа тавăр!

– Çавна май пĕр картарисемех ушкăнлана-ушкăнлана каяççĕ те: Йăван хăй майлисене пуçтарать, Петĕрпе Çитăр – хăйсемпе пĕр çăварлисене.

– Тăванĕ-пĕтенĕсене.

– Ак хайхи сертесем, шехвисем, циклопсем... литпиратсем... хунаççĕ.

– Писательсен Союзĕн ăслăлăх тĕнчин вăйă йĕркине йышăнни те пур: вăрттăн сасăласа кĕртеççĕ вĕсем хăйсен ретне халь, çак тапхăрта.

– Нумай япала пирĕн вăрттăнлăхра, тимĕр карта ăшĕнче.

– Кулăш, пароди мар-и ку? Кĕнеке кăларасси те, ытти те.

– Пирĕн пурнăç системи пĕтĕмĕшле – пароди.

* * *

Лĕп çумăр, малтанхи кун та, çĕрĕпех те çунăскер, иртсех пĕтмен-ха, çапах вăл тамалнă, пĕлĕт уçăла-уçăла, йăвалана-йăвалана пит аялтан иртет, хăйĕн йывăрăшне тытса чараймасăр вĕттĕн-вĕттĕн пĕрĕхет. Çерем кăмпи тухма кирлĕ. Ыран шăп вăхăтлă пулмалла пуçтармашкăн. Анчах Ваçук килте пулмасть; эппин, паянах, çула тухас вăхăтчен, улăхпа васан тăрăхĕсене çитсе çаврăнсан пăсмасть; ир кӳлĕм сĕтел хушшинче çыру ĕçĕпе самаях ларчĕ-ха вăл, халь уçăлса çӳрени те вырăна килĕ. Акă хайхискер çӳхе плащ тăхăннă та пырать; алăра – сунчăк, çутă хутаç та хуçлатмалли çĕçĕ; урара – кĕске кунчаллă, çăмăл резина атă. Ялта пылчăклă пулсан, çерем çинче çăрăлчăк çук, ешĕл курăк çеç çумăр шывĕ сырăннипе чĕр кĕмĕлпе писевленнĕн йлтăртатать. Çу варринчи кунашкал ăш çумăр чуна савăнтарать, выльăх çӳрес вырăнта ĕне-сурăх сĕткенлĕ курăка харсăррăн çиет. Тырă пуссисем сип-симĕс, тин кĕпçеленнĕ тулă, урпа, сĕлĕ çӳлелле пĕри теприпе ăмăртмалла туртăнать.

Çрем кăмпи тĕл-тĕл татмалăх пулнă иккен-ха, тĕл-тĕл пăрçа пысăкăш мăкăрălса тухать; шампиньон та чăх е кăвакарчăн çăмарти мăнăш унта-кунта курăнать. Ялтан аякка каймасăр яланхи пĕлнĕ вырăнсенче пĕр пĕчĕк апатлăх, кăçал пĕрремĕш хут, кăмпа пуçтарчĕ Ваçук. Килте, арăмĕ ĕçреччĕ, арçын тупăша çатма çинчех яшкалла пĕçерчĕ те

тутлă çимĕçпе киленĕçлĕн кăнтăр апачĕ турĕ, унтан çула пуçтарăнма тытăнчĕ. Çĕр-шыври писательсен Мускавра тухакан хулăм хаçачĕ ку эрнешĕн çитрĕ ав, ăна уçса тăмасăрах пысăк портфеле чикрĕ хуçи, кăштахран вара автовокзала утрĕ. Урара резина атах-ха, пушмакне хутаçа чиксе йăтнă; çире – палони плащ.

Чăваш çыравçисем хăйсен аслă пуххине чĕннĕ ăна та, çамрăк автора. Чĕнӳ хутне райхаçат редакцине ярса панă, унта пырса кĕрсен алла тыттарчĕç çыннине; çуллахи канурискер нимле чăрмавсăрах çитрĕ йыхравланă çĕре.

Писательсен кантурĕнчи ĕçе йĕркелекенĕ Каврăç Ваçукне сăнран палламасть-мĕн: «Ăçтан эсир?» – тесе ыйтать вырăсла. Каç кӳлĕм çывхарнă тĕле ытти республикăсенчен те хăнасем киле-киле тулнă çав. Каврăçа аякрарахри хăй пĕлекен хăна çуртне вырнаçтарма палăртнă-мĕн малтанах. Тавтапуç ыр суннăшăн.

Икĕ вырăнлă хăтлă пӳлĕме лекрĕ вăл. Тепри маларах килнĕ-мĕн. Пӳ-сирен Ваçук çӳллĕшех, вăрт-варт шăм-шаклă арçын удмурт çыравçисен аслийĕ иккен. Паллашнă хыççăнах кӳршĕ республикăран килнĕ хăна пирус илсе ăна çĕнĕ юлташне сĕнчĕ, çынни труртманнине пĕлсен, алă çумалли кукăра пăрăнчĕ, алăкне хупса унта чĕртрĕ кăвак тĕтĕмлĕ «çимĕçе». Хăна пирус туртса тухсан иккĕшĕ ун-кун калаçса кайрĕç. Студент чухне Раççейри педвузовецсен йĕлтĕрçисен хушшинче палланă удмурт спортсменне асăнать Ваçук. Писатель, кунран пилĕк çул кĕçĕнскер, пĕлет иккен лешне. Чăваш ачи çăмăл атлетика ăмăртăвĕсенче пĕрле вăй виçнĕ тепĕр атлета асăнать – ăна та паллать-мĕн çыравçă. Тухнă кĕнекере удмурт спортсменĕнчен илсе сăнарланă персонаж пурри çинчен евитлет кунти автор.

Чăваш литератури çинчен те пырать сăмах. «Эп Союз членĕнче тăмастăп, пирĕн вăл йышра çĕр таранах», – пĕлтерет Каврăç Ваçукь. «Председательне ĕçлеме çăмăл апла» – ăмсанать Атăльен ушкăнне Кама çынни, хăйсен йышĕ чылай пĕчĕк пулнăран. «Ик журнал пур пирĕн тĕп литературăн, кĕнекесем тухса пыраççĕ. Анчах... ак ыран докладра мухтаса калаççĕ-ха та, тӳррипе илсен, прозăра чăн-чăнласах пысăка хумалли ку тапхăрта пит сайра кун çути курнисенчен, – пытармасть Ваçук хăй шухăшне. – Ман кĕнекене пăсрĕç

редакторсем. Кирлĕ мар çĕрте тепĕр май çавăрттарчĕç». – «Шăлпа кăшламалла ун пек чух. Тăпăлтарса илмелле, – кашни сăмаха уçăмлăн калать удмурт. – Обком секретарĕ пур пирĕн. Хĕрарăм. Писательсене хĕсĕрлесшĕн. Хăйсем хушнине çеç пурнăçлаттарасшăн. Кунта тухса киличчен çеç тавлашма лекрĕ унпа. «Эс, секретарьтен кăларсан, ăçта кайăн татăк çăкăр шырама, эп, председательтен кăларсан та, çырав ĕçĕпе пурăнатăп» – тесе каларăм вирлĕн».

Харсăр та иккен удмурт çыравçи. Каврăç Васукь литхаçатăн çĕнĕ номерне кăларчĕ те, пĕри малтанхи тетрадьне, тепри иккĕмĕш пайне алла тытса вула пуçлаççĕ шăппăн, унтан хăш-пĕр статйисене сӳтсе яваççĕ. Шухăшĕсем пĕр пекех çак икĕ çыннăн.

Ирпе Васук яланхи йăлипе вăраннă-вăранманах çӳхе спорт тумĕпе урама тухрĕ. Çанталăк уяр. Асфальт, лăпакарах вырăнсенчи шыв кӳлленчĕкĕсене шута илмесен, вĕр типех. Чылайранпа çатма пек такăр çул курманскер, тротуарпала çăмăллăн юртрĕ çын, унтан çивĕччĕн утрĕ çăмăл шăм-шакне çухатман спорт мастерĕ. Вăл таврăннă тĕле юлташ та вырăн çинчен тăнă. Чăвашрадио паянхи хаçата тишкерет. Тăнлать те хăнана вырăсла куçарса парать Каврăç Васукь. Хаçачĕ паян писательсен аслă пуххине халалланă хăйĕн страницисене. Асăннă авторсен кĕнекисен содержанийĕсемпе те кĕскен паллаштарать вырăнти çын. Удмурт чăваш çыравçине хăйсем Венгри классикĕн сăввисене тӳрех виç чĕлхепе – венгерла, вырăсла, удмуртла – пичетленĕ шĕкĕр кĕнекене парнелет. «Эп шута илмен, ман хирĕç пама нимĕн те çук, – ырăмарланать Васук. – Магазинта пулсан, туянăп-и?»

– Сирĕн чĕлхе угро-финн ушкăнĕнче вĕт?

– Çапла. Марисем, карелсем, комисем, венгерсем...

Буфета апатланма аннă чух хăна çурчĕн ĕçченĕсем кусене сырса илеççĕ. Аякран килнĕ юлташа парне пур иккен – писательсен Союзĕнчен: аслă пуху тĕлне ятарласа кăларнă кĕнекесемпе тултарнă мăн портфель тата пĕр ытам чечек!

Ку тĕле, сакăр вуннăмĕш çула, хăнасене кĕтсе илме вĕренсе çитнĕ çав эпир. Çĕр-шыври Аслă турă епле-епле парнесем йышăнмасть пуль менелникĕ чухне те, тĕрлĕ лару-тăрура та. Вĕренсе пымалла пирĕн пурсăмăрăн та тĕп çӳл ертӳçĕсенчен!

Хăна çуртĕнчен пухăнса кайма автобус пулать теççĕ. Юлташ хула курасшăн, урампа утса тухасшăн. Ку вăл самай Каврăç Ваçукĕн кăмăлĕпе пĕр килниех.

Çумăр хыççăнхи шăлса çунă пек таса асфальтпа ытлашши васкамасăр утаççĕ иккĕн хĕвеллĕ ирпе. Аллăмĕш çулсенче ку вырăнта уй-хир сарăлса выртни, тырă ăнса пулни çинчен ăнлантарать хăнана хăйĕн студент чухнехи тапхăрне аса илсе Каврăç Ваçукь. Çул пуç скверне шăп палăртнă саманта çитрĕç калаçкаласа иккĕн. Кунта ĕнтĕ пуçлăхсем кĕтсе тăраççĕ. Автобус çитсе чарăннă. «Хăна çуртĕнче сире шыраса хăшкăлчĕç пирĕн юлташсем, – хапăллăн алă тăснă май сăмахлать чăваш çыравçисен пуçлăхĕ, Ваçукпа тантăш çын, удмурт хăнапа. – Ак кампа пĕрле вырнаçтарнă иккен сире – çуран утма юратаканскерсене?!»

Хаваслă тĕл пулусем, калаçу, хĕвĕшӳ. Сăн ӳкерекенĕ. Ятлисем çул пуç палăкĕ умне карçынккапа чĕрĕ чечек пуххи пырса хураççĕ.

Пуху пулмалли çурта кĕрсен те пĕр-пĕринпе ал парса илесси, паллан-пĕтене сывлăх сунасси, саламласси вĕçленмест. Каврăç Ваçукĕ удмуртпа юнашарах та, вăл тĕрлĕ республикăри çыравçăсен пуçлăхĕсене пĕлнĕрен, чăвашсен çамрăк авторĕ те хисеплĕ хăнасемпе ал пара-пара илет. Мăкшă çыравçисен председателĕ, ватă писатель, пит хавас калаçаканскр–мĕн, Каврăç Ваçукĕпе те халаплать вашаватлăнах. Раççей çыравçисен правлени секретарĕ – Мускавран килнĕ пысăк хăна – Ваçук пиншакĕ çинче спорт мастерĕн значокне куçпа чăрлаттарса пăхса илчĕ. Кунăн нихăшĕнпе те уйрăммăн калаçса тăма вăхăт çук: кашниех – паллаканĕпалламанни, ятлă-шывли, ятсăрри – ал тытать ăна, пĕр-ик сăмах та пулин пуплеме тăрăшать. Çынни Ваçукран пĕр ултçич çул çамрăк сăнлă, курткăпа, джинсипе. «Спорт çинчен çырнă калав-повесть пур унăн», – пĕлтерет удмурт чăваша.

Зал лăк тулса ларнă: çыравçăсен йышĕсĕр пуçне кĕнеке кантурĕн редакторĕсем, библиотекарьсем, фабрикăпа заводран, ял хуçалăхĕнчен ыр сăмах калама ятарласа янă, килнĕ хисеплĕ ĕçченсем, студентсем (институтра чухне Ваçук та сиктермен кунашкал пухусене)... Тăванла республикăсенчен мĕн чухлĕ хăна-ши? Вĕсем – президиумра («кĕрекере» теççĕ тепĕр май). Кусене кашнинех тухса калаçма сăмах параççĕ.

Ах, япшар пуплеме, эрешлĕ сăмахсемпе саламлама, асăнмалăх парне кӳме пĕлеççĕ-çке çаксем. Хăшĕ те пулин сăмахран та, парне кӳрессинчен те юласси пур-и, пĕри тепринчен ирттерет.

Ятшыв халăх пухăнсан шăп пуху уçăлас умĕнтерех çитрĕ, малти ретелле утрĕ, Каврăç Ваçукне асăрхарĕ те ун патне пычĕ. «Кĕнекӳ аван тухса кайрĕ», – терĕ вăл. «Мĕн пулса иртни пулса иртрĕ-ха çав, – çăвартан тухрĕ ял çыннин сăмахĕ. – Чĕнчĕç те, килтĕм. Чĕнмен пулсан, килместĕм». – «Малалла каймалла, малалла», – терĕ те мăн писатель умри ретех, чӳрече енне, пĕччен кайса ларчĕ.

Циклоп курăнмасть. Сывлăх енчен аптрарĕ-ши ку, тепĕр мăн писатель, мухмăрлă-сухмăрлă-ши?

Каврăç Ваçукь Хурамакпа юнашар. Калаçмалли пур та – доклад итлес терĕç вĕсем.

Тăхтава тухнă тĕле кĕнеке магазинĕ килсе коридорти вăрăм сĕтел тăрăхне йышăнма ĕлкĕрнĕ иккен. Çыравçăсем унта хăйсен кĕнекисене-и, тус-юлташĕсенне-и курма е туянма тăрăннă. «Сан кĕнекӳ пур», – пĕлтерчĕ удмурт писателĕ Каврăç Ваçукне, лешĕ кĕрекеçĕсен алăкĕнчен маларах тухнăскер. Пĕртен-пĕр экземпляр çеç иккен. Ытти пĕтĕмпех сутăнса пĕтнĕ терĕç сутăçăсем. Кăпăр-капăр туянчĕ куна авторĕ. Çын хĕвĕшмен кукăра кайса малтанхи листи çине çырать те удмурт юлташа парать: «Ăнланмасан та ячĕ пултăр. Унта хăвăр ентеш сăнарĕ те шăнăçнă». «Сире, – тет Каврăç Ваçукь çывăхрах тăракан мăкшă писательне, вată пулин те хавасланăскерне, – хăш магазинта юлнă, унтан туянса ярса паратăп. Мăкшă атлечĕн сăнарĕ те пур манăн ку кĕнекере». – «Эс вырăсла чиперех калаçан, – сăмаха сыпать мăкшă. – Сан хăвăн вырăсла куçарма тытăнмалла кĕнекӳне е малашне тӳрех вырăсла çырмалла. Кайран, тепре ларса, – хăвăн тăван чĕлхӳпе», – ăс парать мăкшă пичче ялтан килнĕ чăваша. Кăштахранах Ваçук патне хăй хисеплекен кунти паллă писатель пырать те: «Атя кĕнеке улăштаратпăр, ал пусса парса», – тет. – «Каçарăр, хамăр çыравçăсенчен никама та памастăп тенĕ эпĕ. Палла тăрансене çĕре яхăн панелерĕм пулин те». – «Мĕншĕн аплах тупа турăр?» – «Автора шута хумарĕç».

Тепĕр хушăран Выл сăмахлать Ваçукпа. «Ятшывсемпе ыр турăмăр сана. Нимле автор та малтанхи кĕнекене ли-

тобработкăсăр кăларалймасть», – тет. Ентеше чунтанах пуç таять пулин те, кунашкал калаçу чухне Ваçук шыв сыпать. Çывăхрах Шехвисем, Сертесем ярмăрккăри евĕр вăраххăн кумса çӳреççĕ.

Пуху вĕçĕнче, суйлавсем умĕн, ертсе пыраканĕ, правлени председателех, унччен партаппаратра пысăк вырăн йышăннăскер: «Союз членĕсем маррисене тухма ыйтмалла пуль. Хупă лару тăвăпăр», – тесе пăхрĕ зал енне. Хирĕçлесе сăмах чĕнекенсем тупăнчĕç, «пулччĕр-иç, ларччĕр-иç» текелерĕç. Каврăç Ваçукь ура çинче ĕнтĕ, вăл алăк патнелле утать. Таврăнмасть.

Хăна çуртĕнче, сĕм тĕттĕмле пӳлĕмре пĕчченех йăвалана-йăвалана выртрĕ Ваçук, пит шутланипе-и тăнлав хĕснĕрен нимле те çывăрса каяймасть. Çуллахи кĕске çĕр иртерехпе çеç таврăнчĕ удмурт. «Эс мĕншĕн тухса кайрăн? Пурне те вĕçне çитиччех ларма ирĕк пачĕç», – тет ку. «Пĕр тапраннăччĕ ĕнтĕ», – ал сулать çамрăк автор. «Банкетра пултăмăр». – «Хăш столовăйĕнче?» Стадион патĕнчи кафере иккен. «Эрех çителкĕклех, – евитлет юлташ. – Тост çĕклекен, сăмах калакан... Тутар култарса пĕтерчĕ тĕрлĕ анекдотпа». – «Пухура та пит çулăмлă пулчĕ çав ун сăмахĕ». – «Ӳксе юлмаççĕ нихăшĕ те. Мухтатпăр пĕр-пĕрне». – «Мухтав юрри юрлама пуçтарăнтăмăр та ĕнтĕ кунта. Хам сăмах мар-ха ку, ăна ман юлташ Хурамак каларĕ: йыш виле çинчи пек шăп, салху, трибуна çинче çеç черетпе – мухтав юрри. Çул пуç мухтанать те, ăна пĕтĕм çĕр-шывĕпе пĕр пĕтĕмĕшлĕ хор пулса мухтатпăр та, пирĕн, пĕчĕккисен, мĕншĕн тĕслĕх илмелле мар ертӳçĕсенчен?»

Ах, нумай тăсăлса кайрĕ, – калас тени калайăнмарĕ. Чĕлхене кăтăклантараканни акă мĕнччĕ... Кĕнеке çулĕ çинче Ваçук хăй пирки Ятшыва «ялти мĕскĕн ĕнтĕ» тенĕччĕ. Анчах кам мĕскĕн? Çынна хур тăвакан-и? Харпăр хăйсăр пуçне ыттисене айвана хуракан-и? Шăнана курса слона асăрхаманни-и?

Çыравçăсен çак пысăк канашлăвĕ тĕлне иртнĕ пилĕк çулхи тапхăрта хаçат-журналта е уйрăм кĕнекен мĕнле-мĕнле произведени пичетленсе тухнине пĕлтерекен библиографи пуххи туса кăларнă. Хытă хуплашкаллă хулăм кĕнеке. Виç йĕркеллĕ сăвă та, пĕчĕк эпиграмма та асăрханмасăр тăрса юлман унта кĕмесĕр – пурте пур çут тĕнчене килнисенчен.

Каврăç Ваçукĕн хулăм кĕнеки куç тĕлне пулман вара. Слона асăрхаман. Хур тăвас терĕç-ши? Хамăр патăмăрта хамăр хуçа, ытлашши ан сик терĕç-ши авторне? Мĕнех вара Каврăç Ваçукĕшĕн пулсан: тухнă кĕнеке списока кĕменни унăн япали, пăсăлнă пулсан та, çут ĕнчере çуккине пĕлтермест. Вуламалăх та пур çыравĕнче. Çынсем хапăллаççĕ – сутăнса та пĕтнĕ ав. Ятне библиографи справочникне кĕртмесĕр те пулин ăс кĕртес терĕç-ши вушара? Амăшĕ сĕчĕпе ăс кĕменни качака сĕчĕпе ăс кĕреймĕ-ха вăл. Чăнах, Каврăç Ваçукь мĕскĕн-ши, хăшĕ-ши? Докладра та, ав, вăл самаях анлăн çутатнă темăпа – спорт çинчен – çырнă произведенисем çук терĕçĕ. Прозăна тишкерекенĕ те – журналăн тĕп редакторĕ – хăй сĕтелĕ урлă тухнă хайлавсене çеç ырлать. Чĕр чун хăй хӳрине лапăртамасть теççĕ-и? Шапа та хăй лачакине мухтаса ирлĕн-каçлăн кăваклатать.

Ашшĕ-амăшĕ, тăван ялĕ, тавралăхĕ, ăруран ăрăва аталанса пынă халăхĕ мухтанчăк пулма вĕрентмен-ха Ваçука. Сăпайлă пулнине нимĕн те çитмест тенĕ ваттисем ялан; вĕçкĕне нихăш касра та ыр темен; халăх йышĕнче ĕçпе палăрнине килĕштернĕ. Таса чунлă этем тĕрĕсмарлăхпа çырлахман. Самана сакки тĕрлине пула пур чух та çăвар уçманха ывăл-хĕр, шăла çыртса чăтнă вăл – ку вара усал-тĕселпе пĕр сăмах тупнине пĕлтермест. Выç пĕрчĕ пек çиеле сиксе тухас текенни йăпăлтатать пуçлăха, хăй те çавăнталла çĕкленме ĕмĕтленсе. Ку вăл пĕтĕм халăх çапла тенине çирĕплетмест. Улталама пултараççĕ ăна, влаçпа хĕссе те суя суйса. Апла пулин те, халăх хăйĕн чунĕ тĕпĕнче ăрусерен куçса пыракан сăпайлăхне упрать.

Хăйĕн кун çути курнă, алла тытмалăх пур хулăнăш кĕнекине, унти темăна çыравçăсен пуххинче курмăш пулнишĕн ним чухлĕ те хуçăлмасть Ваçук. Чăнах, кам мĕскĕн-ши? Власть пуррисем çӳл турăсемех пуль çав. Ку темĕн мар, ĕçлемелле çĕр çине килнĕ ывăл-хĕрĕн.

Ак тапранчĕ. Мĕн темелле? Футболла вылясси пуçланчĕ – Каврăç Ваçукь ал çырăвĕсем кĕнеке кантурне мĕнле çитнĕ, çавнашкал вирхĕне-вирхĕне таврăнаççĕ каялла. Спортсмен пулсан та, футболистчĕ мар-ха Ваçук. Çав вăйăа урамра вылякаланă-ха вăл, анчах спорт ăсти ку енĕпе мар çынни, тапăнса пыраканни те мар иçмасса. Çитменни çине кантур

хапхи умĕнче нимĕнле вăйă йĕркине пăхăнмасăр темиçен тăраççĕ хуралта, çавсем çăтă-çăтă тытăннă та «мечĕке» кап! ярса илсе каялла хап! ывăтса параççĕ. Якуне хăй мар-çке редакторĕ, ал çыру Серте Севечĕпе Шехви Венкки аллисенех лекет. Вĕсен хăйсен сунăмĕ ак: рецензи çыртараççĕ. Кама? Циклопа. «Кĕнеке кăларма авторне такам пулăшнă пулмалла малтан. Халь каллех унăн ал çырăвĕ. Литература чĕлхипе çырман...» – тет çак ват кăркка. Тĕслĕх те илсе кăтартать. Пысăк абзац. Василь Васильч шкулта пĕр учителе, унтан тепĕр учителе вуласа кăтартать хайхи вырăна. Математикне те, географне те. «Сăнарлă-çке, питĕ ăнланмалла», – теççĕ кусем. Анчах вĕсем калани саккун мар-çке, циклопсем калани вăйра.

Тепре те çавăрттарать, унта-кунта каллех тĕкĕнкелет автор ал çырăвне. Хальхинче Серте Севечĕ тек рецензи çыртармасăрах виç сăмахпа хуравлать («мечĕке» каялла тапса парать). «Илемлĕх тĕлĕшĕпе ал çыру паянхи пурнăç ыйтнине тивĕçтермест», – тенĕ унта. Епле хитре сăмахсем! Еплерех кăлăкласа витĕнеççĕ!

Каврăç Ваçукь Коммунистсен партийĕн райкомне хăй лайăх пĕлекен тантăшĕ патне каять.

– Обкомăн идеологи секретарĕпе тĕл пулса калаçма май килтерĕр-ха.

– Кай та тӳрех кĕр ун патне. Лайăх çын вăл, пуплеме юратать.

– Унта кĕртмеççĕ-ха хăв тĕллĕн тӳрех. Малтан приема çырăнас пулать.

– Юрать, калаçса пăхăп кун пирки. Эс итле-ха, – тет ку, районта идеологие ертсе пыракан çын,– ресторана хăйпăтса тухаймастăн-им вара çавсене? Чĕн Циклопне хăна сĕтелĕ хушшине.

– Ĕçĕ вырăс эрехĕ е коньяк ĕçни çинче çеç мар-ха кунта. Вĕсене ытларах кирлĕ.

– Калаç. Çырмашкăн çыран, ĕç тума пĕлместĕн.

Айтурух! Пуçран тытăнса çĕретпĕр  пулмалла чăнласах, идеологи çынни те ав епле юрлать – вĕрен çав çемме эсĕ, цивилизацие тухайманни!

Хулара Выла тĕл пулчĕ Ваçук. «Эс республикăмăр чиккинчен тухнă тет, – хăйех сăмах пуçачĕ юратнă писатель. –

Мускава çитнĕ çăхавпа. Кирлĕ мар ун пек. Ятшывсем пулман пулсан, эпĕ те писатель пулаймастăм. Вĕсем çĕклерĕç».

Каврăç шăп-шăпăрт тăрать. Пурнăçа пурăнса курнă ăслă писатель, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вучĕ витĕр те тухнăскер, виççĕ аманнăскер, сасса хăпартмасăрах юлташла ăс парать ăна, пĕр енчи çынна, ентеше.

– Романтиксем çав эпир. Çавнашкал хавхаланупа ӳснĕ. Пурнăçа ачаранах пĕлмелле пулнă та – вĕрентмен пире. Эс пушшех «Правда» хаçат ум статйисене вуласа пуçа минретнĕ те урăхла шутлаймастăн курăнать. Пурнăç хаçат мĕн çырнипе пĕр килмест вăл. Коммунизм идейипе шăршанса ларнă фанатсем пур. Çавнашкал пулмалла мар. Этемĕн ӳлĕмхишĕн çеç мар, паянхи телейĕшĕн те хăйĕннех шухăшламалла. Пĕр-пĕринпе килĕшсе пурăнма пĕлмелле. Сана Союс члене илмелле тăвăпăр.

Ваçук юнне-чунне коммунизм идейи шăршанса ларнă тени чăнласах-ха. Ытларах вăл шкулта вĕренсе-вĕрентсе тата хаçат-журнал вуласа ӳснĕ. Коммунизм идейисĕр пĕр çăвар та уçман, пĕр статья та вуламан. Илемлĕ произведенисем те çавăнпах тулнă. Чĕлхепе литература вĕрентекен учитель ачасене те коммунизм шухăшĕпе витерĕннĕ диктант-изложени çыртарнă, çавнашкал предложенисене тишкерттернĕ. Анчах сĕрĕмлĕ пӳлĕмрен тухсан уçă сывлăш ултав-суяпа сийленсе тăмалла мар пуль. Хамăр тĕппитымаррипе йăшнине-çĕрнине пĕлтермест-и-ха ку? Коммунизм идеологĕсен икĕ питлĕхĕ хавшатрĕ пулсан шăм-шака, чĕрĕ пурнăçа, ăçти кукăрта юлнă-ши таса турат? Ку саманчĕ шăп сакăр вуннăмĕш çул-ха. Каплах пырсан, мĕн курса ларăпăр? Пĕр çил килсессĕнех çĕрĕк йывăç пек кап кайса ӳкмелле-и Раççей халăхĕн?

Ваçук никама та хирĕç хĕç тытман. Унăн хăйĕн çын алли пăснă кĕнекине юсаса кăлармалла. Писательсен Союзĕн членне кĕрес йӳтĕмпе хăвăн чунна сутмалла-и? Вĕçне çитесшĕнех-ха вăл ку тĕлĕшпе.

– Калаçрăм обкомпа, – пĕлтерчĕ ăна районти коммунистсен ăс-хакăл Турри, ун патне çак ыйтупа тепре кĕрсессĕн. – Прием пулмасть. Литсектортан пĕлетпĕр вăл ĕçе терĕç. Якунепе калаçтăр терĕç.

Якуне патĕнчен мечĕк пулса вирхĕнсе килет-çке ал çырăвĕ каялла.

* * *

Çилĕ тени пач киревсĕр япалах мар пуль çав, вăл çынна темиçе хут вăй кĕртет. Ак тытĕ те Каврăç Ваçукь хăй ал çырăвне, мăкшă пичче сĕннĕ пек, вырăсла куçарĕ, сăмах çине сăмах текен «подстрочник» тăвĕ. Мĕншĕн тытăнса пăхмалла мар.

* * *

Тухрĕ кĕнеке вырăсла пичетленсе. Ку тĕле ĕнтĕ Каврăç Ваçукĕн «ашшĕ пăхмасăр» ӳснĕ ачисем те аслă шкул пĕтерчĕç. Малтисен хăйсен ачисем пур, Ваçук маçак та, кукаçи те пулса тăчĕ. Куçаруçине те, редакторне те авторĕ пĕрре курман-ха, Мускава йăтса кайнă та хăй сăмах çине сăмах тĕкĕнтерсе тенешкел вырăслатнă ал çырăвне пĕр кантура парса хăварнă; çу варриччĕ те, чылайăшĕ канăва тухнă май, пӳлĕмĕнче кĕçĕн редакторсăр пуçне никам та çукчĕ.

– Хурса хăвар, адресна çыр, – терĕ çеç ку, çамрăк хĕрарăм.

Майĕпе, вăхăчĕпе тенĕ пек ĕçĕ çăмăллăн кайрĕ пулин те, çыру урлă пĕр-иккĕ калаçса илмеллисем пулчĕç. Малтан рецензи çыраканĕ, кайран вăлах куçаруçă пулса тăни хăй спортсмен иккенни тӳрех палăрчĕ. Калемçи тин кăна çамрăксен Союзĕнче пысăк вырăнтах ĕçленĕ мĕн – спорт тата массăллă оборона пайне ертсе пынă, çул тухнă хыççăн çамрăксен кĕнеке кантурне вырнаçнă. Ку вара, тепĕр тамаша, текстри чылай вырăнсене улăштарма ыйтать. Каврăç Ваçукь ăна мĕншĕн авторăннех хăвармалли çинчен ăнлантарса хурав парать. Юлашкинчен хайскер: «Апла кунта нимĕн те улăштармалли юлмасть, анчах манăн машинкăпа çаптарма хавха çитмест», – тесе пĕлтерчĕ. Ун пирки калаçса тăрать-им Каврăç Ваçукь – хăйĕн уйăхри ĕç укçин çррринчен кăшт ытларах шăкăрт анчах почтăпа ярса пачĕ: машинисткăна тӳлеме пултăр çеç мар, юлташĕпе пĕрле пĕрре кафене кĕрсе апатланмалăх та çиттĕр. Лешĕ тек кирлине ыйтмарĕ е хăймарĕ-ши?

Çыру текстне вуланă чухнех тата спорт хаçатĕнче тухнă статйине асăрхасан, ку юлташăн илемлĕ литература чĕлхи уççăн палăрманнине сисрĕ-ха Ваçук, анчах куçаруçа автор тытмасть-çке, унти кĕнеке кантурĕнче те ĕçе хăйсем пĕлсе майлаштараççĕ пуль.

Редактор вăйлăраххине туйрĕ çыру тăрăххăн Васук; япалана тĕппипе курать, мĕн пирки иккĕленмеллине пĕлсе иккĕленет. Унпа тӳрех килĕшме е кăштах апла-капла тесе калаçса илме пулать.

Куçараканĕ мĕншĕн-ха хăш-хăш вырăнсене çине тăрсах улăштарасшăн чăркăшланчĕ? Алă кĕçтет-шим çын япалине кĕшĕклеме тытăннăскерсен, хăйсен майлă тăвас килет-ши чунтанах? Укçа пирки сăмах пырать пулсан, ăна тӳрех ыйтмалла, турткалашса тăмĕ автор. Е пая кĕрес тесен, мĕн те пулин хăвăнтан хушмаллах-ши? Çапла пуль çав. Унсăрăн мĕнле-ха валĕ илĕн? Мĕн шутлать, ав, Ятшыв пирки халь Каврăç Ваçуь? Ăна та, япалине çĕмĕрмен тĕк, усал сăмахпа пач шарламастчĕ.

– Литература хирĕнче темли те пулнă ĕнтĕ, – сăмах хускатать кун пирки Элекçипе калаçнă чух Васук.

– Хутла пĕлмен малтан халăх. Вăтăрмĕш çулсенче пурне те çутта кăларнă пулин те, çыракансен йышĕнчен пурте чĕлхе ыйтăвĕсене витĕр чухлайман пуль. Редактор калемĕ кирлех пулнă кусемшĕн.

– Халь те вĕçленмен-ха ун пеккисем. Пур агроном, тимĕрç, çар çынни, штатри чиновник пĕр йăнăшсăрах çыраççĕ-ши, калăпăр, малтанхи япалисене? Ун пеккисене пулăшма та лекĕ. Калăпа тытăнтарас тĕлĕшпе те чылай вĕренмелле паллах. Выл тăтăш асăнать-ха: «Малтанхи япала çынна тара тытмасăр пулмасть, – тет. Хăй кама çырса панине асăнать. Тĕрĕсси те пулĕ çавăнта. «Сущность юлать вăл» – тет япала çĕмĕрĕлес пирки.

– Кĕнеке кăларнипе кантурĕпе унти çыннисем мар, патшалăх çеç тупăш илет. Тен, çавăнтан та килет ку? Тата халăха чăнлăха пĕлтерессинчен те сыхланнă вăтăрмĕш çулсенчен пуçласах. Редактор çирĕп алăллă пулмалла пулнă ун чухне. Халĕ те çавах. Иртнĕ вунă çуллăхра тепре кĕретĕн вăй илчĕ вăл. Куна халь ак, сакăр вуннăмĕш çулсен çурине çитсен, пытармасăр калама пуçларăмăр ĕнтĕ. Анчах часах вĕçленмест-ха малтанхи туртăм.

– Çак иртнĕ тапхăрта вара, редактор алли çирĕп пулмалла тенипе усă курса, влаçрисене темле те пуйма ирĕк панипе, вăйланса кайрĕ автор япалине ним мар аркатасси, литературăра вăрă-хурахланасси.

– Шутла-ха, Васлей, каларăм вĕт: пĕчĕк шалупа ларакан ахаль редактора мĕн усси сан япалуна пичетлесе каларнинчен? Хăть япăх япала тухтăр, хăть лайăххи – ятлĕç-ха е мухтĕç сăмах май, анчах уншăн, алă пусса кăлараканĕшĕн, ни ăшă, ни сивĕ: шалу мĕнле пулнă çаплах юлать.

– Автор та кĕнеке тухсан хăнк та тумасть пĕрре: тӳленĕ ăна, хăть вулаччăр, ан вулаччăр япалине; хăть тӳрех кивĕ хут купипе пĕрле таса хут тума ăсатчăр вăл çырса кăларнине! Шалăва пырса тĕкĕнмест. Пурах çавнашкаллисем.

– Ремесленниксем йышланчĕç те ĕнтĕ çак тĕле. Кăшт май килтерейменнине чăн-чăн ăстасем пулăшнине кура тепĕр йăх-яхĕ, пур ăçти çук шăкăриех шăтса тухрĕ пуль, çумăр хыççăнхи кăмпа евĕр тислĕк купи çине. Автор шутĕнчен хăйпăтса илмесĕр апачĕ те анми пулчĕ-тĕр çав чирпех чирлесе кайнă этеммисен, ку яхăнта кĕнеке кунтурĕнче хĕсĕнкеленисен.

– Итле. Ваттисен сăмаххи те пур. Ĕлĕк пĕри вăрман хуралçине кĕрет тет. Пурăнать – пурнăçĕ хĕсĕкрех тет. Кантурĕнче хайхи: «Укçа çитмест, шалу пĕчĕк», – тесе калать тет. «Йывăç хуппи кăшла, йывăç хуппи кăшла», – хуравлать улпучĕ. Ăнланаймасть çын. Тепĕр вăхăтран каллех: «Пурнăç хĕсĕк, укçа çитмест, шалу пĕчĕк», – тет. «Йывăç хуппи кăшла, йывăç хуппи кăшла», – пӳлет каллех хуçи. Аран ăс çитерчĕ вăрман хуралçи, лесник: йывăç каса-каса сутма пуçларĕ тет вара вăл. Çавна аса илтерет кĕнеке кантурĕнче ĕçлекенсен пурнăçĕ. «Кĕнеке кăшлăр, кĕнеке кăшлăр», – теççĕ те пуль аслă хуçисем, тарçисем вара автор шутĕнчен хăйпăта-хăйпăта илеççĕ.

– Тата хăйсен чĕлтĕр-челтĕр хайлавĕсене пичетлеççĕ. Кĕнекен те, журналсенче те. Алла ал çăваççĕ пĕр-пĕринпе унта шăнăçнисем.

– Унта çеç мар, Элекçи, кам ăçта ĕçлет, çавăнта «хупă кăшлать» халь. Системи пирĕн кулăшла: тупăша кура мар тӳлеççĕ, тарификацие пăхаççĕ.

– Тата патака.

– Ак вăрлама, унтан-кунтан турта пуçларĕç тавралăхĕпех.

– Кĕтӳре – тĕрлĕ выльăх, халăхра та тĕрлĕ çын. Ытларах ырри.

– Мĕне курса, мĕне пĕлсе ӳснинчен килет çын хăйне епле тытасси. Пĕрне пĕр япала çăмăллăнах çыпçăнать, теприн çумне вăйпа çыпăçтарас тесен те çыпăçтараймастăн – хăть ыррине, хăть усаллине.

– Шалăва ӳстерессишĕн вылятпăр. Ăмăртса. Ĕнер пĕр йышши пилĕк-çурăм авакансем сăлтав тупса ĕç укçи хăпарттараççĕ хăйсенне. Паян теприсем çаксенчен юлмаççĕ. Пĕр-ик карт сиктереççĕ çӳлелле. Тупăш илнине пăхмасăрах. Эпир хамăр та хур пуласшăн мар. «Шалу хăпартăр пирĕнне!» – тетпĕр. Çапла вĕçĕмсĕр ума сиксе тухмалла вылятпăр. Таврĕ таçта? Ак халăх аллинче укçа-тенкĕ шучĕ ӳссе кайрĕ те. Кӳпчекленсе хаплатмасан юрĕччĕ.

– Çурт-йĕр тăвакансем çапла калаççĕ: чипер тӳрĕ хăма та хĕвелпе-çумăрпа аврăçать. Таçта аврăçтартăмăр пулмалла хамăр пурнăçа. Тӳрĕ хăмах кункăраланчĕ. Çавăн пек туйăнать мана.

– Хăмине кирлĕ пек тикĕс хуман çав. Ак мĕнле пуçланнă авăрçма. Хăçан тӳрлетме тытăнăпăр пурнăçăмăра?

Каçартăр вулакан, ытлашши шала кĕрсе кайрăмăр-ха шутла-шутла. Каврăç Ваçукь ал çырăвне куçарма алла тытнă çын кăмăл-сипет енчен мĕнлескер-ши? Мускаврa пурăнатьха ĕнтĕ вăл, ялта мар. Пурнăçа епле майлаштармаллине курса ӳснĕ-ха ĕнтĕ, унсăрăн çӳлеллех хăпараймăн ку яхăнта. Редактор çыру ячĕ-ха, производствăна паратпăр ĕçе тесе пĕлтерчĕ. Куçарăвăн копине – машинкăпа çапнă иккĕмĕш экземплярне – автора паллаштарма куçаруçă ярса пама кирлĕ тенĕ. Лешĕ халь пĕр сăмах та шарламарĕ – çырупа чĕнмерĕ.

Çитрĕ корркутура вулас самант! Мĕнле çĕкленсе каять ун чухне автор чун-чĕри! Вулать çын, хавхаланса вулать. Калăпăшне пĕчĕклетнĕ – пĕчĕклетмелле пулнă пулсан, хĕстерччĕр эппин, ку вăл оргинал мар, куçару çеç. Прологсăр пуçне нимĕн те кăларса пăрахман, анчах ытларах çĕрте автор мĕн çырнине каласа кайнă кăна; сăнламан, сăнарламан. Шкулта изложени çавăн пек çыртаратăн: вуласа паратăн та текста, ача тăрмашать; ытларахăшĕ – «тăваттă-тăваттă» илекенĕ – кĕскетсе, анчах содержанине пăсмасăр çырать. Çавнашкал туйăнать ку куçару. Ним улăштарман тенĕрен пĕчĕк-пĕчĕк улшăнусем пур, анчах вăл тĕп шухăшран, калас тенинчен пăрăнмасть. Пĕр-икĕ хушамата урăхлатса

каланă-ха, ку та япалана çĕмĕрмест. Кĕскен палăртсан, вăтам куçару. Лайăх пултарас килетчĕ те авторăн, юрĕ ĕнтĕ, кунпа та çитĕ. Чăвашсен чылай япали çурри хулăмăш чухлĕн куçарăнса тухнине те асăрханă-ха Каврăç Ваçукь ку яхăнта.

Мĕнле наборланине тишкермелли тĕркене илсен çав кунах Элекçи патне чупса кайрĕ Ваçук: савăнăçне хыпарлама, чĕрере кăшт тем ыратнине пĕрле пайлама.

– Вулакансем асăрхамалли япалах пулса тухайман, – терĕ Ваçук шăллĕне.

– Тем пит ăнăçлах май килсе пĕтмерĕ сан. Чăвашла пач пăсса кăларчĕç, кунта статья евĕр пулса тухнă.

– Журналист алли тимленĕ, художник писатель мар. Динамика юлнă-ха. Тен, кĕнеке юратакансен пысăк йышне шăпах çавăн пекки кирлĕ.

Çапла малтанхи ик страницăпа паллашсанах ытлашши мухтанмалла маррине туйрĕ автор.

Мускав телефонпа калаçма чĕнет. Хăйĕн урок çук тĕл килнĕ пушă вăхăтра çыхăнчĕ почтăна кайса Ваçук. Редакторах пулчĕ шăпах лерен калаçаканĕ.

– Мĕнле унта пирĕн куçару? – ыйтрĕ тӳрех вăл, хĕрарăм.

– Юрать пек. Стилĕ наукăпа популярлă литературăн ĕнтĕ.

– Мĕн тăвăн, куçаруçăн çитменлĕхĕ ĕнтĕ вăл.

– Çурри ытла вуларăм-ха эпĕ. Тепĕр ик-виç кунтан вĕçне тухатăп.

– Вуласа тухăр. Ал пусăр та почтăпа ярса парăр. Халь мĕнле йăнăшсем асăрхарăр?

Каврăç Ваçукь хăш страницăра епле сăмаха е йĕркене тĕрĕс мар наборланине асăнать – текста тĕкĕнме шутламасть те вăл.

Вăхăчĕ çитет. Шăп çеç кĕçĕн ывăлĕ аслă çар училищине вĕренсе пĕтернĕ тĕле килчĕ Мускавран бандероль. Епле хĕпĕртет, епле хăпартланать автор – унăн япали Мускавра тухнă! Шăллĕ патне чупрĕ – ăна кăтартать; çуллахи отпуск вăхăтĕнчи учительсемпе тĕл пулать – вĕсене паллаштарать. Ывăлне, тин лейтенант ятне илнĕ çар офицерне, службăна ăсанас умĕн парнелет; хула вокзалĕнче Пĕтĕм Союзри ăмăртăва кайма пуçтарăннă çăмăл атлетсене тĕл пулать те

тренерне тыттарать; писательсенчен ал çырăвне чи малтан пăхса тухнисен ячĕпе Союз правленине кĕрсе çыра-çыра хăварать. Кĕнеке кантурĕнче хăйпе пĕр чунлă тусĕсене курма тăрăшать. Шел, Хурамак ĕçлемест иккен халь кунта, чирлĕскер пăрахнă терĕç. Унпа ăш-пиллĕн калаçасшăнччĕ – май килмерĕ. Чĕкеççи те пăрахса кайнă, культура енĕпе тепĕр çĕрте тимле пуçланă. Троллейбуспа пынă чух курчĕ поэтессăна ял çынни. «Кĕнекӳне туянтăм, Сертесемпе Шехвисене сăмса шăлса янă эс», – сăмахлать ку. «Эп сана хам алă пусса парнелетĕп», – сумкинчен кăларать магазинтан туянса тухнă кĕнеке тĕркинчен пĕрне автор.

– Унта халь пур муталашкăсем туратти-тымарĕпе çыхланса ларса вырнаçрĕç, – сăмахлать харсăр сăвăç хăй тинтерех ĕçленĕ кантурти ĕç-пуç çинчен юмахланă май.

Ытти палланă çынсем те урамра-мĕнте тĕл пулсан Ваçука:

– Саламлатпăр, – теççĕ ырă кăмăлпах.

– Союз членне кĕнĕ-и эс? – куна Курнила ыйтать.

– Вăл тĕлĕшпе пуç çапса çӳремен эпĕ.

Курнилана шел. Хĕллехи хаяр сивĕре, каçхине, ӳсĕрпе тăрăнса анса ик аллине те тăм илтерет вăл, пуç пӳрнисĕр пуçне ытти сакăр пӳрнине пĕтĕмпех татаççĕ унăнне. Унран та ытларах шел тепĕр юлташа, маларах «çум çакки» тесе асăннине. Ӳсĕрпе уйра тăрăнса анса шăнса кайнипе ĕмĕрлĕхех куç хупать. Ялти шкул ачисен çурхи каникулĕ вăхăтĕнче ытлашши сивех те мар кунра кăшт çеç килне çитсе ӳкеймен. (Василь Васильч ун чух Мускава кĕнеке кăларас ыйтупа малтанласа калаçса пăхма тесе кайнăччĕ.) Кам ĕнтĕ тек ăмăртусенче хăй класĕнчи ачана: «Манăн, манăн», – тесе калатăр? Пурнăçăн хăйĕн тытăнки. Каврăç çаплах-ха кĕнекипех супать.

Тепĕр çулне Мускавĕнче те пулчĕ вăл. Унăн куçаруçи канма кăнтăра кайнă терĕç. Редакторĕпе паллашрĕ. Пысăк культурăллă хĕрарăм пек туйăнчĕ вăтăр-вăтăр пилĕк çулсенчискер, ытлашши çӳллĕ пӳллех марскер.

– Кĕскетме лекрĕ. Вăйлах куçараймарăмăр. Хам чылай чĕрлĕтертĕм, – каçару ыйтнăн калаçать вăл. – Спортран аякра тăракансемпе çыхланас темерĕмĕр.

– Тавтапуç, – тет автор ăна чунтан-вартанах.

* * *

Хура тинĕс хĕрри. Чăваш çĕрĕнче, Ваçук кунта тухса килнĕ чух, çил-тăман çавăрттаратчĕ, хӳтĕ вырăнсемпе карта-хуралтă çумĕсене юр хĕве-хĕве лартатчĕ. Кавраç вăй хуракан темăпа çыракан çамрăк литераторсен Пĕтĕм Союзри семинарĕ пулать тесен, хăйне унта хутшăнмашкăн хуларан сĕнсен, хавасланса кирлĕшрĕ ял çынни; шкул тытса тăмарĕ: «Каях», – терĕç вĕрентӳ ертӳçи те, директор та, роно пуçлăхĕ те.

Килти ĕçе пуçтарса хăвармашкăн тимлеме тиврĕ çул умĕн. Шăпах вутă кӳрсе килме тĕл лекрĕ. Хаяр сивĕпе хăрнă юмана çурла уйăхĕнче касрĕç те арçынсем ушкăнланса, халь çавна турттарса климе ĕç уçăлчĕ; унтан алăк умне çитерсе тăкнăскерне юр айне пуличчен татса тирпейлес терĕ Ваçук. Кĕрхи уяв умĕнхи ерçӳллĕ вăхăтра моторкăпа таттарчĕ те кӳршĕсемпе çыхланса, çурса купаласах хăварчĕ вунă кубла метр юман вутта Кавраç Ваçукь.

Шăм-шак, ах, сурать-çке; пилĕк, радикулит текенни, ай, сӳлетет, этсемри. Самолет çинче канчĕ пуль çын. Кăнтăра вĕçсе çитрĕ те ав, унта – чипер кăна хĕвеллĕ кĕркунне. Çу иртсе кайман та-çке тетĕн хĕпĕртесе.

(Çак кунсенчен пĕринче тăван хулара Хурамака юлашки çула ăсатнă. Ун çинчен килне таврăнсан çеç пĕлĕ Ваçук.)

Пĕрешкел темăпа çыракансем вăтăр çын ытла пухăнчĕç Хура тинĕс хĕррине.

... Метр. Вĕрентекенсенчен пĕрне чи малтан çапла ятпа чĕнчĕ Кавраç тантăшĕ – Мускав çынни.

– Метрах мар-ха эп, Сашенька, – хăйне ырă хакпа палăртнипе килĕшесшĕн мар пек сăмахларĕ çичĕ прозаика пĕрлештернĕ ушкăна ертсе пыракан писатель, анчах сассинченех çав хакран ютшăнас марри сисĕнчĕ.

Тĕрлĕ çынна куркаланă Ваçук çур ĕмĕр ытла утса тухнă çул-йĕрĕнче. Çавăнпах-ши, Метр ăна тахçантанпах пĕлнĕ скер пек туйăнать, анчах ăçта курса пĕлме пултарнă? Кинофильмсенче, илемлĕ произведенисенче ĕç тăвакан пысăк вырăнти çынсене çавăн евĕр ӳкерсе кăтартаççĕ хăшĕсем. Чăн пурнăçра унашкаллине тĕл пулманран писательсем, ӳнерçĕсем юри çапла сăрлаççĕ тесе шутланă кун евĕр сăнар пирки ял çынни; пурнăçра, чăнах та вара, чĕрĕ çынпа

ун пеккине тӗл пулманах. Канашлусенче пӗри каланине пит тимлӗн, куҫран пӑхсах итлеме пӗлет кускер пӗр самант, анчах шӑп ларнӑ ҫӗртенех лешӗн майлӑ мӗнле те пулин сӑмах хушса хуратех. «Парас-илес» ҫӗре хӑвӑрт кӗрет темелле-ши ун пеккине? Чи малтанхи пурте тӗл пулнӑ ларурах, пӗр-пӗринпе паллаштарнӑ чух, Кавръс Ваҫукь те хӑй пирки: «Чӑвашран, ялти учитель. Ҫырни нумай, сахал пичетленетӗп», – терӗ, ку вара, унпа юнашар пӗр ҫын урлӑ лараканскер: «Пуҫ сывӑ пултӑр, ӗҫӗ майлашӑнать», – тесе хучӗ. Тава тивӗҫлӗ спорт мастерӗ, хӗрарӑм, ҫакӑнта ӑмӑртӑва хатӗрленсе пурӑнаканскер, хӑйӗн ҫулӗ-йӗрӗ ҫинчен кӗнеке те ҫырса кӑларнӑскер, шӑпах Кавръс Ваҫукь хайлавне куҫарнӑ ҫын ячӗпе: «Тӗнче чемпионатне ҫутанӑ чух эп пач каламан сӑмахсене кӗртсе лартнӑ. Пит хӗрелсе каймалла мухтанчӑк пулса тухатӑп», – терӗ те, Метр ҫавӑнтах хушрӗ хучӗ: «Тинӗсе сулласа ывӑтас эппин ӑна е телеграмма ҫаптарас, сана шӑл хӑйракансем нумай тесе. Ан килтӗр кунта!» Чӑнах, Ваҫукӑн куҫаруҫи, ҫакӑнта пулмаллисен списокӗнче тӑрать-мӗн, анчах тем сӑлтава пула ҫула тухмасӑр чарӑнса тӑнӑ лешӗ. Ун юлташӗ пур вара кунта.

– Пӗлтӗр Мускавра кӗнеке тухрӗ. Сан пулчӗ-и вӑл? – ыррӑн пӑхрӗ Ваҫука хирӗҫ ларакан Воронеж ҫамрӑкӗ.

– Куҫараканне пач куҫпа курман-ха хам, калаҫман, – ним чӗнес мартан сӑмахларӗ Ваҫук.

– Ан та килтӗр: епле сӑнӑсем карӑнтарнӑ ун енне. Ха, чӑвашла вӗреннӗ пулать-и-ха тата вӑл, пур ҫӗре те ҫитме ӗлкӗрекен вӑрт-вартскер, – тесе хучӗ хайхи ҫын, Метр, куҫаруҫӑ ячӗпе.

Канашлӑва пӗтӗмӗшле ертсе пыраканӗ, Раҫҫейри писательсен Союзӗн секретарӗ, Пӗтӗм Союзри пӗр ушкӑн ҫыравҫӑсен федерацийӗн председателӗ, шӑпах чӑваш ҫыравҫисен аслӑ пуххинче пулнӑскер, кунта вӗрентекенӗсем кам-кам пулнине асӑнса вӗсемпе паллаштарнӑ май, Метр патне ҫитсен, унӑн ятне-шывне пӗлтернӗ хыҫҫӑн:

– Спортпа таччӑн ҫыхӑннӑскер, футболист, хоккеист, – терӗ.

– Пулнӑ ҫав, пысӑк ҫылӑхлӑ мар-и, – пӑркаланса илерех куҫне ҫутӑлтарчӗ ку.

– Калӑр-ха, хӑш командӑра выляна эсир? – пӗлесшӗн пулчӗ Воронеж ачиех.

Метр хăй клубĕн ятне асăнать.

– Футболла та, хоккейла та ялан çав командăн ултă çул хушши пĕр улшăнми вратарĕ пулнă, – хĕпĕртесех сăмахлать ку вара.

Шалпартарах сарă куртка, кăвак нейлон брюки – çапла спортсменла тăхăннă вăл. Çанталăкĕ ăшăран куртка вăчăрине вĕçертсе йӳле янă. Утнă чух малалла ӳпĕнерех пырать.

Ертсе пыраканĕсенчен хăшĕ те пулин, черетпе, пĕтĕм ушкăн умĕнче калаçу ирттернипе пуçланать те кун, çакскер хăйне уйăрса панă самантĕнче ыттисенчен пачах расна, çынпа çын пупленĕ евĕр калаçрĕ, палăртнă хушă чухлĕ пĕр сехет мар, ик сехет çурă шапăлтатрĕ. Чи аслисем шăппăн туха-туха шăвăнчĕç-ха: вĕсене хăйсен сĕтелĕ кĕтет. Çырас енĕпе çанна тавăрсах ĕçлеççĕ май пур чухне кунта вĕсем. Семинаристсем çăвар карсах куçлаççĕ-ха Метра. Ăна тăнланăçемĕн эсĕ çĕр-шыври спорта ертсе пыракан тĕп çурта, чи асли патне кĕрсе тухатăн. Спортăн тĕп пуçлăхĕпе футболистсен тата хоккеистсен тренерĕ епле ятлаçнине тăнлатăн. «Тава тивĕçлĕ тренер ятне епле туртса илтĕр, çапла тавăрса паратăр», – тени те хăлхана кĕрет.

– Çав ята тепре пачĕç те ăна, – сăмах хушать итлекенсенчен пĕри, Ваçук тантăшĕ Саша, туллиленнĕ çӳллĕ çын, туртакансене пач килĕштерменскер.

– Пĕлнĕ те-ха вăл хăйĕн вăйне, хăйсĕр ĕç кăларайманнине, – куна урăххи калать. Спорт ют мар çакăнтисене нихăшне те – мĕн пулнă-иртнине чухлаççĕ.

Метрпа пĕрле эсĕ тĕнчери спортăн пысăк форумĕсене çитетĕн, паллă спортсменсемпе калаçатăн. Акă журнал валли «йăлтăр çăлтăртан» интервью илсе статья çыратăн та пичете ярас умĕн çыннине килĕшнĕ тесе ал пустарма ун хваттерне каятăн. Лешĕ килĕнче шăпах арăмĕпе пĕрле телевизор курса ларать-мĕн. Иккшĕ те трусси вĕççĕн çеç. Арăмĕн йăлтăр симĕс трусси. «Эп калаçнă пек мар, пачах ман сăмахсем мар», – алă сулать çеç материала вуласа кăтартсан килĕшмесĕр «çăлтăр». Кĕнĕ çын ăна çавăрасшăнах, апла та капла йăпăлтатать. «Юлташсем мĕн калĕç, эп ун пек калаçатăп-и?» – шатах чăхăмлать лешĕ. Çыннин чĕлхинче вара пĕр пуплеврех йĕркеллĕ этем ывăл-хĕрĕн çăварĕнчен тухас çук, хут çине çырма юраман намăс сăмахсем шăкăр-

шăкăрах-мĕн. Тепĕр кунне вара матч пуçланас умĕн маларах пырать аренăна Метр. Хоккеистсемпе калаçать, вĕсене хăй майлă çавăрать, «çăлтăра» ўкĕтлесе наборланă статья айне алă пусма сĕнмешкĕн ыйтать. Çитет хайхи лешĕ. Сырса илеççĕ ăна юлташĕсем.

– Тепĕр ик çĕр çултан сана пĕлекен тупăнать, – теççĕ çакна.

– Ик çĕр çултан?! – çăварне карса пăрахать ку.

– А тата! Журнал упранать-ха та вăл.

– Апла пулсан, ал пусам, пар статйине, – килĕшет спорт «çăлтăрĕ».

Метра итлесе ларнă май çавнашкал анекдотла япаласене татах та татах пĕлетĕн.

– Спорт çинчен çырнисĕр пуçне урăх мĕн пирки хут вараланă-ши эп? Çырман та пуль урăххине, – тет çаксккер хăйпе хăй калаçнă евĕр.

Ал çеммийĕ мĕнлерех-ши çыннин? Кайран, киле таврăнсан, районти библиотекăна кайса илет-ха ун кĕнекине Каврăç Ваçукь вулама. Калаçнипе çырасси пĕр мар-çке – ку вăл икĕ япала. Ытларах шухăшласа çўрекен, калаçма мăрамраххи, чĕмсĕртерехи çырура ăнăçлăрах пулать. Хăй çинчен нумай пĕлтерме юратаканĕ вара, тĕпрен илсен, хăй ятне çĕклет, çапла майпа пурăнма, ыр курма фон тăвать.

– Метр калаçни мĕнле: килĕшет-и? – ыйтрĕ Ваçукран апат сĕтелли хушшинче литконсультант хĕрарăм, çамрăксккер. – Мана тем пекех.

– Кайран, вĕçĕнче, хаклăпăр, – терĕ чăваш.

Метр – кĕнеке çапса кăларакан пысăк вырăнти çын. Хўхĕм лава виçĕ лаша кўлсен, пĕри тĕпре пулать, иккĕшĕ – пичевре. Шăп пичевре пыраканни Метр. Ун пекки енчен енне пăркаланать, чупнă-юртнăçемĕнех вылянса илет; тĕпре пыраканнинчен ытларах та ĕç тăвать тепĕр чух; пурнăç юхăмĕнчи çанталăкне те çав пичеврисемех палăртаççĕ. Нумай, пит нумай килет çак Метртан кам та пулин çыру уй-хирне тухасси, унта ана уйăрса илесси. Тĕпре тăраканнинчен те йышлăрах пуль унăн палла тăранĕ, ĕçе-хĕле шăпах вăл май килтерсе пырать. Чăвашла асăнсан, чĕлхепе таçта та кĕрсе тухакансккер, пў-çири тума çынни сисиччен йăпăш хывса илме пултараканскер пек туйăнать Ваçука вăл. Тен, йăнăшать.

Пушă вăхăтсенче кампа та пулин иккĕн, сайра-сайрара виççĕн кану çурчĕн аллейисемпе пит кĕрнеклĕн утса çӳрет вара çакă. Ав Мускав çыннипе, Ваçукпа пĕр тантăшскерпе, газонсем тавра хуллен, пит хуллен утаççĕ. Сашенькăпа мĕн сӳтсе яваççĕ-ши çав тери?

Тепĕр кунне Нева çинчи хулари хулăм саслă, сăмахпа сăмах хушшинче тытăнса тăрарах калаçакан çӳллĕ хура çынпа, пирус нумай туртаканскерпе, çул еплерех тикĕссине тĕрĕслеççĕ...

Çичĕ çыравçă хăйсем тĕллĕн малтан пухăнсан, камăн ал çыру пур, çавсенне ытти юлташĕсене салатса пачĕ Метр.

– Вулăр, пĕр-пĕринне вулăр, – сĕнет вăл вашаватлăн. – Эп хам хăвăрт вулатăп, пит хăвăрт вулатăп. Ĕлкĕретĕп паллашма кайран та. Хăвăр пĕр-пĕрне тишкерĕр.

Тепĕр калаçу умĕн ак: «Семинарта пулнипех писателе тухаймаççĕ пуль. Калаççĕ семинарсен усси пысăк мар тесе. Эп те çавнашкал вĕренĕве пысăках хумастăп», – терĕ.

«Ман ал çырусем сирĕн патăрта-и? Хăçан пăхаççĕ?» – аса илтерчĕ Каврăç Ваçукь ăна Мускава маларах ярса панă япалисем пирки. «Сана чи кайран пăхатпăр. Вичкĕн чĕрнесемпе ярса илетпĕр», – пӳрнисене саракласа, питкуçне тискер тĕс килтерсе лĕхлетрĕ Метр. Кулать çын чунтанах. Шӳте пач ăнланмасть мар-ха чăваш ачи.

Метр хăй камăнне те пулин вуласа тухрех-ши? Нева çинчи хула ачин тата тепĕр çамрăк москвичăн ал çырăвĕнче поля çине хытă кăранташпа йăрт туртса паллă тунине асăрхарĕха лешсенне вуланă чух Каврăç Ваçукь. Кайран шăпах çав тĕлсенчи пуплевсене тĕслĕх илсе кăтартса, чĕлхе енчен пит тимлемелли пирки сăмах тăсать Метр. Сашенькăн ал çырăвĕнчи тĕп геройăн ятне те авторĕнчен ыйтать. Нева ачине: «Сан тухнă кĕнекӳне производствăна яриччен мана кăтартрĕç. Астăватăп, халь астуса пыратăп», – тет. Темлеçке? Чăваш тытса пăхмасăр ĕненмест теççĕ те, çав япала Ваçук çумне ытларах та çыпçăннă пулмалла – пĕтĕмпех хăй курса хакласшăн вăл.

– Произведени пулса тухнă тейĕпĕр. Картне лартнă, – пĕтĕмлетрĕ Метр çынсем калаçнине итленĕ хыççăн вăрăм сăмахĕ вĕçĕнче çак виç автор пирки кашни хутĕнчех.

Иккĕшĕнне вуланă та чухлать япали мĕн иккенне Ваçук.

Тикĕслемелли, танлаштармалли пайтах-ха вĕсенче, анчах Сашенька хайлавĕ ун аллине лекмерĕ. Ку авторĕ теприн ал çырăвне пăхса тухнă чух пĕр сăмах та Васçук чунне килĕшмелле калаймарĕ: мамлать, мамлать, тем çăрать. Пичетленнĕ кĕнекесем çинчен пайтах статья вулана, шалти рецензие те пĕрре мар курнă, хăй те тишкерӳ çырнă (кун пекки те пулнă), шкулта ĕмĕр тăршшĕпе произведенисене тĕпченĕ çынна, Ваçука, Сашенька тем сӳпĕлтетнине итлеме те кăсăклă мар. Хăй йĕркеллĕ япала ăсталама пултарайĕ-ши çав çын тесе шутларĕ вара Каврăç. Нева каччин ал çырăвĕ çинчен чунне уçса каларĕ-ха вăл. Хăш-пĕр вырăнсем ытлашшине, ун шучĕпе, мĕнле вăйлатмаллине асăнчĕ. Повеçĕ спорт çинчен те мар; эппин, ирĕксĕрлесе унталла туртма кирлĕ маррине палăртать ял çынни. Метр ак ăна итленĕ май тутине йĕрĕннĕн пĕрет. Нева ачин тепĕр хулăм ал çырăвĕ пурччĕ. Ăна чăваш тытса пăхаймарĕ. Ним калаçусăрах юлчĕ кӳпчеке çыру.

– Каврăç Ваçукĕн виçĕ калав, подстрочниксем, тата тухнă кĕнеке пур, – терĕ пĕр лару хыççăн Метр. – Калавĕсене хатĕр тесе йышăнма май çук, илемлĕ куçару мар. Ман шутпа, тухнă кĕнекине пăхăпăр. Авторĕ мĕн шутлать ун пирки, уйрăммăнах чĕлхе енчен епле хаклать? – çатăр пăхать Ваçук еннелле Метр. – Урăх экземпляр пур-и сан хăвăн?

– Пур.

Тата икĕ ачана пачĕ Мускавра тухнă кĕнекене авторĕ.

* * *

Хăйĕн япалине семинаристсем пикенсех вуланине асăрхаса (Нева Володи спектакль курма кайнă чух та алăран ямасть) хавхаланать Каврăç Ваçукь: паллашчăр çав ун хайлавĕпе, пит ăстах куçарман пулин те вулмалăх пур тесе шутлать хуçи, мĕншĕн тесен ытти пĕлекенсем «вуларăмăр, аван» терĕç сăмах хушса. Тĕрĕсех те пуль, халăхăн пысăк йышне ĕçсем еплерех пулса иртине сахалрах пуплевсемпе каласа пани те çителкĕлĕ мар-и.

Тӳррипе илсен вара вуласа вĕçне тухма та ĕлкĕреймерĕç Хура тинĕс хĕррине пуçтарăннă харпăр хăй çыраканĕсем – сӳтсе явма та черет çитрĕ чăваш ачинне. Малтан тепĕр çамрăкăн ал çырăвне пăхса тухрĕç-ха ку кунхине. Тинĕс хĕрринче çине витнĕ пляжра тамчамсем çине вырнаçнă пурăшĕ Метр ертсе пыракан ушкăнрисем.

– Ха, ăçтан калав манерĕ килтĕр çак япала? – тет Саша çамрăк çыравçă хайлавĕ пирки. – Пысăк мар, вуласах парам-ха.

Тапчам çинче выртсах тăнлать çын саспа вуланине Ваçук. Сюжечĕ çапла: пĕр колхоз команди тепĕр колхоза футболла выляма каять. Пăтăрмахлăн харкашма тытăнаççĕ вĕсем. Кулă та килет. Ваçукпа тантăш çын, Сашенька, ак пахалама пуçлать, тем мамлать, тем пакăлтатать, хăйĕн пĕр сăмахĕ тепĕр сăмахне хирĕçлет.

– Эп калав куратăп кунта, – сăмах илчĕ вĕçнерехре Кавраç Ваçукĕ. – Ача-пăча валли шӳтлĕрех япала тума май пур.

Калать кĕскен хăй шухăшне чăваш ачи тепĕр вырăс яш кĕрĕмне пулăшас тĕллевпе.

– Ку авторăнне урăххине вуланăччĕ эпĕ. Юрать-и ун пирки асăнма?

– Кала, кала, – ирĕк парать ертсе пыраканĕ Метр.

Калавĕнче çӳллĕшне сикмешкĕн хатĕрленнĕ чух хĕр атлет, «çăлтăр», ура шăнăрне амантать. Тренерĕ: «Урăххине тупатăп», – тет ним кулянмасăр. Çавăн çинчен сăмах пырать хайлавра. Анчах авторĕ ăна пит вăрăма тăсса янă, çавна май тĕп шухăша тытса илме çук, çын пурнăçĕнче (карьеринче) трагеди пулса иртни те, теприн чунсăрлăхĕ те асра юлмасть. Калава хакланă май, Ваçук ăна вĕçне çитеричченterех татса парахма сĕнет. Метр куна итленĕçем тутине пĕрсе йĕрĕннĕн тинкерет.

– Хам шухăша калатăп эп. Автор мĕнлерех тăвать – унăн ирĕкĕ, – тӳрре тухать ăс параканĕ, семинарти чăваш, ял çынни.

Метр вара хăй сăмахне малтанхи калав пирки:

– Кавраç кунта ача-пăча валли сĕнчĕ. Вĕсене çапăçса харкашма вĕрентмелле-и? – тесе пуçларĕ.

– Ачасене унашкал юраманнине чухлаттарса илтересшĕн эпĕ, – пĕлтерчĕ Ваçук хăй шухăшне.

– Мăннисем валли сатира йĕркелемелле тесен хăть, – малалла тăсать ертӳçĕ Метр.

– Ун пек те юрать, – килĕшет Ваçук.

Леш ачи, авторĕ, спорт енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ тренер, вăтăра çитейменскер, пĕр шарламасăр пит тимлĕн итлесе ларать.

– Чӗлхе культури пирки асӑнмалла, пӗтӗмӗшле культура ҫинчен калаҫмала, – тӑсать сӑмахне Метр. – Сана пулӑшма пултаратӑп, Феденька. Пӗрле юнашар ларсах ҫырма вӗрентӗттӗм. Вӑхӑт пулсан.

Ҫур сехет ытла калать вӗт Метр, анчах сӑмаххи пӗтӗмпех «чӗлхе культури» ҫеҫ. Аса илет ҫак тем те, такама та. Чаплӑ писательсен калавӗсенчи уйрӑм абзацсене ҫыра-ҫыра пӑхса тишкермеллине асӑнать. Вӗренмелле эппин. Пӗр паллӑ писатель ятне асӑнать – романӗнчи чӗлхе кӑлтӑкӗсене пула Метр кӗнекене кӑларттармасӑр тытса тӑнӑ-мӗн. Кайран вара ҫултаlӑк ытла калаҫмасӑр пурӑннӑ имӗш леш автор унпала. Хӗрӗх страница таран ӗҫленӗ те – малалла ниме тӑмасть иккен хайхин чӗлхи. «Вӑхӑт ҫук унпа ларма, сюжет хӑвалать», – тенӗ пулать авторӗ. Ҫавсене аса илсе тата ыттине те хыпарласа, ҫамрӑка вӗрентет те вӗрентет Метр. Тӳррипе илсен, произведени тытӑмӗ епле калӑпланмаллине ӑнкараймасть, вырӑнсӑр каласа кайнисем йышлӑ, шухӑша витӗмлӗрех кӑтартаймасть – ак тӗп ҫитменлӗх ачин. Ун ҫинчен сӑмах та ҫук Метрӑн.

Черетре – Ваҫук. Ӑна тишкереҫҫӗ. Саша яланхи пекех малтан хускалать. Мӗн пакӑлтатрӗ вӑл – ӑнланса пӗтеймерӗ автор. Хурларӗ-ха, тиркесе тӑкрӗ тухнӑ кӗнекене. Ҫавӑ ҫеҫ.

Нева ачи Володя та, театра кайнӑ чухне те кӗнекене алӑран яманскер, ҫав маях юрларӗ. Куҫаруҫӑн юлташӗ, ҫамрӑк ҫын:

– Эп малтанах пӗлетӗп ку кӗнекене. Куҫарнӑҫем машинистка патне леҫсе тӑраканни пултӑм, кантура хутларӑм. Кайран редактор та нумай улӑштарчӗ. Подстрочникӗ тӗл-тӗл ӑнланмалла та марччӗ авторӑн, – терӗ чӑннине.

– Эсӗ те айӑплӑ иккен апла, – йӗплет куна Метр. Хӑй вӑл сӑмах илчӗ те тӳрех аркатса тӑкрӗ Ваҫук кӗнекине.

– Кӑлармалла пулман, – терӗ пӗтӗмлетсе. Кантур директорӗ патне, хам аташ патне, кӗрсе ыйтатӑп-ха: мӗнле рецензи пулнӑ? Мӗншӗн ҫул панӑ?

– Курман эп рецензие, – тет автор.

– Эс курма пултарайман-ха ӑна. Шалти рецензи вӑл. Эс тимлӗн итле.

– Пит тимлӗн итлесе ларатӑп.

– Чӑнах, чуна ыраттарчӗ, кӳрентерчӗ ҫеҫ ку кӗнеке мана, – тет Саша ертсе пыраканпа килӗшсе. – Манӑн ал ҫыру вунӑ

çул хушши тухмасăр выртать – çав хушăрах ак мĕн кăларăççĕ!

– Наци литературинче ун пек темăпа çырни пуррине шута илмелле. Ку вăл хăй палăрăм, – Ваçука хӳтĕлесшĕн леш çамрăк, куçаруçăн юлташĕ.

– Литература пуриншĕн те пĕр пирĕн – Совет литератури, – ун сăмахне хуплать Метр.

– Чăнах, мĕн каласшăн автор унта? Ятне те ăнланмалла мар – «Тӳпе каçăхать» тенĕ, – çĕтĕлет Саша.

– Ячĕн пĕлтерĕшĕ уçăлать-ха. Ăнланмаллах вăл, – тет Метр.

Мĕн-ши-ха тĕп çитменлĕхĕ пичетленсе тухнă кĕнекен? Мĕн курнă тăрăнакансем чăтма май килменнинех? Шухăшĕ ют-и? Çук. Ĕçсене черетлентерсе пыни килпетсĕр-и? Вăл та мар. Икĕ тĕлте пурнăçра пулнинчен кăшт урăхларах калани не тупнă ав тимлекенсем.

– Шывра ишессипе Олимп вăййисенче кайри вырăнсенчен пĕрне йышăннă тенĕ. Шывра ишессипе чĕрĕк, унтан çурма финала тухаççĕ, ыттисем тăрса юлаççĕ нимле вырăнсăр, – хĕстерет Метр автора.

Ахаль вулаканшăн ку тĕплĕлĕх кирлех-ши çав териех? Чи малтан иштерсе пăхтарнă хыççăн тăрăлса юлнă тенипе кайри вырăнсенчен пĕрне йышăннă тени пĕрех мар-ши вулакансен пысăк йышĕшĕн? Вĕренӳ пособийĕ мар-çке-ха ку е техника литератури те мар – çын пурнăçĕ çинчен калакан илемлĕ литература.

Ваçук вакланса каймасть-ха хăй сăмахĕнче.

– Авторăн ун пек мар, авторăн çав герой ухă пересси пе ăмăртнă, – тет вăл.

– Пĕлместпĕр. Вулакан ăна курмасть, – тăрăнать Метр.

– Чăнах, – ертсе пыраканпа пĕр чĕлхеллех Саша.

– Корректура вуланă хыççăн ал пусса памалла пулман эппин, – ытах айăплать автора Метр. – Пĕр наборланă пулсан тек çĕмĕрттермеççĕ-ха. Малтан ыйтмалла пулнă куçарăва ярса парăр тесе. Сана кĕнеке кашни çул кăларса памаççĕ.

Каврăç Ваçукь Нева Володи асăннă сăмахсене хирĕçлет:

– Классика литератури евĕр çырнă, хальхи юхăмри пек мар тенине мĕнле ăнланмалла?

– Кун пирки Вовенька тӗрӗсех каламарӗ, асӑрхаттарма астӑваймарӑм, – килӗшет Метр.

Васук тепӗр икӗ вырӑна хирӗçлерӗ; пӗри авторӑнах, хам çине илетӗп терӗ.

– Эсӗ спорт президентне курнӑ-и хӑв куçупа? – ыйтать автор унран.

– Курман.

– Апла пулсан, ан çыр. Эпӗ пӗринпе çеç мар, иккӗмӗш суйланнипе те темиçе хут çапла çавра сӗтел хушшинче юнашар ларнӑ. Çуллахи Олимп вӑййисене Хальсинкирен пуçласах пач сиктермен. Кашнинех кайнӑ. Лос-Анджелосра пулман-ха тата. Çитес çул Сеула та çитӗпӗр. Вӑт, эпир çыратпӑр.

– Ийя, – килӗшет унпа Саша. – Эпир пулнӑ, курнӑ, çӳренӗ – çырмалла пирӗн.

– Эс унта, ялта, вутта кайса килни çинчен каласа патӑн пӗрремӗш ларура. Вӑт çавӑн çинчен, машина кӗрсе ларнипе тиенӗ вутта пушатса тепре тиеме лекни çинчен çыр. Сана шӑл çемми вӑл. Пысӑк спорт çинчен эпир калатпӑр, – тет Метр.

– Ийя, – асли урапинех çу сӗрет Саша.

– Ку кӗнеке... – çӳп шӑтӑкне пенӗ евӗр вӑшт сулса аяккалла кӑнтарчӗ юлашкинчен Кавӑрç Васукь «ачине» Метр.

– Ха, хутпа хуплаштарнӑ тата, тирпейлӗ тытасшӑн вӗт: ан варалантӑр, – çӗтӗлетех Саша. – Эпӗ те, хам кӗнеке тухсан, çапла пулӑп-ши?

Чӑнах та, хуплашка илемлӗ пулнӑран, çын куçне тӳрех ан тӑрӑнтӑр тесе именнипе çиелтен тетрадь листипе чӗркенӗччӗ-ха авторӗ кӗнекене. Анчах ӑнлантармасть куна Васук пӗтӗмпех, «çӳп шӑтӑне пенӗ» кӗнекине çеç алла тытать. Çӗр тӗпне анса каймалла çапса лапчӑтрӗç пулать-и-ха капла чӑваш ялӗнче пурӑнакан хунтӑсӑра?

Темле майпа, тахӑшӗ йӑлана кӗртнӗрен-ши, ним сисӗнчӗксӗрех Метрпа юнашар халӗ Кавӑрç Васукь утать территорири тротуар тӑрӑх. Хӑйне хыттӑн тӳпеленӗ пулин те, хӗрсе каймасть, чӑтӑмлах-ха чӑваш ачи, спорт мастерӗ.

– Тен, санӑн тӳрех вырӑсла çырмалла. Калаçма начар мар калаçатӑн эс, – сӗнет Метр чӑваша. Çавӑнтах вӑл хамӑр çӗр-шывра çеç мар, тӗнчипе палӑрнӑ пӗр автора, урӑх наци

çыннине, асăнать. – Тен, çавăн евĕр, хăвăн мĕн те пулин каламалли пур сан? Спортсăрах.

– Эп хам тăван халăх валли çыратăп. Шкулта та аттенанне чĕлхине вĕрентетĕп ачасене.

Метр пĕр хушă чĕнмест, унтан:

– Тен, хăв вырăс чĕлхи культурине туймасан, кама та пулсан тара тытмалла мĕнле куçарнине пĕлме, – тесе шутарать сăмаха.

– Мĕншĕн? Ку куçару илемлĕх тĕлĕшĕнчен хавшаккине ик страница вуласанах куртăм эпĕ.

– Апла нимĕн те сĕнейместĕп, – сăмахне тататъ Метр.

– Куçару начартарах пулнăшăн редактор каçару ыйтрĕ.

– Эпĕ те каçару ыйтатăп эппин.

Çурта кĕрес умĕн калаçу вĕçĕнче çапла каларĕ пулин те, тепĕр кунне мĕн пур йышпа ĕçе-хĕле пĕтĕмлетнĕ чух вăл, аслипе юнашарах ларнăран пĕрремĕшех сăмах илсе, хăй чунне уçса кăтартрĕ.

– Çиччĕн пулчĕç ман ушкăнра. Пĕри ал çырăвĕсĕр килсе çитрĕ. Шăп та шай çара пакка король, – шухăшласа тăрарах, çав хушăрах хĕрсех пуçларĕ яваплама Метр.

– Мана кунта каланă-каламан хăвăрт кăларса ячĕç. Спорт çинчен çырни çĕнни çукчĕ те, ним илме пĕлеймерĕм, – тӳрре тухать «çара пакка король», бокс енĕпе спорт мастерĕ, писательсен Союзĕн членĕ, Вăтам Азири Союзла республикăсенчен пĕринчи çын. Ваçук кĕнекине «туланă» чухне ларура çукчĕ вăл.

– Вăт, çиччĕрен ултăшĕнне тишкертĕмĕр, – кăшт чарăннăскер, малалла тăсать Метр сăмаха. – Вĕсенчен виççĕшĕ, шайлаштарса каласан, çӳлте тăраççĕ.

Сашăпа Володьăн, тепĕр çамрăк москвичăн – студентăн – ячĕсене асăнать вĕрентӳçĕ.

– Вĕсен ал çырăвĕсем пирки сăмах халлĕн хак пама та, рецензи çырма та пултаратăп. Иккĕшĕн шайĕ вара чылай аялта. Каврăç Ваçукь кĕнекине кăларма юраман пулнă терĕмĕр пурсăмăр та. Хăй вăл чăвашла çырать-ха, – çапла пулчĕ вĕрентӳçĕн, кĕнеке кантурĕ çыннин татăклă сăмахĕ.

– Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарасси – кăткăс япала, – чĕнмесĕр ирттермерĕ куна ларăва ертсе пыраканĕ, писательсен Союзĕн правлени сектератрĕ. – Çав кăшт тикĕс мар

пек чӗлхерех пысӑк шухӑш пулма пултарать. Автора ҫырма мӗн чухлӗ те пулин шанчӑк хӑвармалла – арман чулӗ хушшипе кӑларнӑн авӑртас марччӗ. Пӗчӗк шӑтӑкран ҫутӑ кӗнӗ евӗр ҫырас туртӑм юлтармалла мӗн чухлӗ те пулин...

Ларура издательсем, Каврӑҫ Ваҫукь куркаланӑ, палланӑ редакторсем те пур. Мускав Сашши вара, куккук автана мухтанӑ евӗр, Метра усӑллӑн вӗрентнӗшӗн тав тӑвать.

– Ертсе пыраканӗнчен ыйтма юрать-ши? – пите хӗретсе шыв сыпсах ларас темерӗ Ваҫук.

– Манран-и? – ӑнланаймасть сектерарь. – Тархасшӑн, эппин.

– Писательсен Союзӗн вырӑнти правленийӗсенче подстрочник тутармашкӑн пулӑшаяҫҫӗ–и? – пулчӗ Каврӑҫӑн пӗлес тени.

Ларуран тухсассӑн кайран Мускав Саши Ваҫукран:

– Куҫаракана мӗн чухлӗ патӑн эсӗ? – тесе ыйтать. – Укҫа сахал парсан ҫавнашкал хӑтланаҫҫӗ.

– Куҫараканӑн – хӑйӗн шкали. Авторӑн – хӑйӗн, – тет Ваҫук. – Ставка ӗмӗрӗнче пурӑнатпӑр. Пасарта хамӑр кӗнекене хамӑр сутса лараймастпӑр.

– Ҫапах та.

Тӗлӗнет ял ачи Саша сӑмахӗнчен.

– Мускава тавӑрӑнсан ыйтатпӑр-ха лешӗнчен: мӗншӗн мӑшкӑлларӑн тетпӗр.

– Ӑна урӑх куҫарттармаҫҫӗ, – калаҫать тепӗр юлташ, урӑх семинарта пулни.

Ҫаплах-ши? Кайран, вӑхӑт ҫитсен, паллӑ пулӗ-ха ку.

Тата тепӗр ушкӑнта пулнӑ казах ачи Ваҫука:

– Саншӑн кулянтӑм. Тӗрӗс ыйтрӑн эс подстрочник пирки. Мӗншӗн апла ҫӑвар уҫнине те чухларӑм, – терӗ. – Халь ҫӗнелӳ тапхӑрӗ. Революцин ҫитмӗлмӗш ҫулӗ. – Лӑпкӑлӑхпа ҫырлахма май ҫук. Пӗр вырӑнта кӑмпӑсланса тӑнӑ пурнӑҫ палли тӑсӑлатех-ха вӑл, енчен хамӑр ҫине тӑмасан. Атя секретарь патне кӗрсе калаҫатпӑр: ку федерацире наци комиссийӗ те пултӑр. Унсӑрӑн эпир, вак халӑхсем, хамӑра хӳтӗлейместпӗр.

– Ерҫет-ши вӑл халь киле пуҫтарӑнас чух пирӗнпе юмахлама?

– Атя. Ҫав метрсем пирӗн чӗлхерен пӗр сӑмахне пӗлмеҫҫӗ, ҫапах наци авторӗн литература чӗлхи пирки пуплеме хӑяҫҫӗ.

Пире куçармаççӗ вӗсем, хатӗр подстрочник тӑрӑх содержанине тӗрленчӗклентереççӗ çеç. Кам тӑрӑштӑр пирӗншӗн, енчен хамӑр çине тӑмасан?

– Эпир сирӗнпе тӗрӗк çемйинчи халӑх. Пӗр тымартан тухнӑскерсем. Темӗнскер пӗрешкелли те упраннӑ-ха йышӑмӑрта. Анчах эсир пирӗнтен, чвашсенчен, хӑюллӑрах, – тесе утать казахпа юнашар Ваçук.

Чӑн та, секретарь, чӑваш çыравçисен аслӑ пуххинче пулнӑскер терӗмӗр, пӳлӗмре пысӑк сумкине япаласем майлаштарса чикет. Ваçук ӑна хӑйӗн «Тӳпе каçӑхать» («Вершины покоряются») кӗнекине алӑ пусса парнелет. Казахпа пӗрле иккӗшӗ ертӳçе хӑйсен çӑмӑлне пӗлтереççӗ. «Шухӑшласа пӑхмалла кун çинчен, – терӗ секретарь. – Шухӑшласа пӑхӑпӑр».

Каврӑç Ваçукь Мускавранах килнӗ литконсультант хӗрарӑма, спорт комитетӗнчен семинара йӗркелессипе килнӗ çамрӑк арçынна, казах ачине парнелет хӑйӗн кӗнекине. Пӳлӗмне таврӑнсанах сӗтел хушшине хутпа калем тытса ларать. Уçӑ кӑкӑрлӑскер, вӑл кӗнекин редакторӗ патне камсем ӑна хурласа тӑкнине евитлесе шӑрçалать. Çырӑва кунтанах ярса хӑварать.

Киле таврӑнсан кӑштах сывлӑш çавӑрса илсен çамрӑк автор çулӗ епле тумхахлӑ пулни çинчен калав хайлать Каврӑç Ваçукӗ. Ӑна çийӗнчех хӑй пӗлнӗ пек подстрочник тӑвать те çурхи каникулти ерçӳллӗ вӑхӑтра Мускава каять. Малтанхи кӗнекеçӗсем патне кӗрес темерӗ, Раççейӗн тепӗр кӗнекеçисен кантурне шыраса тупса унта ура пусрӗ. «Эпир мӗн тухнине кӑларатпӑр», – ӑнлантарчӗ хӗрарӑм, аслӑ редактор. Каврӑç Ваçукь кӑларнӑ кӗнекеçӗсем патне каймаллине асӑнать. «Мӗн пур санӑн, тухни?» – тет. Каврӑç шарламасть. Илсе те тухман кӗнекине. Çамрӑксен журналне каяссине асӑнать. Арçын редактор ӑна унта епле çитмеллине ӑнлантарать. Литература ӗçне вӗрентекен журнал редакцине парса хӑварать хайлава, подстрочника.

Çавӑнтан нумай кӗттермесӗрех хурав килет. «Герой, вӑлах автор, хӑйне таса тесе шутлать, анчах эрех илсе кӗрет литобработчик патне», – тесе сивлет унта та рецензент. Çавӑнтах: «Автор халӑхшӑн çыратӑп тесе калать. Пурте

çапла калаяççĕ», – тесе путлантарать. Йăнăшсем шăкăриех, пичетлеме юрăхсăр тет. Тинтерех йĕркеленнĕ çак пысăк журналта та рецензипе тата литобработкăпа тăранса пурăнакансем пур иккен. Шăпах çавсене хирĕçле çырнă вĕт-ха хайлавне. Эппин, хăй ларакан турата ăçтан касса пăрахтăрха этемми?

Ĕç-хĕл епле пыни çинчен сăмаха тăснă май ак мĕн калайăнмарĕ. Хăйĕн машинкăпа çапнă пин страницăллă пысăк хайлавне, виçĕ томлă шутланипе, малтанхи анлă виçĕ пайне йĕркесерен куçарчĕ те (шăпах «Тӳпе каçăхать» калăпăшлĕ) хăй иленнĕ кĕнеке кантурне ярса пачĕ. Рецензие малтанхи куçаруçах çырнă. Мĕн çинченне каланă ытларах вăл. Япăх темен. Аван. Редкторĕ вара: «Вырăнти чылай автор хăйсен укăлчи картинчен тухаймаççĕ пулсан, ку автор хăюллăн ирĕке тухатчĕ, пурнăçа анлăн илсе кăтартатчĕ. Хальхи хайлавра çавă курăнмасть. Мĕнпе вĕçлени те паллă мар», – тенĕ. Пĕтĕмпех авторĕ айăплă, авторĕ – Каврăç Ваçукĕ! Ним шарламасăр виç пайне ярса панă. Тăваттăмĕшĕ хыççăн пиллĕкмĕшне йĕркесерен куçарса пыраканскер вара ручкăна лапах хучĕ. Чарăнчĕ. Юлашки саккăрмĕш пайĕнче Мускав Олимпиадиччĕ, унти сăнлăх-сăнара кăтартниччĕ, тĕрлĕ çĕре саланнă геройсене вулакансемпе тĕл пултарниччĕ.

Авторăн мĕн енĕ пулчĕ-ши ку?

* * *

Вушар... Кутăн... Çак сăмаха куçăн калакан та тупăнать Ваçука каярах. Юрĕ, каллех кăшт таврăнар-ха, тăхтар. Çук, сулăмлăн мала сиксе ӳкер паянхинчен. Тепĕр ик çултан-и, виççĕренех-и канăçсăрлăх сукмакĕ Каврăç Ваçукне кăвак Дунай хĕррине илсе çитерет.

– Халь ĕмĕре ирттертĕн те спортпа та çыру мехелĕпе, тепре тапрантăн-и силленсе çӳреме?! – карах кăшкăрса тăкрĕ арăмĕ Ваçука инçе çула тапранса тухас чух.

– Метрсемпе тĕл пулмалла манăн. Вĕсен спортри утăмне курмалла. Ан калаччăр тек хăйсем пирки эпир çӳренĕ тесе.

– Кама кирлĕ?! Мĕн тума кирлĕ вăл сана?! Хырăмна тăрантаратăн-и, мĕне тăрантаратăн?

Чараймарĕ арăмĕ Ваçука. Акă вăл Дунай хĕррине килсе çитрĕ. Çапла çав, çапла. Кĕреш чухне çеç мар, ватăлсан

та вăй-хал айхашăвĕнчен пăрăнмасăр хăйсем хушшинче тупăшаççĕ атлетсем. Пилĕкшер çулăн-пилĕкшер çулăн ушкăнланă çакскерсене. Тĕнчере тахçантанпах пырать-ха ветерансен ăмăртăвĕ, темиçе хутчен пула-пула иртнĕ чемпионачĕсем. Совет атлечĕсем пуçласа килчĕç авă континентăн черетлĕ вăй виçевне. Мускавран пухăнса кайнă пит пысăк йыша – пĕлсе тăрăр! – Каврăç Ваçукĕ те ермешрĕ. Атăльен тĕп хулинче пурăнакан çамрăкрах юлташĕ, асăннă романра сăнар пулса кĕнисенчен пĕри – Веня – систернипе çак çул Каврăç Ваçукь те Мускава çитсе темиçе хут ăмăртрĕ; хăйĕн енĕпе хăй тантăшсем хушшинче кашнинчех малти виçĕ çын хушшинче пулчĕ! Çĕнĕ медальсем кĕре-кĕре ӳкрĕç унăн шалпăрах мар кĕсйине. Халь Дунай çинчи хулара, Европăра, çирĕм пилĕк çĕр-шыв атлечĕсем хутшăннă çĕрте хăй енĕпе, хăй тантăшĕсем хушшинче миçемĕш пулĕ-ши? Метрпа Сашенькăна курмарĕ Мускавра темиçе хутчен пулса та чăваш ачи. Хăй кĕнекине вырăслатаканĕпе тĕл пулса калаçрĕ, паллашрĕ унпа шăпах Мускав ăмăртăвĕнче хĕрӳ кĕрешӳ чух. Тăваттăмĕш пулчĕ пулмалла вăл çӳллĕшне сикессипе хăйĕн тантăшĕсем хушшинче. Дунай хĕррине килекен йышра курăнмарĕ. Хăйĕн ирĕкĕ. Кунта килме харпăр хăйĕн самаях тăккаланмалла-ха. Ваçук чăтасах терĕ тăкакне те 5 тата 20 çухрăмсенче вăй виçме çырăнчĕ. (Ветерансемшĕн патшалăх укçа уйăрса памасть ăмăртусене çӳремешкĕн, тата кашни стартшăн тӳлемелле.) Дунай хĕррине килнĕ йышра Нева Володи пур-ха, унпа сăмахларĕ Ваçук.

Тӳшекне кура уруна тăс теççĕ халăхра, çапларах килсе тухрĕ юрăсенче пайтах мухтанă çĕр-шывăмăрăн шăпăрланĕсем тĕлне – шкулта, пĕр класс пӳлĕмĕнче, çара урайĕнче тăвăррăн, хĕсĕнкелесе выртса-тăрса пурăнчĕç килсĕр-çуртсăр евĕрлĕрех темеллискерсем. Шăл айне хумашкăн та çул çӳревçĕ пек килтенех илсе кайнăччĕ пĕр кутамкка та тепĕр сумка – сухарипе ытти апат-çимĕç. Аптрамарĕç ачисем, пулăшакансем тупăннă – столовăйра йĕркеллех çитерчĕç; совет укçине йышăнчĕç пулать-и, валютăран пуян спонсор тупăнчĕ-и...

Çу варринче шăрăх пусать, сывлама та пăчă. Кунти çынсем, яшсемпе хĕрсем çеç мар, карчăксемпе стариксем те шортăсемпе те кĕске хуллă кĕпепе çеç çӳреççĕ – урамра та, магазина кĕрсен те. Нева Володи те вĕсене кура-ши кивĕ

джинсин пĕççине чĕркуççирен аялалларах татса пăрахнă та çиппине пӳклемесĕрех вĕçтеркелесе çӳрет. Каврăçăн унашкал йăла çук. Вăл брюкипе, кĕске хуллă кĕпепе.

Каçхине çывăрма кансĕр – пăчă пирки сывлама та май çук. Пӳртекӳнче партăсене юнашар ларта-ларта килтен илсе кайнă çывăрмалли миххе сарса, арăмĕ парса янă çиттипе витĕнсе выртать çын. Кунта та лăпкă мар – ытти пӳлĕмрисем тухаççĕ-кĕреççĕ – шавлаççĕ: тăват çĕр çын шутĕнче пурте салтакла харăссăн выртмаççĕ-çке канма, кашнин хăйне евĕр интересĕ, кăмăл-туйăмĕ.

Çанталăк улшăнтăрччĕ... Çумăр çутăрччĕ... Кĕтнĕ пекех, утакансем ăмăртмалли кун умĕн, каç кӳлĕм, çумăр чашлаттарса ячĕ. Çĕрле те аслати кĕмсĕртете-кĕмсĕртете илчĕ; шалкăммăн-шалкăммăн киле-киле тăкрĕ çумăр, сывлăша тасатрĕ; урамра çутă асфальта çуса çамрăклантарчĕ шепĕр пĕрĕхӳ. Стадион мĕнле-ши? Шыв кӳлленчĕкĕ çийĕн пылчăк çăрса утмалла килсе тухмĕ-и капла ăмăртура?

Турра шĕкĕр! Илĕм-тилĕм тăрса стадиона çитсенех иккĕленесси çухалчĕ: хăмăртарах тĕслĕ тартан çул сарăм вĕр типĕ. Васук юлташĕн чи малтан ăмăртмалла та, вăл кунта пуринчен те иртерех тăрса тухса шăм-шака çемçетмешкĕн çитнĕ; ирхине старт умĕн пĕр стакан çăра чей ĕçет çеç вăл. Ăна та каçах хатĕрлесе хунă. «Ĕлĕк тĕрĕс мар тăваттăмăр, тăват сехетре тăрса апат çиеттĕмĕр. Апла мар, каç питтĕн çисе выртмалла та ирпе кăштик çеç ăша ямалла» – тет Веня Васука, пысăк стартран уйăрăлни чылай пулнăскерне.

Утассипе ăмăртаççĕ-çке вĕсем. Ку ушкăнăн вара кĕрешĕве тухма хатĕрленесси, апта хăçан тата мĕн чухлĕ çиесси те – хăй искусство. Çак енĕпе вĕсем хушшинче профессорĕсемпе академикĕсем пур, шӳтлерех каласан. Васук телейне, унăн юлташĕ, тахçан хăйпе танлаштарсан, «чĕпĕ» çеç шутланнăскер, ăсталăхăн пысăк шайне çитнĕскер пулчĕ шăпах.

Спортсменсен пĕр-пĕрне пулăшасси – йăлара. Ентеш старта хатĕрленсе тухнă тĕле Васук çеç мар, ăмăртури ытти туссем те стадиона пычĕç – сăмахпа хавхалантарса та, кĕрешӳри лару-тăру еплине хыпарласа та (хыçрине çыннăн куç крмасть-çке) тăчĕç. Совет атлечĕ ылтăн медаль илни пĕр пĕтĕмлĕ йышра – пуриншĕн те савăнăç: Веня хăйĕн ятне тĕксĕмлентермерĕ.

Каврăç тантăшĕсен (пилĕкшер çулăн-пилĕкшер çулăн ушкăнланнă терĕмĕр) чи вĕçĕнче, хĕвел аннă чухне ăмăртмалла. Пăлханать ял ачи, старт умĕн вăл çамрăк чух та канăçне тупайман, халĕ те çавнашкалах. Кăнтăр апатне каярах юлса çиес тенĕччĕ – стартчен тата тепĕр пилĕк-ултă сехет юлать-çке-ха: хырăм выçса ан кайтăр! Чăтаймарĕ вĕт, апат вăхăчĕ çитнĕ-çитменех столовăйне утма çуртăн виççĕмĕш хутĕнчен пĕрремĕшне анчĕ-анчех этемми. Яшка тăрăрах, шĕвĕрех-мĕн. «Ялтра курăнать», – тетчĕ ун пек апата амăшĕ, хăйсен патĕнчен аякри ял ятне асăнса, çăмахĕтурамĕ кашăка леки-лекми çеç пулсассăн. Çавăнпа столовăйĕнчен килнĕ хыççăн килтен илсе кайнă пăспа хуплантарса пĕçернĕ какай кĕленчине уçрĕ... Чейне кайрантарах ĕçĕ – ăна та хатĕрлесе лартнă.

Хăйĕнчен аслăрах ветерансем ăмăртнă тĕле уттарчĕ вăл стадиона; пурăнакан çуртран виç юплĕ евĕр туйăнакан çул урлă – шăпах юпсем урлă каçмала-ха; иртен-çӳрен автомашинăсене кĕте-кĕте тăрасран, туннель каçă пур вырăнтан, парк витĕр çавăрăнса пычĕ хальхинче вăл – шăм-шак çул çинчех çемçелет çапла.

Ах, чăтма çукла шыв ĕçес килет! Килти аш тăварлăрах пулчĕ çав. Халь ăш хыптарать иçмасса! Сатартчен мĕн вăхăт-ши? Пурăнакан пӳлĕме çитсе килмелле – унта шкаф тăрринче чĕре курăкĕпе вĕретсе лартнă шерпет пур. Чашлаттарса утса таврăнчĕ Ваçук пӳлĕме, литр кĕрекен кĕленче банкăри пылак шыва ăш каниччен лăнкăртаттарчĕ. Стадиона таврăнасшăн хальхинче паркра çула пăтраштарса ячĕ – виç хыр хушшинче çĕтсе кайрĕ теесле пулса тухрĕ-çке. Кĕнĕ вырăна каялла таврăнса çĕнĕрен çул уçрĕ вара вăл. Пăлханмасăрах, хыпкаланмасăрах пулать-и ку? Стартчен шăп вун пилĕк минутчен çитсе ĕлкĕрчĕ вăл. Шăм-шак çапла çӳресех çемçелчĕ унăн. Çири майка йĕп-йĕпех. Ăмăртмалли тума çеç улăштарса тăхăнмалла. Акă вăл стартра. Çирĕм виçĕ çын кунта – пилĕк çул хушăри тантăшсем континентран. Ят тĕрĕслеççĕ, хут тăрăх вуласа çĕр-шыв ятне асăнаççĕ. Йыш шутĕнче СССРтан виçĕ çын таранах-ха, пĕри – Сема. Чăваш ачи кашнинчех юлнăччĕ унран, чĕркуççине тӳрлети-тӳрлетми пек пыраканскĕрĕнчен. Çавскер, совет атлечĕсем ылтăн медаль илнине кура: «Юлашки аккорд паян манăн ылтăн ил-

мелле», – терĕ вăшталанса, виç эрне каялла тĕнче рекордне лартнăскер. Ваçукпа унăн хушшине тепĕр çын кĕрсе кайĕ те... Çапла çеç пулма кирлĕ: бронза Ваçука тивĕçмелле! Кун пирки вăл никама та çăвар уçса каламасть-ха, ăшра çеç çирĕппĕн тытать ĕмĕте.

Шурă майкăпа вăл, номрĕсем пуриннешкелех умра та хыçра йĕпенме пĕлмен çирĕп хутран; айăккипе хĕрлĕ хăю антарнă кăвак труссипе; урара хăй тахçан ăмăртнă, резина хĕррисене хăйпăтса çăмăллатнă çӳхе тапочка; çара пуçăн. Йыш хушшинче хĕсĕнсе ларасран шикленнипе те, кам та пулин ура кĕли çине пуснипе тапочка хывăнса ӳкесрен асăрханас шутпа та пăшалтан персе ярсанах вăл пит хăвăрт тапранса кайрĕ. Типĕ çулçă евĕр çăмăл «çăпатапа» илтерет çеç – умра никам та çук – пурте ун хыçĕнче. Ку старт вирхĕнĕвĕ çеç-ха, çак хăвăртлăхпа пĕтĕм пилĕк çухрăма пыраяс çук Кавръăç, тамалмалла та çын хыçне тăмалла. Çапла çĕр метр пынă хыççăн кăшт вăрахланчĕ çеç Ваçук, унран тĕреклĕ хул-çурăмлă атлет иртрĕ, майки çине хыçра «Суоми» тесе çырнă. Финн! Номерĕ те пĕчĕк хисеплĕ – эппин, маларах хăй ăмăртма тухассине пĕлтернĕскер, тахçантанпах хатĕрленнĕскер. Ăна тартасшăн мар Сема иртрĕ Кавръăçран. «Атя, Василь, ан юл», – чĕнчĕ ку. Çук-ха çав, тамалсах пырать чăваш çынни, ăна тата тепĕр виççĕн иртрĕç. Ай-ай, ытла лайăхах та мар капла. Пĕри хытах пымасть, ыттисем тараççĕ ав. Хăй умĕнчине – нимĕçе – тепре хыçа хăварса ăнтăлать халь Кавръăç. Темиçе утăмра малта икĕ атлет – майки çине хыçала «Итали» тесе çырнă кусенне. Вĕсемпе Кавръăç хушши пĕр вунă метрсем. Тарсах пĕтĕç-ши? Умри хыçĕчен çыхланса ларма пулмарĕ-çке.

Шăм-шак лайăх пек-ха, сывлăш тикĕссĕн тухать, чикен илмен. Ура меллĕн ылмашăнса пырать, ума ярса пуснă чух вăл çĕре кĕлепе тĕрĕнет те кĕлетке тĕлĕнче тӳрленет; утăм кĕске мар. Хыçра урăх çын сывлани-хашлатни илтĕнмест.

– Çит çавсене, ан тарт! – сĕнет Веня, çаврăм çул хĕрринче пăхса тăраканскер.

– Лайăх пыран! Сăлай лайăх, хăюллăн ĕçле, – вĕрентет Атăл тăрăхĕнчен, Чĕмпĕртен килнĕ тепĕр юлташ, паллă тренер.

Вăя пухса, çине тăрса çитрĕ-çитрех икĕ итальянеца Кавръăç. Вĕсем хыççăн утăм юлмасăр пырать халь вăл. Çăмăл-

рах пек те капла. Иртсе кайма пулать пуль? Çук, юрамастьха, хальлĕхе хыçрах пымалла. Суоми атлечĕпе Сема инçене тарнă – вĕсене çитес çук, шута хунă бронза медале Каврăçăн илмеллех; эппин, çак икĕ итальянецран юлмасăр пымаллаха малтанлăха. Пĕри ав, хурарах сăнли, йывăртараххăн сывлать, юлташĕнчен утăм, унтан тепĕр утăм юлчĕ. Лешĕ, умри, вĕçерĕнсе тарать капла. Каврăç хăвăрттăн ылмашăнчĕ вырăнпа, халь леш итальянец хыççăн пырать çыпçăнса ларнă теесле. Чĕркуçине тӳрлетсех çитерейместь çавскер. Юрĕ, Каврăç ăна пăхмасть – умринчен çур утăм чухлĕ хушă юларах тимлĕн чашкăрать. Çапла хыçран туртăнса пырсан, вĕçнелли ик çаврăм юласпа-и унта, епле май килет, иртсе кайма пултарĕ.

Пăхса тăракан туссенчен Чĕмпĕр тренерĕ ăна Сема инçех те марри çинчен хыпарлать, анчах ик çĕр метра яхăн пур-ха çав хушă. Çитме май килмĕ. Итальянец хыççăнах тытăнса пымалла. Ултă çаврăм юлать ав çула вĕçличчен. Чылайăшне пĕрер çаврăм пăраха-пăраха кайнă-ха ĕнтĕ çаксем. Çула урлă шурă йĕр тĕлĕнче уçнă кĕнекере «6» хисеп юлчĕ терĕмĕр. Çак вăхăтра çаврăм пĕккинче тăракан сăлая сăнакан аслă судья аякран хăвăрттăн утса пычĕ те умри итальянеца тивĕçлĕн утмастăн тесе асăрхаттарчĕ. Ваçук вара, кун пек чух çын тамалма кирлине шута хурса, умринчен иртрĕ те хăвăртрах кайрĕ, анчах ытлашши хыттăн вирхĕнмерĕ, хăйне «куç ӳкесрен» шикленчĕ. Пырать çапла пĕр çемĕлĕн вирлĕн. «Халь иртрĕн те – тар!» – вĕрентет Веня, старт панă вырăнтах пăхса тăраканскер. Ах, пĕлмест-ха çав вăл умрине епле самантра иртнине, мĕншĕн халех ума тухма шутланине.

Çаврăмăн кашни кĕтессинчех совет атлечĕсем, Ваçукăн çĕнĕ тусĕсем тăраççĕ. Хăшĕ сăмах хушать, хăшĕ ним калама пĕлмест ку самантра – мĕн чĕнмелле? Кĕрешĕвĕ хĕрӳ! Ваçук пĕтĕм вăйран пырать, анчах хыçри ытла кая юлман иккен. Е тепри çитнĕ-ши, леш хури? Финиш кукри тĕлĕнче стадионăн шал енне итальянецсен пĕр ушкăнĕ – арçынĕ-хĕрарăмĕ, вĕсен ачийĕ – пухăннă та Ваçук хыçĕнчи çынна кăшкăрса хавхалантараççĕ, вĕрене туртса илнĕн алăпа сулаççĕ, умрине, Ваçука, çитмех хистеççĕ хăйсен çĕр-шывĕн атлетне. Куна курнипе, хыçри çын пилĕк-ултă утăмра çеç пулнине тавçăрса Ваçук пĕтĕм вăйне парать. Тепĕр çаврăмĕнче

каллех Итали ҫыннисем хӑйсен чӗлхипе тем каласа, алӑпа вӗрен туртса илнӗн, унтан япалине тӗртсе янӑн суласа кӑшкӑраҫҫӗ. Ваҫукӑн ҫилӗ мар, кӑшт кулӑ та килет, шӳтлӗреххӗн чышкӑ та кӑтартас тет вӑл стадионри ҫулӑн шал енче тӑракан ҫав кӑшкӑравҫӑсене, анчах капла ҫемҫелсех кайӑп, сӳрӗкленӗп тет те ҫилӗ ҫук ҫинче ҫиллессӗн ыткӑнать – чиперрӗн, сӑлая пӑсмасӑр вӑрӑм утӑмпа утать чашлаттарса.

«Чӑтмалла! Пилӗк метрта хыҫри!» – ирттерсе ярать хӑй тӗлӗнчен пит тимлӗн сӑнакан ентеш. «Хыҫри улт метрта!» «Хыҫри – ҫич метрта!» «Ҫывхарать! Пилӗк метрта!» – пӗлтерсех тӑраҫҫӗ ытти туссем хыпкаланчӑклӑн, совет атлечӗсем ҫӗнтерме суннӑ саспа. «Атӑльен! Ял ҫынни! Каврӑҫ! Василий!» – темле калакан та пур ку йышра. «Тӳпе каҫӑхать!» («Вершины покоряются!») – тет тепри, ун кӗнекин ятне асӑнса. Хавхалантаракан сас – хӗрарӑмсен. Вӗрентсе калани, хыҫри лару-тӑрӑва тӗрӗс хыпарлаканни – арҫыннӑн. Ак пӗри, марафонец, Самар ачи юнашар чупса пырса пӗлтерет пӗр пилӗк ҫӗр метрсем юлнӑ тӗле: «Ҫич утӑмра!» Каврӑҫ хӑй те аван чухлать хыҫри ҫын мӗн хушӑ кайрине: итальянецсем алӑпа сулса, куҫӗсемпе вичкӗннӗн пӑхса вӑй параҫҫӗ хӑйсен атлетне; эппин, ҫывӑхрах лешӗ.

Юлашки ҫаврӑм. Тӳрех ҫав тери хыттӑн кайсан чыхӑнса ларӑн. Пысӑк сулӑмпа, анчах ҫул вӗҫлениччен чӑтса ҫитересех тесе, вӑя кӑшт перекетлесе, ахлатса сывласах иртет леш алӑпа туртса, хыҫри пӗр пилӗк метрсенчине куҫпа тӗллекен Итали кӑшкӑравҫисен тӗлӗнчен. Вирлӗн кайсан та сывлӑша пӳлсе лартмаллах талпӑнмалла мар. Сӑлая тӗсекен тӳресем тӗлӗнчен иртсен юлашки ик ҫӗр метрта, пӗкӗре леш хыҫри чупарах илӗ те ҫитсе те пӑрахӗ. Тем парсан та юлмалла мар. Финишра талпӑнма чӗптӗм вӑя хӑвармаллах. Ак юлашки ҫӗр метр, тӳр тӑрӑх. Пӗрер, икшер ҫаврӑм юлнисем шалаш хӗрринчи ҫулпа утнине шута илсе, виҫҫӗмӗш йӗр ҫине тухать Каврӑҫ. Ҫак вӑхӑтра хыҫра сылтӑм хӑлха патӗнче хаш-хаш сывлани илтӗнех пуҫларӗ, унтан тӑваттӑмӗш йӗр ҫине тухнӑ ҫын кӑкри юнашарах курӑнса кайрӗ. «Каврӑҫ! Атӑльен! Ял ачи! «Тӳпе каҫӑхать!» – илтӗнет трибуна ҫинчен. Атӑл каччи вӑя пухса талпӑнать. Пӗр ҫирӗм утӑм ҫапла пит хӑвӑрт кайрӗ вӑл. Лешне курмасть халь, анчах туять: хыҫрах, ҫумрах ҫавскер. Пысӑк хӑвӑртлӑхпа илтерет-ха Каврӑҫ. Каллех

хăлха патĕнче çын хашлатса сывлани илтĕнет. Çула урлă шурă йĕр туртнă тĕл пуçланчĕ. Юлашки талпăнупа, юлашки чĕптĕм вăйпа ыткăнать те Каврăç çула вĕçлесе çĕнĕ юлташĕсен ытамне кĕрсе ӳкет...

Сывлăш лăплантарма та час мар-çке, ахаль утса çӳреме те хал юлман, анчах медаль илни чуна хавхалантарать, чĕрĕ вăй парса çĕклентерет. Çĕнтерӳçĕпе, финпа, калаçать халь Каврăç. «Сана юлашки çаврăма кайнине пĕлтерме чан çапнă чухне эп çавăнтаччĕ», – тет вăл, стадионăн леш енчи тĕле кăтартса. Пĕр-пĕрин чĕлхине пĕлмеççĕ кусем, ытларах алăпа сулкалашса ăнланма тăрăшаççĕ. Çĕнтерӳçе чăваш ачи ылтăн медаль илнĕ ятпа саламлать, унпа юнашар хисеп пусми çине совет атлечĕсем иккĕн ик енне тăраççĕ.

«Эп сана, леш çитсен, ку пĕтрĕ ĕнтĕ, пĕрне çеç мар, теприне те, виççĕмĕшне те ирттерсе ярать пуль терĕм. Кăмăл енчен аманса хуçăлĕ терĕм, – калаçать çӳллĕшне сикессипе Ваçук пекех бронза медале тивĕçнĕ хĕрарăм, Çĕпĕр енчи хуларискер. – Парăнаканскер мар иккен эсĕ – вушар, кутăн. Ахаль чухне пит лăпкăн çӳретĕн ху, кĕрешӳре вара авăнса хуçăлмастăн. Хитре утатăн. Пăхма кăмăллă сана. Леш чупсах çитрĕ. Маттур, ирттермерĕн. Вушар эс, вушар». Тĕрĕсехши ку хак?

Каçхине, тепĕр кунне, Нева Володи урăх стадионран таврăнаспа Каврăçа асăрхать те ăна бронза медаль илнĕ ятпа саламлать. «Хăв мĕнле ăмăртрăн?» – ыйтать Ваçук çӳллĕшне сикессипе тупăшакан ăстаран. «Эй!» – тет те аллине сулать çеç ку.

Вушар... Вушарах-шим, кутăнах-ши Ваçук? Ак тепĕр ăмăртăвĕ... Çирĕм çухрăма утасси. Пилĕк çухрăмра вăй виçнĕ хыççăн виçĕ кунтан пухăнчĕç утакансем пысăк парка. Халĕ пурте – хĕрарăмсемпе пĕрле шутласан ик çĕр аллă çынна яхăн пулĕ – стартран пĕр харăс тапранса тухаççĕ. Çӳллĕ, ват йывăççемлĕ паркри сарлака çулăн çаврăмĕ икĕ çухрăм çурă пулать, çавна саккăр ункăламалла. Старта хатĕрленсе кĕшĕлтетнĕ чухне Каврăçа леш финн, çĕнтерӳçĕ, сăмах хушать, вырăсла пĕлмест пулин те кăмăллăн тем калать. Шур йĕр тĕлне унпа юнашарах вырнаçать Ваçук. Каллех пистолетран мĕнле кĕрстлеттернĕ çапла хыттăн вирхĕнчĕ вăл (йĕлтĕрçĕ йăли те пулĕ çав – часрах йĕре çитсе йышăнас), финн

хыççăн тытăнса пырать-ха. Умра та, айăкра та çын кĕшĕл-кĕшĕл кунта. Хыçрисем ура кĕли çине ан пусчăр – тапочка хывăнса ан ӳктĕр.

Стадионра утнă урари çăмăл япала халь çакăнта канлех те мар иккен: тĕпĕ ытла çӳхипе кăштăркарах асфальт çинче ура тăнк-танк пусăнать те – кансĕр; çарран пусса пынинчен нумай та уйрăмлăх çук. Çул анлăшĕн тепĕр айккинчен ыттисем вирхĕнсе ума ӳкрĕç, çав йышра Веня та курăнчĕ, вĕсем хыççăн, çамрăкраххисем хыççăн, финн та туртăнчĕ. Кавръç хăвăртлăхĕ мар ку – ăна йывăр пулать çакнашкалах кайсассăн çула утса тухма; ик çаврăм хыççăнах е пăрăнса тăрăн, е ура тăлланса ларĕ, çавăнпа хăй çеммине куçрĕ Ваçук. Кăкăр çинчи номерсене улăштарнă – пурне те пĕр ретпе хисепленĕ; çурăм çинче – киввиех, унта миçе çулхисен ушкăнне те çырнă. Ак хăйĕнчен иртекенсене кашнин номерне тинкерет – уйрăм хисепне мар, миçе çулхине кăтартнине. Пĕр çаврăм хыççăн иккĕмĕшне куçсан çав, иртекен тăват-пилĕн çын шутĕнче леш урине тӳрлетсех çитерреймен итальянец та курăнчĕ. Вăя пухрĕ те çывхарчĕ ăна Кавръç, хыçранах çыпçăнса ларчĕ. Çул тăршшĕпех тенешкел тăрса тухнă ытти атлетсем – совет спортсменĕсем – Кавръça хыпарлаççĕ: Сема инçе мар! Финн та куç курмалли инçĕшре. Кавръç пит ăнтăлмалла васкамасть-ха – вăл итальянец хыççăнах тытăнса пырать. Кăшт çăмăлрах пек капла. Ак хай аслă судья çаврăм вĕçне çитерехпе утса пычĕ те италянеца таса утмастăн тесе асăрхаттарчĕ. Кавръç иртрĕ те хайхине ытти атлетсем хыççăн чашкăртрĕ, тек курмарĕ те лешне. Умрисем çивĕчрех пулчĕç-ши – çамрăкраххисем çав, хушă ӳсрĕ. Çав вăхăтра тепĕр иккĕн иртрĕç Кавръça – пĕри, сарăрах майккăлли, пилĕк çул кĕçĕнреххисен ушкăнĕнчен, тепри – тата çавăн чул çамрăкрахскер. Кунăн майки çине «Итали» тесе çырнă. Авалхи Рим çĕр-шывĕн ячĕ. Çак спортсмен çумне çыпçăнса ларчĕ халь Ваçук. Юнашар та утаççĕ вĕсем, лешсем Кавръç хыçне те юлаççĕ – кун хӳттипе канаççĕ кăштах çапла. Пĕр евĕр вăй-халпа пĕр çемĕпе тимлеççĕ пĕр-пĕрне пулăшса – шăл хăйрасси çук кусен: кашни хăй ушкăнĕнче медальшĕн кĕрешет. Ваçук та темиçе хутчен ума тухрĕ, юнашар та пычĕ; кун пек чухне итальянец, çӳллĕ те чавсине аяккарах кăларса утаканскер, Ваçука темиçе хутчен тĕртĕнсе те илчĕ – юна-

шар пит çăттăн пыма та май килмест, çавăнпа е юлать, е иртет ăна Ваçук. Тепри кăшт юларах пычĕ те кайран тарчĕ, хĕрĕх пилĕк çулхи итальянецпа Каврăç çаплах пĕрле-ха.

Ирпе старт умĕн чей кăна ĕçнĕскер ик çаврăм хыççăнах темле çиес килнĕ пек туйăнчĕ Ваçука. Кăштах шикленчĕ те çакăншăн кĕрешӳри çын. Ак халь ку туйăм сĕвĕрĕлчĕ: чиперех илтерсе пырать чăваш ачи. Çул айккинчи юлташсем пĕлтерсех тăраççĕ: Каврăç хăй тантăшĕсем шутĕнче виççĕмĕшех пырать. Бронза медаль кĕсьерех теççĕ ун пек чухне. Веня пĕр çаврăм хуса çитет те Каврăçа çурăмран алăпа лăпкаса: «Чăваш ачи, сассуна пар!» – тесе иртсе каять. Тĕнче класĕнчи мастер, олимпиец чи çивĕччи çав кунта.

Юлашки çаврăм çурринче юнашарти çамрăкрах итальянец та хăпрĕ, анчах куç курмиех тараймарĕ, унăн çурăмне курсах пычĕ Ваçук – çаврăма вĕçлесе стадионалла пăрăнчĕ, юлашки халпа ăнтăлчĕ. Кунта ăна Веньăпа Сема кĕтсе тăраççĕ, саламлаççĕ çула ăнăçлă вĕçленĕ ятпала. Хăйĕнчен вунă çул çамрăкрах итальянецран ыйтать Ваçук: «Миçемĕш пултăн хăвăрăн ушкăнра?». Аллине кăшт çĕклесе тăвату пӳрне кăтартать çул тăршшĕпех пĕрле туслăн ĕçленĕ атлет.

Наградăланă самант çитрĕ. Çĕре стадионăн чупмалли çӳллĕшĕнчен трибуна евĕрлĕн тĕртсе тĕмелентернĕ, курпунлантарнă курăк пуснă сăрт евĕр выранта (Улăп тăпри тейĕн) Хисеп пусмийĕ. Унтах тӳрисене пухăнма лупас айĕ пек хӳшĕ те пур. Пилĕкшер çулăн-пилĕкшер çулăн шута илсе наградăлаççĕ атлетсене. Каврăççен ушкăнне чĕнсе кăларнă саманчĕ каярах лекрĕ. Пусман чи çӳллĕ картлашкине совет атлечĕ Сема улăхрĕ. Ун кăкăрĕ çине ылтăн медаль çакса яраççĕ. Иккĕмĕш – финн. Виççĕмĕш вара... Каврăçа мар, итальянеца чĕнсе кăлараççĕ; леш урине тӳрлетсе çитерейменине мар-ха, пилĕк çухрăм утнă чухне хыттăн сывласа юлнине. Бронза медаль – ун кăкăрĕ çинче. Сăн ӳкереççĕ, саламлаççĕ, пĕр-пĕрне чуп тăваççĕ. Тăрать Ваçук мĕскĕннĕн пăхса: курманччĕ-çке вăл лешне мĕн çул тăршшĕпех, стартран хыт тапраннăччĕ, иртекенсем кайран иртрĕç, çав шутра çукчĕ ку итальянец. Çулăн тепĕр айккинчен вирхĕнчĕши? Курман. Мĕншĕн тата пăхса тăракансем Каврăçа мĕн çул тăршшĕпех виççĕмĕш пыратăн тесе хыпарласа тăчĕç? Ăнланмалла мар. Лешсене, медаль илнисене, финпа совет

атлетне, саламлать Ваçук, малтанах хатĕрлесе хунă хăйĕн Метр «таптанă» кĕнекине парнелет Ваçук кусене. Çапла пăрахса кайма, пăрăнса утма сумкине те тытнăччĕ вăл, çак вăхăтра çул тăршшĕпех туслăн пынă çамрăк итальянец хăвăрттăн пычĕ те кун патне: «Майку пур-и? Кăлар майкуна! Эс – виççĕмĕш, ман ентеш – тăваттăмĕш. Минут каярах çитрĕ вăл пирĕн хыççăн, – терĕ. – Атя жюрине». Темле чун кĕнĕн йăшăлт вăранса, тарпа исленнĕ, номерĕсене вĕçертмен майкине кăларать сумкăран Ваçук. Наградăлакансен ушкăнне пырать вăл леш тус-итальянецпа пĕрле... «Компайнешен. Пĕрле пытăмăр. Ман ентеш минут юлчĕ çак атлетран», – тет тарлă майкăна кăтартса итальянец. Вырăсла та, ăмăрту иртекен çĕр-шыв чĕлхине те чухлать иккен ку итальянец. Судьясем нимĕн те ăнланмаççĕ. «Ăçта протокол?» – ыйтать Ваçук. «Секретариатра», – теççĕ куна. «Ăçта секретариат?». Аякра иккен. Тĕлне те пĕлмест ют çын. Финиша çаплах-ха хыçа юлнисем килеççĕ. Унта хронометрпа лараççĕ. Ваçук çавсем патне пырать – пĕрлех итальянец та, ентеш те. «Кăтартусем пирĕн патра мар, секретариата патăмăр», – теççĕ кунта та. Юлашкинчен ертсе каять награда параканнисенчен пĕри стадион хыçĕнчи çуртри пӳлĕме. Пĕрлех итальянец та, Веня та пыраççĕ. Хыт утаймасть судйи, уксакскер. Ах, хыт утаймасть. Вăрах пулин те, çитес тенĕ çĕре çитме пулать. Пĕр минут та çичĕ çеккунт япăхрах леш тантăш итальянецăн вăхăчĕ Ваçукĕнчен... Çулра пĕрле пынă çын хута кĕмен пулсан?.. Протокол çине çырăнĕ-ха виççĕмĕшех. Анчах медалĕ... медалĕ? Шыраса çӳре кайран, пуйăсĕ курăнми пулсан!

Кĕрешнĕ чух вушар, çавăнтах пач тавçăрусăр та мар, хаяр та темелле чăваш ачине – Каврăç Ваçукне. Çав хушăрах вăл пурнăçра хăйне хӳтĕлеме май тупаймасть. Мĕскĕн... Мĕскĕнлĕхĕ пур. Ак мĕн çухалман. Халăх шăпи, унăн нĕрĕ хывăннă пуль ăна?

Çакăн хыççăн Мускаври ăмăртусене татах хутшăнчĕ Ваçук. Нева Володи те пур. Кавраç кунта – иккĕмĕш вырăнта. Миçемĕш пултăн тесессĕн, çӳллĕшне сикекен атлет, прозаик, каллех ал сулчĕ çеç. Анчах Сашенькăна та, Метра та пĕрре тĕл пулмарĕ чăваш çыравçи ветерансен ăмăртăвĕсенче. «Эпир курнă, эпир çӳренĕ, эпир çырма тивĕç», – терĕç,

тӳпелерĕç çавсем Ваçука семинарта, анчах кĕрешекенсен йышĕнче курмарĕ вăл çав чăрсăрсене, кĕвĕçсене. Каврăç хăй кĕнекине вырăслатнă атлета та каярахри ăмăртусенче тĕл пулаймарĕ.

* * *

Ытла мала сиксе ӳкрĕмĕр. Каврăç Ваçукь халь Хура тинĕс хĕрринчех-ха, çамрăк авторсен семинарĕ вĕçленнĕ тапхăрта. Тоталитаризм пуç пулса тăрать мар-и пурнăçăмăрта? Мафи, коррупци умра мар-и? Пур çĕрте те ăмăртури пек чăн вăйна кăтартаймастăн. Хăть касăл, çурăл – халу çитеймест, нимĕн тăваймастăн.

Çĕнтересшĕн-и? Ĕмĕтӳсем-и?

Эх, айван та-çке эсĕ, Ваçук, ытла айван. Ватлăха сулăнтăн – çын туя тыттарнине тавçăраймастăн; амăш сĕчĕпе ăс кĕрейменни качака сĕчĕпе ăс кĕрес çук тени пĕтĕмпех сана пырса тивет мар-и?

Тепĕр çаврăм мала сиксе ӳксе халаплар-ха. Европа ăмăртăвĕ хыççăн çулталăк хатĕрленчĕ Каврăç тĕнче чемпионатне; çурлăн-кĕрлĕн, çăвĕн-хĕлĕн пĕр сиктермесĕр, пĕрре пысăк хушă канмасăр хаклă вăхăта вăрласа çулла çуран, хĕлле йĕлтĕрпе шăм-шака нӳрлĕ мунчалана пăрнă пек пăрчĕ, тарларĕ, типĕнчĕ, каллех тарларĕ... Пĕрре такăнманччĕ – эрнесерен пиллĕкшер кун çул инçĕшне вăхăтпа виçрĕ; хăйĕн чăтăмлăхĕ ытлараххине кура, тĕпрен илсен, инçе çула – çирĕм çухрăма – хатĕрленчĕ вăл. Тепĕр чухне пĕрне хатĕрленетĕн, унпа май килмест, тепринпе ăнăçать, çав шутпа пилĕк çухрăмри хăвăртлăха пухассине те манса хăвармарĕ, вичкĕнлĕхпе инçĕше çураçтарса ĕрлерĕ те ĕрлерĕ хăйне хăй хулăпа çаптарă евĕр. Анчах каяймарĕ ăмăртăвне, çитеймерĕ унта. Ачалла айванлăхĕпе, хăйне темле патша вырăннех хурса-ши? Шăп та лăп шанчăк тытнă ал çырăвне каялла футбол мечĕкне вирхĕнтерсе панă евĕрлĕн килсе тухрĕ ку ăнăçсăрлăх спортра. Ал çыру упранать-ха вăл, çунса каймасть теççĕ (малтанхи сăвви-поэмисем çухалнă та-ха унăн, килте тем упрама пĕлменнипе), тренировка туни вăл кăшт нӳремлентĕн пулсан, пач пăчланать; тата леш чемпионачĕ таврăнмасть нихçан та.

Валюта кирлĕ пулчĕ Суоми çĕр-шывне çул тытмашкăн. Взносĕ те, пурăнма та – доллар е марка. Хакне çухатнă ха-

мăрăн укçана чикĕ леш енче никам та йышăнмасть, улăштармасть. Ак раштаврах ун пирки пуçа çĕмĕрме тытăнчĕ ухмаххине сутасшăн канăçсăрлакан этем. Арăмĕ калашле никам та нимĕн те хыптарас çук-ха ăмăртăвĕнче ăна. Вăтăр пилĕк çул ытла тăтăш çырăнса илекен, киленĕçлĕн вулакан хаçат хыпарне ĕненчĕ вăл – хăйне хальччен сăнчăрласа тытса тăракан хуçасенчен уйăрăлаймасть иккен ку кăларăм: авторсене, ирĕклĕ литераторсене ытларах явăçтарма пуçлать малашне, çамрăксене пулăшать, ют çĕр-шыва творчество ĕçĕпе кайма та пулăшать имĕш. Мĕншĕн Ваçук тивĕç мар кунта?! Унăн спорт çинчен çырнă кĕнеки те пур-çке, вырăслах тухнă, хальхи çул-йĕрĕ те – çыру малашлăхĕшĕн пуян курни-илти. Вăт, тӳрех ĕненсе лартрĕ çав хулăм хаçата ял ачи. Çур çитсен, Мускаври ăмăртура Ассоциацирен валюта кирли çинчен калакан хута алла илсен, малтанах тем именсе тытăнса тăчĕ-ха Ваçук, хаçат çуртне шыраса тупас та кĕрсе тухас темерĕ, калаçса пăхас кăмăлĕ хĕмленеймерĕ; киле таврăнсан хăйне пулăшма пултаракан кантур шырарĕ, унтан шухăш ярт! пырса çапрĕ те çав асăннă хаçата анлă çыру çырса, Ассоциацирен илнĕ хутпа пĕрле почтăпа ярса пачĕ. Ик эрнерен-и, маларахран та-и, шăнкăравларĕ. Çырăвĕ çитни, ăна номерлесе палăртни çинчен, мĕн пиркине те асăнсах сăмах чĕнчĕç; кĕтĕр, пăхса тухаççĕ, уйăх ытларах вăхăт иртме пултарать терĕç. Тата иккĕ те, виççĕ те шăнкăравларĕ Каврăç – çырусен пайĕнчен малалла иртеймерĕ. Кайран, кайран Каврăç ыйтăвне тивĕçтерме май çукки çинчен хыпарларĕç. Хыпăнса ӳкрĕ ял çынни. Районти аслăрах çынсемпе калаçрĕ, Чăвашьен пуçлăхĕсемпе те курнăçрĕ. Пулăшаççĕ! Тупăнчĕ ал паракан. Анчах... тĕнче чемпионачĕн йĕркелӳ комитечĕ ку тĕле ăмăртура пулмалли ятсене йышăнма пăрахнă ĕнтĕ; протоколсене, номерсене çырас-йĕркелес ĕç вĕçленсе пырать унта. Епле ӳкĕнмĕн, епле кулянмăн! Чавса çывăх та, çыртма çук. Старчĕсем хăш кун, хăш вăхăтра пулмаллине тахçанах тĕпчесе пĕлнĕскер лере пухăннă тантăшсем çула тухас самантсенче кунта такăр асфальт çинче хăйпе хăй тупăшрĕ Ваçук. Ăшри хуйхине кама кирлĕ унпа калаçса сĕвĕрĕлтерме тăрăшрĕ. Кайран Мускавра çĕр-шывра мала тухас чух Суомире пулнисемпе сăмахларĕ, тĕплĕнрех ыйта-ыйта пĕлчĕ. Кĕрешӳри çул çинче хăй епле пулма пултарнине аякран ку-

ра-кура тăчĕ, пилĕк километртра виççĕмĕш вырăншăн (бронза медаль) кĕрешме пултарнине ăшра шухăшласа куçпа курчĕ; çирĕммĕшĕнче иккĕмĕш е виççĕмĕш пулассишĕн (кĕмĕл е бронза!) кĕрешме пултарнине ăшра шухăшласа куçпа курчĕ. Çирĕммĕшĕнче пĕр çĕр-шыври виç атлетăн вăхăчĕсене хушса команда вырăнне палăртаççĕ те, кунта – ылтăн медаль! Ӳкĕнни... Пĕр чавсана тепĕр алăпа тытса пăхни...Веньăн ак – виçĕ ылтăн.

Ал çыру никам пичетлемесен те упранать. Тренировка туни вара, çулталăк хушши тар тăкни?! Пысăк çухатăвĕ – ăмăртăвĕнче пулманни, ун çинчен (сахалран) хаçата анлă статья çырса парайманни!

Мĕншĕн суккăртарах-ши ял ачи? Мĕншĕн ĕненчĕ вăл хаçата? Демократиллĕ пичет те хăй ятне-шывне ӳстерессишĕн ку тапхăрта вырăнсăр шантарма пултарнине хур тĕкĕ тытакан çыннăн тавçăрмаллаччĕ вĕт-ха? Каланине мĕншĕн таптаса сăмах тесе шутламаллаччĕ? Тата кам эсĕ, ял çерçийĕ, вăрманти пĕр йывăç? Авă кĕрсе тухрăн çав редакцие çу пуçламăшĕнче. (Хутпа яваплани киле таврăннă тĕле çитсе выртнă.) «Чирлĕ писательсем ют çĕр-шыва сывалма кайма пулăшу ыйтаççĕ, – Каврăçран тĕлĕннипе пуça пăркаласа явапларĕ кунти ĕçченçĕ хĕрарăм. – Пулăшаймастпăр. Хамăр чухăн». Хăйсен çывăх çыннисем мĕн чухлĕн унта! Вĕсене ус тăваймаççĕ. Эсĕ, таçти чăваш, хаçатпа сывлакан, ăна ĕненекен ялти пĕчĕк интеллигент, хăвна кам терĕн?

«Василий! Мĕнле вĕçертрĕн эс куна? Çăвара карса пăхса тăтăн-и? Аван çыран, аван утатăн – хăвшăн ĕçе май килтерме пĕлместĕн, – пулчĕ çĕр-шыври спорт комитетĕнче ĕçлекен ватă хĕрарăмăн сăмахĕ, Ветерансен ассоциаци ĕçченех ун патне телефонпа шăнкăравласассăн. – Мариновпа калаçса пăх-ха. Кая юлтăн пулсан та тăрăш-ха». Анчах май килмерĕ. Татăклăнах тăрса юлнă. Килте хыпса çунни, Чăвашьенри пуçлăхсене куçран пăхни, вĕсемпе халь хĕрӳллĕн калаçма та пултарни – усăсăр: пуйăс иртсе кайнă!

Нева Володи çитнĕ чемпионата. Хăй тантăшĕсем хушшинче улттăмĕш пулнă терĕç ăна çӳллĕшне сикессипе. Çырнине пичетлес тĕлĕшпе те май килтернĕ çаксkер хăйсем патĕнче – хулăм журналта кӳпчеке романĕ çут тĕнчене килейнĕ. Ваçук вара?..

Ку, çакăнта калани, пĕтĕмпех кайранхи, ӳлĕмренхи лару-тăру-ха, виç-тăват çултан пулса иртни. Спортпа литература кӳлĕмĕ пĕр евĕрлĕрех сӳтĕлсе явăнать мар-и Каврăçăн?

* * *

Хура тинĕс хĕрри... Таврăнар калаçушăн старт илнĕ çав вырăна. Чăваш çĕрĕнче ку тĕле хĕл ларнă пулин те, Абхази тăрăхĕнче – ват ăшши; кăшт хĕртĕнме те, шыва кĕме те пулать ытарайми тинĕсре. Ытлашши киленĕçлĕнех ишеймĕн-ха, çапах ячĕшĕн чăмса, шăмпăлтатса тухни те ырлăх. Виçĕ кун умлă-хыçлă пĕр йăпăртлăх чӳхенчĕ тинĕс шывĕпе Ваçук. Çамрăксем ытларах та шампăлтатрĕç.

Киле пуçтарăнас кун çанталăк кăшт сулхăнлатрĕ, тӳпене йăрăм-йăрăм пĕлĕт туртăнчĕ, апла пулин те çăмăл тумпах çӳреме май пур-ха, ирклĕн канмалли хăтлă кунах. Кану çурчĕнчисем тинĕс хĕрринче, турпас е йывăç тымарĕ пухса, кăвайт чĕртнĕ – ав халĕ майкисене хывнă та вут ăшшипе хĕртĕнеççĕ.

Тинĕс калама çук илĕртӳллĕ, лăпкă, хумĕ çыран хĕррине перĕнсе шăпăл-шăпăл тăвать, шур кăпăкланать. Киле тухса килес умĕн чăвашпа казах çанталăк рехечĕпе киленеççĕ. Ав тинĕс варринче, чăма-чăма, шывран туха-тăха, дельфин ушкăнĕ иртет – пулă кĕтĕвĕ хыççăн пырать пуль. Авă хура вĕçен кайăксем, шыв кайăкĕсем. Ишеççĕ йăрласа хум урлă, унтан чăмаççĕ те аллă-утмăл хăлаçран пач аякра сиксе тухаççĕ. Гагарăсем кусем. Çывăхрах пĕр мăшăр, леререх татах, татах... Апат шыраççĕ. Авă пĕр пысăк кайăк çĕкленчĕ те ваш-ваш вĕçсе чылай аякка кайса ларчĕ. Альбатрос!

Тинĕс çийĕпе тӳпе пĕр тĕслех – кăшт шупкарах пек, кĕмĕлрех темелле-и, ылтăн йăрăмĕ те  пур пек. Лере-лере тинĕс çийĕпе пĕлĕт ирĕлсе пĕрлешĕнсе каять.

Каврăç Ваçукĕн кăмăлĕ пăсăках мар. Çырмалла унăн – халăх валли, тăван халăхне парне кӳмеллех (çапла ӳснĕ мар-и вăл хăй тапхăрĕнче?). Чуна хавхалану, шăмма-шакка вăй-хал килтерме спортĕнчен те уйăрăлсах пĕтмелле мар-ха, ветерансен юхăмĕ сарăлать ав, унта ермешмелле – малашне те пурнăçа  курса çĕнĕрен çырма, хăй кăмăлĕшĕн те пулин повесть е калав май килтермелле. Çĕнелӳ тесе, кăвак хуппи хăй тĕллĕн уçăлсасса кĕтсе лараймăн: пур-

нăç – кĕрешӳ, литература хирĕнче пушех те вăйлă вăл, çав кĕрешӳ. Ку ăнлану иртнĕ тапхăртах вĕрентӳçĕсем куллен чан çапнă пек калаçнăран пуça кĕрсе ларни-ха. Мĕн чухлĕ ултав-суя серепинчен тухаймасăр тапăлтатман-ши çавăн чух, алла власть илнисем икĕ питпе пурăннă саманара?

Умра – пирĕн йыш пĕлмен хутшăну – рынок текенни. Вăл тата епле пăркаланса, епле ташлаттарĕ-ши çынна? Чăнлă-ха шанаканни пушшех хĕсĕнсе лармĕ-и унта? Никам та-çке хăвăн раскална алтăрпа ăсса парас çук. Пĕл çавна, чухла, Ваçук! Пĕлсен те, чухласан та тĕллевӳне пурнăçлайăн-и? Мĕн чухлĕ пурнăçлăн?

* * *

Каврăç Ваçукĕ Серте Севетне чылайранпа курманччĕ. Пĕр çирĕм çул ытларах та пуль. Çыравçăсен аслă пухăвĕнче, тăхтавра, залран тухнă чух асăрхарĕ ăна ялтан килнĕ çын: шăпах алăк умĕнче тепĕр икĕ хĕрарăмпа калаçса тăрать вăл. Сăнран-питрен ватăлнă пулин те, тӳрех палласа илчĕ ăна Каврăç. Пиçсе çитнĕ чие çырли тĕслĕ жакеткăпа-юбкăпа кар-чăк, çӳçне хыçалалла-çӳлелле пуçтарса явалантă, сăнĕ хăйпе калаçакан енне тинкернĕ май хаваслăн йăлкăшать. Самаях тулли кĕлеткеллĕччĕ Серте, халĕ ав шалпарах мар тумĕ те лăпăш выртнă, çакăнса тăрать пек: карчăкăн пӳ-сийĕ палăр-маллах хухнă иккен. «Ухват ура» тенĕччĕ ун пирки Хурамак. Ватăлăхра тайăнма ав – капăрлатнă лутра туя, трость.

Тăхтавран кĕрсен малтанхи çĕрех – хыçаларах вырнаçрĕ Каврăç. Умрах – Якуне. Акă Серте кĕрет. Хăй пуррине пĕлтересшĕн пек ун-кун пăхкаласа-çиçсе малалла иртрĕ вăл, варринчи тăрăха, умарахри пукан çине вырнаçса ларчĕ пĕчченçĕн. Шехви Венкки курăнмасть. Çулталăксерен ирте-кен ларусенче те пулманччĕ вăл. Тухсах çӳреймест пулас.

Çыравçăсем кĕнекесем тухайманни, харпăр хăй вăйĕпе кăларнисем те вулакансем патне çитейменни çинчен сăмах тăкаççĕ трибуна çинчен. Савăнса итлесе ларать-ши Серте: ара, вĕсем патшалăх ячĕпе кĕнеке кăларакансем пулнă-çке-ха, литпиратланнă, литшакалланнă намăса-симĕсе пĕлмесĕр. Залри çыравçăсем те, самайăшĕсемех, çав литпи-ратсемпе туслашнипе пичетленнĕ пуль, писательсем пулса тăнă пуль. Хуçаланнисен çăварĕнчен çаплах-ха «редакторăн

çирĕп алли кирлĕ» тени тухать. Кавръç Ваçукь ку сăмахсем мĕн тĕшне тăнине пĕлет. Юрри кивĕ: пĕртен-пĕр парти хуçа пулнă чух çав партин пысăк ларăвĕнчех каланăччĕ хăйсен тĕп хаçачĕн редакторĕ çирĕп редакцилемелле тесе; хулăм журнал редакторĕ, хисеплĕ писатель ăна хуравласа: «Манăн унта саккăрăн сухаласа лараççĕ», – тенĕччĕ. Халĕ те хăйсен куçĕнчен çеç пăхтарас килет пуль çав хуçа пулнисен.

* * *

«Литобработка тумасăр пичете сĕнме çук», – çапла лаплаттарса хунă журнал редакцийĕнче выртакан Кавръç Ваçукĕн ал çырăвĕн малтанхи страницинче кĕнеке кăларас кантурта ĕçлесе пенсие тухнă, унтан журнала туртакансен йышне пырса тăнă çын, Кавръçпа пĕр районта çуралса ӳснĕскерех. Мăтăксем хăйсен мăтăк чĕлхине çеç чăн-чăн илемлĕ литература чĕлхи теççĕ-ши? Кашкăр вăрманаллах пăхать тенешкел, çын япалине мăтăклас, литпиратланас туйăмран хăтăлаймаççех вĕсем, çĕнĕ ĕмĕрте çĕнĕ самана-ра пурăнатпăр пулин те.

Ай, тĕнче! Эй, çын!

# ХРУСТАЛЬ ВАЗА

– Семăран ун пек иртме юрамасть, Василь. Ăнланатăп сана: çĕнтерес килет ăна. Анчах эс ачасене вĕрентекенскер вĕт-ха, çыраканскер те. Эпĕ те хушшăн-хушшăн сиккелесе илкелерĕм, эсĕ вара...

Çакнашкал сăмах тĕкĕнчĕ Василь Васильча Раççейрен кăнтăр-хĕвел анăç енчи хулари юлташран сĕтел хушшинчи шăкăл-шăкăл калаçура. Пĕр ведомствăн стадионĕнчи кĕрешӳ хыççăн тӳрех саланса каймарĕç-ха çав спортсменĕсем, чи çамрăкки те хĕрĕхрен иртнĕ çӳревçĕсем: Олимп вăййинче медаль çĕнсе илнĕ, халь кунта пĕрле вăй виçнĕ паллă атлетăн çуралнă кунĕ тĕлли-мĕн, старт вăхăтне те ăна кĕтсех тăхтатрĕç. «Женьăна кĕтĕпĕр тата кăштах», – терĕ Толя, ку ăмăртăвне йĕркелекенĕ. Лешĕ тулли сумкăпа çитрĕ, ăмăрту хыççăн сĕтел çавăрма чĕнчĕ. Пĕр-пĕрне тахçантанпах пĕлекен ытлашши пысăках мар йышра кашниех ертӳçĕ, кашниех çивĕч чĕлхеллĕ кунта ватта сулăнсан та спорта пăрахманнисем. Чăваша хирĕçле унран вунă çул кĕçĕнрех ушкăнпа ăмăртакан яштак пӳллĕ çын, яланах Семăпа пĕрле килекен Вадим ларать. Ытлашши сăмах çаптараканĕ, кĕленчери ырлăха черккесене яраканни кĕрекере шăпах çавă. Хăйне вăл железнодорожник, ку стадионĕ те çавсен тет. Çавна асăннăшăн юлташĕсем ăна тиркештереççĕ, хĕрсе кайрĕ ав, вĕçкĕнет теççĕ. Кăштах сыпсан, ыттисен те чĕлхи çемçелсен ун-кун çинчен тăкăлтатнă май каларĕ Вадим ят тивмелли сăмаха Василе.

– Юрĕ-ха, хыçран тытăнса пынă пултăр – мĕншĕн иртмеллеччĕ финишра? Кунта хамăр пĕр çемье шутĕнче ăмăртатпăр-çке.

Чăваш ачи шарламасть, вăл хăй мĕн шухăшланине те тӳрех персе ямасть. Тӳрре тухма унăн сăлтавĕ те пур. Аллăран иртнĕ Вадимăн, чăнах та, сиккелесе илнĕ самантсем, урана тӳрлетсе çитерейменни пулать-ха час-часах; судьясем çирĕп тытмасан çăмăллăн илтерсе утать, стартран хăвăрт тапранса каять, çула вĕçлес умĕн çеç иртнĕ унран ялан Василь. Сема вара, пĕвĕпе Васильрен кăшт çӳллĕрех, кăвакара пуçланă çӳçлĕ, вулас-çырас чух куçлăх тăхăнакан çын, кĕске утăпа пырать, чĕркуççийĕ тӳрленсе или-илми

унӑн, ҫавна пулах-и Василь, сӑлай енчен тикӗс утаканскер, иртсе курайманччӗ унран. Тӑватӑ ҫул каялла, ветерансен юхӑмӗ ҫӗр-шывра тин пуҫлансан, Европӑра Сема ылтӑн тата кӗмӗл медаль ҫӗнсе илчӗ, Василӗн – икӗ бронза. Ун чух чӑваш ачи хӑйӗн ҫамрӑкрах вӑхӑтра алла илнӗ сӑлайӗпе – пилӗке вӗлтӗрт-вӗлтӗрт ҫавӑрнипе утта вӑрӑммӑн килтерсе пыратчӗ; иртнӗ ҫул Раҫҫейӗн анӑҫ чиккинчи патшалӑх тӗп хулинче, ҫакӑнта, эстафетӑра Олимп вӑййинче медаль илнӗскерпе, Женьӑпа, паянхи кӗреке хуҫипе, юнашар утма лекрӗ те, хальхи вӑй питтисен уттине те куҫа хывнӑскер, урана тӳрех ума кӗле ҫине лартса, сутанана ҫавӑрмасӑр кӗскерех утӑмпа кайса пӑхрӗ, вара лешне кура виҫҫӗмӗш тапхӑрӗнче ҫапла утта улӑштарчӗ-ха, вӑхӑчӗ малтанхинчен хавшакрах та пулчӗ, анчах ҫӗнӗ утӑма, ку чухнехи вӑй питтисен сӑлайне алӑпа ярса тытнӑччӗ ӗнтӗ; киле килсен вара ҫав мелпе ҫӳрерӗ, туптанчӗ, хӑй вӗрентекен ача-пӑчана та ҫавнашкал пыма хистерӗ. Уйӑх иртнӗ тӗлелле Шупашкарта Раҫҫейӗн уҫӑ ӑмӑртӑвӗ пулчӗ. Нумай ҫӗр-шывсенчи чи вӑйлӑ атлетсем, самай кӗрешсем ӑмӑртрӗҫ. Вӗсен кӗрешӗвне, сӑлайне сӑнаса куҫпа ӳкерсе илчӗ Василь Васильевич. Ирпе чи инҫе ҫула килтерме хула урамӗпе каллӗ-маллӗ хутларӗҫ пулсан, каҫалапа кӗскерех инҫӗшрисем стадионта вӑй виҫрӗҫ. Вӗсем хыҫҫӑн ветерансем старта тухрӗҫ. Хӗрӗхрен пуҫласа пиллӗкшер ҫулӑн ушкӑнланса тупӑшаҫҫӗ пулин те йышӗ ытлашши пысӑк мартан пурне те пӗр харӑс тапратса ячӗҫ вӗсене. Василь Васильевич яланхилле хӑй ҫеммипе-мелӗпе пырать – туптаннӑ, ҫӗнетнӗ сӑлайӗпе тикӗссӗн вӑшт-вӑшт-вӑшт илтерсе. Атӑл тӑрӑхӗнчи тепӗр хулари атлет хыҫӗнче сӑнаса пычӗ-ха малтанах, кайран иртрӗ те хытӑран хытӑ кая пуҫларӗ, умра – хӗрӗх ҫулхи икӗ ҫивӗч атлет, тӗнче класлӑ мастерсем тата Василь юлташех, аллӑри ветеран, ку вара урана ҫурма хуҫлатса утать; тен, Васильрен юлма кирлӗскерех вӑл, анчах урана тӳрлетсе ҫитерменнипе чуппа ҫывӑхрах та ун утти, хӑвӑртрах каять, инҫене тарать. Вӑл мар-ха канӑҫсӑрлантараканни, хыҫа Атӑл тӑрӑхӗнчи тепӗр икӗ хулари икӗ атлет ҫакланса ларчӗҫ, пӗри, ҫамрӑкки, тепри Василь ушкӑнӗнчи, утмӑлтан иртни, Европӑра ылтӑн медаль илнӗ ччӗ ку хӑй ҫулхисем хушшинче, Василь ун чух аллӑ саккӑрта ҫеҫчӗ; эппин, кӗҫӗнрех ушкӑнраччӗ. Халь ҫав ҫынпа пӗр

ушкăнра Василь. Хĕллехи ăмăртура тепĕр хулари Раççейре мала тухас тенĕ чух пилĕк çухрăмлă çулăн юлашки чĕрĕкĕнче тарчĕ вăл чăваш ачинчен, чупнă пекех тарчĕ. Халĕ те ак çыхланса ларчĕ Шупашкарта çавă. Судьясем, тӳресем, – чи çирĕпписем, вăй питтисене сăнакансем. Тăваттăн стадионăн тăвата выранĕнче тăраççĕ вĕсем. Шăпах тӳресем тĕлĕнчен иртнĕ чух утта хăвăртлатать, вĕçертсе хăварма тăрăшать Василь хыçрисене, анчах çак виççĕн çыхăннă тĕвĕ малти выраншӑн кĕрешмеççĕ тенипе-ши (умра виççĕн тарса кайнă-çке-ха!) вăй питтисене çирĕп сăнанă, хăшĕсене «куç ӳкернĕ» тӳресенчен нихăшĕ те стариксене юнамарĕ. Пилĕк çухрăмри çулра ик çĕр метр юлсан иртрĕ хай атлет Васильрен, чăваш ачи тытăнса пычĕ çĕр метрне, финиш умĕн ăнтăлатăпах тесе тăваттăмĕш йĕр çине тухрĕ, анчах çурăм хыçĕнче чылай хушă канса пыни, чуппа çывăх утни умрах пулчĕ: тăвата çеккунт юлчĕ Василь хальхинче хăй ушкăнĕнчи атлетран. «Сан пек чи тĕрĕсси те илемли, хальхи вăхăтри сăлайпа утаканни сирĕн йышран урăх пулмарĕ», – терĕç ăна курса тăнă тренерсем, хамăр чăвашсем, ытти хуларан килнĕ хăнасем те, ĕлĕк хăйсем пайтах ăмăртнисем. Вăл шутра паллă атлетсем Веньăпа Олег та. Саламласа алă пачĕç Василе, мухтарĕç ăна. Анчах парне – икĕ плитка шоколад илмелĕх кăна пултăр сулăмĕ-сумĕ – ăна мар-çке, леш атлета кайрĕ; Василе грамота çеç. Ик эрнеренех тепĕр хулари сумлă ăмăртура хăйне улталаттармарĕ Василь, дистанцийĕ пурĕ те икĕ çухрăм çеçчĕ те, финиш умĕнхи талпăнура çур утăм маларах пулчĕ чăваш ачи лешĕчен. Çавăнтанпа тĕл пулман-ха кусем. Семăпа Василь тĕл пулманни те çулталăк ытла. Нумай пулмасть Европа чемпионатне кайса килнĕ Сема, хальхинче икĕ ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. «Эс пулнă пулсан икĕ кĕмĕл илеттĕн», – тет вăл Василе. Ку вара: «Пĕринче, çирĕм çухрăмĕнче, ылтăншăнах кĕрешеттĕм-ха санпа», – тесе шухăшлать хăй ăшĕнче. Кăтартăвĕсем вăйлах мар. «Никам та пулмарĕ вăй хурса кĕрешме. Уйрăлтăм та кайран вăраххăн пытăм», – каласа парать Сема. Атăл тăрăхĕнчи ача виççĕмĕш пулнă, бронза илнĕ. Василь валюта çуккипе каяймарĕ унта. Паянхи старта Василь тĕплĕн, катаранах хатĕрленчĕ. Шоссепе кайсан тăвалласенче урана хуçлатарах чупрĕ, утта çывăхрах чупупа пычĕ; тӳремсенче – тип-тикĕс утăпа. Çынсем, тĕрлĕ çĕр-шыври атлетсем,

Олимп вӑййисене еплерех хатӗрленнине ҫырса кӑтартнӑ литературӑна, иртнӗ ҫул авторӗ парнеленӗскерне, алла тытрӗ, хӑйне валли мӗн кирлине ӑша хыврӗ: ытларах хӑвӑртлӑхшӑн кӗрешрӗ; икӗ уйӑх хушши кашни вырсарни кун вун виҫ-вун пилӗк ҫухрӑма ӑмӑртӑва ҫывӑх хӑвӑртлӑхпа тухрӗ. Кӗрешӗвӗ вунӑ ҫухрӑмсенче темиҫе кун хушши пулмалла тенӗччӗ, ҫавна хатӗрленчӗ. Кайран мӗн палӑртнннине улӑштарнӑ иккен: пӗр кун стадионра, виҫ ҫухрӑм тата иккӗмӗш кунне шоссепе вун ҫухрӑм терӗҫ, анчах ку старчӗ пулассипе пулмасси уҫӑмлах мар-ха.

Ҫу варринчи янкӑр эрне кун, хӗвел ансан каҫ пулттипеха, ҫитрӗ Василь хӑраххӑн е пӗчӗк ҫемьен пурӑнакан общежитие ертӳҫӗ патне килне шӑнкӑравланӑ, хӑй пулманран хӗрӗ ҫынсем ӑҫта вырнаҫнине пӗлтернӗ хыҫҫӑн. Виҫӗм ҫул пулнӑччӗ кунта, ҫавӑнпа ҫуртне ытлашши ҫӗтсе каймасӑрах тупрӗ. «Комендант каласа хӑварман мана, пӗрисем тӑваттӑн вырнаҫрӗҫ пӗр пӳлӗме, урӑх пушши ҫук, – терӗ вахтер, ватӑ арҫын. Атя эппин, кӗрсе калаҫ. Телевизор ярса патӑмччӗ-ха залра. Сумку юлтӑр – никам та тивмест».

Темле передача пӑхнӑ пулас та тухма тӑнӑччӗ залран кусем алӑк уҫса кӗнӗ чух. Сема тӳрех Василе ыталаса илчӗ, ҫурӑмран лӑпкарӗ, Вадим ал тытсах, ӑна силлесех йӑлкӑшрӗ. Тепӗр иккӗшне тин курать-ха Василь.

Кунтах, аялти хутри пӳлӗмре, ҫаксем килсе чарӑннӑ вырӑнӗ; виҫӗм ҫул Василь ҫӳлти хутра пурӑннӑччӗ; пӳртекӳнче – ача сӑпкисем-урапсем; ҫамрӑк арҫын е хӗрарӑм пӗр-пӗр алӑкран кӗни-тухни курӑнкалать. Пӳлӗмре тӑватӑ кравать; чӳрече янаххинче литр кӗрекен кӗленче савӑтпа электрокипятильник чиксе апат лартса янӑ. Василь йӑтса кӗчӗ хӑй япалисене: урайӗнче ҫӗр каҫасси ҫӗнӗлӗх мар. «Апат пӗҫерме лартатпӑр ак, – текелесе Василь кутамккине салтрӗ, сумкине уҫрӗ, ҫӗр улми шуратса пӗчӗк кастрюле тултарчӗ; типӗтнӗ пултран та пур унӑн. Пӑшӑхтарса пӗҫернӗ аш банкине уҫасшӑнччӗ Сема. Василь халлӗхе ӑна ткӗнтермерӗ: килӗнчен илсе килнине яшкана тултарчӗ, ҫур литр кӗрекен кӗленче банкӑпа пӗлтӗрхи кӑрӑҫ кӑларчӗ.

Йыш шав калаҫать, кашниех пӗр-пӗрне хӑй шухӑшне каласа парасшӑн – тӗнчери футбол чемпионачӗ пирки пырать тавлашӑвӗ. «Эсир каҫарӑр-ха», – тесе пуҫлать Альберт Пав-

лович текенни, сăмах хушшине кĕмесĕр чăтаймасăр. Леня, хура çӳçлĕ, кăтрараххи, чи кĕçĕнни ку йышра, кăшт уйрăмрах тытать пулас-ха хăйне, апатне, пăшăхтарса пĕçернĕ кăлпассине уйрăммăн касса çирĕ; хăйне валли пĕр турилкке чухлĕ шӳрпе пĕçернĕ. Василь хатĕрленĕ апата антарма чашăк-тирĕк тивĕçрĕ, Альберт Павлович та кăшт тутанчĕ; виççĕн – Сема, Вадим, Василь хырăма тултарчĕç чăваш пултранĕпе, çуллă сысна какайĕпе пĕçернĕ яшкапа. «Ку кăнтăр апачĕ пулчĕ-и, каçхи-и? Иккĕмĕш шутĕнче-и, пĕрремĕшĕ-и – çапах сипетлĕ», – мухтать Сема. Хăйсен патшалăхĕн чикки урлă каçнă чух документсене те, сумкăра мĕн пуррине те хытă тĕрĕсленĕ иккен кусенне. «Салтак ман паспорта тытрĕ те йăл кулса пăхать куçран. Илтнĕ иккен ятăма, вуланă-мĕн хаçатра», – мăнаçлăн хыпарлать Сема, чĕрĕ вăй-халлăскер. Ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те пĕлтермесĕр хăвармасть. «Урок итлерĕç. Пĕрремĕш категори памашкăн мана, – пăркаланса илерех калать вăл.– Кунашкаллине курман: ачасем хăйсемех хаклаççĕ хăнăхусене епле пурнăçланине тет министерствăран килни. Мĕн чухлĕ ача тет. Икĕ класс шăпах ман – пĕрисем утнă чух теприсем чупаççĕ, виççĕмĕшсем сăнаççĕ». Харпăр хăй ыррине кирек камăн та пĕлĕше-юлташа пĕлтерес килет пуль çав. Василь Васильч унашкал мар, вăл тепри ырласса кĕтет; хăйне кам та пулин мухтанине шарламасть. Ял хамĕнчен юлнă йĕр пуль çав ку. «Пĕр урок, ик урок чупатăп ачасемпе, унтан калатăп: ак курăр тетĕп», – лăпкăнах калаçать Сема. «Утайми пулса ларнă. Урам урлă кукленсе, пĕкĕрĕлсе каçать, – çирĕплетет унăн ĕçченлĕхне Вадим. – Кайран, кур, кăштахранах Европăран икĕ ылтăн медаль илсе таврăнчĕ!» Çавăнтах ачалăхне аса илет Сема: «Саккăрта ярас тенĕ мана шкула. Пĕрремĕш класс ачи эп. Япаласене йăтнă, çара уран тусанлă çулпа утатпăр. Машинăсем ирте-ирте каяççĕ. Пирĕн салтаксем...».

Василь те шкула саккăрта кайнă; вăрçă тухнă çул – иккĕмĕш класа. Сема, унран пĕр çул кĕçĕнскер, пĕрремĕшне ĕнтĕ. Василĕн сумкăрах-ха литература хаçачĕ; унта архиври пысăк сăн ӳкерчĕке пичетленĕ: вăрçă пынă вырăнтан тарса каякансем пыраççĕ; çамрăк хĕрарăм пĕчĕк ачине йăтнă; пысăкрах çĕклемлĕ кинемей танкашать; çул леш хĕррипе полуторка автомашина пырать – унта салтак ларнă... Çавăнта

Сема та утнăн туйăнать халь Василе. Хаçатне кăлармарĕ вăл, малтанах хурланнăччĕ чылайччен тĕмсĕле-тĕмсĕле пăхса, халь Семăн чунне пăлхантарас темерĕ.

Сема хăй килтен илсе килнĕ резина тӳшеке Василе вĕрсе хăпартса парать, ку ачи ун çине вахтертан матрац илсе килсе хурать...

Ирпе ирех вăранчĕ чăваш, урайĕнчи вырăнне пуçтармасăрах хула урамĕпе тухса утрĕ, унтан кĕрсен çĕр улмие шуратса кипятильникпа пĕçерме лартрĕ, койки пусĕнче пулнăран шнура Вадим тӳрлетсе пăркаларĕ. Сема тăрса тухрĕ, кăтра çӳç Леня çывăрма памаççĕ тесе мăкăртатрĕ. Кăштахран Сема кĕчĕ те çăкăр илме каясси çинчен пĕлтерчĕ, пуш кĕленчесене пуçтарчĕ. «Çӳлте, шкаф тăрринчи çӳлĕкре туллиех унта», – тĕллеттерчĕ ирĕксĕртен вăраннă Леня. Сема вара тĕрлĕ йышши кĕленчерен магазин йышăнаканĕсене суйласа икĕ сумка тăп-тулли тултарса тухса кайрĕ. «Кам ачаранах никам çине шанмасăрах пурăнма хăнăхнă, çав выçса вилмест, аптраса ӳкмест», – хакларĕ ăна чи ватти Алберт Павлович. Ку хăй вăл вăрçа хутшăннă çын, вĕçев шкулĕнче вĕреннĕ-мĕн, нумай-нумай хуласенче пулнă, пĕтĕмĕшле пĕлӳ çичĕ класс çеç пулнăран кайран гражданкăна тухнă, спорт канашĕнче ĕçленĕ. Пĕрре велосипедистсене Балтика тăрăхĕнчи республикăна СССР чемпионатне ертсе кайнă иккен вăл. Лере кусене, çитес çул ăмăрту хуçисем пуласскерсене, вăйлă командăна, пит чаплăн кĕтсе илнĕ; хӳхĕм пӳлĕмсене вырнаçтарнă, кăтартса çӳренĕ. Тепĕр çулне, ăмăртăвĕ кусен патĕнче чухне, Альберт Павлович хуçа патне кĕрет, хăйсене пĕлтĕр епле кĕтсе илни çинчен калать, пите хĕретес марччĕ тет. Лешĕ хăнк та туман. Инструктор вăтанса, Балтика велосиедистчĕсен умĕнче куçа тартса çӳренĕ. Хуçапа тавлашнă-тавлашнă та ĕçрен тухма çырса панă. «Çавăнтанпа опалăра эп», – тет хăйĕн пирки Альберт Павлович. Пĕр хушă ĕçсĕр пурăннă, кайран районти спорт комитетне спорт залне пăхса тăма вырнаçнă. Халĕ пенсире ĕнтĕ. Кунта килме те укçа-тенки пулман, çитсен çул хакне тӳлеççĕ-ха тет. Чухăна çак йышра кӳрентернĕ те иккен. «Леня стипель-чезра спорт мастерĕ, эпĕ çĕр метра вуннă та саккăр вуннăмĕш çеккунтра чупса тухнă, мастер шайне çеккунтăн иккĕ вуннăмĕш пайĕ чухлĕ çитереймен, çавăнпа мана хăйсенчен кая хураççĕ,

картасшăн мар», – ӳпкелешет Альберт Павлович. Йăрăс пӳллĕ вăл, хыткан, стадионра шăм-шака çемçетнĕ чух кĕске хушша вĕттĕн-вĕттĕн те хăвăрттăн чупать – ниепле те утмăл саккăрти çын тееймĕн. Хăйĕнчен кĕçĕнрех чăваш спринтерне пĕлет вăл. Унпа пĕр йĕре старта тăнă, ăна питĕ мухтать. «Груша туратне касмарăн-и? Сĕтел лартма аван ун айĕ. Октябрьте сан çуралнă куна тепре паллă тăватпăр пуль-ха», – тет Сема. Кусем кумаллă иккен.

Стадионра халь вĕсем. Ирхи апат хыççăн тухрĕç те килсе ларчĕç. Утмалли-чупмалли çулĕ яках та мар, путăклă-шăтăклă. Сема пăхкаласа çӳрет, кирлĕ пек хатĕрлемен тесе сивлет. Чăнах та ĕнтĕ шурă йĕре паллă туман. Тĕп стадион мар-ха çав ку, пĕр ведомствăн. Хăнасене кунта кĕтсе илни те юрĕ тесе килĕшет Василь. Çулĕ тавра утса тухрĕ вăл, кĕленче ванчăкĕ икĕ тĕлте – кĕшĕл-кĕшĕл; ăмăртнă чух тапочка ăшне сирпĕнсе кĕме пултарĕ, тăпра мар, урана касĕ тесе çапă шыраса тупса шăлса тасатрĕ ăна чăваш. Симĕс уйĕнче авиамодель ăстисем – ача-пăча – самолет вĕçтерет; çиппе-и карăнтарнă та пĕрин хӳринчи кĕрен тĕслĕ тăслака хăмпăна касса антарасшăн тĕрлĕ çаврăм туса, пĕр аялалла анарах, пĕр çӳлелле хăпарарах вĕçеççĕ ал ăсталанă кайăксем. «Эс унталла, вĕçнĕ еннелле ан пăхса лар, карăнтăкĕ татăлсан хамăр çине килсе тăрăнма пултарать», – асăрхаттарать Альберт Павлович Василь Васильча. Вăл паян утассипе ăмăртасшăн-ха, Сема кумăшĕ ăна çав тĕлĕшпе хĕтĕртсе килнĕ. Лешĕ шупка кăвак спорт тумĕпе, çара пуçăн, куçлăхпа трибуна сакки çинче ларать ав. Унпа юнашарах Вадим, ку та сăрăрах тумпа. Василь Васильевич шалпартарах çӳхе хура саржăпа, хул айĕпе хĕрлĕ йăрăм пур тумĕпе. Йыш калаçкаласа ларать сак çинче. Хура кăтра çӳçлĕ Леня та унта. Вăл паян япаласене хывса хăварсан хураллаканни çеç, ыран марафон инçĕшне чупса тухма пуçтарăнать. Вунă çухрăма чупатпăр тесе ыттисем те спорт комитетне кĕрсе çырăнчĕç-ха, номерсем те илчĕç, анчах Васильсĕр пуçне халь утнă чух çав хĕрлĕпе тата хурапа йĕрленĕ çӳхе капрон пир тăваткăлне нихăшĕ те майка çумне çыпăçтармарĕ, пĕрисен тахçанхи номер, Сема ним паллăсăрах: пĕр-пĕрне пĕлеççĕ кунта.

Авиамоделистсен айхашăвĕ хыççăн симĕс уя икĕ команда футболла выляма тухрĕ.

Старт. Хĕрарăмсем икĕ, арçынсем виçĕ çухрăма ăмăртаççĕ, çавна май пĕр харăссăн тапранмашкăн вĕсен старт вырăнĕ стадионăн хире-хирĕç кĕтесĕнче; арçынсен финиш тĕлĕнчи пистолет шаплатнине пăхмалла. Тӳрех хыттăн вирхĕнмерĕ Василь, шăпах Сема хыçне лекрĕ; лешĕн умĕнче Вадим вĕлт-вĕлт тутарать; чи малта – çамрăкраххисем, Санкт-Петербург атлечĕ, кунти çĕр-шыв спортсменĕ. Çавсем уйăрălса кайрĕç ĕнтĕ, çивĕчкерсем, тĕнче класĕнчи мастерсем ватăсене çывăха ямаççĕ. Олимп вăййинче медаль илни, Женя, Василь хыçĕнче кăшт юларах пырать пулас. Вадим урине пĕр хушă тӳрлетет, тепĕр хушă тӳрлетсе те çитерейместь, темĕнле сиккеле-сиккеле илнĕн пырать. Сема ун уттипе пĕр килтернĕ, хăйĕн сăлайĕ яланхилле, кăшт çеç темĕнле тӳрленнĕ пек, тӳрленсе те çитмен пек чĕркуççийĕ. Судья пĕрре çеç, вăлах хулан çак районĕнчи спорт комитечĕн ертӳçи, çаврăмсерен мĕн вăхăт иртнине хыпарлать. Василь хăй те сисмерĕ, тренировка чух шоссе çинче чăнкăрах тăвалласенче урана хуçлатса çурма чупупа пынă меле хăй çумне çыпăçтарса лартрĕ. Ак вăл Семăран шит те хăпмасăр пырать, ура хушшăн-хушшăн чăшт-чăшт сăтăрăнса илет çĕр çинче. Сема Вадима иртрĕ, Василь – ун хыçĕнчех. Çакна сиссе ун тантăшĕ хытăран хытă талпăнать, хăвăртрах-хăвăртрах каять, кĕретехваскать, хыçрине татса хăварасшăнах, тарасшăнах. Йывăррăн хаш-хаш сывлать вăл. Василĕн, ялан çĕр çĕмĕрттернĕн хыттăн сывлаканскерĕн, сас та тухмасть темелле, çăмăллăн тикĕс сывлать, хăй те тĕлĕнет: епле пыма пулать кунашкал? Санкт-Петербург ачи, паян килменни, эп çурма утăпа-çурма чупăпа пыма пĕлместĕп, е кросс чупăвĕ, е утă манăн тесе ӳпкелешетчĕ кам та пулсан хăйне мăкăлтанă пирки. Василь те çавнашкалах: е лашалла чуп, е ут; халь ак хăй тĕлĕнмелле: кунта килмен тепĕр ентешĕ пек çурма утăпа чашлаттарать. Ик çухрăма старт илнĕ малти хĕрарăмсене çитсе иртрĕç ĕнтĕ – уттине тикĕслетмет-ха Василь. Хронометр тытнă судья кашни çаврăмра вăхăт каласа тăрать: ултă минут та аллă пĕр çеккунт; сакăр минут та вăтăр тăхăр çеккунт... Эппин, кашни тăват çĕр метра пĕр минут та аллă çеккунтра е унтан та лайăхрах хăвăртлăхпа пыраççĕ – çамрăк чухнехи пек, спорт мастерĕн нормине лартнă вăхăтри пек. Пит йывăр сывлать Сема, лăпкă пынă чухнехилле темелле пĕр сассăр сывлăш кĕрсе тухать Василь ӳпкине.

Хĕвел тӳперен анăçалла тайăлнă, кăшт çил пур, çапах вĕри, виçĕ çухрăма чăтма пулать хĕвел темле шăрантарса пăхсан та. Василь те, Сема та çара пуçăнах, çире майкăпа трусси çеç. Семăн кăвакпа шурă йăрăмлă шăтăкла тум; Василĕн питĕрех шурă майка; труссийĕсем иккĕшĕн те пĕрешкел: кăвак çине хĕрлĕ йăрăм хывнă. Миçе çаврăм юлнине каласа тăракан çук, вăхăта пĕлнипех чухларĕç кусем: юлашки çаврăм. Ик çĕр метр юлсан Сема Василе: «Ирт, – терĕ. – Пĕрле каятпăр». Çума тăчĕ чăваш, анчах пĕкĕ евĕр авăнчăк тĕлте йĕре вăрăмлатас темерĕ, хыçах куçрĕ; тӳр йĕре куçсан танлашрĕ; Сема иккĕмĕш çулра, Василь виççĕмĕшĕнче. «Финиша пĕрле çитĕпĕр», – ăнтăлма чарать каллех Сема çумрине. Çапах финиш йĕрĕнчен кăшт маларах Василĕн утă çивĕчлĕхĕ хăй сăмахне аларĕ, вăштвăшт-вăшт утăмларĕ те чăваш шур йĕре Семăран ик çеккунт маларах татрĕ. Вун виçĕ минут та аллă пĕр тата аллă виçĕ çеккунтсенче вĕçлерĕç вĕсем çула.

Василь айăпа кĕнĕн тӳрех финиш тĕлĕнчен хăпрĕ, тум улăштарса тăхăнсан та сак çинче уйрăммăн ларчĕ. Альберт Павлович хăй пуçласа пĕр çухрăм утса тухнăшăн хĕпĕртесе, çич-сакăр çулхи икĕ хĕр ачапа тупăшса, вĕсемпе сăмахласа пыни çинчен каласа парать. «Хăв çулхишĕн стадион рекорчĕ ку», – мухтать ăна Сема кумăш, Вадимпа иккĕшĕ протокол çыракансем патĕнче кĕпĕрленнĕ хыççăн финиш йĕрĕнчен аран-аран хăпнăскер. Хăйĕн вăхăтне аллă виçĕ çеккунт, Семăнне аллă виççĕ çурă туса тӳрлетсе çырнине асăрхарĕ кайран Василь.

Парнесене малтанах хатĕрлесе хунă-мĕн. Сема çул тăвакне саплаштармалăх пултăр тесе калаçкалатчĕ. Целлофан пакетсемпе тыттарчĕç грамотăсемпе парнесене. Василе – пĕр ывăç конфет хумашкăн хрусталь ваза, çавракаскер тивĕçрĕ; Семăн сехет терĕç. Кун хыççăн Женя кăмăлĕпе сĕтел хушшинче ларчĕç вĕсем пĕр хушă шăкăлтатса. Хăна сакки сарлака теççĕ, Вадим, хĕрнĕскер, тытăнарах юлчĕ ав. «Ай, хывăх вĕçтерет халь, хăй доцент иккенне асăнмасăр хăвармасть», – тесе сивлекелерĕ ăна Альберт Павлович. Чи ватти хăй тĕллĕн уттарчĕ. Семăпа Василь стадионран иккĕшех тухрĕç, хăшĕсем маларах та кайнă, теприсем тытăнса юлнă. Троллейбуспа пынă чух пĕри, ватă арçын, Се-

мăсен патшалăх ертӳçи пирки сăмах хускатрĕ те, ку хĕрсех калаçăва кĕчĕ, тепĕр хĕрарăмпа хăйсен чĕлхипе пуплерĕ...

Кунти халăхăн çак ик кун – уяв: республикăна нимĕç фашистчĕсенчен хăтарнăранпа шăп аллă çул тултарать. Çавăнпа унта та кунта халăх йышлă, кашниех уяв сăнлĕ. Эрех сутмаççĕ те, хĕрĕнкĕ çынна курмастăн, е теплерен çеç пĕри йӳççине кăшт активни сисĕнет, сăмахран, леш Семăпа хĕрсе калаçнă старик. Кусем хăйсем те хĕрлĕ сăнлă тейĕпĕр. Çанталăк çумăра кайни иртнĕ хыççăн халь виççĕмĕш кун-и уяр тăрать, халăх çавăнпа та пуль урама тапса тухнă. Пысăк мар юхан шыв тĕлĕнчи сип-симĕс йывăçлă, асфальт хывнă типтерлĕ бульварта ярмăркка темеллех çын хĕвĕшет. Семăпа Василь кунта уткаласа çӳрерĕç, йывăç сулхăнĕнчи хыçлă сак çине ларса канчĕç... Халь тин иртнĕ ăмăрту пирки пĕри те шăл шурри кăтартмарĕ. Туссем вĕсем, спортри çывăх юлташсем. «Семăна эс пĕлнĕ-и хальччен?» – пăхрĕ куçран Леня Василе ку тĕлĕннĕ пирки тепĕр кунне каçхине. «Мĕнле каламалла: ăмăртусенче çакнашкал курнă-калаçнă». Çынна пĕлсе çитес тесен пĕрле миçе пăт тăвар çиме каланă? Мускаври ăмăртăва Сема костюмĕ çине икĕ академзначокпа спорт мастерĕн паллине çакса пынăччĕ; хăй упракан çăмăл атлетика журналĕнче, тахçанхи-тахçанхи номерте, СССРти çирĕм пилĕк атлетăн кăтартăвĕсене пичетленинче, Василĕн аллă çухрăмра, Семăн вăтăрта хушамат пуррине тупнăччĕ Василь. Унтах çак ăмăртăва йĕркелекенĕн Тольăн та, Санкт -Петербург ачин те ячĕсем çапăннă.

Таçта та çитме ĕлкĕрет, чĕрре кĕрет, хăйĕнне тăватех Сема, çавăнпа пĕрле килнисемех унран сивĕне-сивĕне пынине, ăна килĕштерменнине куркаланă Василь. Сема кая юлсан хĕпĕртекен те пайтах. Будапештра ак, хĕллехи Вăйăра, унран Балтика ачи финишри талпăнура çеккунтăн иккĕ вуннăмĕш пайĕ чухлĕ иртнĕччĕ те, хĕпĕртенĕччĕ Семăпа пĕр йышриех, чупавçă. Йăнăшпа Василе ал тытса саламланăччĕ парăнтартăн тесе. (Балтика ачи Васильпе юнашар чылай хушă пынăччĕ.) СССР пулнă çĕр-шывсен ветеран Ассоциацийĕн ертӳçи: «Пĕрер хут ăмăртнă хыççăн тепрер енпе чĕнсен те старта тухас мар: кашни хутшăннăшăн валюта тӳлемелле пулать», – тесе хытарчĕ ун чух канашлура, анчах Сема тепĕр кунне сакăр çĕр метра чупма тухрĕ, унта пурĕ те иккĕн

çeçчӗ аллă пилӗк-аллă тăхăр çулхисем; ак Сема кая юлсан та виççӗмӗш вырăн йышăнса бронза медаль илчӗ. «Ылтăна» çухатнă шута танлаштарчӗ-шим çапла? Çаксене курнă, пӗлет пулин те тепӗр пысăк халăх ачипе сивӗ мар-ха Василь, ăна ăнланма тăрăшать, спорта парăннăшăн мухтать те.

– Эс, Василь, яланах урана хуçлатса пыратăн-и ăмăртнă чух?

Куна иккӗмӗш кунне, каллех чей сӗтелӗ хушшинче, уйрăлас, саланас умӗн ыйтрӗ Сема ентешӗ чипер хӗрарăм Галя.

– Ӗнер пӗрремӗш хут,– чăнне евитлерӗ чăваш.

– Урăх унашкал ан ут.

Василе, тӳррипе илсен, унăн çирӗп кăтартăвӗшӗн, аван вăхăтпа утса тухнишӗн çеç мар, илемлӗн, паха сăлайпа утнăшăн хисепленӗ çав ялан. Халь ав малта пулсан та хисепре пулмарӗ-им вăл? Ку мар калава çыртараканӗ. Ку мар!

Ултав. Вăй-хал çителӗксӗртен-и, кăмăл ленчешкерен-и килсе тухать вăл тӳрӗлӗхрен пăрăнасси? Е тепри ӗмӗрех ултава хапăл? Ултав-суяпа ӗмӗрне ӗмӗрлекен те пур-тăр. Сема... Ленчешкех-и вăл? Мӗн енчен? Туссем-çке-ха иккӗшӗ Васильпе. Пӗр пекрех шăпа вӗсен. Çулталăк кӗçӗнрех чăваш ачинчен тепӗр аслă халăх çынни. Таçта та кӗрсе тухать, пултарать, ӗлкӗрет. Никам çине шанма çук пурнăçпа ӳснӗрен ăна-кăна йӳнеçтерме пӗлет тесе хаклани вырăна ларатехçке. Ултав...

– Эсӗ чупассипе Семăран иртетӗн, – терӗ тепӗр кунне ирпе Вадим Василе. – Семăн утти кӗске.

– Ăмăртура чăн-чăн чупас енӗпе ăсталаннисем пур. Çавсем малта пулаççӗ,– палăртать чăваш.

– Маншăн – эсӗ çеç, – хăй мӗн шутланине тунмасть Сема тепӗр авăкри калаçура.

– Пурӗ миçе çын унта утмăл-утмăл тăвата çулхисем?

– Халӗ çиччӗн.

– Старт вăхăчӗччен вун виççе çитет. Хăшӗ те пулин чăнчăн чупаканни тупăнать вӗсенчен.

– Маншăн эсӗ çеç.

Телевиденипе пулакан нумай сериллӗ фильм сценарине çырӗччӗ автор кунта; спорт ыйтăвӗсемпе тавлашнине вӗçе-вӗç тăсӗччӗ; шухăшласа кăларнине мар, чăн пулнине илемлетсе, пӗтӗçтерсе; спортсмен чунӗ витӗр кăларса.

Чăнне. Суйине мар. Ах çав, çыру кăларăмĕн хапхи умĕнче тăракансемшĕн спорт питĕ аякри тĕнче. Хĕрхенес те килет ку авторăн вĕсене çав тĕнчене çитсе курманшăн. Тепри ĕмĕр-ĕмăр илтнĕ курорт, кану, ăшă тинĕс, ун çыранĕнчи вак чул çинче хĕртĕнни çинчен, анчах çитсе курма пӳрмен хăйне; ĕмĕтре, пурнăçлайман ырлăх пек аса илет пуль вăл тĕнчене ялан ĕçре пиçнĕ, кушăрханă алăллă çын. Спорт пирки хăть çавăн пек ĕмĕтленесчĕ çыру кăларăмĕн хапхи умĕнче тăракансен. Хăть спорт вăл тепĕр тĕнче иккенне туйтарасчĕ. Тĕнчи ку тинĕс хĕрринчи шак чул çинче тапчам лартса хĕртĕнсе выртни мар – хĕлĕн-çăвĕн, çурлă-кĕрĕн хура тар, шапăр тар тăкни.

Василĕн те çак старччен хатĕрленӳсенче миçе пăт хура тар шапăртатса юхман-ши, мĕн чухлĕ кĕпе-тум шап-урă тăвар хĕвĕннипе касăлман-ши? Арăмĕнчен мĕн чухлĕ сăмах тĕкĕнмен-ши? Ют çынсем пуçа пăркала-пăркала тĕлĕннĕ: ĕç пур çинчех ĕç пăрахса, вăхăт тивĕçтерсе ут-ха çул тăрăх кирек епле çантăлăкра та! Тĕнчере пĕр япала – ырă-и вăл, усал-и – теприне хӳтĕлет тенĕ евĕр, эрех-сăра пички ăшне путнă этемсене тав тăвас килет Василĕн: арăмĕ хытах ӳпклешнĕ чух вăл: «Ав, хупах умĕнче ирех пухăнса тăнă унта, мухмăр чĕртесшĕн асапланаççĕ; ав, пĕр черкке те пулин тупассишĕн хĕрĕнсе çӳреççĕ», – тет те, танлаштарăвĕ килĕшӳллех мар пулин те лешĕ лăпланать: эрех кӳллине чăмман-ха унăн упăшки, спорт тытать пуль ăна çав инкекрен; атя, вăхăт çухални вăл, тум çĕтĕлни сапланĕ.

Ирпеле çăмăллăн тумланса пӳлĕмрен пиллĕкĕн пĕрлех ырă кунпа киленӳçлĕн тухса утрĕç вĕсем, трамвай çӳрекен тĕп урамран теприне, лăпкăраххине куçрĕç те тăвал енчен лапамри лаптăкалла анчĕç, киоскăсем умĕнче ним илмесен те чарăна-чарăна тăчĕç (Леня килсенех улăштарнă кунти укçапа ывăлĕ валли шăкăлат тата чăмламалли туянчĕ); иккĕн е виççĕн юнашар утаççĕ, хăйсем шав шăкăлтатаççĕ.

Спорт комитетĕнче марафон чупма килнисене хĕрсех йышăнаççĕ ав, хĕрĕх икĕ çухрăм та çĕр тăхăр вун пилĕк метр инçĕшне чупакансем йышлăрах-ши, вунă çухрăмпа çырлахакансем вĕсенчен кая мар-ши? Марафона тăватă сехет те çирĕм минутран кая мар вăхăтпа чупса тухрăн пулсан кашнинех медаль лекет; «кĕмĕлне» кăтартма сĕтел çине хунă, ту-

рăш евĕрлĕ тăсланкарах тăваткăлскер, кăштах хăмăр тĕслĕ, унта илемлĕн çавăрттарса ăмăрту ятне çырнă; пуç пӳрне сарлакăш симĕспе сарă чăпар хăюпа măй урлă çакмалла тунă.

Сема вунă çухрăма ăмăртакансене йĕркелекен арçынпа калаçать, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче пулнине хисеп тумалли пирки сăмах пуçарать, хăйĕн епле титул пуррине асăнать, лешĕ классикăлла марафон хуçи патне пырса сăмах татать, Альберт Павловичăн хушаматне çеç мар, Семăпа Василĕнне те номерсене палăртса уйрăм хут çине çыртарать: стадионра микрофонпа асăнма та кирлĕ пулĕ.

Кун хыççăн Семăпа Вадим таçта çӳрерĕç, виççĕшĕ килех таврăнчĕç. Вырăн çине тăсăлса выртнă ĕнтĕ вĕсем – канаççĕ.

– СССР чемпионатĕнче, эп чипель-чезпа çӳренĕ чух, медаль илме çирĕп норма палăртнă та, вунă çухрăма пурĕ те виççĕн çеç çырăннă, старт вăхăчĕ тĕлне вара иккĕн çеç пынă, – каласа парать Леня.

– Тĕрĕс тунă пыманнисем, – татса хурать Василь.

– Ăмăрту ирттермен вара,– шухăшне вĕçлет Леня.

– Кирлĕ мар пулсан – ан ирттерччĕр, кирлĕ тĕк – ирттереççĕ.

– Ĕçлеме ӳркенеççĕ вунă çухрăма ăмăртакансем. Кахалланаççĕ. Тĕнче шайне çитерейместĕ, çавăнпа çирĕп норма лартнă. Олимп вăййине мĕншĕн илсе каймалла вара медальшĕн кĕрешеймеççĕ пулсан?

–Тимлеме, çине тăма интересĕ пулман пуль?

– Укçа-тенки ăçта? Ыттисем ĕçлеççĕ-çке. Диск ывăтакансем, сăмахран.

– Эппин, кирлĕ мар вунă çухрăм? – чакмасть Василь. Леня хăйĕннех перет, Альберт Павлович та ентешĕ майлă: «Каçарăр-ха мана, эп спринтер, хам меле пĕлнĕ, çеккунтăн иккĕ вуннăмĕш чухлĕ мастер нормине лартаймарăм; хăшĕ еплерех тимленине пĕлетĕп», – текелет.

– Медаль илесси малтанах чикĕ лартса хунипе май килмест,– тет Василь.

– Футбола пурте пĕлеççĕ, такам та вĕрентет унта, çавнашкал сăмахлатăр, – пӳлет Леня.

– Вĕрентчĕр. Вĕсем – куракансем.

– Эс итлесе пĕтер малтан.

Итлет пĕтĕмпех Василь леш каласа пĕтериччен, анчах хăй сăмаххи хыççăн Леня вырăнĕ çинче стена еннелле çавăрăнса выртать: кĕнекине хупнă ĕнтĕ халь вăл, тек хăйĕнне те, никамăнне те вуламасть.

«Чемпионат вăл çав тапхăрта кам вăйлине палăртмалла, Олимп вăййине суйласа илес карт хăй пултăр, чемпионатра çирĕп норма лартни хавхалантараймĕ çынна, чăпăрккапа хăваланипе пысăк медале илтереймĕн; Олимп медалĕ кирлĕ пулсан çав халăх хăй ачине хавхалентармалли мел тупатех. Инçе çула чупассипе тупăшакан йыш пысăк; эппин, тупăшне те нумайрах памалла; йĕтре, диск перекенсене-ывăтакансене кама Турă мĕн чухлĕ панинчен суйласа илме çăмăлрах, йышĕ çав териех пысăк мар вĕсен; эппин, тимлесси те пĕчĕкрех; вунă çухрăма чупакансене вĕсен ĕçченлĕхĕпе çеç танлаштараймăр», – çапла шухăшлать Василь, анчах чипель-чез ăсти пулни ăна итлесшĕн, ăнланасшăн мар та, шарламасть, лешĕн кăтрарах хура çӳçĕпе çурăмĕ çеç курăнать кравать çинче.

Сема çитрĕ, Вадимĕ юлнă. Леня ăмăрту тĕлне илсе кайма виски савăтне чей вĕретсе те кăштах сивĕтсе ярать, Василĕн термосра хатĕрех вăл.

– Çирĕммĕш çухрăмран пуçласа ĕçмешкĕн палăртатăн-и? – ыйтать Леньăран Василь.

– Пĕр ĕçмесĕр чупса тухасшăн.

– Лайăх хатĕрленнисенчен пач ĕçмесĕр чупса тухакансем пур. Ытларах вăтăрмĕш, вăтăр пиллĕкмĕш çухрăмсенче ăша яма лекет.

Леня тăнлать, чи сумлă çула кайма ку йышра хăй пĕчченех хатĕрленнине туйни, ăна палăртни сисĕнет.

– Иртнĕ эрнере çирĕм çухрăма ăмăртса чупса тухрăм, – тет вăл.

– Тренировкăшăн меллĕ çеç ку, – хаклать Василь.

– Парне пысăкччĕ – кĕрешме лекрĕ.

– Çирĕм пиллĕк хыççăн ĕçме палăрт эппин.

Çирĕм çухрăмлă çаврăмра тăватă çĕрте апат сĕтелĕ пулать тенĕ, вăя пуха-пуха пыма май килет ун пек чух. Василь марафон дистанцине хăй нихçан та чупман-ха, вĕрентме те кирлĕ мар темелле ун пирки, анчах вăл йĕлтĕрпе тата утассипе аллă çухрăма темиçе-темиçе тухнă-çке, тренировкăсен-

че те тăватшар-ултшар сехет хушши пĕр чарăнмасăр пайтах çӳренĕ, çавăнпа вăй-хал епле чакса кайнине çителĕклех чухлать. Леня пĕр хутчен марафон чупнă иккен, виçĕ сехет те пĕр минутра вĕçленĕ çула, халĕ, хĕрĕх улттăрискер, виçĕ сехет те ултă минутра финиша çитесшĕн. Пĕлсех апат çыртатьха çынни: пирчем кăлпасси, çу, çăкăр, çăра чей кăнтăрлахи çимĕçĕ пулчĕ унăн. Паçăр хăй тĕрĕссине ĕнентересшĕн хĕрсе калаçнă хыççăн халь вăл ытлашши пуплемест: вăя перекетлет. Альберт Павлович кайма пуçтарăнать – тухса каяймасть. Çӳлти хута вырнаçнă ватă хĕрарăм, молдаванка, пĕчĕк кутамкка çакнă анчĕ. «Тапранатăр-и эсир?» – тет ку. «Тухса утăр эсир, кайăр Павловичпа. Сире иксĕре пĕрле пыма пит килĕшӳллĕ»,– сăмахпа тĕртет кусене чăваш. «Ах, эс, Василь, ĕнер сабантуйра пĕр шăпăрт лартăн, халь епле çиллес»,– пуçне пăркалантарать молдаванка, Ксеня тăхлачă, хăпса тухса кайнă чух.

Сема тимлени харама каймарĕ иккен, пысăк йыш парадра тăнă вăхăтра ăçтан-ăçтан кам-кам килнине хыпарлакан хĕрарăм диктор сасси Василе те асăнчĕ, стадионра чăваш çĕр-шывĕн ячĕ кĕрлерĕ.

Тĕп марафонецсем хыççăн вун пилĕк минутран тапранмалла вунă çухрăмра кĕрешекенсен ик çĕр аллă çынна яхăн ушкăнăн – хĕрĕн, çамрăкăн, яшшин, ваттин, кинемейĕн... Ракета шаплатса улăхнине сиссе ĕлкĕреймерĕ Василь, хăйпе çумăн пĕр хĕр – вун тăват-вун пилĕк çулхискер – тăратчĕ те, шкулта вĕрентекенскер, сăмах хушмасăр чăтаймарĕ ăна: инçе çула чупса тухайĕ-и, хатĕрленнĕ-и? Хуравне илтиччен атлетсем урра! кăшкăрса умалла сирпĕнчĕç, çывăхрах тăракан Сема та, Вадим та çурхи çырмари пăр капламĕ карах татăлса кайнăн йыш хушшинче çухалчĕç. Кам та пулсан, хыçра пыраканĕ, ура кĕли çине ан пустăр, тапочка ан хывăнтăр тесе сисĕнчĕклĕн, пушăрах вырăнпарах тата умра çут кӳлленчĕк çине пусса шыв сирпĕнесрен асăрханса, асфальт тумхахĕнчен те пăрăнса пычĕ стадионран тухас самантра Василь, вара шав малалла пăха пуçларĕ: ăçтан-ăçтан çаврăнса каймаллине пĕлменскер, умрине кăна куçлать. Вăй питтисем, тĕнче чемпионачĕпе Олимп вăййине хутшăнма хатĕррисем йăлттам уралла, çивĕч те вăйлă; ав чылай мала кайнă вĕсем, умрах çарти рота темеллех пысăк йыш, хыçра батальон е полк шутĕнчех пуль ыткăнакансем.

Шăрăх иккен. Кăнтăр иртни тăваттă çывхарать пулин те таса тӳперен хĕвел ирĕклĕн те хăюллăн пăхать. Çара пуçăнах Василь. Çил пур, каç енне-ха тесе çӳхе шурă калпакне тăхăнмарĕ вăл, çара пуçăн уçăрах терĕ. Анчах урам тăрăхĕнчи çак кукăрта çил те палăрмасть, малтан майка тарларĕ, унтан пур пек-çук пек çӳç йĕпенчĕ; тар тӳрех куçа кĕрсе ан кайтăр тесе çамкана пĕр йăрăм вазелин сĕрнĕччĕ. Ку вăхăтрах алăпа шăлса илмест-ха тара. Малтан сывлама йывăртарах пекчĕ, халь çемĕ çине куçрĕ пулас, пĕççе кăшт çӳлерех çĕклесе вăрăмрах утăмпа вĕçнĕ евĕрлĕнрех пыма тăрăшать çын. Çулăн пĕр айккинче йывăç мĕлки ӳкет, çав сулхăнпа туртăнать Василь. Унашкалли умра – пĕр-иккĕн е виççĕн; ытларахăшĕ хĕвел çапнинчен хăрамасăрах çул варрипе пырать. Икĕ çухрăм килчĕ-ши, çухрăм паллисене çул çине çырман.

Умра пĕр кĕпĕрленӳри йышра шур йăрăмлă шупка майка курăнчĕ: кĕскерех утăмпа тăкăлт-тăкăлт пырать Сема; çывăхрах, лешĕнчен кăшт юларах чавтараканни,– Вадим. Çакна хуса çитрĕ малтан Василь. Кускер те йывăç сулхăннерех тытрĕ. Халь хыçрах ун çумĕнче чăваш, çапла иккĕшĕ çул варриперех пыракан Семăпа танлашрĕç. Сема кĕскен-кĕскен те йывăртараххăн сывлать икккен, ак ăна çур утăм пек, пĕр пусăм пек хыçа хăварса умалла тухать Вадим, кунран хăйĕнчен сулхăн тĕлперех пырса Василь иртет. Такамсем иртрĕç кусене, тахăшĕсене хăйсем шĕкĕлчесе хăвараççĕ.

Мĕншĕн хатĕрленмен-ши ятарласа чупмашкăн Василь? Утассипе çул инçĕшне виçме тухсан малтан çухрăм çурă-ик çухрăм майлă чупнă-ха вăл ялан урана çемçетмелле, иттине утнă та утнă çеç, тата тăвалла вырăнсенче чупкаланă. Вунă çухрăма чупмаллине пĕлес пур эрнере пĕрре, вырсарнисенче те пулин, чупатчех çав хушша, çуррине утсан та çуррине чупатчĕ – халь вара вирлĕрех каятчĕ. Марафонне хатĕрленетчĕ пуль... Марафонне, хĕрĕх икĕ километр та çĕр тăхăр вун пилĕк метра. Çав инçĕше тутанса пăхассинчен кам чарма пултарĕччĕ-ши вара ăна? Тур сиртĕрех! Василĕн хăйĕн енĕ пур – утасси, тупăш çав енпе, çитĕ сана! Анчах пĕр хатĕрленсен никам чараймĕ, тĕп марафона чупма тухĕ вăл. Юрать, хатĕрленмен тата! Тертленесси кĕскерех хушăра çеç халь.

Ура чуппа хăнăхрĕ, чарăнса тăрсах утма пуçласси килĕ тени сĕвĕрĕлчĕ; тахçан, вăтăр пилĕк çул-и каялла, студент чухне виçĕ тата пилĕк çухрăма чупнă чухнехилле ыткăнарах, ярăнарах вашкăнтарса пыра пуçларĕ урана Василь; пĕриккĕн, çамрăксем, иртрĕç ăна; хăй иртет, пĕрре ума тухнисенех тепре хăварать. Хыçа Вадим та, Сема та çакланса ларнине сисмест: хаш-хаш сывлани те, тăп-тăп пусса пыракан та  çук. Эппин, юлнă-ха лешсем, нумай мар, виç-тăват утăм та пулин татăлнах. Шав умалла тинкерет Василь. Ав çаврăм туса чи малтисем хирĕç килеççĕ, çамрăксем ĕнтĕ, вăй питтисем. Урам тăваткалĕнчи кăшăл евĕр пысăк çаврăм иккен, куна ункăланă чух кайрисене, хирĕç килекенсене уйăрса илмелле куçлать Василь, анчах инçерех пулнăран Вадима та, Семăна та асăрхаймарĕ вăл. Тепĕртак кайсан татах пăрăнмалла пулчĕ. Кунта халь çил хирĕç вĕрет, уçăлтарать, çапах майка йĕп-йĕпех, çамка та, пит те тарпа йĕпеннĕ. Халăх йышлăн тăрать çул айккинче, алă çупать. «Атя, вун пиллĕкмĕш номер, атте, асатте!» – теçĕ ăна, Василе. Вун иккĕмĕш номере, Семăна та çапла кăшкăраççĕ-ши вĕсем кăшт каярахран? Ку тапхăрта чăвашшăн алă çупаççĕ. Виç çухрăм килчĕ-ши, ытларах-ши? Вăрăм урампа йăнк тӳррĕн каймалла. Çывăхрах репротуктортан кĕвĕ янăраса кайрĕ, чупса пынă майăн утăм тумалла тактлă çемĕ. Ик аллине çӳлелле çĕклесе чăваш ташшине саккăрла çаптарнăн илтерсе пырать Василь. «Атя, асатте, вăт çапла! – теççĕ ăна. – Ирт çамрăксене!» Кăшт кулать, çĕкленӳллĕн, çăмăлраххăн каять ветеран. Аллине пĕр хушă çӳле çĕклесе пырса вăл хул-çурăма кантарчĕ, ывăçалла тулнă юна каялла антарчĕ. Халь тимлĕн, пĕр шӳтсĕр талпăнать Василь, тахăшĕ иртет ăна, хăй те пĕрре ума тухнисене тепре хыçа хăварать. Ав урамăн леш енĕпе хирĕç килни курăнчĕ – çурма çула çитсе таврăнаççĕ иккен вăйлисем. Василь те таврăм тĕлне çывхарать. Иккĕн номер çырса тăраççĕ, пĕри калать, калать, тепри çырать, çырать; пĕрин куçĕ çын кăкрине тĕлленĕ, тепри пуçне хут çинелле пĕкнĕ. Таврăм хыççăн хирĕç килекенсем еннелле пăхрĕ Василь, Вадим курăнчĕ; пĕр минут чухлĕ хушăра ку юлташ. Çакскер Василь еннелле тинкерсе темĕнле ытарлăн йăл кулса илчĕ. Семăна шырать Василь, куçпа шырать – шупка майкăллă юлташ çук. Юлашкинчен, йыш хушшинчи Гальăна ал сĕлтсе

саламланӑ хыҫҫӑн тин, килекенсем енелле пӑхма пӑрахрӗ; тепӗртакран леш молдаванка ятранах чӗнсе сӑмах хушрӗ ӑна; вунӑ ҫухрӑмах чупать иккен-ха Ксеня. Хуллен пулин те чупать карчӑк, чи хыҫри те мар вӑл, унран кайрисем те чылай.

Каллех йывӑҫ сулхӑнӗпе пыма май килчӗ. Пит тӑрӑх тар юхать, ҫамкана вазелин сӗрнӗ пулин те тытса чараймасть йӑрлакан шыва ҫӳҫ; майка та питӗ иккен, кӗлеткене тӑвӑр, ӳте сывлама йывӑр, шурӑ майка аркине трусси ӑшӗнчен кӑларса ҫӳлелле ҫӗклет ҫын – ҫара ӳт уҫӑлать, чупнӑ май лӑпӑс аркӑ каллех шуҫса анать.

Пӗри иртрӗ ӑна, ҫӳхе кепкӑллӑскер. Тен, Василӗн те ҫӳхе пир пуҫ витӗшне тӑхӑнмаллаччӗ пуль. Юрӗ, чӑтма пулатьха. Тумӗнчен те, чуппи манерӗнчен те, ятран мар пулин те палларӗ хӑйне иртнӗскере Василь: ик ҫул каялла Мускаврa, стадионра, ирпе вунӑ ҫухрӑма утнӑ хыҫҫӑн каҫалапа ҫухрӑм ҫурӑна чупса ӑмӑртнӑччӗ, шӑп ҫакскер ҫурма ҫулта иртрӗ унран, виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ; Василь пиллӗкмӗш пулчӗ, утассипе ылтӑн медаль илнӗскер тек чупмастӑпах терӗ. Пӗлчӗ: халь иртнӗ ҫын ҫулӗпе ун ушкӑнрискер, утмӑл-утмӑл тӑватӑ ҫулхискер. Тӑваллараx вырӑнта, эс хӗлле йӗлтӗрпе ҫӳренӗ, тӑвайккисене пайтах улӑхнӑ тесе вӗттӗн-вӗттӗн пусса хӑйне хӑй хавхалантарса чавтарать Василь, лешне ҫывхарать, анатallарах чух та вӑрӑмрах утӑпа пырса юлмасть; тӳремре лешӗ таратех: чупассипе ӑсталаннӑ ҫын хӑй сӑмахне калетех ҫав.

Сема шӑп ҫурӑм хыҫӗнче пулчӗ пуль, врӑм урамри таврӑмра ҫавӑнпа асӑрхаймарӗ пуль ӑна Василь. Ак каллех тепӗр урамалла пӑрӑнмалла. Тӑвалла тӗлте кӗске-кӗске утӑмпа ҫывхарчӗ умри тантӑшне Василь, тӳремре лешӗ каллех хӑпрӗ. Кӑшӑл пек пысӑк ҫаврӑм туса пӑрӑнмалла; пӗрерӗн-икшерӗн ҫеҫ пыраҫҫӗ халь ӑмӑртакансем – ҫул вӗҫнелле сайралнӑ. Василь урамра каялла таврӑнаспа хӑй хыҫнех ҫаврӑнса пӑхрӗ: никам та ҫук, вунӑ-вун пилӗк утӑмра ҫеҫ пӗрерӗн чупаҫҫӗ – Сема курӑнмасть. Тухса ӳкрӗ-ши ку юлташ, тем пулмарӗ-ши унпа?

Каллех пӑрӑнмалла. Кунта марафонецсем валли апат сӗтелӗ хатӗрленӗ.

– Инҫе юлчӗ-и? – ыйтать Василь сӗтел патӗнче тӑракан хӗртен.

– Ик çĕр метр чухлĕ! – пĕлтереççĕ тепĕр яшпа иккĕшĕ.

Чупать, ăтăлать анаталла çын, умрине куçран вĕçертмест. Тепĕр çамрăк иртнĕччĕ, ăна та хĕстерес килет. Ăçталла пăрăнмаллине умрине кура чухлать Василь. Ак стадион хапхи, çӳл стена. Сĕтел умĕ. Ик-виç çын тăрать унта. «Финиш йĕрĕ кунта!» – теççĕ. Хронометр тытнă арçын вăхăт калать: «Хĕрĕх минут та хĕрĕх çеккунт...хĕрĕх ик çеккунт». Юлашкийĕ Василĕн. Ик çеккунт çитеймерĕ хăй умĕнчи йĕкĕте ветеран. Тантăшĕ çул хыççăн стадионалла кĕрсе кайма ĕлкĕрчĕ. Кунтах ак, стадион уйне кĕреспе, Василе хирĕç Сема тăрать, «12» хисеплĕ номер çыпăçтарнă майкипех вăл. «Эп сана курмарăм-çке. Мĕн вăхăтра çитрĕн?» – ыйтать унран Василь. «А, пĕр вырăнта ушкăнпа пыраттămăрччĕ», – ним пулман пек хуравлать Сема. «Вăтăр тăхăр минутра вĕçлерĕн-и?». – «Аха. Вадим çитмелле. Ав килет вăл. Иртнинче, хамăр патра, манран та иртнĕччĕ вăл. Халь тем юлать».

Вадим çитет. Хĕрĕх икĕ минутра.

– Семăна хамран мĕн вăхăтра иртнине кураймарăм, – тет ăна Василь.

– Эс ăна курма пултарайман,– хуравлать ку сăн-питрен йăлкăшса.

Судьясен йышĕнче – Женя. Вăрăм сăмсаллă хура хăмăр кепкăпа вăл, хăмăртарах костюмпа; цивиль тумĕпе пит культурăллă курăнать.

– Сема хамран иртнине астумастăп,– калаçать Василь унпа.

– Сема аван чупать,– тет Женя.

Сӳпĕлтетсе тăма вăхăт çук, финиша вĕçе-вĕç çын килет, Василь стадиона кĕрет, Семăсен пĕлĕшĕсем, хĕрсем, юлнăччĕ унта трибуна сакки çинче япаласене хураллама. Пикесем кусене чупса тухнăшăн саламлаççĕ. Ав Галя та çитрĕ – аллă пĕр минутра.

Кăштах уçăлсан, тум улăштарса тăхăнсан виçĕ атлечĕ те Леньăна пулăшма каймалла терĕç. Вадимпа юнашарахчĕ Василь хăйсем килнĕ тĕп трасса çине тухнă чух, кайран лешĕ таçта пăрăнчĕ, Сема тӳрех çул леш енне каçрĕ.

Марафонецсем валли хатĕрленĕ апата тутанчĕ Василь: пĕр сыпкăм пылак шыв. Кун хыççăн урам тăваткалĕнче шăпах

Леня курӑнчӗ. Вунӑ ҫухрӑма ӑмӑртакансен ҫулӗпех пӑрӑнса ҫавра ункӑ тумалла тепре килме – ҫирӗм ҫухрӑм вӗҫленет ҫапла пӗр ҫаврӑм; унтан ҫав йӗрпе иккӗмӗш хут кайса килмелле вӗсен. Катаранах ятран чӗнсе хавхалантарчӗ Василь Леньӑна. Унтан ҫаврӑмран килес еннелле хирӗҫле кайрӗ. Хальхинче хӑй тӗлӗнчен иртеспе: «Кукӑрта – апат. Пылак шыв. Тута хӗррине ҫыпҫӑнмаллах пылак», – тесе пӗлтерчӗ. «Кирлӗ мар!» – ал сулчӗ Леня. Ӑша ратӑн-и, ямастӑн-и – хӑвӑн ирӗк. Василь маларахран хыпарларӗ ҫеҫ ӑна.

Эх, Василь! Хӗсӗнсе ларасчӗ сан стадион сакки ҫинче пӗр шӑпӑрт. Футбол вӑййине курасчӗ. Таврӑнчӗ вӑл стадиона. Леш хӗрсем трубуна варринелле куҫнӑ. Футболисчӗ хапханалла мечӗк тапнӑ чух кӑшкӑраҫҫӗ, ал ҫупаҫҫӗ. «Параппан илсе килмелле пулнӑ», – текелесе шӳтлекелерӗ-ха Василь. Иккӗ-иккӗрен виҫҫӗ-виҫҫе ҫитрӗ шучӗ. Ура ҫине тӑрса ал ҫупать хӗр упраҫ, хӑйсен командине ҫӗнтерттересшӗн айхашать. Чӑтӑм ҫитерейменрӗ кунта ларма Василь. Марафонецсем епле пыраҫҫӗ-ши? Хӑшӗсем малта? Леня тата епле пырать унта? Термосри чейпе сыпса ҫу сӗрнӗ ҫӑкӑр ҫыртрӗ те вӑл тӗп стадионран тухса уттарчӗ, тӳртен тухма пулать иккен, тӳртен улӑхрӗ хула урамне.

Марафонецсем килеймен-ха, килеймеҫҫӗ. Хӑшӗсем иккӗмӗш ҫаврӑма тин каяҫҫӗ ав, хайхи апат сӗтелӗ ҫинчен капрон стакан илеҫҫӗ те пынӑ май ӑша яраҫҫӗ, сыпаҫҫӗ, пӗр ҫӑвар хыҫҫӑн тепре ҫӑтиччен сӗтел патӗнчен чылай инҫене каяҫҫӗ. Пӗрин е теприн хыҫҫӑн апат йӗркелекен ҫамрӑк чупать, пушаннӑ стакана парса хӑварма ыйтать, асфальт ҫине персе хӑварнӑскерсене илет те каялла таврӑнса мӑн чашӑкри шыва чикет, ҫӑвать; ҫамрӑк хӗр пуш куркасене ҫурри чухлӗ пылак шыв бидонран алтӑрпа ӑсса илсе ярать.

Ак лапамри урам тӑваткалӗ. Чи малти пӗчченех йӑнк-йӑнк-йӑнк чупупа килет. Василь ӑна: «Пӗрремӗш пыратӑн, хыҫра никам та курӑнмасть», – тесе ирттерет. Тепри килет – ӑна та ҫапла хыпарлать: иккӗмӗш ӑнтӑлни ҫинчен калать. Урам леш енче хӗрарӑмсем, ҫамрӑкраххисем, ваттисем тӑраҫҫӗ, тин лерелле каякансене сӑмах хушаҫҫӗ, калаҫҫӗ, шыв параҫҫӗ, пит-куҫа ҫуса яраҫҫӗ. Кинемей, мучи чупать марафонра, пӗрин пилӗкӗнче пӗчӗк-пӗчӗк кӗсьесем, сунарҫӑ патронӗсем евӗр кунӑнаҫҫӗ унта тюбиксем: выҫса кайсан

çимĕç хатĕрех. Мĕн хĕтĕртсе тухнă-ши тетĕн вĕсем çине пăхсан. Çулăн ку енче – каллех виç-тăват хĕрарăм; пĕри, аллă-ал тăват çулхискер, вунă çухрăма чупса ăмăртнă иккен, халĕ тĕп марафонра вăй виçекен ывăлне, упăшкине кĕтет – пулăшасшăн, хавхалантарасшăн. Хăйĕн вăхăтне ыйтса пĕлсен Василь ăна: «Э, эп сире хăварнă апла», – тет. «Эсир арçын», – пӳлет савăк сăн-питлĕ хĕрарăм, хĕрлĕ чечеклĕ варкăш кĕпепе уяври пек янкăссăн курăнаканскер. Финиш еннелле каякансене стаканпа шыв параççĕ, пичĕсене-куçĕсене шывпа сапса уçăлтараççĕ кусем те. «Вуннăмĕш пыратăн», – пĕлтерет Василь хăй палламан çынсенех. «Эсĕ арçынсенчен вун улттăмĕш, эсĕ хĕрарăмсенчен пĕрремĕш пыратăн», – калать вăл йĕркипе. «Эсĕ арçынсенчен çирĕм тăххăрмĕш, хĕрарăмсенчен эс – пиллĕкмĕш...». «Арçынсенчен вăтăр тăххăрмĕш, тата ултă хĕрарăм умра»,– йĕркипех калать Василь. «Хĕрĕх иккĕмĕш...». Чим, Леня килмелле-çке! Пĕр пӳлĕмре çĕр каçнă ача ăçта? Василь урам тăваткалĕ тĕлĕнчен иртрĕ, çула хирĕçле татах утать. Ав ыттисем пек сулхăнпа мар, шăп урамваррипе кăтрарах хура çӳç, тĕксĕм майка тăхăннă арçын килет утса, енчен енне тайкаланса, кĕç-вĕç кайса ӳкесрен хăйне хăй асăрханса. «Леня! – чупса çитрĕ ун патне Василь. – Хĕрĕх виççĕмĕш пыратăн арçынсенчен. Пĕтĕмпе йĕркеллĕ пулать. Час шыв ĕçетĕн ав. Çитетĕн финиша. Хĕрарăмсем! – кăшкăрчĕ леш çынсене. – Шыв хатĕрлĕр!»

Леньăна чун кĕчĕ пулмалла, вăл урине кăшт çĕклесе хуллен чупрĕ, анаталла май лĕпĕстетрĕ. Хĕрарăмсем курка тăсрĕç ăна хирĕç. «Пылак çук-и?» – сас тухрĕ Леньăн. «Çук». – «Апла пулин те ĕçем». – «Пуç тăрăх шыв ярăр», – сĕнет Василь. «Шăнса кайма пултарать, пушшех халран ӳкет», – хирĕçлерĕ вунă çухрăма чупса тухнă чипер хĕрарăм, хĕрлĕ чечеклĕ кĕпелли. «Йĕпетĕр, пит-куçа çăвăр», – çирĕплетрĕ Василь. Шур тумлă хĕрарăмĕ куркапа пуç тăрăх шыв ячĕ, Леня пите-куçа сăтăрса илчĕ, тав турĕ те хуллен тапранчĕ. Василь унпа юнашар чупать. «Халь эс тепĕр урамалла çаврăнатăн, кунталла тавраннă тĕле апат хатĕрлетĕп сан валли», – тесе пĕлтерчĕ те çывăхри урам тăваткалĕ урлă вирхĕнчĕ. «Тав-тапуç», – хăй ăнланнине палăртрĕ Леня. Апат сĕтелĕ патне пырсан Василь тулли стакан кирли çинчен хыпарларĕ, хĕр

упраç, ытти стакансенчен иле-иле ярса, пĕрне чăп тултарчĕ, Василь çавна тытрĕ те – каялла. Халь ĕнтĕ чупаймасть вăл: шыв тăкăнма пултарать, анчах çынни çӳревçĕ-çке-ха: йăшт-тин-йăштин утсах марафонецсене хирĕçле, пысăк çаврăм еннелле чылай кайрĕ вăл. Ав килет тĕксĕм майка, кăтрарах çӳç, ун хыççăн ик утăмра – шурă майка. «Çакна тĕппипе ĕçсе яратăн, кăшт сывлăш çавăратăн та анаталла май вăрăм утăмсемпе каятăн», – терĕ Василь юлташа. Васкамасăр ĕçнĕ хыççăн «тавтапуç» терĕ те Леня чупа пуçларĕ; тăвалла тĕл-ха – инçенех утса çитнĕ Василь! Анаталла пуçланать кĕçех. «Финиша йĕркеллех çитетĕн. Маттур!» – кăшкăрчĕ хыçран чăваш ачи урăх халăх çыннине.

Хăй вăл утса-чупса тĕп стадионăн хапхи тĕлне тӳртен анчĕ, шăпах Леня çывхарать унталла çула вĕçлесе. «Финиш – стадионра. Аван вĕçлетĕн: хĕрĕх тăваттăмĕш-хĕрĕх пиллĕкмĕшсем пулатăн!» – тесе ирттерчĕ хăй тĕлĕнчен ăна Василь. Марафонеца судья та çул кăтартрĕ. Хĕвел трибуна хыçне пытаннă стадиона кĕрсенех Василь ик алла çӳле çĕклесе темиçе хутчен автан çунаттилле çапа-çапа илчĕ. Финиша килекен çыннине палласа иличчен Василе асăрхаса: «Леня!» – тесе кăшкăрма пуçларĕç хăй хĕрсем, вĕсем çумĕнче ыттисем.

Финиш патĕнченех çавăрăнса пычĕ Василь. Леня хăйне çула вĕçленĕ хыççăнах панă çут пакета (унта медаль, грамота) хĕстернĕ те ларать, аллинчех – Семăпа Вадим кунти апат сĕтелĕнчен илсе панă пысăк куркапа виски.

– Тавтапуç, Василь Васильч. Эс финиша илсе çитертĕн мана, – тет Леня, тек хускалма та вăйĕ çукскер.

– Маттур, финиша çитрĕн, – мухтать ăна чăваш.

– Виç сехет те ултă минут, сакăр минут иртрĕ, вунă минут çитрĕ – ĕнтĕ Леня тухса ӳкрĕ тесе ларатпăр эпĕр, – палкать Сема. – Пăх та виç сехет те вун пĕр минутран Леня курăнчĕ.

Душра çăвăннă иккен çыннисем. Душра çăвăнмалла. Мĕншĕн малтанах тĕлне пĕлмен-ши Василь, ирĕккĕнреххĕн çăвăнатчĕ те тара-тусана тасатнă хыççăн пĕр шăпăрт лармаллаччĕ трибуна çинче футбол вăййине пăхса. Стадионăн финиш тĕлĕнчи енĕпех Леньăпа пĕрле утаççĕ халь вĕсем хирĕçри алăкалла. Леня юлать, аран шăвать. Тупрĕç иккенха тĕлне. Çăвăнмалли пӳлĕм туп-тулли. Пĕр пукан пушанчĕ

те, çири тума унта хывса хучĕ Василь, сумкăран мунчала, супăнь кăларчĕ, ал шăлли хатĕрлесе хучĕ. «Эс малтан кĕрсе тух», – сĕнчĕ ăна Леня, хыçрантарах çитнĕскер. Пилĕк-ултă хӳшĕре пĕтĕм талпăнупа шыв пĕрĕхет – ăшши те, сивви те; çырмари çурхи шĕлкĕш чухнехилле сарăлать, лакăмра пĕтĕрĕнет-çаврăнать шыв; кашни хушă тĕлĕнче икшерĕн-виçшерĕн хĕвĕшет çын. Василь мунчалана ислетсе, супăнь-лесе тăрать айăкра, вырăн пушанасса кĕтет. Акă варринчи пӳлĕмерен çын тухрĕ; çавăнталла ура ярса пусрĕ те çурхи шыв сиккиллĕ çĕрте, супăньлĕ-кăпăклă шыв юххинче, йăлмака çинче ура тайлăк вырăнта шуса кайрĕ: шыв çăтакан шăтăк иккен – ун çине витмен! Ура – шăтăкра! Пĕтĕрĕнсе-çавăрăнса ӳкрĕ çын. Тăмашкăн ачасем пулăшрĕç. Сулахай ура хытах ыратать-ха, анчах вăхăтлăха çеç каçăхтарчĕ иккен; алă, чавса тĕлнелле, шăйăрăлнă, ӳт тирĕ çурăлса вистеннĕ; юн сăрхăнать кĕлетке çинелле. Васкавлăн, ыттисенчен ирĕк ыйтса çири кăпăка çуса тасатрĕ те тухрĕ çăвăнмалли хушăран Василь, шăлăнчĕ; сурана тĕкĕнмесĕр асăрханса тумланчĕ. Сулахай алăра, чавса патнерехре, юн тымарĕ хуçлатнă кача пӳрне евĕр мăкăрăлса тухса тăрать. Юрать, татăлман-ха вăл. Коридорта арçын, кунтискерех пулас, тӳртен тухмалли алăкпа кăларса ячĕ Василе: финиш вырăнĕнче медицина пулăшăвĕ! Шур халат тăхăннă хĕрарăм тасатрĕ, çурĕ, эмел сĕрчĕ, çыхрĕ сурана. «Ӳт тирне çĕлемелле», – палăртрĕ вăл. «Ăçта, кам çĕлет?». Медицина машини çинче иккен. Машина – трассăра. Кĕтме сĕнет сестра. Кĕтсе илсе пултăр-и? Тепĕр ик сехетрен те çитсе пĕтмеççĕ унта çула вĕçлесе. Сумкине, пир хутаçа йăтсах утать, трасса çине тӳртен тухать халь тепĕр хут Василь. Пулăшу машини курăнчĕ, вăл трассăн тепĕр урмнелле пăрăнса кайрĕ. Çул юппинчи милиционер патне пычĕ çын халь: медицина машинине хăвăртрах каялла кӳме май çук–ши? «Больницăна каймалла сан», – терĕ капитан, çулне кăтартса ячĕ. Тупрĕ вăрахран Василь клиникăна, унта хирург пушанасса кĕтрĕ. Ак вăл операци сĕтелли çинче ӳпне выртать, калаçать; хирург та сăмахласа-юмахласах, пĕр уколсăр-мĕнсĕрех ӳт тирне çĕлесе ярать, çын тĕкĕннĕ-и-тĕкĕнмен-и çинчен ыйтать. Поликлиника кил хушшийĕн кукри-макрисемпе каялла тухнă хыççăн пĕлнĕ çул-йĕрпе чупать спортсмен тĕп стадион еннелле, унта тӳртен кĕрет;

чупас ҫул хӗрринче тӑракан хӗрарӑм судьяран арҫынсене наградӑсем пачӗҫ-и тесе ыйтать. Панӑ иккен. «Секретарь патне пыр», – сӗнет ку.

Трибуна ҫинчен Василе ятран чӗнсе кӑшкӑраҫҫӗ, хӑйсем патне пымашкӑн кӑчӑк туртаҫҫӗ.

– Виҫҫӗмӗш вырӑн санӑн, – пӗлтерчӗҫ ӑна трибунӑн сакки ҫине хӑпарсассӑн. Пакет тыттараҫҫӗ. Унта – 40 минут та 42 ҫеккунт вӑхӑта ҫырнӑ виҫҫӗмӗш степенлӗ диплом, 60-64 ҫулхисен ушкӑнӗнче тенӗскер.

– Сема хрусталь ваза илчӗ, – шӑлне йӑлкӑштарчӗ Вадим, йӑрӑс пӳллӗ ҫын, сӑрӑ тӗслӗ шӑлаварпа сенкер тенниска тӑхӑннӑскер.

– Иккӗмӗшне мӗн пачӗҫ?

– Нимех те. Ӳкӗнместӗн-и?

– Хӑть иккӗмӗш, хӑть виҫҫӗмӗш – пӗрех. Манран чӑн-чӑн чупуҫӑ иртрӗ. Семӑна хам хыҫа хӑварнӑ хыҫҫӑн тек курмарӑм.

– Эс курма пултарайман ӑна. Вӑтӑр пилӗк минут ҫырнӑ ун вӑхӑтне. Пирӗн ҫулхисем ҫав шайпа тухаймаҫҫӗ. Хӑвах чухлама кирлӗ мӗн иккенне. Ӗнерхи ик ҫеккунтшӑн чике тӑршшӗ лартрӗ ӗнтӗ сана.

Йыш патне Женя улӑхрӗ. «Сан ҫулхишӗн хӗрӗх минутра тухни аван», – мухтать вӑл Василе.

– Ӑҫта эс ҫӗтрӗн? Мӗн, пуйӑс айне лекен, машина айне пулан? Сана васкавлӑ пулӑшу пама реанимацие илсе каяҫҫӗ, – кулать Сема Васильрен. – Шырарӑмӑр сана. Эс ҫунатне хуҫнӑ кайӑкла алла кӑнтарса стадионран тухса кайнӑ терӗҫ.

Сема тимленипе Альберт Павлович, хӑй, вӑрҫӑ асапне тӳснӗскерсем тесе, марафон чупӑвӗн медальне ыйтса илнӗ иккен, тата кӗске хуллӑ кӗпесем панӑ вӗсене. Альберт Павлович япалисене кӑтартать. Василь валли те хатӗрленӗ пулнӑ-мӗн, халь кая юлнӑ ӗнтӗ. Василь йӑл кулать: Сема хӑйӗн айӑпне тӳрре кӑларасшӑн-ши? Ҫу-ук, тивӗҫменнине илейменшӗн ӳкӗнмест чӑваш, хисеп пусми ҫине тӑрас чух больницӑна лекме тӳр килни пӑшӑрхантарать ӑна. Сема ҫӳретӗрех паттӑрланса, Василь халь хӑйне вӑйлӑрах, маттуртарах туять. «Асӑрхарӑн-и: мӗнле машинӑччӗ, икӗ фарине те ҫутатса чарӑннӑччӗ?» – ыйтать вӑл Васильрен пӗрре ҫеҫ мар, темиҫе те. Мӗн курнӑ пултӑр Василь, чупнӑ та чупнӑ

вăл палăртнă çулпа. Вадим ак хĕрĕх икĕ минутра вĕçлерĕ çула, Сема унран пĕр минут е иккех, виççех те-и юлма пултарнă. Вăтăр пилĕк минут ĕнтĕ вăл, Вадим калашле, утмăлтан иртнисем чупса тухас вăхăт мар, уйрăммăнах утассипе çӳрекенсемшĕн.

Сема протокол йĕркелекенсем патне тепре анать, унтан хăпарать те: «Галя, хатĕрлен: хăвăр йышра эс çĕнтернĕ», – тет. Ку хĕрарăмĕ халь хура тĕслĕ çăмăл, çӳхе, варкăш платьепе уяври пек курăнать, хавхаланса ӳксе парне илекенсен ретне кайса тăрать, хисеп пусмин чи çӳл хăми çине улăхса парне йышăнать: пысăк çавра чашăк пек хрусталь ваза. «Пирĕн хулана халь икĕ ваза пырать!» – шавах хăпартланать Сема. Хăйĕнне, чечек лартмалли пысăкăшне, кăкшăм евĕрлине, сумкинчен кăларса пăхса (тен, Василе сисмесле тенешкел юри кăтартасшăн?) тепре меллĕн чĕркесе чикет. Леня марафонра 45-49 çулхисем хушинче виççĕмĕш вырăна кăшт çеç çакланайман.

Кусем стадионран тухнă чух хĕвел ансах ларнăччĕ ĕнтĕ. Йышăн трамвай пуласса нумай хушă кĕтсе тăма лекрĕ. Вадим кăмăлсăр пек. «Мĕн шăртланан?» – хăтăрасшăн ăна Сема. Ачисен киле епле пуйăспа каясси те паллă мар-ха. Галя тата леш хĕрсем юнашар çуртри общежитирех пурăнаççĕ-мĕн; кусене, ентешĕсене ĕнтĕ, чей ĕçме хăнана кĕме чĕнеççĕ. Вадим трамвайран тухсан нихăшĕнпе те тек сăмах хушмасăр общежити еннелле таплаттарчĕ çеç. «Хӳре тăратрĕ тем ку», – асăрхать Сема. «А, вăл çавнашкал, час çилленсе каяканскер. Псих», – килĕшрĕ унпа Альберт Павлович та. Леня чĕнмест, ĕнер те, пĕрре хĕрсе тавлашнисĕр пуçне чĕмсĕрччĕ, халь ывăннăскерĕн чĕлхи пушшех çĕтнĕ; çăварĕ уçăлсан пĕр вĕçĕм Василь Васильча тав тăвать, пысăк профессиллĕн пулăшрăн тет. Пӳлĕме кĕнĕ çĕре Вадим çукчĕ ĕнтĕ, вăл пуçтарăнса чугун çул станцине тухса кайма ĕлкĕрнĕ – Сема ултавне те хăпартланăвне чăтаймарĕ пулинех.

Тепĕр кунне ирпе ирех урăх хулана ывăлĕ патне кайма пуйăс çине ларчĕ Василь. Женя та пыратăп тесе каланăччĕ ăна çав вăхăтра. Юнашар вакуна маларах çитсе вырнаçма ĕлкĕрнĕ иккен вăл. Василь ун патне куçрĕ. Виç-тăват сехет кайнă хыççăн анса юлать иккен ку паллă атлет. Хăмăртарах костюмпа вăл, тирпейлĕн, сумлăн курăнать. Шупашкара

пĕлет иккен, унта çитсе ăмăртнă, космонавт ячĕпе ирттернĕ марафонра шăпах вăл çĕнтернĕ-мĕн темиçе-темиçе çул каялла (Василь хула тулашĕнче, аслă шоссе çинче атлетсене хавхалантарса, ĕçмелли те парса тăратчĕ тепĕр юлташпа, йĕлтĕрçĕпе); кайран çеç утассипе çӳре пуçланă, Олимп вăййисене иккĕ хутшăннă, аллă çухрăма утса бронза медаль илнĕ. Хăй пĕлекен чăваш ачисем çинчен ыйтса пĕлет, космонавт ячĕпе марафон ăмăртăвне ирттерес тĕлĕшпе тимленĕ леш атлет, чăвашăн паллă «урхамахĕ» çĕре кĕни çинчен илтсен çавна шеллесе-хурланса пуçне пăркалать.

– Сема çула татса тухрĕ вĕт е пĕр-пĕр машина çине ларса кĕскетрĕ-и, – тет хăй ăшĕнчине çиеле кăларса Василь. Женя вăл каланине ĕненесшĕн мар куçне чарăлтарать. Василь Вадим сăмахĕсене асăнать.

– Эп хама тĕреклĕрех те туятăп, Семăна ултав çулĕ çине тăратмалла аврăм вĕт, ик хул пуççи çине çавăрса хутăм иçмасса. Хрусталь вазине хам туянса пама пултарăп ăна çавăншăн. Эп унран тĕреклĕрех.

Кăшт кайсан чĕлхи çине тепĕр сăмах килет Василĕн:

– Эп çыракан çын. Кашни ăмăрту хыççăн хамăр хаçата статья паратăп. Сема малашне манран темиçе-темиçе хут иртсен те, хам ăна хыçа темĕн чул хăварсан та тек ун ятне пĕрре асăнмастăп. Маншăн вăл сумран тухса ӳкрĕ.

Женя ку тăрăхра утар тытать-мĕн. Пĕр чарăнура вăл тепĕр арçынпа, юлташĕпе пĕрле пушă карас рамисем чикнĕ пысăк сумкăпа анса юлчĕ. Ултă вĕлле унăн, кăçал тата иккĕ çăвăртан хутшăннă.

Чăвашра çумăрччĕ. Лӳшкетчĕ пĕр вĕçĕм чăш-чăш-чăш. Кунта уяр. Ир кӳлĕм халь пушшех илемлĕ çутă çанталăк. Василĕн кăмăлĕ тĕлĕнмелле лайăх.

# «НАГРАДА ХУÇИНЕ ТУПАТЬ»

## *Чун йăшкать*

Эх, ку турилккесем... Икĕ турилкке.

Пуçра çавă çаврăнать-ха Василь Васильчăн пĕр вĕçĕм. Ирпе вăл чăвашри кун пуçланнă тĕлеллех вăранчĕ те тек выртас мар, хăна çурчĕнчен тухса шăм-шака çемçетмелле урампала юртас, утас тесе шăппăн тăрса тумланчĕ; ку самантра Валентин пуçне утиял айĕнчен кăларсан ун патне пырса лешĕн ыйхи уçăлса ан кайтăр, çывăртăр тенĕн хуллен хăйне канăç паман ыйтусенчен пĕрне, каçхине шухăшласа тĕв тунине, астуса çирĕплетнине хыпарларĕ:

– Ентеш мана эп сцена çинчен аннă хыççăн саламларĕ, икĕ хут алла чăмăртаса лăскарĕ; эппин, фотоаппарата мана тавăрса пачĕ вăл. Е эп ăна, аппарата, турилккесене пакет хутаçа чикес чух пукан çине хутăм, вара унтан илмен, е аппаратне турилккесене çĕмĕрес мар тесе кĕсьене чикрĕм, кайран автобус çинче тухса ÿкнĕ. Малтан та ун пек пулнăччĕ, сисрĕм те çийĕнчех илнĕччĕ.

– Ку пăрахăçланать, – хирĕçлерĕ Валентин, – фотоаппарат пукан çинче выртнине куçпа куртăм эпĕ.

Кайран, кукăр-макăрлă, лаптăксерен хĕвел пайăрки евĕрлĕн енчен еннелле сапаланса каякан урамсемпе, ĕнер тухсан та каялла тавăрăнма пĕлеймесĕр çĕтсе çÿренĕ вырăнсенче çирĕм пилĕк минут хушши мĕн пур ырнине ирттерсе ярас тĕллевпе çавăрăнкаласа çÿренĕ хыççăн пÿлĕме кĕрсен, çăвăнсан, тумлансан, вырăн çинчен çĕкленнĕ Валентинран, ун-кун калаçса илнĕ хыççăн:

– Асăрханă-и эсĕ: пурăçра ăнăçу е ăнăçсăрлăх тапхăрăн-тапхăрăн çине-çине тăсăлса пынине? – тесе ыйтрĕ.

– Пулать, çирĕплетрĕ çулра çывăхланнă юлташ. – Псиxăкăран, ытла ывăннăран, çуйланнăран килет вăл.

– Ман халь шăпах ăнăçсăрлăх е, тепĕр майлă каласан, çухату тапхăрĕ.

– Эс хытă ывăннă. Нумай хушă пĕтĕм шухăш-кăмăла пĕр япала çине янă. Эс ан кулян, эс лăплан. Пĕл: Парижра эс халь. Брюсельте пултăн. Халь ак Париж варринчи хăна çурчĕнсенчен пĕринче. Ку хула Европа варри, тĕнчери туристсен вăти. Пуçран кăларса пăрах ыттине. Çÿре йышпа пĕрле.

– Эп хама хамӑн турилккере туймастӑп нимле те.

– Чухлатӑп. Вӑт, эс шухӑша кайса ҫӳретӗн пӗр май, ҫавӑнпа ҫӗтсе ан кайтӑр теҫҫӗ сана.

Чӑн ӗнтӗ, пӗрре пулчӗ те унашкалли, тек сӑмах тӗкеҫҫӗ Василе.

– Валентин, эсӗ архитектурӑна чухлатӑн, тӗрӗс-и: хӑвӑн ӗҫне тытӑниччен ку шӑпах шедевер пулать тесе картса хумалла, япӑх мар, вӑтам та мар – чи лайӑххи пулать тесе.

– Вӑй-хална пӗлмелле. Опыта, классикӑна чухламалла. Акӑ эпӗ пӗрремӗш разрядри спортсмен, эппин, ниепле те тӗнче чемпионӗ пулаймастӑп тӗнче шайӗчи мастерсемпе старта тухсассӑн.

– Вӑл ҫаплах-ха. Пуҫра хайлав ҫуралчӗ манӑн – повесть. Хамӑрӑн ҫул ҫӳрев ҫинчен. Пичетлеес ҫук-ха эп ӑна – выртмарма кӑна ҫыратӑп, сунтӑхра упрама.

– Сана вӑл канӑҫ памасть пулсан – хӑтлан. Анчах ҫавна асту: грексен турри хушнипе Сизиф аппаланнӑ пек ан пултӑр. Вӑл пӗтӗм ӗмӗрне ту ҫине чул ывӑтнӑ – чулӗ шавах каялла кусса анать; кӑлӑхах вӑй тӑкни.

– Нимӗн те ахаль ҫухалмасть, ниме те тӑкаксӑр илейместӗн. Чул ывӑтнӑ май ҫыннӑн мускулӗ вӑйланнӑ, шӑм-шак тӗрекленнӗ. Ҫирӗп вӑй-халлӑ пулма та пайтах тар тӑкмалла.

Ах, ҫак ӑнӑҫсӑрлӑх тапхӑрӗ хӑҫан пуҫланчӗ Василӗн? Ак мӗнрен... Ирпе вӑл Хусан вокзалӗнчен Шереметево-иккӗ аэропорта васкавлӑн ҫитсен, халӑхпа тулнӑ тӗркешӳре куҫа-пуҫа чарса ҫаврӑнкаласа ҫӳресе хӑйсен йышне тупсассӑн, сывлӑх суннӑ хыҫҫӑн лӑш пуличченех, ушкӑна ертсе каякансенчен пӗри, Абросим, ӑна:

– Василь, укҫа илсе килтӗн-и? Ик ҫӗр ҫитмӗл пӗр кирлӗ, – терӗ.

– Ик ҫӗр пур, – ҫийӗнчех шалт тавӑрчӗ чӑваш ачи сумкине уҫма тӑрса.

– Чӑлха ӑшне пытартӑн-им? – куҫне ҫиҫтерчӗ йӗркелӳҫӗ, йӑшт кӗлеткеллӗ илемлӗ арҫын.

– Ҫук. Ҫиелтех. Ик ҫӗр пин тенкӗ, – мӗн пур укҫине кӑларать Василь сумкӑран.

– Ку мар. Симӗсси. Налук янӑ шутне. Эп сана йӗрмелесе паратӑп кайран, – кӗскен евитлет Абросим.

Василь хăйĕн мĕн пур симĕс укçине кăларать – аллă виçĕ доллар. Аллă пĕрне илет те Абросим ведомость çине алă пустарать – ик çĕр çирĕм доллар парăма кĕрсе юлать çапла Василь.

– Тавар пулĕ?

– Матрўшкесем.

– Сутатăн, паратăн, – пуплет йĕркелўçĕ.

Шăп çак кĕтмен япала пуçа минреттерчĕ Василĕнне.

## «Патак ачи»

Йышра ним мар çĕртенех «патак ачи» пулса тăратăн иккен. Ку вăл кашниех хăй ыттисенчен уйрăмраххăн, паттăртараххăн курăнас килнинчен, тепри, чĕнмесĕр çўрекенĕ, хăйне чĕлхепе ырăпа кăтартма тăрăшманнинчен, вара пĕр-пĕр пăтăрмаха ун çине тайăнтарма май пурринчен килет-тĕр.

Лăпкăн, ним палăрми çўрет-ха Каврăç Ваçукĕ йышра. Пуçĕнче унăн тĕрлĕ ўкерчĕксемпе сăнарсем капланнипе пĕрлех кĕтмен-туман çĕртен йăтăнса аннă çав «парăм» сирĕлмест. Çурçĕр тинĕсĕ хĕрринчи пысăк мар курорт хулана çитсе вырнаçсанах пĕр пўлĕмре пурăнма тытăннă Ĕпхў вырăсĕпе, Валентинпа, чăваш ачи иккĕшех хулапа паллашса çўрерĕç; тепĕр кунне ирпе те капăр çуртсене хулан урăх кĕтессинелле çитсе курасси тăсăлчĕ кусен. Кăнтăрла иртсен виççĕ тĕлне Василь тренировкăна кайма пуçтарăнчĕ.

– Махмут матрўшкесене тăват çĕр франкпа сутрĕ, – евитлет Василе столовăйĕнчен тўрех киле таврăнман Валентин пўлĕме кĕрсессĕнех. Махмучĕ тутар ачи-ха, тутар; юнашар пўлĕмре хăйсен тепĕр ентешĕпе юп кураççĕ.

– Пĕр арçын туянчĕ, – калать Валентин. – Малтан улт çĕр ыйтрĕ Махмут, унтан тăват çĕре çити чакарчĕ. Санăн мĕнлескерсем? Кăтарт-ха. Унăн пĕр-пĕрин ăшĕнче пиллĕк.

– Манăн пĕчĕкреххисем ултă кўлепеллĕ, пысăккинче – тăххăр.

– Эппин, хаклăрахпа сутатăн.

Туянчĕ текенни хăна çуртĕнче кĕрен-тухакана сăнаканскер пулĕ тесе шутларĕ Каврăç, ирпеле урамран кĕреспе пит сăмахласшăнччĕ çавă, пĕр-пĕрне ăнланма чĕлхе пĕлменни

хупларĕ. Халĕ ав тавара ăна маларах сĕнме пĕлеймерĕм тесе кăштах ӳкĕнчĕ Василь, анчах хăй шухăшне çăвар уçса шарламарĕ, хыпăнса та ӳкмерĕ: тăват çĕр франк вун виçĕ доллар пулать-ха – пурне сутсан та унпа парăма татаймăн. Палăртнă вăхăта пăсмасăр тренировкăна тухса юртрĕ чăваш.

Тепĕр кунне ирпе, маларах палăртнă май, пысăкрах хулана çитсе курас тенĕ чух, сумкине те илчĕ Каврăç, унта унăн тăватă матрӳшке; Раççей президентне тĕрлĕ сăрăпа ӳкерсе çапнă альбома та – пилĕк штук – хут самай йывăр пулсан та чикрĕ, значок пачкине те хăвармарĕ.

Тăххăр тĕлне тухрĕç вĕсем хăна çурчĕ умне. Вун икĕ çын лармалли пĕчĕк автобус килсе тăнă, водителĕ, пенси çулĕсенчи самаях çӳллĕ пӳллĕ, ытла туллиех те, хытканах та мар арçын, шур кĕпепе, хура брюкипескер, ун-кун уткалать, куçпа такама шырать. Валентинпа Василь ăна сăмах хушрĕç. Хут листи çине çырнине кăтартать арçын: вырăссене çул çӳреве илсе кайма çитнĕ иккен вăл. Йыш хирĕçри çуртри ресторантан тин апатран тухать-ха. Валентин Калисăна пусма вĕçĕ тĕлне хирĕç пырса евитлет, хĕрарăм шофера сăмах хушать. Лешĕ нимĕçле пĕлмест иккен, фламанд, француз тата акăлчан чĕлхисене пĕлекенскер-мĕн, çапах калаçкаласа ăнланчĕç: шăпах кусене çул çӳреве илсе кайма килнĕ. Яштак пӳллĕ Махмутпа ун ентешĕ тин ирхи чупу-хускануран таврăнаççĕ ав; вĕсене васкатаççĕ: «Часрах çăвăнăр та – апата, вăш-вашт машина çине ĕлкĕрĕр!». Раççей çыннисем çав, пире валли пĕр-пĕр пурнăçлас вăхăта сехет маларах палăртса хумалла: шăп çав вăхăтра ерçсе пыраймастпăр – мехел çитмест. Е ытла мăран-ши эпир, е йăли-йĕрки çавнашкал? Мехелĕ кашнин хăйĕнле-çке, мĕн тăвăн.

Кайри ларкăч çинче Василь. Юнашар Калиса пырса вырнаçрĕ. Каçхи апат вăхăтĕнче пурнăçĕнчи пулни-иртнине асăнса шăкăлтатнăччĕ Сăр çинчи хулари çак хӳхĕм хĕрарăм, вăтамран лутрарах пӳллĕскер, сарă çӳçлĕскер, чылай чух йăлкăш кулăллăскер. Кашни хĕрарăм хăйне ырăпа асăннине, мухтанине палăртмасăр хăварманнине асăрханă-ха Василь унчченех, Калиса та ав хăй иртнĕ çул Европа чемпионатĕнче епле çӳренине, ăна хамăрăн тĕп ертӳçĕ Авель Иванович

Маринов та, паллă атлетсем те мухтаса каланине евитлерĕ. Хĕрĕхрен иртнĕ ку хĕрарăмăн ят-сумĕ çителĕклĕ – пур старт-сенче те вăл хăйĕн çулĕсенчи ушкăнра пĕрремĕш вырăнсе-не тухса пынă çак ик-виçĕ çул хушшинче. Мускаврa ертӳçĕ Абросим самолет çине лараймасăр тăрса юлсан Калиса йышра пĕртен-пĕр нимĕçле кăштах чухлакан, ăнлантаракан çын пулчĕ те, çавăнпа вăл халĕ чи хакли. Ытла йăлт-ялтах мар вăл, шухăша путнăн тинкерӳллĕ, çынна витĕр пăхать, тăпăлккаскер утма хитре утать, сăлайĕ кăлтăксăр. Упăшкипе иккĕшĕ те спорт шкулĕнче ĕçлеççĕ. Василь вĕсене виçĕм-тăватăм çултанпах пĕлет, ăмăртусенче тĕл пулсан кусем ялан ăшшăн калаçаççĕ.

– Василь, мĕн эсĕ хăв çыравçă иккенне тунатăн? Кала-тăп, ĕненмеççĕ, повеçне вуланă тетĕп, – сăмах пуçарчĕ Ка-лиса Каврăç Ваçукĕпе.

– Мĕн тунни? Тунмастăп эпĕ. Çырни вăл темех мар. Мĕншĕн питех палăртмалла тата ăна? – хуравлать Василь. – Пичетленменнисем – роман, повесть, калав – мĕн чухлĕ ман! Ун çинчен шарлас-и? Чуна хуçни çеç.

Татах калаçатчĕç-шăкăлтататчĕç пулĕ иккĕшĕ, пĕр-пĕрне пĕлекенскерсем – Хусан ачи Махмут пырса Василе ума хăй вырăнне куçса ларма ыйтрĕ, кунăн Калисăпа сӳтсе явмалли пур-мĕн. Василĕн пуплевĕ те урăхларах пуль çав: вăл лите-ратура, хальхи пурнăçри лару-тăру çинчен, çын харакерĕсем çинчен ытларах чĕлхе çавăрĕ; ку йышпа килĕшӳллĕн тре-нирвкăпа ăмăрту пирки çеç сăмах вакланĕ, халĕ умри старт çинчен шухăшласшăн та мар-ха хăйсем, пулас кĕрешĕвĕ ахалех пуçа кĕре-кĕре пырать.

Тӳрем уйри тикĕс ӳсекен калчана, улăх-çаранти ĕне вы-льăха куçласа киленсе пычĕ Василь алăк патĕнчи пĕччен лармалли вырăнта; çулĕ те тип-тикĕс, асфальт çап-çутă, çул юппbeing шурă йĕрсем, юпасем çинчи кăтартусем; айăкри пĕчĕк те тĕпĕл-тĕпĕл, юмахри евĕр илемлĕ çуртсем-керман-сем – çаксем пурте ял çыннин чунне саваççĕ; çанталăк уяр темелле, çапах шăрăх мар, катрам пĕлĕтсем ирте̧ççĕ те, хушшăн-хушшăн сулхăн тăрăх пулни чух çеç.

Анăçри ку патшалăхăн тĕп хули тĕлне çитсе çавăрăнчĕç пуль, шофер пĕр-ик çĕрте машинине тăратсах иккĕлене-

иккĕлене пăхкаларĕ. «Мĕн ват çын пек мар, çул пĕлмест», – мăкăртатрĕç хастар ачасем. «Хамăра тыттартăр руле – тĕнче шайлĕ права пур», – хĕрӳленет Махмут та. Ак кайнă çултан пăрăнса каялла çавăрăнса тухрĕ машина, тепĕр йӳппе вашкăртрĕ. Унтан каллех хастар ачасем: «Хули ятне çырнă çĕрте сылтăмалла кăтартрĕ-çке, мĕн пăрăнмарĕ?» – теççĕ, вăрçаççĕ. Юрать, шоферĕ вырăсла пĕлмест. Чи мала, шоферпа çумăн пек вырăна, Калисăна ларма хушрĕç. Пирĕшти пек илемлĕ ку хĕрарăм сылтăмалла каймалла пуль терĕ нимĕçле. Шофер хăлхана чикмест иккен, çаплах хăй пĕлнĕн хăвалать машинине, унтан кĕпер урлă каçсан пăртакран хула варринче-и чарчĕ автобуса. Умра машинăсемччĕ, пĕр пысăк хапхаран тулли тиевпе тухаççĕ. Автобуса каялла чакарса ирттерчĕ çавсене кусен шоферĕ, унтан пĕр çурта кĕрсе тухрĕ те «каретăна» маларах куçарса лартрĕ, çитес çĕре çитни çинчен евитлерĕ – çапла ăнланчĕç ĕнтĕ вырăссем. Паллă пулчĕ: умра хула варри, унта автобуса тăратма юрамасть. «Пĕр-ик сехет хушши курса çӳрĕр: шоферăн каялла кайма ĕлкĕрмелле», – çапла хыпар паллă пулчĕ. Хула урамне астуса юлас терĕç малтан çул çӳревçĕсем, сылтăма пăрăнчĕç те çав урамри çурт çине «Генерала Лема штрассе» тенине вуларĕç. «Астăвăр: çĕтсе кайсан çавна ыйтăр!» Кукăрĕнчен каялла çавăрăнса тухрĕç. Умра тӳр урам. «Тӳр урампа çӳремелле», – сĕнчĕ Валентин, ют çĕр-шывсенче пулнăскер. Шыв сикки тесе шутларĕ Василь пĕр тĕлте шыв юхнине; унтах фонтан пур, çын кӳлепинчен çинçен пĕрĕхекенскер. Сăн ӳкереççĕ курса çӳрекенсем. Василь те çынна парса пĕр-иккĕ чăнклаттарчĕ.

Урам йӳпленнĕ çĕрте трамвай çулне юсакансем пур, виç хĕрарăм та пĕр арçын-и рельса шпал çине тикĕслесе хураççĕ – юсаççĕ çапла эппин. Куна астурĕ-ха Василь.

Ак тӳрĕ урампа – апла, тĕп урампа – пырать йыш; урлă урамсене каçмалла, светофорта симĕс тĕс пуласса кĕтмелле. Çӳллĕ çуртсем; урамĕ Раççейрипе танлаштарсан, хĕсĕк; керменсем çума-çум; хĕрлĕ кирпĕч палăрăмлă; е хĕрлĕпе, е сарăпа сăрланă кашнине; тахçанхи кивĕ çуртсемех пуль. «Анăçри авалхи архитектура», – палăртать Валентин. Лавккасем рет-рет, ресторансем, кафесем; алăк умне

урамах тухса лартнă пĕр-ик сĕтел хушшинчи пукан çинче мăшăрăн е иккĕн-виççĕн апатланаççĕ, сăра сăвăраççĕ, йăваш эрех кĕленчипе стаканĕ те умĕнчех, фужертан сыпаççĕ вăраххăн. Пиçнĕ-хатĕрленĕ апат-çимĕç лаççисем тулăх – ил, туян, çи, астив.

Йышра пурте спортсменсем мар-мĕн, тулли, йывăр ӳт-пӳллĕ икĕ хĕрарăм утса çитейместпĕр, ан васкăр теççĕ. Василь вĕсене ăмăртма килнĕскерсемех пуль, чи юлашкинчен чупса тухаççĕ ĕнтĕ тет. Кусем лавккасене тăтăш кĕре-кĕре тухаççĕ, чылай çĕрте самаях тытăнса тăраççĕ. Василь утать, йыша хăварса малаллах каять, унтан кĕтсе каялла çаврăнать. Валентин та, Махмут та, аслăрах çулхи тепĕр Хусан ачи те магазина кĕреççĕ; Калиса та хĕрарăмсемпе пĕрле суту-илӳ вырăнĕсемпе кăсăкланмасăр юлмасть. Валентинăн алăра пăчăртаса тытмалла пысăкăш пĕчĕк сумка-енчĕк. Унта унăн укçа – доллар. Пĕлĕшĕсем ăна япала туянма заказ парса янă, çавăнпа лавккасене кĕркелесе тухать, сăнать Ĕпхӳ ачи те. Каврăç Махмута ĕнер таварне сутнăшăн ăмсанать.

Умра çак урам урлă тепĕр пысăк тӳр урам, унта кĕпер курăнать, çав кĕпертен малалла каймастпăр тесе палăртрĕç икшерĕн-виçшерĕн пĕрлешĕннĕ йышра.

Василь каллех пĕччен. Урампа урам хĕресленнĕ çĕрте çул юсакансем патне пырса чылайччен сăнаса тăчĕ вăл. Икĕ арçын шăтăкланнă-путăкланнă вырăна бетон плита сараççĕ. Авăнчăк çĕрте плитана çурмаран виç кĕтеслĕ пулмалла катса вырнаçтараççĕ; пĕр арçынĕ хурать – лайăх лармасть, мастерок аврипе шаккать те, катăлать; тепĕр арçынĕ хĕскĕч пек станок çинче çĕннине хурса виç кĕтеслĕх кăларать: шалт! кăна катăлать плита... Василь кăшт каялла таврăнса пĕр магазин (ювелир таврашĕсем) алăкĕ урлă каçма тăчĕ; шалта тулли пӳллĕ арçын сăмах хушрĕ, кĕме чĕнет ĕнтĕ; виççĕмĕш хутĕнче çеç хăю çитерсе алăк урати урлă ура пусрĕ чăваш, ял çынни. Тăваткал питлĕ, тăваткал пӳллĕ пекех арçын, аллă çулсене çывхараканскер пуль, сăмахлать. Василь чĕлхе пĕлмест, сумкине урайне лартса уçать те матрӳшке кăтартать; пуçне сулать арçын – кирлĕ мар; значоксене кăтартать пĕр кĕнĕскер – кирлĕ мар. «Кристал!» – тет арçын. Çук. Анчах мĕнне ниепле те тавçăраймасть Василь: «Металл-и?» – тет.

Магазин хуçи шалти пӳлӗмне кӗрсе черкке евӗр стакан кӑтартать. «А-а, хрусталь!» Çук çав, тавçӑрайман. Пӗлес пур, килти вазӑсенчен пӗр-иккӗшне чиксе килнӗ пулӗччӗ-и Василь. Ак тепӗр арçын кӗчӗ, сутуçӑ евӗрлех, унашкал сӑнлӑскерех, анчах кӑштах çӳллӗскер; кӗреçе сухаллӑ, килӗшӳллӗ, Карл Маркс тейӗн. Сумкинчен альбом кӑларчӗ Василь. «Трай июль: Ельцин – Зюганов», – тет вӑл Раççейре президент суйлавӗн иккӗмӗш сасӑлавӗ пулмалли пирки. «Пӗлетпӗр, пӗлетпӗр», – тенине ӑнланчӗ Василь. «Эп Ельциншӑн», – хӑй кӑкӑрне пӳрнипе тӗллерӗ вӑл. «Ельцин! Найн – Зюганов! – калать арçын. – Зюганов – коммунист».

Коммунист тенипе хур тӑвасшӑн мар-ха президент пуканне йышӑнасшӑн тапӑçланаканне Василь, анчах идеологийӗ йӑнӑшшине чухлать. «Презент», – тӑсрӗ кӗнӗ çын енне Василь альбома. Лешӗ: «Мана-и?» – тесе кӑкӑрӗ умне кӑтартрӗ аллипе. Василь «парне» сӑмаха тепре асӑнчӗ, лешӗ тав тунӑн пӑхӑр укçа – çирӗм франк тыттарчӗ.

Чӗлхи уçӑлнӑ, кӑштах хӑюланнӑ Василь ку магазинтан тухсан урам кӗтессине юсакансем тӗлне таврӑнса леш енне каçрӗ. Халӗ вӑл пӗр матрӳшкине кӑларчӗ те хирӗç килекенсене сӗнсе утать; пуç пӑраççӗ çеç уйрӑм çын та, пепке выртtарнӑ урапа тӗксе пыраканӗ те. Пӗр хӗрарӑм, çавра питлӗскер, кӗре сӑнлӑскер: «А, матрӳшке! – терӗ тӗп вырӑсла. – Ав çав урама, автобуссем тӑнӑ вырӑна кай, унашкал япаласене çавӑнта сутаççӗ», – сӗнчӗ ыр кӑмӑллӑн.

Каялла çавӑрӑнса хӑвӑрттӑн каçрӗ çул урлӑ Василь, малалла васкавлӑн утрӗ, туннеле те анса улӑхрӗ. Маршрут автобусӗсен станцийӗ иккен. Урамӗ тӑршшӗпех лавккасем, ав билет кассисем. Самай вӑрӑм тӑрӑхра каллӗ-маллӗ иккӗ хутларӗ Василь. Вырӑс матрӳшки енне никам та пӑхакан çук. Пӗлет Каврӑç: кӗтеççӗ ӑна йышра, таврӑнма вӑхӑт çитсе иртнӗ. Ик урине шанать вӑл, спорт мелӗпе утаканӑн утти пӑлханнӑ-васканӑ чух çеç мар, ахаль самантра та вӑштвашт; каяллахи çула, урам урлӑлли туннельпе анса хӑпарса часах тӳр çул тӑрӑхне тухрӗ Василь. Халь вӑл чупмасӑрах чупнӑ евӗр хӑвӑртлӑхпа пырать чашкӑртса. Катарине куç çав териех витӗр мар Каврӑçӑн. Ав рельс юсакансем мӗкӗлтетеççӗ, çавсен тӗлӗнчен пӑрӑнмалла пекчӗ шыв сикки еннелле çитме. Сылтӑм еннелли урамалла таплаттарчӗ

Кавръ̆ç. Шыв сикки кĕтнĕ вырӑнта пулмарĕ; эппин, пӑрӑнмасӑрах тӳрĕ каймаллаччĕ. Трамвай çулне юсакансен тĕлне каялла таврӑнса тӳрлетмелле пуль пӑрӑнса кĕнĕ йӑнӑша, апла вӑхӑт иртет-çке. Ак тӑкӑрлӑкпа тӳртен каçать – шӑп автобусларнӑ тĕле тухĕ самантрах. Ах çав, урамĕ шӑп çеç урлӑ мармĕн, çавракӑшран пайӑрка сапаланнӑн каяççĕ-мĕн тӑсӑлса; куна туйрĕ Василь. Тӳрлетес тесе пӑрӑнчĕ – çапла майпа пӑрӑнсах кайрĕ вӑл, халь Лема генерал урамне шырать. Çук, çавӑн евĕрлĕ пулин те кĕтни пулмарĕ. Ват çынсенчен, вырӑнти çынсенчен ыйтать – Лема генерал урамне пĕлмеççĕ, ик алла ик еннелле сараççĕ, пуçа пӑркалаççĕ çеç. Полици тавраш курӑнмасть. Çамрӑкраххисем те, çулланнисем те Лема генерал урамне кӑтартаймарĕç Кавръ̆çа.

Чылай аякка пӑрӑнчĕ пуль çав. Ак халь каялла çавӑрӑнса илмелле çĕнĕ тӑрӑхпа пӑрӑнчĕ, анат енчен кӑшт тӑвалла пек тӳррĕн пырать. Çавра тӑрӑллӑ, илемлĕ, çĕнех мар çурт; умĕнче кӳлепе палӑк – Иисус Христос Çӑлакан. Кунашкаллине хальччен курманнипе, илемлĕхне те ытараймасӑр сумкинчен фотоаппарат кӑларса икĕ хутчен икĕ сисĕмлĕхпе чӑнклаттаса илчĕ Василь. Кун хыççӑн урлӑ урам тĕлĕнче тӑракан виç-тӑват çамрӑкран ыйта, ӑнлантара пуçларĕ вӑл. Лема генерал урамне пĕлмеççĕ. Шыв сикки тĕллине пĕлтерме канавра шыв юхнине, çӳлтен сикнине туса кӑтартса ыйтать Кавръ̆ç, сумкинчен блокнот кӑларса хими формулине Н-2-О çырса кӑтартать – ӑнланмаççĕ. Пĕри шыв пĕрĕхнине туса кӑтартрĕ, фонтан ĕнтĕ, Васильшĕн темшĕн шыв сиккиччĕ. Ӑнланаймарĕç, пĕлеймерĕ Василь – вӑхӑта ахаль çухатни çеç.

Урам урлӑ тепре каçмалли çĕрте, светофор уçӑласса кĕтекен машинӑсен ретĕнче, тротуар çумĕнчех вӑтӑр çулсенчи арçын спорт велосипечĕпе хӑрах урине аяккалла ярса тӑрать. Ку вара: «Лама генерал!» – терĕ. Иккен, Лема мар, Лама тесе вуламалла пулнӑ! Умри лапам урлӑ леш енчине чиперех ӑнлантарчĕ спорт велосипечĕллĕ арçын Василе. Тавах!

Ку вӑхӑтра автобусĕнче епле лару-тӑру-ха? Шофер васкатать: унӑн тавӑрӑнса тепĕр çĕре çитмелле. Йышра пĕр çын çук. Мĕн тумалла? Кун пек чух кашниех ӑслӑ, кашниех тавçӑруллӑ; пĕри те тепри хӑй маттуррине кӑтартать, чи ӑслӑ сӑмах калать, сĕнӳ парать.

– Аллă минут çитрĕ – тек кĕтместпĕр, – куна туризм тĕллевĕпе çеç çула тухнă хĕрарăм калать.

– Юлчĕ пулсан – çиттĕр хăть мĕнле. Хăй айăплă, – куна спортсменсен йышĕнченех çамрăкраххи калать.

– Çынни чĕлхе пĕлмест, укçи çук, – хирĕçлет Валентин. Вăлах ăслăрах та сĕнет: – Эп нумай çӳренĕ. Ун пек чух полицейские пĕлтермелле, посольствăна евитлемелле – шăнкăравламалла.

Калаçмалли кĕнекепе усă курса нимĕçле кăштах пуллеме пултарайнăран асли вырăнĕнче кунта ирĕксĕртенех Калиса. Вăл та татса параймасть: мĕн тумалла?

– Таçта инçетре мар вăл, çак таврарах пулма кирлĕ. Енчен еннелле кайăпăр та, тен, асăрхăпăр, – сĕнет йăшт пӳллĕ арçын, çирĕп спортсмен, ытлашши сăмахламанни, чĕрре кĕменни.

– Татах вăхăт ирттермелле!

Валентин сĕнĕвне Калиса шофера ăнлантарать. Лешĕ нимĕçле пĕлмест пулин те полицейски сăмаха ăнланчĕ. Ак инçех те мар, урам урлах йĕрке хуралçисен çурчĕ. Шофер, Калиса, Махмут, тепĕр иккĕн каяççĕ унта. Стайер чăтаймасăр çывăхри лаптăка тухать.

Шăп çак вăхăтра çав лаптăкалла тепĕр енчен куçа-пуçа çутăлтарса ыткăнуллăн ура пуснăччĕ те ĕнтĕ Василь. Хăйне ятран чĕнсе кăшкăрнине тӳрех илтрĕ вăл, тăп тăрса куçларĕ, юлташа курчĕ те алла çĕклерĕ.

– Ун пек чух çĕтсе кайнă çыннăн чунне пĕлмелле – вăл хăй епле çунать пуль халь. Тӳрех айăпласа ан тăкăр, – сĕнет Валентин, стайер чупса çитсе Василь килнине пĕлтерсессĕн.

Василь рельс юсакансен тĕлĕнчен тепĕр урамалла пăрăннине турист хĕрарăм курнă та иккен. «Таçта пит васкавлăн вирхĕнтĕн те унта, пĕлсех кайрăн пуль терĕм», – калаçать çавскер каярахран. Валентин хăй епле маттур пулнине евитлет.

Халĕ полицейски çуртне кĕнисене кĕтмелле, вĕсене чĕнме каяççĕ. Калиса нимĕçле ăнлантарса çырса панă: çухалнă çын мĕн тăхăннă, мĕнлескер, миçе çулта... Кантуртан пур постсене шăнкăравлаççĕ. «Курман, илтмен», – хыпарлаççĕ хирĕç.

Василь автобуса кĕрсе ларсан тепĕр çур сехет ытла кĕтме лекрĕ шоферпа Калиса килессе. Ав чĕнме кайнисем

аранах илсе тухрĕç вĕсене. Полици депертамантĕнче ĕçлекенсем те крыльца çинче. Çухалнă çын тупăннă теççĕ. Василь автобус чӳречи витĕр хăй кăкăрне пӳрнепе тĕллесе кăтартать, крыльца вĕçĕнчи çамрăк ăна чышкăпа юнать.

Вăт, çакăн хыççăн патак ачи пулса тăчĕ те ĕнтĕ Василь.

– Эпир пăрахса кайнă пулсан мĕн тунă пулăттăн-ха? Шутларăн-и ун çинчен? Юрать, хам чарса тăтăм, – шав пуплет Валентин. Йышра ак кирек хăш çула тухсассăн та пĕри те тепри: «Василе çĕтерсе ан хăварăр, Василь тăрса ан юлтăр, асăрхăр», – теме пуçларĕç. Патак ачи.

## *«Сăмса çине картса хур»*

– Маринова калатăн-и ху çĕтсе кайни çинчен? – ыйтупа тилмĕрет Валентин Василе киле çитсен, ертӳçĕ-йĕркелӳçĕсем иккĕшĕ те Мускавран килнĕ тенине илтсен. – Ан шарла.

– Йĕп мар – пытараймăн. Ыр пулас текен часах тупăнать, тӳрех шăрса кăтартаççĕ.

Ирпе хăна çурчĕн фойинче курăнчĕç Абросим та, професор та.

– Василь! – куçне йăлт çиçтерсе илчĕ, шĕвĕр пӳрнипе сăмси патне кăтартса паллă пачĕ Абросим Василе асăрхасанах. Асту: манмарăн-и тени пулчĕ ĕнтĕ ку парăмра иккенне сăмса çинех картса хур тенешкел.

– Сутатăп, сутаймарăм-ха, – хуравларĕ Василь.

Ак Каврăç ирхи апат хыççăн хула урамне тухса утать – пĕчченех, сумка йăтнă вăл, пĕр матрӳшкине кăларнă, хирĕç пулнă çынна сĕнет, ăнлантарма пикенет.

Тинĕс хĕрринче халăх йышлă, унталла çул тытать Каврăç. Магазинсем умĕпе иртнĕ чух ăна Валентинпа Абросим хуса çитсе иртсе каяççĕ: тренировкăна тухнă, труссипе майка вĕççĕнех. Валентин пуç кăшăль тăхăннă, унта каçхине кăтартнă талисман – кайăк çунаттин тĕкĕ, хăмăртарахскер, антенна евĕр чăнккаммăн курăнать.

– Ну, мĕнле? Çӳре, сут, – илĕртӳллĕн сăмах хушрĕ Абросим Василе иртеспе. Пичĕ йăлкăшать хăйĕн. Йăрăс пӳллĕскер ыткăнуллăн чупать, кăнттам мар, илемлĕхĕ пур тахçанхи паллă атлетăн, Васильрен чылай кĕçĕн ветеранăн.

Кунти ӑмӑртури пек вӑрӑм инҫӗшре вӑй виҫмен вӑл, виҫес те ҫук: стадионра ҫур миль чухлӗ хушӑ унӑн амплуа шутӗнчи. Ҫав енпе хӑй вӑхӑтӗнче, вӑй питти чух, пысӑк-пысӑк чемпионатра мала тухнӑ вӑл, ылтӑн медаль ҫӗнсе илнӗ, ҫӗр-шыв ятне ҫӗкленӗ. Самай ятлӑ-шывлӑ атлет халӗ те чуппин мелне ҫухатман, ыткӑнуллӑн чавтарать; хӑнӑху шучӗпе, шӑмшака ҫемҫетес тӗллевпе кросс инҫӗшне кумасси уншӑн та чух ҫеҫ пуль. Валентин, пӗрремӗш разряд шайне ҫеҫ ҫывхарайнӑскер, ир кӳлӗмри чупӑва паллӑ атлетпа ирттернӗшӗн чунтан хӗпӗртени тӳрех курӑнать: хаваслӑн ыткӑнать ав тӑвалли вырӑнта, сӑн-питӗнче – киленӳ.

Тинӗс ҫыранӗнче ҫиллӗ, кас-кас ыткӑнтарса ярасլах вӗрет, ача-пӑча урапи тӗкнӗ мӑшӑрсем е хирӗҫ е майлӑ ирте-ирте каяҫҫӗ. Пӗр ҫамрӑк арӑм кӗске платьепе те колготки вӗҫҫӗнех ачине шӑнса ан кайтӑр тесе ӗнтӗ урапине тӗксе чупать – пӗрре пӗр еннелле, тепре тепӗр еннелле; кӗпе аркийӗ ҫӗкленсе ҫатӑлтата-ҫатӑлтата вылянать. Ватӑсем те пур. Кусен утти мӑрам, часах сак ҫине сӗкӗнеҫҫӗ. Кавраҫ та хуллен утнипех ывӑнать, пушӑ сак ҫине ларать. Унӑн матрӳшкисене никам та илекен тупӑнмасть, ача урапи тӗкекен ҫамрӑк амӑшӗсем те кӑштах йӑл кулса пуҫа сӗлтеҫҫӗ ҫеҫ.

Кӑнтӑр иртни иккӗ тӗлне таврӑнать пурӑнакан пӳлӗме Василь, чей вӗретсе ӗҫет те вырӑн ҫине тӑсӑлса выртать. Валентин тренировка хыҫҫӑн таҫта ҫавӑрӑнса килнӗ, халӗ пӳртре.

– Абросимпа ҫӳрерӗмӗр. Хӑй ҫичен кала-кала пачӗ. Ача чух чирлӗрех те пулнӑ вӑл. Чӗре кӑлтӑкӗ аптратнӑ. Физкультура урокӗсенчен хӑтарнӑ пулнӑ ӑна. Хӑй тӗллӗн чупма пуҫланӑ вӑл. Спорта иленнӗ . Хӑнӑхусем кӑтартрӗ. Чемпионата хатӗрленнӗ чух тренерсем епле хӑнӑхусемпе тӑна-пуҫа илнине, урана пиншер хут хуҫлатса пружина пек ылмаштарнине туса кӑтартать. Тӳррипе, пустуй япала унашкал ытлашши иленни тет. Кашни ҫыннӑн хӑйӗн чупас мелӗ-сӑлайӗ пулмалла. Вӑт, ку ман талисман. Чупнӑ чух катаран курӑнать, пӑхса тӑракансем индеец тесе улюль! улюль! кӑшкӑраҫҫӗ, – хавхаланса пуплет Ӗпхӳ вырӑсӗ. Куҫлӑхпа вӑл, хыткан, ҫавра пит-куҫлӑ, вӑтам пӳллӗ. Ҫийӗнче кӑвакрах шалпар фланель курткӑпа брюки.

Василь виççĕччентерех хĕрлĕ атлас труссипе кĕске хуллă шур кĕпе, шур кепкине тăхăнса çула пуçтарăнса тухать. «Ыран виççĕре старт пулмалла та – çав вăхăт тĕлне шоссе çинче халь вăл. Кунта утрĕ-ха вăл виçĕм кун. Анлă тракт; машинăсем иртеççĕ, трамвай йĕрĕ те пур; ик вакунлă çӳллĕ электричка пит хăвăрт ыткăнать тӳр çулпа. Шоссе айккинче – велосипедистсем валли сарнă асфальт çинçе тăрăхăн тăсăлать; кашни çĕр метрне кунта паллă тăва-тăва, çыра-çыра хунă хăмăр сăрăпа. Виçĕм кун леш еннелле çиле хирĕç вăтăр тăватă минут çурă, каялла çиле май пит хăвăрт килнĕччĕ Василь. Мĕн пур вăхăчĕ – пĕр сехет те сакăр минут. Çул пуçламăшĕнче пĕр хушă чупнă пулин те каялли тăрăхĕнче хăвăртрах та ĕлкĕрнĕ ав. Ĕнер мăн хулара çĕтсе кайса çӳренĕ-ха, ятарласа утман, халĕ ырана валли шăмшака çемçетмелле, хĕртмелле çеç. Пĕр чарăнмасăр тĕрлĕ хăвăртлăхпа вăшкăнма палăртрĕ вăл: алă-ура хускалса çитсен, пынă майăнах пит хăвăрттăн ик çĕр, унтан пин метрсене хыттăн тухмалла, вара таврăнмалла, тепĕр тăрăх тăват çĕр метра ăнтăлмалла.

Кăштах чупнă хыççăн йăрт-йăрт пырать Василь. Самай хĕвел пĕçертнĕ вăхăт, çил пур пулин те пăчă; ыран уçă çанталăк пултăринех. Ак паллă тунă йĕр тĕлĕнче секундомера пăхрĕ те хыттăн вирхĕнчĕ Каврăç, пĕр палла ирттерсе ячĕ, тепĕр паллă тĕлĕнче сехете пăхрĕ, вăрахланчĕ. Ик çĕр метрти вăхăт – пĕр минут та сакăр çеккунт. Япăх. Тепĕр хушă хуллен пынă хыççăн, урлă иртекен çултан каçсан, каллех паллă тунă йĕртен хыттăн, мĕн пур вăйран кая пуçларĕ; кашни палла шутласа пырать, пилĕк çĕр метр пулмалли тĕлте таврăнчĕ, сехетне пăхса илчĕ – виçĕ минут та вун виçĕ çеккунт; халь килнĕ çулпа каялла ĕрĕхет – тепĕр пилĕк çĕр метр, кăшт анаталларах, çиле майлăрах. Пăчă, хĕвел пусать, питкуç, ӳт-пӳ тарпа витĕнет, çиле май пушшех уçăлаймастăн. Пурĕ ултă минут та вун пилĕк çеккунт пулчĕ кăтарту. Вун пилĕк-çирĕм çеккунт хăвăртрах пуласчĕ те... Мĕншĕн япăх? Ыран тапочка çăмăлли пулать-ха урара, ăмăрту туйăмĕ те васкатĕ. Пĕлтĕр Итали çынни Марио вăтăр çухрăма ик сехет те аллă ултă минутра тухнă континент чемпионатĕнче, нивушлĕ унран хăвăртрах каяймĕ Каврăç Ваçукĕ; ултă çул ка-

ялла Марioран ик дисанцире те – пилĕк тата çирĕм çухрăмсенче – малта пулнă-çке вăл. Валюта пулманнипех унтанпа чикĕ леш енне çитсе ăмăртаймарĕ çав ял çынни, тренировкине пĕр вĕççĕр ирттерчĕ пулин те.

Чарăнмасăрах хуллен утăпа пырать халь сенкер хăю пек çулпа çӳревçĕ. Урлă иртекен çултан каççан паллă тĕлĕнче каллех ыткăнчĕ – хальхинче тăват çĕр метрти вăхăт икĕ минут та вун çичĕ çеккунт пулчĕ. Каллех тивĕçтереймерĕ ку хăвăртлăх Кавăрçа. Пĕр хĕрсе кайсан хĕрсех каять çав çынни, малтан шутласа хуман пулин те тепĕр икĕ хутчен ик çĕр метрсенче вăй виçрĕ ыранхи ăмăртăва хатĕрленекен çĕревçĕ; икĕ хутĕнче те вăхăт пĕр минут та аллă тăватă çеккунт пулчĕ. Спорт мелĕпех вăрахрах утнă хыççăн парка кĕчĕ, хăнăхусем тукаларĕ. Пурĕ аллă минут утнă. Ытларах та пулчĕ-ши? Хăйсем пурăнакан çурт тĕллипе ку шоссе хушшинче – вăрман-и, парк-и; çакăнта йывăç сулхăнĕнче хăнăхусем туса уçăлчĕ Василь.

Душ. Çăвăнасси. Эх, ырлăх! Пӳлĕмрех душ пур. Килте эрнесерен мунча пулса пырсассăн та аван, кунта кашни тарланă хыççăн ăш шывпа çăвăнатăн, тасалатăн, шăм-шака канлĕлентеретĕн.

Вăт, мĕн палăртнине пĕтĕмпе пурнăçласа пычĕ Василь çур çул хушши таранах. Ăмăрту умĕнхи кун шăмшака ăшăрхаттарасси те палăртнă пекех май килчĕ. Тен, ытларах та çӳресе пăрахрĕ? Çирĕм пилĕк минут утни те çителĕклĕ марччĕ-и?  Хăвăрт каяссине те ик татăк кăна тухмаллаччĕ-и? Юрĕ, шăм-шак ывăнсан çывăрма канлĕ, ыйхă вĕçмест, пусăрăнать; лайăх çывăрни те ӳсĕм патне утăм тăвассиех.

Каçалапа тепре хула курса çӳрес терĕç Валентинпа иккĕшĕ. Ĕпхӳ çынни лăпланма пĕлмест, хăйне çурт-йĕр тăвакан ăста тет те, шав курасшăн, тем çитмест ăна, çуртсен фасадне, тăррине пахалать, анăç архитектури текелет. Ăмăртура мала тухма шутламасть вăл, хăйĕн вăйĕ епле шайрине пĕлет: тантăшĕсен йышĕнче пĕрремĕш çуррине лексен те аван уншăн. Ку вăл пуçа нумай çĕмĕрмелли мар. Çĕнтерме ĕмĕтленетĕн пулсан çав йывăрăш сан çине малтанах пысăк çăк пек пусса тăрать – арман чулĕ пырса хунă тейĕн ик хул пуççи çине.

– Металсăр таврăнмалла мар манăн, – мĕн шутланине пытармасть Каврăç. – Укçа куçарнă маншăн, куçарса та çитереймен ав.

– Мĕн чухлĕ куçарнă? Тен, сана йăвашшине кура Абросим юри мăкăлтать? Ыйт эс унран, ыйт. Мĕншĕн татах тӳлеттересшĕн. Таса япала мар, ман шутпа.

– Çын çинчен усал шухăшлас кимест.

Хăйсем пурăнакан çурт çывăхĕнчи хыçал енчи урампа утнă чух Валентин Василе: «Ак çак магазин хуçи пухать матрӳшкене», – тесе кăтартрĕ.

Пĕлмен, чухламан. Халь каç пулнă, магазинсене хупаççĕ те ĕнтĕ. Чупса кайса илсе тухмаллаччĕ-ши матрӳшкесене Василĕн? Çынни ку асăнсанах акана тухаканни мар. Халь хырăм та хыр тăрринче, каçхи апат çинчен те, ыранхи старт çинчен те шухăшламалла.

Пӳлĕме Махмут кĕрет ав. Çирĕм пилĕк çухрăмра ăмăртма пуçтарăннă пулнă вăл, ăна иккен вунна çырнă. Улăштар тесен ал сулать: чăрмав! Кăнтăрла вăл тепĕр хулана кайса килнĕ-мĕн-ха, автомашина хакĕсем пирки юмахлать, кунтан «урхамах утланса» каясшăн-мĕн, çав ĕмĕтпе хулăн кĕсьеллĕ килнĕ. Валентин унран старта епле хатĕрленмелли çинчен ыйтать. Ку ăна хăй пĕлнине тĕплĕн ăнлантарать. Васильпе те сăмахлать Махмут. Раççейри ăмăртусенче унччен те пĕр-пĕрне курнăскерсем вĕсем. Иккен, тутар ачи пĕр çулхине, çамрăк чух, чăвашсен марафон чупăвĕнче çĕнернĕ. Шупашкар атлечĕпе пĕтĕм çул тăршшĕпе тенешкел малта пĕрле пынă, унтан вăрăм тăрăх тăвалла пуçлансан (аэропорт енчен тесе палăртать Василь) Махмут хăвăртлăха ӳстернĕ, иртерех тытăнан тесе асăрхаттарнă ăна Шупашкар атлечĕ, ку тек ун çине çавăрăнса пăхман, чавтарнă çеç... Тарнă.

Махмут халĕ нимĕçле пуплеме хăнăхасшăн. Калисăпа та çав ыйтупа сăмахланă вăл – унăн кунтан «çил çунат» туянса каймаллах. Валентина та ĕçри çывăх çыннисем, ытларах хĕрарăмсем, тем ăпăр-тапăрĕ те илсе килме валюта парса янă. Василĕн вара ăмăрту хыççăн та пĕр вĕçĕм парăм татмалли юрă.

– Эп сана миçе хут каларăм пĕри матрӳшке пуçтарать тесе! – айăплать Кавăрçа Валентин.

– Эп тӳрех ăнланман: хамăр хăна çурчĕн хуралçи пулĕ тесе шутларăм, пĕрре туяннă та урăх илмĕ терĕм. Унтан курăнмарĕ вăл, – ним вăлтмасăрах евитлет Каврăç.

– Кăтартрăм вĕт сана магазин тĕлĕнчен иртеспе.

– Ун чух каç пулнăччĕ. Киле çитсен чупса таврăнмаллаччĕ-и? Апат хатĕрлеме те вăхăтчĕ – ерçеймен.

– Сана калан, тăнлатăн, анчах хăвăннех тăватăн. Санран пай ыйтмастăп эп.

Çапла калаçу пула-пула иртет Валентинпа Василь хушшинче, пĕрре çеç мар, темиçе хутчен те; ку хулара та, кайран урăх çĕре çитсен те.

– Мĕн эс асапланатăн: ыйт Абросимран – мĕншĕн тӳлемелле ăна çав суммăна, укçа куçарса панă пулсан? – пуçлать тепрехинче каллех Ĕпхӳ вырăсĕ, куçлăхне тӳрлетнĕ май ĕçхĕл çинчен сăмах пуçарса. – Тем, таса мар вĕсен кунта, ман шутпа.

– Çын çинчен усал шутлас килмест, – хăйĕнне калать Василь.

– Апла пулсан ыйт, пыр та ыйт. Хăюллăн. Чĕнместĕн те, утланса ларчĕç сан çине.

– Хăй те калĕ-ха, ăнлантарĕ. Эп сана пĕтĕмпех йĕрлесе паратăп терĕ вăл. Кĕтетĕп.

– Вăт, эс – хăвăннех. Калатăн сана – эс хăвăннех.

– Кашни çын çапла пуль. Салтаксем мар нихăшĕ те. Сан шутпа, командир стройра команда парса сылтăмалла-сулахаялла çавăрнă пек тытса тăмалла-им çынна? Эс хăв та сылтăма-сулахая тӳрех çаврăнмастăн хушнă-хушманах; шухăшлатăн, хирĕç чĕнетĕн, урлă илетĕн. Эпĕ те шухăшлатăп хам пуç тавра малтан.

Ку калаçăвĕ кăшт каярах пулчĕ-ха. Тинĕс хĕрринчи курорт хулинчен ăмăрту вырăнне каяс чух, кăнтăр иртни пĕррепе, автобусра Васильпе юнашар Абросим вырнаçрĕ. Йышăн тĕп ертӳçи Маринов, алăк патĕнче тăраканскер, пирĕннисем пурте ларчĕç-и тесе пăхкаласа илчĕ, Васильпе Калиса пуррине куçпа курчĕ те, тапранчĕç. Умри кĕрешӳ шухăшĕ пуçа капланнине кăштах сирес тесе Василь Абросимпа хăех çăмăлрах калаçу пуçарчĕ.

– Эпĕ ăмăртусем хыççăн çырнă статьясенче час-часах сире асăнатăп, – терĕ вăл ыт ахальтен тенешкел. – Ак иртнин-

че те, Раççейĕн çурхи чемпионачĕ хыççăн, çапла йĕркесем пулчĕç: ветерансен пĕрлешĕвĕн ертӳçин çумĕ Абросим, пирĕн ентешĕн çĕр-шыв рекордне малалла çĕнетнĕскер, чăваш ачисенчен хăй умĕн чап сарнă атлета ялан салам каласа ярать.

– Халĕ те салам кала. Çыр.

Килтен тухаспа Василĕн маларах çырнă калавĕ хаçатра çапăннăччĕ те, кӳршĕ хĕрарăмĕ сăнара хăй çине туртса илсе ахăр самана пуçланăччĕ, çавăн çинчен те асăнса кăтартрĕ пуçра тепĕр шухăш явăннипе Кавраç. Абросим куна илтмерĕ те пуль.

– Пĕлместĕп, мĕнлерех çавăрăнса тухĕ ку çул çӳрев, чемпионат маншăн, мĕнле шухăшсем капланĕç. Çырма çыратăпах. Е статья, е очеркках, е пĕр-пĕр калав çуралĕ.

Чăн ĕнтĕ, пĕчĕк япаласемсĕр пуçне пысăкраххи тупăнманни вăраха кайрĕ, икĕ çул майлах иртрĕ Кавраçăн. Сунарçă çӳресен-çӳресен пысăк енлĕк тытнă пек тупăнмĕ-и пĕр-пĕр шухăш, сюжет.

Абросимшăн çакнашкал калаçу ют. Василь хăй те ку йышра ют пек: чупакансем-çке тĕпре, утакансенчен Калиса çеç. Унпа сăмахласа илетĕн, анчах хĕрарăмăн хăйĕн еккиманерĕ, хăйĕн уйрăм ыйтăвĕсем. Хĕрĕхрен иртнĕ сарă çӳçлĕскер ав малти ларкăч çинче шăппăн пырать, çумри çынпа пĕрик сăмах çеç хушкаласа илкелет. Паян автобусĕнче ытларах утакансем-ха, анчах вĕсем ют çĕр-шыв çыннисем, пĕр-пĕрне хальччен курман. Василь пĕр американкăпа çеç паллă парса сăмахланăччĕ, чĕлхе пĕлмест те – калаçу сыпăнмасть,

– Чемпионат вĕçленнĕ хыççăн Парижа каятпăр, – пысăк пĕлтерĕшлĕн палăртса хурать Абросим. – Париж!

Василь пуçĕнче тĕпре – ăмăрту.

Тепĕр ирпе каллех ăмăрту вырăнне тапранать йыш. «Иккариус» лăк тулли. Вырăссем кунта вун-вун ик çын, ыттисем американецсем, акăлчансем тата ытти халăх çăмăл атлет ветеранĕсем. Пуçтарса лартса яраканĕ çӳллĕ пӳллĕ, вăтам çулсенчи кĕре сăн-питлĕ арçын тем калать, ăлантарать. Американецсем хаваслăн алă çупаççĕ, тимлĕн итлеççĕ, унтан тепĕр халăх çыннисем хускалса илеççĕ. Арçын хăй сăмахне вĕçлесе автобусран тухрĕ, пурне те телейлĕ çул сунчĕ ĕнтĕ вăл. Вара ку çынпа çумăн тăнă Маринов сăмах хушрĕ.

– Акăлчан, нимĕç, француз, фламанд чĕлхисемпе пурсăра та ырă ир, телей сунчĕ экспедитор. Эпĕ пиллĕкмĕш чĕлхепе вырăсла калам, – терĕ вăл, йăрăс пŷллĕ вăтам çулсенчи арçын, кăштах шăрт сухал та, мăйăх та ŷстернĕ ученый. Ырă кун та телей пултăр сире. Автобуса япала хăварсан çухалмасть, анчах хăварма ан тăрăшăр. Халь ăмăрту иртекен хулари Керменсен лапамне каятпăр. Таврăнма... – хăçан килессине, автобус ăçта кĕтсе ларассине ăнлантарчĕ Авель Иванович вырăссене. Сасси унăн йăваш, çепĕççĕн тухать. Нимĕç тата акăлчан чĕлхисене лайăх пĕлекенскер, çав халăх çыннисене те ырă кун, телей сунчĕ вăл. Лешсем хаваслăн алă çупрĕç. Унтан хыçал еннелле куçса пыракан Абросим Василе:

– Таварна илтĕн-и? Асту, – тесе шĕвĕр пŷрнине çĕклесе кăтартма манмасть: сăмса çине картса хур эппин.

– Пĕр вăхăтра икĕ ĕç тăваймастăп: паян Валентина пулăшмалла, ĕнер вăл маншăн чăрманчĕ, – хуравлать Каврăç.

– Ачасене пулăшма ыйт, вĕсем пăрăнмĕç.

Унтан тепĕр кунне ку хуларан Парижа куçнă чух вакунра Васильпе Валентин хыçĕнче ларакан Абросим чăваша шĕвĕр пŷрнине çĕклесех:

– Париж! – тет темле пысăк ĕмĕт-туйăмлăн. – Суту-илŷ тума пулать унта. Асту.

Кăштахран вăл каллех Василе ятран чĕнет те:

– Эрех юлман-и сан? – тесе ыйтать.

– Çук. Эрех туянман эпĕ. Мускавра илĕп тенĕччĕ те килтен тухнă чух. Ăçта унта вăхăчĕ.

Юна вылянтараканни пулнă пулсан Василь хăй те ыăннă хыççăн çĕр-çĕр аллă грамм сыпнă пулĕччĕ-и тен, Валантинпа шăкăлтатса ларĕччĕç, Калисăпа та пуплĕччĕç-и? Çывăхраххăн калаçас та килет Сăр çывăхĕнчи хулари хĕрарăмпа, хăйнешкел çŷревçĕпе: ăмăртусене епле хатĕрленет вăл? Пурнăçĕ мĕнлерех ăнса пырать? Чемпионатсене сиктермест ав. Васильсен сыпмалли çук та, çаплах ирттернĕ; ирпе кросс чупнă Каврăç, чипер утакан пулнă, шăм-шак çăмăлланнă. Ертŷçĕсемпе туристсене авă мухмăр аптратать. Каçхине хăна çуртĕнчи кафере сĕтел хушшинче рехетленсе ларатчĕç çав вĕсем. «Хăшĕн те пулин юлман-и?» – тет Абросимпа çумăн

вырнаçнă турисчĕ те туссем еннелле пăхкаласа. Йышра шарламаççĕ, пуçа пăркалаççĕ çеç. Махмут икĕ кĕленче эрех илсе каçнине пĕлет Каврăç, тутар ăна сутса янăччĕ. Халь ку ача йышран ĕнерех уйăрăлчĕ: машина туянас ĕмĕтпе пуçне минрететчĕ, килне «урхамахпах» çитесшĕн. Унăн кӳршин, чăвашăн, ав ĕнсе çинче арман чулле выртакан парăм.

Париж урамĕпе утать йыш Раççей президенчĕн суйлавĕ кунхине ирпеле хăйсен посольстви еннелле. Абросим Васильпе юнашар.

– Таварна сутрăн-и?

– Çук. Ĕнер тăватă сехет хушши çӳрерĕм суту-илӳ ретĕнче.

– Сана Валентин каланă вĕт-ха туянакан пур тесе. Мĕншĕн пăрăнтăн?

– Кашниех харпăр хăйне паттăра хурать. Вăл каланине эп тӳрех ăнланса та çитееймен.

– Каланă вăл сана – эс пăрăннă.

– Пăрăнман – ерçӳ пулман.

– Мĕншĕн ăмăрту кунĕ ирпе пымарăн стадиона? Ачасем сутнă.

– Эпĕ старта хатĕрленнĕ, кирлĕ вăхăтра апат май килтернĕ, çинĕ – вăй пухнă. Старт умĕн хăшкăлса çӳреймĕп. Вăтăр çухрăм утасси вăйă-кулă мар.

– Çынран кивçен ил.

– Камран илĕп, кама кайран тӳлесе татăп? Сире эпĕ тавăрма пултаратăп. Куçаратпăр. Мĕншĕн мана малтан пĕлтермен çитменни çинчен?

– Пĕлме кирлĕ. Хак çумне налук хурассине кашни бухгалтер пĕлет. Çул билечĕ илмелле пулман манăн. Малашне апла тумастăп.

– Тĕрĕс. Сирĕн мана пĕлтермелле пулнă. Эпĕ миçе хут шăнкăравларăм сирĕн пата.

– Каларăм вĕт сана çитмест тесе.

– Эп урăхла ăнланнă. Поручени банкра çав кунах каймарĕ те, пĕр кун хушшинче доллар ӳсрĕ пуль терĕм. Çавна шутланă. Эсир – урăхла. Сирĕн пуçра тепĕр проблема çавăрăннă. Эп хам тĕрлĕ тĕшмĕртнĕ. Ик çын шухăшĕ пĕр-пĕринпе тĕкĕнччĕр тесен пĕр-пĕрне итлемелле, каламалла. Кăнтăр-

ла эпӗ ялсем тӑрӑх ҫӳрерӗм, районта реформӑсене малалла тӑсаканӑн кандидатурине хӳтӗлекен шабӗн ертӳҫи пулса; каҫ кӳлӗм – тренировка, хатӗрлентӗм чемпионата. Каҫалапа улттӑра шӑнкӑравлатӑп сирӗн пата – тытаймастӑп. Хӑҫан тухса килмеллине пӗлес пирки те эрне шӑнкӑравларӑм – тытаймарӑм. Тунти кун ҫеҫ вун пӗр сехетре ҫыхӑнайрӑм. Хӑҫан тапранмаллине пӗлтерчӗ пӗри. Тин васкавлӑн пуҫтарӑнма тытӑнтӑм – каҫхине пуйӑс ҫине ҫитмелле.

– Пӗлнӗ эс укҫа ҫителӗксӗррине.

Паспорт ярса панӑ чух Василь кӗске ҫырура вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ӗҫленӗ ветеранӑн ӗнентерӳ кӗнекин номерне те – билет илме, тен, ҫӑмӑллӑх пулмӗ-и тесе ҫынӑччӗ. Ҫавӑн пирки пӗлет тет-ши?

– Аэропорта ҫитсен эсир укҫа ҫитменни ҫинчен калани мана тӳрех пуҫран тукмакпа ҫапнӑн пулчӗ, анратса ӳкерчӗ, – тӳррине калать Каврӑҫ.

– Ҫынран туп. Кивҫен ил.

– Кам парать? Вӗсемпе эпир Мускава таврӑнсан саланса каятпӑр. Курмастпӑр пӗр-пӗрне.

– Хӑть мӗнле тат. Манӑн пуйӑс ҫине лариччен такси тытса ӑсатмалла йыша – ӑҫтан тупатӑп укҫа? Сана ыттисемпе пӗрле, апат ҫиме тесе укҫа та памалла марччӗ.

– Мӗнле пурӑнайӑп? Пурӑнма кирлӗ.

Хӗрсех калаҫать Абросим. Василӗн те кӑмӑлӗ пӑсӑк. Ав сасӑлавран тухсан, Василь Питӗр мэрӗ пулнӑ ҫынпа политика ыйтӑвӗсемпе самай вӑхӑт калаҫса тӑнӑ хыҫҫӑн, ертӳҫӗ каллех Василе:

– Мӗн ҫинчен пуплерӗр пит нумай? Унран ыйт. Вӑл пуян, – тет.

– Хамӑрӑн пулсан ыйтаттӑм.

– Хамӑрӑн вӑл.

– Чӑвашран пулсан ыйтаттӑм. Анчах вӑл манӑн кукка мар-ҫке.

Авель Иванович та лӑпкӑн итлет кусен калаҫӑвне. Абросим ҫаплах Каврӑҫа тапӑнма пӑрахмасть. Унӑн пӗр юрӑ, рефрен тейӗн.

Сасӑлав хыҫҫӑн йыш кам мӗнле пӗлет ҫапла, икшерӗн-виҫшерӗн пӗрлешсе, хулара харпӑр хӑй тӗллӗн курса ҫӳрес

терĕ. Метро евĕр çĕр айĕнчи пуйăс çине Абросим, Авель Иванович, Каврăç ларчĕç. Сăмах май, Василĕн çĕр франк хут укçасăр пуçне пĕр сум та çукчĕ, жетон илме ăна ваклаттараймарĕ. « Урлă сик», – куçне çиçтерчĕ Абросим. Василь вара, чăн та, çула пӳлекен решетке урлă ура ярса каçрĕ. «Полици тытать ак», – тинкерчĕ Авель Иванч. «Абросим ĕшĕртнипе», – сăмахшăн кивçене каймарĕ Василь. Ку ĕнтĕ шӳтпе иртрĕ. Кашнин хăйĕн тĕллевĕ-ĕçĕ; Абросим иккĕмĕш чарăнура анса юлчĕ, Авель Ивановичпа Василь тепĕр пуйăс çине куçрĕç, профессор чăваша малалла епле кайса хăш вырăнта тухмаллине ăнлантарчĕ те умри чарăнура анса юлчĕ. Василь те часах çĕр питне тухрĕ, хăйсен урамĕ ăçтарахрине пĕлесшĕн куçлакаласа тăчĕ. Пĕр енче Монмартр сăртлăхĕ иккен, ĕнер унта ушкăнпа кайса ятарласа курса çӳренĕччĕ; эппин, çакăнтан анаталла анмалла.

Кăшт хулăм, анчах пĕчĕк тутине пĕрмеллĕн чăп тытнă пике-хĕрарăм, йăрăс пӳллĕскер, тĕксĕмрех кĕре ӳтлĕскер, ăшша май пит çӳхе тăхăннăскер, сăнавлăн пăхса ирттерет Каврăçа. Темиçе утăмран тепĕр пике-хĕрарăм, лешĕнчен çулпа аслăрах та-ши, кăкăрĕ çурри таран курăнмалла йӳле кĕпе, кĕске те çăмăл шупка юбка тăхăннăскер, Василь çине тем сăмах хушса йăл кулса пăхать, кулнă чух çӳхе тути ик хăлха еннелле сарăлать. Хăна çуртне çитсе вырнаçнă кунхине укçа улăштармалли пункта килес чух та иртнĕччĕ ку тĕлтен. Статуя пек виçĕ пикеччĕ. Пĕчĕк мăкăнь чечекĕ евĕрлĕ чăп туталли, кĕререх сăн-питли, çамрăкки, çурт фасачĕ умĕнче тăратчĕ. Магазин-и, ресторан-и, япала туянма е хăналанма кĕме чĕнекенскерсем ĕнтĕ тесе шутланăччĕ Василь чипер пикесем пирки. Киле тавăрăнсан Валентин: «Куртăн-и: епле пирĕштисем? Аçынна киленĕçе йыхрвлакансем, çурчĕ те çавнашкалли», – терĕ. Шалт тĕлĕннĕччĕ чăваш, ял çынни. Ытти хĕрарăмсенчен çиелтен пăхма нимпе те уйăрăлса тăманскерсем-çке: йăрăс пӳллĕ, илемлĕ сăн-питлĕ, илĕртӳллĕ; ăс-пуç енчен те тайăн мар пек. Ĕнер Монмартртан аннă чухне те вĕсен тĕллипе иртме лекрĕ Каврăçăн, ак халĕ те çав çурт патĕнчен иртсе хăйсен урамне тупать Василь. Пĕри, ав, кăкăрне çурри таран курăнмалла çӳхе кĕпе тăхăнни, Василь арçын йăлине пула çара ӳт çине куç ӳкернине асăрхаса-и, француз

чĕлхипе тем сăмах хушрĕ, тутине йĕлпĕртсе йăл кулчĕ; Кавръăç ăнланман пек хирĕç пăхса илчĕ те малалла таплаттарчĕ. Чи çамрăкки, виççĕмĕш пики, халь курăнмасть, тахăшне ертсе кĕнĕ пулас. Тем тĕрлĕ майпа укçа тăвакан та пур-çке тесе тĕлĕнейрĕ ял çынни, чăваш.

## *Пикесен çурчĕ патнеллех...*

Суту-илӳ çурчĕ умĕнче, каплана-каплана ларнă хыççăн уçăлнă шĕлкĕшлĕ шыв юххилле, халăх куçать – пĕр енчен те, тепĕр енчен те. Тăкăрлăк пек урам урлă светофор симĕс кăтартсан кĕпĕрленсех каçать çын. Василь пĕр еннелле, унтан тепĕр еннелле – кĕтесри çуртăн алăкĕ умнелле; унтан тепĕр çурт умĕ еннелле хуллен утать, аллинче – матрӳшке; çынна куçпа тинкерсе, алăпа паллă парса туянма сĕнет; кавир сутасшăн çӳрекен хăй пек арын ăна çĕр франк тăрать тенĕччĕ те, хут çине «100 ф» çырчĕ те çавна кăтартать. Виç-тăват сехет хушшинче те пĕр-иккĕн çеç чарăнса тăчĕç ун тĕлĕнче. Карчăк хаваслансах куçларĕ тавара, анчах хак çырнă хута курсан тек чарăнса тăмасăр уттара пачĕ. Çанăран туртса тăратма пултараймарĕ ăна чăваш, сăмах калас – чĕлхе пĕлмест. Хакне ик хут чакарса та сутнă пулччĕ Кавръăç. Тепре çамрăк хĕрарăмпа хĕр кăсăкланчĕç. Пит хавас пуплет кĕçĕнреххи, вырăс сăмахĕсене перкелет, Мускав, Санкт-Петербург текелет. Туризм çӳревĕнче пулнă иккен ку хĕр, çавнашкал матрӳшккесене туяннă-мĕн вырăс тĕп хулинче, унăн пур иккен вăл, халь аслăрах тусне ăнлантармалла, кăтартмалла пуплесе айхашать-тĕр; кирлĕ мар вĕсене Василь сĕнекен тавар – курнă, чĕлхене вылятнă – çителĕклĕ. Апатçимĕç пĕçерсех сутакан илемлĕ сăн-питлĕ хӳхĕм хĕрарăм кăсăкланчĕ тата, çĕр франк тесен ал сулчĕ; «полицейски» тесе пӳрнипе юнарĕ: асăрханullă пул тени ĕнтĕ ку, çавăнпа Василь пĕр вырăнта тăмасть, хутран-ситрен кунта йĕркене асăрхакансем курăнсассăн вĕсене хирĕç халăх йышĕпе, таварне куртка çанни çумнерех хĕстерсе утать. Полицисем пĕрисем иккĕн çӳреççĕ – французсем пулас, кăвак тумпа, шур кĕпепе; тепри çӳллĕ, хулăм туталлă, хура ӳтлĕ – негр, ку симĕс тумпа, пĕччен; лӳппертереххĕн кумать.

Кĕленче алăклă пĕр çуртне те шала ура пусман-ха Василь, унта япала туянакансем кĕреççĕ, вĕсенчен ытларахăшĕ туллипе тухать; çуртсем умĕнчи лупас айĕ евĕрлĕн витнĕ вырăнта – Каврăç «улăхĕ». Кунта вара япала сутакансем хăйсен таварне илтересшĕн мĕн тĕрлĕ кăна тăрăшмаççĕши?! Тутăра пуçа çыхса та, ăна кĕлеткене юбка пек çавăрттарса çие хума май пуррине те туса кăтартать пĕри, йăрăс та илемлĕ хĕрарăм; тепри, чир-чĕртен-и, тем сипленмелли йывăç шăлтăрма-мăкăльтĕке иртекенĕн çурăмне тĕкĕнсе систерет – сĕнет. Василе пĕлеççĕ халь вĕсем – ку сутасшăнскер те, шăппăн ирттерсе яраççĕ. Унпа юнашар тенĕ пек пĕчĕк телевизор шав пĕр япалана, темиçе ӳкерчĕке ĕнтĕ, кăтартать: сĕнекен системăна çыннăн ӳтне-пĕвне ăçта, мĕнле лартмалла, епле сывалмалла – çавна. Кăшт кукăр евĕр тĕлте тĕксĕмрех ӳтлĕ çамрăксем, лутрарах пӳллĕскерсем те Василе палласа çитрĕç, сутаймарăн-и-ха тенĕн пăхаççĕ; сăнĕнче вĕсен хаваслăх, кулă. Хăйсен таварне – сиксе вĕрекен йыттине-пуканене – тем тĕрлĕ ташлаттарса кăтартаççĕ, тетте упăтене стена çине персе çыпăçтараççĕ, карăнтарнă хăмпă пичкене параппан пек тӳнклеттереççĕ – шав калаçаççĕ, хускалаççĕ – епле ывăнмаççĕ-ши?

Пĕр ача, сакăр-тăхăр çулсенчи пуль, çĕре ларнă та виççĕмĕш кун пĕчĕк хут купăс туртать, умне карттус хунă – укçа тăвасшăн. Паян ак, амăшĕ пулас, ун патне пынă çамрăк хĕрарăм, ытлашши курăмлах марскер, шăпăрланпа ăшшăн калаçать. Ача тăчĕ, сăмахлаççĕ; амăшĕ ывăла çурăмĕчен çупăрлать; тикĕт евĕр хура çӳçлĕ тепĕр пĕчĕк хĕр ача та пур юнашар. Купăсçă ача Василе асăрхаса ĕнерхи пекех хыçран чупса пырать: тем калать, пар матрӳшкене, парнеле тет ĕнтĕ вăл француз чĕлхипе.

Вун ик-вун виç çулхи яштак хĕр тăкăрлăк урлă каçнă вырăнта, мрамор юпа çывăхĕнче, çурма баян туртать, «Дунай хумĕсем» кĕвве çепĕççĕн те тунсăх килтернĕн шăрантарать; унтан тепĕр темиçе утăм аякра, шаларах темелле, юрă-кĕвĕ кассетисен лавкки умĕнче оркестрантсем – тăваттăн – кĕвĕ янтаттаççĕ инструменчĕсемпе пит шавлăн; киоск хуçи чĕнсе илнĕ ĕнтĕ кусене, çавă тӳлет пуль тавара сутăнтарма йыхăрнăшăн. Укçа тăвасшăн пурте, кашнинех услам кирлĕ: пурăнма, ыр курма – термен.

Сутасси пулмасть Василĕн матрӳшкесене, ун енне çавăрăнса пăхмаççĕ. Çиччĕпе лавккасене хупаççĕ, ав пуçтара та пуçларĕç хăшĕсем таварĕсене. Çуллахи çи-пуça – тутăрсене, кĕпе-йĕме – вăтăр, аллă процент йӳнетсе сутатпăр тенине ăнланать чăваш хут çине мăннăн çырнине вуланă май. Тен, материалĕ çав хисеп чухлĕ çĕр мамăкĕнчен тенĕ-ши? Ыран ирех пуçтарăнса каймалла Васильсен; эппин, лавккасене хупса ĕлкĕриччен килелле – пурăнакан хăна çурчĕ çывăхелле çитсе кăнтăр апачĕ тунă хыççăн алла юлнă аллă франкпа çимелли туянмалла – паян каçхи апат валли те, ырана çул çиненелĕх те, киле çитичченлĕх те çыртмалли кирлĕ: шăл хушшине нимĕнле çимĕç хумасăр пурăнаймăн.

Çĕтсе çӳремесĕрех хăйсен кукăрнелле таврăнчĕ Каврăç. Пĕр лавккине хупă тесе кĕртмерĕç, кил çывăхĕнче иккĕшĕ ĕçлет-ха. Пурăнма-çиме мĕн пит кирлине туянсан хăна çурчĕ еннелле пăрăнчĕ Василь вăрăм урамра – ку тăнă вырăнтан Абросима асăрхарĕ вăл. Хăйне пӳрнепе юнассăнах, сутрăн-и, мĕншĕн сутмастăн тесе каллех калассăн туйăнчĕ; çук-ха, лешĕ ăна асăрхамарĕ, йăрăс пӳллĕскер, кăвакпа шуранкă тăваткăл-тăваткăл куçлă костюмпа пушшех йăрăс курăнса васкавлăн утать тăвалла, аллинче – дипломат. Çавах-ши? Катарине куç пит витĕрех те мар-ха та Василĕн... Пĕвĕ-сийĕ, утти, çийĕ-пуçĕ, аллинчи япали Абросимăн; эппин, çавах. Чим-ха, арçын кăмăлне тивĕçтерме тимлекен япшар хĕрарăмсем тăракан çурт еннеллеваскать мар-и ку, сăрт çинчи чиркĕве каймасть пуль каçа хирĕç. Хыçран пырса куçлас-йĕрлес шухăш та пĕр авăк пуça пырса кĕчĕ Василĕнне, анчах самантрах чарăнчĕ: çӳрет пулсан çӳретĕр, çич ютăн мĕн ĕç пур, кăмăлне тивĕçтертĕр этем; хĕрарăмĕсем те самай чиперккескерсем-çке, илĕртӳллĕ; тен, кĕтнĕ çав ырлăха Абросим, кĕтнĕ пулсан кĕттĕрин, ырлăха тутантăр; мĕн тери илĕртӳллĕн пăхаççĕ иртен арçынна пикесем куçран, епле астараççĕ! Тен, унта та каймарĕ çынни. Тен, вăл та мар...

## *«Илсе те каймастăп»*

Василь пӳлĕмре пĕчченех. Чей вĕретсе ĕçрĕ вăл, апатланчĕ, Валентин валли те чей хатĕрлесе кастрюле çиелтен

ал шăллипе витсе лартрĕ. Ĕпхӳ вырăсĕ çыхнă курупкăсемпе ик алли те, хул хушши те пушă мар тенешкел çитсе кĕчĕ; пит хаваслă сăн-питлĕ хăй.

– Елисей уйĕнче, Эйфель башни, Триумф аркки патĕнче хамăр тĕллĕн курса çӳрерĕмĕр. Ар чирĕ ертĕпĕр терĕмĕр те тарса килтĕмĕр. Илемлĕ мур хĕрĕсем, чипер. Хăйсемех сăмах хушаççĕ, алăран туртманни çеç. Укçуна ан хĕрхен. Ме сана тутăр, арăмна валли парне. Санран – вунă франк.

– Эп тĕл пулмарăм-çке кун пек йӳннине.

– Каçхи магазинта пĕр çĕрте туянтăмăр. Эх, мĕн чухлĕ заказ пурнăçларăм эп! Мĕн чухлĕ тавар туянтăм, – хĕпĕртесе кăларать çыхăсенчен пир-авăра, çи-пуçа, ăпăр-тапăра – ырă шăршлă духипе хĕрарăм кăкăр çыххипе çитакки таранах. Унтан вĕсене кутамккана майласа чикет, йăтмалла меллĕн пысăк çыхă майлаштарать. «Ак тата мунизматика коллекцийĕ мĕн чухлĕ», – кĕшĕл кăларать вак укçа. Васильрен:

– Сутайрăн-и эс? – тесе ыйтать.

– Çук. Пăхмаççĕ те, – кĕскен евитлет Каврăç.

– Курасчĕ сана епле сут тунине. Эпĕ çавăрăнăçуллă ку енпе, – кала пуçлать хăй çинчен Валентин. Пĕчĕк бизнеспа иленнĕ-мĕн вăл, ситсă туяннă, материалĕшĕн тепĕр хулана электричкăпа хутланă. Арăмĕ килте пĕчĕк ача кĕпийĕмĕ çĕленĕ, ку сутнă. Чĕлхепе çавăрнă çынна япалана тем тĕрлĕн илĕртсе кăтартса. Ăнса пынă ĕçĕ-хĕлĕ.

– Кайран, пĕрре, налук инспекцийĕ ура çине пусрĕ – икĕ хут аран хăтăлтăм; тепре рэкетсем сырăнчĕç. «Е эпир сана хӳтĕлетпĕр, е эсĕ ку вырăнта сут тумастăн», – теççĕ. Калаçатăп хам, юптаратăп, пуçра тĕрлĕ майлă шухăшлатăп. Шăпах çак вăхăталла ача япали туяннă хĕрарăм ĕç вырăнĕ пурри çинчен пĕлтерчĕ. Ĕçе кĕнĕ чух автобиографи çине ят-шыва палăртнă хыççăн малалла çав хаçатра вулăр, унта пĕтĕмпех асăннă терĕм. (Василь кунашкал шӳте таçта вуланăччĕ.) Тĕрĕслесе пăхмалла илчĕç мана. Сăнаса тăраççĕ, чипер ăслăскерех-и ку тесе ыйтать тет директор. Çур çул сăнаса тăчĕç. Халь пĕтĕмпе шанаççĕ, – шав пуплет, маларах пĕлтернине тепĕр хут та калать Валентин. Унăн вĕçĕмсĕр монолог, çавна май Василь çакăн пĕтĕм кун-çулне пĕлет. Амăшĕпе çеç ӳснĕ вăл. Çичĕ çул вĕреннĕ хыççăн хĕре юрат-

са пăрахнипе тек шкула кайман. Унтан ФЗОра вĕреннĕ, столяр пулнă, каçхи вăтам шкула çӳренĕ. Инженер вырăнĕнче вăй хунă. Аттестат илнĕ хыççăн ĕçленĕ майăнах институт пĕтернĕ. Çурт-йĕр лартас енĕпе ăста-мĕн, архитектура мĕнне чухлать. Халĕ газ системинче ĕçлет, шалу вăйлă ӳкерет, çемьере ултă çынна тăрантарса усрать. Валентин Василе кăшт итлекелет те каллех хăй çинчен хыпарлать. Çирĕм иккĕмĕш ют çĕр-шыва çитрĕ ĕнтĕ вăл турист пулса та халь ăмăртăва пула. «Мунизматика – ман киленĕç, – тет вăл тĕрлĕ çĕр-шывсен вак укçине пухма юратаканскер. – Кашни кварталта пĕрре пĕтĕмпе сарса хуратăп та – йăпанатăп». Куна вăл тăтăш асăнать. Магазина кĕрес-тăвас пулсан, мĕн те пулин туяннă-туянман хăйĕн пăхăр укçине кăларать, кунтисенпе улăштарать. «Хăв япала туянсан хăвăнне сĕнме лайăх», – вĕрентет Василе.

– Абросим каллех ыйтать ĕнтĕ санран мĕншĕн сутмарăн тесе. Мариновпа калаç эс. Пыр та калаç, – хыттăнах сĕнет Валентин Василе. – Тăнтан ячĕç сана.

– Авель Иванч пĕлмест мар.

– Çапах ăнланар.

Хăй тĕллĕнех ăнлантарĕ-ха Каврăç, именсе тăмĕ вăл.

– Çул çӳрев хучĕ çине килни-кайнине паллă тутармалла, – пуçра сирĕлмен тепĕр шухăшне палăртать Каврăç.

– Мĕншĕн эс йышран юлса çӳретĕн ялан? Çынсем паллă тутарчĕç вĕт тахçанах, – карах пӳлет ăна Валентин.

– Илтмен, пĕлмен, – юла юпмасть Василь. – Ăмăрту хулинче паллă тутарассипе чăкăлташланаççĕ, вырăсла пĕлместпĕр, тем çырнă унта теççĕ тесе асăнчĕ-çке малтанхи канашлура Авель Иванович. Хăйсен пичечĕ пур-ши?

– А-а, ун чух эс пӳлĕме юлнăччĕ. Автобусра houларĕç вунă çухрăма ăмăртнă хыççăн таврăнаспа. Пухса илсе паллă туса пачĕç.

Иккĕмĕш хута улăхсан яри уçă пулин те алăка шаккать Василь.

– Тархасшăн, иртĕр-иртĕр, – илтĕнчĕ Авель Иванчăн йăваш сасси.

Пӳлĕмре профессорпа Абросим çеç мар, тепĕр арçын турист, Питĕртен, хĕрарăм турист – хăйсен йышĕнчи çынсем пур. Сĕтел çинче – улма-çырла, йăваш эрех кĕленчи.

– Командировка хучĕ çине пичет пусмаллаччĕ,– сăмах хушрĕ Каврăç ырă каç суннă хыççăн. Абросим Василь тăснă хута тытрĕ те:

– Пусмастăп. Нимĕнле хут та памастăп сана, – терĕ татса.

– Килнине-кайнине çирĕплетмелле вĕт-ха.

– Ак кунта кам янă сана, нимĕн те çырман, тухса килни пирки пичет пусман. Хушамат та ят çеç пур.

– Хутне сире памастăп вĕт-ха. Тухса килес кун уяв пулнă пирĕн. Ялан кайран йĕркеленĕ.

– Çурам та тăкам – ахаль хут çеç ку.

– Кайран çырупа ярса парас-им?

– Ик çĕр çирĕм доллар эс парăмра.

– Ун çинчен мĕншĕн вăхăтра пĕлтермерĕр?

– Кашни бухгалтер пĕлет. Пĕлмĕше переççĕ.

– Бухгалтер айăплă та мар кунта, финанс пайĕн пуçлăхĕ çырса пачĕ те доллартан шутласа сумма хисепне, бухгалтер патне кайнă эпĕ.

– Илсе те каймастăп сана киле, – çилĕллĕн пăхать Абросим Василь çине.

– Эсир мана илсе килнĕ – илсе кайăр. Эпĕ унсăрăн çуран та утма пултаратăп – кутамкка çакнă – çула тухнă, – хĕрмест мар Василь те.

– Эпир хамăр тĕллĕн нимĕн те тĕкĕнейместпĕр хамăра куçарса панă укçана, вăл организаци аллинче, контрольте, – ăнлантарать Авель Иванович.

– Маларах пĕлнĕ пулсан, тен, тепĕр спонсортан тупса илеттĕм.

– Санăн икĕ спонсор-им? – тинкерет Абросим.

– Пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеççĕ вĕсем. Хăшĕнче хăçан кам шутĕнчен тăккаланмаллине калаçса татăлаççĕ: райадминистраци тата пĕчĕк бизнес хуçи. Магазин тытать ку, спорта аталантарма пулăшать.

– Эп сана нимĕнле хут та памастăп, – шăл витĕр калать Абросим.

– Мĕнле пулса тухнă вара сан? – хуçасене ыр пулма тăрăшакан виççĕмĕш çын тупăнатех кун пек чух: Питĕр çынни сăмах хушшине кĕрет ав. Леш хĕрарăмĕ калаçу хĕрӳ пуласси-

не туйса паçăрах тухса кайнă. Василь ăнлантарать Маринова:

– Счетра укçа пулсан эрнеренех куçарттаратăп, ик-виç уйăх шалу илмен ĕç çыннисем районта.

Тĕплĕн итлесен Авель Иванович: «Куçарма кирлĕ, ĕненме пулать», – терĕ те командировка хучĕсене (Василь иккех хатĕрленĕ) илсе хăна çурчĕн пичетне пусма юрать тесе пӳлĕмрен тухрĕ. Василь те юнашар. Хăна çурчĕн администратор дежурнăйĕ, арçын, сунтăхра пичет шырать; сейфа питĕрсе илнĕ, лешĕнче, хĕрарăмĕнче тет.

– Аэропортра паллă тутарма пулать-ха, анчах унта ӳкĕте кĕресшĕнех мар, – хăйне хăй тенешкел калаçса илчĕ Авель Иванович.

Пӳлĕме кăштах лăпланса таврăнчĕ Василь.

– Ак мĕн шутлатăп, – терĕ вăл Валентина. – Пĕлтерӳллĕ çыру çине сумма кăтартнă хыççăн хак çумне налук хушмалла тесе палăртман, кам та пулсан вăлтана хыпĕ, алăран укçа илме аванрах, ăна тыткалама меллĕ тенĕ ĕнтĕ. Эпĕ лекнĕ ав вăлтана.

– Вĕсен хăйсен проблеми. Эс кирлĕ те мар вĕсене. Санпа усă кураççĕ çеç. Усă курмасан – кирлĕ мар.

Ку çаплах та-ши? Абросимăн спортри ячĕ-шывĕ пур-ха ĕнтĕ, титулĕ пысăк унăн. Маринов чăн-чăнласах ветерансен хушшинче спорта сӳнме парас мар тесе тимлекенскер. Вăл тăрăшнипе Раççейре çав юхăм аталанчĕ; континент шайне, тĕнче тӳпине иле-иле çитерчĕ Раççей атлечĕсене профессор, малтан СССР спортсменĕсене тăхăр вуннăмĕш çултанпа. Вăл пуçарнă тытăмра ертсе пыраканĕсем хăйсĕр пуçне пĕр бухгалтер та йĕркелӳçĕ çеç. Абросим та тимлет паллах. Анчах кашни çыннăн хăйĕн кăмăлĕ-екки, йăли-йĕрки-çке; этемĕн путишле енĕ те куç тĕлне лекет тимлесе пăхсан. Василе ик çул каялла Урал çынни каласа пани аса килет. Тĕнче чемпионатне кайма йĕркеленĕ тапхăрта Абросима çĕр доллар хывмалла пулнă çакскерĕн. Кăнтăрта каннă хыççăн Мускава çитсен лешĕн килне шăнкăравлать ку. Театр умĕнче тĕл пулма калаçса татăлаçĕ. Кĕтет çын. Леш курăнмасть. Каллех шăнкăравлать, каллех çавнашкал килĕшӳ. Виççĕ-и, тăваттă-и çапла шантарать – çын çук та çук. Хваттерне каять вара йĕтре тĕртекен ăста. Килĕнче эрех ĕçсе лараççĕ

тет юлташĕпе. Шутламасть те сăмах татнине пурнăçлама. «Куртăн-и Абросим мĕнлине?» – теççĕ ак кайран Василе те лешне тахçанах лайăх пĕлекеннисем.

– Самолет çине ларас умĕн çӳресе пăхăп ĕнтĕ тепре, – сăмса çине картнине манаймасть Василь.

– Тепĕр тесен, эс сутăн ку виç, э, тăвата матрӳшкене. Ну, илĕн утмăл доллар. Унпа парăма татаймастăн вĕт-ха, – хисепе шутлать Валентин.

– Паллах çук.

– Абросим мана, чупнă чух, кашăк сутма сĕнет. Сутса пар-ха тет. Йывăç кашăк çур михĕ илсе килнĕ вăл. Эпĕ чĕнмесĕр кăнн! пăхрăм та – тек шарламарĕ. Кала эс ăна: сутайрăн-и хăвăн кашăкусене те.

## *«Хĕрлĕ пиçиххи»*

Чун уçă марри, йăмшакланни маларах та палăрчĕ мар-и Каврăçăн? Ĕç çине ĕç капланни, пурнăçласа çитерейменни канăçсăрлăха çухатрĕ мар-и? Ăмăртăва хатĕрленессине, хăй мĕн палăртса хунине, тĕпрен илсен, май килтерсех пычĕ-ха вăл: каç кӳлĕм çул инçĕшне виçме мехел çитерчĕ. Виçĕ хут, виçĕ шăмат кун виçшер сехет ытла е, урăхла виçепе каласан, çирĕм тăвата-çирĕм ултă çухрăм таран утрĕ – кирек епле çанталăкра та, çумăрлă чух çăмăл атăпа, шыв тӳрех витермен курткăпа, çиллĕ чух çие питĕ тум тăхăнса – сивĕпе аманса ӳкмен, вăй-хала вĕçне çитерсе çул çинчех тăрăнса анман; пынă май апат çисе, ăша хĕм ярса вăтăр-вăтăр икĕ çухрăм утассине çеç капаштараймарĕ. Юрĕ, вăтăрне ăмăртура утса тухĕ; пĕр çухрăм, ик çухрăм хушăсене те тапхăр-тапхăр хыттăн вирхĕнчĕ, эрнесерен пиллĕкшер кун вăя пиçĕхтерчĕ. Кăтартăвĕсене хулăм тетраде çырса пырать те Василь иртнĕ çулхи хисепе пăхать, танлаштарать; ăмăрту тĕлне калăпăша чакарать, çивĕчлĕхе ӳстерет. Ака уйăхĕн пуçламăшĕнчи Раççейĕн çуртри чемпионатĕнче, манежра, пилĕк çухрăмра хăй татăшĕсене кашнинех пĕрер çаврăм – ик çĕр метр – ытла хыçа хăварчĕ. Чӳк уйăхĕнче Çĕн Шупашкарта Хусан ачи Лерон, тин утмăл çулхисен ушкăнне куçнăскер, икĕ çухрăмра чупса тенĕ пек тарчĕ; тăван

ентех «сăмса шăлса» ячĕ-им чăваша? Халь ав тĕп хулара судьясен çивĕч куçĕ умĕче Каврăç ăна пилĕк çухрăмра икĕ минут майлă хăварчĕ; тепĕр иккĕшĕ ытларах та юлчĕç. Василь тĕлĕнет тата: пĕлтĕр икĕ хутчен – хĕллехи тата çуллахи чемпионатра, халĕ тепре пилĕк çухрăмри вăхăт шăп пĕр пек: çирĕм ултă минут та çирĕм тăватă çеккунт. Тĕлĕнмелле! Анчах хăвăртлăх пĕчĕк – виçĕм çулхи вăхăтсем çирĕм пилĕк минутран лайăхрахчĕ. Ирĕклĕ тепĕр çĕр-шыв ачи килнĕ пулсан Василь каллех иккĕмĕшне юлатчĕ-ши? Урине тӳрлетсе çитерейменнипе тарса каять пуль лешĕ. Иртнĕ çул Европа чемпионатĕнче шосепе вăтăр çухрăма утнă чух дистанцирен кăларнă ăна, тен, тĕрĕсех пуль. Хусан ачине те, Липецкри тантăша та çултан пăрнă. Çине тăнă пулсан укçа-тенкĕпе саплаштаракан тупаймĕччĕ-ши Каврăç? Çĕнтерме авă утмăл-утмăл тăватă  çулхисем хушшинче итальянец çĕнтернĕ унта. Пилĕк çул каялла Будапештра пилĕк тата çирĕм çухрăмсенче Василь хыçа хăварнă ача вăтăр çухрăма икĕ сехет те аллă ултă минутра вĕçленĕ. Ваçук пулнă пулсан-и? Ак мĕн шухăшлаттарать халь ăна. Укçа-тенкĕ çитменнипе континент тата тĕнче чемпионачĕсене тухаймасть Каврăç, çавăнпа унăн медалĕсене урăххисем илеççĕ мар-и? Раштавранпа тӳррĕн хатĕрленме тытăнчĕ вăл тĕнче чемпионатне, шоссе çинче вăй виçме: йĕлтĕрпе юр ашрĕ – вăрмана хĕрĕх хутчен çитрĕ. Темиçе çул каялла утмăл-çитмĕл кун тухатчĕ йĕлтĕрпе, утассипе ăмăртма хатĕрленнине пула старт умĕн ик эрне малтан пуçтарса хурать йĕлтĕре, утма пуçлать; хĕл пуçламăшĕнче те утас ăмăртăва пулах йĕлтĕр час сырмасть. Старта та тухрĕ юр çине, районти спорт ертӳçи республикăри ăмăртăва хĕллехи полиатлон енĕпе тупăшма илсе кайрĕ те, ку вара хăйĕн тантăшĕсем хушшинче виççĕмĕш пулчĕ, умрисенчен пăшалтан тĕл пересcипе тата турник çинче туртăнассипе çеç мар, йĕлтĕрпе чупассипе те юлчĕ: лешсем тăркăч меслечĕпе вирлĕн пыраççĕ – Каврăç ялан классика мелĕпе çӳрет те, пĕр-ик хăнăхупах çĕнĕ меслетпе çивĕч илтересси пулмасть унăн. Килте йĕрне те хăй хывать вăл, классикăсăр унта май та çук. Ку мелĕ тата шăпах утма пулăшаканни. Ăмăртăвĕнче пилĕк çухрăма çирĕм минут та тăватă çеккунтра чупса тухрĕ Василь. Умрисен вăхăчĕ пĕрин вун çичĕ, теприн вун тăхăр

минут. Тахçан, çамрăк чух, Кавраç çывăхне те пыраймастчĕç çавсем, халь ав такăр çул çинче кĕске йĕлтĕрпе, пластикăпа, шăлаççĕ çеç тăркăчпа кайнă пек. Районта тепре ăмăртрĕ Ваçук – çав инçĕше çав хăвăртлăхпах чупса тухрĕ.

Утассипе Раççей чемпиончĕ хыççăн вăрăм инçĕше ытларах çӳрерĕ те çу уйăхĕн пуçламăшĕнчи Саранскри ăмăрту умĕн каллех çула кĕскетрĕ, çивĕчлĕхшĕн кĕрешрĕ. Ăмăртăвĕнче, мемориалта, пилĕк çул умлă-хыçлах хăй ушкăнĕнче çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ – икĕ çухрăма тăхăр минут та аллă çеккунтра вĕçлерĕ, иртнĕ çулхинчен çичĕ, малтанхинчен ултă çеккунт хавшакрах çеç. Эппин, хăвăртлăх çухалман-ха, пур. Унтан çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче Санкт-Петербургра Балтикăн шурă каçĕсем ăмăртăвне çитрĕ. Кунта пит шăрăх пулчĕ, пилĕк çухрăма çирĕм ултă минут та хĕрĕх çеккунтра вĕçлерĕ, коэфициентпа шутланă хыççăн чи çамрăкки хыççăн кĕмĕл медаль çĕнсе илчĕ; хăй тантăшĕсене – Липецк ачине стадионрах пĕр çаврăм хăварчĕ, Мускав ачи Мышлов ытларах та юлчĕ, вăтăр минут майлах кунăн вăхăчĕ.

– У-у, тĕнче чемпионатне каятăн апла! Маттур! Тĕрĕс тăватăн – командăпа медаль илетпĕр, атту çын çитмест те – команда пулаймасть. Халь эпир тăваттăн танах апла, утмăлутмăл тăватă çулхисем, – хавхаланчĕ Липецк ачи Юра, çур уйăх каялла çеç утмăл тăваттă тултарнăскер. – Эсĕ самолетпа вĕçетĕн апла? Эпир ав йӳнĕрех хакпа каятпăр – Мускавран тӳрех автобуспа, Блокнотов йĕркелекен ушкăнпа.

Асăннă çыннине Ваçук курман-ха, палламасть, ветерансен пĕрлешĕвĕ кăларнă хаçатра кайран кăсăкланса вулĕха чăваш: Пĕрлешӳллĕ Штатсен чемпионатĕнче пĕлтĕр тĕнче чемпиончĕ умĕн стадионра стайер дистанцийĕнче виççĕмĕш вырăн йышăнайнăскер иккен.

– Иртнĕ çул çĕнтерни италянец хураскерччĕ-и? – ыйтать Василь тантăшĕнчен.

– Пурте хура сăнлă вĕсем.

– Çӳçĕ пит хулăмччĕ. Çав ачах-и? Марио ятлă.

– Çавă.

– Семăна миçемĕш çухрăмра çулран пăрнă?

– Çур çул тĕлнелле. Мана та, Лерона та кăларчĕç. Ну, сиккелесе илни пулчĕ ĕнтĕ.

– Лерон тин утмăла куçрĕ – вăл çамрăкки, çавăнпа унăн утмаллах. Çитес çул иксĕмĕр те утмăл пиллĕкре пулатпăр, çав ушкăнра – çамрăккисем.

– Команда пулать пирĕн, командăпа медаль илетпĕр. Европа шайĕнче илнĕ эпĕ пăхăр, – шав хавхаланать Юра. Липецк ачи çӳллĕскр, сарăскер, умалла тайăнса ӳпĕнерех утаканскер, спорт мелĕ илемлĕн пулсах та каймать хăйĕн.

– Минска хатĕрлен – çĕр çухрăма, – сĕнет вăл Ваçука.

– Утах эс. Эп ун пекех тăнтан каям мар. Ак ку ман ывăлпа кин, мăнуксем, – кăтартать Василь трибуна çинче юнашар ларакансене. – Выборгра пурăнаçĕ. Ывăл та, кин те çар çыннисем. Машинăпа килтĕмĕр Финлянди хĕрринчи хуларан. Çул тăршшĕпех шалкăм çумăр чашлаттарчĕ.

Киле таврăнсан вăрăм инçĕше килтерме пуçĕнчĕ те унтан, ăмăрту умĕн, каллех инçĕше чакарса пычĕ Василь; хăй палăртнинчен çул çинчех апат çисе – чей е кофе ĕçсе – вăтăр икĕ çухрăм çеç утаймарĕ, çирĕм ултă çухрăма çитернипе çырлахрĕ, апат çителĕклĕ илсе тухманскер хырăм выçнине туйсан килнелле таплаттарчĕ...

Тен, лайăхрах та хатĕрленме пулатчĕ пуль те, ку вăхăтра Каврăç тепĕр çĕре пуç чикрĕ çав.

Ака уйăхĕн вăтинче, янкăр уяр кун Каврăçа районăн шурă çуртне чĕннĕ. Администраци пуçлăхĕн çумĕ-мĕн. Унпала, вăтам çулсенчи хавас сăн-питлĕ хĕрарăмпа, калаçкаланă-ха, иртнĕ çул чăваш наци конгресне те Каврăçа вăл сĕннипе çул хучĕ панăччĕ. Ĕç тăвакан шурă çурта Василь ăмăртăва каяс ыйтупа тăтăш çӳрет, хуçи патне кĕрсен калаçать кирлĕрен. Ыттисен алăкне питех уçса хупман.

Пӳлĕмре çын пур тесе тăхтарах тăчĕ Каврăç.

– Кĕрĕр, кĕрĕр, Василь Васильч, – чĕнчĕ пӳлĕм хуçи, йăлкăш сăн-питлĕ хĕрарăм. – Иртĕр, шăпах пĕр ыйтупа кунта эпир.

Иккен, Раççей призиденчĕн суйлавĕ умĕн районта реформăсене малалла тăсаканĕн кандидатурине хӳтĕлекен штаб туса хумалла-мĕн. «Ăхă, шатаб тенĕччĕ хăй сăмахĕнче Президент телевизор экранĕнче. Вырăна çитет хайхи»,– çиçĕмле вĕçсе иртет шухăш Василĕн.

– Ак арендатор, – хушаматне асăнать ĕçе ертсе пыракан хĕрарăм. Ку çамрăк арçыннăн ятне илтĕ-ха Василь. Район

хаçатĕнче те вуланăччĕ ун çинчен, анчах хăйне, кӳршĕ ял ачине, курман, астуса юлман. Шкулта вĕрентнĕ-ши, тепĕр класĕнче пулнă-ши?

– Штаб тăватăр, пӳлĕм палăртатăр, штаб тесе çырса хуратăр, – мĕн-мĕн тумаллине калать явапллă çын. – Ку ĕçе теприн тумалла та, ман çине йăвантарчĕç. Хама ĕçсĕр хăвараççĕ те, уншăн хĕрĕнмелле-и тесе чăхăмларĕ леш, – каласа хурать хĕрарăм. Тепри те çакăн çулсенчиех. Ку экономика пĕлĕвĕ илнĕскер пулсан, лешĕ партин аслă шкулне пĕтернĕ, коммунистсен районти пĕрлешĕвĕн иккĕмĕш секретарĕ. Пĕтĕм суйлав ĕçне çавăн çине тиенĕ, уншăн явапли, кандидатурăсен штабĕсем пирки шухăшалас тесен те пуç тавра çавăрма ерçеймĕ.

– Вăт, сире Ельцин кандидатурин районти штабĕн пуçлăхĕ пулма сĕнетпĕр. Сире палăртнă – урăххи çук.

Çунакан вута пуçа чикесси юнра пуль Каврăçăн. Пĕр-пĕр калаçура, пурнăç «таканинчи» хирĕç тăрура малтанлăха вăл чĕнмест, хăй майли çĕнтерессине курать те – шарламасть, хĕрӳ самантра вара чăтса тăраймасть. Юлашки çулсенче, ав, патшалăх тытăмĕ енĕпе миçе суйлав та референдум пулса иртрĕ – демократи тытăмĕн хăрушлăхĕ тухсан Каврăç сас панă: референдум умĕн вырăнти радиопа тухса калаçрĕ – ним çырмасăр, ертсе пыраканĕ ыйтнă май чĕлхе килтерсе. Кун хыççăн ăна тӳрех «ельцинец» тесе сăмах тĕке пуçларĕç – пĕрле ĕçлекенсемех, туссемех.

Политика ыйтăвĕпе пĕр хушă статья тавраш памарĕ, иртнĕ кĕр вара чăвашра президент тытăмĕ кирлĕ-и, кирлĕ мар-и тенĕ ыйту тухсан сасăлав умĕн хăй сăмахне каласах терĕ. Чухлать вăл: кам та пулсан ун майли пур, ăна итлеççĕ, ĕненеççĕ – шкулта хăй вĕрентнисем, ун статйи-калавĕсене вулакансем, спортри туссем; пĕлет: çав йышрах, туссемех, пурнăç пирки шухăшланă чух ăна ярт хирĕç. Тĕрĕс те турĕ тесе шутлать халь Каврăç район тата республика хаçачĕсенче хăй сăмахне каласа: тен, шăпах ăна итлесе икĕ пин çын ытларах сас пулчĕ президент тытăмне хăварас тенипе.

Татăклă утăм маларах та тунă Каврăç. Тăхăр вун пĕрмĕш çулхине çурла уйăхĕнчи пăлхав чухне – Сăпас кунĕ, тунтире, пуçланчĕ вăл. Хăйне ниçта чикеймесĕр çӳрерĕ, лара-тăра пĕлмерĕ Каврăç. Шкула кайрĕ, ГКЧПпа килĕш-

месĕр партирен тухма хут çырса парасшăнччĕ вăл хăйсен пуçламăш организацине, анчах секретарь, хĕрарăм, курăнмарĕ – канурах иккен. Виççĕмĕш кунхине, ирпе мăйăра каймa пуçтарăннăскер, кил хушшинчен пӳрте кĕрсен арăмĕ ăна учитель коммунистсен парти комитетне пухăнмалла тесе шăнкăравланине хыпарларĕ. Рюкзакне-хутаçне тытнăскер, алăри япалине пăрахса сĕтел хушшине вырнаçрĕ Каврăç; çырчĕ, машинкăпа пичетлерĕ, унтан парти билетне те илсе (çак уйăхшăн та взнос тӳленĕ вăл, ал пустарманччĕ çеç) парти комитечĕн çуртне – хайхи шур çуртах уттарчĕ. Йыш пухăнасса чылай кĕтрĕç. Хĕлле зал лăк тулличчĕ, коммунист вĕрентекенсем ачасен кăрлачри каникулĕ вăхăтĕнче пĕри юлмасăр пухăннăччĕ. «Окопа эпир хăварсан ăна тăшман йышăнать, çавнашкалах хамăрăн идеологие вĕçертсен ăна хирĕçли йышăнать, халăх пуçне йăва çавăрать», – тет фронтра пулнă арçын учитель, кӳршĕ шкултискер. Райкомăн тата обкомăн чылай йышăнăвĕпе хăй килĕшменни çинчен каларĕ Василь Васильевич, çавăнпа ку е вăл ыйту пирки пĕтĕм коммунистсем çапла шутлаççĕ темелле мар терĕ, вăтăр виçĕ çул парти ретĕнче тăраканскер. Çĕн йĕркелӳ тапхăрĕнче пулин те пĕчченех залри йышра хирĕçле шухăш – демократи енне туртăнмалли çинчен пулчĕ Каврăç сăмахĕ. Çак ларури чухнехиллех коммунист учительсем зал тулли пулаççĕ пуль тенĕччĕ вăл çурлара, анчах аппаратĕнче ĕçлекенĕсемпе пĕрле илсен те – пурĕ çирĕм пĕррен çеç килсе ларнă.

– Обком представителĕ çитеймерĕ, чирлерĕм тесе шăнкăравларĕ, пуçлатпăр пуль, – ларăва уçрĕ пĕрремĕш секретарь, çӳллĕрех те хытанка пӳллĕ, сухал ӳстернĕ вăтăр пиллĕксенчи арçын. Унтан вăл кĕскен коммунизм идейи чи тĕрĕсси, ăна хавшатмалла марри çинчен пуплерĕ те, алă çĕклесе трибуна умне Каврăç тухрĕ. Калас тенине каларĕ вăл, ГКЧПна йышăнманнине палăртрĕ, вара партирен тухма ыйтса çырнине парти билечĕпе пĕрле сĕтел çине хурса хăварчĕ. Иккĕмĕш секретарĕ, арçын, хĕрлĕ хуплашкаллă, Ленин сăнлĕ пĕчĕк кĕнекене уçкаласа пăхать, ыйту хутне пуçламăш организаци секретарьне вырăнта пăхса тухма парать.

Çав каçхинех Раççей Президенчĕн указĕпе коммунистсен организацин ĕçне-хĕлне, тытăмне чарса лартрĕç. «Би-

летна шел мар-и?» – теççĕ халь Василь Васильевича пĕрле ĕçлекенĕсем. Кĕрӳшĕ те ăна: «Ют çĕр-шыва ăмăртăва кайсан сутаттăн долларпа», – тесе хучĕ.

– Çуралнă ирĕклĕхе пăвса ан хуччăр, – татса калать Василь Васильевич.

Тĕлĕнмелле тата, Каврăçăн парти билетне илсе юлнă çын вĕсен шкулĕн директорĕ пулса тăчĕ – Каврăç ăна пăхăнаканниех. Парти çыннисемех, коммунизм идеологине çухатманнисемех – пуçра, ертӳçĕре.

Çапла, пĕр-пĕр хĕрӳ тапхăрта татăклă, хăюллă, пуçа вута чикмелле утăм тăвасси юнрах Каврăçăн.

Пĕр тесен тата вăл хушнă ĕçрен нихăçан та пăрăнман, тумастăп тесе кутăнлашман, халĕ ав Зюганов е Жириновский партийĕсем влаçа пĕтĕмпех хăйсен аллине илес хăрушлăх пур чух Василь Васильевич хăйне мĕн сĕннине хирĕç килĕшмесĕр кутăнлашса тăмарĕ. Ĕçĕ лăпкă çеç, ытлашши чăрмавсăр пулса пырĕ тесе шутларĕ вăл. Чăннипе, пуçланчĕ вара кĕтмен-туман лару-тăру, авăрта пĕтĕрĕнесси-çавăрăнасси.

– Василь Васильч, эсир пире: «Пионер, хатĕр пул!» – тесе вĕрентеттĕр. «Яланах хатĕр!» – теттĕмĕр, – акă сĕтел хушшинче ларакан хĕрарăмăн сăн-пичĕ йăлкăшать, пионерла салют парать. – Халь пач урăхла калаçатăр.

Ку хĕр вăтам шкул пĕтерни вун пилĕк çул иккен-ха. Йăрăс пӳллĕскер аслă класра хăш парта хушшинче ларнине, сочиненисене аван çырнине, илемлĕ хайлавсенчи ĕç-пулăма епле каланине те куç умне кăларать вĕрентекенĕ.

Ял администрацин пуçлăхĕн пӳлĕмĕнчи секретарь пуканĕ çинче тепри-ха, чипер тумлăскер; Васил Васильч вĕрентнĕ хĕртен аслăрахскер-ха, ку хăюллăнрах, йĕплерех, çивĕчрех шăлать сăмаха.

– Хапха юпи тутармалла ман халь, кирпĕч илсе килмелле – укçа ăçтан çитермелле? Коммунистсем чух халăх пĕчĕк ĕç укçипех темĕн те тунă: çие те тăхăннă, çиме те çитнĕ. Халь ачасене шкула яма кроссовка илсе памалла – мĕн хак? Тăхăнтартаймастăп, тумлантараймастăп, конфет-премĕк илсе параймастăп.

Иртнĕ тапхăрсенче ял-йышра чылайăшĕ конфет-премĕк мĕн тĕслине те сахал пĕлнине, çие те лăппăн-лаппăн тăхăнса

янине куçпах курса тăрать-ха Василь Васильевич – ачасем шкула хавшак тумпа пыратчĕç. Анчах Кавrăç халь çавсене асăнмасть-ха, рынок тытăмĕнче ĕç тӳрех кал-кал кайманнине, тĕнче япала туса кăларас, сутас-илес меллпе аталаннине ăнлантарма пикенет. Темĕн чул каласан та итлес темен çын чуне тӳрех витерейместĕн.

– Ыран ак салара – пасар. Унта кайма пуçтарăнатпăр. Курас килмест – мĕн тума кирлĕччĕ вăл?

– Çапах каятăр вĕт-ха.

– Кайăн!

Хĕрарăм çатăртатрĕ-çатăртатрĕ те тепĕр ватă кинеми чĕннипе тул енчи пӳлĕме тухрĕ. Кавrăç çакна туйрĕ: хăй вĕрентнĕ хĕр, халь хӳхĕм арăм-ха ĕнтĕ, аслăрах ĕçтешне итлесе (ара, лешĕ тĕрĕссинех калать-çке–ха!) ун енне пуçĕпех çавăрăнса ӳкнĕ, реформăна, демократие, рынока хирĕçле аллипе сулкалашсах пуплет. Алăк енчи кĕтесре ватă учитель, вăрçă ветеранĕ ларать. Унпа алă тытса сăмахласа илнĕччĕ-ха Василь, анчах лешĕн шухăшне – коммунистсен партине чунтан парăннине пĕлнипе, унăн шухăшне улăштарма çуккине чухланипе уйрăммăн ытлашши калаçса тăмарĕ. Халĕ ав çавă кусем пупленине сăнарĕ-сăнарĕ те чĕнмесĕр чăтаймарĕ:

– Василь Васильевич, эпĕ сирĕн статйăрсене пĕтĕмпех тимлĕн вуласа пыратăп. Сирĕнпе килĕшместĕп. Кам вĕрентнĕ пире, кам образовани пачĕ? – пӳлчĕ ыйтупа.

– Эпир кашниех заложниксем – парăма кĕрсе ӳкнисем ĕнтĕ. Хутла вĕренни куçа хура кара илнинчен уçăлма та пулăшать. Тĕрĕс, вĕрентнĕ пире. Ирĕклĕреххĕн шухăшлакансем тупăннă – тĕнче епле аталанупа пынине курнă.

– Пĕтĕмпех Горбачевпа Ельцин пĕтерчĕç. Вĕсем те коммунистсем пулнă. Сутăнчăксем. Эсĕ те коммунизм идейине пропагандăланă.

– Пурнăç аталанса пырать, тавралăха курса, ăнланса пымалла.

– Чечня? Çавă пирĕн çар ниме тăманнине кăтартса пачĕ вĕт. Америка çарĕ халь Раççей çĕрĕ урлă ик эрне хушшинче каçса каять ним мар.

Фронтовикпа мĕн калаçăн, епле хирĕçлĕн ăна, вăл тĕрĕс мар шухăшланине тӳрремĕн каласа чуне ыраттармалла-им?

Политрук пулнă-ха вăл вăрçăра. Камăн мĕнле шăпа. Çарта харпăр хăй ăçта пулассине ыйтса илейместĕн. Ăçта лартнă, мĕн хушнă – çавна пурнăçланă. Ку çынни парти вĕрентĕвĕн системинче мĕн ĕмĕр тăршшĕпех кружок ертсе пынă учительте ĕçленĕ чух, пуçламăш организацие те ертсе пынă шкулта çеç мар, колхозра та. Каврăç та районта парти пропагандисчĕ пулнă.

Ăна хирĕçлени кӳрентерни çеç, вăл улшăнмĕ. Эсĕ шухăшлакан çын, çамрăк çын.

– Хальхи йывăрлăхсем куçăм тапхăрĕнче килсе тухрĕç. Çитмĕл çул тĕрĕс мар утнă эпир, çавна тӳрлетме çăмăл мар, – калать, ăнлантарать вун пилĕк çул каялла вăтам шкул пĕтернĕ хĕрарăма Василь Васильевич. Фронтовикăн хăлхи çивĕчех мар, çавăнпа лешĕ илтес çукла уйрăммăн калаçать пӳлĕмре хăй шкулта вĕрентнĕ хĕрарăмпа Каврăç.

Саларан тухнă чух çывăхри ку яла кĕмстпĕр тенĕччĕ вĕсем штабри тепĕр çынпа, Николай Николаевичпа, анчах шăпах ял администрацин пуçлăхĕ машинăпа вĕсен тĕлне хирĕç тухрĕ те, юлташ машинăна чартарчĕ. Ял пуçлăхĕпе калаçса илсе хăйсен тĕллевне пĕлтерчĕç кусем. Çамрăк çын Василь Васильча пĕлет иккен, пенсие тухнă учитель астумасть, ахăртнех параллеллĕ класра вĕреннĕ пулас. Василь Васильевич хăй епле штабрине каласан: «Ăм-м, эп хамуншăн мар. Ман агитаци тума юрамасть, анчах Ельциншăн мар», – терĕ. Суйлава пăхса-асăрхаса тăракан çын кирлĕ, çавсене палăртасшăн çӳретпĕр тесен: «Администраци пӳлĕмĕнчех унта», – физкультура учителĕ пуррине асăнчĕ. Лешĕ, чăнах та, пушă пӳлĕмре вĕренӳре тĕрĕслев ирттерме билет ыйтăвĕсене машинкăпа çапса ларать. Кăшт калаçсанах, ахаль пулмасть, тӳлеççĕ тесен килĕшрĕ ку учитель суйлав вăхăтĕнче участокра йĕркене пăсассинчен сăнаса ларма. Ун хыççăн вара ĕç пӳлĕмĕнче самаях калаçма лекрĕ ăнлантарас тĕллевпе, вăхăт та çурхи шывла хăвăрт юхса пычĕ. Пуçăннă ĕçре пĕремĕш тытăçу пулчĕ ку.

Тĕп çул вунă çухрăмран тепĕр пысăк яла илсе çитерчĕ. Кунти çынсене Николай Николайч та, Василь Васильч та лайăххăн пĕлмеççĕ. Ял администраци пӳлĕмĕнче Каврăçăн каллех шкулта хăй вĕрентнисем пур иккен – çамрăк хĕрарăм

тата салтак кайма вăхăт çитнĕ йĕкĕт, сала енчисемех; кунти кантурта ĕçлеççĕ пулас.

– Пирĕн патри суйлав комиссийĕ питĕ çирĕп, саккуна пăсмаççĕ. Ай-ай! калаттарса тăрăн-ха çавăншăн паллă ту тесе. Яхăнне те ямаççĕ унашкаллине, – шăкăлтатать хавас кулăллă хĕрарăм, шкул парти хушшинчен пилĕк çул каялла тухнăскер. Сăнне, хушаматне астăвать, ятне пăтраштарать Василь Васильевич.

Шкул кил хушшине ура пуссассăн çуртран шăпах директорĕ хирĕç тухрĕ. Вăтам çулсенчи арçын тараватлăн сывлăх сунса йышăнчĕ саларан çитнисене: пĕр-пĕрне курнăскерсем вĕсем, пĕлмеççĕ мар.

– Тепĕр çирĕм минутран пысăк тăхтав пулать. Вĕрентекенсене пухăпăр, калаçăр, – сĕнчĕ, унтан ĕçе йĕркелерĕ арçын.

Тӳррипе илсен, кунти калаçу ăнăçлăраххи, тухăçлăраххи, çынна çын ăнланма тăрăшни малтанхи тата юлашки пулчĕ пулас Каврăçсен. Пӳлĕмре пурне валли ларма пуканĕ те тивĕçмест; ура çинчех вĕрентекенсем, ытларах хĕрарăмсем; тепĕр урока кайма класс журналне кăкăр умне ик алăпа тытнă тăраççĕ вĕсем. Шăппăн, шăна вĕçни илтĕнмелле тăнларĕç пĕр авăк Каврăçа пухăннисем. Унтан пĕри, тепри лăпкă та ĕçлĕ саспа ыйта пуçларĕ, хуравне те пăлханса е хĕрӳлленсе каймасăр тăнларĕç. «Эпĕ Зюгановшăн сасăламастăп, анчах Ельцина та палăртмастăп, – тет Василь Васильчпа юнашар тăраканĕ, пенси çулнелле çывхаракан тулли пӳллĕ хĕрарăм вĕрентекен. – Эпĕ те коммунист пулнă, эсир те вăл ретре тăнине пытармастăр ав. Сирĕн шутпа мĕншĕн коммунистсемех пăрăнтăмăр, тухрăмăр çав ретрен? – ыйтать, унтан хăех хушса хурать: – Ман шутпа, Зюганов çĕнтерейместь. Ан çĕнтертĕр. Мĕншĕн панкрута тухса пыракан парти вăл?».

– Кашниех хăй тĕрлĕ шухăшлĕ. Çапла пулмалла та. Эп хам тĕллĕн ăнкаратăп. Анчах ку вăл, этемĕ, ун шухăшĕ, çĕр çинче пач ним çук çĕртен шăтса тухни мар. Хăшĕ мĕн вуланинчен, пĕлнинчен, курнинчен, тишкернинчен килет. Компарти хăйĕн йăнăшĕсене, халăх умĕнче айăпа кĕнине (ӳсĕмсем пулнă, ăна пытармăпăр) йышăнмарĕ, сивлемерĕ. Эппин, вăл çав йĕркепех пырать – репресси йĕрĕпе, çын çăварне хупланипе, çăварлăхланипе; тăшмансене палăртса ăна тап-

танипе. Çав эпир çитмĕл çул тӳснĕ система репрессисĕр тытăнса тăрайман, тытăнса тăраймасть. Репресси пĕтрĕ те – çĕр-шыв арканчĕ. Тин сирнĕ тамăк хуранне таврăнăпăр-и? Халь вăтăрмĕш çулсем мар, унчченхинчен виç хут, тăват хут пысăкрах, анлăрах хăватпа тытăнать çав репресси тепре коммунистсем влаçа илес пулсан, мĕншĕн тесен халĕ вĕреннĕ, ирĕклĕн шухăшлакан пысăк тавра курăмлă çын нумайрах, çавна путарма халăх тĕттĕм пулнă чухнехинчен пысăкрах хăват кирлĕ. Ку пĕр вариант. Тепĕр вариант – граждан вăрçи пулас хăрушлăх, мĕншĕ тесен репресси хĕсметĕнче пурăнас мар текен вăй компарти влаçне хирĕç тапса тухма пултарать.

«Турă ан хуштăр» ятлă хаçат çинчен ыйтаççĕ, ăна килĕштермеççĕ.

– Эпĕ те уйрăм çын çинчен карикатурăсем çырнине, ӳкернине, куçран кулнине – тăрăхланине кирек хăш майлă пулсан та килĕштерместĕп, ырламастăп, – пулчĕ Каврăç хуравĕ. – Шăпах компарти усă курнă çав мслетпе, çынна хупса лартса çеç мар, йĕкĕлтесе-йĕплесе, тăрăхласа-кулса тĕп тунă. Çул пуçсен сăмахĕсенче яртах курăнать вăл, карикатура чĕлхи, килĕштермен çынна тем те пĕр каласа пĕтерни. Вăл тапхăртан иртнĕ ĕнтĕ эпĕр. Лăпкăн ăнлантарса памалла вăл-ку еплине. Çакă ĕнтĕ демократсен кăмăл-сипечĕ. Ак литература хăваратăп, брошюра, тепĕр брошюра. Çынна çини, юри усал сас-хура сарни – элек – çук унта – публистистика, законсем, документсем, депутатсен пухăвĕсенче йышăннисем, паллă политиксем каланисем. Тăрăхласси мар, ăнлантару тĕп вырăнта демократсен. Хирĕç калакана демократ тăшман шутламасть.

Шăнкăрав пулчĕ те, урок пуррисем классене саланчĕç. Пӳлĕме юлнисемпе Каврăç малалла пуплет, унăн участоксенче пăхса тăма çын тупса çитермелле.

– Уй, эпĕ участок комиссийĕнче пулса куртăм. Какуй унта! Ак çакна паллă ту, çакăнта çекĕл ларт тесе кăтартса тăраççĕ коммунистсем, – пытармасть çамрăк хĕрарăм. Эпĕ тухса кайрăм вара – куçăм ан куртăр терĕм.

– Ял администрацийĕнче урăхла ĕнентерчĕç-çке.

– Унта пурте коммунистсем майлă. Вĕсем çӳле илнĕ пирĕн, вĕсемех картласа тăраççĕ çула.

Кунти виç участокран иккĕшне Ельцин енчен пăхса тăракансем пулма директорпа краевед килĕшрĕç пулсан, пĕрин валли çын тупман-ха. Çав ялта пурăнакан учительница ав хăйĕнчен сирсе ярать тимлесех.

Çăмăл машина хир урлă çулпа ыткăнать, айăкра самаях ихсе кайнă люцерна уйĕ, тикĕс шăтса тухнă, шит тăршшĕ ӳснĕ çурхи калча куçа савса ешерет; асфальт сарнă вырăнтан пăрăнса кĕрсен шуранка тĕслĕ «Атăл» çăмăл машина путăккĕсĕксенче пăркалана-пăркалана, пĕр чăмса, пĕр çĕкленсе тенешкел, чакак вĕçнĕ чухнехилле е васкавлăн, е хуллен пырать. Николай Николаевичпа Василь Васильевич пĕр-пĕринпе сăмах хушкаласа илеççĕ, халăх демократие ăнланса илĕ-ха теççĕ. Шофер, вăтăр пилĕк çулсенчи платна пӳ-сийлĕ арçын, чĕнмест, иккĕшĕ калаçнине итлет çеç, пĕр çĕрте – шурлăхларах вырăнта – тӳррĕн каçса кайма пулать-и тесе машинăна тăратса çула тухса пăхрĕ. Николай Николаевич та ирĕке тухса люцернăна пĕр тăсăм татса илет, метра яхăн ӳснĕ ав тесе шитпа виçет. Умри ялта колхозĕ икке пайланса тахçанхилле çĕнĕрен уйрăмшар йыш çавăриччен ертӳçи шăпах Николай Николаевич пулнă; уйрăлсассăн та кӳршĕсем хутшăннă, пĕр-пĕрин хуçалăхне пырса çӳренĕ. Василь Васильевич ку тăрăха килсе лекменни вăтăр пилĕк çулах. Парти райкомĕнче ĕçленĕ вăхăтра парти ĕçĕпе те, суйлавсен тапхăрĕнче те çитнĕ, икĕ çул хушшиех политвĕренӳ кружокне ертсе пынă. Пĕррехинче планланă экономика çинчен, социализм системин тĕрекĕ çавă пулни çинчен ялти коммунистсене хулăм журналти материалпа усă курса тĕплĕн ăнлантарса панăччĕ; итлекенсем йышлăн пухăннăччĕ. Халĕ те куç умĕнчех çав вĕрентӳ.

Машинăпа трактор паркĕнче çын самаях йышлăн пухăннă: кăнтăр апачĕ тĕлли иккен шăпах. Николай Николаевичпа кашниех пĕлĕш-хурăнташ пек сывлăх сунса клаçать. Столовăйĕнче мĕн пĕçереççĕ, мĕн çитереççĕ – унпа та кăсăкланать кунта темиçе çул каялла хуçалăх ертӳçи пулнăскер. Василь Васильча пĕлекен те пур: хăй вĕрентĕ икĕ çамрăк механизатор тата тахçан-тахçаннах бригадир пулнăскер. Участокра демократсенчен пăхса тăраканĕ пулма килĕшекенĕ Николай Николаевичпа хăйех сăмах пуçарчĕ. Каврăçа та пĕлет иккен çынни, шкулта вĕреннĕ чухне районти спорт ăмăртăвĕсене

пырсассăн курнах ӗнтӗ. Çакăнсăр пуçне ыттисем Каврăç хăйне демократсен суйлав умӗнхи штабне ертсе пыраканӗ тесе пӗлтерсен кашниех сивлек сăнпа пăхса илчӗ. Итлеме те мăртăхнăн итлерӗç. Тахçан бригадир пулнăскер пуçне Василь Васильевич кунта килсе çӳренине пӗлекен те çук, ун чухнехи ватă коммунистсенчен пӗри, районта комсомолăн пирвайхи ертӳçи пулни, çӗре кӗнӗ. Василь Васильевич кружокра планланă хуçалăх çинчен ăнлантарнă хыççăн – пӗр предприяти плана пурнăçламасан тепри, чӗр тавар илсе тăраканни, сăмахран, мӗн палăртнине пурнăçлаймасть тесе тӗслӗхсемпе ăнлантарсан «вăт, çапла вăл планлă хуçалăх» тесе çирӗплетнӗччӗ секретарь. Халӗ çав çын, фронтра артиллерист пулнă капитан, аманнăскер, Шупашкарта пурăнать, Василь Васильевич хăйсен район ентешлӗхӗнче çур енне çеç курнăччӗ ăна. Халь çавна аса илсе калаçрӗ. « А, вăл тахçанах Шупашкарта, арăмӗпе», – çирӗплетрӗç кунтисем. Арăмӗ учительница-ха. «Пире ку демократи кирлӗ мар», – терӗç уйрăласпа.

Çăмăл мар-ха лару-тăру, çавна май кӗтнӗ хăнасем тееймӗн Николай Николайчпа Василь Васильча кунта.

Ялтан тухма тӳр çул пур иккен, унта пит тарăн çырмаччӗçке, ăна картланă ав, сӗвеклентернӗ шăпах Николай Николаевич ертӳçӗ чухне, колхозӗ икке уйрăличчен, тамба тутарса хăпартнă, чул киле-киле тăктарнă; кайран çулне асфальт çине тухмалла вак чулпа сарса тикӗсленӗ ял хăй тӗллӗн. Çирӗммӗш çулсен вӗçӗнче пăрахăçланă, аркатнă, çӗр улми упрамалли склад туса хунă чиркӗве çӗнӗ хум майӗпе хута янă, кӗлле кӗреççӗ; хальхи çамрăксене, мехпаркри йыша вăл та ним те мар. «Юлашки виç çул хушшинче пӗртен-пӗр «ДОН» комбайн илнӗ çеç, пӗтӗм агрегат кивелсе-арканса пӗтрӗ, çур акине те вӗçлесе пӗтермен çаплах», – ак вӗсен çăвартан тухнă сăмахӗ.

Машинăпа пынă май Василь Васильевичпа Николай Николаевич пурнăçӗ, чăнах та, начар-ха ӗнтӗ, анчах каялла каяс марччӗ, малаллах, тавар хуçалăхӗ енеллех утмалла тенине халăха епле ăнлантарса илтермелле-ши тесе калаçкаласа илеççӗ; шоферӗ чӗнмесӗр куларах тăнлать.

Тепӗр ялта шкул кил хушшине кӗреспе физкультура учительне, çамрăк арçынна, асăрхарӗ Василь Васильевич.

Лешӗ шкулта нумай ҫул ӗҫлесе, физкультура вӗрентсе пурӑннӑ, пенсие тухичченех шыҫӑпа чирлесе ҫултатӑк каялла ҫӗре кӗнӗ учителе асӑнса кунта район шайӗнчи ӑмӑрту ирттерме палӑртать те пит канӑҫсӑр иккен. Планӗпе-йӗркипе паллашнӑччӗ-ха Каврӑҫ, шкул ачисене явӑҫтарса асӑну ирттерме шутланине ырланӑччӗ. Ҫавӑнпа кусем иккӗшӗ часах сӑмах ҫыхрӗҫ. Ӗҫӗ-хӗлӗ ҫара ҫатма ҫинчилле пуласран тӑккалама кӑштах укҫа-тенкӗ енчен пулӑшу кирлӗ, халӑха вӗрентес ӗҫ управленийӗ пӗр пус та уйӑраймасть, коммерциллӗ «Олимп» магазин ертӳҫипе калаҫсан мӗнле-ши тесе сӑмахлаҫҫӗ иккӗшӗ. Каврӑҫ ку ӑмӑртура хӑй пулаймасть-ха, районти тӗп шкултан килеҫҫех. Спорт шкулӗнче хӑй хатӗрленӗ ачасем те вӑй виҫӗҫ тет Василь Васильч. Демократсен енчен суйлав участокӗнче пӑхса тӑраканни пулма тӳрех килӗшрӗ ҫамрӑк ҫын. Тепӗр хӗрарӑм вӗрентекен тухрӗ, юнашар участокра сӑнавҫӑ пулма сӗнсен ку каллех: «Иртнӗ раштавра пултӑм эпӗ ҫав комиссире, урӑх мана ан суйлӑр терӗм. Хӑйсем кам майлӑ, ҫавна суйлаттараҫҫӗ – карчӑксене, пӗлменнисене, пӳрнепе тӗллесе паллӑ тутараҫҫӗ коммунистсем», – терӗ те нимле те ҫавна хирӗҫ кӗрешес йышра пулма килӗшмерӗ: «Куҫран ӳкмелле-и? Мана кайран ҫисе яраҫҫӗ».

Ак уй енчен пӗр платна арҫын, хӗрӗх урлӑ каҫнӑскерши, килсе ҫитрӗ, Николай Николаевичпа ал тытса калаҫах пуҫларӗ. «Администраци ҫуртне кӗртмеҫҫӗ апла. Хам ав масар тавра карта тыттарма кӗрӗштерме кайрӑм, секретарь салара паян, – пуплерӗ вӑл. – Ҫимӗкчен масар картине этем шутлӗ тыттарас терӗмӗр. Унта вӑхӑт ирттертӗм кӑштах».

Ял администраци пуҫлӑхӗ пулчӗ ӗнтӗ ку. Йывӑҫ ҫурта уҫса кӗрсен ум енне, сӗтел хушшине, пукан ҫине ларчӗ вӑл. Николай Николаевич ӑна суйлав комиссийӗ валли тепӗр ҫын кирлӗ, тупса парӑр тет те, «комиссии пур пирӗн, тӗрӗслесе те кайрӗҫ – йӗркеллӗ», – хуравлать ял хуҫи. Килнӗ ҫын кашни кандидат енчен сӑнаса тӑраканни пулмаллине асӑнать, кусем хӑйсем – демократсемшӗн.

– Акӑ, – кӑтартать ял хуҫи пӗрле кӗнӗ физкультура учительне.

– Ӑна палӑртрӑмӑр-ха эпӗр. Килӗшрӗ.

– Вăт, вăл хăй учительне асăнса ăмăрту ирттересшĕн. Пулăшма укçа ыйтать, пулăшаймастăп: термен çук. Ĕлĕк демократсем влаçа киличчен, ял Канашне сметăпа укçа уйăрса панă, кашни статйине мĕн чухлĕ ямаллине палăртнă, пĕр статьяран тепĕрне яраймастăн. Йĕрке пулнă. Халь çак çурта кăштах юсамалла пулчĕ те – укçа пĕтсе те ларчĕ пирĕн. Учительсене вут-шанкă кӳрсе памалла – машина валли те, бензин валли те укçа çук. Клубра хĕлле шыв çаврăнманнипе ăшăтмалли пăрăх шăнса çурăлчĕ – сивĕ клубра пухусем ирттерме лекрĕ.

– Ача сачĕн çурчĕ пĕтрĕ вĕт, – урапине юртать Николай Николаевич. Яла кĕнĕ чухнех ик хутлă, самаях вăрăм чул çурта, кантăкĕсемсĕр ишĕлчĕкскерне, асăрханăччĕ килекенсем. Ача сачĕ ĕçлеме пăрахнă та, çуртне никама та çирĕплетсе паман – ав ишеççĕ ăна, йăкăртакан йăкăртать, чӳрече рамисене те кăларса илсе кайнă. Кирпĕчне те хăйпăтаççĕ – пĕтĕм çурта çуккалла туртса кайĕç.

– А, пĕтрĕ вăл, – ал сулать ял хуçи. – Коммунистсем чух йĕрке пулнă, халь пурлăха аркататпăр. Ман атте Курск пĕкки патĕнчи çапăçу умĕн коммунистсен парти ретне кĕнĕ. Яла таврăнсан та паллă коммунист пулнă вăл. Хĕрĕх виççĕмĕш çултанпа коммунист. Халь çĕре кĕчĕ темиçе çул каялла. Вăт, эпĕ атте пилне малалла тăсатăп. Атте маншăн – çутă тĕслĕх. Вăл коммунист пулнă, эпĕ те коммунист пулатăп тенĕ. Партие кĕнĕ – çирĕм виçĕ çул партире. Билета çумрах чиксе çӳретĕп.

– Эпĕ парти ретĕнче вăтăр виçĕ çул хушши тăнă. Тăхăр вун пĕрремĕш çулхи пăлхав вăхăтĕнче парти билетне райком секретарĕн аллине парса хăвартăм – ГКПЧна сивлесе, килĕштермесĕр, тарăхса, – сăмах хушать Каврăç.

– Кам эсир? Паллашар сирĕнпе, – ларнă çĕртен çĕкленсе сĕтел урлă алă парать Василь Васильча пӳлĕм хуçи. – Сирĕнпе тавлашăва кĕме питĕ хавас.

– Тĕнчери çĕр-шывсем рынокпа аталанаççĕ. Çӳлтен хушнипе ĕçлеттернипе ĕç тухăçлăхĕнчен писсе пынă ĕнтĕ эпĕр, – сăмаха çыхасшăн Каврăç.

– Хальхи райком секретарĕ, сухал. Эп ăна тепре курсан лăскатăп. Партие кĕме пĕри эпĕ рекомендаци патăм ăна. Çавсем пĕтерчĕç, çирĕп тытмарĕç. Тепĕр пухăвĕнче ăна кăларттаратăп эпĕ.

Асăннă çынни маларах ку хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенĕ, унтан колхоз ертӳçи те пулнă, районтан ярса панăскер.

– Конференцире, – çĕн йĕркелӳ тапхăрĕ вăхăтне аса илет «тавлашăва» кĕрсе каяссинчен хăех пăрăнакан çын, – икĕ кандидатура пулчĕ. Лешĕ, яла, колхоза çĕклесе хăпартнăскер, кӳршĕ района куçса кайрĕ. Çавă пĕри. Тепри ман ентеш. Эпĕ куна халăхпа пулмалла терĕм, йăнăша тӳрлет, пӳлĕмре питĕрĕнсе ан лар терĕм. Сăмах пачĕ вăл. Пĕр сасă ытларах пулчĕ – суйланчĕ. Эпĕ хирĕç калавă пулсан – суйланмастчĕ. Эп суйланă пулса тухать ăна. Халь ак çавнах лартнă. Кăлармалла.

Леш çынни халĕ районта ял хуçалăхĕнчи пĕр тытăма ертсе пырать, коммунистсен пĕрремĕш секретарĕнче обществăлла йĕркепе тимлет; пит хастар кĕрешет влаçа тепре илессишĕн, коммунистсене патшалăх суйлавĕсенче çĕнтерттерессишĕн. Партие кĕнĕ чухне рекомандаци параканĕсенчен пĕри ав унпа килĕшсех те пĕтмест иккен-ха. Çынни ку, ял администрацийĕн пуçлăхĕ, пĕтĕм чун-чĕрипе коммунист, унăн çутă пуласлăхĕшĕн, идеологийĕшĕн çирĕп тăраканскер.

– Ак çак ик эрне хушшинче администраци территорийĕнче тăватă виле тухрĕ. Пĕрне пытарма ĕлкĕриччен – теприн шăтăкне алтмалла. Çĕнĕ çулатанпа вун виçĕ çын çĕре кĕчĕ. Миçе ача çуралчĕ? Тăваттă. Мĕн ку? Халăх пĕтсе пыни.

– Мĕншĕн çĕре кĕнисем ытларах? Мĕне пула вилеççĕ? – пĕлесшĕн Каврăç.

– Ак çакă, – пырне шаккаса кăтартать пӳлĕм хуçи. Сăлтавĕ ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхни, эрехпе шăварăнни тени пулчĕ ĕнтĕ ку.

Николай Николаевича куçран пăхать кунти явапллă çын.

– Мĕншĕн пăрахса кайрăн колхоза?

– Ура хура пуçларĕç. Çĕр улми путвалне чĕртсе ячĕç вĕт-ха. Электропроводран хĕлхем тухнă тесе сăмах кăларчĕç. Улăма юри чĕртсе янăскер. Кирлĕ мар эп сире эппин, хуçалăха çĕклерĕм, халь кирлĕ мар пултăм терĕм те отчетлă пухура кăларма ыйтса çырса патăм.

– Эппин, çавăнпа эс, ĕçсĕр юлнăскер, демократсене сутăнтăн – ку ĕçе тытăнтăн.

– Рынок системисĕр çапах малалла каяймастпăр, – хуравлать Николай Николаевич. Кайран, машинăпа пынă чух, вăл Василь Васильча: «Сисрĕн-и, сыпнă кăштах вăл», – терĕ ял хуçи пирки. «А-а, масар карти тыттарма кĕрĕштернĕ чухне паллă тунă пулĕ-çке-ха», – тинех тавçăрчĕ Каврăç.

Хальччен курнă-илтнĕ çынпа, паллан-пĕтенпе сăмах пуçарма çăмăл. Ял администрацийĕ е пĕрлешӳллĕ хуçалăх кантурĕсенче çыннисене Николай Николаевич малтан ал парать пулсан, шкула кĕрсен Василий Васильевич хăйне пĕлĕш-хурăнташсен йышĕнчи пек туять. Коммунизм идейипех шăршанса ларнă вырăнти пуçлăхран уйăрăлсан çула май пĕр бригадăн пĕчĕк пӳлĕмĕнче (иккĕн-виççĕн эрех ĕçме кĕрсе ларнă) каллех Николай Николаевич сăмах пуçарчĕ, суйлав комиссийĕнче сăнавçă пулма килĕшекенĕ те тупăнчĕ, брошюрăсене те кăсăклансах илсе юлчĕç. Кун хыççăн тепĕр хутлăхра, тепĕр вырăнти вăтам шкулта сăмах лавне тĕпрен туртаканĕ Василь Васильч пулчĕ. Самаях пысăк коллектив. Учительсен урокпа урок хушшинчи тăхтавĕ. «Василий Васильевич, мĕн çăмăлпа çӳретĕр?» – терĕç хавас кăмăлпа малтан, унтан ку хăй кам иккенне евитлерĕ те, «кай, эсир пирĕн çын мар, – касса татрĕ пĕри, канашлусенче пĕрле пайтах сăмахланă хастар хĕрарăм. – Мĕн тупрăр Ельцин çумĕнче?»

– Хăй вăл пире килĕшет-и, килĕшмест-и – ирĕклĕхе хӳтĕлекенĕ вăл ку тапхăрта, – пĕлтерет Василь Васильевич.

– Мĕн туса пачĕ сирĕн демократи? Ак санпа юнашар тăрать – икĕ аслă пĕлӳ илнĕ вăл. Ачисем иккĕн вĕренеççĕ хулара. Хамăра укçа паман. Мĕнле усрамалла? Мĕнле вĕрентмелле? Юрать, сирĕн вĕренсе тухса кайнă.

– Ачисен ачисем те пур-ха. Хальхи йывăрлăх малтанхи системăна пула çавăрăнса тухать.

– Эс ан сӳпĕлтет, ан çăвар уç ку енĕпе – çавах çавăраймастăн пире. Сире кунтан шăпăрпа шăлса кăларса ывăтмалла.

– Хăвăрăн ирĕк – эпир нумаях тытăнса тăмастпăр та.

– Йывăра ан илĕр-ха, шӳтлет вăл, – тӳрлетет тепри. Унтан Каврăçпа çумăн тăраканĕ, ют чĕлхе тата юрă урокĕсене вĕрентекенĕ, мĕншĕн Ельциншăнах сасăлатарасшăн эсир тесе ыйтать.

– Халь диктатура, нацизм, фашизм килессинчен чарса тăраканĕ – демократи, кусен вара лешсен çул пуçĕсене

çĕнтерме пултараканĕ паяна Ельцин çеç. Эппин, уншăн çине тăрса калаçтараканĕсем те çапла лешсем пулса тухаççĕ. Иртнĕ çитмĕл çулхи хĕскĕч таврăнас çукки курăнсан, тен, паяна урăх кандидатура пулĕччĕ. Тепĕр суйлавра, конституципе килĕшӳллĕн, вăл суйланмасть. Урăххине суйлатпăр. Хăй тытнă реформăна вĕçне çитертĕр вăл.

– Ельцин диктатор пулмĕ тесшĕн-и?

– Унăн темиçе хутчен те диктатор пулма май килнĕ – демократи тытăмĕнчен пăрăнмарĕ.

– Эпĕ çапах Зюгановшăн мар пулсан та Ельциншăн сасăламастăп, – калать хăй шухăшне çав икĕ пысăк специальность илнĕ хӳхĕм хĕрарăм.

– Тархасшăн, вăл сирĕн кăмăлăр. Анчах эпĕ Зюгановшăн сасăлама сĕнместĕпех.

– Мĕншĕн Святослав Федоров мар?

– Пирĕн тăрăхра çĕнтерĕ – урăх çĕрте, пĕтĕм Раççейĕпе çĕнтерейместех. Сасса вырăнсăр сапалани çеç ку.

– Эсир Ельцин майлă çын шыратăр апла кунта комиссире ларма? Ан та тăрăшăр – усси пур пĕрех пулас çук. Ун пек çын çук кунта – тупаймастăр, – çатăлтатать леш хастар хĕрарăм. Тĕплĕн ăнлантарма та памарĕ çавскерех. Итлесшĕннисем пурри сисĕнчĕ – пĕр çын сасси хуплать кун пек чух. Çыннисен урока каймалла – шăнкăрав чăнкăртатрĕ ав. Каврăççем те пӳлĕмре темĕнччен тытăнса тăмарĕç. Çуртран тухнă чух кӳршĕри шкулта чылайччен Каврăçпа пĕрле ĕçленĕ пенсири хĕрарăм хирĕç пулать. «Мĕн çăмăлпа?» – ыйтать ку та Василь Васильчран.

– Суйлав умĕнхи ĕçпеле.

– Камшăн агитаци парса çӳретĕр?

– Эп – Ельциншăн.

– Тьху! Зюганов! Зюганов!!! Зюгановшăн сасăлатпăр.

Пенсири хĕрарăм, çак ял çынниех, кунта декрета кайнăскер вырăнне кăрлачранпа вĕрентет-ха. Урока васкаканскер пăрăнса утсан каялла çаврăнса: «Эсир коммунист пулнă. Мĕнле улшăнтăр капла?» – тесе ыйтать.

– Эсир, шăп эсир улăштартăр, – пĕлтерет ăна Каврăç. – Ялан коммунистсене хирĕçчĕ эсир. Сирĕн сăмахăрта тĕрĕсси çук-ши тесе нумай пуç ватнă эпĕ. Çапла май хуравне тупасшăн хама мĕн кирлине вуланă. Куç уçăлмалла этемĕн.

Ял клубне, библиотекине кĕреççĕ Василь Васильпа Николай Николаевич. Часах сăмах вĕçлесе тухса кайма та çук: хире-хирĕç калаçни, пĕр-пĕрне ăнлантарма пикенни, анчах ăнлантарайманни тытса тăрать. Савăнăçлăн йăлкăшса пăхать икĕ хĕрарăм, вĕрсе хăпартнă евĕр сăн-питлĕскерсем. Вĕсем хăйсене çĕнтерӳçĕ пек вăйлă та ăслăн туйни, сана айвана хывни куç кĕрет, калăн, ухмаха хăвармалла картла çапаççĕ хире-хирĕçле: Василь Васильчпа Николай Николайч аллинче пĕчĕк картсем, лешсен – шултрисем тата козырь. Сăмах çине сăмах витĕнет çапла, лешсен – козырь, паянхи пурнăçри йывăрлăх.

Тепĕр шкулта пусма вĕçĕнчех хисеплĕ учительница хирĕç пулать. Каврăçсем камшăн тимлесе çӳренине пĕлсен тăруках сăнран улшăнчĕ ку, ик сăмах хушсанах куççулĕ юхса анчĕ.

– Хăçантанпа шалу илейместпĕр. Ик ача Шупашкарта вĕренет. Килте çăкăр пĕçерсе леçсе паратпăр вĕт, – куççульне шăлать хĕрарăм. Кăштахран лăпланать те: – Чăнах, камшăн сасăламалла? – тесе ыйтать, куçран тинкерет, каланине ăнланма пикенет. Пĕр системăран тепĕр системăна куçнă чух экономика кризиссăр иртейместех çав, халăх шухăшĕ те çавна май час улшăнмасть. Каврăç çирĕп шанать: пурнăç лайăхланмалла, коммунизма  куçатпăр тесе пуçа минретни кăлăхах, çитмĕл çул хушши çавăншăн тапаланни çукка илсе çитерчĕ те ĕнтĕ пире. Çынсене куç пăвнă пуль – Зюганов та Зюганов теççĕ. Ăнланма пултаракан та ăнланса илеймĕ кун пек чух, çын эшкере çаврăнсан.

Василь Васильчпа Николай Николаевича ялсенче пăсăлнă çăмартапа персе ăсатнă, шофер калать тет тесе сăмах саракансем те тупăнаççĕ ав; арăмĕ илтнĕ, арăмĕ хыпарлать куна Каврăça.

– Сăмах туни вăл – тарам. Яла кайма бензин çук. Ĕнер пĕр организациран кивçенле илтĕмĕр. Паян та çитмеллех ялсене, инçене вырнаçнисене. Çирĕм сакăр пин тенкĕ кирлĕ.

Мăшăрĕ упăшкипе пĕр çăвартанах сурать, укçа тупса парать ăна.

Çанталăк шăрăх, пăчă. Ирĕкре çил пур-ха, уçăлтарать. Машина чӳречине яриех уçнă; «Атăл» автомобиль асфальт çултан пăрăнса ешерекен калча хушшипеле ярăнать. Йĕпе-

сапара автомашина-трактор урапи алтăклантарнă, типĕре хытса ларнă çул çырма урлă, пĕве пуçĕпеле иртет. Хир тăрăхĕпе килнĕ чухнех йĕр айкипе пынă «Атăл» çăмăл машина малалла иртеймĕ тесе (йĕрпе пырас – тĕнĕл çине ларать) малалла çуран утрĕç иккĕн. «Халăх шăпах уйра унта, кăнтăр хыççăн тин тухрĕç», – калаçса илчĕ хирĕç пулнă хĕрарăм, кантурта ĕçлекенскер.

Тăвалла самай хушă улăхнă хыççăн вăрăм юпасем лартнă хăмла пахчи курăнчĕ, ун çывăхĕнчех ав халăх ункун кĕшĕлтетет. Купăста лартаççĕ. Шывне автомашинăпа, пичкепе турттара-турттара пынă. «Районтан килнĕ, кăшт сывлăш çавăрăр, пухăнса ларар», – терĕç хире тухнисем. Кунта ватти те, шкул çулĕнчи ача-пăча та пур, вăй питтисем те пĕрлех; хĕрарăмсем çеç мар, арçынсем те курăнаççĕ.

– Ĕлĕк калаçусем ирттерме килкелесе каятчĕç. Пуçлăхсем те пулатчĕç. Халĕ районта ĕçлекенсем ура ярса пусмаççĕ ку тăрăха. Мĕншĕн пурнăç хавшаккине ыйтăттăмăр. Хуравлассинчен хăрасах кунта ура пусмаççĕ пуль, – текен те, ăна çирĕплетекен те тупăнчĕ сăмах пуçарсанах.

Малтан Николай Николаевич, унтан Василь Васильч ăнлантарнă, суйлав йĕркипе паллаштарнă хыççăн йышра тĕрлĕ кăмăлли пурри палăрчĕ.

– Камшăн сасăламалла вара? – ыйтать умах ларнă кинемей, пенси çулĕнчискер.

– Хăвăр кăмăлăр, – тет Николай Николаевич. – Шухăшласа пăхăр: малаллах каймалла-и пирĕн е каялла таврăнмалла?

– Брежнев чухне лайăх пурăнаттăмăр. Çитмĕл тенкĕпех песокне те, конфетне те илнĕ, çур литрне те туяннă. Çăкăр кирпĕчĕ вунултă-вун сакăр пус пулнă, – хирĕçлет ăна ватталла сулăннă арçын.

– Халь таврăнас пулсан та унта таврăнаймастпăр, хысна укçине çавăн чух пĕтертĕмĕр пуль эпир.

– Çапах та камшăн сасăламалла? – ыйтать леш карчăк.

– Зюганов! Только Зюганов! – татса хурать сисĕмлĕн итлекен арçын. Çавăнпа килĕшсе тепĕр платна хĕрарăм та, хаяр сăнпа: «Зюганов!» – тесе асăнать.

Василь Васильевич компарти ертӳçине кĕретĕн хурламасăрах парти идеологийĕ çитмĕл çул хушшинче çĕр-шыва тăлласа усрани çинчен калать.

– Камшăн сасăламалла? – виççĕмĕш хут ыйтать кусен çывăхĕнчи ватă карчăк лăпкă саспах.

– Ельциншăн. Вăл тытăннă реформăна. Вăлах илсе тухтăр йывăрлăхран. Эпĕ хам Ельциншăн сасăлатăп, – татăклăн хуравлать Каврăç.

– Ха, ельцинецсем кусем! Ельцин çыннисем, – терĕç хай арçын та, леш патмар пӳллĕ хĕрарăм та харăссăнах. Тек калаçса тăмасăр ĕçе пуçăнма ура çине тăчĕç вĕсем. Ыттисем те çĕкленме пуçларĕç.

– Тепĕр тăватă çул хушшинче пач çукка хăварать халăха, – кăмăлсăрланать халь сайра шăллă арçын. – Ельцин çыннисем пултăр иккен эсир.

– Эпир хамăр шухăша калатпăр, никама хĕсĕрлеместпĕр, вăйпа çапла пулăр теместпĕр. Коммунистсем вĕсем хăйсене çеç пуç çаптарасшăн. Ельциншăн сасăлас текенсем йăнăшмăр, – ăнланарать Василь Васильевич. – Купăстине лайăх пăхса ӳстермелле пултăр.

Çынсем ĕçе тытăнчĕç ĕнтĕ.

– Тепре суйлав хыççăн килĕр, – терĕ виççĕмĕшĕ.

– Купăста ӳссе çитсен качанне туянма çитĕр.

Тутана тăсакансем пулчĕç пулин те ырă сунсах уйрăлчĕçха кусем.

Калейдоскоп майлă туйăнать çак çӳреври ӳкерчĕксем Каврăçа. Хăшĕ маларах пулчĕ-ши, хăшĕ каярах килчĕ-ши? Ак машина-трактор паркне кĕнĕ çĕре, столовăй та вырнаçнă тепĕр çурт çине кнопкăпа пусса плакат çыпăçтарчĕç Каврăççем. Токарь станокĕ те вырнаçтарнă пӳлĕмре иккен çыннисем. Кĕçех кунта çиччĕн-саккăрăн пухăнчĕç. «Демократсен кандидатурине хӳтĕлекенсен районти штаб ертӳçи», – паллаштарчĕ хăйĕнпе Василь Васильевич. Пĕр авăк илтерĕç-ха ăна арçынсем, унтан ыйтма, сивлеме, хирĕç калама тытăнчĕç.

– Эп вырăс укçине алла тытса курман. Мĕн тĕслĕ вăл – пĕлместĕп, – чунне ыраттарсах калать арçын.

– Йывăрлăлăхсем пур. Чун тăваннă самант халь чылайăшĕн, – ăнлантарать Василь Васильевич. – Шăпах çавнашкал чух йăнăшма пулать. Йăнăш тăвас марччĕ.

– Демократи, ирĕклĕх кирлех-ха , анчах мĕншĕн ĕç укçи вăхăтра тӳлемеççĕ? Миçе уйăх ĕçленĕшĕн пĕр пус та илмен. Шоферта çӳрерĕм – çитсе пынă мана. Халь пенсие каясчен улт уйăх юлчĕ.

– Ун чух пурăнатăн-ха эс. Манăн тата икĕ çул кĕтмелле. Паяна Раççей укçине алла тытса курман.

Николай Николаевич хуçалăхсен çаврăнăçуллăрах пулмалли, çĕнĕ мелсем шырамалли çинчен асăнать.

– Завочĕсем ĕçлемеççĕ пулсан ăçтан тупăшĕ, укçи пулать? – хĕремесленет тепри.

– Йывăрлăхсем пур, унтан тухма çăмăл мар, анчах аталану çул-йĕрĕ – рынок, демократи, – чунтанах калать Каврăç. – Ку вăхăтра демократие çирĕппĕн хӳтĕлекенĕ – Ельцин.

– Эсир уншăн сасăлăр – пирĕн хамăрăн урăх кандидат.

– Тархасшăн, хăвăрăн ирĕк, анчах нацистсемпе компарти кандидатуришĕн сасă пама сĕнместĕп.

– Пирĕн хамăрăн кандидат.

Çапла пĕр-пĕрне пăшăрхантармасăр-кӳрентермесĕр йĕркеллех калаçса уйрăлчĕç ку йышран Василь Васильчпа Николай Николаевич. Брошюрăсем парса хăварчĕç. Кил хушшинчен тухаспа Николай Николаевич Василь Васильча: «Куртăн-и: ав, пирĕн плакатсене çурса тăкнă», – терĕ. Чăнах та, кнопка пуснă ик кĕтесре çеç чĕрĕк хут татăкĕсем юлнă. «Сталин вăхăчĕ пулнă пулсан хăйсене мĕн кĕтнине пĕлетчĕç-ши çавсем?» – шухăшласа илчĕ Каврăç.

– Эс тӳрех хăв камне евитлетĕн, çавăнпа калаçу йĕркеллĕ пуçланмасть. Тепре урăхларах тытăнар-ха, – сĕнет Николай Николаевич Василь Васильча.

Аякри-аякри хуçалăх кантурне кĕрсе тухрĕç вĕсем кун хыççăн, халăх уйра ăçта ĕçленине ыйтса пĕлчĕç те вара купăста лартакансем патĕнче пулчĕç авă.

Салара машинăран анса юлсан Василь Васильча райхаçата тăтăш çыракан ялти хастар коммунист чарса тăратрĕ.

– Сан статюна хирĕçле çырса пичетлерĕм эпĕ. Вăрăмччĕ – кĕскетнĕ.

– Вуларăм. Мĕн каланă шухăшĕ ăнланмалла. Вăл сирĕн позици.

– Эсир чылай коммуниста çил вĕрнипе авăнакан тенĕ. Хăвăр мар-и çавнашкал авăнаканни? Çапла шутлатăп эп.

– Шухăшлăр. Тен, çунакан вутта пуçа чикекенĕ? Парти ретĕнче вăтăр виç çул тăнă эпĕ.

– Ăна пытараймастăр. Мĕн тума кĕнĕ вара эсир çав рете? Халь мĕншĕн сутăнтăр?

– Тен, эсир çуралмах пысăк ăс-хакăллă çуралнă. Эпĕ куллен курса-илтсе куçа уçатăп çеç-ха. Уçăлсах та çитеймен. Уçасшăн. Хăй вăхăтĕнче диссидент пулман эп, пулайман та. Пĕлӳ вăл шая çитеймен, мĕншĕн тесен алăра «Правда» хаçат çеç пулнă, ытти кăларăмсем те çавна кура парти юрринех юрланă Çапах иккĕленмеллине ун чухнех курнă.

Ялти корреспондентпа татах калаçасшăнччĕ Каврăç, анчах лешĕ çула май киле каймалли автомашинăна курчĕ те шоферĕпе сăмахлама пуçларĕ, виç кĕленче пылак шыва кабинăна пачĕ, çăкăр та илем-ха тесе лавккана кĕчĕ.

Каврăç шеллет те ку çынна, ытлашши нумай вĕренмен вăл, аслă пĕлӳ илмен. Хăй пĕлекен коммунистсен ырă ĕçĕсене палăртса райхаçата тăтăш статья çырать. Республика кăларăмĕсенче те тухаççĕ ун хайлавĕсем. Сăвă та йĕрмелет. Ял историйĕ çинчен хăй тĕллĕн кĕнеке кăларчĕ. Компарти пуç пулнă чух кăлараятчĕ-и? Республикăри çыравçăсен темиçе пĕрлешӳ те, пĕр ушкăнра ăна члена илнĕ. Кĕреетчĕ-и вăл çыравçăсен йышне виç сăвă йĕрленипех тата тепĕр пĕчĕк брошюра кăларнипе? Çапах райхаçат çынни: «Тивĕç-и вăл член пулма, мĕн сумлă япала пур унăн?» – тенĕччĕ те, Каврăç татăклăнах: «Çырать пулсан, пĕрлешӳре тăрас тет пулсан мĕншĕн хирĕçлемелле?» – тенĕччĕ. Каврăç шухăшĕпе ку çыравçи пит хастар, анчах унăн пурнăç çине анлăн пăхасси çитмест, хăйне вăл пысăк тавра курăмлă (статьясенче палăртать) шутлать пулин те. Мĕн тăвас тейĕн, никам та хамăр çине хамăр аякран пăхаймастпăр.

Хаçатăн ак тепĕр номерĕ çитрĕ. Ик кунхи шутпа пĕрлештерсе кăларнăскер. Варринчи листинче пĕр енĕ шăпах Каврăç калавĕ, виçĕ çул каялла çырнăскер халь вырăн тупнă. Хĕпĕртет, хавхаланать автор. Кунтах, юнашар страницăра тепĕр çыравçă, Каврăç тăракан пĕрлешĕве каллех кăçал кĕнĕскер, ай, тустарать Василь Васильчăн маларах тухнă

статйине, демократи майлă пулнине. Вуланăçем ăшра кулать Каврăç: вăтăрмĕш-хĕрĕхмĕш-аллăмĕш çулсенче парти идеологиййĕпе çăттăн килĕшсе тăман сăвă-калав, ӳнер хайлавĕ пирки çавнашкал çивĕч статьясем тухатчĕç, тӳпелетчĕç автора, авторсене; çавсене аса илтерет çак оппонент çырни те. «Эпир санпа аслă пĕлӳ илтĕмĕр Совет влаçĕ ырлăхĕпе, ман кӳршĕсем (ячĕсене асăнса кайнă) тĕлĕнеççĕ статьяна вуланă май, ялта çур çул укçа илмен, ача пособийĕсене вăхăтра памаççĕ», – тенĕ. Ача пособийĕсене иртнĕ çулсенче хăçан, мĕн вăхăтра чылай хушăлăх пама пуçланăччĕ-ха? Ашшĕ вăрçăра вилнĕшĕн ачисемшĕн çитмĕл икĕ тенкĕ илетчĕ Василь амăшĕ пенси, унпа шăп пĕр çыхă пушăт туянатчĕ, виçĕ мăшăр çăпата тухатчĕ унран. Пĕр мăшăрĕ виç эрнене аран çитейнĕ. Пилĕк çын урине çăпата туса парса тивĕçтернĕ Ваçук мĕн ачаран вăтам шкул пĕтернĕ тĕлелле. Шкул столвăйĕнче ачасен апачĕ япăхxи çинчен асăнать хирĕçлекен. Шкулта хăй çеç мар, ачисем те столовăйĕнче апат çисе курман Каврăçăн вĕреннĕ чух. Столовăй ĕçле пуçласан та ачисем ирпе килтен апат çисе кайнă та таврăниччен ăша хĕм яман. Ку вăл вĕсен харакерĕ пулнă. Иртнине мĕншĕн ытла капăрлатса кăтартмалла-ши?

«Миллион çурă укçа параççĕ тет сире. Тĕрĕсех-и?» – çапла ыйтаççĕ райцентрта тĕл пулсан палланă çынсем. Сăмахне коммунистсемех кăларса янă. Итлес текенĕ ăна хаваспах итлет, теприне хыпарламаваскать. Мĕн тăвăн, этемĕн йăли-йĕрки ĕнтĕ. Ун пек чух шӳтлет вара Каврăç, тахçанхине аса илет...

Калейдоскоп... Рефрен...

Василь Васильч хăйсен штабĕ вырнаçнă çĕрте, районти тĕп библиотека директорĕн пӳлĕмĕнче кунти ĕçченсемпе каллех сăмах çине сăмах витмелле тава кĕрет: вĕсен аллинче – хулăм картсем, козырь çине козырь – пурнăç çитменлĕхĕ; кунăн – демократи витĕмĕсĕр пурнăç çав-çавах малалла кайманнине ăнлантарни. Акă Василь Васильевич тăваттăмĕш класран пуçласа вуннăмĕш класран тухиччен вĕрентнĕ, ялан «пиллĕк» паллăпа туслă пулнăскерпе, яштак та илемлĕ пӳ-сийлĕ тепĕр хĕрарăмпа, аттестат илнĕ хыççăн тăван шкултах аслă вожатăй пулса ĕçленĕскерпе пуплет

çак пӳлĕмрех. Класс тулашĕнчи ĕçсене йĕркелекенĕ хастар коммунисткăччĕ, иккĕшĕ туслăччĕ кусем. Василь Васильч та тĕрлĕ ĕç-хĕлрен аякра тăман. Унччен комсомол райкомĕнче вăй хунă коммунистка хăй майлă çавăрнипех ĕнтĕ çамрăк хĕр те парти ретне кĕрет; ыйтнă май пĕр рекомендацине шăпах Каврăç парать. Кайран маттур хĕр аслă пĕлӳ илчĕ, халĕ экономика енĕпе ĕçлет. Ку суйлавра территори комисси членĕ вăл.

– Василь Васильевич, эсир пире вĕрентнĕ, – куçран тинкерсе пăхать илемлĕ хĕрарăм.

– Питĕ аван астăватăп сире, лайăх вĕренеттĕр. Парта хушшинче ларни те, урок калани те, хăнăхтарусене пурнăçлани те куç умĕнчех.

– Калăр: мĕншĕн эсир Ельциншăн? Итлетĕп сире, итлетĕп.

Калать, ăнлантарать Каврăç.

– Мана килĕшмест Ельцин. Эпĕ урăххишĕн... Лебедь.

– Ăна лайăххăн пĕлместпĕр вĕт-ха. Тен, тепринче. Ун чух куç курĕ. Хитре хутпа чĕркенĕрен конфет тесе тытăн та уçса пăхсан скорпион пулмĕ-и? Тахçан такам çавнашкал танлаштарнине вулани аса килет.

Калейдоскоп... Анчах пĕр япалах – рефрен.

– Василь... – пăхать Каврăç еннелле темĕнле тĕлĕннĕн те шелленĕн шкулта пĕр вăхăтрах вĕреннĕ, пĕрле ĕçленĕ учительница Василь Васильевич тăван шкула кĕрсен, сĕтел хушшине брошюрăсем йĕркелесе хурсан. – Мĕншĕн улшăнтăр вара эсир? Мĕншĕн демократсене сутăнтăр?

– Патриот пулнипе.

– Патриот?!! – пуçне ялтах çĕклерĕ тетрадь тĕрĕслесе ларакан тепĕр учительница, унпа пĕр ӳсĕмрискерех, пĕр йышрискерех. Иккĕшĕ те парти ретĕнче тăман кусем.

– Тăван çĕр-шывăмăр ăнăçлăн аталанса пынине курас килет манăн.

Пӳлĕмре пĕлтерӳсен хăми çине Раççее демократсем ют çĕр-шыва сутаççĕ текен элеклĕ статья, темле кăларăмран касса илнĕскерне, çыпăçтарнă; унта кам вуланă, çавсем алă пуснă – шăкăр-шăкăрин.

«Ельцинец!» – тесе кăкăртан пӳрнипе йăлт тĕкрĕ салара хирĕç пулсан Каврăçа пĕрле ĕçлесе пенсие тухнă, спорт

ăмăртăвĕсене те пĕрле пайтах çӳренĕ тантăш. Ĕç пӳлĕмĕсем те шкулта юнашарахчĕ вĕсен, хаçат-журнал вулатчĕç пĕрле. Ак халь вăл «ельцинец» тесе сивлерĕ, «пăхлă кут» тесе хучĕ. Çыннин кăмăлĕ еплине пĕлет Каврăç, çавăнпа чĕрре кĕрсех каймарĕ, унăн кирлĕ маршăн хыпăнма вăхăчĕ те çук. Райадминистрацире пуçлăхĕсĕр пуçне пурте кусене хирĕç, асли каланипе çеç машина параççĕ, бензинпа тивĕçтермеççĕ. Ялсене çитмелле Каврăçăн. Участокри суйлав комиссийĕсенче лармашкăн хăйсен çыннисене хут валеçсе çӳремелле халь. Суйлавĕ сăмса умне çитсе тăчĕ ĕнтĕ. Шупашкарти куратор ĕнентерӳ хутне вăхăтра çитерсе параймарĕ, çавăнпа вĕткеленме, республикăри штабпа темиçе хут та телефонпа çыхăнма лекрĕ. Шăнкăравлама та çăмăл мар, кашнинчех укçа хăйсенчен тӳлемелле. Кураторĕ район хаçатĕнче статья пичетлес тĕллевпе Каврăççем хулана канашлăва пухăнсан та курăннă-курăнман çухалчĕ: кусен районне тапса сикнĕ; ав кайран тепре пырса администратор сĕтелĕ çине хурса хăварнă документсене. Юрать, Василь Васильевич район хуçи патне тăтăш кĕркелет те кирлĕ япаласене илме пултарчĕ.

Вăхăт хĕсĕк май, Николай Николаевичпа Василь Васильевич суйлав умĕнхи эрне кун икке уйăрăлса икĕ маршрутпа ялсем тăрăх тухса кайрĕç.

– Зюгановшăн сасăлатпăр. У-у, Василь Васильч! Зюгановшăн – пирĕн сасă, – ял администрацийĕ вырнаçнă, клубĕ те, суйлав участокĕ те кунтах кĕтес тупнă çурта кĕреспе хирĕç пулать Каврăçа пенсири учитель, тахçан парти райкомĕнче пĕрле ĕçленĕскер, çакăнти шкулта нумай хушă директор пулнăскер. Ӳсĕр вăл. Участоксенчи суйлав комиссийĕсен канашлăвĕнче курнăччĕ ăна Каврăç, кунти комиссире асли вăл. «У-у, Василь Васильч! Çур литр ĕçĕпĕр. Çук, чĕрĕкпе çитет», – ыталама хăтланать паллană çын, сыпса лартнăскер. Аран вĕçерĕнчĕ кунран Каврăç. Администратор пӳлĕмĕнче ĕнентерӳ хучĕсене тата çамрăк суйлавçăсене валли хатĕрленĕ Раççей Федерацийĕн Тĕп Законне парса хăварнипех ĕç вĕçленмест – кунта кам та пулсан çын кĕрет-çке, вĕсемпе виç сăмах хушмасăр ăçтан тухса шăвăнăн. Ак пĕр хĕрарăм пушă пукан çине, сĕтел хушине вырнаçса ларчĕ, çивĕччĕн, тимлĕн пăхать Каврăçа куçран. Ку ăнлантарать ăна, пуян-

сене кураймасăр тăма кирлĕ марри çинчен калать, хăйсен ялĕнче чăнласах пĕр пуян пулнине, унран туртса илнĕ çурта шкул тунине, çавăнти икĕ пӳлĕмĕнчен пĕринче пуçламăш класра икĕ çул хăй вĕреннине, çыннине, пуянне, курнине, выльăх кĕтнĕ чух унпа калаçнине, çав кулака таврари-таврари ялсенче пĕлнине, ăна никам та хур туса, усал туса каланине илтменнине асăнса тĕслĕх илсе кăтартать Каврăç. Шкулта пуянсене хирĕç çырнă хайлавсене вĕрентнине, пуян çын усалли, кулак халăх тăшманĕ пулни илемлĕ литературăри сăнарта çеç тĕпре тăнине, киносенче пуяна ялан усалпа кăтартнине асăнать Василь Васильевич лешĕ каллех пуянсен аллине кĕрсе ӳкетпĕр тенĕрен.

– Мĕншĕн пӳрни татăк унăн?

– Камăн?

– Ельцинăн. Мĕншĕн пӳрни татăк? – хаяр куçĕпе çисе ярасла тинкерет Каврăçа хирĕç хĕрарăм.

– Эп пĕлместĕп. Мана вăл кирлĕ мар. Маншăн çыннăн ĕçĕ-хĕлĕ, унăн пурнăç çине пăхасси еплине пĕлни тĕп вырăнта. Элеке итлеместĕп.

Хĕрарăм аллинче – кĕнеке, президент çинчен çырса пынисем. Такам кăларнă ăна, çынна лапăртаса элек саракан брошюрăна. Алăран алла çӳрет çав хăйпăк. Тепĕр кантурта та курнăччĕ ăна Каврăçсем. Президент çинчен çырнине тупса парăр тесе те ыйтатчĕç. Законсем, пухусенче каланă программăллă сăмахсем кирлĕ мар-мĕн этеме. Ăна чи малтан çуккине пур тесе калани, усал сунни, кăшласа çиме май пурри – элек – пултăр, тепĕр тесен. Элекшĕн каçсах каять унашкалли. Ав епле тилмĕрсе пăхать çавнашкаллисенчен пĕри Каврăçа. Пӳлĕмрен тухсан та, киле таврăнсан та çав юлашкинчен курăннă сăнар – сивĕ куç, хура сăн-пит сирĕлмест Василь умĕнчен, асрах тăрать.

Вăхăт еккипе черетлĕ шăмат кун çитрĕ, ыран – суйлав; Раççей халăхĕ иккĕмĕш хут хăй ирĕкĕпе çĕр-шыв пуçлăхне – президента – суйлать. Мĕн тĕрлĕ калаçмарĕç пуль, мĕн тĕрлĕ авăнтарса юрламарĕç пуль прессăра, политиксен хушшинче: президента суйлас вăхăта тăсаççĕ, президант суйлавĕ кăçал пулмасть. Суйлав пуласси çинчен Ельцин Указ кăларнă хыççăн та черезвычайлă лару-тăру тесе хураççĕ те суйла-

ва пăрахăçлаççĕ. Ельцин хăй суйланмассине пĕлсе суйлава чарса лартать – ав унта хĕрӳ лару-тăру, ав кунта хирĕç тăру, эппин, суйлава пăрахăçласси енне сулăнтараççĕ, халăха ултталама хатĕрленеççĕ, тата тем те пĕр, тата ытти майлă та сăмах çавăраççĕ политиксем – урăхла каласан, оппиозици, демократие ырламаннисем, Ельцина хирĕçлисем. Ельцин çав-çавах таран пек пырать: суйлав конституципе палăртнă вăхăтра иртет! Ялти пĕчĕк çеç çын, пенсионер, Каврăç та пăрăнса тăмасть иккен ку кампанирен: вăл çак самантра мăн хăмăт тăхăнчĕ, çак тапхăрта вĕресе тăракан авăра сикрĕ; ун пеккине те сутăнчăк теççĕ ав.

Каврăçăн тĕнче чемпионатĕнче старта тухасси те икĕ эрне кăна юлать, шăп икĕ эрне. Ан тив, вăл ваттисем хушшинчи айхашу кăна пултăрин, вăл никама та кирлĕ мар пултăр-и, çапах хатĕрленӳ, тимлĕх ыйтать. Чемпионатра вăтăр çухрăм утмалла. Унччен ик эрне юлсан çул тăрăх çирĕм çухрăм кайса килме палăртнă Каврăç: йăрт-йăрт утса пĕр çемĕпе; канса илӳçĕн мар, тапхăр-тапхăр хыттăн мар – стартран тапранса тухса финиша çитнĕ сумлăн. Эрне хушшинчи хăнăхусене те майĕпен пĕчĕклетрĕ вăл: икшер çухрăма виçĕ хут тухрĕ, кĕскерех хушша та çивĕччĕн – малтанхи тапхăртисенчен сахалраххăн: вăя перекетлемелле, упрамалла.

Салара шăмат кунпа вырсарнинче мунча хутаççĕ. Малтанхи кунĕнче утса ывăннă, хытса ларнă ӳте-пĕве çемçетес тĕллевпе вырсарнийĕнче çерем тăрăх вăрман енне чупса кайса килнĕ; вăрманĕнче е серте, е пултăран пуçтарнă, чечек пăхса-курса киленнĕ. Халĕ мунчине те шăматрах кĕме лекет, мĕншĕн тесен суйлав кунĕ унăн районти комиссире лармалла, ялсенчи хăйсен çыннисемпе тата Шупашкарпа телефонпа тăтăш çыхăнмалла. Пĕр-пĕр пăтăрмах пулма пултарать – яла та çитме лекĕ районти суйлав комиссийĕн председателĕпе пĕрле, Шупашкара евитлеме тивĕ.

Ăмăрту виç сехетре пулмалла та, ик-виç сехет каярах юлса хăнăхăва тухатчĕ Каврăç (Европăри вăхăта шута илсе), халь ак мунча кĕме те ĕлкĕрес тесе ик сехетре çула тапранчĕ. Çанталăк хĕвеллĕ, çапах ытлашши шăрăхах мар, çил пур. Çире пĕртен-пĕр трусси çеç, пуçра çӳхе шурă кепка. Сехетне кил тĕлĕнче нуле куçарса секундомерне ячĕ те ял

витĕр çурçĕр-хĕвел анăç еннелле юртрĕ атлет. Ял хуçалăх пĕрлешĕвĕн кантурĕ тĕлне çитиччен çапла чупса хăпарса урана çемĕçтермелле пуçăнать Каврăç ялан. Çынсем , ку тăрăхрисем, хăнăхнă ĕнтĕ ăна, пĕлеççĕ, сывлăх сунаканĕ сывлăх сунать, тĕлĕнсе пăхаканĕ тĕлĕнсе пăхать, çăвар карать. Пĕр ушкăн – ик хĕрарăмпа виçĕ ача таз, мунчала, милĕк, сумка йăтнă та ăна хирĕç килеççĕ. «Мана валли черет йышăнăр, ăш-пиллĕн çапăнăр», – сăмах хушрĕ вĕсене Василь Васильевич. Лешсем: «Пĕрле çапăнма кĕрĕр», – тесе шӳтлерĕç. Пĕр-пĕрне пĕлмен çынсем мар-çке вĕсем, хĕр ачисене шкулта учительница чирленĕ чух çак иртнĕ хĕл ик эрне хушши вĕрентнĕччĕ те пулас-ха. Ялтан тухсан тӳр çулпа анăç еннелле каяс терĕ паян Василь: лерелле – вунă çухрăм, кунталла – çавăн чухлĕ; лерелле ытла хыттăнах мар, каялла хăвăртраххăн. Лерелле чухне те пĕр хушă – улттăмĕш-çиччĕмĕш çухрăмсенче – утта çивĕчлетсе илме юрать, каялла чух юлашки пилĕк çухрăмне – питĕ хыттăн.

Уя тухса пăрăнсан кантур тĕлĕнче сехетне пăхрĕ Василь: сакăр минут та хĕрĕх виçĕ çеккунт. Хăвăрт килнĕ! Ытти чух тăхăр минут ытларах та пулатчĕ. Хирĕç вĕрекен çил уçăлтарать, тӳпере кăштах кăтра пĕлĕтсем шăваççĕ; симĕсленнĕ хир хăйне евĕр ăшшăн сывланă пек таса сăн-питпе çынна сăнанăн туйăнать. Вар пуçĕ тĕлĕнче, юлашки вăхăтра сала çыннисне уйăрса панă ана çинче, çĕр улми пуссинче рете кăпкалатма-купалама пуçăннă пĕр-икĕ çын тĕл пулса юлать; асфальт çул сенкер хăю пек авкаланса тăсăлать; вăхăт-вăхăт автомашина е майлă, е хирĕç вашкăртса иртет. Транспорта хирĕç сулахай енпе пырать Каврăç, машинăн çул тулшĕнчи урапине куçпа тĕллет: аяккалла пăрăнса ӳкме те хатĕррĕн. Велосипедпа ирткелеççĕ, Василь Васильча сывлăх сунаççĕ. Кун пеккисем çывăхри ялтан, Каврăç шкулта вĕрентнисем. Хăшĕсем хуларан таврăнаççĕ ав, учительне курнă май хавассăн сывлăх сунса калаçса илеççĕ. Çул тăршшĕне виçме тухнă çын шав утать хăй çеммипе. Ял хыççăнхи пĕрремĕш çухрăма – аналларах тăрăха – çичĕ минутра иртрĕ вăл, теприне çичĕ минут çурăра капаштарчĕ.

Ӳт тарланă, çапах сывлама йывăр мар. Вуннăмĕш çухрăм тĕлнелле – вăрман кукри, ик енче те – хунавлăх – шĕшкĕлĕх,

туйралăх; варкăш çил кунта уçăрах та. Акă Каврăçсем ку эрне пуçламăшĕнче суйлав ыйтăвĕпе яла пăрăнса кĕнĕ вырăн, çавăнти хирте – пĕр енче ката, тепĕр енче ял лăпчăннă тăрăхра купăста лартакансемпе калаçнăччĕ. Çак пăрăнчăк тĕлĕнче таврăнать те сехетне пăхса илет: пĕр сехет те тăватă минут иртнĕ. Каялли çула çавăнтан ытла мар вăхăтра ĕлкĕрмелле. Пуçри çӳхе шур карттусне халь вăл хĕвел ĕнсерен пусасран сăмсине хыçалалла туса çавăрчĕ, çапах кĕске хушăрах тарларĕ: çил хирĕç мар çав, майлă вĕрет, питекуçа, ӳте-пĕве уçăлтараймасть. Вăрман тĕлли хыççăн уйра çул кăшт кукăрăлать те, çил урлăрах вĕре пуçлать, кунта тăвалларах пулин те çухрăм хушшине ытти тăрăхринчен кая мар вăхăтпа иртет Василь. Йăрт-йăрт-йăрт, йăрт-йăрт пырать вăл йывăрланнă шăм-шакне чĕрĕлтерсе; тарлă питне хушшăн-хушшăн алăпа шăлса илет, тарпа хул хушшине те йĕпетет. Мĕншĕн маç сĕрмерĕм-ха тесе шутласа илет, куç харшине те вазелинпа сăтăрмаллаччĕ – тар куçа çимелле юхса кĕместчĕ.

Пырать çын çип çапнă пек çулпа; тепĕр ик çухрăм тăрăх татах кăнтăралларах выртать; эппин, анăçри çил айăккараха куçать те, сывлама çăмăлланать. Автобус чарăнакан тĕлте, ял пуçĕнче, çынсем сăмахласа шӳтлесе илеççĕ-ха унпа; кăштахран ферма патĕнче тислĕк кăларнă çĕртен икĕ йытă siksе тухрĕ те самаях ятлаçрĕç хыттăн пыракан çынпа, пĕшкĕнме, алла мĕн лекнĕ çавна илсе хăмсарма, хăратса тартма лекрĕ кусене Василĕн. Çыннисем те чĕнсе, хăтăрса хăйсем патнелле йыхăрчĕç хам-хамсене. Ытти чух çакăнта хăй лайăх пĕлекенскерсемпе хирĕç пулкалатчĕ Каврăç. «Ӳркенмен кахал», – çивĕч куçпа сăмах хушатчĕ пĕри. «Алла кĕреçе тыттарса уя ямалла», – тетчĕ тепри. Халĕ кусем тĕл пулмарĕç, ахаль çӳриччен уя ĕçлеме кай текен тупăнмарĕ.

Салана кĕнĕ çĕре хай хĕрарăмсем шăпах мунчаран таврăнаççĕ. «Ăшши пулчĕ-и?» – сăмах хушрĕ вĕсене Каврăç. «Мĕншĕн çитмерĕр, çапса яраттăмăрччĕ», – шӳтлеççĕ сăнран самаях хĕрелнĕ ĕшенчĕклĕ хĕрарăмсем.

Палăртнă пекех, çирĕм çухрăма ик сехет те сакăр минутра вĕçлерĕ атлет: каялли çул лерелле кайнă чухнехипе танах. Пуçламăшĕнче чупнăччĕ вăл; эппин, килме çивĕчрех те килнĕ.

Мунча! Тарламалли-çапăнмалли пӳлĕме улăхсан вăл урайĕнче çулçă тăкăнса купаланнине курать те ун-кун пăхкалать, çенĕкрен шăпăр е кивĕ милĕк илсе кĕрсе шăлать, тасатать, унтан шыв сапса çăвать, вара тин тарлама ларать. Тухса сивĕннĕ хушăра хăй çапăнма тытăниччен каллех çĕрĕк çулçăпа тулать урай: кивĕ милĕкпе çапăнса çӳпĕлеççĕ те ав. Каврăç пĕр милĕкпе нихçан та темиçе çапăнмасть, ун аллинче – пĕр милĕкĕ çĕнни, тепри иртнинче усă курни. Куна ытларах çынна валли илет. Хăшĕ-пĕри ĕмĕр çапăнать, нихăçан та хăй çыхнă милĕкпе килмест – хĕлле те, çулла та. Çавăн йышшисем ыйтаççĕ те, парас пулать, мĕншĕн тесен пĕлентăран-çке-ха, туссем. Пĕр виççĕ пур унашкалли салара. Çавсем ятарласа Каврăç кĕнĕ саманталла пыраççĕ мунчана. Тепĕр юлташ, леш «ельцинец» тесе пӳрнепе тĕкекенĕ, çын сĕнсен те çынăнне илмест. Ик милĕкпе пырать вăл та. «Хăв хатĕрле! – тет çаптар-ха тесе ыйтсан. – Мĕн, çăмарту йывăрим вăрмана çитме?». Унсăр пуçне татах ик юман милĕкпе пыракан пур. Каврăç пекех вирлĕн çапăнать вара ку. Çамрăксем милĕк çыхни сисĕнмест. Çынна, ашшĕне шанма хăнăхни куç кĕретех вĕсен. Каврăç Шупашкара ăмăртма кайсан та, çулласенче, уя-вăрмана çитсе милĕк хуçса пынă мунчана тапрансан. Ачаран милĕк çыхнă вăл.

Тар пăтăр-пăтăр тухать те йăр-йăр юхать ӳт тăрăх, пăс кĕрлесе тухать. Çапла самаях киленсе ларнă хыççăн хывăнса тăхăнмалли пӳлĕме тухса уçăлать Каврăç. Ак вăл алса тăхăнать, пуçĕнче – спорт калпакĕ. Иртнĕ хĕлтен малтинче Урал тăрăхĕнчи хулана ăмăртма кайсан пит вĕри мунчара пĕрисем çапла çапăннине кура ĕнкертрĕ кунашкаллине вăл. Уçăлма тухас умĕн вăйлă ярса хăварă пăса чарчĕ, кĕрсессĕн радиатор çине вĕри шыв сапрĕ. Шăмат кун май паян халăх йышлă мар, çавăнпа ирĕклĕрех. Вĕри, пит вĕри, ик алă ик юман милĕкĕ ура тупанне, пĕççине, унтан çан-çурăма, кăкăра, хула ислетет. Сывлама йывăр. Тута хĕрри те пĕçерет. Шлангри сив шывпа милĕке чӳхерĕ, анчах çулçă каллех çатăрах вĕри лектерекен пулчĕ. Сывлама йывăр, чăтма çук – тухрĕ çын. Ку çурри çапăнни çеç-ха. Хывăнса тăхăнмалли пӳлĕмре кăштах уçăлса ларчĕ те тепре хатĕрленсе кĕчĕ çапăнма Каврăç, хĕрнĕ пăрăха тазри вĕри шыва сапса пăс кăларчĕ. Хальхинче киленĕç киличченех ăшалантарчĕ ӳт-пĕ-

ве Василь Васильевич. Тухрĕ те труссине турткаласа тăхăнса мунчаран пĕве еннелле утрĕ; ӳте çил уçăлтарчĕ; сывлама çăмăл. Пĕве ăшăнсах çитеймен те, çапах ишсе кайма, месерле те, ӳпне те авăсăнма чухах – канлĕхлĕ.

Парнойнех кĕрсе труссине хывать, тапăчкине тăхăнать, кăшт ăшăнать Каврăç; халь ĕнтĕ çăвăнать. Унтан тепре парнойпа пĕвене хутлать. Тухас умĕн – виççĕмĕш хут.

Ӳт-пӳ лăштăрах çемçелнĕ, пĕр хал та çук ĕнтĕ халь. Килте диван çине вырт та ним хускалми кан. Иртнĕ çул хатĕрленĕ компот кĕленчине уçнă, пылак та уçă шĕвеке малтан пĕр курка, кăштахран тепĕр курка ĕçетĕн; вăхăт-вăхăтăн – каллех. Диван çинче тĕлĕрсе те каятăн.

Ирпе Каврăçсем арăмĕпе иккĕшĕ саккăрпа суйлава тухса утрĕç. Участок çурчĕ çинче кандидатурăсен сăнĕсем çаплипех çакăнса тăраççĕ. Умра кинеми сасăлать, пĕрремĕш пулаймарăмăр тесе сăмахласа илет Каврăçăн мăшăрĕ. Василь Васильевич участок председательне çурта кĕнĕ çĕре илсе тухать, агитаци плакачĕсене сӳттерет. Совхоз кантурĕ еннелле улăхать вăл арăмĕнчен уйăрăлсан, кунта сăнавçăсем шăкăри лараççĕ: КПРФран, Явлинский енчен. Ельцин енчен çын та тупайманччĕ çакăнта валли Каврăçсем. Кӳршĕ ялти ватă, Аттелĕх орденне çакнăскер: «Зюгановшăн сасăлатăп эп, Зюгановшăн», – тесе кĕрет пӳлĕме; хăй ĕçни, урă марри сисĕнет. Администраци енчен йĕрке тăвакан пĕлĕшпе тата участок комиссин председателĕпе сăмахласа илчĕ Каврăç; суйлав йĕркеллех пырать, закон хушнă пек тесе евитлеççĕ кусем. Сала варринчи участокра – Культура керменĕнче – халăх – суйлавçăсем пушшех те йышлă. Комисси председателĕ, культура çурчĕн пуçлăхĕ, хĕрарăм, иртнĕ хĕл компартин республикăри аслă пуххине те делегат пулса кайнăскер, суйлани çинчен пĕлтерекен этикеткăна çамрăксене çеç паратпăр тесе евитлет Каврăç хăйĕн карттусĕ çине çыпăçтарнă паллăна кăтартнă хыççăн. Кунта Ельцин енчен иккĕн – комиссин сасă тивĕçĕсĕр членĕ те, сăнаканĕ те пур. Вĕсемпе çумăн – КПРФăн, Явлинскин сăнаканĕсем.

Администраци çуртне пырать Каврăç. Территори комиссийĕн председателĕ хăй пӳлĕмĕнчех, телефона Шупашкарпа тӳрех çыхăнма меллĕ номер лартнă. Участоксене шăнкăравлать яваплă çын, часах суйлав пур çĕрте те пуçănни

çинчен регионти суйлав комиссине пĕлтерет. Каврăç та ялсене шăнкăравлать, унтан республикăри штаба комиссисенче хăйсем шаннă çынсем пуррине хыпарлать.

Юлташ иртнĕ раштаври суйлав кăтартăвĕсен «шăналăкне» сейфран илсе сĕтел çине сарса хурать. Кунпа Каврăççене паллаштарнăччĕ-ха вăл эрне-ик эрне каялла, халь тепре тишкереççĕ. Кăтартăвĕ çапла: демократи сулăмлĕ партисемпе юхăмсемшĕн сасăланисен шучĕ пĕрле илсессĕн те тăваттă та улттă вуннăмĕш процент кăна пулать; компартишĕн, Анпилов енчисемпе пĕрле – çитмĕл сакăр процент; ыттисем – Жириновскишĕн. Çавсене палăртса, кама, мĕне пуç çапатпăр тесе çырнăччĕ ĕнтĕ хаçатра Каврăç. Унăн статйи тухнă хыççăнах КПРФăн хастар çыннисем ăна хирĕçлесе çине-çине темиçе статья кăларчĕç. Юлташ уйрăм участоксенче епле сасăланин кăтартăвĕсене те пăхать. Ĕç тăвакан ку пысăк çуртра администраци пуçлăхĕ те тĕп агроном, унтан культура пайĕнчи тепĕр çамрăк хĕрарăм тата çак юлташ, экономист, çеç демократсен кандидатури майлисем. Хăв çине çын ăшшăн е сиввĕн пăхнине тӳрех сиснĕ пек, кам мĕнле шухăшлине те ик сăмах хушсанах тавçăратăн, çавна май ку çурчĕ шурă пулин те шалта «хĕрлĕ» пулнине туйса илетĕн. «Хальхинче миçе процент пулĕ-ши демократсем майли?» – калаçса илет территори комиссийĕн председателĕ.

Акă вырăнсенчен суйлава миçе çын пынине пĕлтерме пуçларĕç. Пилĕк пӳлĕмре иккен ку кăтартусене пухакансем. Вĕсем участоксене пайласа илнĕ, пĕри пĕрлештерет, пухать, унтан вара асли Шупашкара хыпарлать, Каврăç та – хăйсен штабне.

Вырăнсенчен суйлав йĕркине пăснине пĕлтерни çук, пĕтĕмпех йĕркеллĕ-ха. Ак черетлĕ тапхăрта яваплă юлташ миçе çын пынине пĕлтерекен хут тăрăх лару-тăрăва тишкерет. Пĕр участокра суйлав чарăнса ларнăн туйăнать: хушăнман. Шăнкăравлать çавăнта – чĕнмеççĕ. Шăнкăравлать – кĕске сасă, пушă мар. Çапла пĕр вĕçĕм. Шăпах Николай Николаевич çуралнă ялта. Унта иккĕ те пулнăччĕ Каврăççем. Николай Николаевич халь: «Ял администрацине шăнкăравла-ха», – тесе сĕнет. Хирĕç часах хурав пулчĕ. Комисси председателех. «Ирпе пĕр тапхăр йышлăн килчĕç, каçалапа тепре йыш хушăнмалла – уя ĕçе кайрĕç», – евит-

лерĕ ку. «Тем вăрттăнлăх пур. Çынни пит принциплăскер, тем амакĕ сиксе тухнă ахăр», – хăй шухăшне пĕлтерчĕ Николай Николаевич. «Йĕркеллех иртет пуль-ха, сасăлĕç-ха», – лăпланчĕ территори суйлав комиссийĕн пуçлăхĕ, платнарах арçын, алла çывхараканскер, экономист, ĕç тăвакан тытăмра пурлăх енĕпе тимлекенскер, колхозра сакăр çул председатель пулнăскер.

Сасăлав вăхăчĕ иртнĕ хыççăн сехет ытларахран вырăнтан килсе çите пуçларĕç. Чи малтан кӳл хĕрринчи ялтан персе çитрĕç, представителĕ районта спорта ертсе пыраканскер, çамрăк çын, компарти майлăскер. Ку ыйтупа Кавăрçпа иккĕшĕ хĕрсех калаçнăччĕ иртнĕ хĕлте. Ик пӳлĕмре йышăнаççĕ хутсене, варринчи пӳлĕмĕнче – приемнăй шутлинче – сăнавçăсем. «Лар, лар, ак çума». – чĕнет компарти ертӳçи Кавăрçа, ку унран ютшăнма пикеннĕшĕн. Çавăн хастар агитаторĕ те, шкулта нумай çул хушши Василь Васильчпа пĕрле ĕçленĕскер, юнашарах. Туссем вĕсем, анчах пурнăç çине пăхас енчен икĕ аркăра. Ялтан çитни чи малтан протоколăн виççĕмĕш экземплярне компартин районти ертӳçине тыттарчĕ, Кавăрçа та пачĕ, анчах кунăнне ал пусса çитереймен. Компьютерпа кăларттарса илĕç-ха хăйсене тивĕçтерменнине Василь Васильчпа Николай Николаевич. Хăйсен çыннисем суйлавра ларнипе ларманнине те ыйтса пĕлсе çырать, паллă тăвать Кавăрç. Компартин районти ертӳçи урхамахпа вĕçтерсе пырать тейĕн: çитмĕл-сакăр вунă, тепĕр çĕрте тăхăр вун процент таранах сасă панă вĕсен кандидачĕшĕн ялсенче. Кавăрçсем ăшталанса çӳресе агитациленĕ кандидатуришĕн, демократишĕн, ав вун-вун икĕ процент чухлĕ çеç. «Паллă, Зюганов çĕнтересси пуриншĕн те куç кĕрет пулнă – подавляющим большинством сасăпа мала тухать», – мăнаçланать компартин районти ертӳçи, кĕскерех сухал ӳстернĕ, вăтамран çӳллĕрех пӳллĕскер. Агитаторĕ, шкул çынни, протоколсене пухма пулăшать, хăйсем валли кам малтан хатĕрлеменнине çырса пама ыйтаççĕ иккĕшĕ. Ку ĕçе çынсем пекех малтанах йĕркелеймен-ха Кавăрçсем. Николай Николаевич компьютер пӳлĕмне каять, протоколсене çаптарса кăларттарать халь. «Пирĕн район вăл пĕрчĕк çеç, курăпăр: Ельцин мала тухать Раççейĕпе», – хирĕçлет компартин районти ертӳçине культура пайĕнче ĕçлекен çам-

рăк хĕрарăм. «Пирĕн районта мĕнле – Раççейĕпе çапла, лакмус хучĕ пекех пирĕн район», – хăпартланать компартин районти ертӳçи. Агитаторĕ, пенсие тухнăранпа завуч мар, ачасене çеç вĕрентекен арçын, ытлашши сăмахламасть, йыш çинче, кĕпĕрленӳре камран протокол илменнине курма тăрăшать. «Зюганов! Пирĕн сасă Зюгановшăн, çур литр, çук, чĕрĕк ĕçĕпĕр», – тесе Каврăçа ыталама хăтланнă юлташ халĕ тытăнса та тăмарĕ, секретарĕнчен ыйтса илчĕ Василь Васильевич хăйне кирлине. Акă Николай Николаевичăн тăван ялĕнчи комисси председателĕ Каврăçа коридора тухма чĕнет: «Калаçмалли пур». Сăнавçă ыйтса çырнине тыттарать вăл виç сăмахранах. Суйлавçа комисси членĕ сасăламалли пӳлĕме кĕрсе пулăшни çинчен калакан хут. Ятнешывне те асăннă. «Мĕншĕн пăхса тухман?» – «Район представителĕ пăхса тухтармарĕ, комисси членĕсем те ыйтăва лартмарĕç». Кунти асли патне пырать Каврăç. Хута вулать лешĕ. «Ман ятпа çырман», – ал сулать ку пăлханса. Василь Шупашкарпа çыхăнасшăн – телефон патне ямасть хуçа. Николай Николаевича куçарттарса çыртарать Василь хута , ăна аслине парать, лешĕ илмест, унăн çумне тыттарать: «Пăхса тухăр!» – «Çук!» Администраци пуçлăхĕн пӳлĕмне кĕрет Каврăç. Лешĕ тухнă пулнă. Кил хушшинче утать халь сĕмлĕхре Василь Васильевич, вăл çак хутпа халех Шупашкара çитме хатĕр. Машина паччăр! Ав виçĕ машина ут кĕçеннĕн тăрать, тухса кайма хатĕр штаб пуçлăхĕ. Админсистратор суйлав комиссийĕн аслине хăв çине ан ил, пăхса тухăр тесен çеç ыйтăва комиссие лартаççĕ.

Кăнтăрла кунтан шăнкăравланă вăхăтра шăпах участокра шăв-шав, тавлашу-ятлаçу пулнă-мĕн, çавна пула суйлавçăсем те пынă çĕртенех çурта кĕмесĕр килĕсене таврăннă иккен, председателĕ пăлханнă чуна лăплантарма ял администраци çуртне пырса ларнă, анчах районтан мĕншĕн суйлавçăсем пыма чарăннă тесе ыйтсан тĕрĕсне евитлемен: çыннин ялтах, халăх хушшинчех пурăнмалла-çке. Йĕркелĕхшĕн явапли, хĕрарăм, пĕр предприяти ертӳçи, чунĕпе компарти çынни, телефон патне те яман сăнавçа, Каврăççене пĕлтерттермен. Халь ав çав хĕрарăм хăй акт çырать, шавланă имĕш, тавлашнă имĕш, эппин чăрмантарнă пулса тухать. Каврăç вĕсем çине пăхмасть – Шупашкара хăйсен штабне

пĕлтерет-пĕлтеретех: республикăран килнĕ представительтен ытти документсемпе пĕрле асăннă хут та кайрĕ, регионти комиссие те протоколсемпе пĕрлех çитрĕ.

Администратор пӳлĕмĕнче телевизор янă, тăват-пилĕк çын пăхса ларать ăна. Кураççĕ: Ельцин ытларах сасă пухать ав Раççейре, ку районта, Каврăççен йышĕнче – Ельциншăн вун икĕ процент çеç, хĕп-хĕрлĕ пиçиххи, хĕп-хĕрлĕ тум темелле ĕнтĕ. Хăйсен çыннисене, паллан-пĕтене, пĕлĕшхурăнташа рынок экономикисĕр патшалăх аталанма пултарайманнине, компарти каллех хĕстерӳ енне тавăрассине ĕнентерейменнишĕн ӳкĕнет Каврăç. Тен, ял çыннин кăмăлне пулах, тӳрех президент пулмалăх сасă пухса çитереймерĕ демократсен кандидачĕ, тепĕр сасăлав пулать, спорт чĕлхипе каласан – финал – Ельцинпа Зюганов хушшинчи тытăçу; ыттисем вăйăран тухса ӳкнĕ.

Çуллахи тул çутăлса килет ав, пĕр сĕм те куç хупайманран пуç кашласа ыратакан хĕрӳ каç иртет. «Ельцинецсем, апата кайăпăр», – чĕнет çывăхри кафене администратор, тулли хул-çурăмлă, çутă сăн-питлĕ вăтам çулсенчи арçын. Иккĕмĕш сасăлавра  Ельциншăн хамăр районта та сасă нумайрах пултăр терĕç вĕсем курка тытнă чух. «Иккĕмĕш хутĕнче эпĕ Парижра посольствăра сасăлатăп», – хăйĕн умри çул-йĕрне асăнать Каврăç. «Чемпион пулса кил», – пил парать ăна администратор. «Хăвăн вырăнна çын тупса хăвар штаба», – пăхать ун енне республикăран килни. «Николай Николаевич пур, çывăхри ялтан — арендатор. Штаб ĕçлет», – хуравлать Василий Васильевич.

## *Çыхланчăклăх*

Ĕç-хĕл тепĕр чух пĕр çĕре капланса килет е унăн пачах уççи-хуппи çук. Миçе хут, эрне ĕнтĕ – кунне икшер-виçшер, темиçе номерпе шăнкăравласа калаçма тăрăшать Каврăç Мускавпа, ăмăртăва ермештерекен ертӳçĕсемпе – çыхăнаймасть: тытмаççĕ. Ирпеле те, каçалапа та. «Мĕнле çынсем вĕсем, чунсăрсем! – ятлаçать арăмĕ лешсем пирки. – Хăть пĕлтермеççĕ». –  «Вĕсен хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ ĕнтĕ, хăйсен татса паман ыйтăвĕсем пулĕç», – айăпласшăн мар çынна Василь.

«Атте пăшăрханать, канăçсăрланать», – тет ывăлӗ, çемйипе канма килнӗскер. Юрӗ, шăнкăравлӗ тепӗр эрне пуçламăшӗнче, тунти кун. Суйлав ыйтăвӗ те пуç çинчех – иккӗмӗш сасăлавччен лару-тăрăва лайăхлатмалла, халăха ăнлантармалла. Район хаçачӗ те, коммунизм тума, çул пуç çулӗпе тимлӗн утма чӗнекен ятлăскер те, ку вăхăтра укçа-тенкӗ туса юласшăн Каврăçăн публицистика статйисене кандидатшăн тӳррӗн агитацилени шутне кӗртсе кандидат шутӗнчен укçа шăйăрса илме ыйтать, хаçатне илме пыма çук – е бухгалтерӗ, е редакторӗ сырăнать: «Укçа куçарса паратăр-и?».

– Эсир мана ку çулшăн пӗр пус гонорар тӳлерӗр-и? Кунта килсе илмелле çырăнтăм хаçатăра çур çуллăх, çав шутран тата кило çурă услам çу тыттарса ятăр. Мӗн чухлӗ пухăнчӗ унта манăн кăрлачранпа термен? – тинкерет вӗсем çине Каврăç.

– Агитацишӗн хăвăртан укçа тухать, – шăл йӗрет хӗрарăм бухгалтер, хăйне шкулта Василь Васильевич физкультурăпа вӗрентнӗскер.

– Шел, эп сире литературăпа вӗрентмен, публицистика агитаци шутланманнине ăнланмастăр. Ятне çеç кунта агитацилле пултăр тесе улăштарнă – ав редактор алли тӳрлетсе çырнă ал çырăвӗнче. Вăт, çав ячӗшӗн унран укçа ыйтăр. Манăн вăл – лару-тăрăва, районти халăх пурнăçне тишкерни, курни-илтнине каласа пани, пуçа шухăшлаттарма хистени. Хăвăр хаçатра ӗçлетӗр, хаçат вуламастăр.

– Сире Николай Николайчпа иксӗре Ельцин миллион çуршар панă теççӗ вӗт-ха.

– Кая юлтăр. Пӗрле пайлама пырăр. Итле: темиçе çул каялла Атăл леш енче каннă чух пӗр композитор вăрмана уçăлма тухнă та, çавна йытă тапăннă – иккӗ-и, виççӗ-и пулнă йытти. Çыравçăсем пит вăрăм чӗлхеллӗ, фантази вӗресе тăрать вӗсен пуçра, ак сăмах вӗçтереççӗ. Пӗри курать те юлташне юрă çыракана йытă кӗтӗвӗ тапăнни çинчен пит хиврен каласа парать. Итлекенӗ – теприне: «Пӗлетӗн-и, пирӗн маэстрона çичӗ йытă тапăннă, аран йывăç тăрне хăпарса хăтăлнă», – тет. Эп шăпах литература журналӗн пӳлӗмне кӗнӗччӗ, ман хыççăн хам пӗлекен поэтесса ура пусрӗ. «Илтрӗн-и, Петӗр, маэстрона çирӗм йытă тапăннă тет», – пӗлтерме васкарӗ ку журнал çыннине. «Э, э, Марье, эс кая юлнă: çитмӗл

пилĕк йытă тапăннă терĕç кунта тин кăна»,– йăлкăшать журнал секретарĕ. Вăт, çавăн пек, эсир кая юлнă, мĕнле фантази пур сирĕн, çавнашкал хушса калăр пирĕн кĕсьене мĕн чухлĕ нухрат кĕнĕ пирки – хамăр пĕлместпĕр-ха, – кулать Каврăç.

Сăмахне кăлараканни-сараканни компарти ертӳçисем, вĕсен майлисем. Çавсем хăйсем килĕштерменнисем çинчен темле сăмах та вĕçтерме пултараççĕ: ав, Каврăçпа Николай Николаевича ялта пăсăлнă çăмартапа пенĕ пулать, ай, кусем тухса тарнă пулать тата тем те пĕр, тата темнешкел те.

Хĕрлĕ ялава алăран яманнисем хаçата татах çырĕç-ха. Василь Васильч малтан виçĕ статья пичетленĕ, халь Ельцин енчен Николай Николаевич çыртăр, вырăнти радиопа Каврăç калаçĕ. Ак юлташ каçхине ыйхă татса йĕрленĕ статьяна кăтартать. «Аван-çке, йĕркеллĕ», – мухтать ăна Василь Васильевич. Арăмĕ кунăн чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче университетра кĕретĕн мар мелпе вĕренет, хаçат редакцийĕнче çулталăк ытларах ĕçлет, арçыннин те çыру çаврăмĕ май килет ав.

Каврăç вырăнти радиопа калаçма хатĕрленет. Темиçе çул каялла, Президентпа Раççей Аслă Канашĕ çивĕч хирĕç тăрура чух, Василь Васильч тӳрех, ним çырмасăр, интервью меллĕн пупленĕччĕ Ельцин майлă; шăпах компартин районти ертӳçин вăрăм сăмахĕ хыççăн пачĕ радиокомментатор Каврăç сассине. Кун хыççăн паллană çынсем унпа килĕшменни çинчен куçран пĕлтертчĕç, ырлакансем те пулчĕç. Тăван ялне çитнĕччĕ Василь ирпеле çав кун, кинеми патне ĕçпе кĕрсен: «Ай-уй, эс анчах радиопа калаçрăн-çке, халь кунта ав, – тесе тĕлĕннĕччĕ колхозра пĕрле ĕçленĕ хĕрарăм. – Вара Ельциншăн сасăламалла-и?» – «Ельциншăн». Пĕлет Василь Васильч: ăна итлекенсем, ун майлисем пур. Çыннăн кăмăлне хуçас мар, сăпайлăх та пултăр тесе ăнлантармалла çырать калаçу сăмахне халь вăл, вĕçĕнче чуна лăплантармашкăн литература хайлавĕнчи лирика çаврăмне – тренировка чух вăрман витĕр тухнă самантра пуç урлă тăрна карти иртине, вĕсемпе риторикăллăн чĕнсе калаçнине – çут çанталăка юратса кăмăла çĕклемеллине кĕртсе хурать. Эрне кунхине шырать радио йĕркелӳçине Василь Васильевич – тепĕр чух салара виççĕ-тăваттă çитсе çапăнасла куçа тăрăнаканскер халь çук; сăра ӳпли тĕлĕнче пулаканччĕ – курăнмасть,

ĕç вырăнĕнче те мар. Ĕç çи çав халь, ĕç çи! Ирпе радиопа калаçнă та утă çулса типĕтме, тирпейлеме яла кайнă. Шăмат кун шырарĕ – тупăнмарĕ.

Тĕнче чемпионатĕнчи стартччен – шăп эрне. Виç сехет иртсен вăрман еннелле çула тухать Каврăç, малтан ик кĕпер урлă каçиччен чупать, унтан утать. Ку тăрăхра çак юлашки икĕ çул хушшинче халăха самай пысăк лаптăксемех çĕр уйăра-уйăра панă, ав сĕлĕ е люцерна анисене çулаççĕ; çулăн пĕр енче çурт купалаççĕ, шурă, хĕрлĕ кирпĕчпе эрешленсе пӳрт çĕкленет; сарай, гараж куç умĕнчех улăхать. Чĕри йăшт туса илет Василь Васильчăн: унăн нимĕн те çук-çке: машини те, уйрăм çурчĕ те; вут хутмалли кăмакаллă хваттер çеç, вăтăр çул ытла пурăнса кивелнĕскер. Лартас! Мĕнпе лартĕ? Пурнăç тĕллевĕ те урăх пулнă çав Василĕн. Вăл – литература. Ялта пурăнаканскерĕн çырни те – сĕтел сунтăхĕнче çеç. Ачаран республикăри хаçат-журналсенчи литература хайлавĕсем пирки пичетленнĕ пур критикăлла статьясене вуласа ӳснĕскер, партин литературăпа искусство çинчен кăларнă янăравлă та шавлă йышăнăвĕсене вуласа шăршаннăскер, Василь, хăйшĕн çутă пуласлăха литературăра курнă; урăх нимĕн те кирлĕ пулман ăна: пурлăх та, укçа-тенкĕ те. Коммунизм çынни вăл – шăпах Каврăç. Коммунизм идеологийĕпе пиçни – вăл, шăпах Василий Васильевич. Кун пирки вăл хăйне коммунизм идеологийĕпе улталаннăскер, «жертва» тесе шутлать. Чуна уçаканĕ уншăн – пĕртен-пĕр спорт, кунта вăл çав айхашу тĕнчинче пулса пуçĕнчи тĕп хуйхине манать, урăххишĕн пăшăрханма, савăнма е кӳлешме тытăнать, мала тухассишĕн тилмĕрет. Кая юлас пулсан вăл ăмăртусене çӳремĕччĕ-и тен, тахçанах ал сулĕччĕ; каярах юлас тăк çула та тухса каймĕччĕ; çак тапхăрта хăй çулхисем хушшинче виççĕмĕш вырăнтан пĕрре те чакман. Будапешта хăй укçипе ăмăртма кайрĕ – икĕ бронза медальпе таврăчĕ Европа чемпионатĕнчен. Ун хыççăн хĕлле тепре çав хуланах кайса килчĕ те, тек чикĕ леш енне çул уçăлмарĕ – укçа-тенкĕ, валюта пулмарĕ, пулăшакансем те тупăнмарĕç. Юрать-ха, юлашки икĕ çулта Раççей, СНГ ăмăртăвĕсене çитсе çӳренине районти администраци пуçлăхĕн спорта килĕштерес кăмăлне пула тăкака саплаштарса пычĕç; старчĕсенче пĕрремĕш е иккĕмĕш вырăнсенчен кая пулман. Кăçал ав администратор

ăнланулăхне пула депутатсен пухăвĕнче район енчĕкĕнчен çул çӳреве кайма укçа уйăрмалла тесе палăртрĕç. Ун çинчен вара еплерех çырса кăларчĕç хаçатра! Районринче те, республикăн тĕп кăларăмĕнче те – шăл йĕрсе, çыннин çул çӳреме укçи çук – пулăшу ыйтать тесе; хыпарлани çеç мар, йĕкĕлтешсе, çыннин чĕрине кăчăртаттармалла туйăмпа. Хаçатçăсем пултараççĕ унашкал сăмах çавăрттарма, уйрăммăнах хальхи лару-тăрура, ирĕклĕх чухне. «Мĕн усă паран эс района? Бюджет укçине пĕтерен?» – чăркăшланчĕ ав хаçатçă хĕрĕнкĕ самантра сăмах хушса; урă чухне мĕн шутлать çын, çавă ӳсĕрпе чĕлхинчен вĕçерĕнет унăн. Суйлав вăхăтĕнче яла çитсен те тахçан райкомра пĕрле ĕçленĕ тепĕр юлташ, каллех ӳсĕрскер, ыталаса илесшĕн пулчĕ ăна. «Пилĕк миллион тенкĕ укçа панă сана, ман тӳпене, – терĕ хăлаçланса, кăвакарнă çӳçлĕскер, фронтра паттăр çапăçнă танкист. – Сан патра хĕрне качча панă хыççăн ĕçнĕччĕ, чĕнсе кĕртсе ĕçтертĕн. Халь ĕçĕпĕр-и? Çук. Киле çитерсе яр мана. Киле çитерсе яр», – палкать вĕçĕмсĕр. Хăй ниепле те админисраци пӳлĕмĕнчен тухаймасть, унти çынсемпе кирлĕ-кирлĕ мар пирки сӳпĕлтетет. Çак тусăн та шухăшлани чĕлхи çинчех ав: «Пилĕк миллион панă сана, пирĕн кĕсъерен».

Утать Каврăç вăрман хушшинчи асфальт çулпа. Вăрманĕнче ку тăрăхра каврăç йывăç та сайра курăнкалать; аслашшĕнчен, ват аслашшĕнченех пуль, юлнă хушамат Ваçукăн – Каврăç. Шĕвĕр сухаллăччĕ аслашшĕ, сăпай калаçатчĕ, çутă сăн-питлĕччĕ; çăпата туса сутатчĕ, мăшăрне вунă тенкĕпе; шăп вуннăлăхсем упратчĕ; вĕсем патне кайсан кăтартатчĕ аслă ывăлĕн ачине – Василе кăпăр-кăпăр хĕрлĕ хутсене. Хура кун валли тетчĕ.

Аслашшĕ хăй те Ваçук ятлă. Ялти кив масар çинче унăн вил тăприйĕ, унта халь хĕрес таврашĕ те юлман. Хăш тĕмескине те пĕлмест мăнукĕ. Мамакăшĕ Василь институтра вĕреннĕ чух хĕлле çĕре кĕнĕ, маçакăшĕ – ку салтакра чухне, чӳк уйăхĕнче. Пĕрне пытарнă самантра та килте пулман йăх тăсăмĕсенчен пĕри. Тăпри çăмăл пултăр пурăнса ирттернисен.

Утать Василь асфальт çулпа, вăрман витĕр тухса тепĕр çулпа хĕресленнĕ тĕле çити – çухрăм ытларах хушша; унтан таврăнать – пурĕ вун виç-вун тăватă çухрăм майлă пулта-

рать çапла. Çитес эрнинче – старт, ăмăрту, вăтăр çухрăмра вăй виçесси; утмăл-утмăл тăватӑ çулхисем хушшинче палăрмалла Каврăçăн тĕнчере. Çавнашкал ĕмĕт, çавнашкал шухăш. Çын шухăшпа, мал ĕмĕтпе пурăнать. Çанталăкне кура пĕр трусси вĕççĕн те кепкăпа çеç чашкăртакана пĕлеççĕ ку тăрăхра. Ав çурт купалаççĕ çынсем, патĕнче – çăмăл машина. Ятран чĕнсе сăмах хушаççĕ паллакансем. Василь утать, шав утать, пĕр пус услам илес çукшăн тар тăкать.

Каçалапа радио йĕркелевçĕ килне шăнкăравларĕ, темиçе хутчен канăçсăрланчĕ Василь Васильевич – трубкăна тытакан, хуравлакан пулмарĕ.

Вырсарни кун улăхпа, çеремпе чупнă-юртнă хыççăн ик милĕк, алсиш, çӳхе кепка илме манмасăр мунчана уттарчĕ атлет. Кунта пĕр самантра çакна тавçăрчĕ: ытлари кун Мускавран тапранмалла тесе палăртнăччĕ-çке; килтен тунти кун тухмалла! Эппин, çула пуçтарăнмалли самант çитсе çапнă!

Ывăлĕпе кинĕ, икĕ мăнукĕ, канма килнĕскерсем, эрне те пурăнмарĕç – хăтасан енне, кăнтăралла çитме вырсарни кунах ăсанчĕç. Хĕр ачин хĕрĕпе юлать Каврăç кайсан арăмĕ.

Каясси пирки уççи-хуппи çук-ха: Мускавран çаплах пĕлтермен. «Чунсăр çынсем пуль вĕсем», – вăрçать, ятлаçать Каврăçăн арăмĕ. «Вĕсен хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ», – тавăрать Василь, лешсен кантурне çеç мар, килĕсене те шăнкăравланă, анчах калаçайманскер. Почта телефонисткисем Мускаври Каврăç калаçмалли номерсене те, Абросимăн ятне те пĕлсе çитрĕç ĕнтĕ.

Тунти кун ирпе, саккăрсемпе радиоузела пычĕ Василь Васильевич – пӳлĕм алăкĕ питĕрĕнчĕк. Хаçат редакцине çитрĕ – кунта та çăра çакăнса тăрать. Иккен, паян Республика кунĕ – халăх канать, канууртисем ĕçлемеççĕ. Ĕç çине ĕç пулнă май радио хыпарĕ те хăлхана кĕреймен, паян хĕрлĕ кун иккенне пĕлеймен Каврăç. Каçалапала çĕр улми те купаланă-çке, укусникпа туртнă – хăйсенне, кӳршĕсенне, виççĕмĕшĕсенне. Çулла радио итлесе ларма та, телевизор курма та вăхăт çук ялта, унсăр пуçне Ваçукăн мăйĕнче тепĕр ик хăмăт: чемпионата кайма хатĕрленесси тата суйлавпа çыхăннă лару-тăру. Мускавĕсем ĕçлеççĕ пулĕ-ха паян.

Вун пĕр сехетпе телефон тытрĕ Каврăç, телефонистка çийĕнчех çыхăнтарчĕ. Палламан сас. «Ытлари кун ирпе са-

кăр сехетре Шереметево-иккĕ аэропортра пулмалла», – хыпарларĕ ку. Вăт, пăх та кур!

Шухăш пуçра çиçĕмле ирте-ирте çапăнма пуçларĕ. Радио йĕркелевçĕ хваттерĕ ăçтине ыйтса пĕлчĕ те ун килне çитрĕ Каврăç – алăка хĕрĕ, кĕçĕн класра вĕренекенскер, уçрĕ, ашшĕ ялта утă çинче иккенне пĕлтерчĕ. «Килес-тăвас пулсан ман пата пытăр», – сĕнчĕ Василь Васильч ăна. Хăйне валли урăх çĕрте суйлама удостоверени илес тĕллевпе канăçсăрланчĕ кун хыççăн Каврăç – ял администраци çурчĕ питĕрĕнчĕк; комисси председателĕ больницăри хирург. Ку çын та паян ĕçлемест, тăван ялне çурт тунă çĕре кайнă. Ытти чух салара çын кĕшĕлтетет пулсан паян вăл пăтпат çеç курăналать: урам пушă. Халăх пĕтĕмпех уйра, утă çинче. Çулаççĕ, типĕтеççĕ, тавăраççĕ; çĕр улми ани çинче те кĕшĕлтетекен пур. Темиçе çул çеç каялла халăха, кантурти çынсене утă çине, вырма вăхăтĕнче яла хăваласа кăларатчĕç парти райкомĕн ларăвĕ, ĕçтăвком хушăвĕ хыççăн, халь ав никам хĕсĕрлемесĕрех халăх – хирте; çĕр лаптăкĕсем уйăрса панă-çке вĕсене, кашниннех мĕн чул та пулин ана пур, выльăх усрама ытларах çур тырри акса е люцерна çитĕнтерсе утă-улăм тăваççĕ. Халăх хирте кĕшĕлтетет, колхозри евĕр ĕçе каяспа пухăнса тăмасăр, виççĕн-тăваттăн пĕрлешсе е пĕччен-иккĕнех кӳлĕнет çын; унта-кунта е çавапа, е кĕреплесенĕкпе хускалакана куратăн. Никам хушмасăр–чĕнмесĕр тухнă вăл ĕçе, хăйшĕн вăй хурать. Тĕлĕнмелле: çак йыш демократие хирĕç сасăлать.

Çула пуçтарăнмалла Каврăçăн. Ах, вăл пуçтарăнасси, чăнласах та укçа-тенкĕ хĕсĕк чухне. Арăмĕ сăмахламасăр, ятлаçмасăр ирттермест. «Курмăттăм, йĕрĕнсе çитрĕм», – ӳпкелешет вăл. «Эс пăхса ан тăр, хăв ĕçне ту, тух ирĕке, уçăл», – ал сулать Каврăç. Сумкăна мĕн-мĕн чикмеллине пурне те шута илмелле-çке, кутамкка та кирлĕ пулать. Лере темле çанталăк унта: е шăрăх, е çумăрлă-йĕпхӳллĕ – çавна май тумне илме-чикме чухламалла: тренировка валли те, ăмăртмашкăн та кирлĕ. Çапах та ку çуллахи çăмăл атлетăнха, хĕллехи йĕлтĕрçĕн мар, лешĕн тумĕ-çиййĕ, инвентарĕ ашак туртса çитерес çукла.

Çимеллине сахăр песокĕпе тăвар таранах илет Василь, кирли шăрпăк та манса ан юлтăр тесе шав шухăш-

лать, пуçтарăнать, алăкăн-тĕпелĕн тенешкел кумать пӳлĕмрен пӳлĕме. Паçăр тĕп лаптăкпа иртнĕ чух Шупашкартан ăш çăкăрпа батон сутма килнине асăрханăччĕ вăл, машина патĕнчен çумранах иртсе кайрĕ, хумашкăн сумка илменччĕ, укçине те чикменччĕ, тата çӳретчĕ вăл радио йĕркелевçĕне пĕр кантуртан тепĕр кантуралла шыраса. Кăлăхах пĕтĕмпех. Халь ак чупса кайса килчĕ – площадь пушах, сала лавкки те хупă. Эрех те илме шутланăччĕ малтан – ку та манăçать. «Эс ялан вĕçне хăваратăн, мĕншĕн малтанах хатĕрлесе хумарăн?» – сивлет арăмĕ. Кавրăç чĕнмест, тĕкĕр умĕнчи сĕтел çинче ав çитес юн кун хваттер ыйтăвĕпе администраци кантурне пыма каланине çырса хуни пур. Ун çинчен аса илтерет упăшки арăмне. «Манас марччĕ-ха, вуннă тĕлне тенĕ, – кăлтăртатать арăмĕ. – Çӳрен эс, сана черет çитсен те, хваттерсĕр хăвараççĕ. Çĕнĕ çуртне туса пĕтерес тĕллипалли çук: те пулать, те çук; тăррине витме укçа çитмест, хваттер илекенсен, черетрисен укçа хывмалла тенĕ сас тухрĕ. Тӳле! Çитер! Ил!» – хăтăрать арăмĕ упăшкине. «Пач пурăнмалли кĕтессĕрех мар-çке, ĕмĕре ирттеркелĕпĕр-ха мĕнле те пулин», – тавăрать упăшки. «Сана çеç ним кирлĕ мар! Намăс!» – «Кăмăла ан пăс-ха. Пуçтарăнам». Арăмĕ пĕр хушă чĕнмесĕр тăрать те упăшки валли çул апачĕ хатĕрлет.

Станцие каякан автобус тăватă сехет иртсен пулать, пуйăс Мускаваллa саккăрта иртсе каять. Станцие шăнкăравлать Кавրăç, телефонисткăсем тавар станцийĕпе çеç çыхăнтарчĕç, пуйăс расписанине çеç каларĕç кусем.

Юрать-ха, эрне кун Николай Николаевич Шупашкара кайса килчĕ, суйлав кампанийĕнче кандидатшăн тимленĕшĕн нухрат парса янă унранах – ик уйăх тертленнĕ – виç çĕр аллă пин тенкĕ иккен. «Хăвна çула кайма шăпах», – кăмăлне уçнăччĕ арăмĕ; чăнах та, Мускава çитме-килме билет хаклăхĕ пур. Ывăлĕпе, кинĕпе калаçса илнĕччĕ ашшĕ. Аллă виçĕ доллар пур унăн тахçан теплерен улăштарнăскер. «Ил, – теççĕ ывăлĕпе кинĕ. – Анăçра апат-çимĕç хаклă». – «Матрӳшккесем туянса хунăччĕ эп тахçанах». – «Ил, – сĕнет кинĕ. – Тен, сутăн. Тепĕр утмăл доллар пухăнĕ. Пурăнан». Кусем халь кинĕсен тăван кĕтесĕнче, аякрах.

Тулли сумкăпа, кутамккапа тухать килтен Кавրăç.

– Ăçта капла? – сăмах хушать кил хушшинчех пĕри.

– Хушшăн-хушшăн çӳретĕп çав ухмах сутса, – хуравлать Каврăç. Самай çывăх кӳршĕ хĕрарăмĕ чĕнмесĕр пăхса юлать, ытти чух сăмах хушаканччĕ, халь Каврăç уншăн курайман çын: хаçатра тухнă калава хăй çинчен тет вăл. Хăй курас та çук-ха та хаçатра мĕн пичетленнине, тусĕсем тĕллеттернĕ ăна, сăмахпа ыр пуласшăн епле кăна çавăрттарса чуне пăлхатман-ши? «Эсех, чисти эсех, сан çинченех», – тенĕ-çке. Паçăр сăра ӳпли тĕлĕпе иртеспе хаçат секретарĕ те: «Хăв калавусене тек илсе ан кил! Ав, суд тăрăх çӳремелле пулать-и халь?» – тенĕччĕ. Леш хĕрарăмĕ вĕсем патне çитсе ятлаçнă-çке. «Мĕншĕн тĕрĕслемесĕр пичетленĕ, мĕншĕн мана кăтартман?» – янăранă иккен хытах, хăйĕн ячĕ-шывĕ хайлаври пек мар, пач урăхла пулин те.

Автобусра çуллахи ешĕл уя-хире куçласа пынă май, пуçа çĕнĕ калав сюжечĕ вăркăнса кĕчĕ Василĕн: ку вăл илемлĕ литература хайлавне тӳррмĕн ăнланса хускалнă тавлашу-ятлаçу çинчен. Пысăк мар калав пулса тухать. Шедеврах çитмĕ те, çапах вулама кăсăклă май килĕ.

Шупашкартан Мускавалла каякан пуйăс çине купене билет пулчĕ. Вокзалăн кĕтмелли шалти пӳлĕмĕ пушах, çын çук. Хулапа хула хушшинчи пуйăса кĕтекенсем – ирĕкре е пĕрремĕш залра. Ав çумăр ӳккелет, ĕнтрĕк çапать. Тĕлĕнмелле ирĕклĕ халь Василь – пуйăс киличчен ик сехет хушши ним тăвас та çук, çавна май канлĕхлĕ те, пĕр самант шухăш-кăмăл енчен ирĕклĕ. Тур пӳрнĕ çак евеклĕ вăхăта сая ярас темерĕ Каврăç, часах сумкинчен тетрадьпе ручка кăларчĕ те çыру ĕçне пикенчĕ, алăри ручка , поэт каларăш, хут тăрăх чупа пуçларĕ – Каврăçа халь ни арăмĕ пĕр-пĕр ĕç тума хушмасть, ни телефон йăнăшакансем шăнкăравланипе картах сиктермест – пĕччен Каврăç, ирĕклĕ тĕнчере пĕччен, пуçра сăнарсем те пулнă-иртнĕ ĕç-пуç çеç йĕрмеленет, сăмах хыççăн сăмах килет. Çырать çын, çырать. Кунти пулăма кунтах хут çине йĕрмелесе хурать, кайран лайăхлатма пулĕ ăна, хут çине йĕрмеленине. Çыннин умра пысăк çул – унта çыру валли хальччен пĕлмен ĕç-пулăм ытлашшипех кĕтсе тăрĕ ăна. Тен, повесть тупăнĕ. Виçĕм çул пилĕк пысăк калав çырса хунă – хăй валли, сунтăхра упрама; иртнĕ çул вара калав шайĕнчи пĕр сумлă очерк çеç май килтернĕ, ку та – сунтăхра. Вĕт япаласене шута хумасан сумли тупăнман. Кайăк-

не тытман сунарçă евĕр çыравçăшăн ун пек чух, чылай хушă ним тытăнмасан, пысăкки лекекен; эппин, повесть кĕтет пуль ăна умра. Халь пĕчĕк япала тупăннă – ав пуçне чикнĕ те залра сак çинче пĕччен хут тăрăх перо юрттарать те юрттарать Кăврăç Васукĕ, вулакансем пĕлекен «Тӳпе каçăхать» повесть авторĕ.

## *Ăнтăлу*

Тĕлĕнмелле: шутлă вăхăт çитет теççĕ те, чăнласах-мĕн: ак сăмса умĕнче – старт. Хăй мĕн палăртнине пĕтĕмпех пурнăçларĕ Кăврăç: утас инçĕше пысăклатса чакарчĕ; ĕнер шăм-шака çемçетрĕ: ăнтăлчĕ, хăвăртлăх çителĕксĕр пек, пĕр çухрăмри вăхăт ултă минутран каçса кайрĕ, тăват çĕр, ик çĕр метрсенчи ăнтăлу та, канмасăрах пынă майăн ыткăнни, пит çивĕч мар – ик минутран, пĕр минутран ытларах, урăхла каласан, хăвăртлăх перекетлĕхĕ сахал. Çанталăк хĕвеллĕ-ха, пăчă. Ăмăрту кунĕ мĕнле пулĕ-ши? Сулхăн пулсан аванччĕ, çумăр çуни те пăсмасть. Васука йĕпхӳ хăратмасть, хĕвел, шăрăх çапса ӳкерет ăна.

Ир ăмăрлă килчĕ. Кăнтăрла иртсен уçăлать-ши? Ирсерен кунсеренех уçă-ха кунта, тӳпе тĕксĕм пĕлĕтсемлĕ; çакнашкалах сулхăн тăринччĕ.

Çĕркаç канашлăва пухăнсан яланхи йăлапа стартсем миçере пуçланаççĕ, автобус кунтан миçере илсе каять, епле лару-тăру – çаксем çинчен пĕтĕмпех асли, Маринов, ăнлантарнă хыççăн Кăврăç утакансен старчĕ миçере тесе ыйтрĕ. «Василь, пĕлместĕн-им: виççĕре пирĕн старт, кăнтăрла иртсен виççĕре», – пӳлет ăна Калиса. Васук чĕнмест, вăл хăй те çав вăхăта хатĕрленнĕ, ăмăрту умĕнхи кун та шăп çав тĕле шăм-шака çивĕчлетме тухрĕ; халь шарламасть-ха, Маринов енне пăхса шăп-шăпăрт ларать; акăлчан тата нимĕç чĕлхисене аван пĕлекен профессор, экономика ăслăлăхĕн докторĕ, буклета тимлĕн тишкерчĕ те: «Утасси вун тăвată сехетре», – тесе пĕлтерчĕ. Ак сана!

Пĕр сехет маларах куçарни лайăх-ши, япăх-ши? Апат çиме, тренировкăна тухма виççĕ валли мелсĕр пулнă: ир çини те, тепре çини-ĕçни те выçса каять; лайăхрах апатла-

натăн – тулли хырăмпа утма кансĕр. Иккĕре тесен шăпах та иккен меллĕ пек. Ак ирпе тăххăрпа, Валентин вунă çухрăма ăмăртакансемпе вĕсене пулăшас тĕллевпе кайсан, килтен илсе пынă чĕрĕ çăмарта пĕçерчĕ Ваçук. Тăваттă çиес-ши? Çук, виççĕпе çитет. Чей ĕçме тăхтать-ха. Вун пĕрте салăпа апатланчĕ тепре. Ресторана кайса пĕчĕк термоспа (ик стакан кĕрет – тăват çĕр грамм; пĕлтĕр икĕ термос çĕмĕрĕлчĕ унăн) кофе илсе килчĕ. Чей вĕретрĕ, ăна хура тĕс тухиччен çăралантарчĕ, сахăр песокĕпе пылаклантарчĕ кастрюле ярсах, вара килтенех тулли компотпа илсе килнĕ тахçанах пушаннă пысăк пластмас кĕленчене кофепе хутăштарса тултарчĕ, сыпса пăхрĕ. Пылакĕ те, чей çăралăхĕ те хăй хăнăхнă пек виçеллĕ.

Çĕркаç вăл Мариновран ыйтса буклет илнĕччĕ – паллашрĕ унти протоколпа, старт вăхăтне улăштарнине тупса вулаймарĕ, хăйсен ушкăнне тата ытти ўсĕмрисенчен камсем-камсем старта тухассине тишкерчĕ. Хăй ушкăнĕнче Раççейренех тăваттăн иккен вĕсем, кусене пурне те пĕлет Кавраç. Хусан ачи тин утмăла куçрĕ, вăйлах çўреймест, çапах Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ раштавра икĕ çухрăма чупса тенĕ пекех пырса Ваçука хыçа хăварчĕ. Мускаври ăмăртура вара пилĕк çухрăмра пĕр çаврăм çурă иртрĕ. Липецк ачи Юра та, Мускаври Иван Мышлов та унран чылай хавшак, пилĕк çухрăмлă дистанцие çирĕм сакăр минутсемпе тухаççĕ. Кунта вăтăр çухрăм утмалла-ха, инçĕш ултă хут пысăкрах. Ун пек чух ура мăранланать. Кашни пилĕк çухрăмне вăтăр минут ытларахпа пырсан та тем пекех. Кавраç çивĕчрех те каясшăн-ха. Авă протоколта унран икĕ çын урлă маларах палланă хушамат-ят – итальянец. Ултă çул каялла Будапештра астуса юлнă ăна Кавраç. Çирĕм çухрăмри Василь медальне çавна панăччĕ. Тепĕр итальянецĕ, Кавраçпа çул тăршшĕпе тенĕ пек юнашар пынăскер, хĕрĕх пилĕк çулсенчи йышран, Раççей атлетне, алăран çавăтсах тенешкел, жюри патне илсе кайса Мариона медаль тĕрĕс мар панине ăнлантарчĕ унтисене, чăнах та, Кавраç виççĕмĕшех; секретариатра асăрхаса ĕлкĕреймен-мĕн. Иртнĕ çул ветерансен хаçатĕнче Европа чемпионачĕн кăтартăвĕсене çырнăччĕ, вăтăр çухрăма утассипе утмăл-утмăл тăвата çулхисем хушшинче шăпах çав атлет çĕнтернĕ, ик сехет те аллă ултă минут та

аллă ултă çеккунтра вĕçленĕ çула. Ак мĕншĕн хăйĕн хăвăртлăхне çителкĕсĕр тесе шутлать Кавăрç. Протоколта акăлчансем йышлă – вĕсенчен пĕрне пĕлет, Будапештрах хĕлле манежра утнăччĕ, пилĕк çухрăмлă инçĕшре ик çаврăм хăварчĕ ун чух çавна Кавăрç. Ыттисем унран вăйлă-ши? Хăшĕ миçе çултине тишкерет атлет. Тин утмăла çитнисем улттăн, утмăл пĕртисем çавăн чухлĕн; Марио утмăл иккĕре; утмăл тăваттăрисем, Кавăрççăр пуçне, тепĕр иккĕн çеç, пĕри Липецк ачи Юра.

Ытти ушкăнрисен протоколне те вулать атлет. Шупашкартан Веньăпа Олег хăйсем тĕллĕн килмелле – кусен ячĕсем çук. Ак палланисем: Украинăран, Беларуссирен Толя, Женя... Хăйне тинех тăвансенчен пĕччен мар пек туять Василь.

Туссен ячĕсем чăнласах чун кĕртеççĕ. Ав Агля Кучумов, аллă пилĕк çулхи ушкăнрискер. Валентин пекех Ĕпхӳрен вăл. Пушкăрт ачи. Эстафетăра пĕр командăна пĕрлешсе утнăччĕ унпала Кавăрç – Толя белорус тимленипе вăтăр çухрăма черетлĕн пилĕкшер çухрăм хыççăн виçшер хут ылмашăнса утнăччĕ. Пĕр çулхине Японире иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче Агля ылтăн медальсемпе таврăннă – пилĕк тата çирĕм çухрăмсенче çĕнтернĕ. Иртнĕ çул Адлерта ăмăртнă хыççăн пушкăрт ачисем вырнаçнă пӳлĕмре хăна пулнăччĕ чăваш. Хăйсен халăх юррине пит хӳхĕм шăрантарчĕ Агля, уçă саспа, çеçен хир тăрăх вĕçен хăлатлăн аллипе сулкалашса тăсрĕ юрра хăватлăн. Халĕ те куç умĕнчех пушкăрт сăнарĕ, унăн уçă сасси хăлхарах.

Кайран Мускаври манежри ăмăртура Адлерти стадионра çапăннă сăн ӳкерчĕксене парнелерĕ чăваш пушкăрт туса.

– Юрăна пĕлетĕп, сăмах хушать Валентин Василь камсем-камсем утма тухассине асăнсан. Ĕпхӳреччĕ вăл.

– Çапла, Ĕпхӳре пулнă. Халь пĕр виçĕ çул ĕнтĕ урăх вырăнта.

Валентин Васильрен протокол-буклета илчĕ те чупакансенчен кашни ушкăнра миçе çынне, ăçтан-ăçтан пулнине тишкерме пуçларĕ: çырать, хушать, калькулятор кăларнă – шутлать. «Ман ушкăнра çĕр сакăр вун сакăр çын», – тет вăл, аллă пиллĕк-аллă тăхăр çулхисемпе ăмăртаканскер, хăй йышăнче чи çамрăкки.

Каврăç çывăрма выртнă, Валентин çаплах куçлăхне хывман, шав хута çăтăртаттарать. «Çывăрмалла, çывăрăпăр – ыран ман старт», – тет ăна Каврăç. «Часах, тепĕртак, – пĕтĕмпе шутласа вĕçне çитересшĕн Ĕпхӳ çынни. – Хăнăхнă эпĕ шут шутлама, хут ĕçĕнче чакаланма; ĕçре çĕр вунă миллион тенкĕ тупăш тупса патăм», – калаçса илет çавăнтах. Унтан кăшт лăпланать те: «Э,э, Абросим мана çитмĕл пиллĕке çитсен чемпион пулатăн терĕ. Пĕлтĕм мĕншĕн каланине: çитмĕл пилĕк-çитмĕл тăхăр çулхисем темиçе çын кăна кунта. Ватăлса вилсе пĕтеççĕ те, эп ăмăртăва хутшăнса тантăшсем хушшинче чемпиона тухатăп пулать», – хăйне хăй Америка уçать Валентин. «Лăхлаттарса кулнă апла санран Абросим. Тӳррипе, çав тĕле сан ӳсĕмри хальхи йышран ытлашшипех çитеççĕ, куçса пыратпăр аслăрах çулалла. Ветерансен чемпионатне ирттерме тытăнни те – уйрăммăнах шоссепе чупассипе утасси – нумай пулмасть, çавăнпа паяна чи ваттисен ӳсĕмĕнчисем сахаллăн, – палăртать Василь. – Çывăр». Ак пӳлĕмре çутта сӳнтернĕ, туалетра алăк хушăкĕпе çутă курăнать, хут çăтăртатни илтĕнет, хăйĕн бухгалтерине çавăнта тăсать малалла Валентин.

Начар мар çывăрнă Василь. Çанталăк ăмăрлă, кăнтăрла та çапла пултăринччĕ. Вырăн çинче канса илнĕ хыççăн кайма вăхăт çывхарать тесе пӳлĕмрен тухрĕ вăл, вăрăм коридорпа пынă чух ăна хирĕç Валентин вашкăртса килет. «Ак пакет сан, номер унта – пур атрибутика пĕрлех. Час каятпăр, пӳлĕме кĕрсе тухатăп çеç». – «Чей пур унта – кастрюльте, апатлан кăштах». – «Нумаях тытăнса тăмастăп». – «Номер кунта çыпăçтарам-и?» – «Лере, лере çыпăçтаратпăр. Автобус çур сехет çеç тăрать».

Сумкинче мĕн кирли пĕтĕмпех хатĕр Василĕн. Ав Калиса та иккĕмĕш хутран сумка йăтса анать. Спорт тумĕпе хăй, илемлĕн курăнать хĕрĕхрен иртнĕ хĕрарăм. Автобуса çын кĕме-шăнăçма тытăнчĕ; нимĕçсем те, американецсем те пур. Кусенчен хăшне-пĕрне пĕлет Каврăç, аялти хутрах ик пӳлĕм урлă пурăнаççĕ. Вĕсене Ельцин сăнĕсемпе кăларнă суйлав умĕнхи альбом панăччĕ Каврăç сăмахланă май. Америка президенчĕпе пирĕн президент юнашар тăрса ӳкерни те пур унта.

Çанталăк хĕвеллĕ, ăмăр тӳпе уçăлчĕ пек. Стадион умне çитсе чарăнсан каялла таврăнма та автобус çак вырăнтах пулать тесе ăнлантарчĕç. Валентинпа Каврăç хăш сектор тĕллине астăвасшăн пăхкаласа тăчĕç те стадиона кĕчĕç. Çын ун-кун хускалать. Çуртне шала кĕчĕç Каврăççем; фойере сĕтел çинче ăмăртусене йыхравлакан, пĕлтерекен буклетсем, хутсем купаланаççĕ, айăкра буфет та пур. Пысăк пӳлĕмĕ секретариат пулас, юнашарта – ресторан. Çитес ăмăртусене чĕнекен хутсене пĕрер-икшер илчĕç те Валентинпа Василь çуртран тухрĕç, пусма вĕçне анаспа тăхăшĕ Каврăçа чăвашла чĕнчĕ. Веня! Çумĕнчех – Олег. «Сирĕн ятăрсене буклетра курайман», – хавхаланса ӳкрĕ Каврăç. Тавçăрчĕ ĕнтĕ вăл: ентешсем каярах юлса çырăннă, факсне, адресне пĕлейменччĕ вĕсем.

Акă чăвашсем стадион кил хушшинче. «Белоруссен автобусĕнче хывăнтăмăр», – пĕлтерет Веня. Чечек йăранĕсем урлă икĕ рет йывăç, çав хушăра пысăк автобус – «Иккариус» ларать, ятарласа туристсем çӳреме меллĕскер. Толя курăнчĕ, майки çине номер тирет ку. Женя пĕççе маçпа сăтăрать. Ал пани, ыталашни, сăмахлани. Толя уксахлать, ура аманчăкĕ (вăрçă инкекĕ – пĕчĕк чух концлагерьте пулни) туйăнтарать ăна, çавăнпа стартран тапранса тухма çеç шутлать пулас вăл, тахçан Белорусси чемпионĕ тата рекордсменĕ пулнăскер. Арăмĕ Галя ăмăртма хатĕрленет. «Кам асли сирĕн?» – тинкерет чăваш. «Эпĕ, Василь, эпĕ», – яваплать Толя, вăтам пӳллĕскер, пит хавас кăмăлпа. «Эпĕ ак мĕн. Сумка манăн. Ак Валентинра, апатланмалли пур ман, паллашăр. Çитет унта манăн. Ыйтăр иртнĕ чух», – ăнлантарать Каврăç. «Тавтапуç. Пур пирĕн. Пĕр-пĕрне пулăшăпăр». Веньăпа Олег та ĕçмелли хăйсем хатĕрленĕ – пысăк мар кĕленчепе кофе, тепринпе сироп. Çавсене Валентина параççĕ халь.

Чупакансен йышĕнче пĕрле килнĕ, пĕрле çӳренĕ пулин те темле ют пек туятчĕ хăйне Василь, халь ак тăвансем хушшинчилле хавхаланса ӳкрĕ вăл. Валентин ăна: «Ытла пăлханатăн, ан çунса кай»,– тесе хăтăрать. Çын асăрхаттарни кунта ниме те тăмасть, кашниех харпăр хăй туйăмне ирĕке ярать: старта хатĕрленмелле-çке, шăм-шака çемçетмелле; хывăнса тăхăнмалла. «Ăçта старт вырăнĕ?». Веня, Олег, Василь, тепĕр иккĕн çири тумĕсемпех-ха, хывăнман, пĕрле

юртаççĕ, шăм-шака çемçетесшĕн, старт вырăнĕ ăçтине те пĕлесшĕн. Разминка тенине ытла нумай ирттермелле мар тесе шутлать  Каврăç, çапах туссем йышĕнче старт умĕнхи пăлханура лăпкăн тăраймасть. Чăнласах çунать вăл, çунать. Иртнĕ çул та, мларах та укçа-тенкĕпе пулăшакан пулманран çитеймерĕ кун йышши ăмăртăва Василь, çавна май, хăй шутланă тăрăх, ун медалĕсене ыттисем илнĕ. Шутлатăрин, çынна хăй хакне палăртма чăрмантарар мар.

Тӳррипе илсен, мĕн муршĕн, мĕн хĕтĕртнипе çиçкĕнсе тухать-ши этем хăйне асаплантарма ăмăртăва, умра тем ырлăх кĕтес пек? Олимп вăййисенче тесен, вăй-хал питтисенчи чемпионатсенче тесен, вĕсенче чăнласах сумĕ те, хисепĕ те пур чи малта пулнисен: медалĕ, ят-шывĕ, çавна май çĕр-шывĕнче пурлăх та кӳни саплаштарать тăкнă тара-тăвара, терте-нушана тейĕпĕр, анчах пурте мала тухаймаççĕ вĕт-ха: медаль шучĕ кашни енпе виçшер çеç; пĕрремĕш вырăн – пĕртен-пĕрре. Хăйĕн мала тухма шанчăк çуккисем те хĕлĕн-çăвĕн хатĕрленсе, тар юхтарса, вăхăта çухатса, пурлăха юхăнтарса çав пысăк аркăри чемпионата çитме чунне параççĕ-çке, старта тухса пур вăйран кĕрешеççĕ. Ветерансене илсен вара? Пурте килтех-и унăн тесе пуçа пӳрнепе кăтартсан ытлашши нимĕн те пулас çук-тăр, нихăшĕ те кӳренес çук-тăр.

Каврăç кăкăрĕ çине шурă майкăна урлăлла тăвата хисепрен тăракан тăнкăр хут номере вĕтĕ майра йĕппипе енчен енне кĕтеслесе тирсе ячĕ авă юлташĕ. «Çунса ан кай! Мĕн тăк тăраймастăн?» – хăтăрать  старт умĕнхи атлета Ĕпхӳ вырăсĕ, куçлăхпаскер; кăвакрах тĕслĕ спорт брюкипе çав тĕслех йӳле янă лапăс хулăм кĕпепе вăл темле, çурла тытса тыр вырма тухнă хресчен пек, хăйпăк пӳллĕ пек курăнать. Çил пур. Касса вĕрет вăл, çанталăк ăшах та мар. Пуçри кепкине те хывса хăварчĕ Василь, хĕрлĕ йĕр сăрнă сенкер трусси те шур майка çеç çире халь унăн; урара – Будапештра туяннине виçĕм çул Çĕнĕ Шупашкарта вăрлаттарнă хыççăн тепре илнĕ кăвакпа шурă йăрăмлă капăр крссовка. Куна та ăмăртура кăна тăхăнать вăл. Çăмăлли çăмăл-ха, çапах унпа вăйлă кăтарту пулман – е çыннин ура çивĕчлĕхĕ пĕтнĕ-ши, мрамланнă-ши, е тапочкăранах килет тку. Кĕске хушăсене шутламасассăн та иртнĕ кĕр Адлерта çирĕм çухрăм утнă-ха

унпа – урана шăйăрттарман, ӳте хăмпăлантарман, анчах финиш хыçăн аран утнăччĕ, хĕрри ытла çӳллĕ, пакăлчака лекет. Çĕнĕ Шупашкарта леш кроссовкăпа пĕрле хĕрлĕ тĕслĕ, арки резинăллă, ялан меллĕ пулнă нускийĕ те такамăн кукăр аллине кайрĕ; халĕ кинĕ парнеленĕ сенкер тӳпе тĕслĕ нейлон.

Пур япалине, сумкине Валентина тыттарса хăварса айăкри асфальт çул кукринчи йыш кĕпĕрленекен выранăлла утрĕ те çийĕнчех каялла таврăнчĕ Кавраç. «Мĕн тата?» – тинкерчĕç ун енне çывăхрах тăракан Мариновпа Абросим. Василь кунти чемпионатра документсем чиксе панă пакета илчĕ те асфальт çине хăй хатĕрленĕ майра йĕппине силлесе кăларчĕ. Тăвата кĕтессĕр пуçне енчен енне тепрер тиртерчĕ номере унпала Василь Валентина. «Çил ан çуртăр, çирĕп пултăр», – сăмах хушрĕ Маринов мĕнне ăнланса. Чăнах, çил ыткăнтарса ярать, кăкăрти номере тăпăлтарса илеслех. Халĕ тăнкăр хут кăкăр çине лап выртать.

Вăхăт çитнĕ – тапратса ямаççĕ-ха. Ирпеле уй хапхи умне пухăннă кĕтӳ евĕр халь пĕр тапăрта ик çĕр аллă ытла çын – арçынсем, хĕрарăмсем. Пĕри те тĕк тăмасть, кашниех хускануллă, е унталла, е кунталла ункăлать, çавăрăнать; пĕр-пĕринпе калаçкаласа илеççĕ. Ав виç утăмра пĕри Кавраçа хирĕç пăхса сăмах хушать.

– Марио? – палларĕ ăна Кавраç. Çын пуçне пĕксе илчĕ, ырă сăн-пиллĕн çиçсе хирĕç тинкерет.

– Марио! Эп – Василь Кавраç! – хăй кăкăрне пӳрнепе тĕллесе кăтартать чăваш, Раççей атлечĕ. Лешĕ хăй чĕлхипе тем каларĕ, çапла, пĕлетĕп, пĕлетĕп терĕ ĕнтĕ.

– Иртнĕ çул эс Европа чемпионатĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă, – пĕр пӳрне кăтартать Василь ăна. Лешĕ çирĕплетсе пуçне пĕкет. «Саламлатăп»,– италянецăн аллине хыттăн чăмăртать Василь, лешĕ кăмăллăн йăлкăшать.

Итали çынни çаврарах та кăшт тăрхаларах питлĕ, çăра, хулăм çӳçлĕ. Ултă çул каялла çӳçĕ хуп-хураччĕ, халĕ кăнкăвак ав. Будапештра ку çын çӳллех мар пек туйăннăччĕ, чăннипе Кавраçран çӳллĕрех иккен; платна, йывăр кĕлеткеллĕ; пĕççи вĕркĕч пек; Василĕн те çавнашкалах-ха. Марио сенкер тĕслĕ майка айĕн тепĕр кĕпе тăхăннă, çăтăрах труссийĕ те вăрăмрах – тум пĕтĕмĕшле сенкер тӳпепе пĕр тĕслĕ; итальянецсен яланхиллех пĕр форма – çурăм çине çĕр-шывĕн ятне

те çырнă. Кăнтăр еннеллерехре пурăнакана ку çанталăк сивĕ ĕнтĕ; хыпкаланса тăракан чăваша йăскăн çил-çумăр хăратмасть: пĕççе, ура тунине вĕрилентерекен маç та сĕрнĕ вăл.

Ак Веньăпа, Олегпа, унтан Калисăпа сăмахласа илет Каврăç; хыçа мар, варрине те мар, шăп малти рете тăрать вăл. Пĕрре каялла чакарчĕç, тепре те чакараççĕ, тапратса яма тем тăхтаççĕ-ха старт параканĕсем. Ытти çулсенче килтен тухайманскер халь килсе çитнине чунпа-ӳтпе туйса-ши йышра ют пек мар, кунта кĕтнĕ хăна пекех, пуçа ăçта чикмелле, çавăнта чикме хатĕррĕн тăрать утмăл тăваттăри Каврăç, çурăмĕ çинче унăн шупка шурă çине хĕрлĕпе çырнă «60» хисеп. Марион та çавнашкал. Ыттисене шырамасть, куçламасть Василь. Ав Женя, Олимп вăййинче аллă çухрăмра пăхăр медаль илнĕскер, нăк пӳллĕ, сарлака кĕлеткеллĕ. Çурăмĕнче унăн «55» хисеп. Веньăн, кăштах усси ӳстернĕ, яштак пӳллĕ чăвашăн, – «45», Олегăн, пĕчĕкрех пӳллĕ вăртварт кĕлеткеллĕ тепĕр ентешĕн – «40» – пилĕкшер çулăнпилĕкшер çулăн ушкăнланă миçемĕш вырăна йышăннине палăртма. Вăт, стариксем, шур сухалсем!

Çут çанталăк! Мĕнле чăрсăрскер, итлеменскер, хыт хăлхаллăскер эсĕ? Çаксем, шур сухалсем, мĕн чухлĕ опыт пухнă хатĕрленӳсенче, ăмăртусенче, çавна пула , вĕçĕмсĕр хăнăху ирттернине пула шав çӳлелле улăхмалла пек, лайăхран лайăх вăхăт кăтартмалла пек те, çук çав – шав каялла, аялалла; хăть ларса макăр – çамрăксенчен юлатăн. Ытлашши тĕмсĕлес мартан çакнашкал ăмăрту – ветерансен тĕнчери чемпионатне ирттереççĕ пуль. Хăв чунна лăплантарма, хăвна çын шутнех карттарма. Кама кирлĕ эс?! Патшалăх саншăн укçа тăккаламасть, епле йӳнеçтерессишĕн хăвăн çеç пуçа ватмалла. Хăвăн чун киленĕçшĕн тухатăн асапланма.

Валентина хушнă: «Вун пиллĕкмĕш (ыйтсан), унтан çирĕммĕш, çирĕм пиллĕкмĕш çухрăмсенче ĕçтеретĕн; стакан тупатăн унта, хут куркасем пулаççĕ, апат сĕтелĕ хатĕрленех».

– Эс кăшкăр мана – çитерехпе катаранах.

* * *

– Василь, калав хайлатăп тетĕн-и?

– Повесть.

– Ан аппалан ватăсем пирки хут хуратса. Олимп чемпи-

онӗсем ҫинчен, ҫак самантра чи ҫӳл тӳпене улӑхнисем ҫинчен ҫыр аппаланасах тесен.

– Олимп чемпионӗсене, тӗнчери чи вӑйлисене журналистсем вӗҫертмеҫҫӗ – информаци, репортаж, интервью калӑпласҫӗ, телевизорпа кӑтартаҫҫӗ; вӗсен сӑнӗсем хаҫат-журналта ҫапӑнса тухаҫҫӗ. Паттӑрсене тӗнче пӗлет, тивӗҫлипе мухтать. Бронзӑран, мрамортан палӑк лартмалла вӗсене. Эпӗ, Валентин, ҫын сӑнарне кӑларасшӑн хут ҫине, кайра-и вӑл, малта-и, вӑй питти-и, ватӑ-и – ҫав-ҫавах. Ав Парижра Монмартр лапамӗнче, храм ҫывӑхӗнче ӳнерҫӗсен аллейи, ялӗ пур. Мӗн чул ӑста ларать унта. Эс пӑхса тӑнӑ ҫӗрте пӗрне пукан ҫине лартса портрет ӳкерет, каснӑ-лартнӑ ҫынни пекех тухать, ҫав хушӑрах чунне-чӗрине, шухӑшне-ӗмӗтне те курнӑ пек палӑртать. Аллинчи тӗпӗк пек кистӗкӗпе е ҫемҫе татӑкпа сӑрра пуҫса илет те ӑстаҫӑ шур хут ҫине тӗккелет – ҫыннӑн пичӗ-куҫӗ, тумӗ-ҫийӗ, ҫӳҫӗ ӳкерӗнсе тухать. Пукан ҫине ун умне Олимп чемпионӗ ларман вӗт-ха; ав, пӗр хӗрарӑм, ҫамрӑкскер, укҫа пурри ларнӑ; хӑй сӑнне ӳкерттерсе хӑварасшӑн. Абросим ҫинчен пайтах репортаж ҫырнӑ пуль хӑй вӑхӑтӗнче, сӑнне-портретне пӗрре мар пичетленӗ хаҫат-журналта. Ыр ячӗ нумайӑшӗшӗн ӑмсанмалла унӑн. Кунта ӑмӑртмасть-ха вӑл, ертӳҫӗ шучӗпе килнӗ. Вӑт, ҫавӑн хальхи сӑнарне сӑмахпа ӳкерсе кӑларсан та, эпӗ телейлӗ, Валентин.

– Олимпиадӑра мала тухманни ҫинчен ҫырнине пичетлеместпӗр тенӗ вӗт-ха хӑвна тахҫан журнал редакторӗ. Сизиф ӗҫӗ-хӗлӗ ан пултӑр.

– Пулин. Эпӗ хамӑн ал ҫырӑвӗсене пухатӑп. Пухса ҫитереймен, малтанхисем ҫухалнӑ. Сӑнарсен йышне пухатӑп. Санӑн – мунизматика. Манӑн – урӑххи. Сӑнар кӑларсан эпӗ хӗпӗртӳллӗ. Хама ҫӑкӑр-тӑварпа тивӗҫтерме пенси илетӗп, ӑмӑртусене ҫӳреме хӗсӗкрех ҫеҫ. Пуянлӑхӑм, пурлӑхӑм ҫук. Мӗн пурри те – ал ҫыру та пуҫтарман, пӗтӗмлетмен е ҫухалнӑ диплом-грамотӑсем, юлашки вӑхӑтра илнӗ спорт медалӗсем – ҫирӗм ытла, вӑтӑр таран. Паллах, диплом-грамота вырӑнне пӗр листа хӗҫ тимӗр те виҫшер кирпӗч панӑ пулсан тахҫаннах кермен ҫавӑрса лартнӑ пулӑттӑм.

– Сизиф ӗҫӗ.

– Эпир кунта ӑмӑртни те ниме тӑманни.

Чĕнмест Валентин, пĕр шăпăрт чĕнмесĕр тăма та пултарать иккен сăмах хутаççийĕ иксĕлми çын та; чĕнмесĕртерех çӳрекеннин та чĕлхи вĕçерĕнет ав.

– Валентин, сана епле ят килĕшет? Çырас пулсан ятна епле улăштарас?

– Валентинах. Хăюллă, хăй телейне хăй тупать тенине пĕлтерет ят-шывăм.

* * *

Ку ăмăрту çинчен, ветерансем вăтăр çухрăма епле утса тухни çинчен, мĕнле пулсан мĕнлерех çавăрăнса тухма пултарнă пирки кайран, темиçе хутчен тата темиçе хутчен шухăшласа мĕн пур кукăр-макăрне, пĕчĕк кăлтăкне те палăртса аса илĕ, куç умне кăларĕ Каврăç. Ĕлĕк йĕлтĕрпе ăмăртнă чух трассине пĕлетчĕ те Ваçук старт умĕн каç выртсан çав йĕрпе темиçе хут чупса тухатчĕ шухăшпа. Кам хыççăн кам тапранса каймаллине пĕлнĕ май хăшне хăш вырăнта çитсе иртесси, хыçрине мĕн чул хăварассине е çывхартассине шухăшпа темиçе хут виçе-виçе палăртатчĕ; сăрт-тăвайккисене миçе улăхса миçе анмастчĕ-ши ярăнса шухăшпалан; куç умĕчех трасса, йĕлтĕр йĕрĕ, йывăççисем, тĕмескесем, тӳрем вырăнĕ... Чи йывăрри тăвалла улăхасси те, тăвалласене епле çĕмĕрттерсе улăхмастчĕ-ши ăшра шухăшласа спортсмен. Утассипе аплах пуçа ватман. Халь умри трасса – çул уншăн пач паллă мар, çавăнпа хăш вырăнта епле каяссине ăшраĕмĕтре куçпа курмасть, кĕрешĕве кĕрешĕвĕчченех шухăшпа тухмасть Каврăç. Асфальт çулпа хăнăхура çӳренĕ вăл – саларан пĕр еннелле е тепĕр еннелле , виççĕмĕш, тăваттăмĕш çулĕпеле; çанталăкне кура, çил хăш енчен вĕрнине, вăл вăйлă е вăйлă маррине, сивĕ е уçă пулнине кура тĕрлĕ еннелли çулпа кайса килнĕ; çурхи шăнсенче çурçĕр-хĕвел тухăçран урараи ӳкересле çил кастарнă чух çиле айăккăн килтермелле, кювет леш енчи сайра хурăнсем-тĕмсем те хӳтĕлемелле майлăн утать ялан питĕ тумпа. Таврăнасшăн та çил айăкран чух çăра туратлă сайра йывăç та, пĕчĕк тĕм те хӳтĕлет пит-куçа, çил витĕр илнине; çуллахи шăрăхра йывăç сулхăнĕ лекмелли вăрман тăрăхне тухать. Кашни тренировка хăй сăвă, хăй поэма, калав; ăмăртусем вара, уйрăммăнах инçе çулра тупăшнă чух – романах пуль, мĕншĕн тесен кун-

та çыннисем те йышлă, ĕçĕ-хĕлĕ те тулли. Эс тренировкăра чух хăв та çут çанталăк кăна – çилĕ, пĕлĕчĕ, йывăçĕ- курăкĕ, асфальчĕ, юрĕ-çумăрĕ çеç. Кунта ав санпа тупăшаканĕсем, сана пулăшаканĕсем тата тӳре-шари калăпа кĕрет; эппин, ку вăл, çыравçă шухăшлавĕшĕн, Каврăçшăн, – роман; эс мала тухатăн-и, чи вĕçне юлатăн-и – çав-çавах роман.

Умра халь – старт йĕрĕнчен малалла – хулăм кĕнеке, страницăсене уçа-уçа вулайăн, çырайăн, пĕр ларса та пĕр сывласа илнĕ хушăра тенешкел, пăрăнмасăр, канмасăр тенешкел уçса пырса йĕркесерен карлаттарăпăр; финиш юлашки пăнчă пулĕ. Пăнчах-ши? Аван кĕнекене вуласан ун çинчен шухăшласа çӳретĕн. Ку стартпа финиш çинчен пуçра хăçанччен шутлама пăрахĕ Ваçук? Хăш сăнарĕ, хăш геройĕ еплереххине тавçăрма тăрăшĕ. Тепре таврăнас пулсан, çĕнĕрен тапранса тухас пулсан хăй вăл еплерех пулĕччĕ-ши? Çырса хунă ал çырăвне тытса тӳрлетме пулать; утса тухнине, пурнăçне, пулни-иртнине мĕн чухлĕ пырса тӳрлетейĕн? Май пур-ши? Мĕншĕн май çук-ши? Ку шухăшĕ вăл çыравçăсен хушшинче тахçанах çӳрекенскер-ха, Ваçукăн мар, анчах унăн чунĕнченех тухать-çке.

Вут çинчи пек çунать Ваçук старт йĕрĕнче; тинех вăл çакăнта – кĕрешӳре.

Ял-хула тулашĕнчи стадион хыçĕнчи тӳрĕ çул; ик енĕпе аллея – çӳл йывăçсем; аяккалла, урлăлла, каллех çул выртать; унта Маринов, Абросим юлчĕç-ха. Валентин сумка йăтса аллея тăрăхĕпеле куçать. Умра – йывăç хупламĕ, вăрман. Çулăн ик енĕпе те катăк лаптăк евĕр, пысăк саплăк пек уй, уçă вырăн. Çил туламалла вĕрет; пĕççе ăшăрхаттаракан маç сĕрнĕ-ха, çавăнпа-и майкăпа пĕчĕк çеç труссипе пулин те çӳçеннине туймасть Ваçук; пуç çара, уçă; унта çӳçĕ те сайра унăн; утмăл тăваттăрискер çакăнта шухăш-ĕмĕчĕпе кĕрешӳре анчах темелле. Йыш варринелле чакмасăр йĕр тĕлнех ума вырнаçать вăл, çумрах Олег, хĕрĕх улттăри Веня – ентешсем, туссем; сулахай енче – Калиса, хĕрĕхрен иртнĕ хĕрарăм. Утти кунăн Каврăçăннипе пĕр пулаканччĕ, унпа çумăн пырсан та пăсмасть.

Пăшал-ракета сассипе кĕпĕрленсе тухсан сылтăм куç хӳрипе Мариона асăрхаса илчĕ Каврăç; итальянец, ӳте çăт тытакан кăвак çи-пуçпаскер, вăрăмрах труссипе, майка айĕн кĕске хуллă тепĕр кĕпе тăхăннăскер, вăраххăнрах пек авăн-

тарса илтерет тулли чăмăрлă пĕççине. Ваçукăн та пĕççи, ури йăпăш мар-ха, Марион пекех вĕркĕч евĕрлех. Италянец çине тек куç хўрипе те пăхмасăр утта çивĕчлетрĕ Василь. Валентин ав пысăк йывăç вулли патне çитсе тăнă, кам епле кайнине куçлăх витĕр тинкерет, аллинче – Каврăç сумки. Ав Олег, Веня çул пуçне тухрĕç, вăрман еннелле «кайăк хурăн» мăн картине ертсе кайрĕç, вĕсен хыççăн Каврăçа иртсе тепĕр пиллĕк-улттăн туртăнчĕç – çурăмĕ хыçĕнчи номесем кусен «40», «45». Василĕн «60» хисеп-ха, вăл утмăл тăваттăра, умри йыш пĕтĕмпех – хĕрĕх-хĕрĕх пилĕк çулхисем. Ав пĕри лутра пўллĕ мĕлтлетет, шупка майкăпа, çивĕч-çивĕч илтерет урине. Калиса! Ха, унран, хĕрарăмран, юлать иккен Василь. Вăрахланмалла мар, тытăннă хăвăртлăха чăтмалла, Каврăçăн малта пулмалла утмăл-утмăл тăваттăрисен хушшинче. Тепĕр виççĕн-тăваттăн иртрĕç ăна; каллех çамрăксем, хăйĕнчен çирĕм-çирĕм пилĕк çул кĕçĕннисем.

Калиса тамалмасть, умрах. Çывхараймасть Ваçук ăна. Эппин, кунăн та пашкамалла; хаш-хаш сывласа ăнтăлмалла, çак умри йыш хыççăн туртăнмалла.

Вăрман. Çўллĕ йывăçлăх. Урлă çул иртет. Тўре ав аллине ручка, хут тытнă, сылтăм енчен сулахай енне чупса каçать, пит тимлĕн тинкерсе пĕрне ракеткипе асăрхаттару палли кăтартать, номерне хут çине çырать, ыттисене, хыçрисене куçлать, каллех çул леш енчен ку енне чупса каçать – теприне асăрхаттарать пулас.

Пысăк йыш – çамрăксем хыçĕнче пырать Каврăç, пĕр вун виççĕмĕш-вун пиллĕкмĕш пулĕ ĕнтĕ.

Хырлăх. Ай, тĕлĕнмелле хўтлĕхлĕ тăрăх, асфальт çулăн ик енĕпе – кашталанхран чылай пысăкрах, пуралăха юрамалла йăрăс та çўллĕ хырлăх, туратсем çўлте çула урлă кармашса пĕр енчипе тепĕр енчи ыталаннă, çавăнпа асфальт çула çие витнĕ евĕр туйăнать ку тăрăх; хĕвел пайăрки кĕмест те, тĕттĕм пекех, туннельти евĕрлех. Ырлăх. Каврăç валлиех ку ырăн. Çакнашкал çĕрте тренировка ирттерсе кураясчĕ унăн.

Трассăна çак хўхĕм вăрман варрипе çавăрăнмалла тунă, улттă ункăламалла пурĕ атлетăн, стадионра ăмăртнă чухнехилле хĕвеле хирĕçле пымалла. Ешĕл йывăç хўме хушшипе тăсăлакан сарлаках мар асфальт çул тўрем, кăштах анатал-

ларах та-ши? Хĕлле йĕлтĕрпе ярăнма епле меллĕ пулмалла кунта! (Юрĕ те ӳкет-ха?) Тăркăч мелĕпе ярăнакансемшĕн пушшех те ырлăх пулмалла. Çуран утас пулсан та кирек хăш çанталăкра та хăнăхăва тухма пултаратăн. Ав тепĕр тӳре тăрать. Умрине пĕрне асăрхаттарчĕ ку, хучĕ çине çырчĕ те ыттисене тĕсеме пуçларĕ, пит тимлĕ, анчах ытлашши вăртвартах мар, лешĕн евĕр çул урлă чупа-чупа каçмасть.

Вашлаттарса пырать Каврăç йывăç сулхăнĕпе, ырлăхпа. Тӳррĕн выртакан çулпа тепĕр çул хĕресленет; çавăнта, айăкра, мотоцикл ларать: полицейский тăрать; пĕр хĕрарăм алăпа паллă парса пăрăнмаллине кăтартать. Çул кăштах тăвалларах выртрĕ пуль. Кăшт сайрарах йывăç тăрăхĕ. Тепĕр судья. Виççĕн-тăваттăн курса тăракансем айăкра юлаççĕ, тăвалларах пулин те утта вăрăммăн илтерет Ваçук та, ыттисем те. Ав шупка майка, çӳллех мар пӳ – Калиса – курăнми те пулчĕ. Вăйлă хатĕрленнĕ иккен Сăр хĕрринчи хула хĕрарăмĕ. Каврăçăн тамалмалла-и? Пĕрремĕш пулать вăл хăй ӳсĕмрисем хушшинче, пĕрремĕш пулма Тур пӳртĕр ăна. Хăвăртлăхне вăл вылянтарĕ, пилĕк çухрăм вăрахрах, унтан тепĕр çав хушă каллех хытăрах та кайма пултарĕ е икшервиçшер çухрăм хушăсемпе вылянтарĕ – ылмаштарĕ; хатĕрленӳсенче унашкал пынă шăпах. Вăтăр çухрăм утасси вăл шӳт мар, çул вĕçĕ ай! пусса антарать-ха та, çапах юлашки çухрăмсене юлашки вăйпа ăнтăлма та хăнăхнă çак старта хатĕрленсе Каврăç. Тур пулăштăр ăна.

Çул йывăç тăрăхĕнчен, вăрмантан уçлăхалла чашкăртса тухать. Ав умра апат сĕтелĕ хатĕрленĕ иккен; арçын ача, тепри тăраççĕ, аллисемпе курка тăсса ĕçме сĕнеççĕ. Пилĕк çухрăм хыççăнах ăша çимĕç яма палăртман Каврăç, ыттисем те ав ним чĕнмесĕрех иртеççĕ. Вăрмантан тухсан, шăп сулахая пăрăннă тĕлте, – шыв тултарнă ванна; пĕр çамрăк ик аллипе те ислетнĕ кубка тытнă тăрать. Пĕр кубкине илсе питнекуçне, унтан хулне, аллине, ал тунине сăтăрса уçăлтарчĕ Ваçук, кубкăна çерем çине ывăтса хăварчĕ. Ӳт вĕри. Шывпа сăтăрăннă май ӳт тирĕ сивĕнчĕ, уçăлчĕ кăштах.

Вăрман кĕтесĕ – хир, пысăк мар лаптăк хир, çил касларать, ыткăнтарса ярасла вĕрет. Ваçук хăйĕн кайран тирнĕ ик майра йĕппине вĕçертсе перĕччĕ: хут лаптăк кăкăра лап хупланипе уçăлтармасть. Çак вичкĕн çил те кĕреймест хут-

па майка хушшине. Чĕрĕлсе ÿкместчĕ пуль, питĕ питтĕн çыпăçтармалла марччĕ пуль çирĕп хут номере. Анчах тĕкĕмест ăна, чăрманмасть.

Ик уй хушшинче урлăлла тепĕр рет йывăç тăрăхĕ. Ку тĕле белоруссем килсе тăнă – хăйсен ачисене пулăшма, асăрхама. Васука сăмах хушса ирттерчĕç вĕсем – хăв йышра пĕрремĕш терĕç.

Тепĕр уй тăрăхĕ, çил лăсканă вырăн хыççăн çаврăм вĕçленчĕ пулас, тапранса тухнă тĕле илсе кăларчĕ çавракăш. Кунта ав Маринов, Абросим тăраççĕ, Васука пит тимлĕн сăнаççĕ; темех вĕрентсе сăмах хушмарĕç вĕсем, «Василь ав», – терĕç кăна. Иккĕмĕш çаврăмалла ăнтăлать халь Каврăç. Вăрмана шала кĕреспе ăна каллех курка тытнă çамрăксем ĕçме сĕнеççĕ, вĕсен еннелле пăхмасть те Василь. Валентин кунтах тимлĕн тинкерсе юлать, вун пиллĕкмĕш çухрăмччен ĕçтерме сĕнмен ăна. Ку тĕл хыççăнхи вырăнта тÿре каллех çулăн сылтăм енчен сулахай енне чупса каçать, Васук умĕнчи йышран пĕрне юнаса илет: ракетка паллине кăтартать, номерне çырать.

Тепĕр тÿри тимлĕн сăнать, хăй тĕлĕнчен иртнĕ чух ура пусăмĕпе чĕркуççи тÿрленнипе тÿрленменнине тĕсет çеç. Темле май килсе тухрĕ – Василь пĕччен пырать, умрисем куçран вĕçерĕнчĕç, çитекен, юнашар пыракан пулмарĕ. Те çавăнтан пăрăнмаллаччĕ, те леререхрен – çул тăваткалĕ пур. Çаках-ши пăрăнчăк? «Ха-а-а!» – сас парать Василь. Пăхса тăракан çынни пăрăннă-мĕн айăккалла, тăват-пилĕк утăм тÿрех кайсан пăхкаларĕ, унтан сиссе, хăйне кăшкăрнипе каялла çавăрăнса пăрăнчĕ Васук. Умрисем тÿр тăрăхра та куçран вĕçерĕнчĕç. Ăнтăлать-ха Васук, ăнтăлать, хăвăртлăх чакрĕ пуль, çапах палăрмаллах мар пуль. Ак вăрман хĕрри те, ав курка сĕнеççĕ, Васук ун енне пăхмасть, кубка илсе пите-куçа сăтăрать, ăшран ирпе çинĕ салă шăрши какриш килет. Пултăрах, выçман вăл. Уй тăрăхĕнче çумăр çапса, касса çăвать, çапах кубкăпа сăтăрса илчĕ Васук пите-куçа. Белоруссем тăнă çĕрте Толя çул çинех тухрĕ ав, ури ыратаканскер, тек кайман вăл, çула вĕçленĕ. «Пĕрремĕш эс хăв йышра», – тесе ăш-пиллĕн сăмах хушрĕ вăл чăваша. Мариновпа Абросим та хăйсен малтанхи тĕлĕнчех. Валентин та вăрман ăшнелле кĕрес çĕрте тимлĕн тинкерсе юлать. Вунă

ҫухрӑмра апат пама сӗнмен ӑна Ваҫук. Ачи ку, Каврӑҫ, картаран вӗҫерӗнсе тухнӑ тихалла тапраннӑскер, ҫаплах тамалмасӑр илтерет-ха. Инҫерех тарам тет вӑл Марионан, кайран пӗр пилӗк ҫухрӑм вӑрахрах пыма та пулӗ, дистанци варри тӗлне запас пултӑр. Чылай хушӑ ӑна никам та иртменччӗ, умрисем те куҫран ҫӗтнӗччӗ; ак ӑна шӑп пиллӗкӗн ҫитеҫҫӗ, ума тухаҫҫӗ – ҫурӑмӗсенчи хисепсем – «40», «45». Ҫаксем хыҫҫӑн ҫӑмӑллӑн туртӑнам тесе илтерме тытӑнчӗ Каврӑҫ; ав хастар судья, пит ҫивӗч тӳре, хӑш ял, чур! хӑш ҫӗр-шыв ҫынни-ши вӑл, кӗретех пит тимлӗскер сылтӑм енчи йывӑҫ тӗлӗнчен сулахай енне чупса каҫать, хӑй тӗлне Ваҫук ҫитсен ӑна ракетка-паллӑ кӑтартать: ура тӳрленменни. «А-а! Найн!» – аллине пӗҫҫе тӑрӑх йӑрт! ярса кӑтартать Василь, ури хӑйӗн йӑрт тӳрленнине аван пӗлсе. Лешӗ ун номерне тетраде ҫырать, кӗҫех ӑна аслӑ тӳре патне ярӗ, ҫавӑн пекки тепӗр иккӗ пулсан ҫулран кӑлараҫҫӗ. Вӑт, анра-сухра! Ывӑнма та ывӑннӑччӗ-ха, шиклӗх те пусрӗ халь Ваҫука; умри пилӗк ҫынна, вӗсем хыҫҫӑн самай хушӑ тытӑнса пырасскер, вӗҫертрӗ; лешсем инҫене-инҫене кайса ҫухалчӗҫ. Тепӗр тимлӗрех тӳре тӗлӗнчен пӗчченех урана пичет пуснӑ пек пусса иртсе кайрӗ, малалла таплаттарчӗ Каврӑҫ. Ҫул хӗресленнӗ тӗле халь мотоцикл лартнӑ, ҫавӑнтан пӑрӑнчӗ. Ырнӑ та иккен-ха Василь, утӑм йывӑртарах, туять: хӑвӑртлӑх малтанхинчен чакнӑ. Ак ӑна ирте пуҫларӗҫ, «50», «55» хисеплисем курӑна пуҫларӗҫ. Хӑйпе танлашнӑ чух сӑнне пӑхать, ватӑ сӑнлӑ пулсан ҫӳҫенерех илет, ҫурӑмӗнчи «50» е «55» хисепе курать те, чун кӗрет: хӑйӗн ушкӑнӗнчи мар! Акӑ вӑрман вӑти хыҫҫӑнхи кӑшт тӑвалла сӗвек вырӑнта Каврӑҫпа танлашать кӗретех ват сӑн-питлӗ, кӑвак ҫӳҫлӗ яштака ҫын, илемлӗ пӳ-сийлӗскер, кӗлетки чӑн-чӑн ҫӑмӑл атлетӑн. Ҫурӑмӗнче «60» хисеп! Ай-ай-ай! Майки ҫурмаран ҫурнӑн ҫурри шупка, ҫурри кӗрен, кӗске труссийӗ симӗс. Ури йӑшт. Вӑрӑм урине ытлашши вӑрӑмах та ярса пусмасӑр вӑльт-вӑльт-вӑльт, йӑшт-йӑшт-йӑшт илтерсе пырать ҫын. Ӑста куҫӗ тӳрех хаклать: сӑлайӗ лайӑх, ытлашши туртӑшни-ывӑнни те палӑрмасть. Акӑлчан пулчӗ-ши ку? Ҫавсем тӑххӑрӑнччӗ. Пӗрне пӗлетчӗ вӗсенчен Ваҫук, куна курман. Тин утмӑла ҫитнӗскер ӗнтӗ. Иккӗмӗш пулма лекет-ши Василӗн? Пурнӑҫра темӗнле майпа сикчӗллӗх ылмашӑнсе йӗркеленет

тепĕр чух; Мускавра, унтан Саранскра пĕрремĕш пулнă кăçал Васук, Санкт-Петербургра çамрăксемпе ватăсен йышĕнче коэфициентпа шутласа кĕмĕле тивĕçрĕ, халь каллех иккĕмĕш пулĕ-и? Акăлчан-ши?

Хăйне иртнĕскер хыççăн тытăнса парасшăнччĕ Василь – тытăнаймарĕ, кăштахранах вĕçертсе тартрĕ.

Ĕçме сĕннĕ куркана каллех алла тытмарĕ Каврăç, кубкăна та илмерĕ: вăрмантан хир енне тухнă тĕлте кас-кас çапса çумăр çăвать, айăкран пулин те тӳнтерсе ямалла çил вĕрет; çилпе-çумăрпа кĕрешсе пырать атлет. Ав умра кĕреншупка майка, симĕс труссиллĕ кӳлепе вĕлтлетсе ыткăнать, çавна куçран вĕçертесшĕн мар утăмлать Каврăç. «Василь!» – сăмах хушать ăна Толя, çеремрен çул çинерех тухнăскер. Василь ăна умалла пӳрнепе тĕллесе кăтартать: ав ман ушкăнри пĕрремĕш пыраканĕ! Судьясен тĕлĕнчен урипе «пичет пусса», иртет халь Васук, сăлайĕ тиркевлĕ мар унăн, анчах тем пулса тем килесси пур. Шăм-шак ырнă, утма йывăр; йывăрлансах пырать. Мариновпа Абросим çаврăм вĕçĕнчи тĕлтех, лаптăкрах. Ик пӳрне кăтартрĕ, иккĕмĕш пыратăп тесе пĕлтерчĕ вĕсене Каврăç.

Ик хĕрарăм иртрĕç ăна – хĕрĕх тата вăтăр пилĕк çулхисем. Тепĕр хĕрарăма белорус атлечĕ хăй хыççăн пыртарса ан юл тесе хистет. Васукпа танлашакан Женя лешне: «Ан муритле, хăй çеммипе пытăр», – тет. Василь те хăй пĕлекенскере: «Хăв çеммӳпе кай!» – тесе сĕнет. Женя тин, виççĕмĕш çаврăм вĕçĕнче çитет ав Васука. Ури çĕртен ытла çӳле çĕкленмест унăн, вăйĕ перекетленет. Çул пуçламăшĕшĕнче мĕншĕн çавăнпа тан пымарĕ-ши Васук, тепĕр тесен? «55» çулхи ушкăнра ăмăртакан атлет, Олимп вăййинче медаль илнĕскер, тивĕçлĕн хатĕрленмен терĕ-шим? «Валентин!» – кăшкăрчĕ йывăç хӳтти тĕлнелле çитеспе Василь. Юлташ, куçлăхпаскер, сумкăри кĕленчерен хăмăр шĕвек ярса курка тыттарчĕ – пĕр пĕчĕк сыпкăм çеç, курка тĕпĕнче пӳрне хулăнăш çеç! Веня хатĕрленĕ кофе, пылаксăрскер. Ай, сахал! «Тепринче хамăнне пар!» – кăшкăрса хăварчĕ Василь.

Йывăррăн пырать-ши вăл? Пит йывăр та мар, начар пек те мар, анчах халь ăна ирте пуçларĕç; хăйĕнчен кĕçĕннисемха; хай судья ăна, пĕччен пыраканскерне, сăнать; пасăр ка-

таран куртăн-им ура тӳрленменнине, хăв тĕлӳнтен иртнĕ чух тĕрĕсрех палăрать вăл тесе калас килчĕ çакна Василĕн.

Вăрман варринче пăрăнсан, паçăр хăй тантăшĕ иртнĕ тĕлтех, тепре çӳллĕ пӳллĕ, йăм хура çӳçлĕ, пуçне кăшт айăккалла тайнă çын иртет. Малтан сăн-питне, унтан çурăмне тинкерчĕ Василь – «60» хисеп. Çурмаран уйăрнăн çурри шупка, çурри кĕрен майкăпа, труссийĕ симĕс. Кун хыççăн тытăнса пырасшăнччĕ, тытăнса пыраймарĕ, вĕçертсе ячĕ ăна Василь; уттийĕ пит васкавлă, пур вăя кăларса пынă майлă. Тамалĕши çавскер, тек çитейĕ-ши ăна Василь? Ак кĕçех тепри çурăм кăтартать, кунăн хисепĕ – «65». Ваçук вырăнне йышăнас марскер-ха вăл, çапах унран юлни кăмăла çĕклемест.

Пурне те валли хатĕрленĕ апат сĕтелĕ умĕнче каллех курка тытмарĕ Каврăç: ăна хăй хатĕрленĕ кофĕпе чей хутăшăвĕ, пылакскер, кирлĕ. Хир тăрăхĕнче çумăр каллех çапса пĕрĕхет, çил ыткăнтарса ярать. «Миçемĕш пыран, Василь?» – асфальт çине тухать Толя. Василь халь миçемĕшне калать, Мариновпа Абросима та виç пӳрне кăтартса хăварать. Çирĕммĕш çухрăм тĕлĕ ку. Валентина катаранах ятран чĕнет Василь. Лешĕ васкавлăн куркана сумкăри кĕленчерен шĕвек ярса тыттарчĕ, каллех Веня хатĕрленĕ кофе, пылаксăрскер, каллех пĕр сыпкăм çеç. Умра стаканпа тăраççĕ, сироп пулĕ тесе пĕринчен илсе çур стакан шур шĕвек ӳпĕнтерчĕ Василь. «Вăт, халь чӳхесе антар», – сăмах хушрĕ пĕр арçын вырăсла. Тăр шыв! Тăр шыв кăна! Чарăнса тăмасть, пасар уçмасть ăмăрту çулĕнчи çын. Леш судья каллех тимлĕн пăхса иртterет. Аça çапасшĕ тесе вăрçас килет ăна Ваçукăн, паян миçе çынна юнамарĕ-ши вăл, пит ĕçлĕхлĕскер?

Тем куç хуралса килчĕ. Вăрман хӳттинче, сулхăнра куç хуралса килчĕ Ваçукăн. Ак тепĕр çын иртет, палланăскер пек туйăнчĕ, çапах та икккĕленчĕ, çурăмĕнче – «55» хисеп, тата «Итали» тесе çырнине асăрхарĕ те утта çивĕчлетсе унпа танлашрĕ, хулран, сулахаййинчен, алăпа кăшт сĕртĕнсе систерчĕ Ваçук; лешĕ, вăрăмскер, хура çӳçлĕскер, малтан тĕлĕнсе пăхрĕ, унтан: «У-у, Будапешт!» – терĕ те хавхаланса Василь аллине ик алăпа чăмăртарĕ. Будапештра çирĕм çухрăмра нумай хушă юнашар пĕрле пынăччĕ вĕсем, йăнăшпа Василь медальне Мариона парсан вăл йăнăша тӳрлеттернĕччĕ. Халь тытăнса пыраймарĕ кун хыççăн Каврăç, малтан хуллен-

рех пуçăнни вĕçерĕнсе хăпрĕ, Марио халь хыçра ăçтарахрине те ыйтас килетчĕ унăн, вырăсла та пĕлекенскертен. Кăштахранах Каврăçа Оленев, Владимир хулинчи атлет, иртет. Мĕншĕн кая юлнă ку, мĕншĕн ытла вăрах пуçăннă итнĕ çул Европа чемпионатĕнче çак инçĕшрех иккĕмĕш пулнă, тĕнче чемпионатĕнче çирĕм çухрăмра çĕнтернĕ вăйлă ача, хĕрĕх пилĕк çулхисемпе ăмăртаканскер? Мĕншĕн кашни çаврăмра пĕр вырăнтах иртеççĕ паян палăрăмлисем Васильрен? Ак çурри шупка, çурри кĕрен майкăллă, симĕс труссийлĕ тепĕр çын, «60» хисеплĕскер, çурăм кăтартать Василе! Васкавлă пулăшу евĕрлĕ машина иртет, унта электрон табло вырнаçтарнă, экранра хĕрлĕ тĕспе ик сехет те вун пилĕк минут хисеп мĕлтлетет, çеккунчĕ вылянать, чупать. Тата хĕрĕх минут тертленмелле çула вĕçличчен. Вăрмантан тухнă тĕлти сĕтел патнелле çывхарсанах сас парса аллине тăсрĕ Василь, пепси-кола банки тыттарчĕç ăна. Куç хурални, имшерленни иртрĕ кун хыççăн. Толя тĕлĕнче халь вăл «тăваттăмĕш» тесе çăвар уçрĕ; пилĕк çаврăм вĕçленчĕ, çирĕм пилĕк çухрăм хыçра. Юлашки çаврăма каяспа авăк çĕрте пĕр йăпăрт каялла тинкерчĕ Каврăç, сенкер çи-пуçлă атлет куç тĕлне лекрĕ – Марио! Пĕр ик çĕр метр, ик çĕр ытларах утăмсенче итальянец Каврăç хыçĕнче, урине хăвăрттăн ярса пусать, куçĕпе ăнах тĕллет пуль. Ак вăл çитĕ те, пиллĕкмĕш вырăнах кайса ларĕ-и капла Каврăç?

– Валентин!!!

Тулли стакан, шăпах Ваçук хăй хатĕрленĕ шĕвеке – кофĕпе чей, пылакскерне, тыттарчĕ шаннă çын. Ик çăвар хăвăрт-хăвăрт çăтса антарчĕ Каврăç, тепре сыпрĕ, ыттине куркипе пĕрлех айăккалла ывăтрĕ; ĕçсех ямаллаччĕ, темиçе утăм хуллен утса пырса сыпсах ямаллаччĕ тесе ӳкĕне пуçларĕ кăштахранах атлет. Пит тимлĕ те ĕçчен тӳре каллех куç сиктермесĕр сăнать Василе – мĕн куç ӳкересле çиен: утă тĕрĕс пыни – çĕрпе ялан çыхăнни, чĕркуççи кĕлетке тĕлĕнче тӳрленни – тӳрех хак парăнать вăл пĕлекеншĕн, Василь хăвăрт ăнкарать ăна. Паçăр «55» çулхи итальянец иртнĕ, унпа калаçса илнĕ тĕлтех тепĕр атлет хыçран çитсе хăварать Василе. «Кучумов!» – чĕнчĕ ăна чăваш. Пуçне кăшт пĕкнĕскер, илтеймерĕ-мĕн пушкăрт ачи. «Агля!» – хыттăн чĕнчĕ ăна халь ирттерекенĕ. Ĕпхӳ çынни тăп çаврăнчĕ. «Василь!» – тесе ăна ал пачĕ. «Стадионран

кая юлса тухрăмăр, виç сехет тĕлне тесе çитрĕмĕр – ик сехете куçарнă иккен. Час тапратса та яман иккен-ха сире – эпир çирĕм минут кая юлса тухрăмăр ав. Тем тăваççĕ? Кая юлса тапраннă вăхăта кăларатпăр терĕç», – хăвăрт-хăвăрт хыпарларĕ пушкăрт тус. «Миçемĕш пыран?» – тесе те ыйтрĕ вăл çавăнтах. «Тăваттăмĕш», – пĕлтерчĕ Кавpăç; унтан: «Ав шупка кĕпе мĕлтлетет умра, виççĕмĕш пыраканĕ», – терĕ, анчах куна илтсе ĕлкĕреймерĕ Агля, хăй çеммипе васкавлăн малалла кайрĕ, хыçра ура тупанĕ вĕлт-вĕлт çĕкленсе-курăнса пырать кунăн, леш итальянец евĕрлех пушкăртăн утти. Иккĕшĕ те вĕсем аллă пилĕк çулхи ушкăнра.

Самаях уйăрăлчĕ-ха Агля Васильрен. Пĕр хушă вăрах, сăлай енчен асăрхануллăн пынăскер, хăй хатĕрленĕ ĕçмене ăша янă хыççăн, шăм-шак йывăр пулин те, юлашки çухрăмсене, килте хатĕрленнĕ чухнехилле хăвăртрах утăмлама хистерĕ хăйне Кавpăç. Агляпа ун хушши ӳссех пырать-ха. Мĕншĕн ӳстермелле çав хушша? Мĕншĕн татах тартмалла лешне, шупка-кĕрен тумлине, утмăлтисен ушкăнĕнче виççĕмĕш пыраканне? Çитме çук-ши? Мĕншĕн çитмелле мар? Мĕн калĕ киле таврăнсан администраци пуçлăхне Василь? Мĕнле евитлĕ уншăн укçа куçарса пама йышăннă депутатсене? Çав териех халсăр-им Кавpăç? Умри шăп утмăлта пултăр, ку утмăл тăваттăра, çапах утмăлтисен йышĕнче çулпа асли тесе халсăр курăнмалла-им Ваçукăн? Хăйне хăй хистесе, хăйне хăй  хуптĕрлесе хыттăнраххăн кая пуçларĕ Кавpăç. Ав çул хĕресленнĕ вырăн – пăрăнмалла; акăлчан чылай малта-ха, ик çĕр метр ытларахра, Агля та çитейменха ăна. Кукăр хыççăн час курăнмарĕ те çавскер. Тепĕр судья тинкерсе пăхса юлать.

Вăрмантан тухнă тĕлти апат сĕтелĕнче ĕçмеле-ши, çукши? Ĕçмеле-ши, çук-ши? Хăйăнне, куркара ик сыпкăм юлнине сывласа илсе ăшах янă пулсан тек ĕçмĕччĕ те, халь тем çитмен пек, кĕç-вĕç выçса каяс пек туйăнать. Финиш инçе мар-ха, анчах пĕр выçса кайсан юлашки çухрăм çурăра та хал пĕтнипе ларатăн. Ĕçнĕ хыççăнах шăм-шак лӳпперленетха, тепре çивĕчленме кăшт вăхăт кирлĕ, выçсах кайсан вара?

Ăнтăлать, хăйне хăй васатать, хуптĕрлет Кавpăç. Медальсĕр, металсăр таврăнмалла-им киле? Ахаль утса тухассишĕн çеç килнĕ-им вăл кунта, ултă çул хушши укçа

пулманран ăмăртма та ермешейменскер? Мĕн калĕ килте администратора, ăмăртма яраканне? Ăнтăлать Кавръ, ахлатса, йывăррăн сывласа утăмлать, хăвăртраххăн илĕнсе пусăнма хистет ик урине. Ак тăвалла пек вырăн, сĕвек тăрăх. Çывхарать шупка-кĕрен майкăна, симĕс труссие; çывхарать. Çитсессĕн ун хыçĕнче кăшт канса илÿçĕн пымалла пуль. Килте çуран тата йĕлтĕрпе çӳренĕ чух тăвалласене хăнăхман-им Кавръ? Ак туххăм тенешкел çитрĕ çак кăшт сĕвек вырăнта акăлчана Кавръ. Тепĕр çын юнашар – хура трусси, шурă майка, çурăмĕнче кунăн «80» хисеп – аманнă пекрех хуллен пырать, пĕр çаврăм юлать пулас-ха кусенчен. Çын хыçĕнче пырас та  канас тесен те канаймарĕ, чашлаттарса иртрĕ Кавръ акăлчанран. Халь ĕнтĕ тамалмалла мар, пăрахса хăвармалла хăвна пĕрре иртнине. Умалла тинкерет: тепĕр акăлчанĕ курăнмать-и? «Медаль мĕн хак? Спорт медалĕн катăкĕ мĕн хак?» – шутлать асапланса, хăйне хăй хистесе ăнтăлакан Кавръ Ваçукĕ. Кун пирки вăл калав çырĕ, калав – «Спорт медалĕн катăкĕ мĕн хак?» ятпа.

Вăрмантан тухнă çĕре апат сĕтелĕ патĕнче çын сайралнă, ав çамрăк çын пĕрне ĕçтернĕ хыççăн çул хĕрринчен айăккалла пăрăнчĕ. «А-а-а! – сас парать Кавръ çав вырăна çитерехпе. – А-а!» Çерем лаптăкĕнчи йĕкĕт каялла çавăрăнчĕ, ещĕкрен-и, сĕтел çинчен-и илсе тулли курка тыттарчĕ çулри çынна. Кĕтесрен хире тухнă тĕле ик сыпкăм ĕçсе, сиропа ăша ярса куркана çерем çине ывăтрĕ Кавръ. Халь – тӳр тăрăх, чылай хушă тӳр тăрăх; икке уйăрăлнă хир, вăрман хăртнинчи хир. Сулахайран тинĕс çилĕ пит хастаррăн кастарать, хушшăн-хушшăн алтăрпа ăсса сапнă евĕр çумăр чашлаттарать – тинĕсри штром çапла пуль. Шăрăх чухнехинчен лайăх ку, шăрăх пусать, ку çил, çак пĕрĕхӳ малалла каймa чăрмав кӳрет пулин те шăм-шака пусмасть, пăчăпа пăвмасть. Тăват кĕтесрен çеç мар, айккинчен те тирнĕ номер лап выртнипе кăкăра сывлаттармалла мар хуплать. Ик хир хушшинчи йывăçлăх тĕлĕнче Толя çеремрен çул хĕрринелле тухса Василе сăмах  хушать: «Иккĕмĕш пыратăн-и?» – тет. «Виççĕмĕш», – хуравлать Василь виçĕ пӳрне кăтартса. Хăй шав малалла тинкерет: икшерĕн, пĕршерĕн, пăттăн-паттăн тăсăлнă йыш çинче тепĕр акăлчанĕ е хăйне иртнисенчен иккĕ шех çук-и? Пĕр-ик çынна, аллă-хĕрĕх пилĕк çулхисене, иртнĕ

майăнах Агляна çывхарса пырать Василь. Çил кастарать, ачах ку тĕлелле вăл пит хастарах мар. Агляпа танлашрĕ Каврăç, иккĕн тан юнашар пыраççĕ халь. Çаврăм вĕçленнĕ лаптăкра Мариновпа Абросим хирĕç тухаççĕ. «Иккĕмĕш-и?» – теççĕ. – «Виççĕмĕш. Ăçталла финиш?» – «Тӳрех кай, çул урлă тӳрĕ, вара стадиона пăрăнса кĕмелле. Финишчен пĕр çухрăм юлчĕ», – пĕлтерчĕ Маринов. Куç тĕлне умра хĕрлĕ çутă мĕлтлетекен арка курăнчĕ – 2 сехет те 45 минут кăтартать стартран тухнă вăхăта, çеккунчĕ чупать, мĕлтлетет. «Пĕр çухрăма финиш ăнтăлăвне чăтатăп», – палăртать Василь. Халь ик сехет те хĕрĕх ултă минут иртнĕ, çеккунчĕсем пур, пĕр çухрăмне улт минутра ĕлкĕр-сен, çеккунчĕсене те хушсан ик сехет те аллă виçĕ минутра вĕçлет çула Каврăç. Япăх мар. Ак каллех тĕл-тĕл тăсăлнă çын умра, вĕсене çывхарать, Агля кăшт умарах кайнăччĕ, каллех унпа танлашать Василь, иккĕшĕ юнашар пыраççĕ, пушкăрчĕ Каврăç урнă пек талпăннине кура тĕлĕнсе пăхать ун çине, пакапар тенешкел утăмлать, чăваш пур вăйран хăйне хăй хистесе, пушăпа çаптарса тенешкел, ахлатса сывласа ăнтăлать. Пĕрисене çитрĕç, иртеççĕ, кусем те ытлашши юлсах каясшăн мар. Хир урлă выртакан асфальт ансăр, çапах виççĕн юнашар пыма май пур; кунта халь е иккĕн юнашар, е пĕр-пĕрин хыççăн туртăнса чашкăртаççĕ атлетсем. Хăй пĕрре иртнĕ акăлчана çитерес марччĕ Каврăçăн. Пĕлет вăл: итальянец та хăвалать ăна; эппин, вирхĕнмелле. Мĕн йывăрăш таять-ши спорт медалĕн катăкĕ? Çавракăшĕ, çуптăкĕ? Çил кастарать, çул вĕçленмест. Çухрăм шутне хăвăртлăхпа ăнтăлса пайтах виçнĕ атлет туйса илчĕ: çаврăм вĕçĕренпе килнĕ тăрăх пĕр çухрăмран иртсе кайрĕ. Лăпланмалла-и, хулленленмелле-и? Вĕçленет пулĕ-ха çулĕ, тепĕр çур çухрăм пулсан та чăтас пулать тытăннă хăвăртлăхпа пырассине. Умри çынсене каллех çывхараççĕ пĕр утăм иртсе е юлса, е юнашар пыракан Агляпа Василь. Чăвашĕ лăпланмасть те, тӳсет те, пушкăрт та – финиш хăвăртлăхĕнче. Стадиона çаплах пăрăнса кĕмен. Çул тепре кукăрăлса илчĕ; Василь хăвăртлăхне чакармасть, ик çухрăм ытла килет халь вăл хĕрӳ хăвăртлăхпа. Чим, умра шупка-кĕрен майкăллă пӳ-си мар-и çав? Акăлчан! Утти мăранланнă. Тата ытларах вăй кăларса тилмĕрет Каврăç. Çывхарать çавна, икĕ çынна иртрĕ-ха, кусем çамрăккисем. Ум-

рах çурри шупка, çурри кĕрен майка. Мĕншĕн лутра пӳллĕ пит, Каврăçран паçăр иртнисем иккĕшĕ те çӳллĕскерсемччĕ-çке. Куç ултавĕ пуль, патне çитменрен пуль. Ăнтăлать Каврăç. Агля та юнашар. Хыçри ан çиттĕрччĕ, хыçри те инçене юлман-тăр. Ункă евĕрлĕ çаврăмра каялла пăхрĕ Ваçук – туртăнакан йыш пур, анчах çумăр пĕрĕхнĕрен, ăмăр çанталăкран нихăшне те уйăрса илеймерĕ Ваçук. Лешĕ халь умрине, хăй çулхи ушкăнрине ĕнтĕ палах, хăвалать. Çул пăрăнчăкĕ. Умра пĕр аллă метрсем-и тăрăх; унта арка курăнать; эппин, çул вĕçĕ. Лешне çитсе пулмарĕ, çитеес çук. Тепĕртаках хушă пулсанччĕ. Ал сулнăн лăш лăпланчĕ Василь. Ак çапла сывлăш çавăрса илесле темиçе утăм тунă хыççăн – умри аркăри хĕрлĕ мĕлтлетӳре виçĕ сехет те пĕр минут та хĕрĕх ултă çеккунт куç тĕлне лекнĕ самантра – унпа сулахай енчен чашчаш утăмпа атлет танлашĕ. Кăвак майкăпа труссийлĕ çын кун çине, Ваçук ун çине куçранах пăхса тинкерчĕç. Марио! Ăçтан вăй тухрĕ-ши, епле ăнтăлчĕ Василь – йĕртен итальянецран маларах каçса кайрĕ.

Фарфор катăкĕ – медаль тыттараççĕ пĕчĕк çеç целлофан кĕсьепе; çав хĕрех пепси-кола банки парать; медаль тухса ӳкет – ăна пĕшкĕнсе илет, шывне ĕçме васкамастьха, карлăк çине ӳпĕнет Каврăç. Веньăпа Олег кунтах, вĕсем хăйсен ентешне: «Шăнса ан кай, атя», – тесе хистеççĕ. Ваçук карлăк çине ӳпĕнсех тăрать, çил çапать, кас-кас çумăр ӳкет. «Атя, шăнса ан кай», – теççĕ ăна. Каврăç сывлăш çавăраймасть; ӳт вĕри – ăçта унта шăнса кайма – ӳт вĕри мунчара лапка çинче пăспа çапăнса тухнă хыççăнхилле вĕри. «Шăнса ан кай!». Ура лаппийĕ хăйĕн мар пек. Кроссовкăна улăштарас килет, хывса пăрахса çара уран утас килет. «Дистанци йывăр килчĕ», – çăвар уçать Каврăç. «Пуриншĕн те йывăр», – тет ăна кунтах Женя белорус. «Атя автбуса, шăнса каятăн». «Иккĕмĕш пултăн-и?» – ыйтать Веня. Мĕншĕн кашниех иккĕмĕш теççĕ? Каврăç ушкăнĕнчен пĕри тухса ӳкмен-ши, е хăшне те пулин дисквалификациленĕ. Тухса ӳкме кирлĕ мар – çирĕпскерсемччĕ; çулран пăрма кирлĕ мар – сăлайĕсем лайăхчĕ; çавăнпа миçемĕш пултăн тесен пат татса калаймасть-ха Каврăç, протоколта курăпăр тет. Веня ăна белоруссен автобусне çавăтса каять. «Ăçта Валентин? Ма çук?» – ыйтать вăл. «Ачи лайăхскер-ха,

опычĕ çитмест», – хуравлать Василь. «Мана пĕрре те ĕçме памарĕ, – пĕлтерет Олег. – Те паллаймарĕ». Веня Валентина укçа-тенкине парса хăварнăччĕ, çавăнпа ăна вăшталанса кĕтет. Белорус хĕрарăмĕ, çирĕм çухрăма ăнăçлăн утнăскер, Василе телогрейка парать, ку трусси хывса брюки тăхăннă чух çурăмпа çавăрăнса тăрать. Валентин çитет. Кроссовка улăштарса тăхăнмалла Василĕн. «Кайран, хамăр автобусра улăштаратăн, ятарлă автобус тапранса каять», – васкатать кăштахранах Валентин, вара ăна аманнă çын пек хул урлă тайăнтарса ертсе пырать хăйсем пурăннă вырăна таврăнмалли автобуса.

Çири çи-пуçа мар, урари кроссовкăпа нуские улăштарса тăхăнсан тин сывласа илнĕ пек туйрĕ хăйне çын, ура утма та пултарать халь. Коридорта уткаласан, чăнах та, утти çемĕçрĕ Vаçилĕн.

Çынсем çывăрма выртнă, Кавăç вăрăм коридорта ура çемĕçтерет – кумать. Ав фойе пек вырăнта Америка атлечĕсем тăваттăн-пиллĕкĕн, хĕрарăмĕсем те, арçынĕсем те пухăннă, Ваçука сăмах хушаççĕ, пĕр-пĕрин чĕлхине пĕлмеççĕ; пĕр арçынĕ, аллă çулхипе ăмăртнăскер, утаканскерех-мĕн. Ваçук та хăйне утакан тет те, лешсем ăна спорт мелĕпе утса кăтартма ыйтаççĕ. Ку хăй чăнласах утавçине ĕнентерет – виç утăм тусанах паллă вăл. «У-у», – мухтаççĕ сăлайне. Пӳрнепе стена çине çырса хăй мĕн вăхăтра утса тухнине пĕлтерет Василь: виç сехет те пĕр минут та аллă-и çеккунт. Лешĕ хăйĕнне калать. Кăшт маларах çитнĕ иккен американец, аллă çулхискер. Ваçук ăна хăйне асăрхаттару панине те стена çине пӳрнепе йĕр туса кăтартать, ниепле те ăнкараймасть лешсем мĕн пĕлесшĕнне; хĕрарăмĕ сăнне те çыпăçтарнă документ кăтартать, хăйĕн ятне-шывне вулать. Чухлаймасть Василь. Лешсем тĕлĕнеççĕ кунран. Çавăнтах тавçăрчĕ те: «Эсĕ мĕн ятлă? Эпĕ – Василий Каврăç», – терĕ хучĕ чăн акăлчанла, шкулта ют чĕлхе учителĕ калаттарнине асра тытса. Лешсен пичĕсем çуталчĕç, «Василь, Василь» терĕç. Унтан тепĕр сăмах хушрĕç те, каллех хуравлаймарĕ Каврăç – çыннин пĕтĕм сăмахĕ иксĕлчĕ. Пӳлĕмрен вырăс турисчĕ тухса тепĕр пӳлĕме кайрĕ, кĕске хуллă кĕпин çурăмĕ çине «ЦСКА» çырнă, ăна чиперех вуларĕç акăлчан чĕлхеллисем, анчах Ваçук ку армеецсен спорт клубĕ иккенне ниепле те ăнлантараймарĕ,

çар министрĕн ятне асăнсан та тĕшмĕрттерме пултарайманĕ. Кăштахран хăйне Чăвашран эпĕ, Шупашкартан, Атăл хĕрринчен. Николаев космонавт текелесе перкелешрĕ те, кусем: «Вольга, Вольга, астронавт Николаев», – тесе хавасланчĕç.

Çапла американецсемпе ăнланни-ăнланманни перкелешсе çулри, ăмăртури çĕкленĕве, нерва хĕлĕхĕсем карăннине ирттерчĕ Каврăç.

«Юра хăвăнтан иртме пултарасран шикленместĕн-и? Хытă кайрĕ вăл – иртĕ те лайăх вăхăт кăтартĕ. Стартран кая юлса тапрантăмăр тесе вăрçса пыратчĕ пит», – сăмахлать Валентин пӳлĕмре. Каврăç алă сулать: «Уйрăм пилĕк çухрăмне те вăтăр минута çывăх тухаççĕ вĕсем», – тет хăй тантăшĕсем пирки ним шухăшламасăр.

* * *

Вуласа тухнă кĕнекене юлашки страници хыççăн хупсан шухăшлатăн, пĕтĕм лару-тăрăвне тепре ăшра йĕрлесе тишкеретĕн терĕмĕр-и? Пирĕн те Каврăç епле утнине аса илсе тишкермелле пулĕ-ха. Анчах ăна пурнăçлама вăхăт çитейрĕ-ши, ерçейрĕмĕр-ши, ытти-хăттинчен пушанайрăмăр-ши? Иккĕмĕш кунне Валентинăн ăмăртмалла – çирĕм пилĕк çухрăма чупмалла. Пин çын ытла вĕсем çав инçĕшре вăй виçекенсем. Валентина пулăшмашкăн старт вырăнне каймалла.

## *Пуçа – чукмар*

– Калиса, эсĕ ман умра мар, ман хыçра пулнă-им вара?

– Сан хыçра.

– Санран кайра пычĕ. Эсĕ хăв ӳсĕмрисем хушшинче малтанхи çаврăмра пĕр минут ытла малта пытăн, – çирĕплетет Валентин. – Картара хупăнса пурăннă хыççăн ирĕке тухнă тихалла вирхĕнтĕн.

– Карăнтарнă çипрен кăларса янă ухă йĕппилле пуль. Калиса, эс ман хыçра пулнине пĕлес пур, эпĕ унашкалах хыттăн вирхĕнместĕм малтан. Эп сана шав умра тесе шутланă. Хамран ик-виç хĕрарăм иртсен сана çитеес çук-ха ку-

сем тесе пытăм. Мĕн вăхăтра утса тухнă эсĕ çирĕм çухрăма?

– Сехет те аллă пĕр минутра.

– Эп вара çав тĕле санран малта пынă-и? Юлашки вун çухрăмĕнче çитмĕл минут ирттертĕм пулать-и?

Хĕрарăмсем тăвата çаврăм хыççăн тӳрех садиона пăрăнса кĕнĕ, арçынсем ав уллтăмĕш çаврăм хыççăн тӳртен кайса самаях утăмларĕç асфальт тăрăхĕпе, кукăр-макăрĕпе. Тен, çулĕ вăтăр çухрăмран та вăрăмрах тухрĕ çавна май.

– Сирĕн уна хăть вăрманта канса тăр та тепре сиксе тух – малалла кай е стартченех вăрманне кайса тăр – регистрацилемерĕç, – пуплет Валентин.

Автобуспа хăйсем пурăнакан вырăнтан ăмăрту ирттерекен тĕле çитрĕç атлетсем. Хула варри, пысăк тăваткал лаптăк; тăвата енчен те пилĕк-ултă хутлă, пит капăр, çав тери илемлĕ керменсем ретленеççĕ; лаптăк варринче – палăк: çар пуçĕ юлан утпа пыракан кӳлепе. «Керменсен лаптăкĕ» ятлă ку вырăн. Оленев, Юра килтен илсе килнĕ таварсене сумкăран кăларса хунă – сутасшăн, тăкака саплаштарасшăн. Оленевăн ӳкерчĕклĕ шкатулкăсем, матрӳшкесем; Юрăн матрӳшке, тĕрлĕ йышши теттесем.

– Çул укçине саплаштарасшăн та, тавар каймасть, – калаçать Оленев Мариновпа, лешĕ ун патне пырса тăрсан. Агля та алăпа матрӳшке йăтса çӳрет, туянмашкăн сĕнет.

– Эс мĕншĕн илмерĕн хăв матрӳшкӳсене? – тинкерет Валентин Василь енне.

Пĕр харăс икĕ ĕç тума май çук, паян ман сана пулăшмалла, – яваплать Каврăç. Вăл фотоаппарачĕпе çак лаптăка хăй кашни енне тăрса, палăк умĕнче те пулса аппарата çынна парса сăн ӳкерĕнет. Çынсем курăнакан кассетăсемпе çапаççĕ, кодек валли ӳкереççĕ. Калисăн тĕрлĕ тĕслĕ ӳкерекенни; полариотли те пур – кашниех çак чаплă вырăна асăнмалăх сăн ӳкерсе юласшăн.

– Василь, сан хура-шурă кăларать, хамăрăн ачасем чупнине ӳкерме тăрăш, – сĕнет Маринов. Пĕлет Василь: хура-шурă хаçат валли юрăхлă.

Лапам тулли çын, пурте спортсменсем. Чылайĕшĕ кусенчен халь çирĕм пилĕк çухрăма чупма хатĕрленет. Полицейски Оленевпа Юрăна япала сутма юрамасть кунта тесе асăр-

хаттарать; кусем тавара сумкăна хуллен пуçтараççĕ, лешĕ пăрăнсан каллех пĕр-ик япалине кăлараççĕ. Василь вĕсене полицейски пăхсах тăнине систерет, каллех пуçтараççĕ япаласене ачасем сумкăна.

– Сутăнмасть, сутаймарăм, – калаçать Оленев Мариновпа.

– Тен, таврăнасшăн Польшăра сутайăн.

– Эпир стартран кая юлса тухрăмăр. Мышловăн вăхăтне Блокнотов çирĕм минут кăларттарнă, вара çавăн икĕ сехет те аллă пилĕк минут пулса тухать, – пӳлĕнсе ларасла чыхăнуллăн евитлет Юра Василе. Каврăç чĕнмест, ăнланма çеç тăрăшать, «электрон контроль пулнă пул-ха», – тесе шутлать вăл.

– Командăн – медаль... – хыпарлама пикенет Юра.

– Тулли команда пурĕ те виççĕ çеç. Пирĕн çав-çавах медаль пулать. Акăлчансем – тăххăрăн, пур пĕрех малти виççĕшне илеççĕ. Пирĕн тата нимĕçсен. Кусем шăп виççĕн, – старт протоколне тишкернĕскер, ăнлантарать Василь тантăшне.

– Блокнотов... Мышловăнне... – пăлханнипе уçăмлăн калаймасть Юра. Ку вăл Мускав ачинчен малта пынă, финиша лешне самаях хăварса çитнĕ.

Буклетра старт вăхăтне улăштарнине – вун пилĕк сехетрен вун тăватта куçарнине эп кураймарăм,– тет кăштахран Василь Агляна.

– Пур. Кайран тĕллеттерчĕç, – евитлет пушкăрт.

Чупакансем старта хатĕрленеççĕ, оркестрантсен маршĕ площадьпе хăватлăн сас парса иртет, кĕтесе çитсен таврăнать, тепре хутлать – çĕкленӳллĕ сас, çĕкленӳллĕ кĕвĕ; кĕретĕнех курăмлă тăхăннă çи-пуç. Спортсенĕсем те капăр тумпала. Ирхи вун сехет. Хĕвеллĕ кун. Çапах шăрăх мар. Уйра çил пулĕ те, кунта вăл кĕреймест – тăватă енчен те юмахри пек капăр кермен çине кермен хӳтĕлет. Радио микрофонпа старта чĕнсе йыхравларĕç ĕнтĕ, темле-темле чĕлхесемпе – акăлчанла, нимĕçле, французла, фламандла калаççĕ пуль пĕр сăмахах; вырăсла шарламаççĕ. Маринов, акăлчан тата нимĕç чĕлхисене аван пĕлекенскер, вырăс ачисене хăшĕсене старта чĕннине пĕлтерет. Хĕрарăмсен ав кăнтăр енчи çурт тăрăхне, асфальт лаптăкне пухăнмалла. Миçе

çĕр çын-ши кусем? Колоннăпа вырнаçаççĕ. Хаваслă çухăрашу, çĕкленӳллĕ сас-чӳ. Ракета сассипе кĕшĕлех тапранаççĕ чупупа. Пĕтĕм площадь тавра çавăрăнса çак юмах тĕнчиллĕ капăр вырăнтан тухса каяççĕ – хула тулашĕпе, уйпа вăрман тăрăхĕпе çавăрăнмалла вĕсен; финиш стадионра пулмалла.

Япаласене номерпе автобусах парса хăвараççĕ. Валентин çири тумне Василех сумкăна чиксе тыттарать, унтах ĕçме хатĕрленĕ кофе те.

– Сана хăш тĕле çитсе пулăшайăп-ши? – майне пĕлесшĕн Василь.

– Ман пуç кăшăлĕ пур, – тет Валентин. Çӳçе пуçтарма ачи ку кăшăл тунă, унта кайăк çунаттин тĕкне тăрăнтарса лартнă – катаран тӳрех асăрхаса палласа илетĕн.

Арçынсен йышĕ пушшех пысăк, малтисем площадьпе çаврăнса хуланалла, хирелле тухса кайрĕç умра ертсе пыракан мотоцикл хыççăн; вĕçĕ çур площаде те çитмен-ха.

Ватăсем ăмăртаççĕ, ватăсем старта тухнă, этсемри! Мĕн илĕртет-ши вĕсене? Валентин ӳсĕмĕнчех – аллă пилĕкаллă тăхăр çулхисем – çĕр сакăр вун сакăр çын терĕмĕр ав. Пĕрремĕш вырăн пĕрре, иккĕмĕш вырăн тепре, виççĕмĕшĕ – каллех тепре çеç. Ку вырăнсене йышăннисен ячĕсене хăть кайран вырăнти хаçачĕсенче асăнĕç. Кашни пилĕк çул хушшилĕх ӳсĕмре пĕрер çĕнтерӳçĕ-ха, анчах кашни тантăш ушкăнрах мĕн чухлĕн вăй виçеççĕ! Каврăç килместчех малти виççĕмĕш вырăншăн кĕрешеймест пулсассăн.

Старт илнĕ атлетсем Кермен лапамĕнчен куçран çухалсан хăш автобуспа ларса каймаллаччĕ-ши стадиона çитме тесе пăхкаларĕ Каврăç.

– Хамăр автобуспа каятпăр. Кунтан инçере мар пирĕн автобус,– сăмах хушать Василе çӳллех мар пӳллĕ, хытканрах сăн-питлĕ, сăрă костюмлă арçын. Ку ĕнтĕ шăпах пĕр йыша Мускавранах автобуспа йĕркелесе килнĕ Блокнотов пулчĕ. Тӳрех утмарĕç-ха. Кусем – Юра, Оленев, Агля, тепĕр ик-виçĕ çын – хăйсен йышĕнчи хĕрарăма кĕтсе тăраççĕ ав. Самай вăхăтран çитрĕ лешĕ, старт вырăнĕнче такампа сăмахласа тăнăскер. Вырăс атлечĕсем çуран утрĕç автобусĕ патне чылай хушах. Блокнотов Каврăçпа юнашар пырать, инçе мар, ав çавăнта текелет, урам урлă каçаспа светофор хăш тĕс кăтартнине асăнса сăмахлакалать, Каврăçпа тем çывăхланас-

шӑнни сисӗнет. Василе те унӑн сасси темӗнле хальчченех илтӗ пек, пӗлнӗ пек туйӑнать.

Автобуссем тӑракан вырӑн. Аллея евӗр йывӑҫ хушшинче иккен Блокнотов ушкӑнӗн тапӑрӗ. Палаткӑсене пуҫтарса багажника вырнаҫтарса хучӗҫ, ҫапла май самай вӑхӑтран ҫеҫ тапранмалла пулчӗ. Вӗсем стадион патне ҫитнӗ ҫӗре чупакансен ҫул пусӗнчисем финишалла ҫывхарма вӑхӑтчӗ ӗнтӗ. Арҫынсем тапранса каяс чух Василь ракета сассипе секундомерне янӑччӗ, атлетсем ҫул ҫинче мӗн вӑхӑт пынине пӗлет вӑл, хӑйӗнчен ыйтнӑ май Блокнотова та евитлет ав. Автобусран тухсанах пушӑ лаптӑк урлӑ талпӑнчӗ Василь. Хӑйӗн кӑтартӑвне тӗп-тӗрӗс пӗлме стадиона секретариат пӳлӗмне кӗме шутларӗ вӑл, анчах аренӑна епле иртмеллине чухлаймарӗ, ав тата чупакансем те курӑнчӗҫ: урапа ҫулӗ сарлакӑш сарнӑ асфальтпа килеҫҫӗ йӑлт-йӑлт-йӑлт талпӑнса. Айӑкра, ҫерем ҫинче ҫын ҫине ҫын тӑрать – иртекенсене сӑмах хушаҫҫӗ, хавхалантараҫҫӗ, сӑн ӳкереҫҫӗ. Василь тата кӑштах хирӗҫлерех кайрӗ, хӑйшӗн сӑнама меллӗ вырӑна тӑчӗ, фотоаппаратне ӳкермелле хатӗр тытрӗ. Акӑ хӑйсен йышӗнчи ҫамрӑкраххи, Василь ҫӗтсе кайсан Лама проспектне хирӗҫ тухни, иртет, катаран паллаймасӑр сӑн ҫапма ӗлкӗреймерӗ ӑна Каврӑҫ, вӑхӑт каларӗ ҫапах: сехет те вӑтӑр виҫӗ минут!

Йыш килет – арҫынӗ те, хӗрарӑмӗ те; вӗҫе-вӗҫ тӑсӑлса та, юнашаррӑн кӗпӗрленсе тенӗ пек те. Умри пӑрӑнчӑка сӑнать чупакансене хирӗҫле Каврӑҫ, авӑ кайӑк тӗкӗ – киносенчи индеец евӗрли курӑнчӗ; майки атлетӑн шакет евӗрлӗ шалпар, уҫӑмлӑ, зебр пек шурӑ-кӑвак улаллӑ. Сӑн ҫапса илме ӗлкӗрчӗ хӑй тӗлне чупса ҫитсен ӑна Каврӑҫ, вӑхӑтне кӑшкӑрса каларӗ: «Пӗр сехет те хӗрӗх виҫӗ минут та вун сакӑр ҫеккунт! Часах стадиона кӗретӗр, финиш инҫе мар!» Валентин ав пӗрлехи йышран иккӗшне-виççӗшне иртех пуҫларӗ.

Василь финиш тӗлӗнчи стадион хапхи патне пынӑ ҫӗре Валентин решетке хӳме витӗр курӑнчӗ: аллине пепси-кола банка тата финишра паракан фарфор медаль тытнӑ. Йыш хушшипе ҫавӑрӑнса тухрӗ вӑл хӳме тулашне.

– Стадиона кӗрсен, юлашки виҫ ҫӗр метрсенче, темиҫе ҫынна иртрӗм, – калаҫать хӑй, – унчченхи хамӑн вӑхӑта са-

май лайăхлатрăм. Ытлашши хуллен пуçăнтăм пулмалла. Иртерех тытăнмаллаччĕ хăвăртлăха ӳстерме.

– Апат сĕтелĕнче ĕçрĕн-и?

– Аха, эс çитейместĕн пуль терĕм. Малараах вăхăт каламалла пулнă, татах лайăхрах тухма пултарнă, – çын шав калаçать, кĕрешӳ çулĕ çинчех унăн чунĕ-чĕри; хавхаланать, хĕпĕртет этем. Мĕн чухлĕ çын, çавăн чухлĕ кăмăл, çавăн чухлĕ шăпа тесе шутлать Каврăç, кашни хăйĕншĕн паттăр, çырас пулсан герой сăнарĕ.

Çири тумне тăхăнчĕ Валентин, стадиона тĕп аренăна кĕрсе ларчĕç вĕсем иккĕшĕ. Финиша çаплах килеççĕ атлетсем, чупакансем; куракан йышран кăшкăраканĕ, хавхалантараканĕ тупăнать те, пĕри хăвăртлăхне ӳстерет, хăй умĕнчине иртет. Акă иккĕн килеççĕ, пĕрин аллинче туя, ăна çĕре кăшт тĕкĕнтеркелесе умра тытса пырать; юнашар тепĕр хĕрарăм – иртмест-юлмасть çумринчен. Хура куçлăх тăхăннă туялли. Суккăр иккен. Суккăрскер çирĕм пилĕк çухрăма халăх йышĕпе чупса тухать. Трибуна çинче ларакансем вăл финишалла пынă чух кĕретĕнех хыттăн алă çупаççĕ. Этем... Хăй этем иккенне туять-тĕр çак суккăр çын, вăрăм инçĕше чупассипе ăмăртма хутшăнса. Çапла шутласа илнипе Ваçукăн сисмесĕрех пит тăрăх куççулĕ йăрласа анать.

Стадионăн тĕп арени енне каçса секретариата кĕресси пулмарĕ Каврăçăн. Таврăнмашкăн ĕнерхи вырăнтах кĕтсе тăрать кусене автобус.

Пӳлĕмре кăштах апатланнă, каннă хыççăн тăватă сехет çурăра каялла, ăмăртăва савăнăçлăн вĕçленĕ тĕле – пилĕк сехете илсе кайрĕ автобусах.

Миçемĕш-ши-ха Василь вăтăр çухрăмра хăй ушкăнĕнче? Мĕншĕн ăна иккĕмĕш мар-и текелерĕç? Хăйĕнчен иртнисенчен иккĕшне тепре çитсе хыçа хăварманччĕ-çке, тата Юра паçăр Мышлов вăхăтне Блокнотов ыйтнипе ик сехет те аллă пилĕк минут тунă тесе халапларĕ. Электрон контроль пулнă пуль.

Валентин чунĕ хăй чупса тухнă çул çинчех. Иртерех пуçăнмаллаччĕ хытăрах кайма, киле таврăнсан хамăн хальчченхи вăхăта лайăхлатнине каласа паратăп текелет. Ак çитрĕç вĕсем каçхи пиллĕксемпе стадиона. Арена çумĕнче пысăк манеж иккен. Церемони унта иртет. Манеж варри тă-

ваткал сĕтелпе лăк тулли, вĕсем хушшинче, пукансем çинче, тăватшарăн, ултшарăн çын ларать – атлетсем; айăкри ретре – суту-илӳ вырăнĕсем: ĕçмели-çимели е сувенир туян, тархасшăн. Чылайăшĕн сĕтелĕ çинче хĕрлĕ е шурă çемçе эрех; лăпкăн калаçаççĕ, хăнари пек шăкăлтатаççĕ ăмăртăва хутшăннисем. Валентинпа Василь манеж пĕр пуçне – трибуна çине вырнаçрĕç. Валентинăн пушшех ларма-тăма канлĕх çук. ак вăл: «Пирĕннисем ăçтарах вырнаçрĕç? Эс кунтах пул», – тесе тăрса утрĕ. Сăн та ӳкерĕнчĕç-ха манеж варри те курăнмалла. Каврăç аллинче целлофан пакет, унта пĕчĕк калăпăшлă «Зенит-35» фотоаппарат. Валентин çавăрăнса килнĕ çĕре Каврăç та ăна хирĕç çĕкленчĕ. Агля, Юра кунтахмĕн. Веньăпа Олег ентешсем те пĕрлех. Пысăк экранпа телевизор янă: утакансене кăтартаççĕ. Çул пуçĕнче умра мĕн пур ушкăна Веньăпа Олег ерсе пыраççĕ. Шупка тумли, çӳллех мар пӳлли Олег-мĕн. Чăваш ачисем пĕтĕм çул тăршшĕпех – малта. Юлашки пилĕк çухрăм юлсан тăваттăн-пиллĕкĕн иртеççĕ вĕсене. Ентешсем, пĕр ялта çуралса ӳснĕскерсемех, финиша юнашар – пĕр пек вăхăтпа çитеççĕ. Веня 45 çулхисен ушкăнĕнче француз хыççăн иккĕмĕш, Олег 40 çулхисем хушшинче пиллĕкмĕш вырăнсене йышăнаççĕ.

Василь телевизора тимлĕн тинкернĕ вăхăтра Юра ăна картах сиктерчĕ.

– Ак, Мышлов... Мышлов... Ун вăхăтĕнчен çирĕм минут кăларнă, – уçнă буклета пӳрнипе тĕксе калать, йĕркеллĕн ăнлантараймасть те.

Маринов Каврăçа талон парать – унпа инçех мар вырнаçнă сĕтел умне пырса хатĕр протокол кĕнекине – 20 тата 30 çухрăмсене утнисенне – илет Василь, часах хăйсен ӳсĕмĕнчи малти пилĕк çын вăхăчĕсене çырнă страницăна тупать. Мышлов иккĕмĕш йĕркере! Ик сехет те аллă пилĕк минут та çирĕм тăватă çеккунт ун вăхăчĕ! Пилĕк çухрăмри дистацие çирĕм çичĕ-çирĕм сакăр минутсенче тухаканскер халь вăтăр çухрăмра кашни пилĕк çухрăмне çав хăвăртлăхпа хыçа хăварнă пулать! Тĕнче! Тĕнче чемпионатĕнче! Каврăç хушамачĕ, ячĕ-шывĕ – тăваттăмĕш йĕркере: виç сехет те пĕр минут та аллă ултă çеккунт. Марио итальянец унран ик çеккунт юлнă. Пăлханса кайрĕ Василь Васильевич. Вăл буклета хутаçа чикрĕ те аяккалла пăрăнса утма тăчĕ – ăна пĕри, тепри

алăран тытать, «лăплан, лăплан» теççĕ. «Ан кай! Ниçта та ан кай – команда пĕрремĕш вырăнта, – çанăран тытать Каврăçа Блокнотов. – Акăлчансенчен иртнĕ». Василь Васильевич чарăнма шутламасть-ха, ăна церемони тапраннă сцена енне ан кайтăр тесе çула пӳлнĕ-картланă тăраççĕ. Ваçук каялла çаврăнчĕ, манежра сĕтелсем хушшипе иртет, куçпа шав шырать чăнласах хăй ушкăнĕнче умра пулнисене. Марио итальянеца та шырать – куçпа хыпашлать сĕтел хушшинче ларакансене; акăлчансене те, итальянецсене те тупаймасть, пĕри те куç тĕлне лекеймест. Чĕлхе пĕлсен ăнлантарĕччĕ-ха вăл. Ак акăлчансем пĕр сĕтел хушшинче – тăваттăн, анчах кусем чупассипе ăмăртакансем пулчĕç, Василь ыйтăвне ăнланаймарĕç, пĕлместпĕр тенĕн хул пуççийĕсене сиктеркелерĕç çеç. Тепре те çаврăнчĕ, виçĕмĕш хут та пĕтĕрĕнсе çӳрерĕ тăватшарăн ларнă сĕтелсем хушшипе чăваш – хăйне кирлине тупаймарĕ; иккĕмĕш вырăнтан виççĕмĕшне сикнĕ акăлчана курас пур ăнлантарĕччĕ; лешĕ, чĕлхе пурри, йăнăша тӳрлетмешкĕн тимлĕччĕ тен. Марио та тăваттăмĕш вырăнтан пиллĕкмĕшне чакнă-çке-ха. Ултă çул каялла Будапештра йăнăша итальянецсем хăйсемех тӳлеттернĕччĕ, халĕ çул çинче иртнĕ «55» ушкăнпа ăмăртаканни – Пьеро Андреотти та – курăнмасть: килĕсене тапранман та-ши кусем? Кăвак çӳçли, пĕрремĕш пулни, ирландец иккен. Çавна, кăвак çӳллĕскерне те тупаймасть Ваçук. Хăй умĕн çитни утмăл пиллĕкри иккен, виç çеккунт маларах ĕлкĕрнĕ-мĕн Васильрен пĕр çул аслăскер. Васильрен хĕрĕх тăвată çеккунт маларах çитнĕ утмăл-утмăл тăвата çулхисем хушшинче тĕрĕссипе иккĕмĕш вырăн йышăнни, халь виççĕмĕш йĕркере. Кусем хушшинче урăх никам та финишчен пулман. Иккĕмĕш акăлчанĕ Васильрен минут та вун ултă çеккунт, вĕсеннех виççĕмĕшĕ тепĕр вун икĕ çеккунт каярахран çитнĕ ав. Вĕсене пурне те Мышлов хĕссе пĕрер вырăн кая чакарнă. Пилĕк çухрăма ăмăртнинчен çивĕчрех хăвăртлăхпа утса тухнă пулать вăтăр çухрăма Мускав ачи. Протоколта хăй çывăхĕнчи çынсене кун çинчен евитлеме, тĕрĕслĕхе çиеле кăларма хыпăнать Каврăç – вĕсене пĕрне те тупаймасть. Манежра çавăрăнса-пĕтĕрĕнсе çӳренĕ хыççăн варринчи юпа-колонна тĕлĕнче чарăнчĕ вăл: унта – вырăссем. Мышлов сĕтел хушшине самай юпа çумне ларнă, сӳнтĕк пек курăнать.

– Лӑплантӑн-и? – пӑхать Блокнотов Кавӑҫ енне. Кавӑҫ Мышлова куҫран тинкерет те:

– Медале мана паратӑн, – тет ирӗксӗртен тенешкел.

– Сана пулать, – хуравлать Блокнотов.

– Илме улӑхатӑп.

– Сана юрамасть – палласҫӗ. Хам улӑхатӑп – сана паратӑп.

Мариновпа Абросим та кунтах.

– Эс – виҫҫӗмӗш, парне сана пулать, – ҫирӗплетет Маринов.

– Команда – пӗрремӗш. Икӗ медаль, – хушса хурать Абросим.

Сцена евӗр йӗркеленӗ ҫӗрте пӗр арҫын микрофонпа тем калать, калать, сасӑ манежра янӑра-янӑра каять, хушаматсене те аран-аран илтсе юлатӑн. Малтан вунӑ ҫухрӑма чупса ӑмӑртнисене чысласҫӗ – хӗрарӑмсене, арҫынсене. Медаль пачӗҫ пулас. Унтан турилкке пара пуҫларӗҫ. Пӗр-пӗрин ҫине хурса купаланӑ виҫӗ юпа пекех курӑнать, ҫавсенчен илсе парасҫӗ. Вӑтӑр ҫухрӑма утнӑ арҫынсене чӗнсе кӑлариччен самай вӑхӑт иртрӗ. Маларах ҫамрӑкраххи Веня улӑхать. Алӑри пакета Олега тыттарать те ентеше сӑн ӳкерсе илет Кавӑҫ. Утмӑл ҫулхисене чӗнсен Мышлов вырӑнне Алтай ҫынни Филипч, чупаканни, улӑхрӗ, ансассӑн турилккене Блокнтова тыттарчӗ. Лешӗ: «Кайран, командӑпа илнӗ хыҫҫӑн паратӑп»,– терӗ Кавӑҫа. Ваҫук сцена умне варринерех пычӗ, пӗремӗш вырӑн йышӑннине, йӑрӑм-йӑрӑм кӑвак ҫӳҫлӗ Инго ирландеца саламласа ал тытрӗ; лешӗ эс хӑв мӗн енпе ӑмӑртрӑн тет пулас. «Валк», – хуравлать Василь. Протокол чикнӗ пакет унӑн Олегра-ха, ҫын хӑш ушкӑнрине ыйтать. Пӳрнепе «60» йӗрлесе кӑтартать Кавӑҫ Ингона. Пилӗк, вунӑ ҫухрӑмсенче малта пытӑм, эс мана виҫҫӗмӗш ҫаврӑм варринче иртрӗн тет пӳрнепе йӗрлесе. «О-о», – тавҫӑрса илчӗ ирландец. Хӑйсен ҫӗр-шывӗнчен вӑл пӗчченех, ҫавӑнпа команда пулаймасть. Ваҫук хӑйӗн яте-хушаматне каларӗ, протоколта кайран куратӑн терӗ. Ӑнланчӗ пуль, пӗтӗмпех тӗшмӗртеймерӗ те пуль ирландец. Акӑлчан куҫ тӗлӗнчен вӗҫерӗнчӗ.

Командӑшӑн паракан парнесене – иккӗмӗш турилккесене сцена айккинче кӗтсе тӑраҫҫӗ вырӑссем. Кунтах – белорус

хĕрарăмĕ, аллă çулхисен йышĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннăскер, Ваçука ывăннă хыççăн автобусра телогрейка тăхăнма пулăшнăскер. Ваçук ăна ларма пукан сĕнет, хĕрарăм ура çинчех пĕр шăпăрт тинкерсе тăрать.

– Санăн тĕле кашнинчех кутăтăнла килсе тухать, çуралмах çапла çуралнă пуль эс, – тет Веня ентешне. Целлофан пакета, фотоаппарата Ваçук Олега панă – кусем сцена çине тухсан ӳкермешкĕн.

Ларать пукан çинче халь черет çитессе кĕтсе Каврăç, юнашарах Хусан ачи Лерон тата Юра. Çумрах тенĕ пек Агля.

– Командăшăн сире парне тивĕç мар, – тет чăваша пушкăрт. – Эс ил, эс тивĕçлĕ.

– Юра пур-çке. Мышлова шутламасан та Юра пур.

– Тивĕçлĕ мар. Эс ил.

Тепĕр самантран Агля куçран çухалчĕ. Сасартăк мĕн иккенне тавçăрчĕ Каврăç. Пушкăрт тусĕпе сăмахласшăнччĕ вăл – лешĕ кайма ĕлкĕрнĕ. Хусан ачи – вăрăм пӳллĕ Лерон та, Липецк çынни Юра та, Мышлов та, стартран кая юлса тапраннăскерсем, утмăл çулхи ушкăнрисем, пĕри те вăтăр çухрăма утса тухман иккен, пилĕк çаврăм хыççăнах, улттăмĕшне каймасăр халăх йышĕпе финиша тапнă (тен, финиша кайма тӳресемех кăтартса тăнă). Мышлов вăхăтĕнчен Блокнотов тимленипе çирĕм минут кая юлнă шута кăларнă; лешсен иккĕшĕнне иккĕленӳ уççăн курăннипе тĕкĕнмен. Кусем те кайман пилĕк çухрăмне çирĕм минутра утса тухнă пулать хайхи. Ваçукăн пуç тăн-тан, такам чукмарпа çапса каçăхтарса янилле.

– Награда хуçине тупрĕ, – нумай пĕлтерĕшлĕн каларĕ Абросим Каврăçа Блокнотов турилкке парсассăн, Каврăçĕ команда шучĕпе турилкке илсе ансассăн.

– Сцена çине чупса улăхатăн пуль терĕмĕр сана, – сăмахлать Блокнотов. Василь чĕнмест.

– Награда хуçине тупать, – кăмăллăн çирĕплетет атлетсене Мускавранах автобуспа ертсе килнĕскер, вăтам пӳллĕ, хытанкарах арçын, çарта физкультура офицерĕ пулнăскер, запаса полковник чинĕпе тухнăскер.

Мышлов епле-ха? Юрăна вăл укçа сĕнет – аллă пин тенкĕ тăсса. «Сурам!» – хаяррăн тавăрать ăна Липецк ачи.

## *Миçемĕш канăçсăрлăх – ӳкĕнӳ те çухату?*

Президент суйлавĕн иккĕмĕш сасăлавне хутшăнма нихăшĕ те килтен хут илсе тухман: участоксенче списоксем хатĕр пулман, хăш кун иртессине те хăвăрт палăртманччĕ. Раççейрен килнĕ çак йыш çул çӳрес шучĕпе Франције кĕрсе тухать, суйлав кунĕ шăпах унта пулать.

– Посольствăна Парижа çитнĕ-çитменех шăнкăравламалла – хамăр ятсене списока кĕрччĕр, суйлав кунне хăваричченех, – сĕнет Каврăç, каçхине пуçтарăннă канашлура ăмăрту кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн. Маринов камкам медаль илнине палăртса Каврăçа та асăнсан Абросим çавăнтах: «Награда хуçине тупрĕ», – тесе хучĕ. «Камшăн сасăлатпăр?» – ыйтрĕ пĕри, хĕрарăм турист. «Эп хамăр районта Ельцин кандидатурине хӳтĕлекен штаб ертӳçи, çавăпа Ельциншăн сасăлама чĕнетĕп», – терĕ Каврăç.

– Списк туса памалла. Кам хăшĕшĕн сасăлать, çавна палăртса список тăратмалла.

Спортсмесен йышĕнчен темле хастар, ăслă çынсем те пур. Куна Филипч коларĕ – Барнаул çынни, çитмĕл çулхискер. Ун пек юрамасть, закон хушмасть тесе асăнчĕ те Каврăç, вăл хĕрӳлленсе кайса:

– Вăт, сăмаха тӳррĕн каламаççĕ пирĕн, хăраççĕ, çавăнпа бардак пирĕн Раççейре, – тесе хучĕ. – Эп хăрамастăп, калатăп хам шухăша. Кашни калатăр хăй шухăшне – алă çĕклетĕр, вара йĕрке пулать.

– Эшкерти çын хăйĕн сăн-сăпатне çухатать, – ăнлантарасшăн Каврăç. – Алла бюллетень илсен этем сасăламалли пӳлĕме кĕрет те хăй тĕллĕн пуçпа çавăрса палăртать.

– Список туса памалла хăшĕ хăшĕшĕн: кам Зюгановшăн, кам Ельциншăн, – хăйĕннех перет Алтай çынни: спортсмен тенине хăй шухăшĕнчен кăпăр-капăр пăрăнтараймастăн.

– Бюллетень шутлаççĕ, – тет те Маринов Каврăçран ыйтать: – Бюллетеньсене списокра миçе çын пуррине шута илсе килсе параççĕ-и? Запас пулать-и?

– Законпа килĕшӳллĕн вун пилĕк процент таран ытлашшипех хатĕрлеççĕ.

– Эппин, эпир хамăр йышра миçенне пĕлтерсен Мускавран бюллетеньсене татах илсе килме пултараççĕ.

Ĕлкĕрейĕç, – тесе ку ыйтупа сăмах вĕçлерĕ Авель Иванович.

Ыран ирех тапранса тухмалла, пиллĕкпе – ура çинче: пуçтарăнмалла, электричка пĕртен-пĕрре, вăл кунта улт сехет тĕлĕнче пулать. Унта лараймасан Франције каякан пуйăса ĕлкĕрейместĕн – çапла ăнлантарчĕ Маринов.

Каврăç ыйхи вĕçен кайăкăнни евĕрлĕ, тăваттăрах куç уçрĕ вăл. Валентин та хускалса илчĕ те – иккĕшĕ харăсах ура çине тăчĕç, пуçтарăнма пуçларĕç.

– Фотоаппарат! Фотоаппарат ăçта манăн?! – ток çапнăн ярт шутласа хăйне хăй каларĕ Каврăç.

– Ак ман сумка – кăларатăп япаласене каялла,– хăйне шанмасть терĕ ĕнтĕ Валентин. Каврăç ал сулать.

– Эп ăна çĕркаç пӳлĕме илсе кĕмен. Пакетра мĕн пуррине – документсене, протоколсене, ик турилккене кăларса хунă, каялла чикнĕ – фотоаппарата çĕркаç пӳлĕмре алăпа тытман.

– Аса ил эс, кашни утăма шутласа аса ил, – вĕрентет Валентин.

– Автобусра куртка кĕсйинчен тухса ӳксе юлма пултарнă. Ун пек тухса ӳкнĕччĕ кăнтăрла таврăннă чух, хăлт турĕ те, сиссе çийĕнчех илтĕм.

– Автобусра юлман, – татса калать Валентин. – Эпĕ хамăр ларнă вырăна çавăрăнса пăхрăм, тухаспа.

– Олегра. Олега панăччĕ хам сцена çинче чух сăн ӳкерме. Каялла илнине астумасăп.

– Кам вăл Олег?

– Хамăн ентеш, Шупашкартан.

– Чим, сан фотоаппрат манежра пукан çинче выртни ман куç тĕлне пулнăччĕ. Пукан çинче выртатчĕ.

Пĕрре мар, темиçе хутчен, часах мар, вăрахран – иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш кунĕнче – аса илсе манежри кашни утăма куç умне кăларса пырать ак Василь. Олегран аппарата илчĕ вăл. Лешĕ куна парнене тивĕçнĕ ятпа саламласа алла чăмăртарĕ, фотоаппарата тавăрса пачĕ апла. Ак Блокнотов иккĕмĕш турилкке тыттарчĕ Кавръăçа сцена çинчен ансассăн. Ӳкерчĕкĕ пĕр тĕслех-и, пĕри хăмăртарах тĕсли пултăр тенĕччĕ Мускав ертӳçи. Василь йăпăр-япăр тытрĕ те улăштармарĕ – хура сăрăллиех пултăр иккĕшĕ те, лешĕн – хăмăр. Олега панă пакет та алăра. Ак Василь ик

турилккене пĕр-пĕрне перĕнсе ан çĕмĕрĕлччĕр тесе меллĕн чикме шутлать целлофан пакета. Фотоаппарат ан çĕмĕртĕр ăна çапăнса. Кавраç пукан çине ларчĕ. Кăларнă япалана хăй çинех хума хăнăхнă-ха вăл, халĕ те фотоаппарата чĕркуççи çине хуратчĕ пуль, анчах турилккесене хаçатпа чĕркеме, хушшине протокол кĕнекине хума меллĕ пулмашкăн алăри япалана сулахай енчи юнашар пукан çине хучĕ пĕр йăпăртлăха. Турилккесене вырнаçтарчĕ; унтан, çак вăхăтра, шăп ал пушаннă самантра, пĕри – хăйсен йышĕнчиех – чупакансен протоколне илсе килчĕ сĕтел çинчен. Паçăр талонпа панăччĕ протоколсене. Кавраçăн – утакансен. Халь ав чупнисен протоколĕсем ытлашши юлнă-мĕн. Вăшт тăчĕ те Василь никам çук сĕтел патне пырса хут ещĕкрен вунă тата çирĕм пилĕк çухрăмсене чупнă кăтартусен кĕнекисене – кашни дистанцийĕпе уйрăммăн – илчĕ. Унтан ăна, ик кĕнекене, пакета турилкке хушшине меллĕн чикрĕ. Алăра тем çитмест пек, тем çук пек. Кавраç пăхать: пакет, унта – протоколсем виç кĕнекех, журналах; ик турилкке; ручкăпа ик листа шур хут; çырас тенĕччĕ те – пĕр сăмах та йĕрлемен унта; пĕр хаçат. Каллех алăра тем çук пек. Ваçук пăхать – пакет пур, унта – турилккесем...

Манеж пушаннă ĕнтĕ, çын пăт-пат çеç. Вырăс ачисем – Валентин тата ытти чупуçăсем, Олегпа Веня суту тăвакан сĕтел патне кĕпĕрленеççĕ – асăнмалăх кăларнă майка туянаççĕ; ытлашши хаклах та мар теççĕ. Кавраç паçăрхинчен тепĕр тĕлерехри пукан çине ларнă, умĕнчи пукан çине пакета хунă. Çамрăкрах чупуçă: «Эс кунтах пул-ха, япала хăварам», – тесе суту тăвакан вырăналла утрĕ. Кавраçа шав аллинче тем япала çук пек туйăнать. Пăхать: пакетра турилккесем пур.

Манеж пушансах юлнă. Шур халатлă хĕрарăм сĕтелсем çинчи, урайĕнчи хутсене, пуш кĕленчесене, пакетсене пуçтара пуçларĕ ав, тĕкмелли урапапа ретсем хушшисемпе иртет. Кавраçа шав аллинче япала çук пек туйăнать. Пăхать: пакетра турилккесем пур.

– Эп куртăм, фотоаппарат сан пукан çинче выртатчĕ, хура, хăмăр йăрăмлăскер, пĕчĕк калăплăскер, – çирĕплетет Валентин кайран та. – Ан кулян: ăмăртура панăскер терĕн вĕт – Турă панă, Турă илнĕ.

Сăн ÿкернĕччĕ самаях Василь. Пленки шел. Мăнукĕсене çулла кашни çул канма килмессерен сăн ÿкеретчĕ, аппаратне хăйсенех – ÿкерме хăнăхтарсан паратăп, хам аппаланма пăрахатăп тенĕччĕ. Çухалчĕ. Пуç тăн-тан пирки. Протоколта Каврăç ятне хăй йышăннă вырăнтан кая çырнă пирки пăлханнине пула, Блокнотов илсе килнĕ йыш старт вăхăтне пĕр сехет ума куçарнине пĕлменнине пула, пĕр палăртнă вăхăта тĕкĕннине пула.

Старт йĕркине пичетленĕ журнал буклета тишкерет халь Василь. Малтанхи ик страницинче пĕтĕмпех старт йĕрки çинчен каланине çапнă. Пĕрремĕш листинчех хĕрарăмсен 20, арçынсен 30 çухрăма утасси 14 сехетре пуçланать, 15 сехетре мар тенĕ. Пĕр ăнлавах ултă хутчен çырнă – ултă чĕлхепе. Вĕçĕнче шурă кĕтес те юлнă, анчах кириллица шрифчĕ пулман-ши – вырăсла çырман, утакансенчен вырăс чĕлхиллĕ йыш самаях пулнă пулин те. Вырăссенчен ав пĕр ушкăнĕ старт вăхăчĕ улшăннине буклаетра курма пултарайман. Çавна пула утакансен ку йышĕ кая юлса çитнĕ старта, хăшĕсем çирĕм минут кайран тапранса кайнă, вĕсенчен виççĕшĕ пилĕк çухрăмлă çавра çулпа улттă вырăнне пиллĕк çеç çаврăннă: Мышлов, мăрам çÿрекенскер, иккĕмĕш вырăна тухса ларать. Блокнотов хĕпĕртет куншăн: утмăл çулхисен йышĕнче вырăссем командăпа пĕрремĕш вырăнта: акăлчансенчен пĕр минут та тăватă çеккунт лайăхрах вăхăт пулать виççĕшĕн кăтартăвĕсене пĕрле илсен.

Оленевăн кая юлнă вăхăтне кăларман та ав. Вăтăр çухрăмах утнă вăл. Малти виç çын шутĕнче пуласскер – вун улттăмĕш вырăнта. Юрать-ха, Веньăпа тата тепринпе пĕрле вĕсен йышĕ иккĕмĕш вырăнта.

Мĕншĕн хăй хатĕрленĕ ĕçмене памарĕ-ши Василе Валентин вун пилĕк тата çирĕм çухрăмсенче? Веня хатĕрленĕ пылаксăр кофĕне пĕр сыпкăм çеç пачĕ? «Халĕ чÿхесе антар», – илтĕнчĕ пĕрин сасси вырăсла, Василь йăнăшпа шыв курки тытсан. Блокнотов сассине уйăрать халь Каврăç, çавскер йĕркелесе тăнă-шим кунти пулăшăва? Мускав ачисен хăйсене пысăка хурасси çумрах. Ăслăрах шутларĕ-ши хăйне стайер? Ял ачи пĕлмест терĕ-шим? Валентинĕ тата! Веня, Олимп вăййине хутшăннă йĕкĕт, апата пĕлерех хатĕрлерĕ терĕ-шим? Анчах Веня «урхамахĕ» çирĕм çухрăма утасси-

çке, аллă çухрăма утман вăл çамрăк чух. Олег утнă-ха, сумлă ăмăртура медаль те çĕнсе илнĕ ку инçĕшре. Веня инçе хушăра вăй виçмен. Валентин вырăнне пĕр-пĕр йĕлтĕрçĕ пулнă пулсан, леш стайера итлемесĕрех çимене кирлĕ пек паратчех Ваçука.

Çĕлĕке çӳлелле ывăтрĕ çав Ваçук хăй те – стартран пит хыттăн кайрĕ, Мариона çеç тĕпе хучĕ; ку йышра иртнĕ çулсем ăмăртайман çав. Тата вăл Калиса умра тесе шутланă. Ак йăнăш. Тепре, Каврăç йĕлтĕрпе сахал мар чупнă, унта пĕрререн кăларса янă май пĕтĕм дистанцие тытăннă хăвăртлăхпа пымашкăн хăнăхнă, ӳте-пĕве шăршанса ларнă çав туйăм. Ку та йăнăштарчĕ. Йыш çинче тӳре те асăрхаттарчĕ ăна, хăй çеммипе пĕччен пырас пур ним юнавсăр иртетчĕ. Йăнăш. Юлашки кукăрта сироп ĕçсе тĕрĕс турĕ Василь – финишчен самай хушах пулнă ав. Маринов та финишчен пĕр çухрăм çеç юлчĕ тесе калани усса пычĕ – ăнтăлчĕ Василь; ик çухрăм ытларах хушша ним вăрахланмасăр; лăпкăн пырас пур, Марио çитетчĕ чăн-чăнласах, кайран ăна те илеетчĕ-ха, çĕнтереетчĕ-ха?

– Кунта çынсем савăнма килеççĕ, хăна сĕтелĕ çавăраççĕ, – килĕшмен Веньăна ăмăрту.

– Шоу, – палăртать Василь. – Айхашу.

– Кĕшĕлтетеççĕ, çуйхашаççĕ.

– Мала тухма тăрăшманнисем телейлĕрех, – тет Василь. – Ав Валентин епле хĕпĕртет.

Каврăçăн вара вĕçĕмсĕр ӳкĕнӳ, çухату. Урана та нейлон чăлха тăхăнмалла пулман унăн – нейлон ӳте çыртса пăчăртаса лартать! Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен...

– Тавар, тавар сутмалла, – аса илтерет Василе Абросим. – Тата ик çĕр çирĕм доллар тӳлемелле сан. Мана укçа кирлĕ. Сире ертсе çӳреме.

* * *

– Сасăлас пирки проблема çук. Сасăлас кун ют çĕр-шыв паспорчĕсемпе посольствăна çитмелле çеç, – хыпарларĕ тепĕр ирпеле Парижри хăна çурчĕнче, фойерех столовăй пек йĕркеленĕ апата пухăнсан, сĕтел хушшине хире-хирĕçле ларсан Маринов яланхи çепĕç те вашават сассипе.

– Список çырмала та, кам камшăнне палăртмалла та... – хăйĕннех перет Филипч. – Пирĕн – бардак, çавăнпа бардак.

– Цивиль саккунне хисеплес пулать, кĕтӳ саккунне мар, – вăраххăн сăмах хушать Василь.

– Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕ çакăн пек: чемпионата пурĕ виçĕ пин çын хутшăннă, – хут татки çине пăхса ăнлантарать йăваш сассипе Авель Иванович. – Раççейрен аллă виçĕ участник. Ик дистанцире ăмăртнисем виççĕн-и çеç; эппин, аллăн. Тĕрлĕ ушкăнпа килнисемпе пĕрле.

Малалла миçе медаль илнине асăнать Раççей çăмăл атлетика ветеранĕсен пĕрлешĕвĕн Президенчĕ.

– Мышлов иккĕмĕш...

– Василь виççĕмĕш, – терĕ хĕрарăм турист.

– Çапла, Василь виççĕмĕш, – килĕшет Авель Иванч.

– Награда хуçине тупрĕ, – сăмах хушса та хучĕ Абросим, куçне Каврăç еннелле вĕлт вылятса.

– Командăпа вăл ушкăн – пĕрремĕш. Раççейĕн пĕртен-пĕр ылтăн медалĕ.

– Турилкке.

Çăмăл атлетсен хĕллехи тĕнче чемпионачĕ Англире пулассине асăнать Маринов.

– Мĕн хака ларать? – пĕлесшĕн ветерансем.

– Тăват çĕр доллар.

Атлетсем шухăша путаççĕ, кашни хăйĕн çул çӳреве тухас майне-вăйне виçсе пăхать ахăр. Каврăçшăн спонсор тупăнĕ-ши? Хăй ушкăнĕнче чи кĕçĕнни пулать вăл, шăп утмăл пиллĕке куçать, халь унпа тытăçнисем утмăл-ултмăл тăваттăрисен йышĕнче тытăнса юлаççĕ. Хĕллехине мар пулсан та çулла çакнашкал инçĕшрех – вăтăр çухрăма Европа шайĕпе вăй виçме çитесчĕ те унăн – кам пулăшĕ укçа-тенкĕпе? Халь утмăл пиллĕкринчен юлнă-ха вăл виçĕ çеккунт. Унпа кĕрешмелле. Çав йышран тепри вун çичĕ минут каярах çитнĕ финиша.

Париж. Ăна курса çӳремелле. Хăна çутчĕнчи фойерех тăххăр тĕлне пухăнма каланă. Хăшĕсем пӳлĕмĕсене кайрĕç, Каврăç кунтах ирĕкрен кĕмелли алăк патĕнче пукан çине вырнаçрĕ. Ирĕклĕн, лăпкăн ларать вăл ирхи апат хыççăн, пӳлĕмре ним тумашкăн та тытăнса тăмалли çук унăн. Тултан икĕ хĕрарăм кĕрсен:

– Ырă кун сунатăп, – терĕ вырăсла.

– Ырă ир пултăр, – хурав пулчĕ чат вырăслах. Илемлĕ çамрăк хĕрарăм ку.

– Эсĕ вăл вырăсне ăçтан пĕлтĕн? – тĕлĕнчĕ çума пырса тăнă Валентин Ваçукран.

– Эп вăл вырăсне пĕлмен, ырă ир сунтăм çеç, – пĕлтерчĕ чăваш.

– Э-эй, ачасем! Василь хăшĕ вырăс пулнине пĕлме вырăсла сăмах хушать, – Америка уçрĕ те Валентин ыттисене евитлеме пикенчĕ. Çапла, çакнашкал ушкăнра кашниех хăй маттуррине, «Америка уçнине» палăртмаваскать: мĕн те пулин курнă-и вăл, илтнĕ-и – пĕчĕк ача çуркунне вăрмана амăшĕпе пĕрле чечек татма кайсассăн амăшне кашни утăмрах мĕн курнине тӳрех евитлет – çул çӳрев ушкăнне пĕрлешнĕ этем те çавнашкалах – хăй пуçласа курнă, эппин, ыттисене евитлемелле, хăй тавçăрнине кăтартмаллах.

– Тавар, – аса илтерет Абросим Василе ушкăн пухăнса çитсен çула тухаспа.

– Илтĕм, ав сумкăра. Ăçта, мĕнле майпа сутайăп, пасара çитейĕп-и? – иккĕленет Каврăç.

– Ик çĕр çирĕм доллар, – пуçа кăшăллантармалла йывăрăш хăпартса лартать Абросим Василь çине.

Автобусран тухаççĕ Париж вăтине курса çӳреме. Леш вырăс хĕрарăмĕ, çамрăкскер, куçаруçă пулчĕ иккен, экскурсие тухсан француз хĕрарăмĕ ăнлантарнине вырăсла калаканĕ.

Троица чиркĕвĕпе суту-илӳ çурчĕсем умĕпе иртнĕ чух хăй кунта ĕнер çиччĕ çурĕчченех тавар сĕнсе çӳренине аса илсе пăхать чӳречерен Каврăç, француз хĕрарăмĕ ăнлантарнине вырăс хĕрарăмĕ каланă хыççăн итленĕ май блокнота çыра-çыра пырать вăл. Анчах пуçра кăшăл: парăм.

Сена кĕперĕнче сăн ӳкерме тăраççĕ-и, Василĕн хаваслăх çук: фотоаппарат çухатса хăварчĕ вăл, епле майпа çухатнине те аса илсе пĕретеймест-ха çак самант тĕлне çынни, мĕнле пулнине пĕрчĕн-пĕрчĕн аса илме, пуçа кăшт кантарма татах вăхăт кирлĕ-ха ăна.

Парижăн Тур амăш соборĕ умĕнче Василь сумкинчен кăларса Ельцин çинчен çапнă альбома франци хĕрарăмне, экскурсовода, асăнмалăх парне парать.

– Эсир Ельциншăн-и вара? – ыйтать вырăс хĕрарăмĕ куçаруçă. – Эпĕ уншăн каççах каймастăп.

– Мӗншӗн?

– Чирлӗ вӑл. Сыпать те.

– Сирӗн патӑрта пресса мӗнлерех хаклать ӑна? – пӗлесшӗн Каврӑҫ. – Пире пӗр апат ҫитереҫҫӗ прессӑра. Сирӗн патӑрта мӗнле?

Хӗрарӑм йӑлкӑшса кулать, тӳрех хуравламасть. Ваҫука ку вӑхӑтра айӑкран тӗкекен, ҫума пырса: «Юрамасть унашкал ыйтма», – тесе калаҫма чаракан та тупӑнчӗ. Уйрӑммӑнах Филипч канӑҫсӑрланать. Тӗлӗнет Ваҫук: мӗн, хӑрушсӑрлӑх комитечӗ хытарса янӑ-им вӗсене? Тӗрӗслеҫҫӗ-и? Мӗншӗн пӗлмелле мар вара пӗлес тенине Ваҫукӑн? Сахал-им кунта, Парижра, вырӑс ҫыннисем? Вӗсем мӗнле сывлӑшпа пурӑннине чухламалла мар-им ҫырассипе асапланакан Каврӑҫӑн? Кунта кӑларакан «Вырӑс шухӑшӗ» хаҫат уншӑн ют мар-ҫке.

– Вырӑс-и эсир? – ыйтать Ваҫук ҫапах ку хӗрарӑмран.

– Анне – вырӑс, атте – француз.

Йышра кашниех тавралӑха, хулана, паллӑ вырӑнсене курса тӑранаймасть, сӑн ӳкереҫҫӗ, видиокассетӑпа ҫапаҫҫӗ – Каврӑҫӑн фотоаппарат ҫук; малтан ҫапнӑ пленкипех пӗтнӗ. Сенӑн тепӗр кӗперӗпе каялла каҫнӑ чух Василь ҫумне Калиса пырса тӑрать, юхан шыв фонӗнче сӑн ӳкерӗнме аппаратне теприне парать, хӑй арҫынна пилӗкрен ытамлать.

– Мӗн, сирӗн юрату мар пуль? – куҫне ҫиҫтерет Абросим. Василь чӗнмест.

– Туслӑх. Юлташлӑх, – евитлет Калиса.

Елисей уйӗ, Триумф арки, Эйфель башни Василь куҫне курӑнса хӑйне евӗр аса юлать. Монмартр сӑртлӑхне хӑпараспа пӗчӗк лаптӑкра таварсем сарса ларӑ тӗксӗм ӳтлӗ арҫынсене кура кунта сутӑ тума тӑмалла мар-ши тесе те тӗшмӗртет Каврӑҫ. «Эс ларас пулсан сана хӑваласа яраҫҫӗ вӗсем – конкурента чӑтаймаҫҫӗ», – кунӑн шухӑшне пӗлнӗ пекех сӑмахлать Валентин, хӑй мӗн тавҫӑрнине пӗлтерме юратаканскер. Историйӗпе пуян, чаплӑ храм ҫывӑхӗнчи ӳнерҫӗсен ялӗнче (ҫапла каламалла-и пӗр лаптӑка, художниксен кукӑрне?) кӑшт чун кӗнӗ пек пулчӗ Каврӑҫа. Ӑстаҫӑсен ӑста аллисем чӗрӗ ҫын сӑнарне киҫӗтӗкпе тӗкӗнкелесех таса пир е хулӑм хут ҫине эсӗ пӑхса тӑнӑ хушӑрах ӳкерсе хураҫҫӗ. Алӑ кӗҫтет ак Василӗн, сӑмахпа сӑмах ҫыхса сӑнарлас килет унӑн хӑй мӗн-мӗн курнине, пӗрле ҫӳренӗ тус-юлташсене; хут илсе вырнаҫса ларса ҫырас та ҫырас килет. Повесть, пысӑк

мар повесть калăпламалла кĕнекелĕх, хăй сунтăхĕнче вырттармалли ал çыру шучĕлĕх.

– Эс мĕнле хаçат вулан? – шухăшран татать ăна Филипч тепĕр кунне сасăлава кайнă чух çуран утнă май.

– Литераторсен хаçачĕ...

– Комсомол хаçатне çырăнма сĕнетĕп.

– Сивлеместĕп кăларăмне. Анчах манăн мар вăл. Хам тĕллĕн эп ăна çамрăкрах чух пĕрререн пĕрре çур çул илсе тăнă, кайран ачасем çырăннине алла тыткаланă. Манăн пулайман.

– Мĕншĕн?

– Авторĕсем урăх. Эп ак хам вулакан хаçатра яланхи авторсене пĕлекен пулнă; килĕшетĕп те вĕсемпе, килĕшместĕп те хăшĕсемпе, анчах кашниййĕн шухăшне малтанах пĕлетĕп, ăнланатăп. Тахçанах илсе тăратăп – хĕрĕх çулах. Хаçачĕ, пурнăça май, епле улшăнса пынине те курса тăратăп. Эсир сĕннĕ кăларăма тытсан унти авторсене пĕлме тытăнмалла. Вĕсене, çырнисене, пĕлместĕп, пĕлме кирлĕ мар та пуль мана. Унăн хăййĕн вулаканĕ.

– Ăнланмалла, – килĕшет Филипч. Те ăнлансах пĕтет çынни.

Ку каçхине килте пулнă пулсан территори суйлав комиссийĕнче лармаллаччĕ Кавръç. Участоксенчен протоколсем килме тытăнаççĕ. КПРФ çынни, ученăй пек курăнас тесе сухал ÿстерни, епле çиççе, хĕпĕртесе йышăнать-тĕр протокол копийĕсене, епле савăнса тыттараççĕ ăна суйлав йĕркелеме кайнă яваплă çынсем, учреждени ертÿçисем: Зюгановшăн сакăр вунă процент таран сасă панă!

«– Пирĕн район ниме те пĕлтермест. Пĕчĕк пĕрчĕ çеç, – тет хĕрарăм.

– Пĕлтерет: пирĕн мĕнле – çĕр-шывĕпе çавнашкал.

– Пач урăхла, хирĕçле».

Кĕçĕр те çакнашкал калаçу пулса иртет ĕнтĕ. Николай Николаевич халь унта кусен штабĕнче ăшталанать палах. Шел, Кавръç радиопа памашкăн хатĕрленĕ сăмаха çыртарса хăвараймарĕ. Ăна итлекенсем пулатчĕçех, темиçе процент чухлĕ те пулин районăн хĕрлĕ тĕсĕ чакатчех.

Фойене анса телевизор пăхать, сăмахне каланине ăнланаймасть пулин те ÿкерчĕке курать Кавръç. Арçын ад-

министратортан Раççейри суйлав пирки мĕн хыпарларĕç тесе ыйтать. Ăнланать француз ăна. Нимех те каламаннине пĕлтерет. Ирпе киле пуçтараннă чух Каврăç Марионова:

– Епле çĕр-шыва таврăнатпăр? Хĕрлине е кăвакпа шурине? – тет. – Посольствăна шăнкăравласа пĕлĕр-ха. Халь вĕсем çывăрма кирлĕ мар.

– Шăнкăравламастăп, – килĕшмерĕ Авель Иванович.

Сасăлав кăтартăвне Раççейре пĕлеççĕ-ха ĕнтĕ, кусем пĕлеймеççĕ.

Акă пуйăс çинче вырăсла калаçакан хĕрарăм курăнчĕ. Хура кĕпепе, тăпăлкка пӳ-сийлĕскер. Çавă багажсем хунă вырăна кайрĕ те, таврăнасса кĕтет хăй вырăнĕнче Каврăç. Ак килет салоналла ырă сăнлă хĕрарăм.

– Эсир пĕлейместĕр-и: Раççейре президент суйлавĕнче кам çĕнтернĕ? – ыйтрĕ Каврăç.

– Ельцин. Çĕркаç Раççей посольствинче феерверк иртнĕ, ирччен çывăрман, савăнăçлăн калаçнă, шампански пĕрĕхтернĕ, – хăвăрт-хăвăрт евитлерĕ чипер хĕрарăм. Каврăç унăн аллине тытса чуп тăвать. «Хамăр районта миçе процент сасăларĕç-ши Ельциншăн?» – çав-çавах шухăшлать Василь Васильевич. Абросима укçа тупса параймасть вăл, парăмрах кĕрсе юлать-ха; фокус инçĕшне хăйех тупакан «Зенит-35» фотоаппарата та çухатнă; ăмăрту протоколĕнче ун ячĕ виççĕмĕш вырăнта пуласскер тăваттăмĕш йĕркере тăрать.

Салонра пĕр ретрех, иртмелли-çӳремелли хушăран леш енче, Калиса тем çыру çырать, конверт тытнă. Василь ăна блокнотĕнчен пĕр листа хăйпăтса илсе хут парать. «Çухатрăм, манса кайрăм» сăмаха нимĕçле çырса пар-ха», – тет. Вăл çав глагола епле формăра лартмаллине Абросимран ыйтса канашлать. Калиса хай сăмаха нимĕçле çырса хута Васиде каялла парать, кунти маркăна çыпăçтарнă конверт тыттарать, адресне епле çырмаллине калать.

– Мĕн, сирĕн хушăра юрату-им? – Василь еннелле куçне çиçтерет Абросим.

– Хамăранне хамăр пĕлетпĕр, – тавăрать хальхинче Василь ăна.

Вокзалта Каврăçпа Калиса почта ещĕкне конверт сиктереççĕ. Каврăçăн – ăмăрту йĕркелӳçисен адресĕпе; палах, ним

уссăр: лав çинчен ӳкни – çухални; пуйăсĕсем ик еннелле ирте-ирте кайнă тахçанах. Калисăн – тантăш хĕрарăм патне.

Сăр çинчи хула хĕрарăмĕ ку хутĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă. «Çурăм ыратнине туйрăм – Америка хĕрарăмне ирттерсе ятăм», – ăнлантарать вăл Василе. Леш хĕрарăмĕ шăпах ăмăрту хыççăнхи каç фойере хăйсен йышĕнчисемпе пĕрле Каврăçпа тимлĕн калаçнăскер, чăвашăн ятне пĕлесшĕн документне те кăтартнăскер. Ăмăртура шăпах виççĕмĕш çаврăм вĕçнелле иртнĕччĕ çавă Каврăçран, хĕрлĕ майкăпаччĕ, çӳллĕ пӳллĕ мар.

Валентин телейлĕ: вăл тĕнче чемпионачĕн призерĕсем хушшинче.

– Ик медале тивĕçнĕ çын эс, – куçне чарăлтарса тинкерет Ĕпхӳ вырăсĕ Василь енне. Чăн ĕнтĕ: икĕ турилкке. Иккĕшĕн те ăшĕнчи ăмăрту талисман ӳкерчĕкĕ хура, ун тăррине – хĕрлĕ корона, аяларах «BRABANT» (Çĕнтерӳçĕ») тесе çырнă; ăмăртăвĕн, хулин ячĕсене шупка эрешлĕн кăшăлласа палăртнă. Чаплă фаянс.

– Киле çитсен костюм илтер, – сĕнет Валентин Василе чăнласах. – Ыйтмастăн ĕнтĕ, хăяймастăн.

– Повесть çыратăп. Çавă çеç манăн. Тепĕр асап.

– Сизиф ĕçĕ.

– Мĕн тĕрĕсси – тĕрĕс.

Вĕçĕ.

## Тупмалли

**Çыру мехелĕ** ........ 3
**Хрусталь ваза** ........ 193
**Награда хуçине тупать** ........ 219
Чун йăшкать ........ 219
Патак ачи ........ 221
«Сăмса çине картса хур» ........ 229
Пикесен çурчĕ патнеллех... ........ 240
«Илсе те каймастăп» ........ 242
«Хĕрлĕ пиçиххи» ........ 247
Çыхланчăк ........ 282
Ăнтăлу ........ 291
Пуçа – чукмар ........ 314
Миçемĕш канăçсăрлăх – ўкĕнў те çухату? ........ 324

**Ларионов  Никита  Ларионович**

**СТЕЗЯ ПЕРА**
Повести

На чувашском языке

Издается в  авторской редакции

Компьютерный набор  *Н.Л.Ларионова*
Верстка  *Н.П.Шутеевой*
Дизайн обложки  *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать  23.03.2012. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Arial. Физ.печ.л. 21.
Тираж 50 экз. Заказ  № К-410.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В.
«Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.